Петӗр Хусанкай

# *Çырнисен пуххи*

Ултӑ томпа тухать

Иккӗмӗш том

## СӐВӐСЕМ, ЯРӐМСЕМ

## 1945—1970

Шупашкар
Чӑваш кӗнеке издательстви
2002

УДК 894.344
ББК 84 (2 Рос-Чув) – 5
Х 98

*Пичете Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăлăх канашĕ çирĕплетнĕ*

Редакци ушкăнĕ:
**В.П.Станьял, А.А.Трофимов, А.П.Хусанкай, Г.Ф.Юмарт**

Пухса йĕркелекенĕ тата асăрхаттарăвĕсене çыраканĕ
**А.А.Тимофеев-Ыхра**

*ISBN 5-7670-1075-7*

© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2002
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2002

# МАНĂН ÇĂЛТĂР ТӲПЕРЕ!

## АСИЛӲ

*И.Ивнике*

Астăватăп: вилнĕччĕ поэт...
Шупашкар урамĕсем тăрăх
Унăн ăшă, çепĕç сăвви пек
Çурхи çил çӳретчĕ иртĕнмесĕр.

Тирпейленĕ тупăк умĕнче
Хулăн сасăллă Иван Мучи
Пантеон кирли çинчен пуплетчĕ.
Тепĕр çын поэтăн сухалне —

Чирлĕ чух ӳстернине — астурĕ:
Руставели евĕрлĕччĕ терĕ.
Виççĕмĕш — ман тусăм, çывăх тусăм —
Ар пуçпа ĕсĕклесе йĕретчĕ...

Мана йывăрччĕ сăмах хушма,
Тăвăлса тăртаннă хурлăха
Çемçетме куççулĕ те тухмарĕ.
Тăшмана, вăрçа, хура вăя

Ылханса хăварнă ырă шăллăм
Хăй ĕçне пуçлайнăн курăнчĕ.
Кӳренсе вара эп аса илтĕм
Çавнашкал çурма çулта хур пулнă

Темĕн чухлĕ халăх ывăлне.
Ун чухне ят тухнă çынччĕ эпĕ,

Пристаньре кӗтетчӗҫ салтаксем,
Ҫавӑнпа ҫӗре кӗресскере

Ҫамкинчен чуптурӑм чи малтан:
Сип-сивехчӗ, вилнӗччӗ поэт!
Эп — вилӗме хирӗҫ тухса кайрӑм...

1945, май

## ҪУРКУННЕН ТУЙӐНМАСТЬ-И СИРЕ?

Тӑвансем! Пилӗк-ҫурӑм тӳрлентӗр:
Кӗтсе илтӗмӗр канлӗ ире.
Саралса ҫывхаран кӗркуннемӗр
Ҫуркуннен туйӑнмасть-и сире?

Ҫулҫӑсем савӑнса ҫӑтӑл-ҫатӑл
Алӑ ҫупнӑ пек мар-и пӑхсан?
Кӗрхилле хумханан тӑван Атӑл
Тӑрӑлса йӑл кулмасть-и паян?

Пӗр-пӗрне тинкерсе сӑнасамӑр:
Мӗн тери ӑрӑскал пит-куҫра!
Паянхи туйӑма, саманамӑр,
Ҫуралас ӗмӗрсемшӗн усра.

Портретсем ҫинелле пӑхӑр-халӗ:
Кӑмӑлсем урӑхланнӑ йӑлтах.
Шухӑшпа шуралса пыран Сталин
Ҫамрӑкланнӑ пек мар-и пӑртак?

Иксӗлми чӗрӗлӳ пархатарӗ
Час сыватӗ ҫӗршыв суранне.
Ӗмӗте юрӑпа янратар-и,
Кайтӑр юрӑ тӗнчен ҫур анне!

3.09.1945

## МАНĂН ÇĂЛТĂР ТӲПЕРЕ!

Çăлтăрсем чăмаççĕ сассăр
Яр çурса кĕрхи çĕре.
Асăрхатпăр та калатпăр:
Манăн çăлтăр тӳпере!

Ачаран çакна тăнланă,
Шухăша вăл ӳкерет:
Кам малтан тупса каланă —
Манăн çăлтăр тӳпере?

Çĕрлехи çул çӳрекен-и
Е таçти салтак пĕрре
Аманса ӳксен ĕненнĕ:
Манăн çăлтăр тӳпере!

Шур сухаллă çын-и, яш-и,
Хĕр пике-и — пурпĕрех —
Сăвăç пулнă çав чăвашĕ:
Манăн çăлтăр тӳпере...

Пурнăçа ытараймасăр
Ĕмĕтпе тапан чĕре
Каласа хăварнă, ахăр:
Манăн çăлтăр тӳпере.

Çавăн пек халăхăма эп,
Тем пулсан та тĕнчере,
Ĕненмесĕр пултараймăп:
Манăн çăлтăр тӳпере!

1945

## ТАВТАПУÇ

Тавтапуç сана, юратнă Сталин!
Сан тивлетӳпе эпир пуян,
Чăваш халăхĕ ыттипе танлăн
Саламлать сана пĕтĕм чунтан.

Тавтапуç, ĕçлев тĕнчин çулпуçĕ!
Сан ăс-халупа çĕршыв тӳлек.

Халь пире пур алăк та яр уçă,
Шухăшсем хăпарчĕçĕ çӳле.

Тавтапуç сана, пур халăх тусĕ!
Пур йăхсем те халĕ тăванла
Алла-аллăн тытăнчĕç Союзăн,
Çав тăванлăх çирĕп санпала.

Тавтапуç сана, чи аслă маршал!
Сан хастарупа эпир хастар.
Çак телейлĕ çутă саманашăн
Пĕр салтак пекех тăратпăр кар.

Тавтапуç, Çĕр кĕтнĕ Улăп-паттăр!
Тав, ытараймиви вĕрентекен!
Сан шухăшупа çĕнсе пыратпăр,
Пуç хума та хатĕр эс чĕнсен.

Мавзолей умпе иртетпĕр танлăн.
Кан, Ильич: ĕç шанчăклă алра.
— Тавтапуç сана, мухтавлă Сталин! —
Тĕнчипех янра, янра, янра!

1945

**ТАВССИ КĔРХИ КĔРЕКЕНЕ!**

Пукравранах юр курăнчĕ,
Кĕске пек ирĕк кĕрĕмĕр...
Ах, тусăм! Пусмăр пурнăçĕ
Пĕр уйăхĕ те — пĕр ĕмĕр.

Пĕр уйăх мар, тăвату хĕл
Чуна лăскарĕ çил-хаяр,
Юн юхрĕ чарăнасла мар,
Мĕн чухлĕ мул — тăпра халь, кĕл,
Мĕн чухлĕ тăкăнчĕ ĕç-хĕл,
Пăсланчĕ те пăрланчĕ тар...

Хĕлле çеç мар — çуркуннепе
Çулла та сулхăнччĕ хĕвел,
Пăхмастчĕ вăл тĕрĕс-тĕкел;
Нихçан кайми кĕрт хӳнĕ пек,

Сăрăлтатса çӳçенчĕ çĕр;
Анчах эпир çĕнтертĕмĕр:
Каллех вуникĕ уйăхран
Ноябрь пуринчен пуян.

Кăçал юр ӳкрĕ пукравра:
Хĕл вăрăм пулĕ текелеççĕ.
Ах, тантăшăм! Мĕнех вара?
Эпир мирпе, эпир килте-çке.
Телей сунар та пĕр-пĕрне,
Тавсси кĕрхи кĕрекене!

1945

## СУЙЛАВРА

Çитейрĕç киле салтаксем.
Янрать котелок шăнкăр-шанкăр,
— Ыр курччăр ачам-пăчамсем! —
Тесе сасă пачĕ ак паттăр.

Мĕн илнĕ ĕçпе, хĕçпеле,
Тертпе, тӳсĕмпе илнĕ эпĕр —
Çав пурте паян кĕмелле
Пĕр хамăр çурта, иксĕлмесĕр.

Çапла вăл пулать ĕненсен:
Пур халăхпала шанса лартнă
Советăмăра кĕрекен
Хĕçе-пăшала намăслатмĕ.

Чĕре варрине чи малтан
Пĕр ят çырса хутăмăр анлăн.
Çав ят çулăмра та çунман,
Шывра та пире путарман,
Çĕнтертĕмĕр çав ятпалан:
Вăл — Сталин.

1946

## 1946 ÇУЛХИ МУСКАВРА

«Мускав курас килет-и?» — тетчĕç
Ватсем пире ача чухне.
Ик тăнлавран тытса çĕклетчĕç
Маччаналла хăшне-пĕрне.

Кула-кула кăшкăрашатпăр:
«Çитет, çитет теп, ĕмпичче!»
«Ну, куртăн-и Мускав?» — «Курмасăр!»
«Инçе-и?» — «Çичĕ ту çинче».

«Илемлĕ-и Мускав пасарĕ?»
«Илемлĕ, темĕн те сутаç»,
«Шуç чумана кӳлсе каяр-и?»
«Каяр». — «Мĕн илĕпĕр?» — «Кулач».

Ача-пăча çапла йăпаннă,
Кайса курас килнех пуль çав.
Кайма! Пӳртрен тухма хăранă,
Юмах пек туйăннă Мускав...

Çакна аса илетĕп эпĕ,
Хам çав Мускавпала утап.
Нимран ытла — этем хисепĕ,
Ун чысĕ урăх халь кунта.

Мĕнле чĕлхепелен пуплетĕн —
Сана чармаççĕ ку чухне:
Киле пекех пырса кĕретĕн
Мухтавлă вырăс хулине.

Е эсĕ — халăх депутачĕ —
Килен çĕршыв ĕçне тума,
Е вĕренӳ çунат хуштарчĕ,
Е чарăнатăн çула май.

Е эс юри — курмах — килетĕн,
Пуçлатăн Кремль çумĕнчен:
Унта малашнехи телей те,
Иртни те — йăлт куç умĕнче.

Куллен эс радио итленĕ,
Мускав сехечĕпе ялан
Ху сехетне эс тĕрĕсленĕ,
Ак халь çав сехете куран.

Пĕр башнинчен тепри мăнаçлă,
Пăхатăн эс енчен енне.
Йăм хĕрлĕ  çăлтăрсем вырнаçнă
Вĕсен яштак тăррисене.

Мĕскер курман вĕсем — Мускавăн
Çав ватă чул хуралçисем!
Асра кун-çул иртет васкавлăн,
Сайра маяксемпе çиçсе.

...Хаяр Иван. Мĕскершĕн? Паллă.
Ахаль паман пуль çав ята.
Çук, халăх ĕмĕрех чухлавлă —
Шутлать те пат касса татать.

Анчах патшалăх пухаканшăн
Хаярлăх кирлĕ пулнă пуль:
Тулти тăшман чĕр юн сунсассăн,
Шалта хăш чух юхать куççуль...

Каçăрăлса ларать катраммăн
Чиркӳ, Иван хушнипелен,
Пур чаплă архитектора-мĕн
Тĕлĕнтерет вăл халиччен.

Мĕн чухлĕ вăй, ăс-хакăл хунă
Талантлă вырăс ăстисем!
Чăн ăстине-мĕн... суккăр тунă
Патша, куçне йĕппе чиксе.

Чиркӳ те крепăç, чан та тупă —
Патшан тĕрекĕ ун чухне.
Кам халăхшăн çĕкленнĕ — тупнă
Шалча та пуртă хăй çине.

Ав пуç касса вĕлернĕ вырăн,
Паян кунччен те çавăнтан
Пире чĕнет пек Разин хыттăн,
Паян та чĕрĕ пек Çтаппан.

Унччен малтан пĕтни сахал-и?
Кайран мĕн чухлĕ çулăнать!
Пин-пин саспа çав вырăн халĕ
Шари çухрассăн туйăнать...

Эс Хĕрлĕ площадьпе утатăн,
Ăна эс халăх юнĕпе
Тулса хĕрелнĕ пек куратăн
Авалхине асилнипе.

Анчах тискер, усал халапăн
Иртет çав курнăш: вăтăр çул
Эс ирĕк çĕршывра пурнатăн,
Çук сан хăрушă сăтăрçу.

Пур халăх тарăхĕ, асапĕ
Ĕмĕрлĕхех иртсе кайсан,
Асап нихçан тек пулмасса пек
Ларать халь Мавзолей тасан.

Эс ушкăнпа утса черетĕн
Пырса çитетĕн ун умне.
Эс çĕлĕкне хывса кĕретĕн
Чи çывăх ĕмĕтӳ патне.

Çĕршывăн сассине итленĕн,
Ун чапĕпе кăмăлланса,
Асран кайми аттемĕр Ленин
Тин выртнă пек выртать канса.

Ăçтан шанма пултарăн эсĕ
Вăл çуккине? Вăл яланах —
Çĕршыв çути, хăвачĕ, ăсĕ,
Ялан çăвар уççи сăмах.

Унпа эс тĕттĕме тĕп турăн,
Унпа çын пултăн çын çинче.
Ĕнер кăна ялав чуптурăн,
Унта та Ленин сăнĕччĕ.

Пĕр саспалли чухлаймасан та,
Эс çак нефрит хăма çинчи
Порфир çыру мĕнне ăнлан та —
Сана пăрахмĕ ĕç тĕнчи.

Çав пилĕк саспалли тĕнченĕн
Пур пилĕк пайĕ таранах
Йыхрав пек янăрать. Вăл — Л е н и н!
Унпа кĕретпĕр ырана.

Çав шухăшпа хуллен куçатăн.
Анчах — пурнас этем — хăй çук...
Мавзолейрен утса тухсассăн,
Татах салхуланать куçу.

Ак Киров, ав унта Дзержинский,
Ав Фрунзе, Куйбышев... Миçен!
Мĕн пурĕ пурăнмалли çын-çке,
Пуç хучĕç кунĕ пĕтиччен.

Калинин та пире хăварчĕ,
Тин çунă юр пекех таса —
Ватсен канашĕнче ларасчĕ,
Илем кӳрсе, ăс-тăн парса...

Анчах та пур çĕр йăхлă халăх.
Вăл вилĕмсĕр. Вăл паттăрла,
Пурин ятне те, чĕрĕ палăк —
Социализм час тăрлать.

Çĕнтернĕ улăп, лăш курмасăр,
Ĕçлет кунне-çĕрне манса:
«Пулман эп, пулмăп сирĕн тарçăр!» —
Тет ют ăмсанчăк юнасан.

Куçу тĕлне ялан вăл тухĕ —
Мускав ĕçченĕ, сăна çеç:
Пĕр аллинче ун мăлатукĕ,
Тепри ун тытнă кĕреçе.

Е акă эс хĕрарăм курăн,
Асту — тирпейлĕ вăл епле:
Портфелĕ хушшинчех-мĕн унăн
Пирпе чĕркенĕ кĕрепле.

Вĕсем кунĕпеле шаккаççĕ,
Çĕлеççĕ, хисеплеççĕ, тен.
Ĕçрен тухаççĕ те — пахчаçă,
Йăран чаваççĕ тĕттĕмччен.

Йывăрлăха йӳнеçтермешкĕн —
Паранкă, купăста, хăяр
Кил-йыш валли туса илесшĕн,
Ал айĕнчи мĕнрен начар?..

Каçпа çĕр айĕнчен тухаççĕ
Хĕрсем, яшсем, вăйпиттисем.
Кула-кула пит-куç çăваççĕ,
Тăм çеç резина аттисем.

Ун пек ĕçпе епле киленмĕ,
Епле çын пулмĕ мухтавра?
Метро, метро — Мускав илемĕ —
Туратланать йĕри-тавра!

Эс метрона кĕрсе каятăн,
Çĕр айĕнчен тухмасăрах
Малтан юри эс çаврăнатăн,
Пулса куран пур станцăра.

Сехет пек тĕрĕс чугун çулĕ,
Кунта шутлаççĕ секундпа.
Çӳре-çӳре те ыртăн пулĕ
Эс аллă пуслăх билетпа.

«Готов!» — тет янратса чипер хĕр,
Унтан «вперед!» тет. Малалла.
Эс шухăшлан: «Çапла темесĕр!
Е пирĕн кутăн чакмалла?»

Çук, чакмăпăр халь тин пĕр утăм,
Пĕр шит те пусмăпăр калла.
Хура çĕр витĕр çул çап-çуттăн
Выртать уяр ыраналла.

Нимле хура пире пӳлеймĕ,
Усал тĕнче ан та хускал!
Çĕкленнĕ çурт-йĕр тӳпеленĕ,
Тӳпи ун пулĕ — çĕн Мускав.

1946

## ÇĔНТЕРӲ

Çĕнтерӳ! Паян мар вăл çуралчĕ,
Çук: «Аврора» туппин залпĕпех
Кĕрхи Питĕр çинче вăл çуталчĕ,
Шар çурса, аслати çапнă пек.

Броневик тăрринчен тăснă алă
Çул кăтартрĕ пире ун патне.
— Ленин! — терĕмĕр те, асăнмалăх
Чĕрене çыртăмăр ун ятне.

Çĕнтерӳ! Днепрпа Волхов шывĕ
Çĕр çинчех çăлтăрсем çутиччен,
Магнит ту ăшĕнчи тимĕр — шĕвĕ
Чугун-хурçă пулса юхиччен,

Горькири заводран минутçемĕн
Çĕн машина куçса тухиччен,
Мускаври метропа пин-пиншерĕн
Каллĕ-маллĕ этем хутличчен

Яланах пирĕнпе пултăн эсĕ,
Ç ĕ н т е р ӳ — çĕмĕрен пек сăмах!
Атăл çуннă çула асилес-и?
Эс унтаччĕ — кашни окопрах.

Çав çултан, çĕршыв шанчăкĕ евĕр,
Хытăран хытăрах янăрать
Тĕнчене тĕлĕнтернĕ пĕртен-пĕр
Нихăçан манăçми С т а л и н г р а д.

Сталинград. Вут, тусан, йӳçĕ эрĕм.
Ишĕлет çӳл тӳпе, çĕр чĕтрет.
Çын кăна чĕтремен. Чĕтремерĕм
Эпĕ те — тимĕрччĕ пирĕн рет.

Ĕмĕрте тĕрлине курма килĕ, —
Сарлака тетпĕр ун саккине.
Анчах кам, кам, манран тытса илĕ
Вутлă Атăл чĕрин таппине?

Вăл — юнра. Кирлĕ чух вăл вăранĕ.
Икĕ пинмĕш çулсем хыçĕнчен
Сталинградăн патвар ветеранĕ
Хăй патне пин-пин çын пухĕ, тен.

«Мĕнпеле çиеле тухрăр? — тейĕç
Çутă куçлă яшсем ун чухне, —
Штыка штык, туппа тупă, хĕçе хĕç
Хирĕç тăнă-çке-ха пĕр-пĕрне...»

Аслă тĕрĕслĕх! Акă мĕскерччĕ
Хул çумне чĕрĕ вăй хушакан.
Ни сивви, ни выççи, ни чун терчĕ
Хутлаймарĕ пире унпалан.

Пуç усми ветеран, çирĕм пĕрмĕш
Ĕмĕре çитсе кĕнĕ салтак!
Тав сана! Сан яту çĕрте çĕрмĕ,
Хăвăнне эсĕ тунă йăлтах.

Тав сана, ни граната, ни пульă
Çĕнейми пĕр çарти тусăм ман!
Тен, сан çурăм çинче çыртăм пулĕ
Йĕп-йĕпе окопри săвvăма.

Тен, санпа траншейра каçăн-ирĕн,
Кукленсе тăп-тăвăр хушăка,
Пер хуран пăттине эпĕ çирĕм,
Шăлнă пек çуласа кашăка.

Тен, санпа, çĕрĕпе куç хупмасăр
Ракетсем çуннине сăнаса
Эп çĕклентĕм ирех, сансăр-мансăр
Çĕнтерӳ çуккине ăнланса.

Тав сана, Сталинград ветеранĕ!
Канлĕ пултăр сан тимлĕ чĕрӳ.
Санпала юнашар вăл чысланĕ —
Çиçĕм куçлă таса Çĕнтерӳ.

Çĕнтерӳ! Плащпалатка уртса вăл,
Каскă айĕн пăхса çивĕччĕн,
Пычĕ — тӳсĕмлĕ, тертлĕ те савăк —
Атăлтан Рейн хĕрне çитиччен.

Тăхланпа хурçă айĕн пĕр шиксĕр
Вăл çул тытрĕ Берлин варрине.
Ĕçпе мир ялавне çулăм витĕр
Вăл хăпартрĕ рейхстаг тăррине.

Паян кун тава тивĕçлĕ паттăр
Нефть уçлать, тăрмашать шахтăра.
Çеçен хир варринче те куратпăр,
Тайгара та эпир паттăра.

Сарă хăйăр çинче ешĕл йывăç
Ӳссе ларĕ, хумханĕ вăрман.
Тарăнланĕ кӳлли, юхан шывĕ,
Гранитпа карлăкланĕ çыран.

Мускавран, Хусантан, Урал урлă —
Инçетри Çĕпĕртен, кăнтăртан
Çĕн ăста, çĕн машина, вăй-пурлăх
Ăсанать Атăлпа аната.

Ман республика та — Атăл çĕрĕ:
Шупашкар, Куславкка, Çĕмĕрле —
«Сталинград!» терĕ. «Куйбышев!» — терĕ,
Ĕç вĕрет, шăранать, кĕр-кĕрлет...

Çĕнтерӳ! Тĕнчери çак пĕртен-пĕр
Ĕмĕрлĕх тăвакан çурт-йĕре —
Коммунизм кил-çурчĕ вăл тетпĕр,
Ун тӳпи курăнать халь пире.

1951

## ШИНЕЛЬ

Кăвайт хĕлхемĕ вĕтеленĕ,
Тăхлан та тивнĕ аркăран.
Тăп-тăп шинель, салтак шинелĕ,
Эс шăппăн çакăнса тăран.

Анчах çав шăплăхра мĕн евĕр
Тав-шав, инçе çулсем, тупа!
Тăван çĕршывăмăр-аннемĕр
Пĕркеннĕччĕ пуставупа.

Шинель! Айри тӳшек те пултăн,
Çири вителĕк те эс ман.
Лӳшкентĕн çумăрпа та, çунтăн
Хĕвелпеле те — аптраман.

Чылай туссем выртса та юлчĕç
Санпа яланлăх чăрканса.
Çав паттăрсем чару пек пулчĕç —
Нихçан тек юн тăктармасса.

Шинель! Чапна пĕлсе пăхатăп
Ĕç хушшинчен эп сан сăнна.
Эс хӳтĕ, шанчăклă, паха та,
Ансат манаймăп эп сана.

Санпа аса килет кĕрхи çĕр,
Кăвар пек пĕлĕт, çуннă хир.
Юн шывĕ урлă, çулăм витĕр
Каçсаттăммăр, шинель, эпир.

Ялта мăрьесем çеç ларатчĕç
Хура юпа пек юнаса.
Ларатчĕ кăмрăкланнă сачĕ
Уксах-чăлах пек йăлăнса.

Шинель! Эс ĕнтĕн, эс хуралтăн,
Тасалтăн та эс юрпала.
Часрах тӳлек ĕçпе пурнасшăн
Санпа эп тăтăм хурала.

Ват салтакпа, вăл темĕн те пĕр
Курнисене чунтан-вартан
Хисеплесе калаçнă евĕр,
Эп калаçатăп санпалан.

Эс хӳтĕ, шанчăклă, паха та:
Часран-часах халь сан çине
Эп шухăша кайса пăхатăп,
Мухтавлă, тӳсĕмлĕ шинель!

1952

# КĔВĔЛЕНМЕН ЮРĂСЕМ

* * *

Шупашкара çитсе пыруçăн
Тинкертĕм тăрă Атăла:
Сана асилтĕм, чакăр куçăм,
Санпа çĕклерĕм кăмăла.

Силлерĕ-çке пире шăпамăр,
Силлерĕ Атăл хумĕ пек.
Салантăмăр та пухăнатпăр
Чун патĕнчи ĕмĕтсемпе.

Вĕçет ман шухăш Атăл урлă,
Çумма хушайăттăм çунат!..
Паян кампа ларса эп юрлăп?
Чĕрем пĕр саншăн çеç çунать.

1945

* * *

Чечек çуратчĕ çуркунне,
Юрлатчĕ кайăк юрă.
Мана савнийĕм ун чухне
Пĕрремĕш хут чуптурĕ.

Сасартăк улшăнчĕ тĕнче:
Ялтрать вăл асаматлăн;
Çиçет, вылять куç умĕнче
Йăлт симĕсĕн-кăвакăн.

Кĕвĕçнĕ пек, ман куçăмран
Чечек пăхса сăнарĕ.
Пыл хурчĕ хăй çине ларсан
Чечек вара... пăхмарĕ.

1945

* * *

Мĕскер, мĕскер эс ман куçран
Чĕнмесĕр тинкерсе пăхатăн?
Мĕскер курасшăн ăнсăртран
Куç хӳрипе сăнатăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп санăн.

Мĕскер, мĕскер эс кулянан,
Сисмесĕрех сывлатăн ассăн?
Е пысăк хурлăх курнăран
Савăнăçна шанмастăн?
Çавах эп, шан! Çавах эп, шан!
Ĕлĕкхиллех эп — санăн.

1945

* * *

Ах, эп курсаттăм мăшăр куç —
Хура та мар, кăвак та марччĕ.
Мĕскер-ши ку, мĕскер-ши ку? —
Пĕрре пăхсах вăл пăхăнтарчĕ.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

Сăхлантарать те илĕртет,
Кӳлештерет те шантарать вăл.
Лăплантарать те тилмĕртет,
Çут тĕнчене йăлт мантарать вăл.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

Хăш чух ачаш, хăш чух хаяр,
Хăш чух тӳлек, хăш чух каварлă;
Хура та мар, кăвак та мар —
Юратупа вăл пĕр сăнарлă.

Ытараймастăп эп ăна,
Кăмăлăмра та çав кăна.

1945

* * *

Атӑлтан тухать ҫур уйӑх
Парӑс евӗр карӑнса.
Час кураймӑп сана урӑх,
Час манаймӑп парӑса.

Сывӑ пул, сӑпайлӑ пул,
Тутӑр тыт та алӑ сул!

Хум ҫӗклерӗ, хум силлерӗ
Манӑн пӗчӗкҫӗ кимме.
Куҫна ан шӑл эс, чиперрӗм,
Эп каймастӑп-ҫке вилме.

Сывӑ пул, сӑпайлӑ пул,
Тутӑр тыт та алӑ сул!

Йӑлӑмра ем-ешӗл улӑх,
Ҫутӑ-ҫутӑ кӳлӗсем.
Киммӗм тавӑрӑнӗ тулӑх,
Эс мана кӗте пӗлсен...

Сывӑ пул, сӑпайлӑ пул,
Тутӑр тыт та алӑ сул!

1946

* * *

Курсам, мӗнле илемлӗ Атӑл!
Уҫ кантӑкна, уҫ кантӑкна.
Ман юррӑма пулсам эс хапӑл —
Самант кӑна, самант кӑна...
Уҫ кантӑкна!

Итле, мӗнле тӳлек шыв анӗ:
Пӗр хум та ҫук, пӗр хум та ҫук.
Ман кӑмӑлӑм хӑҫан лӑпланӗ?
Лӑпланас ҫук вӑл сансӑр чух,
Лӑпланас ҫук.

Шыва кӗрет чипер хӗр-уйӑх,
Сар ҫивтине вӑл сапалать.

Ман чунăмра пĕр çутă хурлăх:
Ялан пуласчĕ санпала,
Ялан çапла.

Пире пиллет пур çутçанталăк.
Уç кантăкна, уç кантăкна.
Çак юррăм юлтăр асăнмалăх —
Сана кăна, сана кăна...
Уç кантăкна!

1946

* * *

Шупашкар çăкисем çеçкере,
Урамра пыл шăрши, пыл шăрши.
Ман курасчĕ сана кĕçĕрех,
Пахчана пымăн-ши, пымăн-ши?

Пахчара улах мар-çке тесе
Пĕрĕнсессĕн хура куç харши,
Манăн пĕчĕк кимме ĕненсе
Йăлăма каçмăн-ши, каçмăн-ши?

Шăпчăксем юрлама пуçласан,
Атăл тăрăх каять ши те ши.
Саварах çавăрса юрласан,
Ман сасса илтмĕн-ши, илтмĕн-ши?

Шупашкар çăкисем çеçкере,
Çеçкере пĕтĕм аслă çĕршыв.
Юратасшăн çунсассăн чĕре,
Мĕнле шыв сапăр-ши? Сапăр-ши?

1951

* * *

Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ,
Яр уçатăп кантăка.
Вĕçрĕ кĕчĕ пĕр чĕкеçĕ,
Чĕртрĕ манăн шанчăка.

Ереветлĕ те теветлĕ —
Ачаран астунă пек.
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтетрĕ
Хăйĕн çепĕç чĕлхипе.

Виççĕ çаврăнчĕ те тухрĕ,
Уçă юлчĕ чӳрече.
Тав юрри хавассăн юхрĕ
Янкăр пĕлĕт айĕнче.

Манăн чунăм çунатланчĕ,
Тем çĕклерĕ кăмăла.
Чĕкеç пек вĕçет ман шанчăк
Çӳлелле те малалла.

1952

* * *

Пăлтăра шăналăк карнă
Шăнасем аптратасран.
Тӳшекне хăпартса сарнă,
Минтерсем — мачча таран.

Кирлĕ мар мана минтерĕ,
Сăхланмастăп тӳшеке,
Ма тесен сăмах чĕнмерĕ
Эп пуплес текен пике.

Юрĕ, юрĕ, ăш хыптармăш,
Çаплалла иккен телей.
Час ăсанăп акăш-макăш
Атăлпа эп вирелле.

Урăха чĕрем иленмĕ...
Тавтапуç, ытарлă куç,
Ик кун çурăлăх илемлĕ
Асапушăн тавтапуç!

1950

* * *

Шурă-шурă Шупашкар,
Шутламанччĕ килессе.
А-а-ах, апла мар:
Кĕтрĕм Атăл тинĕсе.

Çӳлĕ-çӳлĕ Шупашкар,
Çĕлĕк ӳкрĕ пуç çинчен.
А-а-ах, апла мар:
Пуçа тайрăм чĕререн.

Аслă-аслă Шупашкар,
Асăнмашкăн та хăйман.
А-а-ах, апла мар:
Асăмран та вăл кайман.

1952

* * *

Шупашкарта пур пĕр йăмра,
Вăл лапсăркка та усăк.
Пĕр каç ун айĕн ман çумра
Ларсаччĕ савнă тусăм.

Çав каç пурнать ман чĕремре,
Нихçан асăнмасан та.
Иртейнĕ çамрăк ĕмĕре
Усрать йăмра — ман тантăш.

Епле кĕскеччĕ çав çĕрсем!
Епле тулли, пуянччĕ!
Ма халĕ вăрăм-ши вĕсем?
Ма халĕ чухăнланчĕç?

Пуçне усса ларать йăмра,
Ăна тивмен-ха пуртă.
Пĕччен куляннă каçăмра
Ăна эп кайса куртăм.

Вăл халь те лапсăркка, çăра,
Чĕнет мана: «Кил, кан», — тет.
Ларатăп эп, анчах çумра
Никам та çук... никам та!

1945

* * *

Кăтралана пуçларĕ Атăл,
Хум хыççăн хумĕ чупкалать.
Йăмра турачĕ çăтăл-çатăл —
Пике пек алă хуçкалать.
Мĕскер курать йăваш йăмра
Шыв урлă ешĕл йăлăмра?

Яштак хыра ытараймасăр
Вăл ĕмĕт хыврĕ пулĕ те, —
Хыр, никама пуçне таймасăр,
Кармашнă янкăр пĕлĕте.
Мĕскер курать, мĕскер илтет,
Мĕскер кĕтет вăл? — Хăй пĕлет.

1945

# ЛАТВИРЕ ÇЫРНИСЕМ

## 1. ТАХÇАНХИ ТĂВАН

Хум шавне куллен тăнлатăп,
Тинĕс аллă утăмра.
Гончаров «Фрегат «Паллада»
Çырнă теççĕ çак çуртра.

Ун ятне кун-çул сыхланă:
Гончаров урамĕ пур.
Латышсем ăна ăнланнă:
Пур çĕрте те пĕр хĕн-хур.

Типнĕ те ешернĕ сачĕ;
Тинĕс пулнă, иксĕлнĕ;
Тӳннĕ патшасем... Писатель
Тунă хăйĕн ĕç-хĕлне.

Ав Аа çырми. Унта-мĕн
Вилнĕ Писарев путса.
Унăн шухăшĕ путаймĕ,
Илтнĕ халăх çав сасса...

Тахçанхи тăван-çке Латви!
Хăйĕн аслă кил-йышне
Таврăнса халь тав тăвать вăл
Аслă вырăс халăхне.

## 2. ПУЛĂÇĂСЕМ

Пĕç тĕп таран резин пахилккепе
Пулăçăсем тухаççĕ кимĕрен.

Качаллă якăр анчĕ ерипе,
Ким лекрĕ хăйăра сăмсипелен.

Кĕрхи çанталăк сĕврĕнкĕ, йĕпе,
Ăна-кăна туймасть хастар ĕçчен:
Шултра тарпа вĕт çумăр пĕрлешсен —
Чухах ăна, пăсланать çех кĕпе.

Панамине ĕнси çине сирсе
Çын тинкерет сивлек тинĕселле,
Те тав тăвать, те хăтăрать хăйле?

Кимми çине пăхать пирус чĕртсе,
Унта йăшăлтатать ав ким тулли
Планран иртсе тытан эртел пулли.

## 3. ТУНСĂХ

Шултра вăрманлă вашăк çыр,
Вак хăйăр — йăлăм хăйăрех,
Çил тапрансассăн — ланкнă хыр
Кушлавăшри пек çĕхĕрет.

Хумсем шавлаççĕ кун каçа,
Пĕлетĕн тинĕс иккенне.
Куçа хупсан, çавах та çав
Илтетĕн Атăл кĕввине.

Хура ураллă шур чарлан
Асилтерет вирьял хĕрне...
Тăван çĕре тунсăхлакан
Курать ăçта та ун сăнне.

Анчах тăван çĕр чиккине
Çуралнă çĕр çеç ан кĕтĕр:
Тăван çĕршыв вăл ку чухне —
Пăшалпалан сыхланă çĕр.

## 4. ПАКШАСЕМ

Хĕрлĕ çыр хĕрринче
Хĕрлĕрех хыр вулли.
Пакшасем ир çинче
Хыр турачĕ тулли.

Хыр вулли çийĕпе
Унталла-кунталла,
Тем патне çитнĕ пек,
Мăшăр чун кумкалать.

Ним те мар пĕр хĕрсен
Тункату, турату,
Хăлаçшар пулĕ, тен,
Ыткăнать юрату.

Çавнашкал: пур чунтан
Тухакан сăмаха
Чару çук нихăçан,
Вăл яланлăх паха.

## 5. МĔНЛЕ-ШИ?

Пĕрремĕш сарă çулçăсем
Чăпарлатаççĕ вăрмана.
Кĕрхи вăрман, саралнăçем,
Пĕртте илемсĕр мар мана.

Пĕрремĕш шурă пĕрчĕсем
Чăпарлатаççĕ пуçăма.
Чăнне пĕлесшĕн ман чĕрем:
Мĕнле-ши эпĕ тусăма?

## 6. ЁМĔТ

Питĕ лăпкă, питĕ,
Тинĕс тилĕрмест.
Хырăн пĕр йĕппи те
Хускалса илмест.

Тавра курăм çĕтрĕ:
Çутă шывпалан
Уйрăлми ун йĕрĕ
Хутăшрĕ паян.

Ак çапла, тăванăм,
Пĕтĕм чунпала

Хутăшасчĕ манăн
Ĕмĕр санпала.

## 7. САРĂ СĂВĂ

Сарă хăйăр, сарă Балти,
Хĕррипе — сап-сарă хум.
Ыттинчен ытла пулатчĕ
Пляж çинче те сарă тум.

Пĕлĕте те сарă ернĕ,
Калăн — сарă çу сĕрнĕ...
Ахаль мар я н т а р л ă теççĕ
Латышсем хăйсен çĕрне.

Сарлака çынсем ĕçеççĕ
Сарă Рига сăрине:
— Астивсе пăхсамăр, — теççĕ, —
Мĕн тути каланине! —

Чăваша тĕлĕнтереймĕн
Сăрапа эс ĕмĕрне.
Тытрăм лăпкăн та тирпейлĕн
Вĕртĕм сарă кăпăкне.

Сар курка тĕпĕнче куртăм
Сарă çӳçлĕ сар хĕре.
Темле тунсăх, темле туртăм,
Темшĕн çуннă пек чĕре...

Аслă çĕр, этем çĕршывĕ!
Пĕр хĕвел те çав тĕнчен,
Х а м ă р ен тени пит çывăх,
Çӳç шуралнăçем чечен.

## 8. ХУРАКĂШСЕМ

Хуракăшсем вĕçеççĕ кăнтăра,
Хури пĕри те çук, йăлт шурă.
Карта канма ларсан ман çĕршывра,
Хура хуракăш пек хĕр курĕ.

Кайăксенчен мĕскер ăна калам? —
Манман вăл, астăвать вăл, тейĕр.
Çунатсерен хĕстерĕр пĕр салам,
Ах, тинĕсе ан ӳкĕрсемĕр!..

## 9. ЛĂПЛАНУ

Тăрса юлчĕ аякка
Савнă сăн-сăпат.
Хыр çинче улатакка
Телеграм çапать.

Пăнчă-пăнчă е тире,
Сăмахпа тулса,
Мĕн кӳрет каçа-ире
Аякран ку сас?

Эп ăна вулап иккен
Ак çапла ку чух:
Юратать теп, ма тесен —
Унсăр пурнăç çук.

## 10. ШĂНКĂРЧĂСЕМ

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрчă
Çунат çапрĕ, шăхăрчĕ.
Пурнăç çитнĕ-шим? — Юрлать
Кĕркунне те çурхи пек.
Вăл иккен савса ырлать
Çак çĕре хăй юррипе.
Вăл разведчик пек иккен
Килнĕ хăйĕн пулккинчен.
Акă ларчĕç, куртăм тин:
Пĕрре мар, çĕр мар, тен, пин!

Сырса илчĕç йывăçа,
Сăрса илчĕç çереме.
Кĕç тапратрĕç явăçса
Йăпăр-йăпăр çӳреме.

Курнине-пĕрне сăхать
Выçнă ушкăн çĕр çинче.

Вăй хушас пулать çав-ха,
Çулĕ-йĕрĕ пит инçе.

Савăнса та, пĕр-пĕрне
Йăпатса хăй чĕлхипе,
Ăманне-кăпшанкине
Иртрĕç пинĕ-пинĕпе.

Пилеше те ăнсăртран
Сăхса пăхрĕ пĕр пуçтах.
Йӳçĕ туйăнчĕ, куран,
Вĕçсе анчĕ çавăнтах.

Ак хуралçă шăнкăрчă,
Хыр çинче лараканскер,
Чăрăлтатрĕ чăр-чăр-чăр,
Хыпарларĕ темĕскер.

Ушкăн харăс пухăнчĕ,
Вăрр çĕкленчĕ пĕлĕте.
Хурт марти пек курăнчĕ
Пĕр самант вăл ман тĕлте.

Балти тинĕс хĕррипе —
Пĕр хăйсем кăна чухлан
Кайăк-кĕшĕк йĕрĕпе
Вĕçрĕç... çĕтрĕç ман куçран...

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрчă!
Ман çĕрте те канăрччĕ,
Киллĕ-çуртлă çынсене
Хапăл тăвăр çитсенех:
Анине те çаранне,
Пахчине те вăрманне
Пулăшсамăр тасатма.
Эп сире ăсатнă пек,
Тен, ман тус унта ирпе
Тухĕ-тăрĕ ăсатма:
— Лайăх таврăнăр! — тесе
Алă сулĕ тем кĕтсе.

Ун арки çине сиртен
Эп ăна савни çинчен

Пĕлтерен кĕвĕпелен
Çак ман сăввăм пĕлĕтрен
«Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрчă»
Тенĕ пек тăкăнтăрччĕ!

## 11. РАК ХУРАНĔ

Кукăр-макăр рак хуранĕ
Парнелерĕ тус мана.
Асăнмалăх вăл упранĕ
Ман патра халь яланах.

Чăвашра эп пурăнатăп,
Пирĕн çĕрĕн тинĕс çук.
Тунсăхлас пулсан — кунта та
Маншăн тинĕс пур ку чух.

Рак хуранĕ çеç тытатăп
Эп хăрах хăлха патне,
Килĕмрех вара тăнлатăп
Аслă тинĕсĕн шавне.

Сарă кăпăк чашкăрни те,
Хум çапни те, тăвăл та,
Тус кулни те, йыхăрни те —
Йăлт çитет халь ман пата.

Эп шутлатăп: тен, лере те
Хăй панчи рак хуранне
Манăн тус тытать пуль тетĕп
Кичемрен хăлхи çумне.

Вăл та, тен, туять пуль халĕ,
Курмасассăн та хама,
Ман канусăр чун хавалĕ
Вĕрекен çак сăввăма...

## 12. ТУРПАС

Çаврака, яка, çап-çутă,
Чул пуль терĕм, вăл — турпас.
Тен, пиншер çулхи çак «чудо»,
Кам ун ĕмĕрне чухлас?

Тен, карап юпи вăл пулнă,
Тен, ким пуçĕ, тен, кĕсмен...
Йĕрĕлче пек тăрса юлнă
Авăра пырса лексен.

Хум ăна куллен çуланă
Шар тăварлă чĕлхипе.
Чăмăрланнă вăл, чулланнă,
Халь хĕвел çинче типет.

Ак çапла: пин-пин сăмахлăн
Шавлакан этемлĕхре
Пĕр сăмахăм сыхлансассăн —
Эп ахаль пусман çĕре.

Дубулты. 1947, август—сентябрь

# СИКТĔРМЕ

## ЯЛĂМА

Сиктĕрме! Савса сиктертĕн
Ешĕл-симĕс сăпкунта.
Малтанхи хавасăм, тертĕм,
Хура-шурăм — йăлт кунта.

Пĕвĕм-сийĕм аталанчĕ
Пурлă-çуклă çимĕçрен.
Йăлтăртатрĕ пĕчĕк шанчăк,
Чунăм çукчĕ сӳнесрен.

Ăс пухса çынна тухмашкăн
Ĕмĕтлентĕм ачаран.
Пĕр ура пусси те маншăн
Çăмăл марччĕ ку таран.

Ансата эп вĕренменччĕ,
Пуш сăмах та авăртман...
Пит çӳхеччĕ пирĕн енчĕк,
Ăна ылтăн хăпартман.

Пăхăр чĕлĕм кĕркеленĕ,
Чакмапа вут чуль пĕрле,
Ăвăпа табак çӳренĕ
Е темех (сиктĕрмелле).

Çавччĕ мул. Çапах ун хакĕ
Тăнă ылтăн тĕшшине.
Халь те эп туятăп акă
Тивнĕ ăвă шăршине...

Ватăлап та кутăруçăн, —
Упранать-ха ял хевти.
Сиктĕрмеçĕм! Тайăл, пуçăм,
Сан хура çĕрне çити!

1957

## НЕСĔЛ

Эпир тутар çĕршывĕнче пурнатпăр,
Виç чĕлхепе пĕлетпĕр калаçма.
Анчах унта та пур-мĕн Улăп паттăр,
Пĕр çавăнпах чăваш теп эп хама.

Çеçен хирпе мал еннелле каюçăн
Канмашкăн ларнă Улăп асатте,
Çăпатине силленĕ те кануçăн
Ик мăн тĕме туса хăварнă тет.

Çав ик тĕме хушши шăп пилĕк çухрăм,
Унта вырнаçнă пирĕн Кивĕ Ял.
Ял пуçĕ пулнă Питтăпай. Ман юррăм
Пуçлантăр çавăнтан эппин кăçал.

Питтăпайăн ачисем
Ялан симĕс атăллă,
Питтăпайăн кинĕсем
Ялан кĕмĕл сулăллă,
Питтăпайăн хĕрĕсем —
Шĕлтĕр укçа умĕсем.

Çапла юрланă çичĕ ял çынни —
Пĕр тымартан хунанă чăвашсем.
Ик-виç çĕр çул хушши суйи-чăнни
Пăтрашнă самана пăтрашнăçем.

Мускавшăн вăрçă вăрçнă чăвашран
Пуçланнă Питтăпайăн ăрăвĕ,
Хаяр Иван пехилĕ ун ялан
Усраннă тет, — аслашшĕн çырăвĕ.

Ăраманух Лекçей патша чухне
Хăй те хут илнĕ Питтăпай турхан.

Халичченех усраççĕ ун хутне:
Патша ал пуснă тенине куран.

Тавра ялти тав-шавлă ĕçсенче
Хăвăлĕнчен кăларнă çав хута.
Пĕр пек тăман пулин те çут тĕнче,
Ни хураха лекмен вăл, ни вута.

«Хăмла татмашкăн, măйăр пуçтарма,
Çăка сўмешкĕн — ирĕк» тенĕ хут.
Йĕри-тавра кашланă сĕм вăрман,
Пăван сĕрленĕ, çыртнă кукăркут.

Ял-йыш ĕрченĕçем, кăк кăкласа,
Пăри акса тĕшленĕ, вырнă вир.
Пурна киле пĕр несĕл çич касса,
Çич турата пайланнă-мĕн эпир.

1948

## ЯТСЕМ

Ваттисем çапла пуплеççĕ:
Шар çурса сĕм вăрмана
Юлан ут кустарнă теççĕ.
Вырăс курнă та ăна:
«Эй, чăваш, пит ан васка!
Шапку, шапку потерял!» —
Тенĕ-мĕн. Вара ШАПКА
Ятлă пулнă тет пĕр ял.

Тепĕр çыннăн хăраса
Лаши ĕрĕхнĕ тĕлте
Пулса кайнă ХĂРАТА,
Çав ятпах ял халĕ те.

Теприсем — аваллăхра
Хула пулнă вырăна
ХУЛАТУ ятпа вара
Тухса ларнă ыр кăна.

Тепĕр йăхĕ, тавралла
Çын тулса капланнă май,
Пăрăнать вăрманалла,
Çавăнпа пулать ПĂРНАЙ.

Икĕ ялĕ çав тери
Иртнине аван пĕлет:
Анатрипелен Тури
П И Т Т Ă П А Л Ь хисепленет.

Ултă ялăн варрине,
Сиктĕрмелĕх çĕмĕртсем
Йăвă ӳснĕ çĕр çине
Ларнă манăн С И К Т Ĕ Р М Е М.

1948

## СИКТĔРМЕ

Сиктĕрме! Сиктĕрме!
Ĕмĕрхи лĕкĕртисем*!

Йывăр пулнă çав ăнманă
Ĕлĕкхи хура шăпа.
Сыхлансан эпир сыхланнă
Урăм-сурăм кулăшпа.

Кам кăна килсе ан лектĕр
Сиктĕрме кассисене —
Йĕплесе тирсе илнех пĕр
Халăх «çичĕ ютсене».

Хырăç-марăç пуçтарать-и
Йăтăнса килен кантур,
Пупĕ çылăх каçарать-и, —
«Кучченеç» пурне те пур.

Хулăпа чĕн пушă айĕн
Парăмне таткаласан,
Темĕн тĕрлĕн, темĕн майлăн
Хăртнă çын сăмахпалан.

«Кăсăя» тесе виртленĕ
Ахаль мар пĕр тиеке,
«Чĕмере» тесе питленĕ
Пĕр пупне те ĕлĕкех.

---

* Лĕкĕрти — кулса тăрăхлама юратакан (Сиктĕрмере).

Ял-йышсен те ячĕ иккĕ
Яланах пирĕн патра.
Каласа хурать те вичкĕн
Çат çыпăçтарать вара.

Сиктĕрме! Сиктĕрмесем!
Ĕмĕрхи лĕкĕртисем!

Çĕршывне вĕсем пит хытă
Юратаççĕ, ку чăнах.
Тавлашма-тума ан тытăн,
Аяла пулатăнах.

«Шупашкар вăл пуç хула та,
Эс мана унпа ан чыш, —
Сиктĕрме те каях мар-тăр!» —
Тет вара пĕр-пĕр ял-йыш.

«Эпĕр хамăр та столицă
Таврари вуник яла.
Пĕр шкула кăна эс илччĕ —
Вунă çуллăх япала!

Пульнитса мĕне тăрать-тĕр!
Çирĕм-вăтăр çухрăмран
Халăха вăл пуçтарать те,
Мĕн мана эс юптаран!..»

Чăнласах та: каçлă-ирлĕ
Эп тухатăп та хире —
Йĕлтĕр йĕрĕ урлă-пирлĕ
Пур ялтан килсе кĕрет.

Сумка çакнă, малаххайлă
Ачасемпеле хĕрсем
Ярăнаççĕ вунă класлă
Шкулалла нар пек хĕрсе.

Çав йĕрсем, кăшт сĕмленсессĕн,
Маншăн рельссемпе танах...
Пултăрах — сиктĕрмесенĕн
Пуç хули те, пултăрах!

1948

## ПИТТĂПАЙ ÇЕРЕМĔ

Чăвашра нумай ун евĕр
Катасем, уçланкăсем,
Çырмасем, варсем пĕлетпĕр
Иртнине аса илсен.

Паллă çынсене пытарнă
Акăш-макăш чыспала.
Хăшĕ ырă ят хăварнă,
Хăшĕ тухнă усала.

Усалне те, ыррине те
Хисепленĕ пĕр танах:
Пĕри пулнă Киреметĕн,
Тепри — Пӳлĕхĕн, паллах.

Выльăх пуснă, аш пĕçернĕ,
Тăкнă кĕмĕл те нухрат.
Сăрине, пылне ĕçтернĕ
Этемсем, мулне кура...

Чăвашра нумай ун евĕр
Асăнмалăх вырăнсем.
П и т т ă п а й ç е р е м ĕ тетпĕр
Эпĕр те, сиктĕрмесем.

Виççĕр çул суха тивмесĕр
Выртнă çав кăлкан ана.
Пирĕн ватă асаттемĕр
Çавăнта иккен канать.

Çавăнтах-и, тен, пăхсассăн
Ун лаши те, хĕçĕ те.
Çичĕ ял ăна хавассăн
Асăнатчĕ çав çĕрте.

Çимĕкре-мĕнте, хĕр-каччă
Мăшăрланнă тапхăрне,
«Çĕнĕ çын парни» çакатчĕç
Питтăпайăн пуç вĕçне.

Ваттисем унта хыватчĕç:
«Пултăр, — тетчĕç, — тутлăхра!»

Турамсем татса тăкатчĕç
Ун пĕччен тăпри тавра.

Çамрăксем хĕвеле майăн
Юрă-сăвăсемпеле
Çаврăнатчĕç — Питтăпайăн
Ашшĕ çĕрĕ еннелле.

Çĕрпӳрен-мĕн килнĕ вată
Асаттемĕр Питтăпай.
Çавăнпа тĕп чăвашра та
Хурăнташ пире нумай.

Кĕрлĕ-çурлă кайăк-кĕшĕк
Иртнĕ чух калла-малла,
«Салам калăр!» — тетчĕç хăшĕ,
Ал сулса Чăвашалла.

Хальчченех манма пĕлмеççĕ
Пĕр чĕлхеллĕ çынсене:
«Атăл урлă несĕл» теççĕ
Автономирисене.

Хăнана та кайса курнă
Унталла-мĕн хăшĕсем.
Ахаль мар «Канаш» ят хунă
Колхозне те çав вĕсем.

Сăнасан — каях юлмаççĕ
Питтăпайăн йăхĕсем:
Клубĕнче «Айтар» лартаççĕ,
Çырăнаççĕ хаçатсем.

Курăнать «Чăваш Коммуни».
«Хамăр та чăваш та-ха, —
Тет этем, — пĕлес пĕр чунлă,
Хамăр кăмăллă йăха».

«Ячĕ те «Коммуна» авă, —
Тет тепри кăшт тинкерсен, —
Пархатар пурах-тăр çавă
Атăл урлă тăвансен».

Ачасем «Ялав» сиреççĕ
Каç вулав çуртне кĕрсен,
Сăвăсем çырса илеççĕ,
Пăхкалаççĕ картинсем.

Атом бомбине шыраççĕ:
«Кĕлетки, тен, пулĕ ун?..»
Хиросимăшăн хăртаççĕ:
«Шурă Çуртăн хура юн!»

«Аптраман тавраш» вулаççĕ
Килĕрен киле чĕнсе.
Хăйсене унта тупаççĕ
Ĕнерхи салтак çынсем.

Чĕлхине тиркекелеççĕ:
«Хамăр ял та хăй, ай-хай...
Вирьялла çырать кăшт, — теççĕ, —
Çавăрасчĕ хамăр май...»

Виççĕр çул сухаламасăр
Выртнă пирĕн çереме
Сухала пуçларĕ трактор,
Çĕр тапратрĕ çĕнелме.

Хирĕç сас та илтĕнет-мĕн,
Хăшĕн чунĕ ыратать:
Ял пуçне, çул иртнĕçемĕн,
Хисеплет вăл, юратать.

Эс конфликтшăн хĕпĕртетĕн,
Драматург, — кунта килсем:
Ак вĕсем — чăваш трагедин
Çырăнман сыпăкĕсем.

Эп калатăп: пурлă-çуклă
Турамсем таткаличчен,
Măй таран кашлатăр тулă
Питтăпай тăпри çинче!

1948

## ĔНЧĔ

Ĕнчĕ пушмак, шур чăлха...

*Халăх юрри*

Пултарнах çав Питтăпайĕ:
Çирĕн айĕн, çĕмĕрт айĕн
Юхнă пĕчĕкçĕ шыва,
Лăпкăн куç хыва-хыва,
Ĕнчĕпе вăл танлаштарнă,
Ĕнчĕ ят хурса хăварнă.
Те шывех ун пит таса
Выртнă витĕр курăнса,
Те çынни кăшт сăвăç чунлă,
Сăвăç ĕмĕтлĕ пек пулнă?..
Ĕнчĕ-терĕш Чăвашра
Тупăнман-çке-ха ара:
Тарăн тинĕс тĕпĕнче вăл,
Путнă кимĕ çумĕнче вăл,
Тĕрлĕ рак хуранĕпе
Усранать ĕмĕртенпе.
Кăларсассăн — ярăм-ярăм
Шăрçалать ăна хĕрарăм,
Ĕнчĕпе пушмак тавраш
Ĕмĕтре тĕрлет чăваш.
Ĕнчĕпе тĕнче касаççĕ,
Тинĕс урлă та каçаççĕ.
Парнене, кучченеçе
Çӳретеççĕ çав ĕнче;
Уншăн вăрçă тапратаççĕ,
Чун сутаççĕ, пуç татаççĕ.
Ăшă тинĕс хумĕсем,
Паттăр арăн юнĕсем,
Пурнăçпа туллин киленнĕ
Пикесен çитмен илемĕ —
Ак мĕн пысăкăш тĕнче
Пирĕн шывăн ятĕнче.

Пултарнах çав Питтăпайĕ!
Ырлăха-и, шырлăха-и,
Пĕр поэт çуралмаллах
Пулнă пуль ку тавралла.

1948

# КУН ЙĔРКИ

Эп календарĕн листине
Каçах хуратăп çавăрса:
Тăрсассăнах ир-ирхине
Çĕн кун çĕнеттĕр ман ăса.

Куллен эп, Петĕр ĕмпӳ пек,
Ыран мĕскер тумаллине
Çырса хуратăп йĕркипе,
Числа лартсах хăрах енне.

Ак мартăн саккăрмĕшĕ. Ман:
Юр хырмалла, вут çурмалла;
Унтан алла кăшт кантарма
Кăнтăрлаччен ман çырмалла.

Вулав çуртне те çитмелле
Хаçат-журнал пăхкалама,
Унтан ял пуçĕсемпеле
Тивет пулас-ха калаçма:

Арман шăнса ларни çинчен,
Трахпункт мĕскершĕн ерипе
Мĕшĕлтетни çинчен хиврен
Сӳтсе явасчĕ йĕркипе.

Унтан ак литкружок шкулта
Анатрипе тури пирки
Чĕлхе тав-шавĕ тапратать...
Ӳссех пырать ман кун йĕрки.

Пăртак кансассăн, каçпала,
Хĕрарăм кунĕ ячĕпе
Ман «Натали» вуламалла...
Çаплах хĕл те каçатăп эп.

Çапла, сухал хырма мансах
(Тен, ку та пысăк шар-тăр та)
Çĕклесшĕн хамăр колхоза
Ĕçлетпĕр, кам мĕне ăста.

1948

## ЧĔПСЕМ

Сап-сарă чĕпсем
Ешĕл курăк çинче.
«Леггорн, виандот», —
Тет хуçи савăнса.

Мĕнле сăмахсем!
Ĕмĕрне те илтмен.
«Шултра çăмарта,
Самăр аш» тени ку.

Хăлат явăнать
Кăн-кăвак тӳпере.
Автан кăрласа
Пĕлтерет ун çинчен.

Хăрах куçĕпе
Вăл пăхать çӳлелле.
Чăл-пар саланать,
Сарă ушкăн чупса.

Паранкă ăшне,
Помидор айнелле
Кĕрсе йăпшăнать
Сар сăмса, мерчен куç.

«Шимп-шимп» тукалать,
Тĕрĕслет пĕр-пĕрне.
Хуллен... хулленрех
Илтĕнет шиклĕ сас...

Сап-сарă чĕпсем,
Çӳрĕрех ирĕкре:
Автан сыхра чух
Сире тивмĕ хăлат.

1949

## ПУЛТĂРАХЧĔ ТЕЛЕЕ

Вашăкрах шыв хĕррипе —
Чăкăт пек кăмпа.
Сар хĕр утрĕ нӳхрепе
Сарă кăкшăмпа.

Ăсса тухрĕ туллиех
Кăпăклă сăра.
«Пултăрахчĕ телее!» —
Терĕм эп ăшра.

1949

## «ТИКИ-ТИКИ»

Вăтакасра сап-сарă хĕрача
«Тики-тики» тет шурă хурсене.
Вăл хапхаран курать халь хур анчах,
Ăшталанать кӳртесшĕн картишне.

Мăнтарăн, пулăшать ĕнтĕ киле,
Ĕçле пуçланă пиллĕк-улттăрах;
Çап-çавракка кăвак куçĕпеле
Чăр-чăр пăхса илет ютшăнарах.

Вăл вулĕ-ха ӳссен çак сăввăма,
Хăйне паллаймĕ: йышлă ун пекки.
Эп пурăнап çавсемшĕн савăнма.
Ăçта-ши халĕ ман «тики-тики»?..

1961

## ÇУЛЛАХИ КАÇ

*В.К.*

Шур пĕлĕтсем шăваççĕ анăçа —
Пĕри пулать лаша, тепри тĕве...
Кун иртрĕ. Тăрса юлчĕ манăçа
Никамшăн палăрми пур вак-тĕвек.

Ял-йышăмсем ĕçлерĕç уй-хирте,
Анне тăрмашрĕ кил ăш-чиккипе:
Эп килнĕ хăнана, вăл хĕпĕртет
Чун патĕнчи пĕр ĕмĕт çитнĕ пек.

Çеремлĕ картишне ларать сĕтел,
Сĕтел çине сар кăкшăм вырнаçать.
Хӳме çурăкĕнчен каçхи хĕвел
Кĕрекене сентел тĕспе сăрлать.

Эпир сăра ĕçетпĕр тав туса,
Эп кил-çурта сунатăп перекет.
Анчах ман урăххи килет аса,
Куç умĕнче йăлт урăх кĕреке...

Анне сисет. Вара эп сан çинчен
Ирĕксĕрех кала пуçлап ăна.
Ĕçетĕп те — куркамăн тĕпĕнче
Куратăп санăн тунсăхлă сăнна.

Эс — ман хăймаланса йӳçен сăра,
Эс — ман тулли куркам, ман вăй кӳрен!
Санран килет телейĕм пурнăçра,
Чĕрем сана чăнне калать, ĕнен...

Пӳртçи тĕлнех ак хыпрĕ Çич çăлтăр —
Ĕçсе ӳпĕнтерейнĕ алтăр пек.
Ан тив, çаплах кун-çул та çутăлтăр,
Хуркайăк Çулĕ пек ялтратăр тек.

Шав тăсăлать-ха пирĕн калаçу:
Тӳлек уяр! Ăçтан халех выртан?
Умра икерчĕ, тăвараллă çу,
Умра мухтавлă ĕмĕрхи шăрттан.

Вăл, ахăр, астăвать Аттиллăна,
Ăна тутаннă Чингисхан, Тимур;
Хаяр Иван юратнă тет ăна...
Шăрттан! Ун хăйĕн кунĕ-çулĕ пур.

Сып-сывă та сĕтеклĕ хальчченех.
Сыв пултăр малашне те вăл, эппин!
Çĕршер çул витĕр çитнĕ кучченеç
Кĕрекерен вăл тухмĕ паян тин...

Вăрах пырать-ха пирĕн калаçу.
Таçта пытанчĕ уйăх ывăси.
Эпир иксĕмĕрех, никам та çук:
Анне те эпĕ — каскăн йăх асси.

Ак Алтăр Çăлтăр та çавăрăнать,
Атăлалла тăсать хăй аврине.
Тытсам эс, тусăм, тытса чар ăна,
Астив савса сĕнен тав куркине.

Мĕнпе эс йăпанатăн-ши çак каç?
Санран хыпар та çук, чиперĕмçĕм!
Кунти лĕп çил вĕçсе çитсен кас-кас,
Мана эс асăнса илмерĕн-шим?

Епле пулсассăн та, паян сана
Пуриншĕн те чунтан эп тав тăвап.
Никам та мар — пĕр эс, пĕр эс кăна
Мана тытса çыртартăн çак сăвва.

1946

## СĂПКА ЮРРИ

*Атнере*

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!
Ăшă çумăр чаш та чаш,
Ӳс, калчам, çĕклен эс яш,
Çӳлерен çӳле кармаш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш,
Тăшманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!
Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирĕн хурăнташ,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Малалла утсан — малаш,
Каялла юлсан — каяш,
Чăн çултан эс ан аташ.
Çывăр, Аптраман тавраш!

1948

## ТĂВАТĂ ХУРĂН

Тăватă хурăн пахчăрта,
Пĕр тымартан ӳстернĕ пек.
Тăваттăн ӳснĕ хăвăр та,
Ăçта эсир? Йĕр те çук тек.

Атте-анне пире пиллет
Кил-çурт тытма та мул пухма.
Çĕршыв пире парать тивлет
Урхамахла пуçа ухма.

Çĕрмешкĕн лартнă шалчасем
Тапса сикеççĕ тĕкмерен.
Ял-йыш сайра куран сăнсем
Мĕн чухлĕ пирĕн килсерен!

Ытти тăван-пĕтенпелен
Пире кив куçкĕски айне
Çакаççĕ те, хăна килсен
Мухтанкалаççĕ хăш чухне:

«Ку ывăл манăн — Мускавра,
Ку — Хусантах, леш пит инçе,
Сайра çырать те ку хутра, —
Чей янă-ха кучченеçе...»

Çапла атте-анне вара
Йăпантарать чунĕсене.
Тăватă хурăн пахчара —
Тăват ача пек вĕсене...

1947

## ВĔРЕНТЕКЕН

*Н.Я.Яковлевăна*

Çанталăк кĕввине пăхмасăр
Ял хавалне сăнанă тапхăр
Хăш чух çул май, хăш чух ятнех
Кĕретĕп эпĕ ун патне...

Вăл сакăрвунналла çывхарнă,
Пĕр аллă çул класра вăл ларнă —

Ман яланах хисеплекен
Асран кайми вĕрентекен.

Эп пынă кун вара уяв ун.
Тăван çĕршыв тăрăх нумайăн
Çӳреççĕ унăн «ачисем»,
Хăй ак ялтах. Хăш чух кичем...

Ун пӳрчĕ çумĕпе каç-каçăн
Çыру валеçекен утсассăн —
Итлет вăл, тинкерсех итлет:
«Хапха сасси пулмасть-и?» — тет.

Чăнах, чăнах та уçрĕ мар-и?
Хăш хуларан-ши? Кам хыпарĕ?
Мансах каять ывăннине,
Часрах шырать вăл куçлăхне.

Пăхать. Камран иккенĕ — паллă:
Пĕр çирĕм çул палланă алă,
Пăртакçă улăшăннă халь,
Эппин, манман, асилнĕ-ха!..

Çунат ӳссен çапла çав эпĕр:
Йăва тĕлне те пит пĕлместпĕр,
Атте-анне те ют пек, тен,
Мĕнех вара вĕрентекен!

Анчах вĕсем, эпир пырсассăн,
Пире чи хаклипе чысласшăн,
Чунне татса пама хавас,
Епле манас, епле манас!

Ак ман çума таянчĕ карчăк,
Чĕнмесĕр ал тутри кăларчĕ...
Кăшт сывлăш çавăрсассăн тин
Сăмахĕ тупăнать хайхин.

Ятран чĕнейрĕ — эп ĕнентĕм:
Каллех вăл ман вĕрентекенĕм.
Вăл «эс» тет, эп — «эсир»... Вара —
Тытман сĕтел çитти сарать.

Сăмаварне чĕртсе ярать вăл,
Мĕнпур чысне ума лартать вăл,
Çак çавракa сĕтел таврa
Мĕскер вĕçмен-ши ман пуçра!

Пăхам-ха çаврăнса. Хĕллеччĕ...
Çук, çук... ку, ахăр, çуркуннеччĕ:
Сăрланă урайне йĕпе,
Таканлă çăпатасемпе.

Капăртатса кĕрсе ларатпăр.
Тургенев. «Бежин луг» вулатпăр.
Ăна пире вĕрентекен
Хăех куçарнă-ха иккен...

Унтан пире вăл Короленкăн
«Вут çутине» вулатчĕ лăпкăн,
«Малта çапах та — вут çунать!» —
Тени хальччен çĕклет чуна.

Унтан сасартăк çĕнĕ шанчăк —
Нарспи тухйи умра вутланчĕ.
Унпа хăш чух вăл çĕрĕпе
Шкулта ларатчĕ пирĕнпе.

Ун муфтине ăçтан манайăн?
Эпир хĕрсе вуланă майăн,
Пуçне хуллен сулла-сулла,
Çĕклетчĕ пирĕн кăмăла.

Шавлатчĕ Константин таланчĕ:
Ват Михетер те тупăнатчĕ:
Ват Тăхтаман та классенче —
Вунпиллĕкри ачасенчен.

Нарспи-Сетнершĕн пурте çуннă,
Шăпа ямашкăн хатĕр пулнă.
Çав мăшăрта (ăçтан пĕлен?)
Кăшт хамăра та курнă, тен.

Вĕрентекен çавна чухланă,
Пуçламăш ĕмĕте çул панă.
Унтан çул тытнă унпала
Эпир пĕрремĕш журнала.

Унтан... унтан, ман çамрăк сассăм
Кĕрхи автан пек янрасассăн,
Çавахчĕ — çав вĕрентекен —
Мана ĕмĕтлентерекен.

Калас килет ăна: ял-йышăм!
Тăван йăхпа тăван çĕршывшăн
Тепре çуратнăшăн пире —
Тавах сире, тавах сире!

Кам чунĕ сирĕн аллăр витĕр
Тухман-тăр? Кам аса ан илтĕр
Çак пурнăç тинĕсĕ çинче
Эсир тыттарнă ишкĕче*?

Çав йышлă ушкăнра кам çук-тăр:
Учитель, агроном та тухтăр,
Çыравçă, генерал, артист...
Пуриншĕн те ыр ят та чыс!

Пуриншĕн те калап эп халĕ:
Кун-çулăра ирттерĕр канлĕ,
Эсир акни çилпе вĕçмен —
Шăтать, ӳсет вăл кунсерен.

Хăш чух, тен, кăмăлăр та юлнă:
Эпир ачаччĕ, шухă пулнă.
Ӳпкев ан тăвăрсам пире...
Тавах сире, тавах сире!

1948

## ĂМĂРТĂВА

Сап-сарă кĕрĕксемпелен
Ят-сумлă ял-йышсем лараççĕ,
Ăçта мĕн акмалли çинчен
Агрономпа канаш тăваççĕ.

Хĕрсе çитсен калаçура
Уй-хир планне тупса килеççĕ,

* Ишкĕч — кĕсмен.

Министр пек сара-сара
Пуклак пӳрнисемпе йĕрлеççĕ.

«Кунта урпа акас пулать,
Ку сăмсаха пăрça-и, вир-и...
Кăна кантарăпăр... Тулла
Ак çакăнта», — тет бригадирĕ.

«Вара вĕт Ёнчĕ леш енче
Ик çул çĕртме пулать!» — тет сасă.
«Апла тӳрре килмест... нелçе!» —
Тет агротехникĕ пăхмасăр.

Чĕлĕмсене пакка-пакка
Çамка тирĕсене пĕреççĕ.
«Ку виçĕ пусă мар патька!» —
Тесе пĕрне-пĕри тĕртеççĕ.

Хыпар килет Алтай енчен:
Унта хăватлă тырă-пулшăн
Çынсем çĕкленнĕ тет иккен,
Ăмăртмалла ĕçлет тет ушкăн.

Тата ав кӳршĕ районрах
Çĕрĕç геройĕсем ĕрчеççĕ.
Çынтан юлас килмест паллах:
«Эпир — сиктĕрмесем-çке!» — теççĕ.

Сиктĕрмесем — пуçтах вĕсем,
Сиктĕрмесем — мухтанчăк халăх.
Анчах халь мухтанас тесен —
Колхоз чысне çĕкле мухтавлăх.

Унта вăл, тăрăшсан, ырри,
Унтан пур мул та, перекет те.
Тăрăшмасассăн — караври,
Колхоз ятне кăна çĕртетĕн.

Çавăнпалах халь ял-йышсем
Хĕрсе канаш туса лараççĕ,
Мĕнле çĕрте мĕнле этем
Ĕçлессине те палăртаççĕ.

«Ман пултăр ĕçченсен звени,
Эп вăтăр центнер пуçтарасшăн.
Наян вăл Пуçăн Матĕрни!» —
Тет сар хĕр спискине пăхсассăн.

«Мĕскер тăвас çак Плакипе!
Хирте ман ташă-им е вăйă?
Парсассăн парăр Хĕлипе...» —
Тет тепĕр харсăр звеньевойĕ.

«Вĕçри Альтюк, Ехрем Анни...
Кусем хастар выраççĕ. Пырĕ.
Чĕкеç пур ак — парне илни...
Кусемпелен çĕнтерĕп. Çырăр.»

«Ара, Курак Хвеклин ĕçне
Стена хаçатĕнче тиркенĕ!» —
«Тиркенĕ те... тен, малашне
Яла култармĕ вăл, тӳрленĕ...»

Çапла хаяр тишкерӳпе,
Ним пытармасăр, çĕнĕ халлăн,
Мĕн пур Совет çĕршывĕпе
Ăмăртăва тухать ман ялăм.

1948

## ХĔЛЛЕХИ ИР

Вут чулĕ сапнă хĕлхемле
Йăлтăртатать тип-тикĕс юр.
Шур хут çинчи пăнчăсемле —
Сайра пĕр тилĕ йĕрĕ пур.

Кайсан-кайсан çул хĕрринче
Куян туй тунă çĕрĕпе,
Тирпейлĕ сăвăç — сăввинче
Пĕртен-пĕр сăн шыранă пек.

Хир çап-çара. Юр тытакан
Юртан хытарнă хӳтлĕхсем —
Редактор тус мухмăрпалан
Пуçхĕрлĕ лартнă «кайăксем».

Колхоз йĕтемĕ сылтăмра.
Çапса пĕтернĕ кĕркуннех.
Вăл темĕншĕн астутарать
Шупашкарти Пичет çуртне.

Лере — кĕлет, халь «клупинкке»
Тет хăшĕ темĕне пула:
Тулли тĕш-тырă, амикке!
Ман пуç пулинччĕ çаплалла.

Унтан чылай-чылай инçе
Трактористсен вакунĕ ав
Тăват кусатăран çинче
Шăнса ларать пуш сăввăн шав.

Лере мăн Улăп тĕмĕпе
Хурал юпи курнать таçтан.
Курнайăттăм эп çакăн пек
Хам çакăнтан куçса кайсан...

1948

## КУШАК

Аннен барометрĕ — кушак:
Вăл юпана тăрмаласан —
Тăман тухать, йăвалансан —
Çанталăк ăшăтать пăртак.
Эп сан çинчен шутлатăп та,
«Те эс мана саватăн çак,
Те çук?» — тесе аптрап кунта.
Ăçтан тупас-ши пĕр... кушак?

1948

## СĂЛПĂРАН

Кунĕпех юр парăлтатрĕ —
Çерçи пуçĕ пек шултра.
Каçпала шăнтса та лартрĕ,
Шанчăк пурччĕ уяра.

Шур упа пек лăпсăр-лапсăр
Пĕлĕт килчĕ те таçтан —
Асрĕ-кайрĕ тепĕр тапхăр
Кутсăр-пуççăр çил-тăман.

Астăрах вăл — хулăн явлăк
Çыхнă ват хĕл-асанне:
Ман умра çапах тухьяллă,
Çутă куçлă çуркунне...

Аппăн-тĕппĕн, тăйлăк-тайлăк
Уткалать тулти этем.
Шăлтăртатрĕ кĕçĕн алăк,
Çил ачи уçасшăн тем?

Ав чупса кĕрет шап-шурă
Карташне, пусма çине.
Пăлтăрта юрлать вăл юрă,
Тытрĕ алăк хăлăпне.

Çил улать уланăçемĕн,
Кĕнчеле арлать анне,
Çул çинчи иртен-çӳреншĕн
Çунтарать вăл чĕрине.

Карăнса илет ун пичĕ,
Йĕкине чарать алли.
«Утăмран маяк ларинччĕ
Аташса çĕтен валли...»

Асăнать илти-илтми вăл
Çул инкекĕ нушине,
Чухлаймасть пĕртен-пĕр ывăл
Ĕмĕрех çул çинчине.

Чухлаймасть вăл: ман кăварăм
Çынсене ăшăтнипе,
Тен, эп хам шăна пуçларăм, —
Чун сасартăк кӳтнĕ пек...

Шур упа пек лăпсăр-лапсăр
Пĕлĕт килчĕ те таçтан —
Асрĕ-кайрĕ тепĕр тапхăр
Кутсăр-пуççăр çил-тăман.

Астăрах вăл — хулăн явлăк
Çыхнă ват хĕл-асанне:
Ман умра çапах — тухьяллă,
Çутă куçлă çуркунне!

1948

## ТĔТĔМ

Тӳлек. Мăрье тĕтĕмĕсем
Тӳп-тӳрĕ хăпараççĕ;
Мана темскер асилтерсе
Çӳле-çӳле каяççĕ.
Куймак шăрши кĕрет: çынсем
Çăварнине чысласçĕ.

Вĕри шывпа пăшăхласа
Пичĕкесем чӳхеççĕ;
Çăка пылне ăса-ăса
Симлеççĕ, йӳçĕтеççĕ;
«Тавтапуçах ку колхоза!» —
Тесе ĕçсе çиеççĕ.

Пĕр-пĕр ватти мана курсан:
«Тавсси, ял-йыш, тавсси, — тет, —
Алхасрăмăр алтăрпалан,
Халь пӳрнески те çитĕ.
Пĕрле пурнатпăр-ха, тăван,
Пире çав хаклă питĕ».

Йĕс чĕлĕмне чаваласа
Хыпать вара хăяккăн,
Вут чуль çине «уне» хурса
Чакма çапать хăватлăн:
«Пурнасчĕ-ха, электритсă
Çутса курасчĕ манăн!..»

Вара, вутне сулла-сулла
Кăшт амалантарсассăн,
Хăй чĕлĕмне, кула-кула,
Чĕртсе ярать вăл танлăн.
Прометейрен тăван пулас
Ку çын! — тесе пăхатăн.

1948

## АР ТАШШИ

Арăм çук — парăм çук,
Хуньăм çук — хуйхăм çук.
Пуç тавра шухăшласан —
Санран савнă çыннăм çук.
Тух, тух, тух, тух!

Çул çук, йĕр çук,
Ни урапа, ни çуна.
Вун çич çулхи хĕр çук,
Ăшăтайăп-ши чуна?
Тух, тух, тух, тух!

Ах чух, эпĕр чух,
Йĕкĕт чух, хĕр чух,
Икĕ чун пĕр чух,
Пӳрне тулли çĕрĕ чух!
Тух, тух, тух, тух!
Ух!!!

1948

## МУНЧА ÇЕММИ

Лăнчăк-ланчăк мунчала,
Атя, карчăк, мунчана.
Кăна пĕлнĕ пулсассăн,
Каçах хутса хурас-мĕн.

Милки — Милентей,
Сĕлти — Селентей,
Чаш-чаш, çат-çат,
Çап! Çап! Çап! Çап!

Аллă арлăх артак пур,
Хĕрĕх хĕрлĕх хĕрӳ пур,
Çирĕм çынлăх сĕрĕм пур,
Иксĕмĕршĕн техĕм пур.

Милки — Милентей,
Сĕлти — Селентей,
Чаш-чаш, çат-çат,
Çап! Çап! Çап! Çап!

## ВАК ХĔРРИНЧЕ

Вак хĕрринче пăрланнă килĕ
Выртать хăяккăн ӳпĕнсе.
Çине тăрса вĕрен ир çилĕ
Шăпах лăпланчĕ тĕлĕнсе.

Шуратнă чĕкĕнтĕр пек хĕрлĕ
Вĕлтлетрĕ çара çанлă хĕр;
Пăсланчĕ сăмавар манерлĕ
Кӳрнеклĕ, çыпăçуллă кĕр.

Ун çурăмĕ çинче пĕр çулçă.
Чупса пырса вăл хăвăртрах
Вакран шыв ăсрĕ те — йăл кулчĕ,
Чаш! — ячĕ пуçĕ тăрăхах.

Çине тăрса вĕрен ир çилĕ
Шăпах лăпланчĕ тĕлĕнсе.
Вак хĕрринче пăрланнă килĕ
Выртать хăяккăн ӳпĕнсе.

## ЁМĔРХИ

Сар çӳпçе пек тулли уйăх
Тухрĕ Тукасран.
Сиктĕрме хĕрне пĕр каччă
Çаклатать, куран.

Пăшăл-пăшăл пăшăлтатрĕç
Пĕр пӳртре хĕрсем;
Юптара пуçларĕç тĕрлĕн,
Каччăсем кĕрсен.

«Счетовод кунта-и? — терĕ
Пĕр хитри, çинçи, —
Кĕçĕртен колхозăн йышĕ
Чакнă темеççи?..»

Кантăк умĕн тĕрĕлтетрĕ
Тимĕрлĕ çуна...
Ыр сунар, эппин, атьсемĕр,
Икĕ яш чуна!

## ХĔР

Мăшăр кĕмĕл сулă,
Шăрçа куçлă çĕрĕ.
Ку пулсассăн пулĕ
Пирĕн ялăн хĕрĕ.

Кулсан — купăс саслăн,
Пăхсан — çиçĕм çиçнĕн.
Юрă пуçласассăн —
Кунĕн-çĕрĕн итлĕн.

Мĕншĕн вăл ан култăр,
Мĕншĕн вăл ан çиçтĕр:
Ун ĕçкунĕ пур-тăр
Сахалтан та виççĕр.

Юр тытма тухать-и,
Сăвăрать-и тырă —
Унăн пурте хатĕр:
Йăлт тирпейлĕ, ырă.

Пуçĕнче шаль тутăр,
Уринче кăçатă.
«Ял кая ан юлтăр!» —
Тет кирек ăçта та.

Ялĕн ячĕ чыслă,
Çыннисем хисеплĕ.
Хĕрĕсем те йышлă,
Каччисем те шеплĕ.

## ХĔР ЮРРИ

Виççĕр утмăл ĕçкунне
Мĕн тивмест-ши кĕркунне?
Эй, бригадир!
Ун чухне ман çӳпçипе
Пулĕ тутăр та кĕпе,
Пӳс, катан пир...

Çийлĕ-пуçлă хĕрсене
Кам куç хывмĕ вĕсене?
Хам суйлăп эп!
Мăк сухала каяп та,
Пĕчĕк папак тăвап та —
Ух! — сиктереп.

Пăхса юлччăр йĕкĕтсем,
Маларах сисеймесен, —
Хам эп хуçа.
Аллăр ылттăн пулмасан,
Çавăраймăр калаçса
Манăн пуçа.

## ВĂТĂР ПĔРРЕМĔШ ÇУРКУННЕ

Февраль алхасрĕ кунĕн-çĕрĕн,
Вĕçне çитсе çывхарнăçем
Уларĕ, ахăрчĕ тем тĕрлĕн,
Январь йăваш пулнишĕн тем?

Анчах çĕнеймĕ хĕл-асамçă:
Нăтăртатать нӳрленнĕ март,
Чăхсем хаваслăн какалаççĕ,
Кăвакалсем те нарт та нарт.

Сар вăкăр карăнчĕ патваррăн,
Чавать чăмăртанан юра;
Унтан, пуçне усса, йыхравлăн
Тăсать вăл ĕмĕрхи юрра.

Ав конюх алсатуль хĕстерчĕ,
Хăла утне вăл хырчăклать.
Хӳме çинчен чавка тинкерчĕ,
Çăмне вăрлас шутпа ларать.

Тимĕрçĕсем хĕрсе ĕçлеççĕ,
Шынлаççĕ урапа иртен.
«Мĕскер вăл хăлтăр-халтăр, — теççĕ, —
Пулсассăн пултăр тимĕртен!

Тăвар тĕреклĕ акапуçĕ!
Вăрçа пула пайтах гектар
Мăян та эрĕм хурри пулчĕ,
Кăçал унта кулач акар...»

Йӳле шинеллĕ председатель
Вите аяккипе иртет.
Ирпе ирех ăна курсаччĕ
Эп вăрлăх суртлакан çĕрте.

МТСран директор килчĕ,
Ал пусрĕç договор паян.
«Комбайн-самоход килинччĕ!» —
Тесе саланчĕç пухуран.

Хĕвел хĕртет. Пахчаçă Уçăп
Панча та вăрлăх тĕрĕслет.
«Тепре, тен, выстăвка çул уçăп», —
Тесе кăçал ĕмĕтленет.

Сăра хуранĕ евĕр кавăн,
Чукмар пек чĕкĕнтĕр, кăшман,
Сухан та пăрăç — тутансассăн
Кăвар хĕмлентĕр куçунтан!

Сĕткенлĕ, уйăп пĕсехи пек
Помидорсем, пуç пек арпус,
Чӳлмек пек тын, сӳс кисĕппи пек
Хăяр тăвасшăн Уçăп тус.

Ыхра лартса ыр куртарасшăн,
Çĕр хут кипкеллĕ купăста...
Пулманнине те пултарасшăн
Кăçал пахчаçăмăр-ăста.

Тумла юхать. Пăр ирлĕ-каçлă
Сап-сарă кишĕр пек шăнать.
Хуралтă тăррисем хыраççĕ,
Пӳртре сас пачĕ пĕр шăна.

Çулсем çинче хуралчĕ тислĕк,
Çĕр кĕскелет кĕскелнĕçем.
Час акă тĕрлĕ кайăк тĕслĕ
«Кулюк» пĕçерĕç инкесем.

Ачи-пăчи вара, тем çитнĕн,
Лупас е улăм тăрринче
Çăвар карса çухрашĕ вирлĕн
Сасси йăлтах тытăниччен:

«Кулюк! Кулюк! Çӳлтен çӳле вĕç!
Ыран ирех Сиктĕрмене
Шăнкăрчăсем килеççĕ!» — тейĕç,
Вĕçтерĕç тулă чустине.

Улатакка чупать хыр çиййĕн,
Итлет, таккать вăл кат та кат.
Пăхсассăн — çитĕннĕ çын тейĕн —
Ман кӳршĕ ывăлĕ, юннат.

Пăта хыпса тапаçланать вăл
Тем çӳллĕш йывăç тăррине.
Мăлатукпа шак-шак шаккать вăл,
Юсать хăй шăнкăрчин пӳртне.

Ватти пуплет: «Ăнать пуль тырă, —
Чӳречене шăнатчĕ вир.
Юр хулăн пулчĕ... Çур мĕн çырĕ...
Вара — калаçăпăр эпир!»

Яшсем çанталăка шанмаççĕ:
Кирек мĕнле килсен те хĕл,
Чăх-чĕп каяшĕ пуçтараççĕ,
Пухаççĕ пуркăн-пуркăн кĕл...

Çапла кăçал тăван çĕршывăн
Пĕр пĕчĕкçĕ кĕтессинче
Хатĕрленет чăваш хĕр-ывăль
Эртеллĕ, хăнăхнă ĕçе.

Çапла каллех яш пионерăн
Тăрать тĕнче умне çĕнни —
Коммунистсем пуçланă эрăн
Çак вăтăр пĕрмĕш çуркунни.

## СЫВĂ ТĂР, ХĔВЕЛ!

Эрешлĕ юр хăрпăкĕсем
Ман пăрлă кантăкăм çине,
Хуçкаланмасăр хĕвĕшсе,
Лараççĕ шăппăн ирхине.

Хĕвел пуçланă ĕнтĕ халь
Çĕршывăм тăрăх çӳреме.
Тăманлăхра вăл пăнчăхать,
Кĕресшĕн мар ман пӳлĕме.

Тĕрĕссипе калас пулсан —
Кичем хĕвелсĕр ирпеле.
Хĕвел! Вăл çеç сума суса
Тĕнчемĕре кăшт тирпейлет.

Тен, çавăнпах эп чи малтан,
Ĕçсем вырнаçиччен кĕвве,
Таса чĕреллĕ ямбпалан
Калатăп: сывă тăр, хĕвел!

1948

## ЛАШАСЕМ

Кам ачи-пăчи, хăш ывăл
Выляман-тăр лашалла?
Манăн çав лаша вăййи вăл
Пуçлансаччĕ ак çапла.

Çулăм — виççĕ е тăваттă...
Иккĕ çеç пулман пуль те?..
Тĕлĕкри пек ас тăватăп:
Тăрăх сак çинче атте

Çăпата хуçса ларатчĕ,
Канкаланă хушăран
Лашасем туса паратчĕ
Татăк-кĕсĕк пушăтран.

Чӳрече патне лартаттăм
Эпĕ çав лашасене,
Тĕлĕнсе пăхса тăраттăм
Аякран вĕсем çине.

Пурте пур: парка хӳри те,
Чанк хăлхаллă пуçĕ те;
Урисем те çăмăл питĕ —
Çитмелле таçта çитех.

Нихăçан унран илемлĕ
Теттесем курман эп тек.
Çавăнтан вара иленнĕ
Лашана эп темĕн пек.

...Эп пасар-тавраш юратрăм.
Ма тесен унта ялан
Тĕрлĕрен лаша кураттăм.
Ас тăвап пĕрне паян.

Пасарта курса паллатăп
Сут тăван тутар туса,
Шăварма илсе анатăп
Лашине эп пĕр пуса.

Пусĕ-мĕнĕ илĕртмен-тĕр,
Утланса анни паха.
Пынă пуль йĕнерчĕк евĕр,
Чи çӳлтен пăха-пăха.

Улача çытми çĕкленнĕ
Чĕркуççийĕнчен çӳле.
Ик çинçе ури хĕстернĕ
Лашана кĕлешчелле.

Чĕлпĕрне вăл карăнтарнă, —
Măйне автăр урхамах!
Йăлăхтарнă пулĕ тарлă
Суха учĕ, ахăрах...

...Кăруççел килсе тухатчĕ
Ерминкке вăхăтĕнче;
Умлă-хыçлă ут юртатчĕ,
Çаврăнатчĕ ун çинче.

Эп сиксе утланнă йăр-йăр
Хуп-хура çилхеллине.
Кам калас мана çав ăйăр
Ма Отелло ятлине?

Çăварне карса çав тĕрлĕ —
Кĕçенес пек — ыткăнать.
Ун тути таврашĕ хĕрлĕ,
Куçĕ вут пек, — тыт кăна!

Чăмăртанă эп, мăнтарăн,
Пӳрнесем шураличчен...
Ăçтарах çитсе антарăн,
Шухă ут, çак çĕр çинче?

1957

## СЫВПУЛЛАШУ

Ачаран ар тунă вырăн,
Час кураймăп, сывă пул!
Ăсатсам мана эс ыррăн,
Ман умра пĕртен-пĕр çул.

Çулăм йывăр, çулăм вăрăм,
Виçейместĕп çухрăмпа.
Çĕклейми çĕклем эп йăтрăм
Ансăр пилĕк-çурăмпа.

Пăрахмасăр та ĕшентĕм,
Пăрахма та халăм çук.
Шăрăхне те, сиввине те
Тӳсмелле çул кайнă чух.

Вĕркелет аптранă анчăк
Ытахаллĕн, сых ятне.
Упранинччĕ çутă шанчăк,
Çитесехчĕ тĕл патне.

Аллăма хăех çакланчĕ
Яланхи юлташ — туя.
Темшĕн чун пăртак хурланчĕ,
Темĕскер каллех туяп...

Ачаран ар тунă вырăн,
Час кураймăп, сывă пул!
Ăсатсам мана эс ыррăн,
Ман умра пĕртен-пĕр çул.

1948

# «ЧĔРЕ ЮРРИ» КĔНЕКЕРЕН (1952)

## И.В.СТАЛИНА

Пур халăх кĕтнĕ паттăртан — пĕр паттăр,
Пĕр вăй пулса эс килтĕн тĕнчене.
Санра этемлĕх шанчăкне куратпăр,
Санра куратпăр Çĕрĕн телейне.

Ĕмĕртенпе пуçтаранна ăс-хакăл
Сан сăмаху пулса халь çĕнелет;
Сан куçунта йăлтăртатать ялан вăл,
Хĕвел пек сарăлать пур еннелле.

Ытараймасăр, юратса, хаваслăн
Сана пурин те тав тăвас килет.
Мĕнпур калас сăмахсенчен те аслă
Пире эс панă ырлăхпа тивлет.

Пур халăх та хăй чĕлхипе: «Эс пурăн!
Эс пурăнсан — эп сывă!» — тет сана.
Чи витĕмлĕ, чи пархатарлă юррăн —
Чĕре юррин чĕри — пĕр эс кăна.

Историе санпа кĕрет çак тапхăр,
«Ку — Сталин самани!» — тет халь тĕнче.
Сана сума сăватпăр, аслăлатпăр
Пур аслă çутçанталăк умĕнче.

Сан пурнăçу вăл — çĕнтерӳ кун-çулĕ,
Эс сыпăнтартăн ĕмĕтĕмĕре.
Асран кайми яту мухтавлă пулĕ
Кирек хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех!

1952?

## ХАЛĂХСЕН АШШĔНЕ

Çеçенхир илемĕ —
Шур сухаллă аккăн,
Чăнкă сăртлă-туллă
Аулти ашуг
Саншăн чи янравлă
Юрăсем хурасшăн,
Унтан пысăк чыс та,
Савăнăç та çук.

Сивĕ-сивĕ тинĕс
Хĕрринчи сунарçă,
Ăшă-ăшă тумлă
Ватă кайăкçă,
Пулăçă та — пурте
Сана ыр сунаççĕ:
«Çĕр çул мар, пин çул вăл
Пурăнайĕнччĕ!»

Çӳпçере усраннă
Çутă кĕмĕл майлă
Авалхи былина
Кĕввисем çумне
Карчăксем хушаççĕ
Çамрăк чун хавалλă —
Саншăн халал[л]анă
Çĕнĕ çеммине.

Пархатарлă Грузи
Янратать чонгури,
Кăмăллă Карели
Кантеле калать,
Ылттăн Украинăн
Ĕмĕрхи бандури,
Туркменсен дутарĕ
Сан ятна мухтать...

Эп те уçă саслă
Кĕслеме тытам-и,
Ĕнерсе пăхам-и
Хĕрĕх хĕлĕхне.

Ирĕк тăван халăх
Ячĕпе мухтам-и
Халăхсен юратнă
Аслă Ашшĕне!

1951

## ÇАМРĂКСЕН МАРШĔ

Вутран та шывран эпир тухрăмăр сыввăн,
Çĕнтертĕмĕр Сталин чĕнсен.
Паян ĕçпеле çĕнтеретпĕр — çĕршывăн
Хастарлă, патвар ачисем.
Утар чарăнмасăр
Малтан малалла,
Хăюллăн та харсăр —
Комсомолла!

Эпир çĕнĕрен хуласем ӳстеретпĕр,
Лартатпăр садсем пушхирте.
Эпир ту вататпăр, шыва пĕвелетпĕр,
Штурмлатпăр кăвак пĕлĕте.
Утар чарăнмасăр
Малтан малалла,
Хăюллăн та харсăр —
Комсомолла!

Эпир вăл — Матросов, Гастелло та Зоя,
Стаханов, Российский — эпир.
Эпир — çамрăк гварди, малашлăх геройĕ,
Пире ыранхи çутă ир.
Утар чарăнмасăр
Малтан малалла,
Хăюллăн та харсăр —
Комсомолла!

1947

## СТУДЕНТСЕН ĂСАТУ ЮРРИ

Шăнкрав пире шăнкăртатса
Тек йыхăрмĕ хаваслăн.
Анчах çав усă, ян сасса
Нихçан та эс манаймăн.

Атăл, Днепр е Нева
Илĕртет куçа —
Пĕлĕте, çĕре, шыва
Халь эпир хуçа!

Сасартăк уçăлчĕ хапха,
Умра çул йышлă пирĕн.
Ку та паха, леш те паха,
Суйла та ут: эс — ирĕк.

Пĕрне-пĕри телей сунар,
Яш ĕмĕт çутă пултăр.
Аслисене асрах тытар:
Тавах, пире çын турăр!

Ан тив, ан илтĕнтĕр пире
Хавас шăнкрав йыхравĕ:
Асра вăл юлĕ ĕмĕре,
Вăл — çамрăклăх шăнкравĕ.

Атăл, Днепр е Нева
Илĕртет куçа —
Пĕлĕте, çĕре, шыва
Халь эпир хуçа!

1948

## ПУРЛĂХ ЮРРИ

Хумхан, йăрансăр тырă-пулă,
Çĕклен çĕмел çумне çĕмел.
Хуна, нумай пучахлă тулă,
Çĕнелнĕçем, çĕршыв, çĕнел.
Хăватлă улăп çарĕ евĕр
Çĕклен капан çумне капан.
Ан тив, тертлентĕр, вĕчĕрхентĕр
Пире ютран юнан тăшман.
Ӳс, хушăн, мул, куллен ĕрче,
Пĕр пĕрчĕрен çит пин пĕрче!

Кашла, çеçенхирти юманлăх,
Ан яр тип çиллĕ шăрăха.
Çанталăка çĕнтерчĕ халăх,

Тĕп турĕ сĕмсĕр выçлăха.
Кĕрле, шавла, пар çутă, Атăл,
Пĕрлеш, уй-хир, ӳс, ял-хула.
Ватти — яшлан, яшши — ан ватăл
Тесе юрлар çултан çула.
Ӳс, хушăн, мул, куллен ĕрче,
Пĕр пĕрчĕрен çит пин пĕрче!

Тивĕçлипе кĕрсе ларатпăр —
Пĕр тан телей кĕрекине,
Куç пек курка ăсса йăтатпăр
Пĕрлешнĕ ĕç перекетне.
Ешер, ешер тулли пахча пек,
Юратнă çĕрĕмĕр, ялан.
Совет çыннин мухтавĕ-чапĕ
Пурне те курăнать таçтан.
Ӳс, хушăн, мул, куллен ĕрче,
Пĕр пĕрчĕрен çит пин пĕрче!

1948

## МУХТАВ ЮРРИ

Ялтан та яла, хуларан хулана
Янра, юрă, пур таврана.
Мухтатпăр чи çывăх, юратнă çынна,
Çĕршыв çуттине — Сталина.

Санпа эпир тухнă вутран-çулăмран,
Çĕнтернĕ мĕн пур асапа.
Ялан эс асра, чĕрере эс ялан,
Телейлĕ пур халăх санпа.

Тайма пуçпалан, пур таса кăмăлтан
Сунатпăр чи савăк кун-çул:
Çулпуçăмăр, тусăмăр, аслă тăван,
Чакми вăрăм ĕмĕрлĕ пул!

Ĕçпе те хĕçпе, юнпала, чунпала
Сана эпир тунă тупа.
Чул урлă, хум урлă малтан малалла
Утать харсăр халăх унпа.

Мĕнпур ĕç тĕнчи çӳлерен çӳлерех
Çĕклет сан таса ялавна.
Çултан та çула, ĕмĕртен ĕмĕре
Янратăр мухтав Сталина!

1949

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ
(Лебедев-Кумач кĕввипе)

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

Çын пырать — маттур, ĕçчен те харсăр —
Ленин—Сталин уçнă çулпала.
Çын пырать, чăрмав-мĕнне пăхмасăр,
Кунсерен малтан та малалла.
Пĕринчен тепри хăватлă тинĕс,
Сăрт-тусем — кăвак тӳпе таран.
Ĕмĕрхи вăрманăмăр сип-симĕс,
Çеçенхир вĕçне никам курман...

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

Ман çĕршывăн анлăшне тухмашкăн
Çăмăл мар çунатлă кайăка.
Ирĕк çын хастарлăн та сулмаклăн
Кайăкран та кайрĕ аякка.
Пăрлă тинĕс парăнчĕ сăмахсăр,
Пушхирсем ешерчĕç пахчалла.
Тăшмана тĕп турĕ ирĕк паттăр,
Асăнтарчĕ ĕмĕр манмасла.

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

Варкăшать çӳлте çĕршыв ялавĕ
Таврана хĕвел пек çутатса.
Ирĕк çыннăн вилĕмсĕр мухтавĕ
Çĕнтерӳ ялавĕ пек таса.
Çын пырать — маттур, ĕçчен те харсăр —
Ленин—Сталин уçнă çулпала.
Çын пырать, чăрмав-мĕнне пăхмасăр,
Çывхарса килен Коммуналла.

Сарлака тăван çĕршывăм, аслă,
Унăн чапĕ кайрĕ аякка.
Ирĕк çын ялан кунта хаваслă,
Çулĕ ун çĕршыв пек сарлака.

1949

## КĔРЕКЕ ЮРРИ

Тĕтре-и, хура пĕлĕтсем-и,
Çут çăлтăр сӳнмест тӳпере.
Октябрь уявĕн илемĕ
Ялан ялтăрать чĕрере.

Сив çил-и, пăрланнă тумхах-и,
Хаваслăх çĕклет кăмăла.
Çунать хуран айĕн вучахĕ,
Хăна пухăнать каçпала.

Ĕçлерĕмĕр ĕç, ывăнмасăр,
Уйра тĕттĕмччен хăш чухне.
Курка туллирех тултарсамăр,
Пĕрремĕшĕ — Сталин ятне!

Ан тив, тапхăр-тапхăр кĕрлетĕр
Çанталăк тăман кăларса.
Тепрер тултарар-ха, пĕртен-пĕр
Тăван партие тав туса!

Вара, пĕр çавра юрласассăн,
Тултарăпăр виççĕмĕшне.
Ăна эпир çĕклĕпĕр танлăн —
Çуралнă çĕршыв телейне!

1949

## ЭПИР РОССИЙĂРА ПУРНАТПĂР

Салтак винтовкине çакса
Нумай çĕре эп çитсе куртăм.
Ăшра — нихçан та манмасса —
Пурнатчĕ пĕр хăватлă туртăм.
Ăна сисетĕн пĕрмаях —
Хаваслă-и, хаяр-и тапхăр.
Ăна пĕлтерĕ виç сăмах:
Эпир Российăра пурнатпăр.

Ют пылчăк ерчĕ те атта
Часах хăпса ӳксе тасалчĕ.
Кирек хăçан, кирек ăçта
Тăван çĕршывăмăр асраччĕ.
Асраччĕ кăмăллă чĕлхе,
Ун илемне ăçта туятпăр?
Ĕмĕртенпе, ĕмĕрлĕхе
Эпир Российăра пурнатпăр.

Сенкер куçпа çиçен славян —
Ачаранпах мана вăл çывăх.
Вырăспала эп пĕр тăван,
Ун хӳттипе хальччен эп сывă.
Çĕршывăмшăн унпа танах
Хăюллă пултăм, пултăм паттăр.
Ăшра янратчĕ яланах:
Эпир Российăра пурнатпăр!

1950

## ЭП — СОВЕТЛĂ СОЮЗ ГРАЖДАНИНĔ

*Чĕррисемпе пыракан*
*Владимир Маяковские.*

Çаврака çĕр тавра сахал мар çĕршывсем,
Кĕçĕнни те, асли те тĕл пулĕ.
Ĕлĕкрен-авалтан тĕрлĕ-тĕрлĕ çынсен
Хăй чĕлхи, хăй йăли, хăй кун-çулĕ.
Анчах эп хапсăнмастăп ютри çĕрсене,

Эп кунта кун курса çынна çитнĕ.
Ак каллех харсăр сăвăç сасси илтĕнет:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

Хăш çĕрте эп пулман? Мĕнле тинĕс-çырман
Хĕрринче ман йĕрсем курăнмаççĕ?
Корольсем, патшасем пăхрĕç ман куçăмран,
Йăпăлтатрĕ баронĕ те княçĕ.
Тарçăсем, чурасем çунакан чунпала
Кĕтсе илчĕç мана, ирĕк килнĕн.
Вĕсем шаннă, ĕненнĕ... Кама шанмалла?
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

Çав çунатлă сăмах çĕкленсе янрасан
Пĕтĕм кивĕ тĕнче сехĕрленчĕ.
Çĕр çинче е çӳлте, е шывра çул тытан —
Чĕрене çав сăмах çĕклентерчĕ.
Кам пулсан та — сухаçă, шахтер е салтак,
Украинец, чăваш, армянин-и —
Манăн чыс та, мухтав та малтан вăл ак çак:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

Ман çĕршывăн тӳпи кăвакран кăвакрах,
Хĕрлĕрен хĕрлĕрех ун хĕвелĕ.
Чи пахи, чи хакли — вăл асра яланах —
Танлăхпа çак çĕрте эп телейлĕ.
Коммунизмăн çуртне хăвăртрах тăрлама
Кун-çĕре шăнăçми ĕç эп илнĕ.
Аслă Парти шанать ман чакми вăйăма:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

1950

## МИРШĔН!

М и р ш ĕ н ! Пĕр сăмахпа ят хуратпăр
Эпир çак сăвăсен пуххине.
Мир пулсан — пурте пулĕ: Çын-Паттăр
Паллайми тăвĕ çĕр сăн-питне.

Çĕнĕрен тинĕссем кĕмĕлленĕç,
Ӳссе çитĕ тин лартнă вăрман.
Пучахсем шăрăхпа вĕтеленмĕç,
Тарĕç типĕ çилсем пусăран.

Пушхирсем ешĕл сад пулса ларĕç,
Çывăхланĕç инçе çул-йĕрсем.
Çĕнĕрен заводсем сасă парĕç,
Лăпкă пурнăçшăн ĕçлĕç вĕсем.

Лăпкă пурнăçшăн, хамăр телейшĕн:
Çак хĕвел айĕнче кашни çын
Кăмăл туртнă ĕçе ĕçлемешкĕн
Хавхаланĕ вара чун туллин...

М и р ш ĕ н ! Пĕр сăмахпа палăртатпăр
Эпир çак сăвăсен шухăшне.
Унпала юнашар асăнатпăр
Аслă çыннăн мухтавлă ятне.

Тӳрĕ чунлă çынсем йăлт пĕр саслăн
Пухăнаççĕ халь çав ят тавра.
Çавăнпа, м и р сăмах вуласассăн,
С т а л и н тетпĕр эпир шухăшра.

1951

## ПУЛТĂР МИР!

Тĕрлĕрен чĕлхепе кĕрлесе, шавласа
Пĕр сăмах халь çӳрет тĕнчере.
Кам ăс-пуçĕ уяр, камăн чунĕ таса,
Кам чĕри чултан мар — чăн чĕре,
Çав илтмесĕр юлаймĕ çĕкленнĕ сасса:
Пултăр мир, пултăр канлĕх çĕре!

Тин кăна пур киревсĕр, хурах этемсем,
Çын çинче ашкăнса пурнакан
Лавккаçсем, хуçасем, пĕтеймен патшасем
Чыхăнтарчĕç çĕре юнпалан.
Çав харам пырсене çĕнĕрен иртĕхсе
Юн тăкма парар мар паянтан!

Тĕрлĕ ӳтлĕ çынсем — саррисем, хурисем
Тинкереççĕ пăхса кунталла.
Негр, индус е китаец — мĕнпурĕ вĕсем
Сасăлаççĕ пĕр пек чунпала:

— Пултăр мир çĕр çинче! — Пулĕ мир, ма тесен —
Совет çĕрĕ тăрать хурала.

Атомпа хăмсарса антăхан тăшмана
Ман çĕршывăм тытать аллинчен.
Ырăпа вăл хушать: «Ан хăтлан, кĕр тăна,
Вăйлăран эп калап кун çинчен.
Паян тин каялла чакас çук самана,
Çĕнни пăхмĕ киввин кусĕнчен!».

Çак сасса илтекен пур чăваш та пĕрле
Пат татсах пĕлтерет шухăшне.
Хăй тăван чĕлхипе пур тĕнче илтмелле
Сасăлать, ал пусать хут çине.
Вăл тăрать — аслă Сталин çӳлтен çӳлелле
Çĕклекен мир ялавĕ айне.

1950—1951

## МИР ЮРРИ

Аслă Атăл юхать сарлакан
Ыранхи чапĕпе савăнса.
Атăл пек сарлака кăмăлтан
Мир юрри çĕкленет вăй пухса.

Халăхсем! Пурте пĕр чунпала
Мир ялавĕ тавра пухăнар!
Çĕр çинче пултăр мир яланах,
Вăрçа хирĕç, вăрçа хирĕç карах тăрар!

Пирĕн лăпкă, уяр тӳпене
Хупăрлаймĕç хура пĕлĕтсем.
Мир хăвачĕ куллен ӳсĕнет,
Миршĕн пур тӳрĕ чунлă этем.

Тĕнчене вут тĕртме хыпăнса
Аллине вутпуççи тытакан —
Илтнĕ пултăр вăл пирĕн сасса:
Ан хускал, ан тапран вырăнтан!

Аслă Атăл юхать сарлакан,
Ĕмĕрех пулĕ вăл мухтавра.

Атăл пек сарлака кăмăлтан,
Мир юрри, янăра çĕр тавра!

Халăхсем! Пурте пĕр чунпала
Мир ялавĕ тавра пухăнар!
Çĕр çинче пултăр мир яланах,
Вăрçа хирĕç, вăрçа хирĕç карах тăрар!

1951

## ТИНĔСРЕН ТИНĔСЕ

Тинĕсрен тинĕсе —
Пирĕн аслă держава.
Сарăлать çĕкленсе
Мирлĕ ĕç кĕрĕ-шавĕ.

Çĕр çинче, шыв çинче,
Пĕлĕтре те мухтавлă
Пирĕн ирек, ĕçчен,
Парăнми паттăр халăх.

Хураллать паттăра
Хĕç-пăшаллă хуралçă.
Аякри вахтăра
Матроссем куç хупмаççĕ.

Халаплаççĕ вĕсем
Çĕр хута темĕн те пĕр.
Паттăрсен ячĕсем
Чĕлхисен вĕçĕнчех-тĕр.

Сахал мар авалтан
Чаплă тинĕс кĕтесĕ:
Ленинград та Кронштадт,
Севастополь, Одесса...

Хура тинĕс çине
Пынă чи аслă флагман.
Унăн ăшă куçне
Нихăçан та манаймăн.

Моряксем хушшинче
Вăл хăна пулса ларнă,

Аслă туслăх çинчен
Каласа ăнлантарнă.

Вăл кашни матроса
Тăван ашшĕ пек пулнă,
Хушăран шӳт туса
Çынсемпе пĕрле кулнă.

Хальчченех ун ятне
Асăнать чаплă крейсер.
Ун кашни сăмахне
Вăл усрать ялав евĕр...

Канлĕ тинĕс кăвак —
Матроссен çухи тĕслĕ.
Ырă куншăн тавах:
Хăй ĕçне халăх ĕçлĕ.

Чи паха океан
Пултăр вăл Лăпкă ятлă.
Анчах вăл кăтăрсан, —
Унтан эпĕр хăватлă.

Мĕнле çил е тĕтре
Халь пире пăхăнтарĕ?
Чĕрене витĕрех
Витнĕ тинĕс тăварĕ.

Çĕр çинче, шыв çинче,
Пĕлĕтре те мухтавлă
Хамăр тунă тĕнче,
Парăнми улăп-халăх.

Сарăлать çĕкленсе
Мирлĕ ĕç кĕрĕ-шавĕ.
Тинĕсрен тинĕсе —
Пирĕн аслă держава!

1951

## РЕПРОДУКТОР УМĔНЧЕ

Пĕлĕтре уяр тĕнче,
Юлашки март каçĕ.
Репродуктор умĕнче
Çынсем шăп тăраççĕ.

Илтнĕ сасă инçетрен
Витерсе каларĕ:
Йӳнелет татах çынсен
Çăкăрĕ-таварĕ...

Юлашки сăмах таран
Халăх илтсе юлчĕ.
Халь те вăйлă, паянтан —
Вăйлăрах вăл пулчĕ.

Шăкăл-шăкăл калаçса
Пурте хĕпĕртеççĕ:
— Тавтапуç хамăр влаçа,
Сталина тав! — теççĕ.

1952

## УРАМА ТУХАР ХАВАСЛĂН

Урама тухар хаваслăн,
    Салтакла утар,
Уçă саслăн, савăк саслăн
    Юрăсем юрлар.

Салтакла утса пыратпăр
    Çапăçушăн мар:
Канăça сыхлать çак паттăр,
    Ĕçпе пиçнĕ çар.

Пĕттĕр юнлă вăрçă-харçă!
    Пултăр çирĕп мир!
Çын çынна ан пултăр тарçă! —
    Тетпĕр халь эпир.

Ялавсем çӳлте вĕçеççĕ
    Сулхăнрах çилпе.

Ачасем чĕвĕлтетеççĕ
Май чĕкеçĕ пек.

Ашшĕ-амăш савăнаççĕ
Вĕсене курса.
Ваттисем пăхса сăнаççĕ
Айккине тăрса.

Ывăнсан вĕсем канаççĕ, —
Тивĕç пур канма.
Туртатех Май кунĕ-каçĕ
Шавлă урама.

Ачасен хавас куллишĕн
Çĕкленетпĕр кар.
Канлĕ ватăлăхшăн, пилшĕн
Мир ĕçне тăвар.

Уй-хирти кашни пучахшăн
Сас парар паян:
Кил-çуртпа ăшă вучахшăн
Кайтăр юрă ян.

Пултăр мир! — Чĕнет янравлă,
Хĕпĕртен Мускав.
Ырă кăмăллă, хастарлă
Çынсене мухтав!

Чикĕ урлă пирĕн харсăр
Тантăш-тус, тăван
Мускава пĕр сывламасăр
Вăл итлет ялан.

Кĕр-кĕрлет Мускав парачĕ,
Уртăр тек тăшман:
Мирлĕ юрă янраттарчĕ
Халăх Мускавран.

Çак уяв та çак парад вăл —
Шанчăк ĕç тĕнчин.
Мавзолей çинче тăрать вăл —
Тĕнче шаннă çын.

1952

## ЧАРАР!

Нумай пулмасть эп Мускавра
Мир Конференцинче пулсаттăм.
Çав кунсенче ман пуç тавра
Пĕр шухăш çаврăнатчĕ: атом...

Тап-такăр сарлака урам,
Тин лартнă йывăç, çĕнĕ палăк
Е вăтăр хутлă çурт курам —
Çав шухăшах памастчĕ канлĕх.

Ăсталăх, ăслăлăх, илем,
Музей, театр, академи...
Епле çакна вут тĕрттерем
Эп — ирĕклĕ çĕршыв этемĕ!

Метро... Ун илемне çырма
Нимле сăмахăн сăрĕ çитмĕ.
Анчах сасартăк асăма
Килсе кĕретчĕ Хиросима.

Минутпа мар — секундпалан
Унта çĕршер пин халăх вилнĕ.
Çав атом амаланасран
Эпир хурал тăмашкăн килнĕ.

Метрон пĕр çĕнĕ станцинче
Мачча çине пăхса тинкертĕм,
Ытараймасăр чылайччен
Унти картинăпа килентĕм.

Ав Александр Невский, ав
Паллатăп Дмитрий Донскоя.
Кунта сума сăвать Мускав
Мининпала Пожарские,

Лере Суворов: симĕс тум,
Вĕçет фельдмаршал шурă çӳçĕ...
Кунта Кутузов: паллă ун
Йăлтах куран пĕртен-пĕр куçĕ...

Пăхатăн та — тухать ума
Пĕтĕм Российăн кунĕ-çулĕ.

Художниксем çакна тума
Мĕн чухлĕ тимлĕх хунă пулĕ!

Эп куртăм ват рабочие,
Вăл та çав маччанах сăнарĕ;
Куçне шăлса хăйне хăех
Чĕтрен сассипеле каларĕ:

«Çакна, çакна ăссăрсене
Çĕмĕрттерес-и ĕнтĕ?!» — терĕ.
Мĕнпурĕ пăхрĕç ун çине,
Çĕршыв хуçи пек вăл çӳрерĕ.

Эп çавăн пек çынна пайтах
Мир Конференцинче сăнарăм.
Вĕсем ак халь те ман умрах —
Кăвак сухал, яш çын, хĕрарăм...

Çине тăрса, вĕриленсе
Калаçрĕ йыш. Чĕлхемĕр тĕрлĕ.
Анчах пурне те, итлесен,
Пĕрлештерет пĕр аслă пĕрлĕх:

Çав атом вăрçинчен эпир
Тăван çĕре те, ыттине те
Сыхлас тесе — виç каç, виç ир,
Виç кун сас патăмăр та ĕнтĕ.

Эп астăватăп: пур вăя
Пĕрле чăмăртаса пуçтарнăн
Тухса калаçрĕ Хан Сер Я —
Корея ывăлĕ — хастарлăн.

Ятне кăна халарĕç-ха —
Кĕç алă çупса ячĕç пурте.
Асаплă, паттăр халăха
Çав çын сăнарĕнче йыш курчĕ.

Тăрса трибуна патнелле
Утма кăна вăл ак пикенчĕ —
Пур зал ăна куçпа тĕллет,
Унтан пĕр харăс вăл çĕкленчĕ.

Ӳссех, ӳссех тăчĕ кĕр-шав,
Темччен çав тăвăл лăпланмарĕ:

«Корея халăхне мухтав!
Паттăрсене урра!» — янрарĕ.

Паян çав парăнми çĕре,
Çав халăха çĕнтереймесĕр,
Тĕнче хурахĕ чир-чĕре
Вăрçа кĕртет ак йĕрĕнмесĕр.

Чума пăрçи, халер шăни,
Тиф пыйтисем ун... Намăс, намăс!
Цивилизаци самани,
Ăçта кайса пырать халь сан ăс?!

Ăçта эс, Линкольн, Эдисон,
Уолт Уитмен çĕрĕ-шывĕ?
Çакна тӳсме епле халь сан
Вăю çитет, ĕçчен хĕр-ывăл?

— Чарар! Ан ашкăнтăр вăл пит
Хура вăрă-хурах, усламçă,
Пин хут ылханнă Уолл-стрит!
Чарар! — Çапла чĕнӳ пуçланчĕ.

Америкăри ĕççынни —
Хура ӳтли те, шур ӳтли те!
Илтĕнтĕрех сана чĕнни:
Чарар! Улталанмашкăн çитĕ!

Китай, Корея кăшкăрать,
Вĕсемпеле пĕрле пур Ази:
«Урма ан парăр кашкăра!» —
Тесе мир çыннисем хушаççĕ.

Пур халăх писнине кура,
Ниçта кайса ним тăваймасăр,
Хурт-кăпшанка тытать тара
Çын сăн-питне çухатнă варвăр.

Чарар! Çав намăс-мăшкăла
Никам та ырăпа çĕклеймĕ.
Чарар! Этемлĕхе калла
Ан турттăр чул ĕмĕр этемĕ!

## ÇАК КУНСЕНЧЕ

### 1

Çак кунсенче истори асăнмалăх
Ĕççем çĕклерĕç пур тăван çĕре.
Çĕнтерӳпе хăватлăланнă халăх
Хăй партине калать: «Ак ман чĕре!

Ак манăн ĕмĕт-шухăшăм, ман чунăм,
Сăмахăм тӳрĕ пултăр умăнта.
Ăшра сӳнмест эс чĕртнĕ çутă çулăм,
Чакармăп эс кĕртен вăй-хăвата.

Санра эп хамăн телее куратăп,
Сан шухăшу — ман шухăшăм пулать.
Санпа çĕнтертĕм пур хура-шура та,
Санпа çĕнтертĕм хамăн кун-çула».

Çак кунсенче истори асăнмалăх
Пуçланнă аслă пĕр ăмăртура
Мĕн çырнине часрах тума — пур халăх
Хăй партине сăмах парса хурать.

### 2

Тăван хуламăр! Шурă Шупашкар та,
Ват Шупашкар та терĕмĕр сана.
Куç умĕнче ак халĕ урăх карттă,
Чи çамрăк курăнатăн эс мана.

Эс Коммунизм çĕршывне хăватлăн,
Чĕрĕ сăпатлăн кăтартан хута
Тĕнче вуламалла халь çырăнатăн,
Час пур çĕршыв тинкерĕ ак кунта.

Тăван хуламăр! Çумăнти мăн Атăл
Паллашрĕ пилĕк тинĕс шывĕпе.
Йăмра хулли чĕтренмĕ çăтăл-çатăл, —
Кипариссем ешерĕç хĕлĕпе.

Çыран тăрăх каштан кашласа ларĕ,
Магноли, пальма куçĕ кăнтăртан.

Тем тĕрлĕ сиплĕ çимĕç пархатарĕ
Йăхăмăра çĕнетĕ тымартан.

Тăван хуламăр! Виç-тăвата хутлă
Карап сана сас парĕ савăнса.
Проспект çуталĕ, пĕрене пӳрт-çуртлă
Урамусем час юлĕç манăçа.

Кĕленчерен те хурçăран çĕкленĕ
Куçа шартса яран хĕвеллĕ çурт.
Сăртран сăрта кĕперĕ чĕнтĕрленĕ —
Бетон та тимĕр никĕслĕ, çап-çут.

Поэтăмăр хавхаланса сăнланă
Интернационал кĕперĕ пек,
Ĕмĕрлĕхех вăл ялтăрĕ тăванлă
Пур халăхсен таса туслăхĕпе.

**3**

Пайтах юрланă пирĕн халăх юрă
Таçти тинĕссене аса илсе,
Халь хăйĕн çĕрĕнчех ăна вăл курĕ —
Шухăшĕнче шавлан çав тинĕсе.

Çав тинĕс хулара, ялта, уйра та
Тĕпрен çĕнетĕ пирĕн кунсене.
Ак эп электротракторсем куратăп,
Илтеп электропоезд сассине.

Тирпейлĕ, çутă килсене кĕреп кĕç —
Нӳхреп те çук-мĕн, валашка та çук:
Электросивĕткĕç, кĕпе вĕреткĕç,
Электрохачă, электроутюг...

Куратăп: Ленин каласа хăварнă
Çунатлă сăмахсем çĕршыв çинче
Тем пысăкăш саспаллипе кăваррăн
Çунса тăраççĕ лăпкă каçсенче.

Илтетĕп: Кремльте сехет çапсассăн,
Хăватлă гимн каллех пур халăха
Кĕрешĕве чĕнсе кар тăратассăн
Ян янраса каять тавралăха.

Çапла! Çук чарăну: ăс-хакăл вирлĕн
Пырать малтан мала, малтан мала!
Çут тĕнчене пĕлнисĕр — халĕ пирĕн
Ăна урăхлатма васкамалла.

Çак кунсенче истори асăнмалăх
Пĕр чарăнми хастар ăмăртура —
Мĕн çырнине часрах тума — пур халăх
Хăй çулпуçне сăмах парса хурать.

1952

## А.А.ЖДАНОВА АСĂНСА

Колонлă зал... Епле манайăп?
Нумай пулмасть-çке çак çуртра
Курсаттăм куçма-куç ăна эп,
Паян... паян вăл тупăкра.

Тин мар-и халĕ çакăнта вăл,
Трибуна умĕнче тăрса,
Çĕршер чĕресенчен пĕр тăвăл
Кăларчĕ алă çуптарса?

Епле хĕрӳллĕн, витерӳллĕн
Каланăччĕ вăл ун чухне!
Шанас килмест: чăнах эс ӳлĕм
Илтеймĕн-и ун сассине?

Çĕршывăн чăнлăхĕ пек уççăн
Янратчĕç ун сăмахĕсем.
Тин мар-и çакăнта, кануçăн,
Çӳретчĕç Горькипе вĕсем?

Писательсемпе вăл шӳтлетчĕ,
Асра ун кăмăллă кулли.
Паян оркестрсем хӳхлеççĕ,
Тӳсме çук хурлăх чун тулли.

Салхуллăн усăннă хураллă
Ялав ун тупăкĕ тĕлне...
Коммунистсем, мала! Хураллăр
Ун вилĕмсĕр ĕçĕсене.

Хураллăр, хушăр та ӳстерĕр,
Сарсамăр аслăран асла.
Малаллăха шанан чĕремĕр
Çунса ĕçлетĕр Ждановла.

1948

## НИКОС БЕЛОЯННИСПА УН ТУСĔСЕМ ÇИНЧЕН

Шупашкартан пит çывăх мар Афины,
Пулса курман-ха эпĕ Грецире.
Унта ман тăвансен — тăвата çыннăн —
Пĕр ĕмĕтпе тапатчĕ пĕр чĕре.

Хăйсен çĕрне ют тыткăнран çăласшăн
Çунатчĕç çав çынсем халăхпалан.
Кам ирĕклĕхшĕн кĕрешет, çав маншăн —
Курман пулин те — ĕмĕрлĕх тăван.

Ак радио вĕсем çинчен каларĕ:
Персе пăрахнă... Чун кӳтсе килет.
Тăвата пĕртăванăмăн хыпарĕ
Тăвата пуля пек çитсе тивет...

Сана çĕрле вĕлерчĕç, Белояннис,
Санпах пуç хучĕ виçĕ тус ирччен.
Пĕтертĕм терĕ пуль тăшман... Паян эс —
Этемлĕхшĕн çуралтăн çĕнĕрен.

Хăравçă хурахсем! Вĕсем хăймаççĕ
Пемешкĕн те пире кун çутинче,
Куçăмăртан та тӳррĕн пăхаймаççĕ,
Пĕлеççĕ: чăнлăх пирĕн куçсенче.

Çав чăнлăхшăн пире çĕртет-и карцер
Е каторгăра хуçăлĕ ĕнсе,
Шалча тăррине лартчăр, пăталаччăр —
Нихçан çăвар уçмастпăр ӳкĕнсе.

Нихçан никам пытарайми пĕртен-пĕр
Çав аслă чăнлăхшăн тăракансем —
Эпир шăла çыртса вилме пĕлетпĕр,
Эпир — коммунистсем!

1952

## КОЛОНЛĂ ЗАЛРА АСА ИЛНИ

Писательсен сӳездне хупсассăн,
Вăтăр тăваттăмĕш çулта,
Çак кил-çурта эпир хавассăн
Пуçтарăнтăмăр банкета.

Мускавăн çăкăрĕ-тăварĕ
Халичченех ман куç тулли.
Нимрен ытла асран каймарĕ
Эп Горькипе пĕрле пулни.

Паллах, çынсем, ăçта ларсан та,
Пырасшăнччĕ ун патнелле.
Эп те ун çывăхнех пырсаттăм
Сиксе тапан чĕрепеле.

Ун аллине алла тытсассăн,
Калассăм килчĕ ман веçех...
Кĕске самант хушши мĕн калăн?
Каларăм халăх ятне çех.

Чăвашсенчен эп сывлăх сунтăм.
Хуллен тав турĕ вăл мана.
Ун умĕнче хама эп куртăм
Шкулти ача пекрех кăна.

Ун тинкерсе пăхан кăшт хурлă
Куçне, ун туртăннă ӳтне
Асăрхасан — хама пит юрлăн,
Айванăн туйрăм ун чухне.

Унтах темле аван та çăмăл,
Темĕскере çĕнтересле,
Çунат хушса çĕкленчĕ кăмăл —
Вĕрен, шыра, тĕпче, ĕçле!..

Эп Атăл тăршшĕнче сăнанă
Тармакланса утан, патвар,
Вунпилĕк пăт йăтма пултарнă
Тĕреклĕ грузчик сахал мар.

Явса хытарнă шăнăр кирлĕ
Ун чухле йăтакан çынна.

Пăлхавăр хирĕн çавра çилĕ
Хиврен хытарнă пуль ăна.

Хушка хумсем сиктернĕ пулĕ
Ун киммине ĕмĕртенпех.
Ун вăйĕ, тӳсĕмĕ, кун-çулĕ —
Çĕнтернĕ халăх сăнĕ пек.

Çав грузчика аса илтерчĕ
Кӳрнеклĕ, çӳллĕ Горький те:
Этем асапĕ, пурнăç терчĕ,
Тĕнче нуши мĕн ĕмĕртен

Ун çурăмĕ çине тиеннĕ.
Çавна тӳссе çĕнтернипе
Çĕкленнĕ вăл чăн-чăн ĕçченĕн
Ытарайми илемĕпе.

Ялан ăна çапла эп курăп —
Чĕррисемпех, чĕр халлĕнех.
Мĕн виличчен асра эп усрăп
Ун ăшă пиллĕ аллине.

1951

## НИКОЛАЙ ТИХОНОВА

Эп Сталинградшăн çапăçнă çĕртеччĕ,
Салтак пулса тăрсаттăм çав рете.
Вилме тивсессĕн — вил, анчах çĕнтерччĕ
Юрпа пусарăннă çеçенхирте!

Пуçсем çинче çил-тăвăл шăхăратчĕ;
Яшки, çăкри, консервĕ — йăлт пăр пек.
Чи йывăр кунсенче Мускав хаçачĕ
Çитерчĕ сăвă — «Киров пирĕнпе».

Сасартăках окоп ăшăнса кайрĕ:
Çав сирĕн сăввăр çитрĕ вăхăтра.
Ун тимĕр тӳсĕмĕ пире кăтартрĕ
Хирсен те хирĕлми вăй-халăра.

Мĕнпурĕ — вырăс-и эпир, чăваш-и,
Грузин-и е тутар-и, е узбек —

Российăна татах, татах ачашшăн
Юратрăмăр тăван аннемĕр пек.

А сирĕн чăн сăмахăр Сталинградшăн
Çапăçакан салтаксемпе пĕрле
Нева çинчи Ленинграда çăлмашкăн
Тапса васкарĕ Атăл çинелле.

1946

## СУЛЕЙМАН СТАЛЬСКИЙ

Тем пысăкăш залра пуху пыратчĕ.
Унта пĕр кун çеç мар пирĕнпелен
Çав «çирĕммĕш ĕмĕр Гомерĕ» ларчĕ —
Çапла каларĕ Горький ун çинчен.

Сăмах ăстисене тĕлĕнтерейĕмĕн —
Вĕсем час сисĕç суяна-чăна.
Вăл сас парсан — колоннăсем чĕтренĕн,
Чул çурт çӳçеннĕн туйăнчĕ мана.

Шур çӳçлĕччĕ ашуг, черкес тумтирлĕ,
Сăмах кăларнă пек йĕс хĕлĕхрен,
Вăл купăс каласа юрларĕ вирлĕ,
Астурăм эп: вăл хут вĕренеймен...

Сархайнă ватă пӳрнисем çинçелнĕ, —
Тытассăм, чуптăвассăм килчĕ ман:
Çав ик алла мĕн чухлĕ ĕçлеттернĕ,
Анчах пĕр сас палли те çыртарман!

1948

## ПОЛЬ РОБСОН

Выртас чух эп радио итлерĕм,
Хурлă сасă çитрĕ инçетрен.
Вăл çĕрте халь çутăлнă; синкерĕ —
Çур çĕртен те хурарах иккен.

Тарăхса юрлать çав хурлă сасă,
Пăчă тĕттĕмрен тухасшăн пек.

Вăл пĕлет: пĕр çĕр пур, унта р а с а
Сăмаха çын асăнмасть те тек.

Çав çĕре ĕмĕрлĕхех юратнăн
Тунсăхпа çунса вăл кĕвĕлет:
«Ирĕк çын унта сывлать хаваслăн,
Тек курман ун пек çĕр эпĕ», — тет.

Ман çĕр çав юрра юрлать мăнаçлăн.
Аякри тăванăм! Çитĕ кун:
Эс те юрлăн пирĕнпе пĕр танлăн,
Тĕксĕм ӳтлĕ-тирлĕ çутă чун!

1948

## ДЖАМБУЛ

Казахлах ăна эп вуласассăн
Урăхла ăнлантăм ун чапне:
Тăлмача пит йывăр çывхармашкăн
Унăн links — 

Унăн аслă кăмăлĕ патне.

Чĕр мĕлкен хирте ăна куратăн,
Юлнă пек вăл шавлă ордаран.
Тихана вăл хăнтăр тет ачашшăн,
Лашине савать тумрипе тан.

Кĕр-ха ун чунне! Çĕре çитсен те
Йĕнерпе пырсах пур кăмăлтан
Ленинградсене вăл а ч а м с е м тет,
Сталина а т т е тет вăл ялан.

1948

## КОНСТАНТИН ИВАНОВА

### 1

Эс — ман пĕрремĕш юрату,
Сассу ачаранпах хистетчĕ:
— Ĕçне тытсассăн — вил те ту! —
Тесе мана каланă пекчĕ.

Эс — манăн туслăх тав курки.
Чанклаттарса ĕçсе яран та
Тĕпне пăхан: тата çук-и? —
Тумлам таран сăрхăнтаратăн.

Эс — манăн чунăм тĕкĕрĕ.
Самантлăх мухтава ан хапсăн,
Хур савнă ĕçшĕн ĕмĕре, —
Теп эп хама, сана пăхсассăн.

Ыйт хăвăнтан: тăван йăхна
Каламалли пурах-ши санăн?
Пурне пĕлсе çитсен кăна
Кĕсле тытмашкăн эс пултарăн.

Хальччен илтмен çĕн юрă-çем
Тухмасть пулсан, кала ӳпкевсĕр:
Янратăр, тантăш-тусăмсем!
Эп — сирĕн хапăл итлекенĕр.

**2**

Эс — ман пĕрремĕш юрату,
Çĕр çуннă чух та эс манпахчĕ.
Сан халăх чысĕ пек яту
Тăхлан шăтарнă сумкăрахчĕ.

Мухтавлă Атăл хулинче,
Брянск патĕнчи сĕм вăрманта та
Салтаксене Нарспи çинчен
Вула-вула эп савăнтартăм.

Пĕрре маршра çур сехете
Ларсаттăмăр эпир канмашкăн.
Грузинĕ: «Руставели!» — тет,
Ун сăввине вулать хаваслăн.

Баку çынни — Низамипе,
Узбек Навоипе мухтанчĕ.
Украинецсем ерипе
Шевченкăна юрласа ячĕç.

Унтан мĕн пур чĕлхепеле
Янрарĕ «Пушкин!» хĕпĕртевлĕн.

Вăрçа кĕрес этем пĕлет:
Вăл халь ответ тытать тĕнчешĕн.

Чăваш салтакĕ çав тĕлте
Чăваш сăввисене итлерĕ,
Патронташне тӳрлетрĕ те
Сасартăк: «Ивановшăн!» — терĕ.

**3**

Тумламшăн тинĕс патăн халăха.
Пĕр пĕрчĕ илтĕн — тавăртăн капан.
Çул хыççăн çул... çаплах шавлатăн-ха,
Пур аслă çĕршыва тăнлаттаран.

Тăван йăху сана яланлăха
Савса ыттисене калать: «Ак ман
Тинкерлĕ куç, улталами хăлха.
Пуриншĕн те вăл пултăр паянтан.
Ылханăр унпа шай чуралăха,
Çын тивлетне юратăр унпа тан».

1940—1950

## ПИРĔН ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

Çăлтăрсем — шултрисем, вĕттисем пĕр канашлăн
Ялкăшаççĕ уяр тӳпере...
Пĕлĕте яр çурса метеор пĕр самантшăн
Хыпăнать те — сӳнет ĕмĕре.
Çăлтăрсем çуталаççĕ çаплах килĕшӳллĕн,
Анчах лешĕ — мĕн ĕмĕр тăршши
Курнă çын асĕнчен çухалмасть вара ӳлĕм.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Тинĕс хумĕ чĕвен тăракан шур çилхеллĕ
Урхамах пек сикет, кăтăрать.
Харсăр кимĕç тухать, çиле хирĕç вăл меллĕ
Киммипе сĕм шыва кастарать.
Ахăрать, мĕкĕрет, хăратать тĕпсĕр авăр:
«Сахал мар пулнă сирĕн йышши!»
Анчах кимĕç ишет кĕсменне пăрахмасăр.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Ăмăрт кайăк вĕçет ĕмĕрхи ту-сăрт урлă,
Тинкерсе вăл пăхать тавралла.
Унăн çулĕ тĕтреллĕ е çумăрлă, юрлă —
Вăл пурне те çĕнсе каçмалла.
Варкăшать, çӳлерен те çӳле ярăнать вăл,
Мал енче — çут хĕвелĕн ăшши.
Вăй кĕртет чăнкă ту, хирĕç çил, аслă тăвăл.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

Вăл чăваш чĕлхине, юмахри Данко евĕр,
Çунакан чĕрипе çутатса
Çул кăтартнă; вăл шаннă пĕр иккĕленмесĕр
Çĕн чăваш тĕнчене тухасса.
Вăл куран интернационалăн кĕперĕ
Пур йăхпа те пире тан туса
Шухăшпа виçейми тӳпене халь çĕклерĕ
Пирĕн ирĕклĕ, харсăр ăса.

Эй, эсир, çамрăксем! Ăмăрт куçлă, çунатлă,
Çеçпĕл чĕннĕ чăваш ачисем!
Эп сире чи çӳлте халь курасшăн çунатăп,
Ĕненсе, юратса пехиллем.
Вăхăт çитрĕ: чăвашăн чĕлхи тимĕр татрĕ.
Туптăр, хăйрăр ăна малалла!
Ыранхи çĕн ăста тĕнчене янраттарĕ.
Çамрăксем! Вăл — сиртен тухмалла.

1949—1951

## О.И.ЫРСЕМЕ

Такам каланă: пĕчĕкçĕ роль çук.
Кашни этем хăйне кура — пĕртен-пĕр.
Нихçанхинчен те тĕрĕс вăл ку чух:
Çын тивĕçне çӳлтен çӳле çĕклетпĕр.

Анчах кун-çул иртет, ăна чарма
Тупсах çитереймен-ха сиплĕ турăх.
Çуллен тулса юхать çурхи çырма,
Этемĕн çурĕ пĕрре çех — çук урăх!

Мĕн тăвăн? Пурнăç пит васканăран
Ирĕксĕрех ун йăлине тытатăн:

Нарспи рольне вылянă эс малтан,
Халь ак Сетнерĕн амăшне вылятăн.

Тем те кышлать хавшак чĕремĕре,
Ăна гримпа сĕрсе лартма май çук-тăр.
Анчах та чун... чун çамрăк ĕмĕрех, —
Юратнă ĕç кирлине çеç вăл туйтăр.

Хăш чух, тен, тĕкĕр витĕр тинкерсен
Сасартăк ассăн сывласа яратăн:
Мĕнле хитре, ытарайми хĕрсем
Пĕрремĕш сцена варринче куратăн!

Пуртех пымарĕç санăн çулупа:
Чунтан-вартан çунса тăрăшмасассăн,
Искусство тавăрать. Çапла шăпа.
Унпа ытахальтен хăтланаймастăн.

Тен, урăх çул-йĕр тупрĕç пуль çынсем,
Нумайăшне эпир ятран пĕлетпĕр.
Çапах театр тантăшĕ Ырсем —
Ун чух хыпса çуннисенчен пĕртен-пĕр.

Ачасене — паха ача вăййи,
Качча — савни паха, ватта — ăс-халĕ.
Малтан эс тăхăннă Нарспи тухйи
Искусствăн çамрăклăхĕ пек çуталĕ.

1952

## ХУДОЖНИКЕ

*М.С.Спиридонова*

Художник! Эс мольберт умне тăрсассăн
Сасартăках шăпăртланать ман сассăм.
Куçа кăна таçта аяккаллах
Сан картину туртать, туртать çаплах...
Мăян йăранлă, ансăр, саплăк-саплăк
Ана çинче тар-шурлă та асаплă
Çынсем тертленнĕ, тарăхнă ялан.
Эс урăхла сăнсем куран паян:
Вĕçĕ-хĕррисĕр, тикĕс ылтăн тулă,

Хаваслă питсенче вылять йăл кулă.
Машина çăмăллатрĕ ĕç-хĕле,
Этем халь ун хуçи пулма пĕлет.
Ларатчĕç çĕмелсем сайра маякăн;
Кăшт сывлăш çавăрма ӳпне, хăяккăн
Е месерле ӳкетчĕ тĕм çине
Вырса вăй кайнă çын авал чухне.
Уйра-хирте халь туйăнать уявăн,
Пин алă пĕр вăй пулнине туятăн.
Парка пучах чĕнет те илĕртет, —
Тытса йăваласа пăхас килет...

П а л и т р а, ф о к у с, п е р с п е к т и в а теççĕ,
Чылайăш ку сăмахсене пĕлмеççĕ.
Эп те çавах. Анчах хама кура
Пăртак чухлатăп хурапа шурра.
Ав ăслă куçлă ватă шăпăрçă,
Ав куççăр çын — туяллă сăвăçă.
Эп вĕсене те мĕскĕнĕн курмастăп,
Çук, ирĕк çыннăн тивĕçне туятăп.
Авал пулсан вĕсем вĕçрен вĕçе
Çĕршыв тăрăх çӳретчĕç йĕрсе çеç.
Кив ăстасем ун йышшинче кураççĕ
Таптаннă чун, ыйткалакан хутаçĕ.
Патша калпакĕ е кĕтӳç пушши —
Художникшĕн пĕр тетчĕç. Тĕрĕс-ши?
Ăсташăн пĕтĕм çут тĕнче — натура
Тесе калатчĕ авалхи культура.
Çапах та тĕнчене çап-çутă ир
Кӳресшĕн çуннă-çке ялан эпир,
Çав ырă ирĕн чĕрĕлĕх хĕвелĕ
Çур тĕнчере йăлтăртатать илемлĕ,
Çапах та пирĕн куç çав хĕвеле
Часрах курасшăн пур тĕнчипеле.
Çапах художник — самана çынни вăл.
М а л а ш л ă х пулмалла ун перспектива,
Çавна туятăп сан ĕçне курсан,
Çавна эп саламлатăп пур чунтан!

1952

## СКУЛЬПТОРА

*И.Ф.Кудрявцева*

Эп сан патна кĕрсе курмассерен
Халăхăма ĕненерех паратăп.
Çав самантрах — калатăп чĕререн —
Хам çырнă сăввăмсемшĕн вăтанатăп.

Ав сан ларать рабочи, ав салтак,
Ав пионер, ĕçчен пике, çар пуçĕ...
Пăхатăп та эп ăнланап йăлтах:
Питсем çинче çын чунĕсем яр уçă.

Куратăп халăх савнă поэта,
Çул иртнĕçем вăл çамрăкланчĕ мар-и?
Ăна халь тăвăр, тăвăр çакăнта,
Час Атăл хĕррине вăл тухса ларĕ...

Сулмакĕ, кӳлепи пур çак ĕçсен,
Тăмне те ху çăратăн, йăвалатăн.
Çапла куçа курнан, алла лекен
Сулмаклă сăмахсем тупасчĕ манăн!

1952

## БАКЕН

*М.Я.Сироткина*

Эс курнă-и? — Çĕрле Атăлпала
Пăрахутпа е кимĕпе каюçăн
Пĕр хупланать, пĕр ялтăрать каллех
Йăваш та лăпкă çутă чĕрĕ куçăн.

Пĕр хум çинче вăл авăсăнкалать,
Пĕр чăмнă евĕр... Руль тытса пыруçă
Ăна аякранах курса паллать,
Вăл сӳнмесессĕн — малалла çул уçă.

Çак пурнăçра çын çутăрах çунасшăн,
Вăл тинĕсри маяк пек курăнасшăн,
Кам тиркĕ пархатарлă ĕмĕте?

Анчах ман асăмра кирек хăçан та
Çав пĕчĕк пăнчă: тĕксĕм çутатсан та —
Вăл çул уçать, вăл вырăнлă çĕрте.

1949

## ХĔВЕЛ УРИ

Чĕлхеçĕпе чĕлхе пирки калаçрăм.
Вăл ӳпкелерĕ кăшт сăвăçсене.
Эп пур — вĕсен хутне кĕрсе тавлашрăм,
Çапах та шухăш ӳкрĕ пуç çине.

«Мĕскер шыратăр? — терĕ çав юлташăм, —
Пăхма вĕренĕр халăх куçĕпе.
Пĕлесчĕ санăн иçмасса: чăвашăн
Хĕвелĕ те утса çӳрет çын пек.

Ураллă вăл, ярăнтарать хĕвел
Çынпа пĕрле шултра утăмпалан...
Хальччен те сăнаман-и? Питĕ шел!»

Хĕвел ури... Илтетпĕр ачаран.
Анчах çав сăнлăха нихçан та ман ăс
Художник пек тавçăрайманччĕ. Намăс!

1949

## ТĂВАН УЙ-ХИР

(«Тăван сăмах» валли çырнă)

Тикĕс тырă тинĕс пек,
Пĕр йăран та курăнмасть.
Кунĕ шăрăх та тӳлек,
Пĕр пучах та хусканмасть.

Ав — комбайн хир тавра
Карап пек ишсе пырать.
Вăл вырать, çапать тырра,
Пит тирпейлĕ пуçтарать.

Комбайнерăн умĕнче
Ылттăн çăлтăр курăнать.
Ялкăшать хĕвел çинче,
Уй-хире вăл çутатать.

Тăрăшса ĕçленĕрен
Çын çӳрет çăлтăрпала.
Вăл — герой. Эп те ӳссен
Çавăн пек тăрăшмалла.

1950

## ХАЛĂХ ЧУНĔ

Колхоз клубĕнче эпĕ сăвă каларăм,
Итлерĕ ватти, вăй питти, çамрăкки.
Сасартăк хам çырнă сăввах манса кайрăм,
Тăк такăнтăм пĕр саманта тем пирки.

Унччен те пулмасть — маларах ларнă каччă
(Каччи тин пĕтернĕ пуль çиччĕмĕш класс)
Эп маннă сăвва чиперех астутарчĕ,
Каларĕ те — хăй те именчĕ пулас:

Питне çаннипе хупласа, пуçне усрĕ.
Анчах манăн куçăм умне çав самант
Пĕр харăс — çĕршер çулхи тӳсĕм те тухрĕ,
Малашлăх та çутрĕ сӳнми асамат.

Чĕрем, савăнса, хăвăртрах тапса илчĕ:
Çав шкул ачине, çӳлелле çĕклесе
Мĕнпур тĕнчене кăтартассăм ман килчĕ —
Ак — вилĕмсĕр халăхăн чунĕ! — тесе.

1950

## САЛАМ

Куйбышев облаçĕнчи
Чаллăпуç районĕнчи
«Ленин çулĕпе» хаçат
Çакнашкал салам кăçал
Пичетлерĕ манăнне,
Кĕртес пуль кĕнекене?

Инçетри Шупашкартан,
Хамăр Автономирен
Саламлап чунтан-вартан!
Пырса курăп — ӳлĕмрен.
Тен, хăна та пулăп эп
Туслă, ырă йышăрта.
Чаллăпуçĕн чапĕпе
Çырăп çĕнĕ сăвă та.
Сирĕн «Ленин çулĕпе»
Халь те ман умрах выртать.

Чыслă ят, мухтавлă ят!
Çирĕм çул тăван хаçат
Ленин—Сталин шухăшне
Сарчĕ халăх хушшине.
Çав ĕçе тата аван
Ăнтармашкăн шырăр май:
Пĕр сăмах сая ан кай!
Ырлăх-сывлăх сунакан
Ват хаçатçă — Хусанкай.

1951

## АТĂЛ КУÇĔ

Хăш çул хĕлле, шыв-шур шăнсассăн,
Пăрланнă Атăл анинче
Çавра кӳл[л]енчĕк асăрхатăн,
Вăл çап-çутах хĕл каçиччен.

Пăр хулăн — аршăн пур, виçсессĕн.
Кӳл[л]енчĕк парăнмасть пĕччен.
Вăл — Атăл куçĕ: халăх темшĕн
Çапла каланă ун çинчен.

Çил уртăр, шартлама кастартăр —
Вăл кăчăр та пулмасть иккен,
Чӳхенкелет кăна хуллен.

Çапла, çул иртнине пăхмасăр,
Хавхалану ман чĕрере
Тапса тăринччĕ ĕмĕре!

1949

# «КУН-ÇУЛ ТӲПИНЧЕН» КĔНЕКЕРЕН (1958)

## ÇУРРИ

*Митта Ваçлейне*

Халь тин эп кулянассăм çук пĕрре те
Умра курса çĕмрен пек йĕкĕте.
Алла та çитĕн, тантăшăм, çĕре те, —
Кама мĕн чухлĕ тивĕçнĕ хевте.

Пасманапа пайланă-и патварлăх,
Мăскал çине хурса кăна-ши çав...
Сăлтав вăл мар: кун-çул мĕнле тăварлă,
Ĕç-пуç мĕн евĕр тарлă — ак сăлтав.

Ир кӳлĕмпе каç кӳлĕмне пĕлмесĕр,
Сӳсмен хывмасăр вăтăр çул тăршши
Пĕр суханах туртса пăхсассăн эсĕр —
Ай-хай пуçа ухсах юртайăр-ши?

Эпир... эпир юртатпăр-ха, юлташăм!
Çилхи кăна вĕçсе пырать çилпе.
Тăват урин те пĕр кĕвĕллĕ ташă,
Тăват йĕркеллĕ сăвă çемми пек...

Çерем çĕтет çырулăх акапуçĕ —
Тĕрен тивмен чунпа ăс çеремне.
Кайран тухнишĕн çул-йĕр пулĕ уçă,
Малтанхисемшĕн — йывăр ĕмĕрне.

Пиртен малтан пăт-пат кăна сухаçă
Хуратнă лăс кăлканлă парлака.

Пирӗнпеле — карах тӑрса тухаççӗ
Вуншар, çӗршер... Анамӑр сарлака!

Чӑваш уйне Çӗн Кун аки çитсессӗн
Пуçланчӗ çав хаваслӑ сухалу.
Ват Шелепи! Эс Çеçпӗле илтсеттӗн,
Хисеплӗ санӑн шурӑ сухалу.

Пӑхса ытарайми савӑнтармашкӑн
Теприн те çитмеллеччӗ-ха кун-çул:
Яш Кӗçтенттин! Ялан эс тӗкӗр маншӑн,
Тивлетлӗ сан таса алмаз куçу.

Тепри... Унпа пӗрлеччӗ ӗç те, çул та,
Тав-шав та шӳт, ырлу та хӑтӑру...
Шупуççынни! Ӑçта эс выртса юлтӑн?
Сӑваплӑ сан эпир пӗлмен тӑпру...

Сухамӑр çӑмӑл мар: тымар та чул-чӑл
Шартах хуçать хӑш тапхӑр тӗрене.
Анчах кам кӳлчӗ, тантӑшӑм, кам кӳлчӗ?
Эс ирӗккӗн туртан йывӑррине.

Мехел çитмен-ха лӑпкӑн, вӑйӑн-шайӑн
Кӳлсе те тӑварса сӗнкӗртетме.
Çӗршер çулхи парлак халь ака айӗн,
Тӗнчипеле тӑватпӑр пӗр çӗртме.

Малтан çуралнӑшӑн эп ӳкӗнместӗп,
Кӑшт маларах та çитӗнес темен.
Йӑлтах йӗркеллӗ: эп те кирлӗ, эс те;
Çӗре шӑп вырӑнлӑ çурать тӗрен.

Иртейнӗ пурнӑçӑн пӗр сехетне те,
Пӗр самантне те халӑм çук манма.
Хури-шурри пурин те пур, пӗлетӗп,
Пурне те курчӗ çур ӗмӗрӗм ман.

Çурри... Анчах çаплах ак, яра кунӑн
Сӳсмен хывмасӑр, тепӗр чӗрӗкне
Тапса туртасчӗ те — вара саккунлӑн
Тӑварӑр, салтӑр хӑмӑт чӳлӗкне.

Çурри... Анчах юртатпăр-ха, юлташăм!
Çилхи кăна çинçен шăхăркалать.
Тăват урин те пӗр кӗвӗллӗ ташă,
Пуçне ухса çăрхамçăм çăрхалать.

Атя, ӗçченӗм! Тăпăртат та ыткăн,
Мăкăрлантар тусан йӗри-тавра.
Пӗр ӗмӗт пур: кивви ан пултăр тыткăн,
Этем ан хутăр этемех турра.

Эй-хей! Тӗнчен саманисем те саккăр,
Тамашисем те тăххăр тенӗ пек,
Апла та вылянать, капла та тапхăр,
Сасартăках уйлаймăн пӗтӗмпех.

Пӗр чăнлăх çеç улăшăнмасть: вăл — халăх
Тата вăл чи мала тăратнă çар,
Ку — пирӗн парти, йышлă ăслă-халлă,
Тӗреклӗ чăмăртаннă пӗр хастар.

Унпа пӗрле ку чух эпир çӗклетпӗр
Пиншер çулхи харамлăх çеремне.
Ун умӗнче эс те пӗр, эпӗ те пӗр —
Тӗшне кура хаклать вăл çынсене...

Атя, ӗçчен! Турт лав, турт акапуçӗ,
Пӗтӗрӗнет тăпра — хура вӗрен.
Ыран тухас тăваншăн çул-йӗр уçă,
«Туртти пулин, юртти çук» темӗ, тен.

Тесен... Эпир юртатпăр-ха, юлташăм!
Çилхи кăна уç сывлăш кастарать.
Тăват урин те пӗр кӗвӗллӗ ташă,
Çӗре тапса çăрхамçăм кустарать.

1957

## ТАВ КУРКИ

Çӗнӗ çулăм! Çулленех
Эс килетӗн урăхла.
Анчах пур сан пӗр йăла,
Ăна пирӗн тытмалла:
Тав куркимӗр, çӗкленех!
Тав курки — çавра курка

Е кĕтеслĕ ăстаккан.
Ăстакканĕ ăс тытсан
Астивенĕ аптраман,
Тытмасассăн — лартăр-ха...

Эп виçелĕхшĕн ку чух:
Ĕçкĕре те çикĕре,
Савăшра та пикере
Тухас мар теп чикĕрен,
Ĕçре çеç ман чикĕ çук.

Эпĕ мантăм хуллене:
Пархатарлă самана,
Çĕнĕрен çĕн асамна
Кăтартасшăн эс мана
Васкататăн кулленех.

— Ĕлкĕресчĕ! — тетĕп эп.
Савнă тусăм чĕннĕнех,
Карăнтарнă чĕлпĕрне
Лăш яратăп чĕренне,
— Малалла! — тесе хистеп.

Кивĕ çул та аслă çул,
Ĕçне турăн, сывă юл!
Халăха эс хушрăн мул —
Паттăр ăс, тĕреклĕ хул;
Кулянмасăр алă сул.

Çĕнĕ çул, хавассăн кул,
Çĕнĕ телейпе эс тул.
Кам хĕвне пытарнă чул —
Çавăнпа эс сыхă пул.
Умна ӳктĕр такăр çул.

Тавссие! Пуçлантăр çул...

1957

## ЭПĔ — ХАЛĂХ

Эпĕ — халăх. Ĕçчен. Пултаруçă.
Тĕнчене çĕнетме килнĕскер.
Кĕрешсе тупнă çулăм яр уçă.
Карталаймĕ никам! Нимĕскер!

Пилĕкçуллăхсемпе утăмлатăп,
Çĕр çĕклес пек хăват ман хулра.
Çулсерен çамрăкрах эп пулатăп,
Утнăçем вăйланать ал-ура.

Хисеплерĕм йăлтах, çырса хутăм —
Никĕсрен тӳпине çитиччен.
Ярса пусрăм ак улттăмĕш утăм
Çĕрĕн улттăмĕш пайĕ çинче.

Ыранхи пултару чаплă юррăн
Çĕклентерчĕ чуна, чĕрене.
«Тăвапах!» — тетĕп эпĕ хăюллăн,
Çак сăмахăм — тупа вырăнне.

Куçăма курăнать çĕрĕм-шывăм
Шăратса хывнă пек çуталса.
Эп ăна пур этемлĕхшĕн хыврăм:
Кур, вĕрен, манăн кăмăл таса.

Манăн кăмăл — пĕрле, алла-аллăн
Ăмăртса ĕçлесси, туслăх, мир.
Çĕнĕ эра пуçланнă ăс-халшăн
Вăрçă пултăр — тахçан маннă чир...

Эпĕ — халăх. Ĕçчен. Пултаруçă.
Тĕнчене çĕнетме килнĕскер.
Коммунизм патне — çул яр уçă.
Карталаймĕ никам! Нимĕскер!

1956

## ЛЕНИН

Çĕршер те пиншер çул хушши ĕмĕтленнĕ
Тĕнче ĕмĕтне хăвăртрах çитерме
Хăватлă пĕр парти ӳстертĕн эс, Ленин.
Çĕклерĕн мĕнпур ĕçлекен этеме.
Вăйлатрăн алла, ăс-хала эс вăратрăн,
Çунат хушса патăн чуна, кăмăла.
Чура сăнчăрне касса татрăн, аркатрăн,
Этемлĕхшĕн хыврăн чăн çул малалла.

Таçти халӑхсем те, çӗрсем те, çулпуçӗ,
Маяк пек кураççӗ сӳнми чӑнлӑхна.
Мухтавлӑ пӗр Ленин! Сассу пулчӗ уçӑ,
Мӗнпур çут тӗнче илтсе юлчӗ ӑна.
Хаяр кӗрешӳ чарӑнман-ха, пырать вӑл,
Кивви ал йӑтсах парӑнмасть çӗннине.
Анчах çӗнӗ çурт çитӗнет, хӑпарать вӑл,
Эс хутӑн, Ильич, ун çӗрми никӗсне.

Кун-çулӑн сулмаклӑ кӳми нихӑçан та
Пӗччен паттӑрсен вӑйӗпе çаврӑнман.
Чи аслӑ этем, халӑха эсӗ шантӑн,
Ним чапсӑр çынна паттӑрпа куртӑн тан.
Хура пӳртсенчен, фанзӑран, ӳплерен те
Хӑпарчӗ ӗç йышӗ сана ӗненсе.
Куллен эс, Ильич, вӗсемпе çӗнтеретӗн,
Санпа пусмӑртан çӑлӑнаççӗ çынсем.

Çӗршер те пиншер çул хушши ӗмӗтленнӗ
Этемлӗх курасшӑн хӑйне улӑпла.
Хӑватлӑ пӗр парти ӳстертӗн эс, Ленин,
Çитертӗн тӗнче ӗмӗтне унпала.
Пире парӑнать çутӑ кунлӑ малашлӑх,
Усмастпӑр эпир çӗнтерӳ ялавне.
Тума пулнине тӑватех аслӑ халӑх,
Никам та пӳлеймӗ ун аслӑ çулне.

1955

## НОЯБРӖН 7-МӖШӖ

Паян эпир пӗр шухӑш шухӑшлатпӑр.
Вӑл çӗнӗ шухӑш мар, анчах ӑна
Çулсеренех тепре татса калатпӑр:
«Октябрь уçрӗ аслӑ самана».

«Аврора» залпӗ кӗмсӗртетнӗ хыççӑн
Пуçланчӗ çӗнӗ эра тӗнчере.
Çав сасӑ чарӑнман: куллен вӑл хыттӑн
Йыхрав пек вӑратса чӗнет çӗре.

Ӑна илтмесӗр тек пултараймаççӗ
Тӑшман та, тус та — пӗтӗм çут тӗнче;
Европӑри вулкан, вӑраннӑ Ази,
Америка — йӑлт пӗлчӗç ун çинчен.

Сĕм пĕлĕте прожектор пек çурса вăл
Аваллăхпа малашлăх хушшине
Çапса хăварчĕ вутлă-хĕмлĕ савăл
Хура тăхлан пек сулхăн кĕркунне.

Кĕр — халăх çиллипе хуралнă пулнă.
Унтан вара çак кун пире ялан
Чи çутă, ырă, пархатарлă кунăн
Чуна çĕклет тулли хаваспалан.

Çак кун вăл — пирĕн ĕненӳ те шанчăк,
Çак кун вăл — çитнĕ ĕмĕт, ăрăскал.
Кăшт ырнă пек пулан е чун хавшанчĕ, —
Ан ман: çак кун вăл — иксĕлми вăй-хал.

Çак кун пĕрремĕш тупă сасси витĕр
Янрарĕ м и р сăмах йĕри-тавра.
Ан тив, ăна татах тĕнчемĕр илттĕр:
Мир пултăр, тикĕслентĕр нӳр тăпра.

Çак куншăн чи паха сăмах тупмашкăн
Çĕр çывăрман, кун-çул та пулмĕ шел.
Çак кун ĕмĕрлĕхех вăл — саншăн, маншăн,
Пуриншĕн те — хавхалану, хĕвел!

1954

## ЫРĂ КĂМĂЛЛĂ ТУС, САСĂ ПАР, АЛĂ ПУС!

Çăмăл мар хресчене
Килĕ-çурчĕ çунсан
Çĕнĕрен çавăрмашкăн хуралтă.
Тĕп сакай вырăнне
Вĕлтĕрен хунаса
Пуснине хăш чухне эс куратăн.

Çăмăл мар шахтера,
Шахтине шыв тулсан
Е сасартăк тăпра ишĕлсессĕн.
Кăмрăк пек хуп-хура
Ун чухне шăпу сан,
Тен, тĕсне те курмастăн, пĕлместĕн...

Çӑмӑл мар, машинист,
Питӗ йывӑр сана
Пӑравус хашлатса çул тытсассӑн,
Вӑрттӑн вӑй — динамит
Чип-чипер поездна
Рельс çинчен шырлана вӑркӑтсассӑн...

Çавнашкал шар-инкек —
Вӑрттӑнни, куçӑнни —
Хӗрӗх пӗрмӗш çулта килчӗ мар-и?
Хуп-хура пӗлӗт пек
Тӗтӗмпе чыхӑнни
Ассенчен халиччен те каймарӗ.

Халӗ ак тепӗр хут
Пирӗн мирлӗ çурта
Вут пуççи ывӑтса çунтарасшӑн
Хыпӑнать çичӗ ют,
Чышкине чӑмӑртать,
Тинӗс урлӑ юнать, çӗр çӑтасшӗ!

Çыннӑн пур çӗр пӗлмен
Урӑм-сурӑм хӑват,
Çын ӑсне парӑнать çутçанталӑк.
Атом вӑйӗпелен
Çӗнӗ ӗмӗр тӑвать
Пирӗн ирӗк çӗрти ирӗк халӑх.

Çав вӑя парар мар
Сӗмсӗрсен аллине!
Урнӑ ушкӑн унпа ан хӑмсартӑр,
Тек ан саптӑр кӑвар
Ешерен çӗр çине,
Пур этемлӗх ӑна тытса чартӑр.

Вӑрçӑ пӗтнӗ кӗрпе
Хиросима çинче
Атом бомби малтан çурӑлсассӑн,
Тип аçа çапнӑ пек
Шарт сиксе çут тӗнче
Ах-ахлатрӗ, сывларӗ вӑл ассӑн.

Чи хӑрушӑ, хаяр,
Аравасӑр инкек

Куç умне тухса тăчĕ пурин те.
Тек вăрçма парар мар!
Юн ан тăкăнтăр тек.
Пурте çывăх пире: Англи, Инди,
Пĕрлешӳллĕ Штатсем,
Португали, Иран,
Бельги, Турци, Итали, Корея...
М и р тесессĕн, э т е м
Тетпĕр пурте малтан:
Вăрçă — ун пуçпĕтти, мир — телейĕ.

«Çынлăхран тухар мар, —
Теççĕ мир çыннисем, —
Пурте хаклă пире, пурте — пирĕн:
Рим, Мускав, Амритсар...
Лувр пуçтарнă илем,
Рафаэлĕ, Гомерĕ, Шекспирĕ...»

Пурте кирлĕ пире.
Ырă кăмăллă тус!
Çын çынах пултăр тетĕн пулсассăн,
Сыхламашкăн мире
Сасă пар, алă пус:
— М и р ! — теер пур чĕлхе те пĕр саслăн.

1955

## ÇĔР ЮЛТАШĔ ÇАВРĂНАТЬ

Уйăх мар, хĕвел те мар, —
Çĕр юлташĕ çаврăнать.
Ăс вăл Улăп пек патвар,
Çав кустарчĕ, çав ăна.

Тĕртрĕ ячĕ те çĕртен, —
Лешĕ кайрĕ тĕнчене.
— Саламла унта пиртен
Аякри çăлтăрсене! —

Тĕлĕнтермĕш çут тĕнче!
Тĕлĕнместпĕр айвантан:
Çичĕ пĕлĕт леш енче
Ярăнатпăр паянтан.

Çиччӗ пулӗ, çитмӗл те,
Çичçӗр çитмӗл çиччӗ те...
Шутламастпӑр пӗлӗте,
Çул-йӗр — вӗçсӗр инçете.

Ӗлӗкхи сӗм тӗттӗме
Сирсе ятӑмӑр та халь,
Ирӗк чунлӑ этеме
Ак ӑçта çӗклет ӑс-хал!

Çӗр юлташӗ çӗр тавра
Çаврӑнать те çаврӑнать.
Вӑхӑт çитӗ: кӗç вара
Çынпалах вӑл таврӑнать.

Пархатарлӑ çӗр çинче
Мӗн курмастпӑр пуль тата?!
Марс çине çул хывиччен
Пурӑнасчӗ, тупата!

1957

## ЛЕНИН ÇУЛӖПЕ

### 1

Мускав кӗрлет. Çӗршыв чӗри пек уççӑн
Ӗçлет вӑл кунӗпе те çӗрӗпе.
Туятӑп эпӗ, ун пульсне тӑнлуçӑн:
Çӗр юнӗ çӗнелет çав чӗрепе.
Кӗрлет Мускав, янрать вӑл çӗр чӗлхеллӗн:
Ӗçлет çӗршывӑм паттӑр улӑп пек.
Хӑй партипе пӗрле утать вӑл меллӗн,
Утать вӑл аслӑ Ленин çулӗпе.

### 2

Делегатсем хӗрсе канаш тӑваççӗ
Мухтавлӑ Кремлӗн çутӑ çуртӗнче:
Пӗрне сӳтеççӗ, теприне яваççӗ,
Ним пытармасӑр, халӑх умӗнче.
Президиум тӗлне Ильич çӗкленнӗ —
Шап-шур залри шур мрамор кӳлепе.
Тӑрать вӑл шӑппӑн, тинкерсе итленӗн,
Курать: пыраççӗ Ленин çулӗпе.

**3**

Хӗрет-и хурçă е кермен хăпарчӗ,
Тӗртен пир-авăр е метро алтан —
Пурне те эс хавхалантартăн, парти,
Кашни ӗçре коммунистсем малта.
Туни — нумай, анчах пит каппаймастпăр,
Калан сăмахăмăр вут чулӗ пек:
Тулли телей тумасăр çырлахмастпăр! —
Эпир утатпăр Ленин çулӗпе.

**4**

Акатпăр тырă-пул, ӗне сăватпăр,
Тухатпăр чикӗре хурал тăма,
Çыратпăр сăвăсем, карап тăватпăр,
Алла илетпӗр чăрсăр атома,
Çăлтăрсене пăхса иментеретпӗр:
Лутраланать ăс-халшăн çӳл тӳпе,
Пурне те миршӗн, халăхшăн ӗçлетпӗр:
Эпир пыратпăр Ленин çулӗпе.

**5**

Кам инçетри çӗршывсенче улаххăн
Итлет кунтан каланă сăмаха,
Кам иртнине аса илсе сулмаклăн
Питлет хӗç суллакан вăр-хураха,
Кам пирӗнпе пӗрле калать хăюллăн:
«Хура вăя çул памăп, пӳлӗп эп!» —
Çавна та асăнатпăр ырă чунлăн:
«Çав çын утать халь Ленин çулӗпе».

**6**

Куç умӗнче Тольятти, Ибаррури,
Торез та Ульбрихт, Живков, Цеденбал...
Каллех аса килет мана пӗр юрă —
Чуна çӗклен «Интернационал».
Сӳезда хупичченех ăна хăватлăн
Тăрса юрласчӗ кăмăл тулнипе...
Тӗнчен пуласлăхне курса тăратăн,
Çывăхарать вăл Ленин çулӗпе.

1956

## ПУЛТАРУ

*В.Г.Егорова*

Этем вăл хăйшĕн хăй парне.
Нимрен пахи — çак пурнăç. Хамăр.
Анчах мĕскершĕн хăш-пĕрне
Çĕре çитех пуçа таятпăр?

Пур пирĕн вирлĕ чĕлхере
Пултар сăмах. Çав пулĕ тупсăм.
Çавна туйтартăн ĕмĕрех,
Вĕрентекенĕм, аслă тусăм.

Калаççĕ халăх хушшинче:
Вăл пултарать, вăл пултарулла.
Çын пур тăвать-мĕн çук çинчен,
Хушать вăл çĕнĕ, хаклă пурлăх.

Çав пурлăха кĕве çимест,
Шăши касмасть, хыпмасть вут-çулăм.
Çав пурлăх муртăхмасть, çĕрмест,
Пĕтмест те, — вĕçĕмсĕр кун-çул ун.

Эпир ăна илем теетпĕр,
Тĕпчевçĕ чăнлăх тет ăна.
Тĕллевĕ ик сăмахĕн те пĕр:
Этем телейĕ. Çав кăна.

Çав пурлăха куллен пухса
Хăш чух çука тăрса юлатпăр,
Хăш чух никам çăвар уçса
Сăмах чĕнменнине куратпăр.

Суя мухтав ярапине
Вĕлкĕштерсен çил хӳрисемшĕн
Эс — пĕтнĕ çын ун пек чухне,
Сана вĕсем шыва тĕртесшĕн.

Анчах вак хум ассан-ассан,
Шыв лăпланать тулли чара пек.
Шыв саррипе саркаланса
Ишет чăн ăслăлăх карапĕ.

Шăв-шав, кĕр-кар та çавра çил
Хирсе лăсканине пăхмасăр,

Хӑй ӗмӗтнех тытсассӑн çын —
Истори умӗнче вӑл паттӑр.

Çав ӗмӗт йышлӑ этемсен
Чунне кӗрсе вырӑнаçсассӑн,
«Кун-çул час иртрӗ-çке» тесе
Ма ахлатса сывлас-ха ассӑн?

Пӗр çыннӑн ӗмӗрӗ — çӗр çул
Е ытларах пулсан та — иртӗ.
Халӑхупа эс сапӑр пул:
«Вӑл вилӗмсӗр, вӑл — эп, эпир!» — те.

1955

## ТУТАРСТАНА САЛАМ!

### I

Тутарстанра çуралнӑскер,
Манаймӑп эп çӗршывӑма.
Ачалӑхӑм уяр, сенкер
Тӳпе пек тухрӗ ман ума:
Шӑрçаланать кун хыççӑн кун,
Çул хыççӑн çул... Çӗкленчӗ чун.

Салам-аликкӗм, тантӑшсем!
Кӑвак йӗмпе, тӳпеттейпе
Чупса çӳрен ярханахсем,
Ăçта эсир? Пӗлместӗп эп.
Тен, хӑвӑр та эп ӑçтине
Пӗлместӗр пулӗ ку чухне.

Çарран, пилӗксене çыхман,
Хура уралла малайсем,
Эпир тӑван Тутарстанран
Салантӑмӑр çунат ӳссен.
Анчах ачалӑх халиччен —
Унта вӑл, хамӑр ялсенче.

Çав кӳршӗллӗ ялсем — чӑваш,
Тутар е вырӑс ялӗсем —
Иптеш, товарищ та юлташ
Теетчӗç пӗр-пӗрне вӗсем.
Виç сӑмахри çав пӗр ӑнлав
Пире çӗклерӗ тӑванла.

## II

Хусан! Манаймăп эп сана:
Чи ырă, çамрăк ĕмĕте
Куçа хупса асăнсанах —
Аса килетĕн эсĕ те.
Туссем! Ăçта-ши халь эсир?
Аса килет-и çутă ир?

Вăл пирĕн пурнăç ирĕччĕ,
Кун-çулăн шурăмпуçĕччĕ.
Сенкер шăналăк сирĕлчĕ,
Тем анлăш алăк уçăлчĕ.
Хĕвеллĕ кун тӳпинелле
Кармашрăмăр ĕçсемпеле.

Хусан! Сан хӳтĕ хӳмӳсем
Упратчĕç манăн кĕввĕме.
Виç чĕлхепе пупленĕçсем
Кăмăллăрахчĕ вĕренме.
Адель Кутуй, Хади Такташ
Мана паратчĕç ыр канаш.

Вĕсен хисеплĕ ячĕсем
Усранĕç манăн чĕрере.
Этем мими çĕре кĕрсен,
Ун шухăшĕ — юлать чĕрех.
Сыв пултăр ăруран ăру
Татти-сыппи́сĕ́р пултару!

Хусан университетне
Эпир чылай институтран
Хаваслă студентсен каçне
Пуçтарăнаттăмăр хутран.
Кĕр-шав та кулă, тавлашу,
Йăл-ял куçсем те паллашу...

Пĕрлешнĕ шухăш-ĕмĕтсем,
Ăшри пĕрремĕш çавраçил.
Çулла, экзаменсем пĕтсен,
Маркиз утравĕ, Атăлçи —
Кĕнекепе те кимĕпе;
Хăш чух уяр, хăш чух йĕпе...

Нӳрленнӗ ӳплесем, кӑвайт,
Тин пиçнӗ пулӑ пӑсланать.
Хӗвел каç еннелле шӑвать,
Пире пулсан — кун пуçланать.
Сӗм пӗлӗт çӑлтӑрланнӑçем
Шепрех янраççӗ сӑвӑсем.

Хусанӑм — хурӑнташ хула!
Çӗрме пуян çӗр — Тутарстан!
Çӗклен те ӳс çултан çула
Пур халӑхлӑ йышупалан!
Салам сана пӗр çыннунтан,
Салам та тавтапуç — чунтан!

1953

## НАРСПИ ЮРӐÇИНЕ

Пархатарлӑ пӗр кун
Кӗнӗ пуль сана чун —
Асапри халӑхун
Ыранхи телейне.
Çут тӗнче çав самант
Çутнӑ пуль асамат —
Ӗмӗрех асӑнма
Эс çунса килнине.

Сан аннӳн кӑкӑрне
Çӗр си пек сӗткенне
Пуçтарса панине
Ӗненессӗм килет.
Эс малтан куç уçни,
Сас пани, йӑл кулни,
Хӑрах утӑм пусни —
Пулнӑ пирӗн тивлет.

Эс пӗрремӗш сӑмах
Каласа хурсанах, —
Астӑвас-мӗн çавнах
Нихӑçан манмасса.
Ун çинчен шутламан.
Аçу шӑппӑн пӑхсан:
«Ывӑл!» — тенӗ малтан
Сан аннӳ савӑнса.

«Ывăл! — тенĕ аçу, —
Ман ăру пĕтес çук,
Çутă пултăрччĕ çул
Кайăк хур çулĕ пек...»
Ăру-несĕлшĕн мар
Амаланнă кăвар, —
Халăха пархатар
Кӳтĕн чун вучĕпе.

Чĕрĕк ĕмĕр кăна
Куртăн çутă куна,
Вăл та пулчĕ сана
Тĕрмери пек хура.
Анчах эсĕ çынсен
Малалли кунĕсем
Çуталса килессе
Шанчăк кӳртрĕн юрра.

Каш-кашлать сĕм вăрман,
Пуç таять ват юман,
Вăл калать: «Эп манман,
Эсĕ — ман юррăм!» — тет.
«Çететтин, çететтин...
Кĕçтенттин, Кĕçтенттин!
Ĕмĕтсем çитрĕç тин!» —
Тет тăрийĕ çӳлте.

Çутçанталăк сана
Юратса асăнать,
Хапсăнать, ăмсанать
Сан сӳнми илемне.
Хĕвел пек эсĕ çун,
Çутатсам, çутă чун,
Ирĕкри халăхун
Иксĕлми телейне!

1955

## ÇĔРТМЕ

Юрлар! Чечекленет пур çутçанталăк.
Ейӳ шывсем кĕреççĕ çырана.
Çак уйăхра, юратнă тăван халăх,
Ху шăпуна эс илтĕн аллуна.

Хăватлă кĕрешӳ, хаяр аваллăх,
Пулас телей — йăлт тухрĕ сан умна.

Çак уйăхра — ăна çуллен туятăн —
Эс лартăн сарлака кĕрекене.
Ик аллуна сулса юрласа ятăн,
Хĕпĕртесе пăхса енчен енне.
Астунăçемĕн шухăша каятăн,
Куратăн тӳсĕмлĕ çулна-йĕрне.

Шухăшупа ăçта çитсен те халĕ,
Аса илетĕн аслă пĕр тусна:
Сана хăтарчĕ вырăс чун хавалĕ,
Çĕре çитех ăна таян пуçна.
Мăн Атăл типĕ, сар хĕвел хуралĕ,
Манас пулсан эпир Российăна.

Россия, вырăс халăхĕ упрарĕ
Ытарайми чечен чĕлхемĕре.
Кĕнекене те вырăс кĕртрĕ мар-и
Пĕрремĕш хут юрра-кĕввĕмĕре?
Çав туслăхăн, тăванлăхăн тымарĕ
Шала кĕрет — тăвата ĕмĕре!

Юрлар! Кĕслен-сăрнайăн та шăхличĕн
Янратăр Атăл тăрăхĕ ялан.
Ташлатăр хум пуса каччи пек вичкĕн,
Тан шывĕ пек тапса тăтăр талант.
Янра эс, ирĕк юрă, мир тĕнчишĕн, —
Ĕнентĕр хăй вăйне вăл санпалан.

1954

## КУН-ÇУЛ ТӲПИНЧЕН

*В.А.Долгова*

Хутар Эрхипĕн ывăлĕ Васлей,
Калавçă, сăвăç, тишкерӳçĕ... ç ы н!
Тус-йышупа эп те сунам телей.
Çулсем иртеççĕ тетĕн? Иртĕçин!

Васкавлă саманашăн хистесе
Юрттартăмăр чĕре çилçунатне.
Вăраннă халăха çĕклес тесе
Шырарăмăр чĕлхемĕр хăватне.

Çырулăх çурчĕ — пысăк япала,
Пĕччен лартаймăн, — юхтăр тек тару.
Кĕрлетпĕр нимери пек йышпала.
Сыв пултăр пĕрлешӳллĕ пултару!

Пĕрне-пĕри шанса, хавхалатса
Патвар хул-çурăмпа, таса чунпа
Çап-çутă пĕр кермен туса лартсан, —
Çав пулĕ пирĕн ĕмĕрлĕх юпа.

Эппин: ĕçлер-ха çанă тавăрса,
Тус-йыш çинче чăн тус суйла-суйла,
Чĕре урхамахне акатуйла —
Çăварлăх хыптармасăр — кустарса.

Ăс çитĕнсе тулайнă тапхăрта
Таçти-таçти халь курăнать пире.
Кун-çулăн тӳпинчен пăхатпăр та —
Саях яман пек çамрăк ĕмĕре.

Юрт, урхамах! Ан такăн çул çинче.
Малашлăха хĕнпе йĕр хыврăмăр.
Çулланнăçем илемлĕ çут тĕнче,
Тĕнче варри — Тăван çĕршывăмăр.

1955

## ТĂВАН ШУПАШКАР

Шупашкар, тăван хуламăр,
Юратсах кĕтсе илен.
Кунсерен ӳсетĕн капăр,
Çĕнелетĕн кунсерен.

Кăмăла таçтан туртатăн,
Эс ялан пире паха.
Мускавпа тăванлантартăн
Пирĕн ирĕк халăха.

Атăла илем кӳретĕн,
Шурă-шурă Шупашкар.
Çывăхра та, инçетре те
Сан ятна сума сăвар.

Сан çинчен эпир юрлатпӑр,
Халал[л]атпӑр ыр кун-çул.
Шупашкар, тӑван хуламӑр,
Ӗмӗрех мухтавлӑ пул!

1955

## ИСПАН ÇЫННИ ЮРЛАТЬ

Испани... Мӗнле хумхантарчӗ
Вӑл пирӗн чуна, кӑмӑла!..
Ак юрӑ каллех астутарчӗ
Çунатлӑ таса тӑвӑла.

Испанирен килнӗ хӑнамӑр
Юрлать Шупашкар хулинче.
Илемлӗ те тӳсӗмлӗ, паттӑр
Çӗршыв çӗкленет юрринче.

Республика вучӗ — вӑл çуннӑ,
Вӑл хыпнӑ нихçан сӳнмессе.
Каллех халӑх пулӗ пӗр чунлӑ,
Кар тӑрӗ вӑл: «Ирӗк!» — тесе.

1953

## Н.Я.БИЧУРИНА (ИАКИНФА)

Асаплӑ ӗмӗрте, пур çутӑ шухӑш
Патша патакӗ айӗнче чухне,
Эс ху çуралнӑ ял ятне астунӑ,
Хӑвна аран ӳстернӗ ял ятне.

Мӗскер ун чух вӑл тӳрӗ пилӗксемшӗн
Бичурино е Шӗнерпуç тени!
Сана вӑл илтӗннӗ илемлӗ юррӑн.
Эс шухӑшланӑ: «Эп — çав ял çынни...»

Кун-çулӑмӑр йӗрне йӑлтах манмашкӑн
Хистех тӑнӑ пулин те самана,
Ялун пехилӗ аякран йӑпатнӑ
Хура пӳртри хӑй çути пек сана.

Пӗр каснӑ чӗлӗ çыпӑçаймӗ тенӗн,
Эс çулсерен кулянна тарӑхса:
Тӑван йӑха эс парӑмлӑ пек пулнӑ,
Тӑван чӗлхемӗре, тӑван ӑса.

Пӗрремӗш хут çӑвар уçса каланӑ
Чи ӑшӑ сӑмахсем — а т т е, а н н е —
Умна эрешлесе кӑларнӑ чӗррӗн
Асран кайми ачалӑхун сӑнне.

Чӗлхе... Пулман-çке ӑна çул, паман-çке!
Ху халӑхушӑн хытӑ кӳренсе
Вара эс Хӗвелтухӑçне тинкернӗ,
Хӑватлӑ вырӑс чӗлхине пӗлсе.

Эс Пушкинпа калаçнӑ куçма-куçӑн,
Декабристсемшӗн пулнӑ çывӑх çын.
Сӗм тӗттӗмре те халӑх ӑсӗ çиçнӗ.
Чӑваш ӑсне кӑтартрӑн эс туллин.

Хӑрушӑ ӗмӗрте çӗклерӗн эсӗ
Тӑван Российӑн чӑн ӑслӑлӑхне.
Пур халӑхшӑн та çӗнӗрен эс уçрӑн
Пуян ӑс-халлӑ Ази алӑкне.

1953

## ÇУРХИ

Сарлака, тулли кӑçалхи Атӑл,
Кайӑк та вӗçсе каçасла мар...
Юррӑмçӑм, ан татӑл та ан ватӑл,
Çуркуннеçӗм, çӗнӗ сывлӑх пар!

Шупашкарӑм, ирӗклӗ çӗршывӑм —
Ӑслӑ ӗçӗн аслӑ планӗнче.
Ан мӑкал, чӗлхем, чӗрем, ан ывӑн! —
Тетӗп эп пӗр палӑк патӗнче.

Ӗмӗрлӗх таса чӑваш поэчӗ
Карлӑкланӑ çӳлӗ çырантан
Хӗвелтухӑçне пӑхса тинкерчӗ:
Хӗвел тухрӗ тарӑн Атӑлтан.

Пуçласа çакна пиччемӗр курчӗ:
Вӑл кунта пӗрремӗш çуркунне.
Пуçласа кӑçал вӑл илтсе юлчӗ
Атӑл пӑрӗ шатӑртатнине.

Шатӑртатрӗ, хӗсӗнчӗ те — лаштӑр
Çурӑлса хускалчӗ пӑр вара...
Сенттисем сикеççӗ тӑпӑр-тапӑр
Константин Васильевич тавра.

Ваттисем ӑна ятран чӗнеççӗ:
«Ну, Кӗçтюк, мӗнле-ха пурнӑççем?»
Патӑрьел таран ӗмӗтленеççӗ
Ун шайне çитме яш сӑвӑççем.

Çитӗç, çитӗç, тен, иртсе те кайӗç, —
Саманамӑр çулӗ сарлака.
Анчах ӗмӗр-ӗмӗрех пуç тайӗç
Çак пӗрремӗш бронза палӑка.

Савние — савни, ирӗке — ирӗк,
Чӑваша — чӑваш тенӗ чухне
Ун патне таçтан-таçтан çын пырӗ,
Ытараймӗ ун таса чунне...

Сарлака-çке Атӑлӑмӑр, капӑр,
Мӗн ӑна çӗклет ку тапхӑрне?
Ахӑртнех, вӑл тинӗс пуласса-тӑр.
Иванов пуç сулчӗ: «Ахӑртнех!»

1953

## ЮРРӐМ УКРАИНӐНА

*Максим Рыльские*

Аслӑ Атӑл хӗрринчен
Днепр урлӑ каçиччен —
Тарас тӑвӗ таранах,
Кӑйкӑр-юррӑм, вӗç çӳлтен!

Украинӑна кала
Тӑванла ӑшӑ салам.
Унӑн ырӑ кӑмӑлне
Астӑватӑп эп ялан.

Кейĕве эп асăнап,
Чаплă Ылттăн Хапхана,
Раççее тинкерекен
Ăслă куçлă Богдана.

Астăватăп хĕн чухне
Çăкăр панă çынсене,
Ырă сăмахпа чĕнсе
Ăшă пӳрт сĕннисене.

— Хăмăр куçлă сар аппа —
Украина, алă пар!
Пур ĕçӳ те ăнтăр сан, —
Тетпĕр уçă кăмăлпа.

Аслă çĕрĕн пĕр ялав,
Пĕр хаваслăх, пĕр уяв.
Ыр сунать пур халăх та:
Украинăна мухтав!

1954

## ÇАМРĂКСЕМ, МАЛАЛЛА, ÇӲЛЕЛЛЕ!

Хĕрĕх çул вăл — историшĕн яшлăх,
Çутă куçлă хастар пионер.
Хĕрĕх хут хĕрĕх пирĕн малашлăх!
Çавăнта çывхарма вăй илер.
Çамрăксем! Вак-тĕвекшĕн ан çунăр,
Туптăр тимĕр касма ăсăра.
Пĕр-пĕрне пулăшса ырă сунăр,
Çын — вĕрентĕр вăл канăçсăра:
Çук тăхтав пархатарлă ăссен,
Малалла, çӳлелле, çамрăксем!
Шанчăк пулчĕ мĕнпур ĕçчене;
Аслă парти пуçне вырнаçса вăл
Тĕлĕнтерчĕ паян тĕнчене.
Ытлашши мухтанмасăр-тумасăр,
Куллен кун тарличчен тăрăшса
Ыранхи ырлăха çул уçатпăр,
Ăспала пĕлĕте кармашса.
Ĕмĕтсем сирĕнпе çитмелле:

Малалла, çамрăксем, çӳлелле!
Пирӗн ирӗк ăспа хăват илнӗ
Çӗр юлташӗ çӳрет тӗнчере.
Çӗнӗ эра этемлӗхшӗн килнӗн
Саламлаççӗ халь уншăн пире.
Ăна пирӗн тăван çӗр хăпартрӗ
Революципе пӗр уйăхра:
Çӗнӗ эра Октябрь тапратрӗ,
Çав — телей çӗршывне чăн йыхрав.
Çавăнпа çав кӳрен халпала —
Çӳлелле, çамрăксем, малалла!

1957

## ÇАМРĂКСЕН ЮРРИ

Çурхи хӗвел кулать,
Çӗклет вăл кăмăла,
Ăшăтать, çутатать вăл мӗнпур таврана.
Çӗршыв çине пăхсан
Чун савăнать ялан,
Чӗрере сăвă-юрă янрать, шăранать.

Хастарлă çамрăксем,
Хăюллă паттăрсем,
Аслă çул уçса пачӗ пире самана.
Пуянлатар çӗре,
Куç пек сыхлар мире,
Çапăçса илнине парар мар тăшмана.

Тăван çӗршывăмăр,
Ялан эс сывă тăр!
Пирӗн шухăш, кун-çул санпала яланах.
Эс хушнине тума,
Пӗр саншăн кар тăма
Тупа тунă эпир сан таса ялавна.

1954

## ПУШ УЙĂХĂН ВĂÇĂНЧЕ

Пăхатăп кăçалхи календаре.
Çак мартăн çирӗм улттăмӗшӗнче
Хурланмалли хыпар вăл пӗлтерет
Нарспи çырса хăварнă çын çинчен.

Вулатăп эпĕ: «...сăвăç-демократ
Вилни кăçал тултарчĕ хĕрĕх çул...»
Вăл пурнăçсăр пулнишĕн чун макрать,
Ун мухтавне курсан — типет куççуль.

Ун ырă ячĕ вĕçĕмсĕр пырать.
Ик хĕрĕх çул та иртĕ, пиллĕк те...
Паян чысра вăл аслă çĕршывра,
Ыран ăна тĕнче тӳпи кĕтет.

Чăваш хăйне «чăваш эп» тенĕ чух
Кĕнекери кăвар пек сăмаха
Истори сивĕ кĕлĕ витес çук,
Вăл усрĕ хăй вутне нумайлăха.

Культурăсем пыман ĕмĕрлĕхе:
Асра Ассири те, Египет та...
Пăрахăç пулĕ, тен, тăван чĕлхе,
Анчах ку хурлантармĕ поэта.

Гомер грексемшĕн уçах мар ку чух.
Кивелнĕ теççĕ Данте чĕлхине.
Анчах та «Илиадăн» вилĕм çук,
Тĕлĕнтерет-ха «Тамăк» тĕнчене.

Пăхăрпала тăхлан пăтрашăнса
Илемлĕ, çирĕп бронза пулнă пек
Çак хамăршăн ытарайми таса
Чĕлхемĕр те çухалмĕ пĕтĕмпех.

Ытти чĕлхесемпе пĕр хуранта
Вăл варăшĕ те пиçĕхĕ татах.
Юлашкинчен хытсах ларсассăн та
Упранĕ, тен, тĕлĕнмелле сăмах.

Çак чĕлхенех вăйне пара-пара,
Поэт хăватлă шухăш хăварсан, —
Ун чапĕ кайĕ пĕтĕм çĕр тавра.
«Камран?» — тесессĕн, калĕç: «Чăвашран!»

1955

## ТЕЗАВРУС ЛИНГВЕ ЧУВАШОРУМ

*Н.И.Ашмарина асӑнса*

Чиновниксем ним вырӑнне хумасӑр
Пире куçран хӑртса виртленӗ чух,
«Час сирӗн чӗлхӗре те тӗп тӑватпӑр!» —
Тесе чӗремӗре витернӗ чух
Вӗреннӗ вырӑс пур усал вӑя
Мухтавлӑ ырӑ ӗçӗпе питленӗ:
«Чӑваш чӗлхи илемлӗ те пуян —
Тезаврус лингве чувашорум», — тенӗ.
Çапла ят хунӑ латинла вӑл хӑйӗн
Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекине.
Çав кӗнеке — ун пурӑнӑçӗ, вӑйӗ,
Вӑл каçрӗ пур патшалӑх чиккине.
Çапла чун кӳртнӗ тӗттӗм тӗрмере
Раççейӗн çутӑ ӑсӗсем пире.

1953

## ПОЭЗИ ПУЛСАН...

Поэзи пулсан — ӑш хыпса çуннӑ чух
Выртса ӗçмелли шыв пек пултӑр;
Кашни сӑвӑпа, савнипе чунпа чун
Калаçнӑ пекех, кӑмӑл тултӑр.

Поэзи пулсан — ӗçлесе ывӑнса
Сӳсленнӗ ӳте паттӑрлаттӑр;
Хула-çурӑма мунчара çӑвӑнса
Тасатнӑн çынна вӑл тасаттӑр.

Поэзи пулсан — тӳшекпе-минтерпе
Выртса каçхине эс вулуçӑн
Çӗклетӗр сана хӑйвӗçен кавир пек,
Çил çеç варкӑшса вӗртӗр уççӑн.

Поэзи пулсан — журналсем ун анне
Хӗссе лартиччен вӑл пӗр тапхӑр
Пӗçерттӗр наборщик аллин тупанне,
Чунна çӗнӗ çулӑм хыптартӑр.

Поэзи пулсан — вӑл мантартӑр ӗçке
Сӑвва сыпкӑмшар астивсессӗн

Калатăр этем: «Ку тата тутлă-çке!
Çакна тахçанах астивес-мĕн».

Поэзи — шырав, кĕрешӳ, ăмăрту,
Ача йăл кулли, гени тарĕ,
Имçам, юрату, кӳлешӳ, аркату,
Тĕнчемĕр нуши, пархатарĕ.

Поэзи — çĕрти пур йышши сĕткенпе
Хĕвел шевлисен чĕр хăвачĕ...
Эп хам кам пулсан та, йăхран çакăн пек
Поэт тухнине ман курасчĕ!

1954

## ХАЛĂХ СĂВĂÇИН УЯВНЕ

Висла шывĕ тăрăх аслати кĕрлерĕ,
Илтĕнми вăл турĕ тупă сассине.
Туй пĕкки пек хӳхĕм асамат кĕперĕ
Карăнчĕ шыв урлă, каçрĕ леш енне.

Çĕнтерӳллĕ халăх тепĕр пысăк утăм
Ярса пуснă евĕр куртăм эп çавна.
Çавăн чух эс аллă тултарсаттăн, тусăм,
Савăнса асилтĕм инçетре сана.

Кĕрекем çумрахчĕ: флягăна çĕклерĕм,
Сыпрăм, çăкăр çыртрăм, турăм эп тупа.
Анăçаваскарăм, тăшмана йĕрлерĕм
Çухрăм шутне маннă йывăр атăпа.

Хамăр çутă çулшăн, ирĕклĕ çĕршывшăн
Сывлăш çавăрмасăр утрăм малалла.
Ĕмĕрлĕх пĕрлешнĕ тăванла кил-йышшăн
Аллăмран ямарăм тĕрĕс пăшала.

Сарлака Россия, ылтăн Украина,
Хĕм хĕвеллĕ Грузи пулчĕç асăмра...
Казахпа туркменăн, латышпа литвинăн —
Пур йăхсен çилли те çунчĕ ăшăмра.

Тӳсĕмлĕ, илемлĕ, чул касан чĕлхешĕн
Чунăм пулчĕ хурçă, шухăшăм — кăвар;
Аслă Ивановшăн, Çеçпĕлшĕн, Элкершĕн, —
Хамăрăн мухтавшăн çапăçрăм хаяр.

Таврăнтăмăр акă. Ырă кĕрекемĕр
Ян янрать, пурне те хаваслантарса.
Килейменнисемшĕн хурланса илетпĕр,
Сан тавра, пиччемĕр, салтакла тăрса.

Сан паха ятушăн, сан таса чĕрӳшĕн,
Халăх халал[л]анă хисепӳшĕн те,
Асапа çĕнтернĕ çамрăк ĕмĕрӳшĕн,
Ватăлми хастарлă тимлĕхӳшĕн те —

Тайăл сана пуçăм, тайăл сана пуçăм!
Çĕр çулччен курасчĕ пĕлĕтпе çĕре.
Курăнми пулсассăн... сывă пултăр, тусăм,
Пархатарлă шухăш ĕмĕр-ĕмĕре!

Сывă пултăр пирĕн сассăмăра илтнĕ,
Ĕмĕте ăнланнă çитĕнес тăван!
Вăл пурне пĕлсессĕн, эпĕ, пурнăç çитнĕн,
Кулянмасăр, лăпкăн кайăп çакăнтан.

Вăл чуна çутаттăр, ăс-пуçа пуйтартăр,
Чĕрене çĕклетĕр, ăшăттăр юна;
Кайăк пек юрлатăр, аслати пек çаптăр, —
Çавăн пек поэтшăн эп хыпса çунап.

Ĕненеп, шанатăп: вăл çуралĕ, килĕ,
Час ăна ӳстерĕ аслă самана.
Халăх чун хавалĕ, унăн ырă пилĕ
Çулăмлă, çунатлă тутăрччĕ ăна.

Эй, эп тунсăхланă, ĕмĕтре паллана
Ăмăрткайăк куçлă халăх юрăçи!
Тайăл сана пуçăм, пил сана, тăванăм,
Пирĕн уява эс ĕмĕр урлă çит.

Шыв-шурсем хумханччăр, сĕм вăрман кашлатăр,
Чыс тăватпăр пурте хамăр Элкере.
Çĕнĕ йăх шавлатăр, шухăш шухăшлатăр,
Вĕçсĕр пултарулăх пытăр тĕнчере!

1954

## СУЙЛАВÇĂСЕМ УМĔНЧЕ

Юлташсем! Ытла хавассăн
Кĕтсе илтĕр хăнана.
Сăвăлла эп калаçсассăн,
Айăп тумăр, тен, мана.

Сăвă вăл — чĕре çуначĕ.
Çитменни çине тата,
Эп камне пĕле тăркачă,
Унсăр, тен, каçармăр та.

«Килчĕ — кайрĕ, — тейĕр акă
Пĕр-пĕринпеле кайран, —
Ни юмахĕ, ни такмакĕ,
Мĕн тăвас-ха унпалан?»

Тыр вырсассăн сарă хăмăл
Кар карланă пек кунта.
Кӳренсе ан хыттăр кăмăл —
Сирĕн те, никамăн та.

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çиттĕр,
Калакан кашни сăмах
Тĕллĕ тухтăр, витĕр виттĕр,
Юлтăр ыррăн асăнма.

Хам çичен ыйтсан... Мĕн калăн?
Ман пекки çĕр мар, пин мар,
Ман пекки халь мĕлйуншарăн
Курчĕç çĕнĕ пархатар.

Пурăна пуçланă эпĕ
Патшасен саманинчех.
Ун чухне этем хисепĕ
Урăхлаччĕ çĕр çинче.

Укçапа хăпарнă енчĕк,
Хырăм урлă — пăльчăра...
Çав йышши этем киленчĕ
Тĕрлĕрен çӳлти влаçра.

Е çӳçне-пуçне çуланă
Тилĕ пек чее кулак,

Е усламăçсем суйланнă,
Ултавпа ĕçке пула.

Халь влаçа камсем лекеççĕ?
Е рабочи, е хресчен,
Е ĕçчен интеллигенци:
Вăл та — халăх хушшинчен.

Агроном, шахтер, сухаçă,
Чул çуртсем купалакан,
Тухтăр, тимĕрçĕ тухаççĕ
Влаç тытмашкăн халăхран.

Фермăра ĕне сăвать-и,
Ĕрчетет-и вăл сысна, —
Хăй ĕçне ăста тăвать тĕк, —
Ырă ят, мухтав çынна!

Колхоза ертсе пырать-и,
Вĕрентет-и вăл шкулта,
Кĕнеке тавраш çырать-и,
Пултарать пулсан — мухтав!

Генерал-и, инженер-и
Е, калар, хальччен илтмен
Юрăпа çын тĕлĕнтерĕ, —
Чыс, мухтав ăна пиртен!

Ак камсем влаçа тытаççĕ
Пирĕн ирĕк тĕнчере,
Ма тесессĕн — халăх влаçĕ:
Халăх, парти, влаç — п ĕ р р е.

* * *

Тусăмсем! Хисеплĕ, ватă
Ĕçченсем те çамрăксем!
Пурсăра та тав тăватăп,
Пуçăма çĕрех пĕксе.

Тав тăватăп ĕненнишĕн,
Ырă кăмăлшăн сире.
Юп курса мана чĕннишĕн
Савăнса тапать чĕре.

Пысӑк чыс кунта эп куртӑм,
Халиччен тивмен хисеп.
Пӗр кил-йышлӑ аслӑ çуртӑн
Ӑшшине чунпа сисеп.

Пӗр кил-йыш вӑл — пирӗн халӑх
Аслӑ çурт — тӑван çӗршыв.
Çавӑнтан кун-çул тытмалӑх
Вӑй-хӑват илместпӗр-ши?

Çавӑнта телей те ырлӑх,
Иксӗлми сӗткен, тымар;
Ӳсӗм, тӳсӗмлӗх те сывлӑх —
Çавӑнта, ниçта та мар!

* * *

Çӗрӗм-шывӑмсӑр мӗн пулӑп?
Халӑхран вӑйли кам пур?
Ӗçӗнче те халӑх — Улӑп,
Кӗрешме те вӑл маттур.

Çавипе пӗр çулкӑм çулӗ —
Улӑх юлӗ çап-çара,
Чукмарне пӗррех вӑл сулӗ —
Пуç йӑттармӗ ют çара.

Çакӑ шухӑш ӗмӗр чӗрӗ, —
Халӑх шаннӑ хӑй вӑйне.
Ӗлӗк унӑн çулӗ-йӗрӗ
Пулнӑ йывӑр терт айне.

Терт, асап, хӗн-хур та пусмӑр —
Йышлӑ-çке ун пек сӑмах!
«Ӗмӗрех эсир пуç усмӑр!
Тӑрӑр! — тенӗ сасӑ ак. —

Ӗç çынни хӑйне кӑтартӗ,
Ирӗке тухса çитсен!»
Çавнашкал вӗрентнӗ парти:
Эпӗр — ирӗклӗ çынсем.

Çӗр сӑнне çӗнетнӗ аслӑ
Саманамӑр пуçланни —

Ĕç тĕнчишĕн вăл хаваслăх,
Вăйпитти халь ĕççынни.

Хисеплеççĕ, пуç таяççĕ
Аякри çĕрсем пире.
Ĕлĕкрех малти — кая çеç
Юлчĕ кивĕ тĕнчере.

Тĕрлĕ тĕслĕ халăх пирĕн
Пĕр тăван пек яланах.
Сăрчĕ-тăвĕ, çеçен хирĕ,
Сĕм вăрманĕ — йăлт ăна.

Асăнатпăр юрăра та:
Тинĕсрен те тинĕсе,
Ялсенче те, хулара та
Çын çӳрет ирĕкленсе.

Хамăр çĕр, Чăваш çĕршывĕ,
Вырăс çĕрĕн варринче
Упранать тĕреклĕ, сывă,
Ырă ятлă халиччен.

Пĕчĕкçеççĕ, тăпăл-тăпăл
Çак çĕрте йĕри-тавра
Сисĕнет пĕр хаслă кăмăл,
Пĕр чĕре тапса тăрать:

Вăл — совет çыннин хавасlă,
Уçă кăмăлĕ иккен.
Вăл — тăван çĕршывăн аслă
Пĕр чĕри тапать хиврен.

Хамăр ĕмĕтшĕн ĕçлетпĕр —
Тулăх пурнăçшăн эпир.
Чĕлхесем çинче, пĕлетпĕр,
Халь пур халăхăн та м и р.

Пӳртлĕ-çуртлă пурăнатпăр,
Çав-çавах, куçа хупсан,
Асăмра ман урăх тапхăр
Тĕлĕк пек тăрать тухса.

Çунчӗ пурлăх, кăмрăкланчӗ,
Куртăм: ялӗ-ялӗпех
Хуп-хура мăрье ларатчӗ
Тăшмана юнанă пек...

Тек ан пултăр çав хаярлăх,
Çав асап, çав вут-кăвар!
«Мир! — тет вăрçă тӳснӗ халăх, —
Вут тӗртмешкӗн парар мар!»

Ӗç тăватпăр-и, уяв-и,
Канашлатпăр-и килте
Е ак çакăн пек суйлав-и, —
«Мир!» янратăр пур тӗлте.

Шаннă çыншăн сас паруçăн
Кашнинех хушар çапла:
«Миршӗн тăр! — теер яр уççăн, —
Ӗçӳпе мире сыхла!»

Эп — салтак. Ман чӗрене те
Вăрçă хайăрчӗ тӗпрен.
Эп те миршӗн çӗкленетӗп
Сывă тантăшсемпелен.

«Мир!» тесе пӗр харăс, хыттăн
Сасă парӗччӗç тата
Чун тухсан та чикӗ тытнă
Салтаксем ак çакăнта.

Ӗçӗмре хама кура эп
Пултарсассăн, çак самант
Ыттинчен мала хуратăп
Миршӗн панă сассăма.

Мир упрантăр! Пур ӗçсемшӗн
Çук унтан паха мухтав.
Çав сасса эсир илтсессӗн,
Тепӗр хут пурне те тав!

1955

# «ЛИРИКА» КĔНЕКЕРЕН (1962)

## ХАЛĂХĂМА

Чĕлхемĕре усранă халăх!
Сан чаплă ывăлу çинчен
Шухăшласассăн, тав тумалăх
Сăмах тупма та хĕн иккен...

Хĕвелтухăçĕнче мухтавлă
Лейли, Меджнун. Европăра
Ромеопа Джульетта паллă.
Эс, халăхăм, мĕнрен кайра?

Нарспин, Сетнерĕн шĕл кăварĕ
Сан илемне, юратăвна,
Сан ирĕклĕ чунна кăтартрĕ
Пурне те, пĕтĕм таврана.

Сана сăнаççĕ те тĕпчеççĕ:
«Пăхма сăпайлă çеç этем,
Чунтан епле пуян вăл!» — теççĕ
Сана телей сунакансем.

Сĕм авалах эс вырăнаçнă
Çак аслă Атăл тăршшĕне;
Кил-çуртлă та нӳхреплĕ-лаçлă,
Тĕреклĕ ларнă çĕр çине.

Вăрман кăкланă, пӳрт пуранă,
Ĕрчетнĕ çимĕç те хăмла.
Ятна яман, çĕртмен, упранă
Мал ĕмĕтне, ыр кăмăлна.

«Чăваш ятне ан çĕрт!» Мĕн евĕр
Тасалăх çак сăмахсенче!
Мĕн чухлĕ тӳсĕм, вăй сисетпĕр
Сан пилӳнте, тăван тĕнче!

Миçе чуна çунатлантарĕ
Вутра шăраннă сан чĕрӳ!
Сана ӳксе пуççапас мар-и
Эпир, сан ывăлу-хĕрӳ?

Çултан çулах тăван малашлăх
Хаваслăрах, илемлĕрех.
Иванова çуратнă халăх,
Мухтавлă эсĕ ĕмĕрех!

1955

## АППА

*Трубина Мархвине*

Пысăк, хура, çавракa куçĕпе
Чăр пăхрĕ те çав аппа ман çие —
Парăнтăм эп ун вăйне пуçĕпех,
Куртăм таçти инçетри телее.

Мĕнччĕ-ши ман çав телей ун чухне?
Мĕн ялтăртатнă çунса ĕмĕтре?
Çын халăха пама пулнă чунне,
Эп мĕн памалăх тăвам ĕмĕре?

«Килтĕн эппин Хусанна пăрахса?
Ах, вĕренесчĕ-çке, шăллăм, пăртак!..»
Кайрĕ вара калаçу тапранса.
Ват Шупашкарăм итлет шăпăртах.

Чĕмпĕр çинчен астуса илсенех
Ассăн сывларĕ темскершĕн аппа.
Илтнĕ-мĕн вăл Кĕçтенттин сассине,
Курнă сăнне, утнă пĕр сукмакпа.

«Тантăшчĕ-çке... Ăмăртса çырнисем
Пулнă пулас, — тет вăл çав хушăра, —
Тантăш! Ĕнер курнă пек, асилсен,
Ак вунă çул ĕнтĕ вăл тупăкра...»

Çеçпĕл урамĕпеле юнашар
Антăмăр. Ун аллинче — пĕр тĕркем.
«Эс çулупа пионер шутлă мар,
Ме-ха, çапах, «Хĕрлĕ галстук» пиллем...»

Пачĕ вара кĕнеке вăл мана.
Туйăнчĕ пурнăç раснах ăшăрах.
Манăн кун-çул упраймарĕ ăна,
Унăн çути — ялкăшать ăшăмрах.

1956

## САВНĂ ÇĔР,
## ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Авалтан эпир юратнă
Пархатарлă Атăла,
Ун шывне нумай хумхатнă
Тăвалла-анаталла.
Пирĕн халăх ĕмĕтленнĕ
Кун курасшăн малашне,
Сĕм вăрман пире пилленĕ
Сиплĕ уçă сывлăшне.
Пурăнах эс ĕмĕр сывă
Халăхсен кил-йышĕнче,
Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ,
Аслă Атăл хĕрринче!

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртрĕ,
Шухăш вĕçрĕ аякка.
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ:
Пирĕн çул-йĕр сарлака.
Çутăрах çунать хĕвелĕ,
Кăвакрах уяр тӳпе.
Туслăхпа эпир телейлĕ,
Халăхсен туслăхĕпе.
Пурăнах эс ĕмĕр сывă,
Ырă ятлă пул ялан,
Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ,
Тав сана чунтан-вартан!

Ывăлна-хĕрне ӳстертĕн,
Хал çитеймĕ хурлама:
Ĕçлеме те эс вĕрентрĕн,

Сас та патăн юрлама.
Савăнса эпир юрлатпăр,
Сан ятна хурса сăвва,
Ма тесен санра куртпăр
Пĕтĕм аслă çĕршыва.
Пурăнах эс ĕмĕр сывă
Пуринпе те тăванла,
Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ,
Ут хастаррăн малалла!

1961

## ВЫРĂС ХАЛĂХНЕ

Паян кăна илтместпĕр
Сан уçă сассуна:
Шăпамăр ĕлĕкрен пĕр,
Чунра чĕр вут çунать.

Мĕнле ютшăнтарсан та
Сан патшусем пире,
Шухăшласассăн — сан та
Куну пулман хитре.

Сана та пăхăнтарнă
Хĕçпе хĕрес ялан,
Сана та улăштарнă
Улпут йытăпалан.

Чуну кӳтсе çитсессĕн,
Чĕрӳ хыпса çунсан, —
Тапраннă эс çиллессĕн,
Хаяр амак сунса.

Пугачевна тĕпчес-и,
Асра халь Разин-и, —
Çĕре чĕтретнĕ эсĕ,
Хура тăпра çынни!

Туптаттăн-и эс пуртă,
Çĕклеттĕн-и чукмар —
Санпа утатчĕç пурте,
Кураттăн: тус çук мар.

Пĕрле эпир хумхатнă
Çак Атăл анине,
Пĕрле чĕвен тăратнă
Хушка хумĕсене.

Йăламăр та пĕрлешнĕ,
Сăмах та, юрă та,
Чăваш çынни илешнĕ,
Хуман сана юта.

Ăçта кăна ан пыр эс —
Тăван чĕлхемĕре
Раççей, Мускав та вырăс
Вырнаçнă ĕмĕре.

Вĕсем, мĕнпур чăвашшăн
Чăвашланса тахçан,
Янраççĕ халĕ маншăн
Тупа пекех тасан.

1958

## ЫВĂÇĂ ТĂПРИ

Эп тăтăм унăн тупăкĕ умне,
Эп куртăм унăн юлашки тумне:
Вăл хăйĕн яланхи çар тумĕпехчĕ,
Инçе походалла çул тытнă пекчĕ;
Пархат минтер çинче ун парнисем,
Çын тивĕçне тытнишĕн панисем.
Кĕске самант хушши ун кунĕ-çĕрĕ
Куç умĕнчен иртет... Вăл чĕрĕ, чĕрĕ!
Çат тытнă тутинчен çемçе сăмах,
Ăс паракан канаш тухассăнах.
Сĕм ешĕл чăрăш лăссине кĕç çак сăн
Йăл-йăл кулса çутăлтарса ярассăн...
Шопен кĕвви хĕвелшĕн çуннă май
Эп шухăшларăм хăвăрт та нумай;
Ирĕксĕрех пĕр шухăш чăмăртанчĕ,
Пуçа хĕссе, кăшăлласа тăртанчĕ:
Эпир каятпăр аякри çула,
Пире çуратнă йăхăмăр юлать,
Ун кунĕ-çулĕ вĕçĕмсĕр. Вăл — халăх!

Мĕн тунă эп ăна асăнтармалăх?
Е çак хăмач çаптарнă тупăкра
Йăлтах, йăлтах çухалĕ-ши вара?
Çук! Сивĕ манăçран ман пăрăнасчĕ,
Сăмахăмра пулин те пурăнасчĕ.
Пуласшăн мар эп шыв та, курăк та, —
Çынпа шăкăлтататма эп юратап;
Пуласшăн мар асамлă купăс, çăлтăр, —
Чун тарĕ пек асаплă ĕçĕм юлтăр...
Шопен кĕвви чуна тăвăлтарать,
Хампа хама пĕччен вăл хăварать.
Кулянура тĕрек шыратăп эпĕ,
Тасалăх, лăплану, этем хисепĕ,
Пуçламăшĕсĕр вĕçĕ пулаймасть,
Вĕçленмесессĕн — ним те пуçланмасть.
Вилӳ вăл — пурнăç, пурăну вăл — вилĕм:
Эп кайăп, çуралас тăван, эс килĕн.
Çак ывăçă тăпри пек сăввăма
Ан манччĕ ман çире эс асăнма.

1956

## МИТТА ВАÇЛЕЙНЕ АСĂНСА

Чăваш чĕлхи пур чух тăван поэт ятне
Вĕри кăвар чунсем савма пăрахас çук

*Çеçпĕл Мишши*

Тантăшăмсем кайса пыраççĕ:
Пĕри инçе, тепри — килтех...
Хитре хĕрсем ыраш выраççĕ,
Тапса çыхаççĕ сар кĕлте.

Ах, сарă çав, хĕр пек тирпейлĕ,
Кĕлте çыххи те — хĕр сарри.
Купаланать, ӳсет çĕмелĕ,
Вăл чĕрĕ палăк пултăр-и!

...Асра йĕрсе янрать-ха мусăк.
Утатăп тупăк хыçĕнчен.
Чĕрем салхуллă, кăмăл хуçăк.
Сывпуллашатпăр... Хăçанччен?

Анчах Чăваш уй-хирĕ çийĕн
Ăна-кăна пĕлмен тăри

Юрлать, юрлать, телейӗ ҫитнӗн,
Чӗрӗлӗхе мухтать юрри.

Кураймӑп ырӑ ҫыннӑма.
Эп ывӑҫӑ тӑпри сапатӑп.
Илемлӗ, уҫӑ сӑн-сӑпатӑн
Кунне хупларӗ хыр хӑма.

Тин мар-и халӗ сӑн ӳкерчӗк
Ҫаптартӑмӑр ыталанса?
Ҫӳҫне вылянчӑк ҫил вӗҫтерчӗ,
Ҫаплах вӑл юлчӗ ман аса.

Ҫаплах сӗтел ҫинче те акӑ,
Кулса, тӳрех куҫран пӑхса
Ларать вӑл — тӗрӗслӗх салтакӗ —
Яланлӑх, ӗмӗрлӗх таса!

...Каҫ кӳлӗмччӗ. Вӑркать, вӑркать ӑш.
Тусан лӗпленчӗ ҫул ҫинче.
Шӑпланчӗҫ тӑрисем. Пӗр карӑш
Тӑсать хӑй ҫеммине пӗччен.

Шӑрӑхпала ӗшеннӗ курӑк
Каллех ҫӗклет ҫулҫисене.
Анчах вӑл ҫук. Вӑл килмӗ урӑх.
Пусаймӗ ешӗл ҫӗр ҫине.

«Хӑй ҫӗрӗнче вилен — телейлӗ»
Темешкӗн ӗлкӗрнӗ поэт.
Мӗн чухлӗ ҫыннӑн ҫав мехелӗ
Ҫитменнине асилтерет!

...Каҫ чатӑрӗ ҫӗре хупларӗ,
Кӑваккăн курӑнать тавра.
Куҫ хупасси ҫав каҫ пулмарӗ.
Пӗртен-пӗр шухӑш пуҫӑмра:

Сӗм вилӗм мӑшкӑлне ҫӗнесчӗ,
Тӗнче илемӗ-этеме
Тӗнче тӗлӗнмеллех ҫӗклесчӗ
Хӑй несӗлӗ хӗпӗртеме.

Кашнин упрантăр ырă ячĕ,
Мухтантăр халăх унпалан...
Шарăлтатса авăтса ячĕ
Ял пуçĕ малтанхи автан.

Тул çутăлса килет. Кун ырă.
Хĕвелĕмĕр! Эс пур чухне
Тăван йăх сывă. Хăй вăл çырĕ
Кун-çулĕн аслă çыруне!

1957

## ÇĔРЛЕ

Нумайранпа пĕлеп çак хулана,
Ăçта пулсан та уншăн кулянап;
Ăна часрах курасшăн хыпăнса
Васкатăп эп, килетĕп ыткăнса...
Тӳлек. Сайра хутран машина çеç
Хăлтăртатса иртет таçта инçе.
Килти кранран пĕр шеппĕн шыв тумлать:
Пăт-пăт, пăт-пăт тет... Кам тӳпи тулать?
Каçхи шухăшпала именнĕ чун,
Кил-йышăм çывăрса киленнĕ чух
Куçа уçса выртатăп çĕрĕпе
Канăçлăхне çухатнă чĕрепе.
Куратăп эпĕ иртнĕ кун-çула,
Ырри-усаллине ăшра суйлап.
Куратăп эп айван ачалăха,
Айван пулин те вăл таса, паха:
Ун сывлăмлă йĕпе çăпатине
Мал ĕмĕт çул кăтартнă ун чухне.
Куратăп эп пуçтах яш ĕмĕре,
Тапса сикетчĕ урхамах-чĕре;
Таçти çеçен хирсем, тусем-сăртсем
Ĕмĕтĕме туртатчĕç туртнăçем;
Курман-илтмен çи-пуç, чĕлхе, йăла
Сăхлантаратчĕç каскăн кăмăла.

Халь акă эп, ăçта пулсассăн та,
Часрах киле васкатăп, хам пата...
Шыв вĕтĕрĕх тумлать: пĕт-пĕт, пĕт-пĕт...
Ман тавăрас килет ăна: кĕт, кĕт!

Анчах та  л е ш ӗ  шăл пăхса килмест,
Вăл шаккаса кӗмест, пӗлетӗн эс...
Тăрса çыхса лартас-и, тен, крана?
Тумлатăрах... ан чарăнтăр кăна...
Анне ахлаткалать, тăрать иккен
Хӗр чухнехи тӳшекӗн ăшшинчен.
Ача выртан путмар чӗриклетет, —
Анне ывăлăма пырса витет:
«Тапса сиретӗн...» — тет вăл. «Руки вверх!» —
Кăшкăрашать тӗлӗкӗнче Атнер.
Асламăшин хăлхи те хытăрах,
Илтсен те ăнланмасть вăл, ахăрах.
Мана кăна çав янăравлă сас
Çӳçентерет чуна хайăрттарса.
Пӗлместӗн çав эс, çиччӗри арçын,
Мӗскер вăл салтаксен чăн-чăн вăрçи!
Пӗлместӗн çав эс ма хăш каçхине
Аçу куçне хупмасăр каçнине...
Асламăшӗ кăштăртатса çӳрет,
Чаршав сирет, кухньăналла кӗрет;
Чейник илсе вăл кран айне лартать,
Пăрать те — вăйлă шыв шаркаттарать.
Шаркатăр шыв! Тумлам-тумламăн мар —
Çырман юхса салаттăр вăл чăл-пар
Хура шухăшсене, сӗм тӗттӗме,
Çуса сывăттăр ӗçлӗ этеме,
Мантартăр тертлӗ, ыйхăсăр каçа, —
Шаркатăр шыв! — тесе эп çӗр каçап.

1956

## АЛЬПĂРТ КАНАША

...Хама пит йывăр килнӗ чух
Сана аса илетӗп.
Вара пур йывăрлăх та — чух.
Çӗклейми мар. Пӗлетӗп.

Сан пӗчӗкçеççӗ пахчуна
Умра куратăп эпӗ.
Мӗнле кăвар унта çунать!
Мӗнле этем хисепӗ!

Пур ырă, тӳрĕ кăмăла
Чĕнет эс чĕртнĕ çулăм.
Çӳлтен çӳле, малтан мала,
Пĕр вĕçĕмсĕр кун-çул ун.

Кам чунĕ муртăхман, супман —
Çав çын сана ăнланĕ.
Халь ансăр, курăклă сукмак
Мăн çул пек такăрланĕ.

Пиллетĕп. Халăх калашле —
Вăй патăрах, вăй патăр!
Мĕскер курсан та малашне
Сан пек пуласчĕ паттăр.

1956

## ВАТĂ ЮРĂÇ, ТАВ САНА

*Г.Ф.Федорова*

Анатри асаттесем —
Атăл леш аяккисем —
Кĕрекеллĕ ĕçкĕре
Калаçатчĕç пит хитре:
«Тав сана та сав мана,
Пыллă алтăр, тав сана!» —
Тетчĕç юрă хушшинчен
Сарă тăрăх сак çинче.
Юррине юрланăçем
Юптаратчĕç те вĕсем:
«Аплине каламасан
Каплине тупма хал çук,
Аплине те каласан
Юрамасть иккен ку чух...».
Мĕн апли те мĕн капли
Паллă пулнă ун чухнех:
Самани пит асапли
Хуçнă халăхăн чунне.
Анчах халăх аптраман,
Шанчăкне вăл çухатман...
Эй, Хĕветĕр Кавĕрли!
Ĕлĕкхи саманара
Йышлă-çке сан евĕрли

Тӳснĕ йывăр хĕн-хура.
Куртăн, куртăн эс çутта,
Яшсемпе пĕр тан утан.
Сан пек паттăр чĕресем
Асапа парăнманран
Çивĕч халь тăван чĕлхем,
Тетĕп эп чунтан-вартан.
Вата юрăç, тав сана!
Тайăл пуçăм сан умна.
Санăн шурă сухална
Кăтралаттăр самана.
Йӳçĕ пурнăç куркине
Ĕçнĕ эсĕ сахал мар.
Тутансам-и тутлине,
Кĕреке варне эс лар:
Тав сана та сав мана,
Пыллă алтăр, тав сана!

1958

## ТАВ ЮРРИ

Эп çӳретĕп кĕрĕн-çурăн,
Çул тытап çулла, хĕлле, —
Çĕршывра янрать пĕр юрă
Тĕрлĕрен чĕлхепеле.
Кавказра ăна юрлаççĕ,
Балти тинĕс хĕрринче,
Илтĕнет вăл Вăтам Азин
Мамăк акнă хирĕнче:
— Вырăс халăхĕ, эс аслă,
Тав сана, тăванăм, тав!
Эс — ман шанчăк, ман пуласлăх,
Яланах сана мухтав!

Хумханать хăватлă Атăл,
Вутăн-хĕмĕн ялкăшать.
Вăл пире пурне те хапăл,
Пĕрлештерчĕ пĕр йыша.
Тавлă-шавлă саманамăр
Иртсе кайрĕ тахçанах.
Пĕр тăван пек пурăнатпăр,
Пĕр канаш та пĕр сăмах.

— Вырăс халăхĕ, эс аслă,
Тав сана, тăванăм, тав!
Эс — ман шанчăк, ман пуласлăх,
Яланах сана мухтав!

Ыр курать Чăваш Çĕршывĕ,
Çултан çул çĕклет ятне.
Халăх çитрĕ ыра-сывă
Тытнă ĕмĕчĕ патне.
Кĕреке умне ларсассăн
Хурăнташ-тăванпалан,
Ак çапла вăл уçă саслăн
Юрласа ярать малтан:
— Вырăс халăхĕ, эс аслă,
Тав сана, тăванăм, тав!
Эс — ман шанчăк, ман пуласлăх,
Яланах сана мухтав!

1960

## АТĂЛ ХĔРРИНЧИ ЮМАН

Пирĕн атте — ват юман.
*Чăваш халăх юрри*

Эп чăнкă сăртлă Атăл хĕрринче
Тăрри хуралнă юмана сăнарăм:
Хаяр аслатипе ĕмĕрĕнче
Пĕрре çеç мар вăл çапăçнă патваррăн.

Анчах лаштра ларать хăй халиччен.
Йăвантараймĕç: ун тымарĕ тарăн.
Çапла пуплет туйралăх ун çинчен,
Йĕри-тавра карах тăрса яш çаррăн.

Эс, халăхăм, çав ват юман пек мар-и?
Шалта сан тымару, çемйў те йышлă.
Мĕнле хăват сана халь парăнтарĕ?!

Манра — йăлт эс пани: ĕçченлĕх, чыслăх,
Хаваслăх, хурланса та илкелў...
Юман-аттем! Эп — санăн йĕкелў.

1953

## ХАВХАЛАНУ

Вăл лартрĕ юлашки пăнча.
Кăвапине касман ача пек
Турткаланать сăмах. Анчах
Ĕмĕрлĕхех çуралчĕ чапĕ.

Çунса кĕлленнĕ ăвăс çапă.
Икерчĕ сивĕннĕ. Анмасть.
Апат-и, тум-и халь, сăвап-и?
Çак саманта тĕнче тăмасть!

Куçкĕскире çунать асапĕ:
Ик куçĕ — ик хура алмаз.
Ыран ăна çĕршыв пуççапĕ,
Паян вăл — тăлăх, ют усрав...
Пур çутçанталăк — хăмла хапĕ,
Ун мухмăрĕ — çак пĕр пуçра!

1948

## ÇУЛ ЮППИНЧЕ

Телейĕме санра эп тупрăм теттĕм.
Çавна тасан упрасшăн халиччен
Сан ятупа хавхаланса ĕçлеттĕм.
Эс манпала телей курман иккен.

Анчах мĕскершĕн, мĕншĕн каламарăн?
Мĕскершĕн-ха ку таранччен çаплах
Манпа эс сцена çинчи пек вылярăн?
Ним маршăн эп — суяшăн айăплап.

Тӳрех калас-мĕн: «Юратмастăп, — тес-мĕн, —
Ăнмарĕ пурнăç, тăсас мар ăна...»
Тен, çутçанталăкри тăват кĕтесĕн
Пĕр кĕтесси кун кӳрĕччĕ мана.

Халь акă ман — эс пур та, çук та чух —
Ниçта тухса кайма та халăм çук.

1955

## САЛАМ СОНЕЧĔ

*Н.В.Никольские*

Тахçан-тахçан, ача чухнех,
Сире пĕрремĕш хут тăнлуçăн
Эсир мана кăтартрăр уççăн
Чăвашăн тӳсĕмлĕ чунне.

Хусанăн хӳмисем çумне
Пуласлăх хăпаратчĕ куçăн,
Çунатланса вĕçетчĕ чунçăм
Часрах тухасшăн ун çулне.

Паян çав кун çывхарчĕ мар-и?
Мĕн пур Тăван çĕршывăм тăрăх
Янрать чăваш ăс-халĕ хурçăн.

Эппин — шăтрех, сая каймарĕ
Эсир акса хăварнă вăрлăх.
Тавсси, профессор! Тайăн пуçăм!

1958

## ЯН АМОС КОМЕНСКИЙ

Сăнне пăхсан — йăваш та ырă кăмăл
Куратăн ватă вĕрентекенре...
Мĕнле вĕри вут-çулăм, мĕнле тăвăл
Кăларнă çак ăс-хакăл, çак чĕре
Ун савнă çĕршывне тăшман пуссассăн,
Хăйне вара тĕнче касма тивсен!
Тăван çĕрте пророк эс пулаймастăн.
Анчах ăçта çитмен, мĕскер тӳсмен —
Вăл чехшăн чех чĕлхи упрасшăн çуннă,
Пур халăхшăн чĕлхе алăкĕ уçнă.
Чăваш пуçпа эп килнĕскер туятăп,
Çав аслă алăкран эпир те кĕнĕ:
Умра эп Яковлев сăнне куратăп,
Вăл — çак Коменскийĕн вĕренекенĕ.

1961. Прага.

## ХУРА ХУРАКĂШ

### 1

Пытараймастăп, тӳррипех:
Эс ман хуракăш юрри пек.

Чун тухнă чух юрлать хуракăш.
Эс — пурнăç пул. Çунатăм, варкăш!

Пур çылăха, пур сăвапа
Манмашкăн хатĕр эп санпа.

Сана ереймĕ намăс-симĕс,
Йӳнелмĕн, вараланмăн тин эс.

Куçна хупса, çунат çапса,
Юрла, юрла... чуна татса!

### 2

Ĕмĕрех пуласчĕ хăнара:
Эп сан патăнта, эс ман патра.
Вăрăм мар-çке пӳрнĕ кун-çулсем,
Ма тăвас-ха ĕмĕре кичем?
Тунсăхлам, пĕчченлĕхе тӳсем
Йăлăхупалан тертлениччен.
Каçсерен тухмасть-çке уйăх та,
Кулленех хĕвелĕ те хĕртмест.
Эс, сайра кометăн, поэта
Курăнса иртсессĕн те — рехмет.
Пурăнса пăхар-ха сăнарах...
Ĕмĕрех пуласчĕ хăнара!

### 3

Лӳчĕркенет йӳле йĕлен.
Тĕтреллĕ, сӳрĕк ирхине.
Кин ӳпĕнет ӳркевпелен,
Кĕвентелет ик витрине.

Сирĕлкелет çӳхе кĕпе.
Тӳр пилĕкне çитмест тӳме.
«Эй, пӳлĕхçĕм, тӳлек тӳпе!
Тӳсĕмлĕхне пилле пӳме...»

Тӳпенелле ӳкĕнӳлле
Вăл тинкерет ӳпкевпелен.
Çĕкленкелет çилпе çӳле
Тӳмелемен йӳле йĕлен...

**4**

Кӳренӳпе кӳпет ун варĕ,
Чĕтрет тăртаннă кăкăрĕ.
Мăнтарăна кам канăç парĕ?
Кам уншăн кăшкăрĕ?

Темскер итлет, пĕччен выртсассăн,
Тинкернĕн шалалла.
Итле, тинкер, эс йăнăшмастăн:
Палла мана, палла.

**5**

Хура Хуракăшăм, ăçта эс?
Ăçта сан ăшă çунату?
Çурхи çиле тухса пуç тай эс,
Тĕкне вĕçтерччĕ, кăмăл ту.
Хура Хуракăшăм, ăçта эс?

Ăçта сан ăшă çунату?
Эп тунсăхлатăп, тунсăхлатăп...
Шăп сывлăшрах вăшăлтату
Илтеп çĕрле те, кăнтăрла та.
Ăçта сан ăшă çунату?

Çурхи çиле тухса пуç тай эс,
Сулсамччĕ сиплĕх ку енне.
Тамалтарсам (ăна ăста эс!)
Сиксе вĕрен чĕре юнне.
Çурхи çиле тухса пуç тай эс.

Тĕкне вĕçтерччĕ, кăмăл ту:
Çыру, салам-и вăл — эп сапăр.
Тăван уй-хир, вăрман, сăрт-ту,
Тăван шыв-шурăм туйăнайтăр.
Тĕкне вĕçтерччĕ, кăмăл ту.

Хура Хуракӑшӑм, ӑҫта эс?
Ӑҫта ишен шухӑшупа?
Асран каймастӑн-ҫке кӑшт та эс,
Пуҫ ҫаварнӑ пекех супап...
Хура Хуракӑшӑм, ӑҫта эс?

**6**

Йӳле пилӗк тулӑн-шалӑн
Ҫӳрӗн хӑмӑр кӗпепе.
Эп кӗрейӗп — эсӗ паллӑн,
Анчах пулӑн кӗтмен пек.

Сӗм куҫ айӗн пӑхса илӗн,
Ярса пусӑн патмалла.
Ман ытам — сӑмахсӑр пилӗм.
Эс ӑнланӑн: «Ан шарла...»

Сассӑр кулӑ тӗрлӗ хурлӑн
Сан сӑнна... Сасартӑках
Аллӑма тытса эс хурӑн
Кӑкрунтан аяларах.

**7**

— Кик, кик Хуракӑш!
Кик, кик Хуракӑш!
Ман чӗппӗме эс куртӑн-а?
— Сан чӗппӳне курсаттӑм,
Ҫунат ҫумне хурсаттӑм,
Йывӑрланать ҫунатӑм,
Хӗрхен хама кура кӑшт...

— Кик, кик Хуракӑш!
Кик, кик Хуракӑш!
Хӑрах ҫунат халал сана,
Ҫитес ҫӗре ҫитерччӗ,
Ниҫта та ан ӳкерччӗ,
Чун ирӗкӗ — пӳ терчӗ.
Май ҫил вӗрет вӑш та вӑш.
Вӑй патӑрах, Хуракӑш!

**8**

Хура Хуракăшăм хурланчăк,
Мĕнпе ăна эп йăпатам?
Хăçантанпа ачашламанччĕ!
Çак săввăм пултăрах ытам,
Тӳрех васкатăр ун патне,
Савса калатăр ун ятне.

Каç-каç выртап, тăрап ир-ир:
Расна, анчах пĕрле эпир.
Сиксе тапан чĕремпелен
Мĕне хушатăп-ши эп шанчăк?
Ан ыйт, чĕлхем, ан иккĕлен:
Хура Хуракăшăм хурланчăк...

**9**

Кӳлешӳпе кӳленнĕ кӳлĕ,
Йĕрĕнтерет элек-ӳпре.
Çырăвусем ӳпкелешӳллĕ,
Пĕччен вулама çук пӳртре.

Сăрăлтатан сехет куккукĕ
Чĕлхе кăларнăн туйăнать.
Электăр-радио пралукĕ
Типшар кантри пек курăнать.

Ыттисем пек эп пултарсанччĕ
Тапак туртма, эрех ĕçме...
Сăх, săввăм, сăх, тамалтарсамччĕ
Тăвăлланан чĕреçĕме!

**10**

Çити-çитми ĕмĕтпелен,
Йĕспе хурçа эс чун кӳртсессĕн
Ӳкетчĕç пӳрнӳсем çӳлтен —
Хистевлĕн, сăхнă пек, тӳрккессĕн.

Рояль чĕтретчĕ парăнса,
Кĕввӳ-çеммӳ пӳрмен телейĕн
Кӳрентеретчĕ ман ăса,
Анчах чĕрем... унне пĕлеймĕн!

Сасартӑк вунӑ пӳрнӳне
Эс шатӑрах хуҫса лӑплантӑн.
Тинех сана мӗн пӳрнине
Ӑнлантӑм...

**11**

Хура Хуракӑшӑм инҫе,
Ҫуначӗсем чӗрем ҫинче.
Витет, шӑлать те ачашлать —
Именереххӗн, чӑвашла...
Куратӑп эп турпаллине,
Илтетӗп уҫӑ куллине.
Ӗненекен этем пулсан
Ҫапла тархаслӑттӑм чунтан:
Хура Хуракӑшӑмпала
Ишме парсамччӗ малалла!..

**12**

Ан макӑр: иртмен хурлӑх ҫук.
Мӗн хурӗ, мӗн сарӑпӗ саншӑн?
Сан канӑҫ пӗлмен юрӑҫу
Сана юрринче хӑварасшӑн.

Уртартӑр уран тӗнчене,
Кӳл[л]ентӗр куҫҫуль йывӑр шывӗ:
Ман савӑш пурне те ҫӗнет,
Манпа ӗмӗрех эсӗ сывӑ.

Ӗнен: чи вӑйли — тип ҫӗре
Ҫарран пусакан пулӗ халӗ.
Ӗнен: чи кайран тӗнчере —
Ним мар — юрату сӑмах калӗ.

# «АСЛӐ ЧӖРЕ» КӖНЕКЕРЕН (1963)

## МУХТАВ СӐВВИ

Эп санӑн ялаву ҫинче вулатӑп:
Мир, Ӗҫ те Ирӗк, Танлӑх та Телей.
Сана, юратнӑ партийӗм, мухтатӑп
Хавасланса сикен чӗрепеле.

Аҫа ҫапса хыптарнӑ ҫулӑм витӗр
Миҫе сӑрт урлӑ каҫрӑмӑр санпа!
Ҫӗршывӑн, халӑхӑн, кашнин шӑпи те
Санран килет: вӑл аслӑ пӗр шӑпа...

Ҫӗр ҫул хушши сукмак юнпа хӗрелнӗ
Париж хӳмисенчен Норильск таран...
Мӗскершӗн Ҫын кӗрешӳре тертленнӗ —
Ҫавна умрах куратпӑр ак паян.

Европа тӑрӑх ӗмӗлке ҫӳренӗ,
Халь — чӗррӗн, ӳтлӗн утӑмлать кунта.
Тӑшман хӑмсарӗ, тарӑхӗ, кӳренӗ,
Анчах вӑл чакараймӗ утӑм та.

Час коммунизм алӑкне уҫатпӑр,
Ӑҫта ҫити хӑпартрӗ самана!
Унта эп канӑҫлӑх шырамӑп: паттӑр,
Хӑватлӑ шухӑш илӗртет мана.

Ҫӑкӑр-тӑваршӑн ҫунмӗ тек ӑс-хакӑл,
Вӑл курӗ ҫӗртине те ҫӳлтине;
Хӗвел тӗнчи, ҫак ҫӑлтӑрсем — йӑлтах вӑл
Хисеплӗ, тӗпчӗ, пӗлӗ ун чухне.

Никам илтмен симфони янăравĕ,
Никам курман пулас картина та —
Хитре юмах пек халь ман чунăмра вăл,
Салам яратăп çĕнĕ поэта.

Телейлĕ эс, тăванăм! Пытараймăп:
Эп те шыраттăм çынлăх илемне.
Анчах Çĕре касса турам-турамăн
Этемлĕх уйрăлнăччĕ ик енне.

Çав чикĕ чĕре витĕр те тухатчĕ:
Каçхи шăхличĕ сасси пек янран
Ачашлăх кĕввине час-час хуплатчĕ
Çиллессĕн пăнтăртатнă параппан.

Эп вут-кăвар уланă вучахраччĕ,
Унта хăватлă шухăш-ĕмĕтпе
Çын чунĕ пĕтĕм çĕрĕкрен тасалчĕ,
Ялтрать вăл тин шăратнă ылттăн пек.

Тĕнчемĕре мала ярса пустарнă
Кĕрешӳре эп — хам ирĕкпеле!
Ман чун ăшши те çаксенче упраннă:
Мир, Ĕç те Ирĕк, Танлăх та Телей!

1961

## АВРОРА

...Хула çапла эрешленетчĕ:
Кермен, патша, чиркӳ тăрри...
А в р о р а тенине илтменччĕ, —
Вăл пулнă шурăмпуç Турри.

Çав сăмаха ман тĕттĕм ялăм
Таçтан пĕрремĕш хут илтсен,
Аçа çапса шевле вылянăн
Чуна вăл ячĕ чĕтретсе.

Усал-тĕсел, суя, асаплăх —
Йăлт вăркăнчĕ вут-кăвара.
«Юлташ» тени чи креслă, чаплă
Йыхрав пек пулчĕ таврара.

Хула çывхарчĕ: курăнатчĕ
Çат тутапа сăрт пек çамка;
Ун витĕр куçĕ шăтаратчĕ
Пăшал пульлин малашлăха.

...Тĕнчешĕн çĕнĕ шурăмпуçĕ
Хăпарнине астутарса
«Аврора» сасă пачĕ уççăн.
Ку — символ пек кĕрет аса.

1956

## АЧА-ПĂЧА ХӲТТИШĔН

Ача-пăча — çĕршыв чечекĕ,
Тĕнче илемĕ, мал ĕмĕт.
Пулас юман е чикенек-и —
Ачаранах вăл паллă-мĕн.

Ача-пăча — çĕршыв телейĕ,
Тĕрекĕ, халăх шанчăкĕ.
Чипер ӳссен — ютра, килте-и —
Пире никам та ан тĕкĕн!

Ача-пăча — çĕршыв мухтавĕ,
Çăлтăрсене вăл кăшăллĕ!
Кам ачана юратĕ, савĕ —
Çав çыннăн ырă кăмăлĕ.

Ача-пăча çине пăхсассăн
Вăй-хал кĕрет ман, сăвăçăн.
Ача-пăча хӳттишĕн — сассăм,
Чĕремçĕм, çакă сăввăмçăм.

1958

## ПĔР ТАН ТАПАÇÇĔ ЧĔРЕСЕМ

*Манолис Глезоса*

Манолис Глезос! Юррăн, маршшăн
Янран инçе Элладăран.
Пин-пинĕн сас паратпăр саншăн,
Пин-пин сана палла-тăран.

Акроппӑль тӳпине хӑпартӑн:
Хура фашизм эрешменне,
Ылхан сунса ҫапса антартӑн,
Ҫитертӗн халӑх ӗмӗтне.

Кӗрешрӗ халӑху, кӗрешӗ!
Трагеди вӗҫӗ — ҫутӑ кун.
Яланлӑхах яту пӗрлешӗ
Ҫӗршывупа, сӑваплӑ чун!

Эй, тусӑмӑр Манолис Глезос!
Вӑй патӑр! — тетпӗр. — Кӗрешсем!
Туйсамччӗ аякран, пӗл эсӗ:
Пӗр тан тапаҫҫӗ чӗресем!

1959

## ПӖР ШИКСӖР ПУРӐНӐҪ ТӐВАР!

Каллех чӗнетпӗр: хӗҫ-пӑшалсӑр,
Пӗр шиксӗр пурӑнӑҫ тӑвар!
Вӑйпиттиллех урасӑр, алсӑр
Ан юлтӑр тек кил-йышри ар.

Окоп-траншея тикӗслентӗр,
Тыр-пул хумхантӑр таврара.
Тӑри юррипеле килентӗр
Етре хӑратнӑ ҫын вара.

Ҫухалнӑ «паллӑ мар» салтакӑн
Пин-пин ҫухалнӑ вил тӑпри
Пӗр палӑк пултӑр та — хӑватлӑн
Пин-пин чӗре пек таптӑр-и!

Ӗмӗрлӗхех ун сӳнми вучӗ
Аса илтертӗр этеме:
Салтак ыр кӑмӑлшӑн пуҫ хучӗ,
Мел кӳчӗ канлӗн ӗҫлеме.

Ача-пӑча «мирле» вылятӑр, —
Хальчченхи пек «вӑрҫӑлла» мар.
Ӑслӑлӑхра ҫын пултӑр паттӑр,
Штурмлатӑр пӗлӗте патвар.

Тӗнче уҫлӑхнелле тирейтӗр
Куҫӗпеле вӑл инҫете:
Америкӑна та, пире те,
Ыттисене те — ӗҫ ҫитет!

1960

## ТӖНЧЕМӖР, САВӐН!

*Юрий Гагарина*

Тӗнчемӗр, савӑн, кӗр кӗрле!
Кашни эпир — вӗҫевҫӗ:
Гагарин пилотпа пӗрле
Чӗремӗрсем вӗҫеҫҫӗ.

Епле-ши эс унта туян,
Тӑван совет этемӗ?
Санран ҫӳлте никам пулман,
Кам саншӑн хӗпӗртемӗ!

Шанатпӑр: тӗрӗс-тӗкелех
Ҫак ҫӗр ҫине эс анӑн.
Сана ҫӗршывӑмӑр ҫӗклет,
Эс — ун ачи, вӑл — санӑн...

Ҫакна ҫырса ӗлкӗриччен
Ак радио каларӗ:
Эс аннӑ чиперех иккен,
Мухтав сана, Гагарин!

Хӑпартӑн халӑх ячӗпе,
Ун партийӗ хӑпартрӗ;
Тӑван ҫӗршыв хӑвачӗ пек
Сана йӑтса кӑтартрӗ.

Тӗнче кӗнекине кӗрен,
Пурне те савӑнтарӑн.
Яту сан юлӗ ӗмӗре,
Тӑванӑмӑр Гагарин!

1961, апрелӗн 12-мӗшӗ

## КĔРЕКЕ ЮРРИ

Туссем! Савăнса пухăнатпăр
Уяв сар сĕтелĕ тавра.
Чĕремĕр юрри ян янратăр
Хаваслă та çутă çуртра.

Ĕçлерĕмĕр-çке ывăнмасăр,
Ятсем пархатарлă, таса.
Курка туллирех тултарсамăр:
Çĕршывшăн ĕçер пуçласа!

Кăвак пĕлĕт витĕр хастар ăс
Кăларчĕ совет çыннине.
Тăван аслă партишĕн харăс
Çĕклер тултарса теприне!

Çанталăк хура-и, уяр-и —
Умра пирĕн çул сарлака.
Халь виççĕмĕшне тултарар-и —
Пĕр тан халăхсемшĕн курка!

1961

## ЭП ПУЛТĂМ АСЛĂ ПУХУРА

Çав кунсенче, килтен тухаймасан та,
Чунпа эп пултăм аслă пухура.
Пурин те — манăн та, юлташăм, сан та
Мал ĕмĕт, ырă шанчăк — Мускавра.

Эп ваттисем каланине итлерĕм,
Эп куртăм çунатланнă яшлăха.
Пур халăх умĕнче тăрса питлерĕм
Киревсĕр, пархатарсăр йăх-яха.

Таси паха! Пире ура ан лартчăр —
Таптатпăр та утатпăр малалла.
Эп Ленин чăнлăхне шанатăп, парти,
Вăл пехилленĕ: пул халăхпала!

Виç хут хӳме хӳсе хăвна ан уйăр,
Ток янă пралуксем каркаласа.

Сан чӗрӳне таҫтан та халӑх туйтӑр,
Пул уҫӑ, тӳрӗ кӑмӑллӑ, таса.

Шухӑшлаканӑн шухӑшӗ халь паллӑ:
Вилӗмсӗрри — ҫӗршыв та халӑх ҫеҫ.
Кӑтартрӗ пурнӑҫ: ҫын паян мухтавлӑ,
Ыран — ҫав мухтавран тусан вӗҫет.

Ҫапла: мухтав янратрӑмӑр пин саслӑн,
Ӳксе пуҫҫапманни анчахчӗ ҫав...
Тӳнтер енне курмарӑмӑр пулсассӑн
Кама халь айӑплар вӑрҫа-вӑрҫа?

Пӗр хамӑр айӑплӑ. Йӑлтах. Мӗнпурӗш.
Наяннипе, хӑравҫипе-и, тен, —
Пуҫсем тавра шухӑшламасӑр, — турӑш,
Тӑм кӗлетке тӑватпӑр этемрен.

Куратпӑр: чӗтренет тем ҫӳлӗш палӑк,
Сулкаланса тӑрать енчен енне.
Хӑйне ҫырлахтарми пулсассӑн — халӑх
Хӑех ҫапса ватать кӗлеткене...

Эп пултӑм пухура. Сӑмахӑм-вутӑм
Хыптарчӗ сӑвӑ ӑшӑм ҫуннӑран.
Хаваслӑх, хурлӑх витӗр пӗр сӑн куртӑм
Ҫынсем хӗрсе калаҫнӑ хушӑран.

Каплан револьвӗрӗн пульли шӑтарнӑ
Ҫӗнех те мар Ильичӑн пальттине
Надежда Константиновна сапланӑ,
Ильич улӑштарман ҫав тумтирне.

Куҫран пӑхса тав тунӑ та йӑвашшӑн
Пӗр чӗмлӗ те пӗр чунлӑ арӑмне
Каллех вӑл революцие ҫӑласшӑн
Ҫӗмрен пек кӗнӗ пурнӑҫ тӑвӑлне.

Ильич улӑштарман... Ҫине-пуҫне-и?
Ч у н н е, хӑй шухӑшне улӑштарман.
Тӑван ҫӗршывӑн ырлӑхӗ, телейӗ —
Ак мӗншӗн пӑшӑрханнӑ вӑл ялан.

Çынна çын пек вăл юп курса итленĕ,
Пӳлмен, касса татман, хăртса тăкман.
Шухăшĕпе, тен, килĕшмен те Ленин,
Анчах çын уншăн — çын. Кам йăнăшман?

Хальччен курман çулпа-йĕрпе пыратпăр,
Коммуна çулĕ-йĕрĕ такăр мар.
Пĕччен этем, епле пулсан та паттăр,
Пăраймĕ пурнăç кӳмине вăр-вар.

Ильич та — халăх ывăлĕ, тăнланă
Чей ĕçтерсех ĕççыннине час-час.
Канаш памаллине канаш вăл панă,
Пĕлменнине — вĕреннĕ хăй хавас.

Эп пултăм пухура. Сăнарăм эпĕ:
Ĕçсем пыра пуçларĕç пек кал-кал;
Çын тивĕçĕ ӳсет, этем хисепĕ.
Пĕрле чăмăртанать пиншер ăс-хал.

Çын шухăшлать! Вăл кворумшăн та шутшăн
Ал йăтакан пĕччен пĕр сасă мар:
Ун хыçĕнче — хăй пеккисем пĕр ушкăн,
Çавна асран ямасть чăн коммунар.

Çын шухăшлать. «Хама кăна тивминччĕ...» —
Тесе пĕркенмĕ шиклĕн кĕрĕкне.
Чăнне куçран вăл калама вăй илчĕ,
Пăхмасĕр аслине-кĕçĕннине.

Çитет! Çынран тек тумăпăр çур Турă:
Хакла лараççĕ турăсем ку чух...
Каланă: «Хăвăра асла ан хурăр».
Çав сăхахран пахи чăнах та çук.

Çитет! «Тем курăн» темĕпĕр. Çул уçă:
Тытар тĕреклĕн алăран алла!
Пин-пин ăс пухнă парти — ак çул пуçĕ,
Çавна шанса утатпăр малалла.

1961

## РАЗЛИВ АСА КИЛЕТ

Урай сарри çинчен утса
Эп кĕтĕм ун кабинетне.
Сĕтелĕн  кнопкине пусса
Вăл йыхăрчĕ референтне.

«Ман час сăмах каламалла,
Хатĕрлесем... материал».
Хăй уткалать калла-малла,
Куç-пуçĕ ялкăшать йăл-ял.

Тухса ăсанчĕ леш часах:
Вĕреннĕ, хăнăхнă тахçан.
Çырать вăл ун валли сăмах
Чи юлашки пăнчи таран.

Эп урăх сăн курап: ӳпле...
Сĕтел те çук. Пур тунката.
Çапах этем ĕçлет... Епле,
Епле ĕçлет-ха вăл тата!

Эп шухăшлатăп: кам алли,
Кам тăнĕ-пуçĕ-ши вара
Пухса çитернĕ ун валли
«Материал» çав Разливра?

1955

# «ЧĔРЕМ, МĔН ПУЛЧĔ-ШИ САНА?»

## КӲЛЕШӲ

Куç шуррине юн хĕвĕнет.
Шултраланать сăмах,
Хăвăртланать вăл е — кинет
Пулатăн эс шăпах.

Тин пӳлĕннĕ арăсланла
Кăшлатăн тимĕре.
Асав шăлна юнла-юнла,
Пĕр сассăр тилмĕрен.

Унтан çӳрен калла-малла
Кӳренчĕк çав тери...
Ах, пĕçерет иккен алла
Отеллăн ал тутри!

1948

## А. АТРЕЕ

Тури Выла эп пырса куртăм,
Аван пурнатăр пурнăçа.
Сиктĕрмене сан çук-и туртăм?
Сума сусамччĕ сăвăça.
Унта сан аннӳпе пĕр тантăш
Е ватăрах та, шутласан,
Кăштăртатса çӳрет аран кăшт
Мана тĕнче кăтартакан.
Ним пулмасан та, ырă кăмăл
Пурах ун ăшă хĕвĕнче...

Уйра — шапарнă сарă хăмăл,
Пÿртре — ик хутлă чÿрече.
Каçпа кĕлри паранкă хатĕр:
Тăвар сапса çие-çие,
Сăра ĕçсе, вăлтма пулать-тĕр
Çити-çитми çак телее?
Юман вутти шартлатнă майăн,
Çулсем иртни çинчен манса
Эп сăвă калăп; эсĕ калăн —
Малашлăхна шанса...

1951

## АРКАДИЙ ГАЙДАР ПАТĔНЧЕ

Каштанпа черешня, груша курăн,
Çавăнтах тата пĕччен кăна
Шуралса çитмен çап-çамрăк хурăн.
Кам лартса хăварнă-ши ăна?

Хăш отрядăн пионерĕ пулнă
Теветкеллĕ çын? Епле вăл çак
Арзамас хурăнĕпе тĕл тунă
Салтакла пуç хунă çыравçа?..

Гайдара эп астăватăп лайăх:
Пурччĕ çав шинеллĕ этемре
Темĕнле иртми ача-пăчалăх,
Чăн талант çапла вăл ĕмĕрех.

Çав ачалăх туйăмне пăсмасăр
Яланах тасан сыхла пĕлсен —
Эс телейлĕ çын, художник-маçтăр!
Ачана шăп çав туртать-и тен?

1952, Канев

* * *

Ман çук юратнă вăхăтăм:
Хĕлле, çулла е кĕркунне —
Пурне те эп тав тăвăттăм, —
Хастарлăх кÿтĕр çын чунне.

Тăман, хӗвел, йӗпе-сапа —
Пӗрне те ман ӳпкевӗм çук.
Мӗскер çитмест мана ку чух?
Санпа пуласчӗ ман. Санпа.

1955

## ТАНГО

Кӗл чечек аллейӗ,
Кӗл чечек аллейӗ...
Ман телейӗм мар çав —
Ют çынсен телейӗ.

Ман телейӗм пурччӗ,
Аякра вăл юлчӗ,
Чӗрене шар çурчӗ:
Шăнăçайми пулчӗ.

Эп ӳпкелеместӗп,
Тилмӗрсе йӗместӗп.
Хам курнине, тусăм,
Ан курсамччӗ эс теп.

Кӗл чечек аллейӗ,
Кӗл чечек аллейӗ...
Ман телейӗм мар ку —
Ыттисен телейӗ.

Ярăнать ăш çумăр —
Пӗлӗтӗн куççулӗ.
Мана айăп тумăр:
Ман пекки тем чухлӗ.

Ярăн, çумăр, ярăн,
Сад пахчи, шăварăн.
Ешӗл йывăç-курăк
Сарăлтăр катмаррăн.

Кӗл чечек аллейӗ,
Кӗл чечек аллейӗ...
Ман телей пулмин те,
Пур такам телейӗ...

1956. Бухарест

## ЭЛЕКÇЕ

Эс çирĕн унăн çăкăрне,
Кĕрекинче килентĕн.
Тупа тусаттăр пĕр-пĕрне:
«Пăрахмăпăр вилсен те!»

Анчах вăл лекрĕ инкеке.
Хăтăлаймасть. Эс сисрĕн.
Курман-илтмен ют çын пекех
Юлташунтан эс писрĕн.

Писни çитмерĕ — эс, эсех
Элек ăшне путартăн:
Часрах вăл пĕттĕрчĕ тесе
Тăхçаласа тултартăн.

Вăл тимĕрленĕ кантăкран
Курмарĕ кун çути те,
Эс çын çиен пек антăхрăн:
«Тĕп пултăр! Кирпĕч çитĕр!»

Ыйткалакан чунна сутса,
Шав çыртăн, çыртăн, çыртăн...
Кĕтмен çĕртен этем тухсан
Шăлна эс шатăр çыртрăн.

Хура юнна кĕвĕлтерсе,
Хĕвне эс чул пытартăн.
«Пĕрре эп перĕп-ха!» — тесе
Кĕтессенче сыхларăн.

Сăпса çитернĕ йытă пек
Эс хаярлантăн, уртăн.
«Пĕрре витерĕп, çыртăп эп!» —
Шухăшласа эс хутăн.

Анчах шăпи кăшт урăхла,
Патакĕ — икĕ вĕçлĕ.
Эс çавăнпа халь мухмăрла,
Куçу та хăсăк тĕслĕ.

Питне кĕççе çĕлерĕн халь,
Паллаймĕç тетĕн мар-и?
Чухлаççĕ вăрă-хураха,
Палламанни юлмарĕ.

Хăвна пырса тивес чукмар —
Сулмаклăрах вăл пулĕ.
Чĕтре, хăравçă! Суд çук мар:
Вăл — халăхăн кун-çулĕ.

1956

* * *

Çаплах усратăп ăшăмра
Сан илĕртен сăнна,
Сĕтел çинчи сар кăкшăмра
Чечек усранăнах.

Шан: хухмĕ çав чечек типсе
Сар кăкшăм ваниччен.
Вансассăн... лартчăр ыттисем:
Чечекĕ пит чечен!

1957

* * *

Çумăр хыççăн мăк çемçе,
Чăштăр та тумасть.
Вата хырлăх ăшĕнче
Лайăх-çке утма!

Сывлăш пыл пек, ĕмĕттĕм
Вĕçĕмсĕр ăна.
Чун панчи ман ĕмĕтĕм —
Çак çĕртен кăна.

Аслă шухăш тӳпере
Вĕçнĕ вăхăтра
Астăватăп эп тепре:
Никĕсĕ — тăпра.

Çын — трагедиллĕ титан,
Çырлахусăр чун!
Каласам, тĕнче тытсан:
«Тав Çĕре! Эп — ун!»

08.08.58

* * *

Шакка, шакка, улатакка!
Шăп хырлăх хăратать мана —
Канма ăс тытнă салтака:
Шанмастăп эп шăп вăрмана.
Шакка, шакка, улатакка!

Шăп хырлăх хăратать мана:
Кĕтмен асар-писерлĕхе
Пире вĕрентрĕ самана
Яланлăха, ĕмĕрлĕхе...
Шăп хырлăх хăратать мана.

Канма ăс тытнă салтака
Каллех пароль пĕлтерĕç, тен,
Тӳлек тăран çанталăка
Хураллаттарĕç çутличчен
Канма ăс тытнă салтака.

Шанмастăп эп шăп вăрмана.
Мĕн те пулин — е çил кас-кас,
Е аслати, е тăмана,
Е çурăк йывăç патăр сас!
Шанмастăп эп шăп вăрмана.

Шакка, шакка, улатакка!
Ĕçне тусам çак тĕнчере.
Такам шарт хупнăн алăка
Шăпра хăш чух сикет чĕре...
Шакка, шакка, улатакка!

08.08.58

* * *

Тамалнă хырлăх шăп. Кăшт кĕрсенех —
Унта-кунта хĕрелкелет кĕтмел.
Тем те пĕр курнă ватă хырсене
Ним сассăр ылтăнлать анан хĕвел.
Чĕре çумне пĕр шухăш хĕсĕнет:
Йăлтах юлать, йăлтах... Тӳсме çук шел!

08.08.58

* * *

Сар çурта пек сарă кӳкерчен
Ярăнать сип-симĕс шыв çинче.
Кам ăна çутать-ши çурсерен?
Пурăнать вăл çывăх е инçе?

Виçĕ хутлă ешеркке вăрман
Тĕкĕрленнĕ тарăн кӳлĕре:
Хĕрринче хăва, унтан юман,
Хырĕсем тата кăшт çӳлерех.

Малтанхи сăмах кунта — «хитре!»,
Анчах пĕтĕм тĕнчери илем
Тĕкĕрленнĕ манăн сăн-питре,
Эп ăна туяканни. Этем!

09.08.58

* * *

Çаврака уçланкăра
Çинçе хыр ларать пĕччен.
Кашнинчех ăна курап
Кăшт урăхларах енчен.

Хăш чухне вăл каçăркка,
Хăррăн çеç пăхать çӳлтен;
Хăш чухне ытла йăркка,
Çăмăлттай пулать иккен.

Хăш чухне вăл аванах,
Пит сăпайлă темелле;
Çил тухать те — авăнать
Çинçе пилĕк çĕрелле.

Авăнать те ӳпĕнет, —
Таянмашкăн çук никам.
Пĕр турачĕн юппине
Алă пек тăсать: «Çăлсам!..».

Ватăрах тăн-тăн хырсем,
Тен, илтеççĕ пулĕ те, —
Канашлаççĕ шав хĕрсе,
Тинкереççĕ пĕлĕте...

10.08.58

***

«Ылтăн хăйăр» пляжĕ,
«Ылтăн хăйăр» пляжĕ...
Шупашкар чăвашĕ
Кантăр пĕр-ик кун.
Канасси пулмарĕ:
Юратса пăрахрĕ.
Юратни — савмарĕ.
Мĕн тăвас-ха ун?

1959. Варна

* * *

Чĕрем, мĕн пулчĕ-ши сана?
Е ывăнсах çитетпĕр-и?
Ытараймарăн тасана,
Çулу — тумхахлă çав тери.

Таса патне ăнтăлнăран
Нумай кĕрмешрĕн хурапа.
Халь ак куси-кусми, аран
Пырать пек пирĕн урапа.

Чĕрем — вут чулĕ татăкки!
Хăш хĕррине, хăш кĕтессе
Лекмерĕ пурнăç патакки,
Ун хурăç çулăвĕ тессе?

Ялан хĕлхем сапа-сапа
Пайтах çынна ăшăтнипе
Малтан сисмерĕн асапа,
Халь ак сасартăк шăннă пек...

Чĕрем, мĕскер пулсассăн та
Хыпса çунсах çĕре кĕрем.
Пĕрех хĕлхем юлсассăн та
Ӳпкевĕм çук сана, чĕрем!

23.11.59 Боткин больници. Мускав

## ÇĔРШЫВ МУХТАВĔ

*Чăваш тĕррине куракансем*
*çырни хушшине*

Чăваш тĕрри — çĕршыв мухтавĕ,
Вăл тухрĕ аслă тĕнчене.
Унта халь уççăн илтĕнет
Чăваш юрри-кĕввин янравĕ,
Унта ман халăх чун хавалĕ,
Ун савăнса тапан чĕри,
Нихçанхинчен таса вăл халĕ,
Илемлĕ, сывă та вĕри!

1959

* * *

Шухăша кайса ларать
Ир çинчи çурхи хула.
А-ах! Асăмра
Сан кăвак куçу кулать.

Тĕлĕрен тӳлек бульвар
Пире тивĕç астума.
А-ах! Шупашкар!
Маваскать-ши ăсатма?

Бакен сӳнчĕ тин кăна
Юлашки çăлтăрпалан.
А-ах! Сан сăнна
Манас çук эп нихăçан.

1960

## ЭПИР ПУЛНĂ, ПУР, ПУЛАТПĂР!

Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ
Ӳстерсе ăс-хал мулне.
Кĕнекеçĕсем шыраççĕ
Чăвашсен кунне-çулне.
Тинкеретпĕр малалла,
Кайрине те халь куратпăр...
Манăн шухăшăмпала —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр.

Пĕр вăрман пулсан этемлĕх,
Тĕрлĕ йывăç пур унта.
Ярăнса кăна ӳсмелĕх
Вырăн çитĕ вăрманта.
Каснă, вăтăрнă пире,
Кăкласа хăртман та мар-тăр,
Вăрлăх юлнă пурпĕрех:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Никамран та ютшăнмасăр,
Тан курса пур йăхсене,
Ят хума пултарнă хамăр
Хĕвеле, çăлтăрсене.
Ăс-пуçран та катăк мар,
Чун хавалĕпе те паттăр,
Чĕрепе те шĕл кăвар —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Пирĕн юрă, пирĕн тĕрĕ,
Пирĕн тӳсĕмлĕ сăмах
Упранса вăл çитсе кĕрĕ
Коммунизм таранах.
Чун çакна шанми пулсан —
Маншăн шăтăк та ан алтăр.
Шанчăк сӳнмĕ нихăçан:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

«Мĕн чăваш чĕлхи!» — илтетпĕр
Хăш чухне чăвашранах.
Йĕрĕнсе пăхса илетпĕр
Ун йышши каçрашкана.
Кĕççе пит вăл, кĕлмĕç чун,
Куçăнах унран кулатпăр:
Ӳк те çурăл, хып та çун —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Çак кунччен упраннă халăх
Мăшкăлланмĕ паянтан;
Хăйшĕн хăй — парне те палăк,
Пуринпе те вăл пĕр тан.
Пĕтĕм пурнăç терчĕпе
Çĕр çыртса тупа тăватпăр:
Шăрăх, сивĕ е йĕпе —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

Лăпкă чух та, вăрçăра та —
Хут çине те чул çине
Çыртăм, халĕ те çыратăп
Халăха ĕненнине.
Савнă халăх манпалан
Шухăшлатăр та калатăр
Уçă, ирĕк кăмăлтан:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!

1962

## ЛАЙĂХ!

Малтанхи сăмахăм — л а й ă х!
Мĕн калас тата паян?
Пултаратăн, Николаев!
Аптрамастăн, Андриян!

Мухтанатпăр, савăнатпăр:
Эсĕ виççĕмĕш вĕçен!
Çĕршыву ӳстерчĕ паттăр,
Турĕ тӳсĕмлĕ, ĕçчен.

Тĕнчипе янрать халь Шуршăл —
Эс çуралнă лăпкă ял.
Сан йĕрне шырать вăл: «Пур-ши?»
Тӳпене пăхать чăл-чал.

Тӳпене пăхать аннӳ те:
«Пур-ши ывăл? Ах, инçе!..»
Чун пĕр савăнĕ, пĕр кӳтĕ,
Лăпланаймĕ аниччен.

Тӳпене пăхать Гагарин,
Юнашар Титов пăхать.
Вĕсене мĕн лăплантарĕ?
Кам вĕсем пек ăнланать?!

Ыталашăр час тăванлăн
Пĕр-пĕрне сума суса;
Аннӳне çитсе ыталăн
Сывлăхушăн тав туса.

Эп паян çапла куратăп:
Виçĕ тус — пĕр чун, пĕр тан —
Мускавра эсир пыратăр,
Юрий, Герман, Андриян!

Аслă Виççĕмĕш Программăн
Пархатарлă çыннисем!
Ун ĕçне пуçларăр чаплăн,
Ĕнентертĕр çĕнессе.

Ыранхи кун-çул саккунĕ:
Çыншăн çын вăл — тус, тăван.
Çавăнтан сире халь кӳнĕ,
Çав телейлĕ ырантан.

Пулассишĕн хĕпĕртенĕн,
Виçĕ тӳсĕмлĕ туса
Йăл кулса пиллерĕ Ленин,
Пур çынна та ыр сунса.

1962, августăн 11-мĕшĕ

# КĔЛЧЕЧЕК ÇĔРШЫВĔН ЙĂЛ КУЛЛИ

Сикрĕмех те кĕтĕм пахчана
Мăкăнь чечекĕсем пуçтарма.
Мăкăнь чечекĕсем кĕл пулчĕç,
Тăванпала тăван тĕл пулчĕç.

*Чăваш халăх юрринчен*

## АВАЛХИ ХУРĂНТАШСЕМ

*Ангел Тодорова*

Мĕнле туртатчĕ манăн чунăм
Çак çĕршыва килсе курма!
Сикех, чĕрем, хыптар эс çулăм
Кашни тухан сăмахăма.

Сăмахăм çунтăр, çиçтĕр, култăр,
Ялавăн варкăштăр вĕçсе.
Ĕмĕтĕме çитернĕ пултăр:
Пыратăп Софие çитсе.

Пиншер çулхи тăван аваллăх
Тухса çĕкленчĕ куç умне.
Пăлхар! Пĕр юнлă ырă халăх!
Курсам шăллун тайма пуçне.

Бургас, Муркаш, Янтра та Варна
Кĕрет-çке юррăн хăлхана.
Мĕнле ăру ватти хăварнă
Çав ятсене ку таврана?

Сирсе кăтарт мана, Болгари,
Историн анлă çиттине.
Ĕмĕрлĕхех тăванлашар-и
Халь тепĕр хут эпир тинех.

П ă л х а в сăмах пек илтĕнетĕн
Чĕремшĕн кăмăллă п ă л х а р!
Кĕрешрĕн тӳсĕмлĕн, çĕклентĕн,
Салатрăн тăшманна чăл-пар.

Чуралăхра чура пулмарăн,
Сыхларăн ирĕк ĕмĕтне.
Ятна-чысна тасан упрарăн,
Çĕрне-шывна та пĕлĕтне.

Эс пуррине таçтан туяттăм —
Тĕп çуртунти пăлхар-чăваш.
Хăш чух эп Атăл пек хумхантăм,
Хăш чух пусарăнтăм — йăваш.

Пусарăнтăм та — пусмăр чулĕ
Тĕп тăваймарĕ чунăма.
Ман сассăм та тĕнчешĕн юлĕ:
Чĕлхен хал пур чул чутлама!

Эп «Атăл пăлхавçи» ят илтрĕм
Авалтанпах çĕршывăмра,
Паян Дунай урлах ак çитрĕм
Сыпмашкăн хамăр тымара.

Умна чĕркуçленме эп хатĕр.
Малтанлăха мĕскер калам?
Хывам та çĕлĕк çăкăнам пĕр,
Сăпайлăн кустарам салам.

Аспарухсем ӳсен йăванăн
Ăшши çитейрĕ-ши манпа?
Кӳр алă, инçетри тăванăм,
Çывăхартать пире шăпа.

## ГЕОРГИ ДИМИТРОВА ПУÇКĂШĂЛЬ

Пĕрре ăна эп çывăх куртăм.
Çав çул ун ян сасси пире
Таçтан хускатрĕ. Хăй çав судăн
Судйи вăл пулчĕ Лейпцигре.

Вăл Мускава вĕçсе килейнĕ —
Тухса сăмах калать те ак.
Ĕнер кăна Çĕре чĕтретнĕ,
Паян — ĕшеннĕ пек пăртак.

Анчах кӳрнеклĕ те илемлĕ
Çĕнтерӳри хаваспала
Пăхать вăл каччă пек телейлĕн,
Çап-çамрăк куçлăн малалла...

...Халь Софире ăна курсассăн
Шап-шурă мавзолейĕнче, —
Вăл чĕмсĕр иккенне шанмастăн:
Кĕçех тăрассăн туйăнчĕ.

Ун кăвакарнă çӳçĕ витĕр
Пăхатăн та сăнне-питне, —
Куратăн çамрăках ун шиксĕр,
Çунса тăран чун-чĕрине.

Çул хыççăн çул иртсе çухалĕ —
Ун паттăр ĕçĕ чĕрере
Çитернĕ ĕмĕт пек çуталĕ,
Вăл — тĕслĕх маншăн ĕмĕре.

Вăл — халăх çамрăклăхĕ пекчĕ,
Халь — унăн çутă çăлтăрĕ.
Тăван пăлхар унпа çĕкленчĕ,
Ун ячĕ ĕмĕр ялтăрĕ.

## НИКОЛА ВАПЦАРОВ

Хăйне вĕлернĕ кун иркӳлĕм
Шутланă вăл чĕрри çинчен.
«...Мана та асăнĕç, тен, ӳлĕм:
«Вилмен вăл, чĕрĕ»[1] — юрлĕç, тен.

Ĕмĕрлĕхе ятне хăварнă
Тăвансене асна илсем:
Бенковски, Левски, Ботев, Райна[2]...
Çĕршыв пек вилĕмсĕр вĕсем.

---

[1] Христо Ботевăн пăлхар халăхĕн наци гимнĕ пулса сарăлнă «Хаджи Димитр» сăввинчен.

[2] Пăлхар ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ □´□ ĕмĕрти паттăрсем. (Автор асăрхаттарни. — *Ред.*)

Тамăкринчен тискер чуралăх
Кун-çулĕ урлă вĕсене
Парать ак манăн сăввăм алă:
Тав ирĕк паттăрĕсене!

Сахал эп çыртăм: кабинетăм
Пулмарĕ куçкăн пурнăçра.
Ман чун сасси пĕр-пĕр эстетăн
Хăлхишĕн мĕн питех ара?

Ман сăвă вăл — салтак, çуралчĕ
Пăшал шартлавĕпе пĕрле.
Кĕрешрĕм. Ку йывăртарахчĕ.
Халь акă ан чĕн, ан кĕрле.

Ĕçлесчĕ, ал-ура тăртанчĕ, —
Эп тыткăнра. Апла пулсан,
Эс çеç халь, сăввăм, манăн шанчăк,
Çапар вăй пур таран сулса!

Тĕп çул-йĕре курас: мĕн пулнă,
Мĕн пур, мĕн пулĕ малашне...
Хур, сăввăм, динамит çак хулăн,
Çак нӳрлĕ чул хӳме ăшне!

Ах, пурăнас килет-çке манăн,
Чĕре чĕрришĕн талтлатать.
Эс пур — ирĕксĕрех тытатăн
Хăвна тӳлек те, лăпкă та.

Халь кĕрешӳ хаяр, хăрушă...
Анчах курап ыранхине:
Çын пулĕ чи хакли кун-çулшăн,
Хăй суйлĕ пурнăç шăпине...

Кĕмсĕртетет çăра... Хăюллăн
Иртесчĕ юлашки çула.
Эп кайăпин, çĕршыв, эс юлăн,
Ан ман пире, чипер юлах.

Эс вилĕмсĕр, Болгари, сывă!
Чи юлашки хаяр вăрçа
Эс тапрансассăн, çĕрĕм-шывăм, —
Санпа пыратпăр кар тăрса!..»

Хăйне персе вĕлерес умĕн
Вăл курнă пур этемлĕхе.
Вилмест вăл! Унăн ячĕ-сумĕ
Çут тĕнчере ĕмĕрлĕхе.

## ВАЗОВ ЧĔРИ

Эп куртăм Вазов сăвăç чĕрине.
Вăл юлнă асăнмалăх çĕршывне.

Вăл музейре. Эп пăхрăм та ăна —
Ирĕксĕрех çӳçентĕм пĕр кана.

Кайран эп куртăм чул. Ун айĕнче
Поэтăн вилтăпри тĕп хулинче.

Унта çунать шав йывăç çу: пĕрре
Халь музейре усранакан чĕре

Сасартăк сӳннĕ те — çавăнталла
Çути таптарнă пек çунма ялан.

Эп шухăшларăм савăнса кăна:
Пит ăслă тунă халăхĕ çакна...

## «БОЛЬШЕВИК» УТРАВ

Бургасран инçе мар, Хура тинĕс çинче,
Пур утрав. Унта пулнă тĕрме.
Чи хăюллисене коммунист йăхĕнчен
Унта хупнă часрах пĕтерме.

Анчах пирĕн çынсем пĕтесле çуралман:
Çирĕм пиллĕкмĕш çул, синкер çул,
Аллă икĕ пăлхар çăлăннă çавăнтан,
Чарайман тинĕс, тимĕр те чул.

Аллă икĕ пăлхар-коммунист Стамбула
Тухса тарнă çĕрле тинĕспе.
— Çакăнса тăриччен (мĕн килет, мĕн пулать?)
Кĕрешес! — тенĕ йăлт пĕр çын пек.

Хум хӳтернӗ пуль ҫав, ҫил силленӗ пуль ҫав,
Вайкӑнтарнӑ, силленӗ кимме.
Анчах пур тӗнчере пархатарлӑ Мускав,
Ҫавӑнта ӗмӗтленнӗ ҫитме.

Аллӑ икӗ пӑлхар, аллӑ икӗ хастар
Ҫитнӗ пирӗн ҫӗре, хӑтӑлса.
Ав пӗри вӗсенчен — паттӑр, тӳсӗмлӗ ар.
Алӑ патӑм, чунтан тав туса...

Бургасран инҫе мар пӗчӗкҫеҫҫӗ утрав,
«Большевик» унӑн ячӗ паян.
Чӑн: н у м а й й ӑ н эпир, эп те пур ҫав шутра! —
Тесе эс, мухтанса, пуҫ таян.

## ПОЭЗИ КУНӖ

Таҫта Балкан вӑрманӗ каш-кашлать,
Хайдук юрри илтӗнсе кайнӑ пек...
Эп Ботева вулатӑп чӑвашла
Калоферти ытти сӑвӑҫсемпе.

Октябӗрӗн пӗрремӗшӗ, уяв:
Пӑлхар поэзи кунӗ халь кунта.
Пӗрремӗш ҫул, пӗрремӗш кун! Туяп:
Историе кӗрет вӑл паянтан.

Ӗнер тем чухлӗ хуларан, ялтан
Вӗҫӗ-хӗррисӗр куҫнӑ машинсем
Парад пек тӑрса тухнӑ ав паян,
Урам урлах тем анлӑш чӗнӳсем:

«Савса кӗтетпӗр Ботев хулине!»
Илемлӗ хула-йыш йӑл-йӑл кулать.
Чечек — кашни поэтӑн аллине,
Кӗпи умне... Чечек кӑна хула!

Калофер кӗр-кӗрлет, таҫта инҫе —
Ту хушшинех ҫитеҫҫӗ сӑвӑсем.
Унтан калле килет ак сас вӗҫсе:
«Илтетпӗр!» — теҫҫӗ пулӗ тӑвӗсем...

Кĕрлет хула, янрать вăл кунĕпе,
Йăлт илтĕнет-тĕр Аслă Пăлхара[1].
Хитре сухалĕ витĕр кулнă пек
Гранит çинче вăл итлесе ларать.
Çĕршыв чĕри тапать çак хулара.

## КАЛОФЕР — МУРКАШ

«Христо Ботев» пионер дружинĕ.
Кăтра пуçлă йăрăс хĕрача.
Халиччен поэт сăввине илтнĕ
Ахăртнех вăл пăлхарла анчах.

Халь ăна эп чăвашла каларăм,
Чупса пычĕ те вăл ман пата —
Роза пачĕ. Тав туса пуç тайрăм,
Мĕнпеле савăнтарам тата?

Мĕн парас? Кĕнекене чикмен-мĕн,
Çук картин та... Кайрăм шухăша.
Çав самант сасартăк, тем систернĕн,
Аса илтĕм эпĕ Муркаша.

— Ачасем! — теп, — сирĕн ушкăн ячĕ
«Христо Ботев». Пирĕн Муркашра
Пур çав ятлă пионер отрячĕ,
Çавăнтан салам пур шкулăра! —

Эх, вара пуçларĕç ал çупмашкăн
Çăлтăр куçлă пионерĕсем:
— Салам калăр хăйсене, тархасшăн!
Çыру çырччăр! Адрес илĕрсем!.. —

Йышлă аслă Ботевăн тăванĕ.
Ачасен хавасĕ — куç тулли.
Ĕмĕрех ман асăмра усранĕ
Кĕлчечек çĕршывĕн йăл кулли.

---

[1] Христо Ботева Болгарире сума суса Аслă Пăлхар теççĕ.

## ВĔÇ, ВĔÇ, КУККУК!

Çул юсаççĕ ту çинче.
Ячĕ çумăр ярăнса.
Вăл çуса ирткеличчен
Эпĕ тăтăм чарăнса.

Пӳрт те мар, сарай та мар, —
Çуллахи эртел хӳтти.
— Ырă çыннăм, иртсе лар! —
Тет сухаллă вăй питти.

Пăлхарсем те тĕрĕксем,
Гагауз тени те пур...
Каччисем те хĕрĕсем
Пĕринчен пĕри маттур.

Сăмахларăм пăлхарла,
Перкелешрĕм тĕрĕкле.
— Ху эс кам? — Чим, ан шарла!
— Ма? Калаçтăр-ха хăйле. —

Кăмăлне хăварам мар:
Калаçтăп хамăрла.
— Чимĕр, атьăр-ха юрлар! —
Тет пĕри кула-кула.

«Хей, Балкан, ти роден наш! —
Эй, Балкан, тăван çĕршыв!»
Юрласа ярать пĕр яш:
— Эсир те пулăшмăр-ши? —

— Ма пулăшас мар ара?
Хутшăнатăп хĕрĕнсе:
Пăлхарлах эп çав юрра
Янрататăп пĕрлешсе.

Вара пурте уйрăмшар —
Кашни хăй чĕлхипелен —
Юрламашкăн пĕр кавар
Туса хутăмăр-и, тен.

Димчо йĕкĕт, гагауз,
Кĕлчечек çинчен юрлать.

Пенчо каччă, пăлхар тус,
Тинĕсе хумхантарать,

Тĕрĕк хĕрĕ Сеите
Юрату хĕмне сапать.
Ак пуçлатăп эпĕ те
Именӳллĕ сасăпа.

Уншăн-куншăн хуйхăм çук,
Именни тем мар иккен:
«Вĕç, вĕç, куккук, вĕç, куккук.
Пăлхар çĕрне çитиччен!..»

## ТРАКИ ТӲРЕМĔН ПĔР САНĔ

Ту çинчен хăватлă, сывă
Ыткăнать Марица шывĕ,
Пĕтĕм Тракийĕн тӳремĕ
Çав шывпа шăварăнать.
Эп унта пайтах çӳренĕ,
Халь çапла вăл курăнать.

Хăмăр куçлă хĕр тăратчĕ,
Шурă-шурă тутăрпаччĕ,
Кĕреçе çине таяннă,
Йăл кулса хăй ал сулать.
Пахчара вăл кăпкалатнă
Виноград тĕмне пулас.

Хĕвелпе пиçсе хĕрелнĕ,
Çаруран, чипер, тĕреклĕ,
Асатса мана вăл ячĕ
Куçăмран пăха-пăха.
Ак иккен çĕршывăн сачĕ
Камсемпе хитре, паха.

Тĕнчере ялан мухтавлă
Пултăрах хастарлă алă!
Ывăнаççĕ те канаççĕ
Тăрăшуллă ĕçченсем.
Ирĕкри ĕçре кăна çав
Телейне тупать этем.

## ПĂЛХАРЛА ПУÇ СУЛЛАВĔ

Пуçĕсене «çук» тенĕ пек сулласçĕ,
Хăйсем «да, да» тееççĕ чĕлхипе.
Кун евĕр «хирĕçлев» văл пăлхарла çеç.
Эп шухăшлатăп: ма-ши văл ун пек?

Тен, тĕрĕк аллинче пурăннă чух
Ирĕксĕрех «да, да» темелле пулнă?
Каланă та — пуçне хăй евĕр сулнă,
Мĕншĕн тесен ăшра шутланă: «çук!»

## «ЛИЛЯНА»

Пирĕнне ăçтан часах ăнланăн:
Таçта сăвă пултарать пиçме?
Ав унта кафе пекки «Лиляна» —
Тĕрлĕрен пылак ĕçме-çиме.

Пĕр сехетлĕх, тен, кайса килем-и
Кăшт канма, хаçат-мĕн вулама,
Пăлхарла калаçнине итлем-и
Чĕлхине пăртакçă чухлама...

Тăвансем, хĕрарăмĕ те арĕ,
Хурамкка, кăтра тăванăмсем!
Пĕр иккен чĕремĕр, юн тымарĕ,
Куçăртан куратăп: пĕр вĕсем.

Çак сăпайлăх, именӳллĕ кулă,
Тӳрĕлĕх, ĕçченлĕх — йăлт пĕрре.
Ăçтарах-ши силленсе вăл юлнă
Пĕрлехи сăпкамăр тĕнчере?

Кăнтăр-Тухăç еннелле вăл, ахăр:
Куçăрсем хĕвел сапаççĕ-çке.
Тĕплĕрех историçĕ калатăр,
Сăввăмри сăмахăм ман кĕске.

Эпĕ сирĕн тĕррĕре тĕпчетĕп:
Пирĕнни пекех-çке, йĕрлесен!
Вуласа пăхăпăр-ши тетĕп,
Мĕн каланă халăх тĕрлесе?

Куҫ умне тухаҫҫӗ ырӑ-ырӑ
Ӑстасем, ят-шывсӑр сар хӗрсем.
Пӳрнисем мӗнле-ши! Арфа, лира
Каламан-ши чӗпӗтсе вӗсем?

Мӗнешкел илемлӗхе ҫитернӗ
Китайран, Египетран, таҫтан...
Ҫын чунне ҫав тӗрӗсем витернӗ
Чи хӑватлӑ музыкӑпа тан.

Эп куратӑп: ни Дунай, ни Атӑл
Ҫав ӑсталӑха улӑштарман...
Хӑнана пырсамӑр, эпир хапӑл
Сире пӗтӗм уҫӑ кӑмӑлтан!

## ПЛОВДИВ

Тримонциум тенӗ авал — Виҫ Тӗме.
Ҫуртсен тӑррине пултарап тӑм теме.

Эппин — черепица... Пӑхап аяла:
Илемлӗ! Пурин кӑмӑлне каймалла.

Ҫӳлтен роза пек курӑнаҫҫӗ ҫуртсем:
Ҫеҫки — хӗрлӗ тӑм, ҫулҫисем-сачӗсем.

Паха! Пуҫ хумашкӑн эп хатӗр кунта.
Анчах хунӑ-ха маншӑн та, саншӑн та.

Пит йышлӑ ҫав пуҫ! Ав вӗсен ятӗнчен
Пӗри ҫӗкленет Бунарджик тӳпинчен.

Палланӑ пилотка та плащ, автомат...
Ҫар-йышӑм, эс мар-и? Эс тивӗҫ тӑма!

Ҫав чул салтака, Раҫҫее тав туса,
А л ҫ ш а тет халӑхӗ, чӗррӗн курса.
Пӑхать чул салтак, тинкерет инҫете,
Чӗри талтлатни ман пата халь ҫитет.

Вӑл ман чӗрене хӑвӑртлать,васкатать:
«Ӗҫле, ӗлкӗр, ту! Тем пулас-ха тата...»

Ҫапла туйӑнать ҫав чӗре хистени,
Тен, ку илтӗнет-тӗр сехет ҫӳрени?

Ав тепӗр тӗме, унта пур мӑн сехет,
Ӑна халь те халӑх Сехет Тӳпи тет.

Тата теприне — виҫҫӗмӗш тӗмине —
Джендем тенӗ тӗрӗк пуҫ пулнӑ чухне.

Патне пырайми, ҫӗнтерсе илейми —
Ҫавна пӗлтерет ячӗпе ҫав тӗми.

Пит тӗрӗс сӑмах: аслӑ пӗр кил-йышра
Никам та ҫӗнеймӗ халь тин пӑлхара!

## НАРСПИ ПӐЛХАР КИЛНЕ КӖРЕТ

*«Нарспие» пӑлхарла куҫарнӑ*
*Николай Марангозова*

Ӗлӗкхи чӑваш йӑлипе
Пирӗн кин ҫапла кӗрет киле:

Чи малтан — хунямӑшне сурпан,
Ҫӗн кӗпе, хуняшшӗне унтан —

Кӗпе пӳлӗх пир, пӑяхӑшне —
Кӗпе пӳлӗх, аслӑ инкӗшне —

Чӗр ҫитти, сурпан та сар тӗрри,
Хӗр-пултӑрӗсемшӗн — ал тутри.

Ывӑлсемшӗн пурҫӑн пиҫиххи —
Хурӑнташлӑхӑн тӗвви-ҫыххи...

Мӗн пулман-ши пирӗн йӑлара!
Пин ҫулхи аваллӑх палӑрать.

Сирӗн те ҫавах ӗнтӗ, ҫавах,
Ыр-усалӗ пурте пур, паллах.

Пӑлхарла-и вӑл е чӑвашла, —
Тен, пире нумайӑш кулӑшла.

Чĕрĕлеймĕ авалхи халь тин.
Анчах халăх мĕнпе те пулин

Тытăнса тăнах тесе калар,
Ăнланар та пĕр-пĕрне паллар.

Ак Нарспи пăлхар килне кĕрет,
Хапăл тăвăрсам чиперскере!

Ĕлĕкхи пĕркенчĕк айĕнчен
Хăтăлса вăл курчĕ çут тĕнче,

Саламатлă ӳсĕр-тавраша
Питлесе чун кӳртрĕ чăваша.

Тĕнчери пур аппăш-йăмăкне
Йыхăрса вăл салтрĕ сурпанне.

Вутăн-хĕмĕн çиçрĕ пичĕ ун,
Ăна хирĕç тăчĕ хура юн.

Çĕнеймерĕ икĕ савнă чун...
Аса ил те çун, чĕреçĕм, çун!

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕмĕре
Çитерме пулмарĕ тĕттĕмре.

Мĕн каласси пур ĕлĕкхине:
Сирĕн те çаплахчĕ ун чухне.

Савăнсах паян Нарспи аппа
Дунай урлă каçрĕ ак манпа;

Тайăлса пăлхар килне кĕрет,
Хапăл тăвăрах чиперскере!

## БАЙ НИКОЛАЙ

Измаил таврашĕнчен
Килсе лекнĕ вăл кунта
Çирĕм пĕр çулхи иккен,
Халь пырать хăй утмăлта.

Эрнехи сухалласкер,
Сар тĕс хутăш шуррипе.
Куçĕсем шыв пек сенкер,
Хура тинĕс шывĕ пек.

Ярханах та имшеркке,
Курăнать хĕрес кантри.
Кивĕ улăм шĕлепке, —
Шăрăх-çке-ха çав тери.

Сăмахран сăмах пырать, —
Юрататъ вăл юмаха.
Ашшĕ Украинăра
Халь те пурăнать тет-ха;

Иртнĕ тет ĕнтĕ çĕртен,
Пит курасшăн тет ăна.
Шăллĕ — капитан иккен,
Килсе кайнă хăнана.

Хăй вăл пулăç. Эртелре.
Çĕр ĕçкунĕ ун кăçал.
Сахалрах та-ха... Кĕре
Каяканччĕ ĕç кал-кал...

Халь ак кимĕ çӳретет
Ропотамо шывĕнче,
Туристсемшĕн хĕпĕртет:
Ĕç çитет хура кĕрччен.

«Ят-и? Минько хунă та
(Асатте çӳренĕ ят), —
Николай ĕнтĕ кунта,
Казаченко — хушамат.

Пурте хутăш ку чухне!
Пăлхарсем ватăраха
«Бай» хушаççĕ ят çумне,
Арăм та пăлхар та-ха...»

Николай. Бай Николай...
Сарлака кун-çул сакки!
Епле лекнĕ, мĕнле май —
Тĕпчемерĕм ун пирки.

Тен, çакланнă вăл çарпа,
Темиçемĕш штык пулса,
Тен, вăл урăх сăлтавпа
Килнĕ пулĕ уйрăлса.

Мĕн ыйтас халь тин унран?
Хут пĕлни ун питех мар,
Хĕрĕх çул лере пулман,
Янă вăл кунта тымар...

Анчах ак украинла
Юрласа яратпăр та, —
Унăн пичĕ çамрăкла
Хĕрелсе каять пăртак.

Вăл манман иккен, пĕлет,
Вăл юрлать хуллен, çинçен
Дорошенкăсемпеле
Сагайдачнăйсем çинчен.

Хушăран пăрса пуçне,
Вăл, кĕсмен сулаканскер,
Çаннипе шăлать куçне,
Куçĕ ун — тата сенкер!..

## КĔРЕКЕРЕ

*Лиана Даскаловăна*

Ĕмĕр манаймăп:
Йышлăччĕ халăх,
Пултăм хăна эп
Хам асăнмалăх.
Тăкăс ларатпăр,
Пурте хавасчĕ.
Сирĕн сăмахăр,
Пирĕн тăнласчĕ.
«Наши чуваши,
Бу́лгари — ваши!» —
Терĕр сасартăк
Йăл кулса эсĕр,
Тытрăр курка та
Ялт çеç çĕклерĕр.

Купăс каланăн
Чунăм ҫӗкленчӗ.
Пин ҫул хупланӑ,
Сирӗл, пӗркенчӗк!
Шур Шупашкарăн
Уҫă сасси те,
Ян! кай пăлхаршăн,
Илт пур касси те:
Эпӗр халь — сирӗн,
Эсӗр халь — пирӗн!

## «ЫЛТĂН ХĂЙĂР»

Ăшă ҫил ҫупăрлать
«Ылтăн хăйăр» пляжа,
Хăна кил ҫывăрать,
Ыйхă ҫук чăваша.

Аякри ҫӗрӗм мар
Аса килчӗ мана,
Тунсăх мар ҫывăрма
Кансӗрлет пӗр кана.

Эп пăлхар ҫӗршывне
Юратап чунтанах,
Ăнланать мӗншӗнне
Ман тус-йыш тахҫанах.

Хамăр Атăл ҫинче
Тӗрлӗ шухăш килсен,
Ӗмӗтре пит инҫе
Эп ӳкеттӗм ҫитсе.

Эп Марица умне
Вӗҫнӗ яш чунпалан,
Атăлтан ун хумне
Янă ăшă салам.

Ҫăлтăрсем тӳпере
Пирӗнни евӗрлех,
Туслăхри кӗпере
Эп хывасшăн пӗрле.

Тимӗртен, хурҫӑран
Ҫирӗп пултӑр кӗпер.
Чӗререн те чунран
Халь ӑна чӗнтӗрлер...

«Ылтӑн хӑйӑр» ҫунать
Ҫӑлтӑрсен ҫутипе.
Юратсассӑн — чуна
Йӑпатаймӑн нимпе.

Кӑнтӑрти илеме
Ытарма хал ҫукран
Хыврӑм ҫак кӗввӗме
Пӑлхарсемшӗн паян.

## ВАРНА ЮРРИ

Варлӑ хуламччӗ эс, Варна,
Килтӗм каллех юратса.
Эпӗ кунта тем хӑварнӑ,
Тупӑп-ши халь шыраса?

Е маякпа илӗртетӗн,
Е эс чӗнетӗн хумпа,
Е куҫӑмран тинкеретӗн
Куҫ хӳринчи куллупа.

Ав пӗр балкон. Йӑлтӑр ҫутӑ
Шурӑ чаршав хыҫӗнче.
Халь те ҫавах-и вӑл, ют-и?
Сивӗннӗ-шим хальхинче?

Ман чунӑма пӑхӑнтарнӑ
Ҫамрӑк пике, тен, кулать...
Варлӑ хуламччӗ эс, Варна,
Халь те эс варлӑ пулах!

## МАН ХӐРАХӐМ

Эп ташӑ ташлама тӑмарӑм:
Хӗре такӑнтарма ҫук тивӗҫ.
Манран инҫех те мар, сӑнарӑм,
Пӗччен ларса юлать пӗр нимӗҫ.

Ма ташлас мар ҫав вӑй питтийӗн?..
Тӑрса утатпӑр харӑс иккӗн.
Вӑл пӑхрӗ манӑн урана,
Эп пӑхрӑм унӑн урине.
Пӗр сассӑр култӑмӑр кӑна.
Эпир ташланӑ хамрӑнне...

## ЁНЧӖ

Пӗчӗкҫеҫҫӗ нимӗҫ хӗрачи
Ёнчӗ рак хуранӗ пуҫтарать.
Йӑлтӑр-ялтӑр хӳхӗм пӗр ӗнчи
Хумпала тинӗселле тарать.

Именсе тӑран хӗрачана
Эп илсе паратӑп ҫав ӗнче.
Нимӗҫле вӑл тав тӑвать мана...
Ан уйӑртӑрах пире тӗнче!

## СЫВӐ ПУЛ, БОЛГАРИ!

Мӗнле ту-сӑрт урлӑ
Ывӑтмарӗ пурнӑҫ!
Пулчӗ терт те хурлӑх,
Телейне те курнӑ.

Мӗнле тинӗс хумӗ
Тӑварне сапмарӗ?
Чунӑм айӑп тумӗ:
Витӗмлӗ тӑварӗ.

Мӗн калас кун хыҫҫӑн?
Юлашки пулминччӗ...
Куҫӑм халь те выҫӑ,
Ытларах куринччӗ.

Хамшӑн мар курасшӑн, —
Мӗн мана пит кирлӗ!
Йӑхӑма каласшӑн:
Пӑх эс урлӑ-пирлӗ.

Эп курни пулсассӑн,
Эс те кур та сисчӗ.
Канӑҫсӑр ман сассӑм —
Самана сассиччӗ...

Ах, чипер Болгари!
Эп ӑна пӗлменччӗ.
Чунӑм мӗн каларӗ —
Ҫавӑ тӗвӗленчӗ.

Тӗрлӗрен тӗс карттӑн,
Хӳхӗм ҫӗр нумай-мӗн.
Ӗмӗр иккӗ мар та —
Ҫитесси пулаймӗ.

Анчах ӗмӗт ҫӳллӗ,
Яланах ҫунатлӑ.
Поэта хӑй пӳлӗх
Ҫаплалла ҫуратнӑ.

Ҫунтӑр чун кӑварӗ,
Сасӑ тухтӑр уҫҫӑн...
Сывӑ пул, Болгари,
Манӑн юратуҫӑм!

1959—1960

# КАВКАЗ СĂВВИСЕМ

## МАН КИЛЕС...

Çурçĕрте çуралăпин те —
Кăнтăр юнĕ чĕремре.
Кавказа каллех эп килтĕм,
Тен, килеймĕп ӳлĕмрен.

Юлашки пулмарĕ-ши? — теп,
Мар пулсассăн тав вара!
Çул тесессĕн — вăйăм çитĕ
Çӳреме йĕри-тавра.

Кашни халăхăн юмахĕ
Чаплă хăй тĕррипеле.
Пур ун хăйĕн урхамахĕ,
Ĕмĕт учĕ темелле.

Çав ута шанса упранĕ
Чĕрери таса кăвар.
Грузинсен çав ут — Мерани,
Казахсен çав ут — Тулпар.

Халăхне кура ун ячĕ,
Ман мĕнле чĕнес ăна?
Пирĕн халăх утлантарчĕ
Çилçунат çине мана.

Эп çавна кунта юрттартăм
Аслă Атăл хĕрринчен.
Хир, вăрман, сăрт-ту... Чуптартăм
Çак Кавказ çывхаринчен.

Курăнать Эльбрус, вăл йĕкĕр:
Икĕ паттăр тан тăрса
Ик курка çĕкленĕ евĕр
Куртăм эпĕ Эльбруса.

Чанк! — шакканă та пĕр авăк
Пĕр-пĕрне çав ик курка —
Шăнса ларнă пек сасартăк,
Хытарса шур кăпăка.

Ялкăшать çав кăпăк çуттăн:
Пăхнăçемĕн тӳпене
Шав ĕçес килсе эс çунăн,
Ытараймăн ĕмĕрне...

Çилçунатăма эп чартăм,
Йĕнерне салтса илес...
Çăкăнса салам кустартăм.
Ме, Кавказăм! Ман килес...

## КАБАРДИН КОЛХОЗĔНЧИ УЯВ

*Алим Кешокова*

Кабардин çыннисенчен
Илтрĕм эп çакна малтан:
«Пур Кавказ сăмахĕнчен
Чи асли вăл т а м а д а.

«Турăпа пĕр тан» тени
Вăл пулать кабардинла.
Ан васка, хăна çынни,
Пирĕн хамăрăн йăла...»

Мĕн тăвайăн-ха вара?
Кĕреке турри хушсан,
Тепĕр тапхăр хăнара
Пулмаллах пулать пуль сан.

Шогенцуков колхозне
Илсе кайрĕçĕ пире.
Тав курки çине-çине
Чанклатать кĕрекере.

Чăн Кавказăн ĕçки пек
Ăслă ĕçкĕ çук ниçта.
Юрă-сăвă — йĕркипе..
Ак ташша тăрать ăста.

Йĕкĕт мар, таçтан сăртран
Ăмăрт кайăк аннă пек.
Хăйне мăшăр вăл тупсан,
Яш! — тĕллерĕ куçĕпе.

Эх, чуптарчĕ-çке пĕрре
Пăрчăкан пекех хĕре!
Ик çунатлă пашликре
Вăштăр-вăштăр çил вĕрет...

Ак каллех тулать эрех
Шӳтпе хутăш черккене.
Ваттисем кĕрекере
Тем пуплеççĕ хăйсенне.

Пĕр пике баян тытать,
Лăплансассăн çын пăртак,
Хăй калать те хăй юрлать,
Илтĕнет: «Ман Кабарда!..»

Тăрса юлчĕ асăмра
Хура куçĕ кайăкла,
Çын çине пăхмасăрах,
Тинкерни аяккалла.

Чун çĕкленчĕ савăнса,
Çав юрра вăл юрласан.
Тепĕр хут çамрăкланса,
Эп калатăп: пурте сан!

Пурте сан, чипер пике:
Кабарду та хăвăнах,
Балкарсем те ху пекех,
Чеченсем те тăванах.

Аслă пĕр кил-йыш эпир
Адыгея, Карачай,
Калмăк савнă çеçенхир,
Чăваш çĕрĕ — йăлт пĕр шай.

Пурте сан, ют мар халь тин,
Пур Раççей те. Ĕмĕре!
Хытăрах юрла эппин,
Мухтаса тăван çĕре!

## ТЕМРЮК МАРЙИ

Картина куртăм эпĕ Нальчикра:
Иван патшан пĕр арăмĕ выртать,
Тин çывăрса кайнăн, тупăкра...
Хаяр патша салху пăхса тăрать.

Ун çывăх çыннисем, пăшăлтатса,
Тем пытараççĕ пек куçĕсенче,
Темрюк Марйи вилнишĕн савăнса...
Эп шухăша каяп Раççей çинчен...

Епле нумай пуçтарнă хăй çумне
Вăрçса илсе е ирĕклĕн Раççей!
Мĕн тĕрлĕ юн лекмен-ши ун юнне?
Йăлтах пĕрле: ĕç, чап, хĕн-хур, телей...

Раççей çынни пулса, çакна чухлап:
Эп вырăсла вăренекен çеç мар, —
Ун сăмахне еткер тесе шутлап,
Çав мул — пĕрле ӳстернĕ пархатар;
Çав пĕрлехи чĕлхемĕр мĕнпеле
Хăватлине пит лайăх эп пĕлеп...

## ТУ КАЧАКИ ПУТЕКĔ

*Леонид Соболева*

Ту хушшинче — тин лартнă палăк:
Балкари сăвăçи Кязим.
Ирех унта васкарĕ халăх:
Уçаççĕ тет... Курасшăн çын.

Сăрт-ту çĕрне сума сумашкăн
Эпир, кунти хăна-вĕрле,
Чунтан-вартан салам каласшăн
Утатпăр туссемпе пĕрле.

Йӑлт хатӗр: вырӑсӗ, балкарӗ,
Тутарӗ, калмӑкӗ, мари...
Бурячӗ тейӗпӗр, аварӗ...
Шет, Руҫ чӗлхисенчен ҫурри!

Ак уҫрӗҫ палӑкне. Кӑшт хурлӑн,
Пит ӑслӑн сӑвӑҫ пӑхнӑ пек.
Хӑй ҫӗлӗкпе. Пур мӑлатук ун:
Вӑл тимӗрҫ пулнӑ ӗҫӗпе.

Сӑмах калаҫҫӗ, ал ҫупаҫҫӗ...
Кӗҫех Мускав ҫыравҫине
Ту ҫыннисем ак тыттараҫҫӗ
Ту качаки путеккине.

Тӑлланӑскер, чӗрех, мӑнтарӑн,
Хӑравҫӑ та ачаш... хитре!
Тапкаланать тӑлла салтасшӑн...
Епле пусан ҫак чипере?!

Ҫыравҫӑ путеке тытайрӗ —
Сасартӑк именсе каять.
Куҫран пӑхса вӑл ачашларӗ,
Унтан, йӑл кулчӗ те калать:

«Кязим вӑл ирӗклӗхшӗн ҫуннӑ.
Туссем! Сума сӑвар ӑна:
Ан татӑлтӑр ҫак чӗрӗ чунӑн
Кун-ҫулӗ халӗ... Пурӑнах!»

Вӗҫтерчӗ ҫамрӑк качакамӑр
Ҫӳлтен ҫӳле ту ҫинелле.
Куҫран ҫухаличчен пӑхатпӑр
Темле таса ӗмӗтпеле.

Ват ҫын пуҫне сулларӗ, хушрӗ
Вӑрахӑн хӑйӗн сӑмахне:
«Ҫак вырӑс питӗ ӑслӑ турӗ,
Чухлать вӑл ту ҫыннин чунне...»

Вара каларӗ вӑл пӗр тапхӑр
Раҫҫей патши ту хушшинчен
Сӑнчӑрласа ӑсатнӑ паттӑр,
Хӑюллӑ этемсем ҫинчен.

Сăнарăм эп: куçран пăхсассăн
Чеченсемпе ингушсене,
Патша çинчен çеç мар шутлассăн,
Вăл курчĕ пек кӳршисене...

Йалт пурăнать: вăрман, ту-чакăл...
Тен, леш путек хăй пĕлнĕ пек
Аслашшĕн сукмакне шырать вăл —
Шыв сукмакне — ăш хыпнипе...

## КАЙСЫН КУЛИЕВ ПАТĔНЧЕ

Каçчĕ. Тăпăр-тăпăр
Ут ури сасси...
Ту сукмакĕ тăвăр,
Хĕн хăталасси.

Кам унта? Мĕн унăн
Çакă тĕттĕм çĕр?
Каччă мар-и хунă
Йĕнер урлă хĕр?

Е йĕрсе юрланă
Ту сăвăçисен
Музи ут утланнă,
Вĕçтерет пĕччен?

Ут çилхи вĕçет-тĕр,
Чарăну çуках.
Кĕçенет пĕлсе-тĕр
Манăн урхамах.

Ĕнтĕ çитрĕ пулĕ
Вăхăт ăсанма.
Ăшă кăмăл юлĕ
Тантăш-тусăма.

Тусăм! Туслăх çук-тăр
Пирĕннипе тан.
Çил-и, юр-и, — çунтăр
Вучаху ялан.

Ырă ятлă пултăр
Маккă мăшăру,
Алиму ыр куртăр,
Савнă Эльдару...

Пурăнар-ха! Пирĕн
Хĕрлĕ-ха чĕре.
Хăнана, тен, пырăн?
Савăнтар пĕрре!

...Ни çимест тек утă,
Ни ĕçмест шывне —
Кукалет çеç утăм,
Пĕлтĕм мĕншĕнне.

Йыхăрать çула вăл:
Тус нумай халь ман...
Çуталать ту-чакăл,
Сывă пул, тăван!

## ÇУРÇĔР ОСЕТИРЕ

### 1

Эп кирек ăçта пулсан та
Шыраса хам телее,
Мĕнешкел çĕршыв курсан та,
Манас çук Осетие...

Нальчикран Орджоникидзе
Хулине çитнĕ-çитмен
Ман пулмашкăн тӳрĕ килчĕ
Уявра туссемпелен.

Карапран бала эп лекрĕм:
Хетагуров çĕр çулта.
Темиçе чĕлхе итлерĕм,
Тĕрлĕрен янрать Коста.

Эрменле те, грузинла та,
Вырăсла та илтĕнет...
«Çук ютсем кунта, ăнлантăм», —
Тенĕ пек пăхать поэт.

Халăхсен пĕр тан хисепĕ
Ăшăтать ун кăмăлне...
Ак тăрса вулатăп эпĕ
Чăвашла ун «Пехилне».

**2**

Каç вĕçленчĕ. Ушкăн-ушкăн
Çын çаплах каймасть килне.
Ал пусмах Петро Дорошкăн
Тиврĕ хăй кĕнекине.

Абашидзене ямаççĕ:
Пĕр-пĕрне тĕрте-тĕрте,
«Ал пуссамăр!» — тархаслаççĕ,
Парăнать Ираклий те.

Пусмапа Гамзат Расулĕ
Аяла анать кăна —
«Автоматçăсем» тем чухлĕн
Сырса илчĕç те ăна.

Студентсем иккен тĕллеççĕ
«Ĕмĕрлĕх» перисемпе:
«Хут çине пулин те, — теççĕ, —
Алă пусăр хăвăр пек...»

Чи телейлисен, куратăр,
Кĕнеки те пур иккен...
Сăвă! Кам ăна хурлатăр?
Вăл килет сăвăçинчен.

**3**

Кĕреке пит чаплă пулчĕ.
Мĕн ĕçсе мĕн çининчен
Пĕр йăла асра ман юлчĕ,
Манас çук эп ун çинчен.

Çынсемпе пĕрле пĕр тапхăр
Куркасем шакка-шакка
Ларнă чух курах каятпăр
Ăшаланă ик така.

Ах, мăйракисем епле-мĕн!
Пысăк кĕмĕл тирĕкпе
Вĕсене йăтса икшерĕн
Иртрĕç халăх умĕпе.

Пур хăнасене кăтартрĕç,
Каскаларĕç кирлĕ май,
Кашнине вара тыттарчĕç
Шăмă авăрлă какай.

Пĕр пуçне, курап, тирпейлĕн
Хурса пачĕç чи ватта.
Вăл — Созанов асатте-мĕн,
Хальлĕхе çĕр саккăрта.

**4**

Эп ĕçке-çике сăнарăм,
Пăхрăм çав ват çын çине:
Кавказла тумланнă... Ларнă
Костапа, тен, яш чухне...

Хура тум, пашликĕ шурă,
Кĕмĕл йĕнĕллĕ кинжал...
Ман ума аваллăх тухрĕ,
Ун пекки ĕнтĕ сахал.

Мăйрака йăтан çав ваттăн
Тав сăмахĕ тухиччен
Ăнланмашкăн тăрăшатăн:
— Çак хевте ăçтан-ши? — тен.

Вăл тăрать темле асамлă
Чăнкă сăрт хĕрринчи пек...
Эй, Кавказ! Санпа тăванлă
Пулнă эпĕ ĕлĕкех.

Кăтартсамччĕ ту-сăрт урлă
Яшлăха эс, ырă ту.
Эс — ман савăнăç та хурлăх,
Эс — пĕрремĕш юрату...

**5**

Пĕтĕм халăхăн уявĕ
Шав шавларĕ каç та ир.
Ман йĕре усрать пуль-ха вăл —
Тăвăр хушăк Алагир.

...Аяла пăхма хăймасăр,
Шанса пынă машинпа
Хăпарать çапла вăл — харсăр,
Тем те курнă ман шăпа.

Маншăн, тикĕс çĕр çыннишĕн,
Сăрт хăрушă пекчĕ те, —
Пĕтĕм шикĕм, чирĕм-нишĕм
Иртрĕ акă çул-йĕрте.

Ĕлĕк «Турă, хăтарсамччĕ!»
Тенĕ чăнкă вырăна
Самана халь пăхăнтарчĕ
Руль тытса пыракана.

Тĕтрене куçпа шăтарнăн
Кайăк пек пăхать çав çын...
Çуралмах кунта пултарнă
Ăмăрт чунлă осетин!

**6**

Акă ĕнтĕ Нар, ун ялĕ:
Сăрт, пашнĕ шыв хĕрринче...
Мăйрака, сунар пăшалĕ
Пӳрчĕн чул стени çинче.

Çакăнса тăрать хуранĕ,
Хăйчикки пур, пур сăпка.
Амăш халь кăна юрланăн
Ывăлне лăпка-лăпка...

Хĕл каçма унтах-мĕн хупнă
Выльăхне те юнашар.
Ту çыннин кун-çулĕ пулнă
Хамăрлах вăл — çăмăл мар.

Хура пӳрт ăшне сып-сывă
Уçă сывлăш кĕнĕ пек
Халăхне çĕклет çак ывăл
Ĕмĕтлĕ сăввисемпе...

Н а р. Пирте те пур сăмахĕ:
Нар пек хĕрлĕ! Мĕн вăл н а р?
«Вут вăл», — терĕç. Тен, чăнах-и?
Сăвăç — хăй те шĕл кăвар!

**7**

Тен, санаураймăп урăх,
Тен, кураймăп çак сăрта.
Сывлăх пултăр, Хетагуров,
Леван ывăлĕ Коста!

Инçетрен кунта эп килтĕм
Салампа, тайма пуçпа.
Поэтсен, мĕнле пулин те,
Пĕр пекрех тӳпе-шăпа.

Чăнлăхран ниçта тармасăр,
Ăшăтмашкăн çын чунне
Юнпала эпир çыратпăр,
Ку лармасть пире йӳне...

Тĕтрере хĕвел курасчĕ,
Çĕрĕн тимĕр-тăмăрне
Магнит туйнă пек — туясчĕ
Чĕрепе çын чĕрине.

Пĕр хĕлхем пулсассăн çыннăн —
Çулăм çуттăр ĕмĕтре!..
Сывă пултăр осетинăн
Прометейĕ ĕмĕре!

## ФАТИМĂ

Хĕскĕч пек пире хĕстерчĕ
Ĕмĕрхи Дарьялĕ.
Çул хавасĕ те çул терчĕ
Час пĕтеймĕ халĕ.

Ту каççи инçе-ха пирĕн.
Кулă, шўт вылярĕ.
Çавăн чух пĕр ят эп илтрĕм,
Çав асран каймарĕ.

Вăл хĕр ячĕччĕ: Фатимă,
Хăй çапла пĕлтерчĕ.
Ашшĕ унăн — осетин-мĕн,
Амăш — Грузиренччĕ.

Хĕрĕн пĕтĕм пичĕ-куçĕ,
Хурлăрах сăпачĕ
Ман ума халь чĕррĕн, уççăн
Тепĕр сăн кăларчĕ...

Чарăнатпăр. Уйрăлатпăр.
Сим-эрех ас тиврĕç.
Ман сăрт урлă каçмаллах-тăр,
Хĕр — юлмашкăн тивĕç.

Ăсатса кăна вăл ячĕ
Ман чуна пĕлмесĕр.
Чи кайран вăл алă пачĕ
Чăрр пăхса, чĕнмесĕр...

Ах, Фатимă! Тем калассăн
Куç шăрçи ялтрарĕ...
Кăшт сывларĕ те хĕр ассăн,
Ним те шарламарĕ...

## КАЗБЕК

Тухрĕ ман куç умне
Чăнкă, çўллĕ Казбекĕн
Ту çыннин çĕлĕкне
Пусса лартнă тĕпекĕ.

Ун çинчен темĕн те
Эпĕ илтнĕ, вуланă;
Хăш чухне хам çĕрте
Хăрушла шухăшланă.

Çывăхран тинкерсен,
Пит йăваш вăл хальхаççăн.
Пахчаççем, кĕтӳççем
Ăна сывлăх сунаççĕ.

Вăл — килте. Юнашар
Пĕр поручик тăратчĕ,
Куçĕнчи шĕл кăвар
Хурланса ялтăратчĕ...

## АЛЬП ТУЙИЛЛĔ ÇЫН

*Николай Тихонова*

Тен, ку ман ăшра кăначчĕ,
Тен, эп куртăм тĕлĕкре:
Юр тӳпеллĕ ту сăнланчĕ
Кăвакраххăн инçетре.

Эп ун патнелле утатăп
Хĕвелтухăçĕ енчен...
Альп туйиллĕ çын куратăп
Хамăн йывăр çул çинче.

Те кăшт сывлăш çавăрать вăл
Илĕм-тилĕм ирпеле,
Те пăхса кăна тăрать вăл
Тĕлĕнсе мал еннелле?

Сахал мар çав çыннăн куçĕ
Курнă тул çутăлнине.
Кашни ту-сăрт шурăмпуçĕ
Урăхла юлать асне.

Сарлака янахлă, харсăр,
Çирĕпскер вăл чунĕпе,
Илеме ытараймасăр
Тинкерет куç пăвнă пек.

Темле шав çите пуçларĕ, —
Вăранать пулас тĕнче.
Ак хĕвел çути вылярĕ
Çӳç çинче те юр çинче.

Çуталать сăрт-ту хысакĕ,
Аялтан сукмак килет...
Ту тӳпи çине çын акă
Йăл кулса пăхса илет.

Çӳлелле! Миçе сăрт урлă
Каçмалла-ши-ха тата?..
Ту тӳпи шап-шурă юрлă —
Унăн пуçĕ пек — малта.

## ТАМАРА КЕРМЕНĔ УМĔНЧЕ

Кунта-мĕн Тамара керменĕ:
Пăшал кĕпçи пек ун тăрри,
Тин çеç тĕллесе, тен, вăл пенĕ, —
Çунать шурă пĕлĕт хĕрри...
Шăраннă кунта, кĕвĕленнĕ
Малашлăхшăн Грузи юрри.

Асра çĕнĕрен амаланчĕ
Тахçан çунса сӳннĕ кил-вут.
Ун чух çут тĕнче ансатрахчĕ,
Вăлах — кăткăсрахчĕ çĕр хут:
Тусем хыçĕнчех пурăнатчĕ
Хăрушă, хаяр çичĕ ют...

...Палланă пек çак хысака эп:
Çап-çамрăк хĕр тантăшпала
Каллех сукмакпа акă кайăп
Рюкзак çĕклесе тăвалла...
Анчах — Терĕк, ту, ăмăрткайăк —
Йăлт халь курăнать урăхла.

Грузин чĕлхипе аппалантăм.
Урокĕ çаплаччĕ ун чух:
Сăмах вĕренме эп тăнлаттăм, —
Хитре сăвăсем темĕн чул.
Савни çумра чух, халь ăнлантăм,
Кирлех те пулман тăлмачу...

Паян машинран эпĕ тухрăм
Хам çамрăклăха астума.

Сасартăк сăлтавсăр пуç усрăм,
Тен, пур та сăлтавĕ усма...
Каяр малалла. Çавăр, тусăм!
Кунта пултараймăп юлма...

## ПАСАНАУРИРИ УПА ÇУРИ

Ту-сăрт урлă авалхи çар çулĕ,
«Грузи çарĕн çулĕ» ячĕ ун.
Ман асра вăл акă мĕнпе юлĕ
Çак кĕрен вăрманлă кĕрхи кун.

Пĕчĕк чарăну Пасанаури,
Кăшт шашлык çыртасшăн-ха эпир.
Антăмăр. Шофер та алă çурĕ.
Çӳçентерчĕ уçă, сулхăн ир.

Пĕлекен çынсем темскер шыраççĕ,
Пур иккен кунта пĕр çак йăла:
Читлĕхре упа çури усраççĕ,
Ав тăрать вăл — хăмăр япала.

...Хĕрхенетĕп эп сана, пăхсассăн,
Канихвет кĕтен упа çури!
Хăш чухне эс ачаллах асатăн,
Хăш чухне хурланчăк çав тери.

Сан тавра çынсем кулса шавлаççĕ:
Уррисем те, хĕрĕнки те пур...
Хăшĕсем тем тупнă пек калаççĕ:
«Ха! Упа çури-çке! Кил-ха, кур!..»

Çул çӳрен этем кăшт йăпанасшăн,
Эс те уншăн кăсăк-çке ара.
Анчах темшĕн сан çине пăхмашкăн
Йывăр пек мана çак вăхăтра...

Çыннăн ĕмĕтне пĕлсенччĕ эсĕ,
Халь чĕвен тăран упа çури!
Çын вăл хăй те — санпала пĕр несĕл,
Сан пекех пылакшăн ун чĕри.

Акă эп те юрлă ту-сăрт урлă,
Уямасăр кунĕ-сехетне,
Кустаратăп — пĕр хавас, пĕр хурлă —
Çитересшĕн чунăм ĕмĕтне.

Кура шывĕн леш енне каçсассăн
Мĕн мана кĕтет-ши çавăнта?
Шухăша кайса куçа хупсассăн
Пĕр мĕлкех курап кирек ăçта.

Ӳтлене пуçлать мĕлке вăраххăн:
Хĕвелпе хуралнă ик ури,
Хăмăр куçĕ — йăлт вара паллатăн...
Хулĕсем — çӳçенчĕк те вĕри...

Пурнăç кукăр-макăр. Шухăшларăм
Эп çапла, упа çури, паян:
Сан тирӳ çине, тен, çав хĕрарăм
Пусса иртĕ ӳлемрен тахçан...

Апла мар пулсан, туса тăратĕç
Чĕрĕ кĕлетке пек, тен, сана;
Пĕр-пĕр лампа аллуна тыттарĕç
Çутатмашкăн тĕттĕм пусмана.

Çавнашкал упа, эп ас тăватăп,
Пурччĕ пĕчĕк хăна килĕнче.
Çавăнпа хурланарах пăхатăп
Эп сана хаваслă çын çинче.

...Упана курса кăшт йăл кулсассăн
Савнипе куçран куçа пăхса,
Иккĕн вăрттăн пĕр кавар тăвассăн
Шарламасăр иртрĕмĕр утса.

Лампа тытнă хăмăркка упамăр
Кĕртсе ячĕ каччăпа хĕре...
Шур чаршавĕ шурă юр пек капăр —
Шав сулланчĕ пĕр чӳречере...

Тул енче магнолийĕн чечекĕ
Çурăлатчĕ шăппăн, анратса.

Илтнĕччĕ такам юрланă пек эп
«Джаник-джан!» текен çурма сасса.

Халь аса илеймĕп кĕввине те,
Час йăлтах шăпланĕ чун юрри...
Хĕрхенеп сана, пит хĕрхенетĕп,
Читлĕхри ачаш упа çури!

## ПУЛКАЛАТЬ ÇАК ПУРНĂÇРА...

Пулкалать çак пурнăçра-мĕн
Хамăртан килмен чухне:
Ни çыру, ни телеграмма
Ярaймастпăр пĕр-пĕрне.

Е тусна шăлса пуçтарĕ
Кутсăр-пуççăр çил-тăман,
Е хăвна шăпа чукмарĕ
Çитсе çапĕ çурăмран...

...Уйăрса пире ăсатрĕ
Пурнăç икĕ еннелле.
Çурмаран касайрĕ татрĕ
Сурпана вăл темелле.

Асăмра ялан усранчĕ
Хурлăн кулнă сăн-сăпат:
Куççульне чарма хăтланчĕ,
Çук, тумларĕ пат та пат...

Çул-йĕре темскер те пӳлчĕ:
Ту çинчен юрсем анни,
Урнă çил-тăвăл та пулчĕ...
Çаплаллаччĕ самани.

Анчах ак каллех куратăп
Эп тăванăн ту çĕрне,
Чунăмпа çунса шыратăп
Пĕрлехи кун-çул йĕрне.

## ÇĂКĂР, ЧĂКĂТ ТА ЭРЕХ

Виноград çĕршывĕ мар-и!
Ахальтен-им хальчченех
Илтĕнет кунта каларĕш*:
«Çăкăр, чăкăт та эрех».

«Пури, квели ди хвино» вăл,
Грузинла çапла янрать;
Темле ырă, ăшă кăмăл
Чĕрере вăл хăварать.

Сухаçпа кĕтӳç, пахчаçă
Янкăр çутă ирпеле
Хĕвеле пăхса мухтаççĕ
Тейĕн, виççĕшĕ пĕрле.

Çутçанталăка тав тунăн
Çав каларĕш ĕмĕрех
Юрă-сăвă пек вăл пулнă:
«Çăкăр, чăкăт та эрех!»

Виноград пылак сĕткенĕ
Сăрхăнтарнă чух кунта
Кĕрекеçĕ те ĕрченĕ —
Тĕлĕнтермĕш тамада.

Çак çĕршывăн перекечĕ
Ман сăвва та пĕр кана
Яш эрех пек ĕрĕхтерчĕ,
Тахçанах ку, тахçанах...

Çавăнпах ăшра, тен, манăн
Кăнтăрти кăвар çунать;
Çурçĕр енĕн çил-тăманĕ
Килĕшесшĕн мар чуна...

---

* Кунта «каларăш» сăмах вырăнлăрах пулма кирлĕ. (Кĕнекене хатĕрлекен асăрхаттарни.)

## САВНĂ ШЫВ-ШУР ХУРА ТИНĔС

Савнă шыв-шур Хура тинĕс,
Ма эс туртатăн мана?
Сăвăç чĕришĕн, эппин, эс
Халь те усран асамна.

Санăн хуму пулчĕ туслă
Çамрăк ман юррăмпалан.
Юррăм ун чух хăмăр куçлă,
Шурă пушмаклăччĕ ман.

Пурте пуçламăшчĕ маншăн:
Пурçăн пек кăпăк, сăрт-ту,
Тĕпсĕр сĕм авăр, ачашшăн
Чăрр! пăхакан юрату.

Ыткăнчĕ хум айăн-çийĕн,
Çапрĕ çитсе пĕр-пĕрне.
Палиашвили кĕввийĕн
Илтрĕм вĕсен сассине...

Иртрĕ кун-çул хум пек каскăн,
Вăхăт тупма çыранне.
«Çитĕ!» — тесе калаймастăн
Канăç пĕлмен чĕрене.

Халь те пымасть-ха пĕр тикĕс
Пурнăçăм шăппăн кăна...
Савнă шыв-шур Хура тинĕс,
Ма эс туртатăн мана?

## МТАЦМИНДА ÇИНЧЕ

Куркара хĕрлĕ роза ишетчĕ,
Çеçкисем хушшинче ылтăн пек
Цинандали тумламĕ çиçетчĕ
Сывлăмра хĕвел çуннăн ирпе.

Тутанса пăхнă пек — пĕчĕкçеççĕн
Эрехе эпир сыпрăмăр ак.

Пĕр-пĕрин куçĕнчен тинкерсессĕн
Ик курка та чӳхенчĕ пăртак.

Малтанхи тĕлпулуччĕ ку пирĕн.
Хăш чухне пĕрех çех пăхнинче
Курăнать çыннăн пĕтĕм чĕри-мĕн,
Эп пĕлменччĕ ăна çавăнччен.

Пулчĕ ку студентсен шавлă каçĕ.
Юр юрларĕç. Каларĕç зурна.
Кашнинех çул-йĕрсем йыхăраççĕ:
Вăхăт çитрĕ татма парăмна.

Çав хавас вăйă-кулă, çав роза,
Çав пин сăвăç мухтанă сăрт-ту —
Пурте пирĕнччĕ! Çукчĕ-ха проза,
Пĕтĕм Çĕр — пĕр пылак хăпарту.

Пурнăçа пит çӳлтен пăхнă эпĕр,
Астивсе малтанхи куркана.
Çăлтăр çутнă уяр тӳпе евĕр
Аялта сан хулу курăнать...

## МИНГРЕЛ ÇУЛĔСЕМ

Хăвăнтан тараймастăн, этем!
Тинĕс, ту, шăрăхпа эс анран;
Ăшă çумăр, мингрел çулĕсем —
Йăлт манра. Ĕмĕрех вăл манра.

Ак Зугдиди пире тĕл пулать.
Вакуна хĕвел сапрĕ шевле.
Чăматан йăтнă çын çăрхалать:
«Физкультура, мадам!» — тет шӳтле.

Эс кулатăн пăртак именсе
Ĕлкĕретĕн ун хыççăн аран.
Эс кĕтменччĕ «мадам» теессе,
Ку сăмах аякраччĕ санран.

Кайран çеç, Дадиани княçсен
Сăнĕсем умĕнче, музейре,
Ăнсăртран чавсупа тĕкĕнсен,
Чăмăртарăн алла эс пĕрре...

* * *

Музей, такамăн сăн-сăпачĕ,
Кинжалĕ — мĕнччĕ вăл пире!
Чăн пурнăç ытларах туртатчĕ,
Çĕр хут вăл пулнă туллирех.

Вăл пирĕн «çылăхлă» ӳт-тиршĕн
Кичем çăтмах хатĕрлемен:
Ĕçле те тăрăш ыранхишĕн,
Ан ӳпкеле, тем çитмесен...

Çеçенхирти пĕр урăм-сурăм
Аслатие илеп аса.
Ирпе унта çитсе эп тухрăм
Эс ĕçлекен МТСа.

Чукун çултан пĕр-икĕ çухрăм,
Лачкам пулса çумăрпала,
Чĕре хистенипе эп утрăм
Эс чĕннĕ пысăк мар яла.

Эп астăвап: тăм пӳрт пеккиччĕ...
Сан пĕчĕкçĕ пӳлĕмӳнте
Кăвар çинчи шашлык вĕриччĕ,
Шамхор ларатчĕ тĕпелте.

Ун чух мĕнпурĕ талонпаччĕ:
Чей-сахăрĕ, эрех, тапак,
Духансенчи вĕри апачĕ...
Пайтах çул иртрĕ унтанпа!

Çав кунсенче, ман тусăм, ыррăм,
Пуçларăм çĕнĕ ĕмĕре:
Сан умăнта эп ярса тытрăм
Пегас вĕçтернĕ чĕлпĕре.

* * *

Чĕлхене эп тунсăхларăм
Хам çĕршывăмран инçе:
Чăвашла çырма тапратрăм
Кăнтăрти çĕршыв çинчен.

Янкăр пĕлĕчĕ, сăрт-тăвĕ,
Çеçенхирĕ, аслати —
Йăлт пула пуçларĕ сăвă,
Пултăр, терĕм эп, ан тив...

Мĕн Пегасĕ! Санăн пурччĕ
«Пукане» текен лашу.
Вăл ун чух сан машинуччĕ,
Çавă пулчĕ пулăшу.

Пĕрре мар унпа çӳренĕ
Иккĕн пĕр йĕнерпеле,
Кӳлнипе те тĕрлеттернĕ
Вăл плантаци патнелле.

Çурăлайнă шурă мамăк
Эс татса илеттĕн те —
«Ак поэзи!» — теттĕн. Манмăп
Çавсене эп ĕмĕрте.

Хам çыратăп та çыратăп...
Тен, пĕрремĕш чăвашран
Чăвашла эп калаçатăп
Çавăн чух Кавказпалан.

Ăнланас тесе тăнлаттăн
Сăввăма чара-чара,
Куçарма çукне вулаттăн
Пĕтĕмпех эс куçăмра...

## ПĔЛТĔМ ЭП: ЭСĔ ÇУК ТĔНЧЕРЕ...

Пĕлтĕм эп: эсĕ çук тĕнчере.
Леш палланă духан хыпарларĕ.
Вăл аван астăвать-ха пире:
Пĕрлешӳ кĕреки унта мар-и
Кĕр кĕрлерĕ юлма ĕмĕре?

Саншăн эп хурлана-хурлана
Тайма пуçăн эрех тумлататăп.
Эс пĕлеттĕнччĕ ман йăлана:
Эп сана хамăрла асăнатăп,
Тин кăна çĕре хунăн хăвна...

«Ман чăваш!» — тетĕн эс, йăл кулса
Ĕлĕкхи евĕрлех пăртак хурлăн.
Лăпланатăн та — тем астуса,
Эс калатăн каллех, иккĕн юлнăн:
«Ман чăваш!..» Урăх çук нимле сас.

Çĕрĕпех эп илтеп сассуна,
Куçăма ирчченех хупаймастăп.
Шур кĕпеллĕ... шур роза çумна
Тирнĕ пек курăнатăн çак каç та...
Пысăк хурлăх хупларĕ чуна...
Грузи хĕрĕ, манаймăп сана!

## КАÇХИ ТБИЛИСИРЕ

Хурлăха манне кам сирĕ?
Урама тухса утам-ха.
Е чăнах та ватлăх çитрĕ?
Пуç тавра пăртак шутлам-ха...

Урамне аван паллатăп,
Шултраланнă ун платанĕ.
Пĕр ĕмĕтпеле пыратăп:
Тен, чĕрем пăртак лăпланĕ...

Ăнсăртран, тен, иртнĕ кунăн
Мĕлкине пулин те курăп.
Урăхла хула-мĕн, унăн
Сăн-сăпачĕ те халь урăх.

Çамкине чĕкеç илешнĕ
Лутра çурт ăçта вăл халĕ?
Гранитпа неон эрешлĕ
Мăн кермен кунта хăпарнă.

Хулара каçхи апатчĕ,
Ресторан ĕçлет мĕнпурĕ.
Саксафонĕ сасă пачĕ,
Грузинла юрлать чонгури.

Мăшăрсем йăл-йăл кулаççĕ,
Шăлĕсем юртан та шурă.

Савнипе савни пулас çав.
Чăрмантармăп эп: ыр курăр!

Хуп-хура пушмакĕ шĕвĕр,
Йĕмĕ ансăр каччисен-мĕн.
Çивĕт мар вĕсемшĕн шĕкĕр, —
Леш Брижжит Бардо тĕркемĕ.

Юрĕ! Хам та эп аташнă,
Ма кая юлас-ха яшăн?
Пур-и, çук-и — модăлашнă
Манăн тум, пушмак та ташă.

Чĕре çеç тасан сыхлантăр:
Суяна вăл ан усратăр,
Яшлăхра та, ватлăхра та
Эрешмен ăна ан картăр.

Ĕмĕрхи тасалăхпах-и,
Çав вутпах-и çиçтĕр халĕ
Савнисен ачаш сăмахĕ,
Грузинла вăл — г е н а ц в а л ĕ!

## МĂЙРАКА

Тус пыма хистерĕ:
Пултăм хăнара.
Тав курки çӳрерĕ
Кĕреке тавра.

Ни черкке, ни алтăр
Теме çук ăна:
Кĕмĕлленĕ капăр
Мăйрака кăна.

Ахаль мар пуль, терĕм,
Хăш-пĕр поэта
Мăйрака сенкеррĕн
Курăннă кунта*.

* Грузин поэчĕсен «Циспери канцеби» («Сенкер мăйракасем») яилă ушкăнĕ пулнă.

Юрататăп эпĕ
Грузи йăлине:
Поэтсен хисепĕ
Пысăк пулнине.

Сăввисем шăранчĕç,
Юрланать юрри.
Çуккисем асрахчĕ,
Пурăнать пурри.

Тициан Табидзе!
Сан сассу тек çук.
Ман аса халь килчĕ
Хурлă пурнăçу.

Минск хули тин мар-и
Туссемпе пире
Сăйласа чысларĕ
Пĕр кĕрекере?

Аслăрахчĕ эсĕ
Чĕрĕ чух манран.
Халĕ — ĕненес-и? —
Аслă эп санран.

Сăввусем пурнаççĕ...
Хам вилсен те эп
Çавнашкал пăртакçă
Пурăнасчĕ теп.

Пĕр хаваслăх манăн
Çакă пурнăçра:
Чунăма эп панă
Пĕтĕмпех юрра.

Чĕрене хускаттăр
Юрă тĕпĕпех,
Вара шалт! — пушаттăр
Çак мăйрака пек!

## ГРУЗИЕ

Грузи! Вăл хăех — поэзи:
Ун çĕршывĕ, тăвĕсем
Чĕрене таçтан чĕнеççĕ,
Калăн — чĕрĕ сăвăсем.
Ун чĕлхи... Çĕр мар, пиншер-тĕр
Çул илтет ăна тĕнче.
Унăн çырăвĕ хăй евĕр
Тĕрленет ĕмĕрсенче.

Грузи! Вăл Европа-Ази
Хушшинчи хитре пахча.
Пин çулсем ун кунĕ-каçĕ
Пулнă хĕç сасси анчах.
Пĕр-пĕрне тытсассăн алă
Ахаль мар пуль пит хĕрӳ
Сывлăх суннă çакă халăх:
— Гамарджобă! — Çĕнтерӳ!

Грузи — тутлă кукăль пулнă,
Пурте хапсăннă ăна.
Çав-çавах сыхланса юлнă,
Парăнман вăл тăшмана.
Каснă, вăтăрнă, туранă
Хан, султан, патша та шах...
Халăх вăрлăхĕ упраннă,
Вăл ĕрченĕ тăтăшах.

Грузи! «Вепхис ткаосани» —
«Тигр тирлĕ паттăр ар».
Ахаль мар çуралнă санăн
Çĕрӳнте ун пек сăнар.
Ĕçлесе, вăрçса та харсăр,
Тус туса ыр сунана,
Мĕскĕнле пуçна усмасăр
Çитрĕн эс ку тарана.

Грузи! Ирĕк Сакартвело!
Халăхсен шăпи пĕр тан:
Сан юрруччĕ «Оровелă»,
«Алăран каймиччĕ» ман.
Юрласа эпир ĕçленĕ

Пусармашкăн хĕн-хура,
Юрласах пĕрле çĕкленнĕ
Тĕп тумашкăн пусмăра.

Грузи! Ĕмĕрлĕх Кавказăн
Тӳпи урлă тинкереп:
Руставелие курсассăн, —
Эсĕ ĕмĕр чĕрĕ, — теп.
Ун ятне кăçал чыслатпăр
Санпала эпир пĕрле,
Чĕрене çырса хуратпăр
Пур йышши чĕлхепеле.

Грузи! Эс хăвах поэзи.
Санăн чаплă уявна
Çак сăмахăмсем вĕçеççĕ,
Тав туса пур халăхна.
Вăл мана тытса вуларĕ
Хăйĕн савнă чĕлхипе,
Çурçĕрти тусне чухларĕ
Тахçанах паллană пек.

Грузи! Ĕмĕр çапла пултăр
Пирĕн аслă çемьере.
Пĕр-пĕриншĕн кăмăл тултăр,
Туслăх пытăр ĕмĕре!
Шухăшпа эп хампа çумăн
Тăратап пур чăваша.
Пĕрлешсе калатпăр: — Пурăн!
Сакартвелăмăр ваша*!

## КАРАВАНĂН ÇУЛĔ ВĂРĂМ

*Мирза Фатали Ахундова*

Караванăн çулĕ вăрăм.
Тĕвесем каймашкăн хатĕр.
Тăр, ачам, вăран! Аннӳсĕр
Эс юлатăн Тавризра.

Аçупа аннӳ темскершĕн
Килĕштереймерĕç пулĕ,

* Грузин сăмахĕсем: гамарджоба — çĕнтерӳ. Сакартвело — Грузи, «Оровелă» — грузинсен ĕç юрри, ваша! — урра!

Ак каять Мамед Мăрсанăн
Хӳхĕм арăмĕ Нане.

Ывăл — çурт илемĕ, чапĕ,
Унпала çĕнелĕ несĕл.
Хăй çумне сана илмешкĕн
Шухăш татăклă аçун.

Мĕн тума аннӳ пултарĕ?
Хĕрĕн-арăмăн çук чунĕ, —
Магомет çапла каланă, —
Çук ун тивĕç те апла.

Килĕштереймерĕç иккĕш.
Эс, ăна-кăна пĕлмесĕр,
Çĕр хутах ыйха ислетнĕ,
Анчах ак кĕрет тĕве.

Караванăн çулĕ вăрăм...

— Тăр часрах! Нихçан та урăх
Аннӳне кураймăн эсĕ,
Пуçĕпех аннӳ каять-çке,
Асăнмалăх курса юл! —

Çаплалла сана вăратрĕç;
Ку — аçун пĕрремĕш хĕрĕ,
Малтанхи арăмĕнчен вăл,
Санăн пĕчĕкçĕ аппу.

Картишне чупса тухатăн:
Утланать аннӳ тĕве-мĕн,
Утланса ĕлкĕреймерĕ —
Ятăн тытрăн аркинчен.

Пĕр-пĕрне пăхса илейрĕр —
Макăрса-йĕрсе те ятăр.
Кăшт лăпланчĕ те хĕрарăм,
Пăхрĕ мăшăрĕ çине.

Лешĕн кăмăлĕ çемçелчĕ,
Пыр тĕпне темскер капланчĕ...
Аллипе сулларĕ те вăл,
«Юрĕ, — терĕ, — кайăрах!»

Караванăн çулĕ вăрăм,
Эс çӳлтен пăхса пыратăн.
Сан аннӳн хура пĕркенчĕк,
Сан шăпу та тĕттĕм-ха.

Нимĕн те пĕлместĕн эсĕ:
Темĕскер вăл вăрçă-харçă,
Тем çынна ютшăнтарать-ха —
Тĕн, чĕлхе е тĕрлĕ юн?

Чухлаймастăн эс: яланлăх
Аçунтан халь уйрăлатăн,
Анчах ху Азербайджаншăн
Пулăн ашшĕ пек кайран.

Ăнланмастăн-ха: çăтмах та,
Тамăк та çĕртех иккен вăл,
Çак хĕвел ăшши-çути те
Çынсене пĕр пек тивмест.

Караванăн çулĕ вăрăм,
Çурçĕре вăл çул тытать-мĕн...
Чунупа, ӳссессĕн, пулăн
Эс тата çурçĕререх.

Пур иккен унта Россия,
Çитĕнет унта кăварлă
Африкан чĕреллĕ сăвăç
Юр-пăра ирĕлтерме.

Унăн сассине эс илтĕн
Вăл вилсессĕн — пĕтĕм аслă
Хĕвелтухăç çĕрĕнче эс
Тĕрĕс калăн ун çинчен.

Караванăн çулĕ вăрăм...
Силленсе пырса вăрахăн
Шăнкăрав сассипеле кăшт
Йăпанать Нане-ханум.

Аллинче пĕртен-пĕр ывăл,
Тĕлĕрсе пыратăн эсĕ,
Кайнăçем ӳсен, ӳсетĕн
Халăхна телей кӳме...

Караванăн çулĕ вăрăм...

1959—1966

# РУМЫНИРИ МАЙ

## ĂШĂ САЛАМПА

«Лирика геройĕ» мар, ку — эпĕ,
Шырăр ман сăна сăввăмсенче:
Тен, кăшт аслă, тен, вăл кĕçĕн те пек
Пурăнса ирттернĕ çулĕнчен.

«Лирика геройĕ»... Ку вăл — ширма,
Килĕшесшĕн мар мана темле...
Эп — поэт. Ман ятăм — герб та фирма,
Хупăрланмăп ют мĕлкепеле.

Йăхăмпа — хресчен эп, ял хаваллă.
Вăрçăра та пултăм. Хам чăваш.
Раççейре тăваттăмĕш ман халăх,
Вырăсла рифми ун паллă: н а ш.

Хальлĕхе çапла кăна анкетăм.
Вулаканăм, пăрăнсах ан кай:
Балканра-ха шухăшĕ поэтăн.
Саламлатăп — ăшшăн!
Х у с а н к а й.

## УНГЕН

Чĕлхемĕрте сыхланĕ-ши вăрах
Çав «ют патшалăх» тенĕ ик сăмах?

Эс халĕ, çав ик сăмаха илтсен
Пĕр хыпăнса, пĕр кулянса илен...

Унген. Ун патӗнчен пӑртак кайсан
Ҫыр хӗрринче хура ҫӗр асӑрхан.

Йӑран пек ансӑр сухаланӑ та
Сӳренӗ. Нимӗн те ӳсмест унта.

Вӑл — чикӗ. Хурланатӑн эс кӑштах:
Тавралӑх ешӗл, ку ҫӗр — пуш-пушах...

Прут шывӗ тӳп-тӳлек. Кӗпер ҫинче
Хурал тӑраҫҫӗ иккӗн ик енче:

Кунта — совет ҫынни, румын — лере...
Ҫӗр, пӗлӗт — пур этемлӗхшӗн пӗрре.

## «АМБАСАДОР»

Манӑн хӑна килӗн ячӗ
Румынла «Амбасадор»-мӗн.
Вырӑсла «Посол» вӑл пулӗ,
Чӑвашла вӑл пулӗ «Элчӗ».

Чӑн: эп — халӑх янӑ элчӗ.
Манӑн халӑхӑм пурне те
Авалтан пыран илемлӗ
Тӗррипе хальччен вӑл паллӑ.

Пирӗн ятсӑр пикесемӗр
Эрешленӗ тӗрӗн чапӗ
Парижран Нью-Йорк таран вӑл
Янраса тӑрать пӗр тӑтӑш.

Тӗлӗнет илемлӗх йышӗ:
Ҫак тӗссем, ҫак асамат пек
Ялтӑран ачаш чеченлӗх —
Мӗнешкел чунран тухать-ши?

Сассӑр юрӑ-сӑвӑ мар-и
Хӗрлӗрех тӗспе ҫак симӗс,
Ҫак кӑвак, хура та сарӑ
Пурҫӑн ҫипӗллӗ ӳкерчӗк?

Копенгагенӗ, Брюсселӗ,
Бухаресӗ те Миланӗ,

Прага, Вена та Каирĕ
Тĕрĕре пире кураççĕ...

Эп çакна сире каласшăн,
Ман Румынири тус-йышăм:
Халăхсем, тĕрре чухланăн,
Пĕр-пĕрне те час ăнланĕç.

Пирĕн кăмăл, пирĕн шухăш,
Ырăпа тапан чĕремĕр
Тĕрлĕ тĕрĕллĕ çак аслă
Тĕнчепе вăл хутшăнасшăн...

Эп «Амбасадор» хăни-ха,
Чăн: эп — халăх янă элчĕ.
Кĕрсе тухăр, манăн алăк
Яланах хăнашăн уçă.

Çĕнĕрен çуралнă вата
Ирĕк халăхăм çинчен эп
Хам мĕн пĕлнине пурне те
Чунтанах каласа парăп.

Хальлĕхе эп курас теп:
Мĕн халпа тăратăр хăвăр,
Чăвашла калас пулсассăн —
Мĕн эсир çĕмĕрттеретĕр?

## ПЕЛĔШ

Пелĕш, Король çурчĕ ку.
Карл. Фердинанд. Тепĕр Карл...
Нимĕç йăхех кунран кун
Пуç кунта пулнă авал.

Карлĕ, Пĕрремĕш, ытла
Чухăн вăл килнĕ малтан:
Мăшкăлшăн вăхăт сыхлать
Тĕкĕр те пĕр чăматан.

Иртнĕ çулсем. «Рыцарь» çак
Халăх юнне кăкшăмпах
Сăхнă та — пулнă шыçмак,
Халăхшăн юлнă — çăтмах...

Хĕç те хĕрес — ак хуçа,
Çырнă пĕр хĕçĕ çине:
«Çак хĕç хăмсарнă пуçа,
Турă, кун пар мĕскĕне».

Çакăн йышши мăшкăлпа
Хăртнă палач чурана.
Йышлă чура сăнчăрпа
Çăрнă хура тăпрана!

Çак хĕç мĕн чухлĕ ылхан,
Юн та куççуль астăвать!
Сӳ! — турĕ чун. Мăйăмран
Сĕрнĕ пекех юн шăнать...

Сирĕл, хăрушă ĕнер!
Акă вăл — ман телее —
Ушкăн хавас пионер
Шавлăн кĕрет музее.

Ялтăр çурхи хĕвелпе
Çамрăк питне çиçтерсе,
Пĕтĕм этемлĕхшĕн пек
Сар хĕр калать витерсе:

«Çак хĕç ăс патăр паян
Пирĕн мĕнпур тăшмана:
Халăх çине хĕç йăтсан
Халăх хăй касĕ сана!»

## ПЕЛЕШОР

Пелешор — Пĕчĕк Пелĕш тени вăл,
Фердинандăн пĕр уйрăм керменĕ.
Халь канать унта сăвăç, художник,
Пур пăртак — каннă май — ĕçлекенĕ.

Пултарулăх кил-çурчĕ ку пулчĕ.
Ак патша майрашкин будуарĕ
Сăвăпа чĕтренет: виç румын та
Пĕр чăваш унта сăвă вуларĕ.

Хушăра пирĕн вырăс сăмахĕ,
Вăл кĕпер пек — таçтан та каçарĕ.
Пĕр-пĕрне куçарма хăтланатпăр,
Юлташла ăмăрту хĕрсе кайрĕ.

Акă сасă илтсе кĕчĕ критик,
Пĕр хавaслă артист унпала:
«Мĕн ку сирĕн — поэзи турнирĕ?
Пит аван, пит аван япала...»

Халь ăçта кăна çук-ши кун евĕр
Турнирсем кĕрлесе савăнни?
Кермене, салона çурхи шыв пек
Кĕрсе кайрĕ çĕнсе ĕççынни.

Халăхсен хĕсĕрленнĕ таланчĕ,
Хăтăлса революцисемпе,
Ялкăшать кунсерен çутăраххăн
Прометей çулăмне чĕртнĕ пек...

## НАЙ

Çав çемĕ — «Тăри», румынла «Чокăрлиă» —
Янрать халь те ман хăлхара пĕрех май.
Ăна Снаговра кĕвĕленĕччĕ трио:
Хăрах сĕрме купăс, гитар тата най.

Н а й — йышлă кĕпçеллĕ шăхличĕ пек хатĕр,
Ăна шурă мăйăхлă, шухăшлă ар
Вĕрет те — эсир кайăк-кĕшĕк куратăр,
Тăри тĕрлетет... Тĕпсĕр пĕлĕт, уяр...

Историйĕн çилĕ таçтан, тен, вĕрет-и:
Нимле чул çуртсем те çук пек çĕр çинче...
Хирсем сарлака, çӳллĕрех çак тӳпе те,
Тин тунă пекех илĕртет çут тĕнче...

Хавaслă кĕвве — пур чунне кăтартасшăн —
Хайланă, тен, халăхĕ мĕн пĕлнипе...
Пайтах ĕмĕртен Бухарест хули ашшĕ —
Хăй Букур кĕтӳç — кунталла утнă пек...

## ЛЯНĂ КУКУ ПАТĔНЧЕ

Эп ăнсăртран унта çаклантăм.
Пит шăрăхчĕ çав кун.
Тем те пĕр хатĕрленĕ Лянă:
Çуралнă кун-мĕн ун.

Çуралнă кун та, çĕнĕ çурт та:
Вăл кусна тин кăна.
Бригадăри çынсем кӳреççĕ
Кучченеççсем ăна:

Пĕри пылак эрех упранă,
Тепри пырать чăхпа,
Тепри, ял йăлине манмасăр,
Леçет савăт-сапа...

Кил-çурчĕ Лянăн чыслă, шурă.
Чăлан, нӳхреп — йăлт пур.
Пӳрт тăршшĕ сарлака веранда,
Мĕскер хурас тен — хур.

Çурт — çурт вăл! Тăрăшнă колхозĕ.
Хĕрарăм пĕр-пĕччен
Тăваймĕччĕ: выртать ун арĕ
Одесса çĕрĕнче.

Ку хурлăха кайран эп пĕлтĕм...
Ĕçес килетчĕ ман.
«Тен, ак çакна тутанса пăхăр?
Пит пулăшать аван!..»

Йăл кулчĕ те хĕрарăм ăшшăн —
Тултарчĕ пĕр стакан.
Кĕç купăс сассипе янрарĕ
Чечекленен каштан.

— Кичемшĕн мар эпир ĕçетпĕр,
Сăлтавĕ урăх, сис:
Тултарчĕ Лянă хĕрĕх пиллĕк,
Çавна тăватпăр чыс...

«Норок!» — «Тавсси!» тени пулать ку.
Ура çине тăрса

Юн пек эрех вара ĕçетпĕр
Çурт хуçине савса.

«Телейшĕн!», «Çĕнĕ çуртшăн!» — теççĕ,
«Чен-чен!» тет кĕленче...
Ман шурă кăвакарчăн пурччĕ
Сенкер эмаль çинче.

Эп çав палла вара тыттартăм
Çак Лянă тенине.
«Тавах!» — тесе сывлать вăл ассăн,
Утать стени патне.

Унта ик-виçĕ сăнӳкерчĕк,
Пĕри винтовкăпа.
Эп панă шурă кăвакарчăн
Пĕрлешрĕ çав сăнпа.

Çынсем шăпланчĕç пĕр самантлăх.
Эп пĕлтĕм çавăн чух:
Винтовкăллă салтак нихçан та
Тек сасă парас çук...

Тĕнче пĕтмен: ӳсет тыр-пулă,
Ак çĕнĕ çурт та пур.
Хĕрарăм куçĕнче çеç юлнă
Лăпланайми хĕн-хур.

Ачи-пăчи те, тусĕсем те
Сирейменĕç çав хура.
Çавна пăхса пайтах тем те пĕр
Ас турăм эп вара...

Каларĕ кĕвĕ сĕрме купăс.
Курка тулать каллех.
«Ку миршĕн!» — терĕ шăппăн Лянă,
Пушатрĕ тĕппипех.

## ТĔЛПУЛУ

Кăларать ку савăт трактор.
Пысăк корпус умĕнче
Çын кĕлеткине куратпăр.
Палăрмасть-ха вăл: инçе.

Çывхаратпăр... Кепкăпа хăй.
Тен, кунти пĕр-пĕр ĕçчен?
Патнерех пыратпăр акă...
Чун сӳлетрĕ ман пĕлсен.

Тельман пулчĕ-мĕн. — Аван-и! —
Тессĕм килчĕ ман вара. —
Вăрçă вăрçнă çын кам манĕ
Сирĕн ырă ятăра?

Çын тăванлăхĕшĕн хыпрĕ
Сирĕн шухăшăр ялан,
Пирĕнпе пĕрле çул тытрĕ
Мускавран Рейхстаг таран.

Халĕ ак румын ĕçченĕ,
Палăртса ыр ĕмĕтне,
Сирĕн ятăра пилленĕ
Хăйĕн трактор савăтне.

Тăрăшса çынсем ĕçлеççĕ,
Чунĕсем вĕсен таса;
«Тельман тракторĕ», — тееççĕ
Юратса, сума суса.

Тикĕслетĕрччĕ çав трактор
Путăк-шăтăк çĕрсене:
Тыр акмашкăн сухалатăр
Вăрçă пăснă хирсене!

## НАРЦИСС УÇЛАНКИНЧЕ

Шоссепе эпир пыратпăр
Брашовран Фегераша.
Кăшт кайсан çитсе тăратпăр,
Калăн, уçă гаража:

Автобусĕ, грузовикĕ,
Тĕрлĕ тĕслĕ çăмăлли,
Мотоциклĕ — çулăн икĕ
Енĕпе те туп-тулли!

Пуринчен йышли — эп куртăм —
Ялтăркка велосипед.
Хыçала хĕстернĕ пурте
Шур нарцисс — парка букет.

Ма паян çынсем пит шавлă?
Пур рабочи, пур хресчен...
Вырсарни тăвать-мĕн халăх
Çак Нарцисс Уçланкинче.

Ак хуткупăсĕ янратрĕ
«Периница» кĕввине,
Çамрăк йыш кулса тапратрĕ
Хăйĕн савнă ташшине.

Пĕр вунпилĕк çул катам-шим
Эп те хамăн кун-çултан?
Картана кĕрсе тăрам-шим
Ташламашкăн йышпалан?

Эй, ачи! Чăрмав пулсан та,
Çак кĕввех эс каласам.
Виорико, Наци, Санда...
Хăш хĕрне-ши эп суйлам?

Шурă тутăр сартăм шуххăн.
Ешĕл курăк — пурçăн пек.
Эпĕ чĕннĕ хĕр хăюллăн
Тухрĕ ташă йăлипе.

Сар хĕр умĕн çăкăнайрăм,
Сĕртĕнсе кăшт тутăра —
Хĕр мана (илтетни, арăм?)
Чăп! — чуптурĕ тутаран.

Нимĕскер те тăваймастăн!
Шел: кăшт вăхăт кĕскерех,
Ытларах тăнă пулсассăн —
Чуптăваттăм пур хĕре!

## ЧӐВАШ ХӖРӖ ТАМАРА

Тротуарпа утса пыраттӑм,
Кӑлт! — такӑнчӗ те пӗр хӗрарӑм,
«Аннем!» — тесе ярать кулса,
Арçынӗ çинелле пӑхса.
Йӑл кулчӗ лешӗ те, сӑнарӑм.

«Аннем?» Юмах-ши ку, чӑнах-и?
Бухарестра чӑваш сӑмахӗ!
Тӑп чарӑнатӑп тӗлӗнсе,
Унтан часрах хуса çитсе
«Салам!» — теп хытӑ сасӑпах эп.

«Салам!» — тет именсе. Мӗн калӑн?
Хура çивти вӗт-вӗт кӑтраллӑ,
Çӗлен пек явӑнать, парка!
«...Тамара. Ку – ман упӑшка...»
Ача кӗтет яш мӑшӑр: паллӑ...

Тӑван чӗлхи çаплах тӑван ун,
Ӑна нимле çӗрте те манмӑн.
Этемлӗх! Эс хутшӑнмалла,
Епле пулсан та малалла,
Расистсене текех кун памӑн!

## ТАМИНӐ

Шыв сикки эп куртӑм,
Ячӗ ун Тáминӑ,
Мӗн тени пулать вӑл —
Калаймарӗ гид.
Тен, хӗр ячӗ пулнӑ,
Тен, пачах вӑл урӑх —
Пӗлеймерӗм эпӗ,
Тӗпчемерӗм пит.

Уншӑн мар сӑмахӑм.
Каç пулса килетчӗ,
Ту тӗтри çӑралнӑ,
Çул тытать виç çын.
Шыв сиккин кӗрлевӗ

Илтĕне пуçларĕ,
Ун патне утатпăр:
Нимĕç, эп, румын.

Сахал мар çӳренĕ
Эп ту-чакăл тăрăх,
Чиперех пыраттăм
Халь те-ха малтан.
Çĕрлене юлсассăн
Ывăна пуçларăм,
Утайми те пултăм
Туссемпе пĕр тан.

Тусăмсем ăнланчĕç:
Нимĕн те ыйтмарĕç,
Тĕкĕнес темерĕç
Вăрçă суранне.
Пĕр мана çав нимĕç,
Пĕр румын ал пачĕ,
Вĕсемпе эп çитрĕм
Шыв сикки патне...

Сывă-и, Тамина!
Пит илемлĕ сăвă
Халалласшăн пултăм
Эп малтан сана:
Çын, пĕр вуласассăн,
Ĕмĕр савтăр теттĕм,
Сан хĕр ячĕ евĕр
Илтĕнен ятна.

Румынпа сар нимĕç
Манпала утуçăн
Асăмра эп куртăм
Урăхла «илем»:
Атăл... Шур ялавлă
Тăшмансем ал йăтнă...
Хырăнман та выçă,
Шурхăн сăн-питсем...

Пин, çĕр пин куçра та
Пĕр сăмахсăр кĕлĕ:
«Хĕрхенсемĕр... çăлăр...

Парăр ĕç пире...»
Эпирех унта-ши
Пĕр-пĕрне тĕлленĕ,
Халь пĕрле çӳретпĕр
Тав туса мире?

Эпирех унта-ши
Пĕр-пĕрне ылханнă
Ӳлесе иртӳçĕн
Мина пуç çинчен?..
Çакăн пек шутларĕ
Çав Таминă умĕн, —
Эп çеç мар пуль тетĕп, —
Кашниех пиртен.

...Чип-чипер этемлĕх!
Мĕн пулчĕ-ха пирĕн?
Е каллех хупланĕ
Кун çути вара?
«Пĕттĕр вăрçă-харçă!» —
Çак сăмах янратăр
Хыттăн та хаяррăн
Пĕтĕм Çĕр тавра!

## ОВИДИЙ НАЗОНА

Констанца. Хура тинĕс хумпа хутăш
Тăкать ума çулсем те ĕмĕрсем...
Овидий! Сан çинчен паян ман шухăш.
Инçе те, çывăх та хушшăмăрсем.

Çак çĕршыва сана пуç янă пулнă.
Ак çирĕм ĕмĕр ĕнтĕ çын пуплет:
Эс, имĕш, юратушăн хурлăх курнă,
Юратăвĕ — вăл хăйĕннех пĕлет.

Вăл — ирĕклĕх. Хĕстерĕннĕ пулсан та!
Вăл — ирĕк туйăм, ĕмĕт, шанчăк ман.
Римри диктатор поэта нихçан та
Мыскараçи шайне те вăл картман.

Чи лайăх шухăш — Кай енче, Малта-и —
Çаптарнă вирелле вăл халиччен.
Ăна путарнă пĕр-пĕр тăрпалтайĕ
Мăчавăр е патша хушнипелен.

Анчах вутчулĕ ăшĕнчи хĕлхемĕн
Çав шухăш пурăннă çын чĕринче.
Вăл хыпнă çулăмăн мехел çитсессĕн,
Вăл çĕнĕ çăлтăр çутнă хăйĕнчен.

Хивре сăмах юптарăвăн, юмахăн
Кĕрсе вырнаçнă чухăнсен килне.
Ман акă тӳрĕ каланать сăмахăм:
Эпир курасшăн юмахсен чăнне.

Эпир хальччен пулман тĕнче тăватпăр
Этемлĕх пухнă пĕтĕм вăйпала.
Хисепсĕр ту-сăрт урлă кармашатпăр,
Ку питĕ, питĕ йывăр япала...

Хум çапнине итле-итле тăратăп
Сан умăнта, Овидий, эп пĕччен.
Сан шухăшлă çамку çине пăхатăп,
Шутлатăп хурлăхлă шăпу çинчен.

Тупман сана. Тăпру таçта çухалнă:
Пуç янă çыншăн мрамор лартăнман.
Анчах истори сăввуна усранă,
Эс вилĕмсĕр яланлăх унпалан.

Патша тавраш керменĕ, пирамиди,
Гранит юпа, шур мрамор кӳлепе,
Ялавĕ, гербĕ, скипетри — пĕри те
Тавлашаймасть поэтăн сăввипе...

Чун туртнă ĕçĕме савса тумашкăн
Кунта чĕре хевти илетĕп эп,
Ăста этем туптанă чăн сăмахăн
Чи пархатарлă хăватне сисеп.

...Сыв пул, Назон! Кун-çул вĕçне пĕлместĕн.
Анчах ăçта çитсен те виличчен —
Сандалипе эс утнине илтсессĕн
Мана халь ăшă пулĕ çĕр çинче...

## ДАНИЭЛА-ВАНДА

Хăй вăл Польша хĕрĕ,
Упăшки — румын.
Халĕ калаçаççĕ
Иккĕш вырăсла.

Раççейре тĕл пулнă
Пĕр шкулта иккен;
Мускавла пупленĕ
Туслăх, юрату.

Хĕр вĕсен çуралнă.
Мĕнле ят хурас?
«Полякла», — тет амăш,
Ашшĕ — «румынла».

Хытă тавлашмарĕç:
Йĕкĕр пултăр ят:
Даниэла-Ванда
Терĕç пепкине.

Кӳренмелле пулмĕ
Халь Варшавăн та,
Кӳренмелле пулмĕ
Бухарестăн та.

## ДАНИЭЛА-ВАНДĂНА СĂПКА ЮРРИ

Пирĕн хĕл пит юрлă,
Упасем çывраççĕ.
Ачасемшĕн юрă
Аннесем юрлаççĕ:

«Çывăр, çывăр канлĕ,
Ылтăнăм, папакăм!
Çăлтăру хураллĕ,
Савнă ман сапакăм!»

Çак юрра итленĕ
Манăн йывăç çуртăм.

Çил тулта ӳленĕ,
Чăштăртатнă улăм.

Çак юрра юрланă
Уй-хирте те маншăн.
Çил сăпка суллană,
Туртаран çаксассăн.

Çакă юрă сан та
Пултăр чун хĕвелĕ,
Даниэла-Ванда,
Ванда-Даниэла!

Каçĕ лăпкă питĕ,
Кун килинччĕ ыррăн.
Ӳс, пурин валли те
Тĕнчере пур вырăн.

Çăлтăрсем пĕр вĕççĕр
Çуннине пăхсассăн
Çав юррах эп кĕçĕр
Ас илеп хавассăн:

«Çывăр, çывăр канлĕ,
Ылтăнăм, папакăм!
Çăлтăру хураллĕ,
Савнă ман сапакăм!»

Пĕр куççуль те ан тăк,
Пул ялан телейлĕ!..
Даниэла-Ванда,
Ванда-Даниэла...

## ТĔП-ТĔРĔС СĂМАХ

Румын чĕлхи вăл ют пире, анчах
Пăртак чухлатăн та, тăнла-тăнла.
Мана пит килĕшрĕ çак пĕр сăмах:
Вăрçа «разбой» тееççĕ румынла.

## МАРИЯ БАНУШ

Хăтлă пĕр килĕн чипер пики евĕр
Куртăм эп çак сăвăçа асăнмалăх.
«Бануш, Мария». Паллашрăмăр эпĕр.
Унăн çавра куçĕнче пур ачалăх.

Вырăнĕ пулчĕ — Çыравçăсен çурчĕ.
Пăхрĕç туссем тĕлĕнсе. Тĕлĕнмесĕр:
Таçтан пĕрремĕш чăваш килсе курчĕ!
Бануш итлерĕ куçне сиктермесĕр.

Ансăр лутра сĕтелне хатĕрлеççĕ
Чыс пилĕк-улт çын валли. Тост янрарĕ.
Пулчĕ Мария ăста кĕрекеçĕ,
Ырă сăмахĕ асрах, манăнмарĕ.

...Шурă акаци, мана ăсатуçăн,
Шурă сапакĕсемпе ăшшăн сулчĕ.
Тусăмсене эп каласшăн халь уççăн:
Чунăм пĕр пайĕ кунта тăрса юлчĕ.

Ирĕк çĕршывăмăрсем йăлт пĕр чунлă,
Савăнтарать пĕрлехи кашни утăм...
Пĕтĕм Румыни куçран пăхса юлнăн
Банушăн сăрă куçне эпĕ куртăм...

## ЛЯ РЕВЕДЕРĔ!

Эп калап: «Ля реведерĕ!» —
Сывă пул-ха, Бухарест!
Сарлака этем çул-йĕрĕ,
Таçтине куратăн эс.
Эп калап: «Ля реведерĕ!»
Сывă пул-ха, Бухарест!
Çĕлĕкне эс сулласамччĕ.
Тек тахçан килсе кĕрес?
Килейсессĕн — пит аванччĕ...
Сывă пул-ха, Бухарест!
Сарлака этем çул-йĕрĕ,
Аякка чĕнет тĕнче.
Хурлăхпа хаваслăх çĕрĕ —

Пĕр орбита çийĕнче.
Сарлака этем çул-йĕрĕ.
Таçтине куратăн эс,
Ман çитесчĕ пур тĕле те.
Тĕнчери пайтах кĕтес
Мансăрах юлать, пĕлетĕп.
Таçтине куратăн эс.
Эп калап: «Ля реведерĕ!»
Хам тăван çĕршывăмра
Çак сăмах чуна витерĕ
Çепĕç юрă пек вара:
Эп калап: «Ля реведерĕ!»

1959—1963

# ПĂЛХАР ЯРĂМĔНЧЕН

## ТАЛИСМАН

Ту çинче манпа çӳрерĕ
Пĕр хĕрарăм çуркунне,
Мăйĕнчен хывса пиллерĕ
Арăсланлă пĕтевне.

Вăл каларĕ: «Эс ăнланăн...
Тĕшмĕше мана ан хур...
Çак парне парас йăланăн
Хăйĕнле илемĕ пур.

Ĕмĕрех эс çул çӳретĕн.
Саншăн çакă арăслан
Çĕр çинче те, пĕлĕтре те
Пултăр ырă талисман...»

Мăйăмран вăл çакса ячĕ
Парнине ик аллипе.
Асăмра çав кун сыхланчĕ
Ачари тĕлĕкĕм пек.

Хамăр ĕмĕрĕн чи юнлă
Вăрçинчи турăсăрсем,
Тен, эпир чăнах та пулнă
Ачарах çав кун-çĕрсем?

Арăслан çине пăхатăп...
Çакă çутçанталăкра
Çын астунă çул ытлах та
Вăрăм мар-çке-ха, ара!

Хăш çĕртен вăл килнĕ-халĕ
Чурăс кайăк сар патши?
Çыннăнни пекех сухалĕ,
Куçĕпе те — çын йышши.

Арăслан та ăмăрткайăк,
Кашкăр... Эс-и ку, этем?!
Ĕнтĕ час ку иртсе кайĕ:
Илĕртеççĕ çăлтăрсем.

Анчах ыррăн асăнмашкăн
Панă çак арăслана
Эп çакса çӳреп йăвашшăн,
Темшĕн хаклă вăл мана.

Хăш-пĕр каç ыйха татсассăн,
Асăнса Пăлхар çĕрне, —
Арăслан лăплантарассăн
Туйăнать ман чĕрене...

## ЛАМАРА

Поэзи çăлкуçĕ! Вăл — эс-мĕн.
Сайра тĕл пулатăн ăна.
Кăварсăр çук ăшă тесессĕн,
Ламарсăр Пăлхар çук мана.

Пуçу ĕнтĕ санăн шуралнă,
Лапсак куç харши — хуп-хура!
Çӳçӳ явăнать — арăсланăн
Çилхи пек — кăтра та çăра.

Эс — пысăк ăста: каçармастăн
Начаршăн нихçан никама.
Чӳлмек ăсти евĕр унатăн
Сăмахăн тăмне хытарма.

Пайтах урлă-пирлĕ эс каçнă
Çуран çӳресе Балкана.
Чĕрӳ ту çинчех-тĕр кун-каçăн,
Юрру та ăнах пăхăнать.

Ват ăслă та эс ача чунлă,
Йăваш Улăп вăйĕ санра.

Пӑртакҫӑ сыпсан, кӑмӑл тулнӑн,
Епле эс юрлатӑн вара!

Балкан тӑрринче пулмӗ урӑх
Тӳпе, Мусаласӑр* пуҫне.
Ҫаплах кӗрекӳ пултӑр тулӑх,
Ан чактӑр чапу ӗмӗрне!

Уяв кунӗ пек пулчӗ маншӑн
Мана ӑсатни Софирен.
Хула вокзалне эс пырсаттӑн
Мӗнпур хатӗр-матӗрпелен:

Рюкзак, Альп туйи те пушмакӗ...
Кулса, сигарета ҫыртса,
Хӗвел ҫине пӑхрӑн та акӑ —
Кӗҫ хатӗр утма ҫил касса.

Чула туяпа эс шаккаттӑн
Ыр ут кукаленӗ пекех.
Май килнӗ пулсан — эп утаттӑм
Санпа ту-сӑрт урлӑ каллех!

Хаваслӑ сӑмах, ӑшӑ кулӑ
Ялан тус валли хатӗр сан.
Хӑҫан тепӗр хут пӗрле пулӑп?
Е ӳкӗп унччен ывӑнса?

Ҫук, ҫук! Эп ҫӳресшӗн-ха ыррӑн,
Ҫак ҫут тӗнчерен тӗлӗнсе:
Дунайӑн та, Атӑлӑн, Тибрӑн... —
Пайтах ҫӗр ҫинче тусӑмсем.

Хивре самана ҫилӗпе те,
Хам ирӗкӗн те эп хама
Ҫырма варрипе иштеретӗп,
Кимме иртерех-ха канма.

Чӗрем сивӗне пуҫласассӑн,
Тӑма вӑй пӗтсен, — утма мар, —
Туссем аса килӗҫ каҫ-каҫӑн,
Асрах пулӑн эс те, Ламар!

* Балканӑн чи ҫӳллӗ тӳпи.

## КОПРИВЩИЦА

*Димитринăпа Веселив*
*Йосифовăсене*

Копривщицăра пур пĕр ресторан,
«Апрелĕн çирĕммĕшĕ» унăн ячĕ.
Эрехсĕр ӳсĕр эп унта пулсаччĕ
Тусăмсемпе чĕре савăннăран.

Кун пеккине курманччĕ эп нихçан:
Сĕтел хушшисенче, коридорта та,
Курка-черкке тултарнă кукăрта та
Пĕр хор пек янăрарĕ юрă ян.

Юрларĕç апреле аса илсе:
Султан саманинчи «Апрель пăлхавĕ»
Путарăннă пулин те, унăн шавĕ
Çаплах çĕкленнĕ, кĕрешме чĕнсе.

Апрель паттăрĕсем стена çинче,
Ялав чĕнет: «Е ирĕклĕх, е вилĕм!»
Музей пекех ку ресторан ыр пиллĕн
Усрать çав çулхине-мĕн халиччен.

Ĕнер кăна уявлă Софирен
Машина куçрĕ кунталла тем чухлĕ:
Çĕршывăн йывăр, чурари кун-çулĕ
Çак ту çинче вăй илнĕ вăл иккен.

«Апрелĕн çирĕммĕшĕ»... Çав ятран
Эп халăх кăмăлне, чунне ăнлантăм...
Копривщица! Пăлхаршăн усранатăн
Эс ирĕклĕх сăпкипеле пĕр тан.

## ЯСНАЯ ПОЛЯНА

Те фантази ку, те кăмăл вирлĕш, —
Пăлхарта шанаççĕ ак мĕне:
Лев Толстой Пăлхар çĕрĕнче имĕш
Ирттересшĕн пулнă ĕмĕрне.

«Сирĕн çĕрĕр-шывăр та хитре те,
Халăхăр та ăслă», — тет пулать.
Пăлхарсем калаççĕ... Эп итлетĕп,
Машинамăр шав пырать, пырать...

Ялсемпе иртетпӗр... Кам шутланӑ?! —
Россӗн ялӗ хыççӑнччӗ пулас —
Эп вулатӑп: Ясная Поляна...
Пурте шӑп лӑплантӑмӑр пӗр кас.

## РОПОТАМА

Ропотама... Ропотама...
Пысӑк мар çырма.
Лӑпкӑ та-мӗн, лӑпкӑ та-мӗн:
Юхӑм палӑрмасть.

Ик çыранӗ — чӑтлӑх йывӑç,
Вулӑ çиййӗпе
Явӑнать лиана йывӑ —
Симӗс çӗлен пек.

Тен, кунта вырнаçнӑ пулӗ
Пӗр-пӗр упӑте?..
Шӑпӑрт сас та çук, тем чухлӗ
Итлесессӗн те.

Аист çеç вӗçет пӗр нимӗн
Сассӑр хушӑран,
Ун мӗлки чӑлт шурӑ киммӗн
Курӑнать шывра.

Урӑхла ку панорама:
Ту-сӑрт мар... Анчах
Ӳпкелемӗ Ропотама
Ун пирки пачах.

Пурнӑçра нумай ман пулчӗ
Тӗрлӗрен шӑв-шав.
Халь кунта тӳлеклӗх тулчӗ
Кӑмӑл-шухӑша.

Пурнӑçра сахал кун тупрӑм
Канлӗн ӗçлеме.
Çак çырма чухларӗ, туйрӑм,
Ман телейӗме.

Сехет шав шаккать — чараймăн,
Ун йăли пĕрре...
Ропотама, Ропотама,
Эс ман чĕрере!

## СОЗОПОЛЬ КАЧЧИСЕМ

Созополь ресторанĕнче ларатăп,
Хум шавĕ май пĕр юрă эп тăнлантăп.

Çил каснă каччăсем хуллен юрлаççĕ,
Темле хастар капитана мухтаççĕ.

Ик çаврака куç харшине çĕкленĕ
Кăтра ача гитар калать чеченĕн.

Йăр-йăр матрус кĕпи, хăй те матрус-тăр,
Мăйне ик тĕвĕ туса çыхнă тутăр.

Ытти юрлакансем те — тинĕс йышĕ,
Пăртак кансан каллех карапĕ ишĕ.

Çынсем тӳлеккĕн, туслăн каç тăваççĕ,
Сисеççĕ: кăтăрасшăн тинĕс каçĕ...

Тултарнă эрехне ĕçсе пĕтерĕç,
Тул çутипе Бургасалла вĕçтерĕç.

Мăйри тутрисене салтса пĕр силлĕç,
Унтан пуçĕсене «корсар пек» çыхĕç.

Хăватлă тинĕс — Хура тинĕс — шавĕ
Хăюллă çынсене кăна вăл савĕ...

Созополь каччисем, пит пултаратăр!
Чуна та, кăмăла та çутăлтартăр.

Сире пăхса эп хам та çамрăклантăм,
Кăвак хума касса ишесчĕ ман та...

Тавтапуçах: илемлĕ сирĕн юррăр!
Каллех мана мал ĕмĕтлĕ çын турăр.

Хитре çынсем! Хитре çĕр! Ячĕ унăн
Ахальтен мар-тăр Аполлони пулнă.

## БЛАГА ДИМИТРОВĂНА

«Çĕрти çăтмах» тесе каланă
Илемлĕ çакă çĕршывра
Сана йăмăкласа, тăванăм,
Сăмах хушам-ха сăвăра.

Мăн Атăл хĕрринчи юманлăх
Хӳтлетчĕ манăн ĕмĕте.
Эп шухăшлаттăм: «Пур пĕр халăх...
Курасчĕ, теттĕм, ĕмĕрте».

Ун сăн-питне легенда витĕр
Пăхса сĕмлентĕм аякран.
Кĕнекесем калатчĕç: «Иксĕр
Пĕр юнлă халăх, пĕртăван».

Ман шухăш куçĕ тĕрлĕ курчĕ
Пăлхар куçне ун чухнеллех:
Хури те, кăвакки те пурччĕ,
Европĕ, Азийĕ — пĕрлех.

Дунай славянĕпе пăлхарăн
Юнне вĕретнĕ пĕр Балкан.
Эпир те хутшăннă вăрахăн
Финсемпеле кунта кайран...

Çапла эп шухăшпа вĕçеттĕм
Йăлтах пĕлме пиkeннĕрен.
Сана та, йăмăкăм, пĕлместĕм,
Курассине те ĕненмен.

Хăш чух темле хитре юмахăн
Пĕр сăн кураттăм тӳпере.
Пурахчĕ пек калас сăмахăм,
Темскер кĕтетчĕ ман чĕре.

Чуна, пĕр канăçлăх памасăр,
Кăвак куçу туртман-ши сан?..
Болгари чухăнрах вăл сансăр —
Ак тупсăм, чăн калас пулсан!

## ÇИЛÇУНАТĂМА

*Станислав Сивриева*

Çилçунат! Пит ватă эсĕ,
Ĕмĕрех эс çамрăк та.
Ман айра каллех — итлес-и? —
Чĕрнӳсем сан «так!» та «так!»

Эс мана илсе çӳретĕн
Пĕр вĕçсе, пĕр юрттипе
Юрлă Рила сăрчĕпе те
Тунджа шывĕ хĕррипе.

Ахаль мар кунта васкарăм:
Сиктерем ту çинелле
Ялав тытнă çамрăк арăн
Аспарух чухнехилле.

Сиктерем Шишман таврашĕн
Самани юнакĕ пек*.
Тăшмана парăнас маршăн
Паттăр пĕтнĕ пуçĕпех.

Сиктерем-ха Ботев сăвăç
Ертсе пынă йĕкĕтле.
Çутă хĕç вылятăр кĕç-вĕç
Тăшмана пĕтересле.

Сиктерем-ха партизанăн
Родопри сĕм каçсенче.
Ут ури сасси çĕр саслăн
Илтĕнет-мĕн пур енчен...

Пăлхара кунта кăна-тăр
Чăннипех ăнланмалла:
Вăл — çур пин çул вăрçнă паттăр!..
Çилçунатăм, малалла!

1960—1963

---

* Иван Шишман — пăлхарсен тĕрĕк пусмăрне лекес умĕнхи юлашки патши, тĕрĕксене хирĕç çапăçса вилнĕскер (XIV ĕмĕр). Юнак — паттăр.

# ХУШКА ХУМСЕМ

* * *

Хуракăшсем какаласа иртеççĕ
Ян Райнис çĕрĕ-шывĕ çийĕнчен.
Каллех çул çӳреме тухать поэзи,
Чăваш поэзийĕ те пур тĕнчен.

Каллех кил-çуртлă чип-чипер çыннах-мĕн
Туртать вăл таçталла, темскер тума.
Нумай пĕтет, сахалпала çырлахмăн...
Ак сулхăн Балти тухрĕ ман ума.

Шыв тăрă мар-ха: сахăр сапнă евĕр,
Тĕлĕпеле вăл юрлă-пăрлăрах.
Хĕрринерех чарлан чарлать илемсĕр,
Шăркалчăсем чăмаççĕ шаларах.

Çыр хĕрринчи паркра çӳрет хĕрарăм,
Кĕреплепе вăл çулçă пуçтарать,
Тирпейлĕ тураса пырать, сăнарăм:
Хăр çулçă курăка шăтма чарать.

Унта-кунта йăсăрланать ав тĕтĕм, —
Вута пăрахнă пĕлтĕрхи çулçа.
Тен, эп те пĕлтĕрхи шутне халь кĕтĕм?
Ик хут никам та ешермест пуль çав...

Эп самана кĕреплине шанатăп:
Хăрнах пулсассăн — сиртĕр вăл мана.
Пĕр ешĕл хунава чăрмантарма та
Хавасăм çук — ӳсех, кашла кăна!

Кăшт ытларах та калама пултарăп:
Чăн хунавах шăтсассăн ман пата, —
Хам пăрăнăп, хамах ăна çул парăп,
Кирлех пулсан — хам ыткăнăп вута.

* * *

Нумай çĕре çитсе паратăп сасă,
Çыратăп, калаçатăп вырăсла.
Сасартăк Атăл çилĕ касă-касă
Чуна килсе тивет те — пыр, ăсла!

Кăмăлăма вăл вăрăнса кĕрсессĕн,
Пыр, туп вара эс ун кутне-пуçне!
Кӳтсе çӳрен, лара-тăра пĕлместĕн,
Чĕнми пулан, пăхмастăн çын çине...

Хистет çав çил: пĕр ӳкĕтлет йăвашшăн,
Пĕр вăл лăскать, чуна хайăрттарса.
Умра кун-çулĕ тĕрленет чăвашăн —
Асаплă та ытарайми таса.

Вара эс парăмлă тесе шутлатăн
Иртнишĕн те, хальхишĕн те хăвна.
Çĕршыв çулне, тĕнче çулне хутлатăн
Пĕртен-пĕр ырă ĕмĕтпе кăна:

Тăван йăха тата кăшт хăпартасчĕ,
Ку тарана çитернĕ чĕлхене
Мĕн пур илемĕпе халь кăтартасчĕ,
Мĕнпур хăвачĕпе çак тĕнчене.

Хăçан, ăçта куç хупасса курмастăн:
Таçти Европăра е Азире...
Пĕр-пĕр палла эп тивĕçлĕ пулсассăн —
Чăваш сăмахĕ пултăр ман çире.

* * *

Эп хамăр Атăл хĕрринче вилесшĕн.
Пĕлме хал çук: таçта тĕл пулĕ л е ш ĕ?

Ун чух манпа пĕрле туссем пулсассăн,
Эп вĕсене çапла тума хушасшăн:

Куç хупăнсан, шух юнăм сивĕнсессĕн,
Чи канлĕ юпăнчă эп витĕнсессĕн

Кăкăрăмран ман чĕрене кăларăр,
Çуратнă халăха таварса парăр.

Ăна вăл Шупашкар сăртне пытарĕ
Е урăхла тирпейлеме пултарĕ —

Хăй ирĕкĕ, хăй кăмăлĕ: эп — унăн,
Мĕскер тума пултарнине эп тунă.

* * *

Шаккать юлташăн чăвашла машинĕ...
Ансат ĕçлетпĕр ку чухне, ансат.
Аса килет мăнтарăн Кĕçтенттинĕ,
Аса килет те чĕрене касать.

Вăл йывăçран машин туса хăтланнă, —
Пĕччен алçырăвне камах пĕлет?
Пичетлĕ сăмаха епле сăхланнă
Пĕр кĕнеке те кăларман поэт!

Чернил тени те уншăн пулнă «чудă»:
Çырать те хуратать, каллех çырать...
Хура тĕс витĕр вăл курасшăн çутă,
Чĕлхемĕр вилĕмсĕрлĕхне шырать.

Саспаллисем чăваш хĕр куçĕ евĕр
Шăрçаланаççĕ шурă хут çинче...
Шаккатпăр, кĕнекен те пичетлетпĕр,
«Нарспи» çапах та çăлтăр пек инçе.

* * *

Тинкеререх пăхатăп тинĕсе,
Аса илетĕп хамăр çĕршыва.
«Тапранчĕ пулĕ Атăлĕ», — тесе
Çӳретĕп, çĕлĕке хыва-хыва.

Саватăп çутçанталăк, çут тĕнче
Хĕл ыйхинчен вăраннă вăхăта.
Темле хăват чĕремĕн тĕпĕнче,
Хирĕçлеме хал çук çав хăвата.

Мана вăл чикан юнĕ пек туртать
Шыв хĕррине, хире, сĕм вăрмана.
Утна тăвар та, тăратах турта,
Карса ярах шăналăк-чатăрна.

Ку çук ĕнтĕ, ку çук ĕнтĕ пачах:
Шупашкарта, тăм сăртлă çыранта,
Тус-йыш сăнать пăр кайнине анчах,
Мана курмасть те — эп пурах унта!

* * *

Асра пĕр юрă янăрать ку чух,
Çавна астутармасăр, тен, юрамĕ:
«Ĕçекенсем нумай, юрлакан çук,
Хам пуçласа хам юрласа ярам-и...»

Ытлашширех ĕçетпĕр, тусăмсем,
Илемсĕрленчĕ пирĕн кĕрекемĕр.
Урамсенче тӳнсе те ӳпĕнсе
Милиципе мутасланса пĕтетпĕр.

Тилли каларĕш — самани те саккăр,
Тамашисем те тăххăр тенĕ пек,
Епле пулсан та, упранасчĕ хамăр
Чăваш кăмăлĕпе те чунĕпе.

Сăввăмăрсем хăш чух тĕлли-паллисĕр,
Тирпейĕ çук — вула кирек хăш май.
Сăвăçисен сăнне пăхмашкăн ирсĕр,
Курни-пĕри пуçне суллать: «Ай-яй!»

Чăлхемĕр эреветлĕ те теветлĕ,
Шăрçа пек шăранаççĕ сăмахсем.
Тыткалăр-ха, этсемĕр, перекетлĕ,
Калаçăр, çырăр, тутине пĕлсе.

Шанас килет: таçта пĕр шăллăм пур,
Те çĕмĕрт куçлă-ха, те пĕлĕт куçлă?
Ӳсет, çарран чупать, кĕтет вăл хур...
Тен, çавă пулĕ пур поэтшăн пуçлăх?

Хайхи юрра ас тутăр та ун чух,
Ан пултăрччĕ вăл вак-тĕвек харамĕ.

«Ĕçекенсем нумай, юрлакан çук,
Хам пуçласа хам юрласа ярам-и...»

* * *

Эп пурнăçран кĕтместĕп канăç,
Ĕçлетĕп чапшăн-сумшăн мар:
Ытти пекех мана та манĕç,
Ĕç — хăй вăл маншăн пархатар.

Ват чĕлĕмçĕ телейĕ — чĕлĕм,
Качча туртать чипер пике,
Ĕçекене — черкке пит селĕм,
Мана — çак сăвăллă йĕрке.

Этемлĕхĕн мĕнпур им-çамĕ —
Тапак, эрех, гашиш тени —
Çак пĕр йĕрке сăвва тăраймĕ,
Çапла ман ĕмĕр сăнани.

Çакна пĕлмесĕрех тытсассăн
Пулас поэт хăй перине,
Вара эп хаш сывлатăп ассăн:
Çуралаймасть вăл тĕнчене.

* * *

Хашăлтата пуçларĕ тинĕс,
Вăл тĕссĕр сăрă, тăрă мар.
Тепри аса килет: сип-симĕс!
Хĕвелĕ — хĕп-хĕрлĕ кăвар.

Каçпа, шыва путса ларуçăн,
Вăл чашкăрсах сӳнетчĕ пек.
Çапла ăна куратчĕ куçăм,
Çапла хăлхам илтетчĕ тек.

Аплах пулман ĕнтĕ, пĕлетĕп, —
Хам çуннă çамрăк чунпала.
Шыва-шура та, хĕвеле те
Çав чашкăрттарнă пулмалла.

Вĕри çĕршывпала çӳреттĕм,
Вĕриччĕ хам, вĕри такам...

Пайтах çухатрăм эп, кӳрентĕм,
Куççуль е сăвă халь тăкам?

Хашăлтата пуçларĕ тинĕс —
Пĕр хурлăхлă, пĕр хавасрах.
Ан хускатах мана халь тин эс:
Тепри асра, тепри асра...

* * *

Инçе çула пуçтарăнатăп...
Чĕрен кашни хĕлĕхĕпе
Татăласлах эп карăнатăп
Ĕнернĕ сĕрме купăс пек.

Ĕнернĕ, сĕркĕчне хытарнă,
Хăми — янахăм айĕнче.
Мехелĕм çитрĕ — пархатарлă
Кĕвве итлетĕр çут тĕнче.

Пĕр пăсăк сасă та ан тухтăр,
Ан йĕрĕнтертĕр хăлхана.
Яш çын илтсен — тата яш пултăр,
Ватти — йăпантăр пĕр кана.

Йăпантăр, яшлăхне ас илтĕр,
Шыратăр, туптăр хăй сăнне.
Шăлан йĕппиллĕ чăтлăх витĕр
Тухатпăр чăнлăх уçлăхне.

Çав уçлăхран вара куратăн
Йĕри-тавра инçе-инçе.
Тумхахлă та иккен, хура та
Эс утнă çул çак çĕр çинче.

Куçа хупса аса илсессĕн —
Мана мĕн чухлĕ тӳнккемен!
«Аванччĕ пĕрех хут вилсессĕн!» —
Тени те пулнă пулĕ тен.

Çапах та купăсăм кун-çулĕ
Итлекене ахаль пухман.
Тен, йăнăш сас та тухнă пулĕ,
Анчах та урмăш сас — тухман!

* * *

«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атте-анне...»
Мĕнпур ман сăввăмсен пуххи
Тăмасть çак икĕ йĕркене.

Ăçта эс, вилĕмсĕр ăста?
Хăш ĕмĕрте юрларăн-ши?
Ялу ăçта, тăпру ăçта?
Мĕнле йăхран çуралтăн-ши?

Çăпатуна шакка-шакка
Утса суха кассипелен,
Мал ĕмĕтне эс аякка
Вĕçтернĕ нӳр ану çинчен.

Хыçран утан хура курак
Çав ĕмĕте çуначĕпе
Çĕклес тесе, хăйне кура,
Сана тинкернĕ юмăç пек.

Кĕрекере курка тытса,
Ăсна курка тĕпне туман;
Çаврасерен чунна татса
Юрланă эс, инçе тăван!

Юрру сан пулнă çăкăр пек,
Тăвар пек, шыв пек кирлĕскер.
Ăна тӳлев саккунĕпе
Виçмен никам та йĕркешер.

Нихçан та преми эс илмен,
Мĕне вăл кирлĕ шăпчăка?
Юрру вилмен, юрру вилмен!
Мĕнпе виçейĕн çав хака?

Текех пуççапмăпăр тенке,
Вăл килĕ-ха, çав самана:
Тултарĕç юрă енчĕкне,
Çавна шантартăн эс мана.

Чăваш чĕри, хуйхи-суйхи,
Шăпи — йăлт тухрĕ куç умне:
«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атте-анне...»

* * *

Нумайранпа кунта пулманччĕ...
Паллană хыр, сăнанă хыр
«Аван-и!» — тенĕ пек хумханчĕ,
Мĕн çӳллĕш вăл — патне ан пыр!

Лутраччĕ ун чухне, çинçеччĕ,
Вак-вак турачĕ аялта.
Хăш вăхăтра капла çĕкленчĕ,
Вак туратне хăрта-хăрта?

Ларать — курман та тейĕн хурлăх:
Мăнах та мар пуçĕпеле
Тем чухлĕ çӳллĕ йывăç урлă
Кармашнă вăл тӳпенелле.

Мĕнле-ши эпĕ? Пур-ши халĕ
Йĕри-тавра ман вак турат?
Е çыннăн, çитĕнсен ăс-халĕ,
Ытти хăех тип шар курать?

Тепре эп хыр çине пăхатăп:
Кама, мĕне вăл юрататъ?
Ун ешĕркке тăрри паха та,
Çапах... пит шел вак турата!

* * *

«Нимене! Нимене!» —
Ян янрань ир-ир.
Пулăшса пĕр-пĕрне,
Йӳнеçтернĕ эпир.

Тăкăнать сар ыраш, —
Ан ислен ыйхăра.
— Ёлкĕрес! — тет чăваш,
Ял-йышне йыхăрать.

Тыр вырма, ут çулма,
Капансем тăрлама,
Пурараи пӳрт тума —
Тиветех йыхăрма.

Мĕн тăвайăн пĕччен?
Ĕмĕрсен тăршшĕне
Илтĕнет пур енчен:
«Нимене! Нимене!»

Çут тĕнче сарлака,
Сан — çĕр çеç тĕрĕс мул.
Анаран аякка
Ярса пуснă ан пул!

Хĕсĕнет пурнăçу
Пӳрт тавра, лаç тавра.
Арăм çук — парăм çук...
Пур пулсассăн вара?

Сак тулли сар ача,
Хĕр арлать çиччĕре:
Пир, тăла, улача —
Пурте кирлĕ пире.

Сӳс тӳме, çăм чавма
Шӳтлесех хĕрсене
Хĕтĕртет çав сăмах:
«Нимене! Нимене!»

Ал-ура ĕçĕпех
Хăйранать ăс-хавал.
Çӳç касан хачă пек
Халь вăл çивчĕ, йăл-ял.

Çĕр çинче, пĕлĕтре
Çук эпир туманни.
Пархатарлă, хитре
Чĕрĕлӳ самани.

Ăспала ĕçлекен
Хамăр ывăл-хĕре
Çăмăл мар та-и, тен,
Тепĕр чух хăш ĕçре.

Хĕнтерех килнĕçем
Пур çĕртен пĕр-пĕрне
Сас парар, тăвансем:
«Нимене! Нимене!»

* * *

Пăхатăп ĕмĕрсен тĕпне:
Чул хушшинче çунать кăвайтă;
Пĕр кайăкăн шултра тĕкне
Ачин çӳçне тиресшĕн ватă;
Пĕлместĕп эп ун чĕлхине,
Вăш-ваш! тенине çеç тăнлатăп.

«Çав кайăк тĕкĕ пек вăш-ваш,
Çуначĕ пек вăш-ваш вĕçмешкĕн
Эс хуш тĕреклĕ, çăмăл аш!» —
Тесе ватти йăхне пиллесшĕн.
Ман шухăшпа, çав çын — чăваш,
Эп çавăнтан тымар илесшĕн.

Кĕреп истори тĕпелне,
Ун çӳпçине ӳпĕнтеретĕп:
Чăвашăн ылтăн-кĕмĕлне
Курас тесе ĕмĕтленетĕп.
Пăрахнăччĕ эп тĕлĕнме,
Халь тепĕр хут ак тĕлĕнетĕп.

Мĕн чухлĕ несĕл, йăх, ăру —
Весь, меря, чудь — пуртан çукланнă!
Картман картне, çырман çыру,
Çĕртен пĕр йĕрсĕрех сухалнă...
Чĕлхемĕрте пур п у л т а р у,
Эпир пулмах, пулмах çуралнă!

* * *

Хушка хум... Эп курап ăна куçăн:
Урхамах пек чĕвен вăл тăрать,
Çилхине хирĕç çил салатуçăн
Шурă кăпăк татса кăтăрать.

Хушка хум... Сахал мар каснă пулĕ
Эс, чăваш, Атăла, тинĕсе.
Яланах хăтарман-тăр çав пӳлĕх, —
Тек кĕл ту йăлăнса, тилмĕрсе.

Хушка хум йăвантарнă, пытарнă
Киммӳне, кĕсменне авăра.

Юлнисем макăрман: чун хытарнă
Çакăнта кăларма хамăра.

Хушка хум хушшипе, харсăр халăх,
Тухрăн эсĕ истори çулне.
Киммӳне карап пек аслатмалăх
Хăвату çитмелле ку чухне.

Хушка хум... Сăвăçсем тертленеççĕ
Сăн-сăпатлă сăмах йĕрлесе.
Эсĕ, халăхăм, эсĕ чĕлхеçĕ,
Шухăшлавçă, илемçĕ — эсех!

* * *

Эп — çирĕммĕш ĕмĕр çынни,
Сараймăп кун-çул чиккине.
Пĕлетĕп ман чунăм çунни
Кунтах сӳнмелле иккенне.

Кунтах: пин те тăхăр çĕр те...
Ну — утмăлмĕш, çитмĕлмĕшсем...
Çапах вĕçтереп ĕмĕте,
Пур вак-тĕвекпе тĕрмешсе.

Хăрах кусăмпа та пулин
Курайăттăм эпĕ пĕрре
Этемлĕхшĕн çав «икĕ пин»
Тесе пуçланан ĕмĕре!

Мĕскер-ши унта, мал енче?
Пĕлмешкĕн хавасăм çук мар:
Хĕвел-ши этем аллинче
Е пĕр-пĕр туратлă чукмар?

Калаççĕ: этемĕн чăнни,
Суйи — ĕмĕрхи япала.
Эп, çирĕммĕш ĕмĕр çынни,
Калатăп: ан пултăр апла!

Эп куртăм тискер выçлăха,
Шаршанĕ-шаршанĕ виле...
Таçта — çĕрекен пурлăха
Шăлса ывăтатчĕç çиле.

Эп куртăм этемлĕх юнне,
Такам — тăкнăçем хĕпĕртет.
Вĕсемшĕн салтак пит йӳне
Çӳретчĕ вăл çак ĕмĕрте.

Эп куртăм писен тăвана,
Туссен, мăшăрсен ултавне.
Асапчĕ ман пек айвана,
Пĕлсен те инкек сăлтавне.

Каллех çын хура юнпалан
Кĕрсен икĕ пинмĕш çула —
Хыпса çунтăр ĕмĕтĕм ман!
Кунтах ӳпĕнсе эп юлам.

Çын чунĕ хăйне хăй çĕнсен,
Харам пулмĕ, тен, эп чĕнни:
Сире эп шанатăп, çынсем,
Эп — çирĕммĕш ĕмĕр çынни!

* * *

Кашлаççĕ хĕп-хĕрлĕ хырсем,
Сӳтсе яваççĕ, канашлаççĕ.
Паян ман хутăма кĕрсе
Хырсем кашлаççĕ.

Шавлаççĕ тинĕс хумĕсем,
Вак чул-чăла кустаркалаççĕ,
Ман паталла çывхарнăçем
Темскер калаççĕ.

Чарланĕ яр вĕçет çӳле,
Сасси ун ян, ӳпкелешӳллĕ.
Чĕнмест сĕм пĕлĕт, вăл тӳлек,
Вăл питĕ çӳллĕ!

Чарлан çитеймĕ тӳпене,
Ăна — йĕре, тӳпешĕн — кулă,
Каллех шыва вăл ӳпĕнет
Тытасшăн пулă.

Ман ĕмĕтĕм çӳлте вĕçет,
Хыр, кайăк, хум — çавна кураççĕ.

Анчах куллен-кунхи виçе —
Çаплах хура çĕр.

Çăкăр-тăварлăх тăрăшсах
Хăш чух ĕçлетĕп темĕн те пĕр.
Таçта эп каламан сăмах
Черет кĕтет-тĕр...

Кашлаççĕ хĕп-хĕрлĕ хырсем,
Хумсем... Вĕçет чарлан пĕчченçĕн...
Çырман сăввăмпала хĕрсе
Асать тĕнчеçĕм.

* * *

Куратăп кантăкран: Кипек пырать,
Тем чăмăртанă хăй ывăçне.
Пакша валли вăл тунката çине
Куллен-мĕн кетăр мăйăрĕ хурать.

Çав пилĕк пăт таян сунарçăра
Чечен, ачаш чĕре тапать пулас.
Анчах кун-çул пире пуçран шăлмасть,
Эпир çаплах-ха аслă вăрçăра.

Тен, çавăнпах именерех Кипек
Хурать, ним шарламасăр, мăйăрне:
«Эп сылтăм аллăмпа мĕн панине
Сулахаййи ан пĕлтĕр», — тенĕ пек.

Пакши, пăха-пăха, хăра-хăра,
Шăлт-шăлт катса çиет сар мăйăра.
Вăл тав тăваймĕ, уншăн хам вара
Тав турăм сунарçа эп сăвăра.

Этемĕн çынлăхĕ вак-тĕвекре,
Тен, ытларах та палăрать хăш чух:
Пĕчĕккисемсĕр пысăкки те çук.
Çакна ăнлантăм хамшăн эп тепре.

* * *

Хăш чух çыраççĕ е пуплеççĕ:
«Эп вилĕме куçĕсенчен
Пĕрре çеç мар пăхсаттăм», — теççĕ.
Ку йăнăшрах пуплев иккен.

Хăрах кăна-мĕн вилĕм куçĕ:
Пĕчченлĕх камерăн тĕнни,
Пăшал кĕпçин качаллă пуçĕ —
Ак «вилĕм куçĕ» текенни.

Хăлхам ман илтрĕ, куçăм курчĕ,
Эп ас тăватăп пĕтĕмпех.
Халичченех сип-сивĕ хурçă
Тăнлав çумне тивертнĕ пек...

* * *

Эп шухăшлатăп ун çинчен:
Пур пурăнăç, пĕрре — вăл килĕ.
Тинкертĕм тĕпсĕр куçĕнчен,
Мана — сăнарĕ çеç-ха вилĕм.

Сăнарĕ, палăртрĕ: «Ку — çав...
Çырать-и сăвăсем, савать-и
Е çул çӳрет вăл — эп хуçа!
Пĕрре çулать ăна çава!» — тет.

Çулать. Мĕн тăвăн тĕрĕсе?
Çапах тӳшек çинче вилесчĕ:
«Кушак çури çеç мар», — тесе
Чипер тирпейлессе пĕлесчĕ.

* * *

Пĕлтĕм эпĕ малтанах:
Пултарулăх çурчĕ.
Киличчен пуçра çапах
Урăх шухăш пурччĕ.

«Çитрĕ пулĕ пултарни,
Сăвăлла тултармăш
Кунĕн-çĕрĕн тултарни!» —
Терĕм эп, аптрамăш.

Ячĕ тытрĕ çухаран
Леш хайхи хĕр-муза:
«Эс манран ăçта таран?
Эп — пĕртен-пĕр туса!»

Тарăн хăтлă çуртунтан, —
Пулĕ лаç, сарай ман;
Тарăн савнă тусунтан,
Хăвăнтан — тараймăн!

* * *

*...Чăтаймарĕ,тӳсеймерĕ— юрласа ячĕ...*
*...Йĕрсе юрласа ярать...*

Чăтаймарĕ те пуль, тӳсеймерĕ те пулĕ...
Пĕр янранă кулли, пĕр тумланă куççулĕ.

Тĕр тĕрленĕ — юрланă, арланă — юрланă,
Тĕртме ларнă — юрланă, пир çапнă — юрланă.

Ар ача акатуйăн, сĕренĕн сас тунă,
Ят тухни юрласан — çăлтăр витĕр çул курнă.

Сăпка сыпнă — юрланă чипер ача ашшĕ,
Сăпки сикнĕ — юрланă аннемĕр ачашшăн.

Юрăпа юхнă сим, кĕреке кĕр кĕрленĕ,
Юрăран çичĕ ют хăраса сехĕрленнĕ.

Çын çуралнă — юрланă, туй тунă — юрланă,
Юпине лартнă чух юрласах-çке хурланнă.

Кулянатăп пăртак: гонорарĕ-масарĕ
Пирĕн сăввăмăра катăкрах турĕ мар-и?

Халăха юрă пек витеймен-ха поэзи,
Ремесле пулса тăчĕ ку чух вăл, професси.

Укçаран хăтăлсан — чăн каланă çав тейĕр! —
Пулĕç пирĕн чи хӳхĕм, паха сăвăсемĕр.

Манăн шухăшăмран пĕр-пĕр сăвăç, тен, кулĕ:
Чăтаймарăм та пуль, тӳсеймерĕм те пулĕ...

* * *

Тăванăмçăм, çумри çунатăм...
Ачаш та çепĕç-çке чĕлхи!
Эп саншăн яланах çунаттăм.
Ĕлĕкхиех эп, ĕлĕкхи,
Тăванăмçăм, çумри çунатăм!

Ачаш та çепĕç-çке чĕлхи!
Инçе çĕрте ăна илтеттĕм:
Кĕсле янратнă хĕлĕх-и,
Чĕкеç чĕвĕлтетет-и? — теттĕм.
Ачаш та çепĕç-çке чĕлхи!

Эп саншăн яланах çунаттăм.
Юрланă пек калас пулсан,
Çурса парайăттăм чуна та —
Çуррипеле çын пурăнман.
Эп саншăн яланах çунаттăм.

Ĕлĕкхиех эп, ĕлĕкхи...
Епле халь тин юта юратăп?
Чăн-чăнласах-и, тĕлĕк-и —
Хăвна та ĕлĕкхин куратăп.
Ĕлĕкхиех эп, ĕлĕкхи.

Тăванăмçăм, çумри çунатăм...
Çумра çукран астурăм-ши?
Эй, ăш хыптармăш чун ăшши!
Çунтартăн эсĕ, эп çунтартăм...
Тăванăмçăм, çумри çунатăм...

* * *

Янтарлă Латви! Тепĕр хут
Çĕрне-шывна куратăп эпĕ.
Курнин ӳссех пырать хисепĕ,
Йăлтах тӳсеймĕ шурă хут.

Чăнне калас пулсан тата —
Турист кĕнеки мар поэзи.
Гидсем ахаль çăкăр çимеççĕ,
Ан ӳпкелеччĕр поэта!

Хăй чунĕ, хăйĕнле чĕри,
Тĕнчи поэтăн пулмасассăн,
Пĕр-пĕр экзотика курсассăн,
Вара хавас вăл çав тери.

Тепри çӳрет — вăл килĕнчех
Канва пек карнă янтă схема:
Пĕр ярăм сăвă е поэма...
Ун куçĕ — сивĕ кĕленче.

Çӳреччĕрех çут тĕнчере!
Кама мĕн пӳрнĕ ватă пӳлĕх —
Çавна этем çĕклет те пулĕ
(Турăсăрсем ан илтчĕрех!)

Янтарлă Латви, сар çĕршыв!
Эп хут тавраш илсе килмерĕм:
Пăртак канса пăхасчĕ терĕм,
Анчах... анчах мĕн пулчĕ-ши?

Кун-çул кĕскелнине сиссе
Васкаттарать-шим шухăш-кăмăл?
Хама пит хистемесĕр, çăмăл
Тултартăм ак сăмах тирсе.

Шăрçан сăмах тире-тире,
Сасартăк  хам та сăнаймарăм! —
Хайхи ман пулнă тăнă ярăм
Сап-сар шăрçаллă Латвире.

Тавтапуçах эппин сана,
Ян Райнис, Судрабкалн çĕршывĕ!
Ман çул пĕтсен — тепри йĕр хывĕ,
Çапла йăламăр тахçанах.

Çак хăйăра таптанă май, —
Тем астуса-и вăл, ахаль-и, —
Пĕр-пĕр тусне, тен, лăпкăн калĕ:
«Кунта çӳренĕ Хусанкай...»

22.IV—15.V.1963. Дубулты

# ИНÇЕ ВĔÇЕВ

## МАЛТАНХИ ÇАВРĂМ

Куба! Ăçтан сăмах тупăп
Санăн ятна мухтама?
Юррăн кĕрен чунăма,
Эсĕ — ман савăнăç, Куба!

Куба! Хапху санăн хупă,
Çичĕ ютла сĕкĕнсен.
Çур сăмахран та сисен
Çын кăмăлне, сыхă Куба!

Куба! Тăшманшăн эс — тупăк.
Туслăх-тăванлăх тĕнчи
Пирĕн Чăваш çĕрĕнчи
Паттăр юман пек вăл, Куба!

Куба! Эп ватăлăп, супăп, —
Сан сухалу асăмра
Юлĕ хура та çăра:
Эсĕ — ман çамрăклăх, Куба!

## ТАПРАНАТПĂР

Эппин Кубăна! Мускавран тапранатпăр.
Мускав — Çĕр варри. «Кăвапи» тет такам.
Эпир вăтăр иккĕн пĕр ушкăн пулатпăр,
Ытти пассажир — урăх çул тытакан.

Вĕçев хальлĕхе Прагăна-ха. Çул майăн
Чехсен çĕрĕнче хăнара пулмалла.

Тен, Швейк салтака тĕл пулса эс пуç тайăн,
Сăра куркине шаккăн, тен, унпала...

Эпир Прагăна. Çавăнччен-ха ку кайăк.
Унтан вăл вĕçет пуль тепрер çĕршыва.
Чехсен сывлăш çулĕпеле илсе кайĕ
Пире урăххи инçетри утрава.

Туссен хурçă кайăкĕн, тус командирĕн
Хастарлăхĕпе вĕçмелле унталла.
Эпир вăтăр иккĕн. Кам-кам пур-ха пирĕн?
Малтан ман çавна каласа хумалла.

Ялан вăл çапла: хăш-пĕрне сăнамастăн,
Юлмасть нимĕнпех те асра хăш этем.
Хăшне, пĕр курсан, ĕмĕрне манаймастăн,
Çавсен сăн-питне кăшт кăна ӳкерем.

## ЙЫШ

Çакă йыш асра усранчĕ.
Антти Тимонен, ман тус,
Ушкăнра вăл старăстаччĕ,
Унпала эс пуç ан ус!

Сарă çӳçлĕ, чакăр куçлă
Çав карел — хаваслă çын.
Эпĕ хам та пултăм пуçлăх:
Заместитель манăн чин.

Антти хушрĕ: «Шушчăк пулăн,
Чап сахал тесен тата
Сувенирлăх мул эс пухăн,
Пилĕк тенкĕ карт ята».

Вырăсла вăл, хамăр евĕр,
Калаçать ытла çемçен.
Финн чĕлхи çапла çемçе-тĕр,
Çав чĕлхе-çке карелсен.

Канашларăмăр та иккĕн
Сăмах татрăмăр çапла:

Тем курсан та, кăмăл пирĕн
Нăйкăшусăр пулмалла!

Кам тетри? — Хура уссиллĕ
Баурджан Мамыш-Ули.
Паттăр çын, яштак пӳ-силлĕ.
Тилĕ çĕлĕк пуç тулли.

Вăл Панфилов командирĕ
Пулнă аслă вăрçăра.
Кубăсен вăрçи тин иртрĕ,
Баурджан унта асра.

Унăн хăйĕн кĕнеки те,
Хăй çинчен çырни те халь
Питĕ хаклă, кирлĕ питĕ
Тин çĕнтернĕ халăха.

Куба влаçĕ ахаль мар-тăр
Çав мухтавлă казаха
Пирĕнтен ыйтса пĕр тапхăр
Хăварать ытлараха.

Ак çапла эп тĕл пулсаччĕ
Килес кун ăна ирех:
Автоматчикпа утатчĕ,
Хăй — Джамбул çĕлĕкĕпех.

Яланхи пекех куç курчĕ
Вăрăм мăштăк та пирус:
«Мăйăха ан тивтĕр вучĕ!» —
Шӳт тăвать Баурджан тус.

Çĕлĕкне хывса силлерĕ:
«Пинăс ятлă утрава
Час вĕçсе ӳкетпĕр, — терĕ, —
Ырă сунăр çĕршыва!..»

Пур тата Гордейчев пирĕн.
Çамрăк сăвăç. Вырăсран.
Океан çинче вăл вирлĕн
Сăвă калĕ-ха кайран.

Хальлĕхе эпир пăртакăн
Паллашатпăр тин кăна.
Сăмахран сăмах... вăрахăн
Пĕр-пĕрне тĕпче, сăна...

Драматург Мĕтри Девятов
«Кубăпа Кубань» пьеси
Паллă пуль, тен, такама та,
Хăйĕн пит йăваш сасси.

Пит сăпайлă-мĕн çав каччă,
Каярах, таçта çӳлте,
Ман блокнот çине çырсаччĕ
Ак çапла вăл пĕр тĕлте:

«Хамăр çĕр инçелнĕçемĕн
Ытларах пăшăрханан.
Кăмăла мĕнпе эмеллĕн?
Аялта халь океан!..»

Пурччĕ çав эмел те, пурччĕ:
Утмăл кăшт тултарайман
Элексантăр Исбах пулчĕ
Ушкăна йăпатакан.

Такмаксем те такмаклатчĕ,
Шӳт шӳтлетчĕ пит ăста,
Хăйне май вĕçев хаçачĕ
Çакнă пек самолета...

Тăрăхлавĕ, эпиграмĕ
Е пародилле çавра —
Пур енчен те аптăрамĕ,
Тав эппин профессора!

Кам тата? Ăсатнă Латви
Лийă Бридăкă хĕре:
Сăввине те сăвăлать вăл,
Юрă та юрлать хитре.

Илтрĕм эпĕ: пысăк ярăм
Çырнă-мĕн вăл латышла.
Ăмăртмашкăн эп шутларăм
Унпала халь чăвашла.

Кĕртменни татах та юлнă-иç:
Литваранччĕ ку поэт —
Лăпкă Владас Мозурюнас,
Пуçĕнче хура берет.

Хурăнташ хулан, Хусанăн,
Çыравçи те пур иккен.
Хай Вахит халь — тусăм манăн,
Эп унччен ăна пĕлмен.

Алтая та астăватăп:
Лазăр Кокышев пулса.
Ыттисем çинчен... тăхтатăп, —
Кичемрех, ят çеç тулсан.

Тен, вĕсем çул майăн кĕрĕç
Каярах çак ярăма.
Малалла вĕçетпĕр кĕç-вĕç,
Вăхăт çук халь чарăнма.

## «УНĂН ИК МĂШĂР ÇУНАТ!»

Прагăра тин мар эп пулнă.
Пур юлташ та, тусăм та.
Хамран хам ыйтап: «Мĕн юлнă
Курманни тата кунта?»

Пăхкалатăп «Руде право» —
Чех чĕлхипеле хаçат.
Чим-ха, кам ку? Çав-и? Çавă!
Хамăр Николаев, чат!

Юнашар... Ах, мур илесшĕ,
Ку та курнă пекскерех.
Тутапа тута пĕрлешнĕ,
Чуп тăвать каччи хĕре!

Валентина! Эс-им, кинĕм,
Шурă-шурă тумпала?
Ахаль мар хаçат эп илтĕм,
Ав епле-мĕн япала!

Кăларатăп та шутлатăп
Юлашки кронăмсене,
Телеграмма çаптаратăп
Мускава, çĕр туй килне...

Лондона вĕçмешкĕн вăхăт,
Вара пулĕ океан.
Чĕресемĕр хăвăрт-хăвăрт
Тапкалаççĕ хушăран.

Анчах пĕлчĕ пирĕн ушкăн
Андриян авланнине.
Кăшт алхаслăн та кăшт шуххăн
Пăхса илчĕç ман çине:

«Океан-и? Нимле хумĕ
Шиклентермĕ халь чуна,
Чăвашпа хăрушă пулмĕ, —
Унăн ик мăшăр çунат!»

## ПРАГА — ЛОНДОН

Этем тунă кайăк ăшне эп кĕретĕп.
Час пăхăп çӳлтен Прагăна. Лайăх кур!
Тăвата моторĕ — тăвата чĕре пек,
Пĕри ывăнсассăн тата виççĕ пур.

Салонĕ пит ирĕк, маччи — пĕлĕт тейĕн:
Сенкер тĕс çинче çăлтăрсем — кĕмĕлтен.
Чĕнет стюардесса чехла пит чеченĕн:
«Иртсемĕр, ак вырăнăр, çак тенкелтен...»

Ларатăп. Туссем ларса тухнă пайтахăш.
Тепри тин кĕрет-ха, шырать вырăнне.
Пин-пин ăмăрт кайăк-ши ку е хуракăш?
Эп хатĕр. Çăтап аэрон эмелне.

Канфет валеçет стюардесса. Пит лайăх:
Пăртак кăвасак, çĕкленӳçĕн кавлен.
Тапранчĕ, утать-ха малтан улăп-кайăк,
Унтан вăл чупать. Хăвăрт мар-ха, хуллен.

Вара вăй хушса вирхĕнет хыттăн-хыттăн.
Хăпатпăр çĕртен пĕр сисмен самантра.
Кун пек кайăка мĕн мелпе эсĕ тытăн?!
Ăçта халь ăна кăкармалăх кантра?

Вĕçев ас тутарчĕ мана пĕр мехеллĕх
Хитре Чĕкеçе вăрлакан кайăка:
Ӳпле пек çунатлă, кăвар пĕсехеллĕ,
Вĕçет хашкаса вăл таçта аякка.

Ман халăх фантазийĕн çăмăл çуначĕ
Çĕкленĕ кун-çул йывăрне ун чухне.
Юмах самани чăнлăхпа халь çуталчĕ:
Чăваш та çитерчĕ Икар ĕмĕтне...

Манпа юнашар мăшăр яш. Паллашатпăр:
Родригеспа Мартта. Шăпах Кубăран.
Арçынĕ — посольство çынни. Секретарь-тăр.
Канмашкăн каяççĕ килне Прагăран.

Ăçта эс, Колумб? Карапу сан ăçта-ши?
Миçе уйăх ишĕ вăл çак хутлăха?
Шик пур: тен, арканĕ, çултан, тен, аташĕ...
Кил, лар, юлас марччĕ тесен хурлăха.

Халь кӳршĕ яла кайнă пек çамрăк мăшăр
Каять ак Çĕр чăмăрĕн тепĕр енне.
Вĕçет каравелла, шумасть кăшăр-кăшăр.
Кулаççĕ куçсем чăр пăхса пĕр-пĕрне.

Чехла сăмах хушрĕç. Итлеп ăнкарасшăн
Славян тымарне — вырăсла пĕлнинчен.
Родригес сĕнет сигарета: «Тархасшăн!»
Тытап, туртмасан та, — кичем-çке пĕччен.

Кĕç Мартта тени кăларать сăнӳкерчĕк:
Илемлĕ ача, кăтра пуçлă, хура.
Нумай калаçатпăр-и, çук-и, пĕлтерчĕ
Пире стюардессăмăр — Лондон умра.

Çынсем чӳрече таврашне сырăнаççĕ,
Чаршав сирĕлет, уçăлать çавра куç.
Унта та, кунта та пуçсем тăрăнаççĕ,
Часах хушăк тупрĕ ак манăн та пуç.

## АРИЭЛЬ

Лондон. Вунă çухрăмран
Эп пăхап ăна çӳлтен.
Тĕрлĕ лампа çутнăран
«Асамат кĕперĕ» тен.

Сарă, симĕс, кăвакрах,
Сенкерри те кĕренни...
Паллă кашни районах
Хăйĕн тĕсĕ пĕлтерни.

Хĕрлĕ лампа çук вара,
Тем... çутман ăна хула.
Те куçа йăмăхтарать,
Те сăлтавĕ урăхла?

Хĕрлĕ вăл ĕнтĕ хĕрлех —
Пирĕн çăлтăр та ялав...
Çапларах шутларăм çех —
Ариэль çывхарнă ав.

Ку аэродром пулас.
Анмалла тет. Хатĕрлен!
Лондон юлчĕ, курăнмасть,
Çитменне тата — çĕрле.

Тĕрĕслеççĕ халăха:
Мистер çав та мистер ку...
Хут çине пăха-пăха,
Сыхă чин тăрать салху.

Пĕр ик-виçĕ сехете —
Майлашу те çураçу.
«Мистер» пултăм эпĕ те,
Уншăн-куншăн сăмах çук.

«Плиз» («тархасшăн»), — текелет,
Çывхарать çын ман пата.
Куçлăх витĕр хăй тĕллет
Пĕр хама, пĕр паспорта.

Кубăна кайма тесе,
Хамран хам кула-кула,
Виç эрне эп хистесех
Çитĕнтертĕм сухала.

Çавăнпа тĕллет-и, тен,
Акăлчанĕ паçăрах.
Чут тухмарĕ инцидент:
Паспортра ман пит çарах!

Пирĕнпе чылай ятсем,
Паллисем те пур, куран.
Пирĕнпе азиатсем —
Чалăш куçлă та хура.

Тем хушса вăл янă-ха
Çак йыша «хĕрлĕ Мускав!»
Хырнă хулăн янаха
Пăркалать чиновник шав.

Вăхăтлăх транзитлă хут
Тыттараççĕ ак алла.
Аэровокзал çап-çут,
Утăмлатпăр шалалла.

Ăпăр-тапăр сутă пур:
Хут, канверт çырмалăх ак,
Пукане, тен, илĕн, кур,
Лимонад, резин чăмлак...

Пилĕк доллар — питех мар...
Кулкалать йыш, калаçать.
Тен, пĕлтерĕ çĕн хыпар
«Дейли Уоркер» хаçат?

Пăхкала эппин часрах,
Чĕлхине пĕлсен — вула,
Малтанхи страницăрах
Пĕр ӳкерчĕк тĕл пулан:

Андриян кĕрекере,
Тусĕсем йĕри-тавра...
Туй тăваççĕ-çке лере —
Хамăр шавлă Мускавра!

Туй кĕрлет кĕрхи кĕрпе!
Çунатланчĕ мăшăр хул...
Ярăнатпăр çăлтăр пек,
Курман Лондон, сывă пул!

## ЭТЕМ ĂСНЕ ШАНАТĂП

«Çӳлти патшалăх» тенĕ
Ĕлĕк-авал такам.
Ку юмахсем кивелнĕ:
Çӳлти, çĕрти — эп хам!

Ак манăн хурçă кайăк,
Ман «Боинг» ярăнать.
Хушсассăн — çил пек кайĕ,
Чарсассăн — чарăнать.

Британи тунă теççĕ,
Ун командирĕ — чех,
Вĕçет чăваш поэчĕ.
Ку пĕчĕк тĕслĕх çех.

Кашнин хăйне хисепĕ,
Хăй ĕçĕ тĕнчере.
Çакна каласшăн эпĕ:
Çын ăсĕ вăл — пĕрре.

Британи инженерĕ
Хут хуратни нихçан
Мана вăл сисĕнмерĕ,
Анчах чун хушрĕ: «Шан!»

Те шухăш пĕр енленчĕ,
Те пирĕн пĕр шăпа? —
Пайтах çĕршыв поэчĕ
Халь вĕçнĕ пек манпа.

Айра ак Англи. Тайрăм
Пуçа ун поэтне:
Манпа пăлхавçă Байрон,
Вăл маннă лорд ятне.

Çак сăввăмсем тухаççĕ —
Шотландишĕн тем мар,
Анчах та Бернс сухаçă
Ларать ак юнашар.

Мана тĕреклĕх пачĕ
Ака-суха тĕнчи.

Эй, Джон, кӑпӑклансамччӗ,
Йӳҫсем, Урпа Пӗрчи!..

Манпах вӗҫет ак Горький —
Ҫил-тӑвӑл йыхравҫи,
Манпах вырнаҫнӑ Лорка —
Испани юрӑҫи.

Инҫе паян Балканӑн
Ту-чакӑлӗ манран,
Анчах пырать тӑванӑм
Вапцаров манпалан.

Персе вӗлерес умӗн
Ик-виҫ сехет малтан
Вӑл ҫырнӑ сӑвӑ хумӗ
Ҫапать мана таҫтан.

Манпах Джалиль ҫӗкленнӗ,
Вӗҫет иккен Муса.
Кӗҫ тутарла пупленӗн
Илтетӗп ҫав сасса:

«Тӑхлан та, вут та ҫурӗ,
Анчах эпир чакман.
Ман пурнӑҫ — пулчӗ юрӑ,
Халь юррӑм — пурнӑҫ ман...»

...Таҫта ӗҫлет турбинӗ,
Йӑлт парӑннӑ ҫынна.
Мана шанса вӑл илнӗ,
Ман — шанмалла ӑна.

Этем ӑсне шанатӑп.
Пилочӗ курӑнмасть,
Курмасть-ха вӑл мана та,
Анчах шанать пулас.

Пӗрне-пӗри шанатпӑр,
Металл вӑл — ҫын тарҫи.
Ҫӗр чӑмӑрӗн пӗр паттӑр:
Этем — тӗнче хуҫи!

Вӗҫет карап, хӑй пӗчӗк
Тӗнче пек, сывлӑшра.

Никамăн та çук вĕчĕ,
Çук кĕвĕçӳ ăшра.

Çынсем чăмăртанаççĕ
Пĕр вăрттăн шухăшпа:
«Çӳлте сĕм космос каçĕ,
Мĕн курĕ-ши шăпа?..»

Пĕр канаша килеççĕ
Çынсем кун пек чухне,
Кулса пăхса илеççĕ
Ĕненнĕн пĕр-пĕрне.

Сăмахсăр калаçаççĕ
Тути е куç харши...
Ним мар пек аслă влаçĕ,
Пуянлăхĕ, патши...

Ним мар пек, ухмахла пек,
Пур вăрçăсем-мĕнсем.
Шалта, тӳрех калап эп,
Пит ырă эс, этем!

Этем чунне ман тавăм,
Тавах этем вăйне,
Этем ăсне мухтавăм,
Мухтав ăна хăйне.

Ăс, чун, хăватлă мимĕ,
Ӳпке-пĕвер, чĕре —
Йăлтах ку пайланми-мĕн:
Этем вăл — пĕр. Пĕрре!

## СТЮАРДЕССА ЯРМИЛА

Стюардесса Ярмила!
Сан валли чăвашра
Рифма çук... «Милă, милă», —
Текелеп хам ăшра.

Прагăн уйăхлă каçĕ —
Сан сенкер тумтирех.
Куçусем шăтараççĕ
Чĕрене витĕрех.

Чунупа эс мĕнле-ши?
Мĕн-ши сан чунунта:
Çутă-çутă телей-ши,
Хур та пур-ши унта?

Тем те пулĕ этемĕн,
Анчах çӳллĕ тӳпе —
Чи хăюллă чĕрешĕн,
Чи тасишĕн теп эп.

Стюардесса Ярмила!
Сан ятна сăвălла
Янратма: «Сила, сила», —
Текелеп вырăсла.

Чăнласах эс вăй-халлă,
Çук хăрав,именӳ,
Пултарать çăмăл алă,
Куçунта ĕненӳ.

Океанĕ хумхантăр,
Унăн ĕçĕ çапла.
Эп туяп: тем пулсан та
Хăруш мар санпала!

## ОКЕАН, ОКЕАН...

Çĕр çăмха пек çеç пуль, ахăр,
Хамăр ӳснĕрен-и, тен...
Хĕвеле, анма памасăр,
Хăвалатпăр хыçĕнчен.

Пĕр хура, пĕр тĕттĕм симĕс
Океанĕ аялта.
Çиелтен пăхма вăл тикĕс,
Темĕскер-ха ун шалта!

Шăхăрса вĕçсе иртетпĕр
Хĕвеланăç еннелле.
Сывлăшра юлмасть, пĕтет йĕр —
Хут çине ӳкермелле.

Çав хутра-çке пĕтĕм шанчăк
Пирĕн пек ăш хыпписен.
Упранса юлсан аванччĕ
Çак вĕçевĕн сыпписем.

Пĕрер тĕкĕн çаралминччĕ,
Усăнса кайран çунат.
Çамрăк-кĕрĕм ăнланинччĕ
Ман çӳлте вĕçен чуна.

Эп С о в е т ятпа çĕклентĕм,
Çав сăмахăн ăшшине
Ăшăма илсе çĕнелтĕм
Кивелмеслĕх малашне.

К о м м у н и с т ятпа çитертĕм
Архимедăн ĕмĕтне:
Çĕре глобус пек тĕпчерĕм
Çавăрса енчен енне.

Эп ч ă в а ш ятпа йĕрлерĕм
Тӳпери çăлтăрсене:
Николаевпа çӳрерĕм,
Сăввăн кĕтĕм чĕрине.

Унпала пĕрле эп тытрăм
Алтăр Çăлтăр авринчен.
Пархатарлă сим эп сыпрăм
Çут тĕнче нӳхрепĕнчен.

Вĕресе вылярĕ юнăм
Тем тума пултарасла!
Ăс çуталчĕ, туйрĕ чунăм:
Тухмаллах эпир асла...

Хĕрĕх çул ытла ман стартăм
Хăвалать таçта инçе.
Сăввăмпа шухăшлаттартăм
Чăваша эп хăй çинчен:

«Тĕрлĕ юнлă тĕрлĕ халăх
Вăй хурать ăмăртура.
Ман та пулĕ вăй хумалăх, —
Пур чĕлхем хама кура!..»

Пурнăç хытă тĕрĕслерĕ
Çулсерен ман çул-йĕре.
Эп — чăваш. Анчах писмерĕ
Никамран та ман чĕре.

Аслине аслах картатăп,
Кĕçĕнни — унпа танлаш!
Ят çĕртмен чунпа-варпа та,
Чĕлхемпе те эп чăваш.

Паспортра çаплах пĕлтернĕ,
Ак вăл — кăкăр кĕсйинче.
Океанăн тепĕр енĕ
Шухăшлатăр кун çинчен.

Пурнăçра пулсассăн танлăх,
Аркатсассăн пусмăра
Пĕчĕк халăх — аслă халăх
Пулĕ аслă çĕршывра.

Ман Российăм, Украинăм,
Манăн Грузи, Казахстан —
Пурте, пурте хамăр çыннăн
Ал парать мана таçтан.

Манăн Польша, ман Болгари,
Манăн Венгри мар-и-ха
Манпала вĕçсе халь кайрĕ,
Ыр сунса ман халăха?

Резерваци тĕрлĕ хурлăх
Кăтартан индейсене
Кăшкăратăп эп шыв урлă:
«Пăхса юлăр ман çине!

Сирĕнпе пĕрехчĕ эпĕ.
Тӳсрĕм мăшкăл, куртăм шар...
Революци — çын хисепĕ,
Вăл сиртен инçех те мар.

Эп унта вĕçетĕп халĕ.
Çил вĕрет пулас хивре...
Хуп-хура Фидель сухалĕ
Курăнать-ши халь сире?..»

# АЯЛТА АТЛАНТИКА, ÇӲЛТЕ БЛОК, РОМАНТИКА

Канада. Ньюфаундленд çывăхĕ ку.
Ку — аэропорт теççĕ: Гандер.
Тавралăх сĕм тĕттĕм, тавралăх салху,
Таçта — çывăхра — океан-тăр.

Вĕрет нӳрлĕ çил, лутăркать çи-пуçа.
Те каннă эпир, те канманччĕ.
Çаплах ыткăнса тухăçран анăçа,
Кунта та çĕрле кайăк анчĕ.

Те кăнтăр апачĕ, те ир-ха тин çеç,
Те каç пулса çитнĕ-ши халĕ?
Пăтранчĕ те кайрĕ режим çул çинче,
Арпашрĕ сехет, пĕтрĕ канлĕх.

Кăларăр часрах юлашки центсене:
Илетĕн-и хут, кăранташ-и...
Ик-виç сехетрен аялта сисĕнет
Америк çыранĕ тавращĕ.

Мĕн курăн çĕрле? Хуп-хура океан
Кĕл тĕслĕ сивлек пĕлĕт витĕр
Уçать те хупать сив куçне хушăран,
Калатăн ăшра: «Ĕмĕт çиттĕр!..»

Анчах вăл кăвак хуппи мар, çӳлте мар,
Унран нумаях ыйтаймастăн.
Е пирĕн вĕçен кайăка тĕпсĕр вар
Ахрат пек çăтса антарсассăн?

Тем те пĕр кĕрет ун пек чух шухăша,
Паллах, ман çеç мар ку çапла-тăр.
Поэзи! Пĕр çавă вара пулăшать,
Унпа хамăра йăлт манатпăр.

— Пуçла, сарă вырăс тăванăн ачи! —
Тесе кӳршĕме эп houseкаларăм.
Владимир Гордейчев, Воронеж каччи,
Тирет сăвăсем ярăм-ярăм.

Вăл Блок săввине, «Поэтсем» тенине,
Вуларĕ — хăй çырнăн — хĕрӳллĕ.
Хăватлă сăмах çĕнĕлле илтĕнет,
Кунта вăл пушшех витерӳллĕ:

«Сана пултăр арăм та ăшă апат,
Хĕсмек конституцин эс тусĕ.
Поэтăн ăш-чикĕ тĕнчешĕн хыпать,
Çитмест поэта конституци!»

Хура тӳпере янăрарĕ çак сас,
Айра — ахăрашрĕ сĕм авăр.
Нью-Йоркăн хăлхи илтсе юлчĕ пулас...
Эпир-малалла çул тытатпăр.

## ВИÇĔ КАЧЧĂ

Аэродром «Хосе Марти»,
Анать ак хурçă кайăк.
Эпир пулсан ун çăмарти —
Çĕр штук пурах пуль лайăх.

Анатпăр-ха пăхкаласа,
Çире — пальто та шарăх.
Кубăрисем кулкаласа
Пăхаççĕ: питĕ шăрăх!

Чавса таран кĕпе çанни,
Çурма çара мăй-кăкăр.
Сандаль ура. Пур çарранни.
Сăнсем — шăратнă пăхăр.

Анса çитейрĕмĕр — ума
Çывхарчĕ виçĕ каччă.
Ку опереттăлла тума
Ăçта-ши эп курсаччĕ?

Эреш çӳçеллĕ шăлавар —
Испани тухрĕ куçăн.
Кĕпи — пăхма та меллĕ мар:
Куçа шартать çут пурçăн.

Пуçĕсенчи шĕлепкисем —
Кашни пĕр сунчăк майлă!
Кала пуçларĕç кĕвĕсем,
Юрлаççĕ пит сăпайлă.

Пĕрин гитар, теприн, куран,
Тӳнкки-тӳнкки тамтамĕ:
«Уйран çӳпçи пек параппан»
Тесессĕн — аптăрамĕ.

Пăхатăн виççĕмĕш качча,
Пăхатăн та итлетĕн:
Ик аллинче ик шакăрча
Шакăртатать илемлĕн.

Ун ячĕ имĕш «маракас»,
Темле граната евĕр.
Чуна вăл кăтăклать кас-кас
Чĕпĕттерсе илсен пĕр!

Юрлаççĕ туслăх юррине:
«Совет» та «Куба» теççĕ.
Юратрăм халăх йăлине.
Автобуса чĕнеççĕ.

Гаванăна хыватăн куç,
Кунта апла-мĕн кăмăл...
Эй, виçĕ каччă, тавтапуç!
Чуна халь çăмăл-çăмăл...

## АВТАН

Кубăра кирек ăçта та
(Мĕншĕнне пĕлен кайран)
Çул юпписенче куратăн
Акăш-макăш пĕр автан.

Мăн çунатлă, мăн хӳреллĕ,
Киккирикĕ — вĕçкĕнле:
Чаплă, хĕп-хĕрлĕ тӳпеллĕ
Генерал çĕлĕкĕлле.

Автанне туса пĕтернĕ
Тĕрлĕ пурçăн татăкран.
Тĕрлĕрен хăю хĕстернĕ
Сăмсипе çыртса автан.

Карăнса кăна тăраççĕ
Хăюсем пур тавралла,
Маршрута-мĕн кăтартаççĕ:
Хăш курорт та хăш хула...

Çул çӳрекенсен рекламĕ
Çавнашкал иккен кунта.
Мĕнле çын, курсан, шутламĕ:
«Тен, тухас пуль хамăн та...»

Çав автан пире ăсатрĕ
Хальлĕхе Гаванăна.
Автобусĕ тăрăлтатрĕ,
Çит те чăм-ха ваннăна!

## ПУÇЛАМĂШ СĂМАХСЕМ

Кунти çынсем ик сăмаха иленнĕ:
Пĕри «товарищ» вăл, тепри вăл «Ленин».

Ак негр чăматан йăтса кĕрет,
«Товарищ» тет те кăкăрне тĕллет.

Унтан вăл «Ленин» тет сана сăпайлăн.
Эс, ăнланмасăр, именсе пăхатăн.

Вăл Ленин сăнарне ыйтать иккен,
Ача пек савăнать вара, илсен...

Лифтра ĕçлетчĕ пĕр çап-çамрăк каччă,
Мана улăхтаратчĕ, антаратчĕ;

«Товарищ» терĕ, кăкăрне тытса,
Унтан вăл «Ленин» терĕ ал йăтса.

Анчах ман пĕтнĕччĕ Ильич сăнарĕ:
Ялав та Кремль пурччĕ... Вăл суйларĕ.

Пĕрне тирсессĕн кăкăрĕ çумне,
Вăл «Ленин!» тесе пăхрĕ ун çине.

Кайран эп тĕрлĕ çынсене курсаттăм:
Шкулта, хирте-и... Тĕрлĕ паллă патăм:

Ракета, спутник, хĕрлĕ çăлтăр-и...
Пуриншĕн те хавасчĕ çав тери.

Анчах, пĕрне-пĕри кăтарткалуçăн,
Каллех эп пĕр сăмах илтеттĕм уççăн:

«Ак манăн та пур Ленин!» тенĕ пек
Шавлатчĕç савăнса пĕр-пĕринпе.

Çакна кунта эс ăнланса илетĕн:
Совет палли — нимрен малтан вăл Ленин.

## УÇĂ

Вăтăр икĕ хутлă хăна килĕ
Туса лартнă пĕр миллиардер.
Хăйĕн мулĕ е вăл ашшĕн пилĕ —
Ылтăн пулнă вăйлă çав хатер!

Ăçта пынă — çавăнта çаратнă:
Пĕр центран пĕр доллар тăвасси —
Ак мĕне вăл хăйшĕн саккунлатнă,
Халь кунта ун... тытăннă сасси.

«Революци!» — тенĕ халăх хыттăн,
Туртса илнĕ пĕтĕм пурлăха.
Ним те тăвайман хăватлă ылтăн,
Парăннă вăл паттăр халăха.

Хăй тирне çăласшăн, кашкăр майлăн,
Тухса шунă чаплă çурт хуçи.
Анчах йĕрĕ юлнă çĕр çăтманăн,
Акă вăл — ман пӳлĕмĕн уççи.

Ун çинче «Гавана Хильттан» курăн,
Хушамачĕ — кивĕ хуçаннах.

Хăна килĕн ячĕ ĕнтĕ урăх:
Вăл «Гавана Либре» тахçанах.

Каялла ăна улăштармалăх
Вăй ан пухтăр мул йĕри-тавра:
«Ирĕклĕ Гавана» тенĕ халăх,
Ун уççи тĕреклĕ алăра.

Эп чăваш пуçпа çапла шутлатăп:
Революци — перекет, тирпей.
Уçă вăл тем мар та-ха... çапла та...
Тимĕр-çке! Хисепĕ те пинпе.

Тепĕр тесен пĕлччĕр: вăхăт çитĕ —
Чăн телей кӳмешкĕн çĕр çине
Ĕç сынни çапла ак ярса тытĕ
Пĕтĕм Хильттансен уççисене!

## ТĔП ШУХĂШ

Пăртакçă тунсăхлан киле те,
Çапах каламăн: «Эп ютра».
Атлантика шавне итлетĕп
Эп çирĕм пиллĕкмĕш хутра.

Хушка хумсен чарусăр çарĕ,
Чĕвен тăрса çите-çите,
Çыран чулне сулмаклăн çапрĕ
Çине-çинех ак пĕр тĕлте.

Ку — Мекçĕк шыв кукрийĕ теççĕ.
Лерен — Флорида çурутрав
Тăсса тăрать хăйранă çĕçĕ,
Кунта турри çăлаймĕ çав.

Хыпать-сӳнет çыран маякĕ,
Çӳлте прожектор ухтарать...
Хăватлă революци çакă:
Çынна вăл хăрами тăвать.

Ăна-çке темĕн те хăратнă:
Ют пусмăр, выçлăх, тан çукки;

Пуп тамăкпа сехре хăпартнă...
Нихçан тек пулмĕ ун пекки!

Пур халăхăн та кашни килĕн
Хавасĕ те кунта пĕрех:
Пароль — «Тăван çĕршыв е вилĕм!»,
Чĕневĕ — «Çĕнтеретпĕрех!»

Çав сăмаха ялан илтетĕн,
Вăл «Пĕтĕм влаç Советсене!»
Тени пекех пыра-киле, тен,
Вырнаçĕ халăх музейне.

Халь — чĕрĕ вăл: çĕклет вăя та,
Хăвăртлатать ман чĕреме.
Каллех хама стройра туятăп,
Салтак пек хатĕр кĕрешме.

## ИКĔ АЛЛĂН ИК ПӐРНИ

Кĕркелетĕп эп пĕр хутлă
Кафене çак кунсенче.
Коккă-колă питĕ тутлă,
Пыл та сим чĕлхем çинче.

Пăр катти ярса парать те
Тултарса ĕçтерекен —
«Шăрăхра уçăлтарать», — тет,
Çавăн пек чухлап кĕскен.

Пианин пуканĕ евĕр
Çаврăнать çавра пукан.
Çаврăнма пăртак кирлех-тĕр
Çын çинче çынах пулсан.

Эп ларатăп, çаврăнатăп,
Пăхкалап йĕри-тавра.
Коккă-колă сыпкалатăп,
Ĕмкелеп хайхи пăра.

Хăш-пĕри хаçат вулаççĕ
Ĕçнĕ-çинĕ хушăран;

Эп ютраннине чухлаççĕ:
Пуплеме чĕлхем çук ман.

«Атăл! — теп, — Чăваш çĕршывĕ!» —
Текелетĕп хам çапах.
Ăс-тăнне тепри, тен, хывĕ,
Калаçас килет çынпа.

«О!» — тет кӳршĕм ман, ăнланнă,
Ик аллин ик пӳрнине
«Валентина-Андриано!» —
Тесе тăсрĕ хăй умне.

Йăл кулса курка тултарчĕ.
Юнашар çав ик пӳрне
Мана кăмăллăн култарчĕ, —
Ăнланатпăр пĕр-пĕрне!

## ИСПАН ЧĔЛХИ УРОКĔ

Çунать пĕр сăмах симĕс çутăпала:
«Пассе». Ăнланатăп çапла: «Уçă çул».
Каçап урам урлă, пăхап каялла,
Унта — хĕрлĕ вут: «Но пассе». — «Çук каçу».

Испани чĕлхи... Маншăн çак мĕскерне
Утрав çыннисем ăнлансанччĕ паян!
Каллех эп куратăп Мадрид çуннине:
Хаяр тавăру, йӳçĕ тĕтĕм, ылхан...

«Пассе... Но пассе», — тетĕп хам ăшăмра.
Каллех ыратать пирчейми çав суран.
Пĕр сасă янратчĕ мĕн пур Çĕр тавра:
«Иртейменĕç!» — тееттĕмĕр. — «Но пассаран!»

Çав сасă ун чух пулчĕ пирĕн тупа.
Анчах вĕсем иртрĕç ватса та хĕссе...
Эй, Куба! Эс пӳлтĕн юта кăкрупа,
Куçне хĕрлĕпе йăмăхтар: «Но пассе!»

## НИКОЛАС ГИЛЬЕН
## ПАТĔНЧЕ

Тăхăр çул ăна курманччĕ.
Паллашсаттăм Мускавра.
Астутартăм та — пуçланчĕ
Калаçу халь çав тавра.

«Эс-им-ха ку, тусăм?!» — терĕ
Хыттăн, Куба йăлипе,
Çупăрларĕ те кӳпкерĕ
Çурăмран вăл аллипе.

Малтанах, тен, паллаймарĕ:
Пĕркеленчĕкĕм миçе!
Кунĕ-çулĕ çапла мар-и
Çын тенин çак çĕр çинче...

Хăйĕн пуçĕ те чалланнă,
Хăй те туртăннă пăртак.
Кулли çеç çаплах сыхланнă,
Ачаллах кулать-çке çак!

Туссене аса илетпĕр:
Çав ăçта та ку ăçта?
Хăшĕ çук ĕнтĕ, пĕлетпĕр,
Хăшĕ тайăлнă ватта.

Поэтсем çĕре кĕреççĕ:
Элюар, Вургун, Хикмет...
Çĕр çине юлать поэзи,
Çук ăна алтса чикме!

Çук Гильенăн сассине те
Пытармашкăн тĕнчерен,
Гитарпа вăл илтĕнет-и, —
Вуласа-и эс илтен...

Хальлĕхе вăл — чĕрĕ туртăм,
Чĕрĕ шухăш, юн, чĕре.
Савăнса ăна эп куртăм
Хам телейĕмшĕн тепре.

Куçĕсем вутла çунаççĕ,
Çут хĕлхемĕ сирпĕнет.
Вирелле сăмси çуначĕ
Сарăлать те пĕрĕнет.

Хăнасемшĕн вăл кăларчĕ
Куба ромĕ «бакарди».
Сӳрĕк мар та ун хăвачĕ,
Астивсен, тен, пырать-и...

Кăмăлне епле хăварăн
Тараватхуçамăнне?
Çул инçе-çке: тен, курайман,
Ыталаймăн пĕр-пĕрне...

Поэтсем çĕре кĕреççĕ,
Çук унтан хăпма чикмек.
Çĕр çине юлать поэзи,
Çук ăна алтса чикме!

## «ИНТЕРНАЦИОНАЛ»

Театр «Мельйă». Йыхăрать Октябрь.
Пуçтарăнатпăр аслă уява.
Гаванăсемпеле пĕрле ларатпăр,
Итлетпĕр малтанхи тӳлек шава.

Унта-кунта хаваслă шăппăн кулă,
Йăлт-ялт куçсем выляççĕ пăхнăçем.
Хури, шурри те хăмăрри — лăк тулнă,
Вĕри чĕреллĕ Куба çыннисем.

Ак сирĕлет чаршав. Лăпланчĕ халăх.
Президиум ларать. Ун хыçĕнче —
Тĕнчемĕр çийĕн Ленин тăснă алă,
Вăл тинкерет таçта инçе-инçе...

Фиделĕн шаннă çыннисем лараççĕ
Салтак тумтирĕпе, хĕç-пăшалпа.
Пит сыхă-мĕн çĕнтернĕ Куба влаçĕ,
Çав сыхлăхран килет кунти шăпа.

Совет элчийĕ испанла калаçрĕ,
Унтан каларĕ Куба хăйĕнне.
Пĕр чунлă йыш пĕр кăмăлпа чысларĕ
Октябрĕн хĕрĕх улттăмĕш çулне.

«Интернационал» янраса кайрĕ.
Тăрап — хура хĕр тытрĕ ман хулран.
Пăхап: пĕрин хулне тепри ак яврĕ,
Пĕр вăтăр хутлă çын хӳми куран.

Енчен енне кăшт сулăнса юрлатпăр
Харăслатса колонна утнă пек.
Кĕмсĕртетет пин саслă пĕр театр,
Кашни юрлатпăр хамăр чĕлхепе...

Пĕр шухăш, пĕр хаваслăх та пĕр туртăм,
Кун пек йыша-и халь чуралатма!
Эп революци çамрăклăхне куртăм,
Эп куртăм хамăн çамрăклăхăма.

## ЛАРСАХ ТАШЛАÇÇĔ

Концертра мĕскер пулмарĕ!
Испанла, украинла,
Вырăсла утрав юрларĕ,
Таш ташларĕ грузинла...

Ак ансамбль пулса тухрĕç
Йăрăс пӳллĕ негрсем.
Пĕр çĕкленчĕç те пĕр пусрĕç
Кĕвĕ майăн урисем.

Вырăнтах ташланă евĕр
Джаз-оркестр хускалать.
Ман умра ларан чипер хĕр
Йĕтĕр майлă кускалать.

Сиккелет ун хулпуççийĕ,
Пилĕк-çурăмĕ чĕтрет.
Савнă кĕвĕ — чун уççийĕ —
Кăтăклать те чĕпĕтет.

Тавралла пăхса илейрĕм —
И! Унта, атьсемĕрсем! —
Тем чухлех хура чиперĕн
Хускалаççĕ пĕвĕсем.

Йăл кулса, ларсах ташлаççĕ
Кашни хăй вырăнĕнче,
Пĕр-пĕрне те, тен, курмаççĕ, —
Чунĕсем таçта инçе...

Кун пекки тата ăçта-ши?
Çыннисем-çке... йăлт çынла!
Юрă-кĕвĕ, вăйă-ташă
Витĕр витнĕ пулмалла.

## ЭРНЕСТ ХЕМИНГУЭЙ

Асăмра яланлăх юлĕ:
Пултăм эп ун килĕнче,
Сан-Франциско де Пауле
Тенĕ Куба ялĕнче.

...Тул çутипеле вăраннă,
Çырнă пилĕк-улт сехет.
Ларса мар — тăрса тăрмашнă,
Ун йăли çаплаччĕ тет.

Тăнă вăл, сухаллă Улăп,
Çăмлă тир çинче çарран.
Юнашар сывланă хумлă
Е пĕр тикĕс океан.

Хĕрринче тем чухлĕ пулăç,
Пĕчĕк-пĕчĕк хупахсем...
Çав шăв-шавлă чĕрĕ пурнăç
Илĕртет кун пĕтнĕçем.

Хăй те пулăç вăл, сунарçă,
Юратать хăюлăха.
Харсăрсем ăна туртаççĕ,
Çутçанталăк, çĕр паха.

Анчах ĕçĕ сăнчăрланă
Ытларах пуль çав чунне:

Сăмахпа та вăл ширанă
Тĕрĕс çул çынсем патне.

Ун машинкине куратăп:
Халь вăл чĕмсĕр те пĕччен.
Парижра та, Мадридра та
Унпала вăл пулнă, тен...

Халăх пурнăçĕ кунта та
Ĕмĕртенччĕ çаплалла:
Татăк çăкăршăн супатăн
Çĕр пулин те çăтмахла.

Пĕлнĕ вăл: резин чăмланă
Янкисем кунта хуçа.
Хушăран вăл хаш сывланă
Шухăшпа куçа-куçа.

Тен, испан Гвадалахарĕ
Асне килнĕ çавăн чух...
Вут пек пулнă ун хастарĕ.
Халь ак чирлĕ, вăйĕ çук.

Сурансем ыраткалаççĕ,
Кӳренсе тапать чĕре:
Халь вăл ĕнтĕ салтак мар çав
Çĕнĕ вăй ыйтан ĕçре.

Сăрт-ту айĕн, çеçен хирĕн
Тăвăл пек çите-çите,
Çав ĕçе васкатнă вирлĕн
Тепĕр ят кунта — Ф и д е л ь...

## ÇУЛПУÇ

Ватти, вĕтти те вăй питти
Кунта ăна ятран чĕнеççĕ.
«Тем мар пире ытти-хытти,
Фидель сыв пултăрччĕ!» — тееççĕ.

Ĕç пур, çурт пур, пур çăкăр сан,
Касмасть плантатор саламачĕ.

Юлташĕ юлташне курсан —
«Фидель сыв пултăр!» — саламлатĕ.

«Сыв пултăр!» — тет те, аллине
Çĕклет вара тепри хаваслăн.
Фиделĕн уçă куллине
Унтах аса илет пулас вăл.

...Фидель сăмах каланă чух
Сасартăк çумăр чашлаттарнă.
Фиделĕн юпăнчи те çук,
Итлекенсем вара тăп чарнă:

«Фидель, пĕркен юпăнчуна!
Илсе килтер! Илсе килтерччĕ! —
Тесе пин çын калать ăна, —
Сăмаххуна татах итлерччĕ!..»

Хăйсем пĕр чун, пĕр чĕм пулса
Чĕреслеттернĕ çумăр айĕн
Çаплах-мĕн тăнă шапарса —
Çулпуç пуплет! Ăçтан-ха кайăн?

Фидель пĕркеннĕ те — каллех,
Микрофонне тытса, йăл кулнă;
Вара хĕвел пăхичченех,
Сăмах тата-тата ал сулнă...

Çу, çумăр! Аслати, кĕрле!
Эс революцие чараймăн:
Çулпуçĕ — халăхпа пĕрле,
Ăна унран эс уйăраймăн!

## ÇУЛ МАЙĂН

Парка пальмăсем пире хирĕç
Чупаççĕ йĕкен çаврăнса...
Ах тур, аякка килсе çитрĕç
Çынсем, сывлăшра ярăнса!

Хальччен эп курман кайăк евĕр
Вĕçет пальмăн ешĕл тăрри.

Курсан та çакна — тĕлĕкре-тĕр,
Йăлт урăх-çке Атăл хĕрри!

Ăста Хĕл Мучи унта сулчĕ
Куçа курăнми мелкине:
Пирте çук чечек, курăк-çулçă
Çыратчĕ вăл кантăк çине.

Тулта карăнсан кăвак шуçăм,
Сиреттĕм те эп чаршава, —
Хĕл тус эрешне асăрхуçăн
Кураттăм пек çак çĕршыва...

Инçе çухрăмсем çывăхланчĕç.
Авто шав юртать. Çул таса.
Банан çулçисем пăшăлтатрĕç,
Ав сахăр ӳсет кашласа.

Совхоз (хамăрла). Кăшт канатпăр.
Гитар калани илтĕнет.
Хĕрсем, каччăсем... Тумĕ капăр, —
Ĕç хыççăн вăййи илĕртет.

Ташлать шоколад пек мулат-хĕр
Шур ӳтлĕ яштак йĕкĕтпе.
Хури шур хĕрпе ав пулать пĕр:
Хĕр — чăкăт, каччи — тикĕт пек.

Анчах революци пĕтернĕ
Йăхсем хушшинчи уйрăма:
«Пур çыннăн та юн хĕрлĕ, — тенĕ, —
Кам хăйĕ ăна хурлама?!»

Салам, çамрăк-кĕрĕм! Вăй патăр!
Анан хĕвеле курчĕ куç...
Лере — инçе мар — çĕнĕ трактор,
Вулатăп ятне: «Беларусь».

Илемлĕ çĕршыв! Пытармастăп:
Юратрăм ăна чунтанах.
Анчах аннӳне суйламастăн,
Тăван çĕршывна та çавах.

## КУНТИ УЙĂХ

Ик-виç кунхи вĕр-çĕнĕ уйăха
«Тутар алки» тееççĕ марисем.
Ара, вăл çакăнса тăрать-çке-ха,
Аван каланă сăвăç маррисем.

Юлхав поэт пек, кĕмĕлпе ăна
Танлаштарман, хакне сая ярса.
Хăй пускилне пин çул сăна-сăна,
Пĕртен-пĕр сăнлăх тупнă шыраса.

Кунта çав уйăх çакăнса тăмасть —
Вăл тӳртĕшĕ çине тĕреннĕ пек.
Мĕнпе çав уйăха танлаштарас?
Танлаштарма пулать-тĕр кимĕпе.

Ишет пĕр сассăр-мĕнсĕр шурă кимĕ
Ĕмĕртенхи тĕнче уçлăхĕнче.
Епле мана килте вăл аса килмĕ? —
Унпа та урăхрах кунти тĕнче.

## ПЛЯЙА ХИРОН

Кариб тинĕсне çитсе куртăм.
Ак Пляйа Хирон та иккен...
Америка ватнă пĕр çуртăн
Вилли усранать халиччен.

Унтах кубăсем персе илнĕ
Тăшман самолечĕ те пур.
Вăрçах: çын аманнă, çын вилнĕ,
Куççуль, тăлăхсем, хура-шур...

Анчах пĕчĕк Куба çĕнтернĕ, —
Ун тантăшĕ-тусĕ шултра!
Ак фронт пурнăçне тин ирттернĕ
Çынсем ушкăнпа ман умра.

Вĕсем калаçаççĕ халь уççăн:
«Эсир пулмасан — çĕнес çук.
Фидель кунта пулчĕ çар пуçĕ,
Салтакчĕ те вăл кирлĕ чух...»

Çынсем каласа кăтартаççĕ
Хальхи шухăш-кăмăл çинчен;
Пăртак вырăсла та чухлаççĕ —
Вĕреннĕ Совет çĕрĕнче.

Пĕри — комсомол секретарĕ,
Ĕçлет пулăçсен шкулĕнче.
Çарта пулнăскерĕн хастарĕ
Тӳрех курăнать куçĕнчен.

Ун Франос иккен хушамачĕ;
Тепри, çулĕпе кăшт асли,
«Акоста» тесе алă пачĕ,
Анчах... сулахайччĕ алли.

Утатпăр. Хĕвелĕ сап-сарă,
«Мир!» — тенĕн шевле сапалать.
Салтак пулнă Баки Лассаро
Манпа юнашар уксахлать...

## СОРОА

Сороăра пĕр çĕр каçатпăр:
Сăрт-ту, çăлсем, ем-ешĕл чăтлăх...
Çĕршывĕ ку Кавказ пек капăр,
Пăр-юр çеç çук, — хĕвеллĕ, хăтлă!

Çавра сăртсем лутра та вашăк,
Пальми ӳсет катан-катанăн,
Сип-симĕс çунатпа вăш-вăш ак
Çĕкленесле картан-картанăн.

Курорт ку. Кӳлĕ пек бассейнĕ.
Ик çынлăх хӳшĕсем куратпăр:
Çĕр ĕçлекен, хула ĕççенĕ,
Çул çӳрекен пăртакçă кантăр...

Ак янăра пуçлать гитарĕ.
Вĕри çанталăк ĕнтĕ сулхăн.
Яшсем юрлаççĕ... Кам куçарĕ?
Тăлмач йăл-йăл кулать кăшт шуххăн.

«Сороа линда пара байлар...» —
Тĕнкĕлтеттернĕ май илтетĕн.
— Ах, юрлăр-ха тата, ан кайăр!
Куçарăр-ха, тăлмачăм, — тетĕн.

«Сороăра хитре ташлаççĕ,
Сороа — юратушăн хӳхĕм!» —
Çапла иккен яшсем юрлаççĕ,
Итлем пĕрре, тăхтатăр хӳшĕм.

Анчах тĕттĕмлене пуçларĕ:
Тин çеç гитар каланă каччă
Тусĕсене тăрса шутларĕ,
Хыçĕсене пăшал çактарчĕ.

Вĕсем иккен — курорт хуралĕ,
Сăртсем тавра уттарчĕç шăппăн.
Çывăраймасть-ха Куба канлĕ,
Юрри кăна йăпатрĕ лăпкăн.

Хура кушак пек тропик каçĕ
Çӳлте çутса тултарчĕ вут-хĕм...
«Сороăра хитре ташлаççĕ,
Сороа — юратушăн хӳхĕм!»

## КРОКОДИЛСЕМ

Крокодилĕ, крокодилĕ...
«Кокодрила» кунтилле.
Лачакаллă шыв — ун килĕ —
Пăтранать кунĕпеле.

Вĕттисен хăйне кӳлленчĕк,
Шултрисен — самай кӳлех.
Кĕшĕл-кĕшĕл кĕшеленчăк,
Сирпĕнет кăшт шыв çӳле.

Те кукашшĕ, те аслашшĕ
Пĕр утрав çинче хĕрет;
Çывăрать, аçа çапасшĕ,
Сакăр аршăнлă сехмет!

Курăнать ун асав шăлĕ,
Кăшт хăрах куçĕпеле
Пăхкалать те, явăл шăллĕ,
Ислетет ыйха каллех.

Хырăм тутă, тумĕ — хăйĕн,
Хĕрĕх градус шăрăхра
Шăранмасть пуçтарнă вăйĕ —
Пурте янтă, вăхăтра...

Пирĕнпе яш сăвăç пурччĕ,
Вăл кино лентти çине
Ӳкерсе илесшĕн пулчĕ
Крокодил йăлисене.

Ак хăйхи пĕр çын, пит кунĕн,
Йăл кулса пăхать пире.
Вăл шалча çине тин сӳнĕ
Те мулкач, те тем тирет.

Сасă пачĕ те кăтартрĕ,
Какайпа виртлет текех,
Эх, леш йыш вара тапратрĕ, —
Халь хыпса çăтас пекех!

Айăн-çийĕн пăтрашаççĕ
Пĕр-пĕрин урлах сиксе;
Шăлĕпе шалтлаттараççĕ
Çырана ишсе çитсе.

Тин хай сăвăç аппарачĕ
Ĕç пуçларĕ пикенсе:
Харсăр йĕкĕт çавăрттарчĕ
Пĕшкĕнсе те кукленсе.

Леш, мăнни, аппаланмарĕ
Вак-тĕвек çак çимĕçпе,
Хускалмарĕ те тумарĕ,
Выртса юлчĕ кĕнеç пек...

Крокодилĕ, крокодилĕ...
Ку — экзотика-и? Мар:
Унпала çĕршыв мул илĕ,
Ку — валюта, ку — тавар.

Ӳстереççĕ те пусаççĕ
Эсреметсене майран.
Тирĕнчен сăран тăваççĕ,
Çирĕп, тӳсĕмлĕ сăран.

Тĕрлĕ сумкăсем çĕлеççĕ,
Портфельсем, пиçиххисем.
Пушмакра та селĕм теççĕ
Кубăн хӳхĕм пикисем.

Пирĕн енчĕк хулăн марччĕ,
Тивĕçмерĕ шукăль чап.
Çамрăк сăвăç арăмпаччĕ,
Вăл — Жимбиев Цыден-Жап.

Çав бурят ачин илемлĕ
Чун савни — бурят хĕрех.
Епле-ха парне илеймĕн?
Мăшăр çыннăн мул пĕрре.

Туртăнса-туса тăмарĕ:
Чаплă сумка пĕр-пĕччен
Туянчех вара Тамара
Крокодил сăранĕнчен!

## ТРОПИКАНА

Çĕрлехи пĕр ресторанăн
Ăшĕ çурма çутă.
Ячĕ унăн «Тропикана»,
Стенисем ун... çук та!

Çи витти ун темле йывăç
Евĕрлĕ хăпарнă.
Тавринче — чăн йывăç йывă,
Чăтлăх пулса ларнă.

Эп курап çавра эстрада,
Унта йышлă тĕкĕр.
Хĕр картин тумне куратăп —
Кайăк тирĕ, тĕкĕ.

Ташлама карта пуçларĕ.
Маскăлли те пур-мĕн.
Индейсен юмахĕ мар-и
Чĕрĕлет куç умĕн?

Хăшĕсем лаша хӳреллĕ,
Урипе чаваççĕ;
Кĕвĕ майăн илĕртевлĕ
Пĕççине аваççĕ.

Эп, Европăна вырнаçнă
Ватă киреметçĕ,
Хамăн çул-йĕрпе паллашнăн
Тинкереп пĕчченçĕ.

Пурăнать çак уйăх-çăлтăр
Айĕнчех мĕнпурĕ:
Шыв та сывлăш, вут та çăкăр —
Унсăр кам кун курĕ?

Çакă ташшăн тĕп тымарĕ —
Кĕреке е кĕлĕ?
Тен, вăл вăрçă, вилĕм мар-и?
Кам ăна халь пĕлĕ!

Тахçанах кунта пăтрашнă
Тĕрлĕ юнлă халăх.
Намăс-симĕс çук ку ташшăн,
Пур хăйле сăпайлăх.

Тишкерме çӳлтен те сиввĕн
Манăн хал çитеймĕ:
Кубăн хăй тути-маси-мĕн,
Хăйĕн ун илемĕ.

«Тропикана»... Тем ас тунăн
Эп çак тропик каçĕ...
Шăп çанталăк. Чĕрĕ чунăн
Çăлтăрсем пăхаççĕ.

## ÇИЛÇУНАТĂМА

Çилçунат! Чăваш Пегасĕ!
Ак ăçта паян эпир!
Хамăр ялăмăр Тукасĕ
Пит инçе пиртен çак ир.

Çутала пуçларĕ. Пирĕн —
Каç пулать-и, тен, унта.
Шăлтăртатрĕ чашăк-тирĕк,
Ларчĕç пулĕ апата.

Ман выртма каймашкăн вăхăт.
Эпĕ çиччĕри ача.
Хутаçа чикетĕп чăкăт.
Çиййĕм-пуçăм улача.

Çилçунатăм! Урăхлаччĕ
Санпа ман ун чух нуша.
Хампала эс пĕр çултаччĕ,
Кăмрăк пек хура лаша.

Йăранасăр та йĕнерсĕр
Утланаттăм эп сана.
Эс ывăннине пĕлмесĕр,
Кустараттăм вăрмана.

Тăлласа сана яраттăм
Кантăр сӳсĕн тăллипе,
Ирхине тăрсан шыраттăм
Шăнкăравăн сассипе.

Шăнкăрав та, шанкăрма та,
Чанккама та хункăрма...
Пĕр симфони пек тăнлатăн,
Тăрăшатăн уйăрма.

Шăпчăксем юрра яраççĕ —
Калăн çав — туратсерен,
Чечексем сыпса лараççĕ
Сиплĕ сывлăм ирсерен.

Çăпата-тăла та манăн
Лӳшкенетчĕ йĕп-йĕпех.

Урана салтсан пăхатăн —
Кантра йĕрĕ тĕрĕ пек...

Çилçунатăм! Кĕçенеттĕн
Эс мана курсассăнах:
Çăкăр татăкĕ кĕтеттĕн,
Пур-и, çук-и — ак сана.

Тунката çине тăраттăм
Утланмашкăн мел тупса.
Тепĕр чух эп утланаттăм,
Чĕлпĕрӳ çине пусса.

Пĕчĕк пулнă, халсăр пулнă —
Çиччĕри этемччĕ те...
Эсĕ çӳллĕ, вăрăм, хулăн,
Эсĕ чи вăйли килте.

Хĕрĕх пăт тапса туртаттăн,
Сĕтĕреттĕн сухапуç,
Акатуй — мала тухаттăн,
Çăварни — ухаттăн пуç.

Çилçунатăм! Эс-и, мар-и
Çав килти хура лаша —
Вăл çаплах асран каймарĕ,
Çĕклентерчĕ шухăша.

Халь эп ватăлтăм кăшт, ахăр,
Халь ак — эс мана, хам мар,
Эп ывăннине пăхмасăр,
Хăвалатăн, янавар!

Нимĕскер те тăваймастăн:
Ирĕкпе утланнă çын.
Сывлăпин те хăш чух ассăн,
Анаймастăп паян тин.

Акă Çĕрĕн тепĕр енĕ.
Мĕн кĕтет пире тата?..
Чĕлтĕр-чĕлтĕр чĕн йĕвенĕ
Чараймасть Çилçуната.

## ÇЫРУ

...Лăпланаймастăп пулмалла,
Капла юрать-и-ха вара? —
Ватта çывхарнă пуçпала
Вĕçетĕп халь те сăвăра.

Ма илĕртет-ши-ха çĕнни?
Те пит фантазийĕм айван?
Хам куçăмпа курса пĕлни,
Хăлхам илтни — ак мулăм ман.

Çак тропик, çак кĕрен тăпра,
Çак ешĕллĕх, çак океан...
Май çук-шим унсăр пурнăçра?
Май çук. Халь тин май çук, куран...

Каçар-ха, айăп ан тусам.
Сана çак канăçсăр çынпа
Хăш чух ытла та хĕн пулсан,
Мана — тата хĕнрех хампа!

## ПРАДА УРАМРИ ТĔЛПУЛУ

...Иртет юнашар
Прада — шукăль урам.
*В. Маяковский*

Гавана. Хăйсем-мĕн калаççĕ: Авана.
Çӳреп кунĕпе те, çӳреп çĕрĕпе...
Палланă мĕлке тĕл пулатăп... — Аван-и!
«Аван!» — терĕ сас, аякран чĕннĕ пек.

Тăрать Маяковский — кĕрнеклĕ те çӳллĕ.
Туя, чăштăркка юпăнчи аллинче.
Чикар тĕтĕрет, каçăрлать Улăп пӳллĕ,
Прожектор-куçпа тинкерет вăл инçе.

Лере — çирĕм хут, вăтăр хут çуртсем урлă —
Вĕçет, варкăшать йăмăх хĕрлĕ ялав.
Карап сас парать: пирĕнтен ырлăх-пурлăх
Тăван Кубăна — хулана та яла.

Тăван! Революци пире тăванлатрĕ.
Нева хĕрринчен хум хӳсе кунталла,
Атлантикăна çĕклесе тăвăллатрĕ,
Çапать — мăлатук çапнă пек сунтала.

Туптанчĕ те ялкăшрĕ ирĕклĕх хĕçĕ,
Чаш! — сулчĕ вăл пусмăр çĕлен-калтине.
Шавлать, ыткăнать пирĕн хум, çук ун вĕçĕ,
Кайри хистесе хăвăртлать малтине...

«Эп шантăм çакна курасса, — терĕ сăвăç. —
Эп куртăм кунти хуп-хура хурлăха:
Сăхатчĕ кӳпшек харам пыр, доллар сăвăс
Тумлам хăварми таврари пурлăха.

Эп куртăм çак ырлăхлă сахăр çĕршывĕн
Хитре халăхне выçăпа хăртнине;
Эп куртăм кунти ăшă кăмăллă, сывă
Пике хĕрсене намăс чир ертнине...

Анчах чи хисепсĕр хура негра та
Пĕр танлăх сунса çыртăм эп сăввăма.
Ахаль-им ăна Мускава йыхăраттăм
Часрах хура-шур тупсăмне ăнланма!..»

Поэт калаçать. Ашкăрса ешереççĕ
Хальччен эп курман йывăçсем урамра.
Тăвата хаяр арăслан шăл йĕреççĕ,
Тăват кĕтесрен сыхласа бульвара.

Вĕсем — бронзăран. Çак урам ĕнтĕ Прада.
Шур ӳтлĕ хĕрпе хăмăр ӳтлĕ мулат
Лараççĕ унта юнашар, тытнă «Правда».
Сар хĕрĕ итлет, хăмăр каччă вулать...

## ГАЙДАР ХУРĂНĔН ТУПСĂМĔ

Каневра выртать Гайдар Аркадий,
Украина Днепрĕ хĕрринче.
Эп пĕрре ун патĕнче пулсаччĕ,
Çырнăччĕ ун вил тăпри çинче.

Пуç пĕксе пăртакçă тăтăм хурлăн,
Кĕç курăнса кайнăччĕ мана

Шуралса çитмен çап-çамрăк хурăн,
Кам лартса хăварнă-ши ăна?

Сăввăмра çапла ун чух ыйтсаттăм,
Тупсăмне ак тупрăм паян тин.
Кубăпа кунта эп паллашаттăм,
Ма Гайдар аса килет эппин?

Кубăра ун ывăлĕ, Тимурĕ,
Журналист пулса-мĕн пурăнать.
Сăввăма вуларĕ те вăл хушрĕ:
«Эп лартсаттăм çамрăк хурăна...»

Аякри çĕршывăм аса килчĕ,
Ку çĕрте курмарăм хурăнсем.
Самани тĕрĕс-тĕкел тăринччĕ, —
Ытлашши нумай пуç хунисем!..

Хушăран куçран куçа пăхатпăр,
Тен, кăшт ассăн сывлани те пур.
Пĕр-пĕрне çур сăмахран чухлатпăр,
Тавтапуç сана, Гайдар Тимур!

Çак сăвва хăвна эп халаллатăп.
Аçуна пĕлеттĕм пит аван.
Сан ĕçŭ те йывăр, ăнланатăп,
Лайăх таврăн çак инçе çултан!

## ОЛЬГИТА

Хутăш юнлă ырă гидăм!
Пултăн вунпĕр кун пĕрле.
Тав тăвап сана, Ольгита,
Эс пĕлмен чĕлхепеле.

Сан аннŭ-мĕн Францисхĕрĕ,
Сан аçу-мĕн негртан.
Тĕксĕмленнĕ сарă кĕрĕк
Сан пекрех пулать малтан.

Хăмăр тĕслĕ алса тулĕ
Сан ŭтŭ пекрех-и, тен...
Нимĕн те пĕлместĕн пулĕ
Эс кунта çаксем çинчен.

Çил-тăман — юмах вăл саншăн,
Эс ӳсмен юрпа асса.
Кăмака хутса курмастăн,
Тăхăнмастăн эс алса.

Йĕлтĕр йĕрĕ — вăл мĕнле-ши?
Эс унпа шуса курман.
Çĕршыву сан ĕмĕр ешĕл —
Сахăр хирĕ, сад, вăрман.

Ырлăхне те, ахăр, панă
Çынсене вăл ансатрах.
Пурăнасчĕ пĕр тăванăн
Пур этем те... Çук анчах:

Хирĕçтернĕ мулĕ, тĕнĕ,
Ӳтĕн тĕсĕ, юн, тымар...
Çаксене эп хам та пĕлнĕ,
Хам та тӳснĕ сахал мар.

Хура-шурăн йышлă шучĕ:
«Ют йăх» тетчĕç те пире —
Нимĕнле хисеп те çукчĕ,
Пăчăхаттăн тĕттĕмре.

Кăшт кăна санран шупка та
Эпĕ хамăн питĕмпе, —
Кăмăлна аван чухлатăп,
Ăнланатăп пĕтĕмпех.

Хăш чухне карать салхулăх
Сан хура куçусене...
Анчах иртрĕ пирĕн хурлăх,
Тек юлмастпăр мĕскĕне.

Çĕннине мĕнех эп калăп?
Ху чухлатăн пит аван:
Хамăртан килет çанталăк,
Хамăр çутнă çăлтăртан.

Сывă пул эппин, Ольгита!
Кил туртать ман хаваса.
Сан сăнна асра эп тытăп
Йăмăк пек сана савса.

## КУРАЙМАРĂМ САНА, ФИДЕЛЬ!

Кураймарăм сана, Фидель!
Эпир йышлăччĕ, эс пĕччен.
Пур çĕре те ăçтан çитен?
Ал параççĕ мĕнпур енчен.
Кураймарăм сана. Пит шел!

Анчах куртăм эп сан çĕрне,
Вăл ÿстернĕ сана савса,
Вăл пайтах килĕ ман аса,
Хăваратăп эп хам сасса:
Сăввăмсем пулччăрах парне.

Ал-уру пултăрах тĕкел,
Куçу куртăр яшла ялан.
Тăшману сахал мар, ан ман,
Тусусем — тĕнчипех халь сан.
Ĕмĕтÿ çиттĕрех, Фидель!

Ыр хăнашăн чĕрем — тĕпел,
Кĕр те ирт-ха, тупса мехел.
Эп лартам сан умна сĕтел,
Ăшăтать пире пĕр хĕвел.
Тыт курка, тав сана, Фидель!

## «ОНССИ» МĔН ТЕНИ ПУЛАТЬ?

«Онсси» мĕн тени пулать?
«Онсси» — вунпĕр. Кубăлла.
Кубăра испан чĕлхи.
Испанла пĕлмен пирки
Ир те, каç та лифтера
Кăтартан кабинăра
Пÿрнепе тĕлле-тĕлле
Вунпĕр номер çинелле:
Эпир вунпĕрмĕш хутра.
«Онсси?» — тет те çын вара,
Йăл кулса пусса илет
Кнопкине пÿрнепеле,
Вĕçтеретпĕр çÿлелле.

Çав кăна-и? Çук иккен:
Ансăртран е теплерен
Эпир — вунпĕр халăхран,
Вунпĕр тĕслĕ сăмахлан,
Вунпĕр чĕлхепе çыран,
Вунпĕр кĕвĕпе юрлан —
«Онсси», ним тума та çук!
Çавăнпа пĕрлех тата
Çак та палăрчĕ ку чух:
Эпир тĕрлĕ халăх та,
Кăмăлсен тымарĕ — пĕр.
Ак кунта халь, килсенчен
Темиçе пин çухрăмра,
Çакă «онсси» те иккен
Пĕр йăх турĕ хамăра:
Вăл — йыхрав, пароль те ят,
Темĕн те пулса каять!
«Онсси тус»! Вăй патăрах!
Автан авăтрĕ, тăрах!» —
Шӳтлешетпĕр ирсерен
Уççăн пĕр-пĕринпелен...

«Онсси», вунпĕр, пирĕнтен
Вăл хăпмарĕ тахçанччен,
Темĕнле асамлă пек
Эп курап çав хисепе.
Тăхăр кун пурăнмалла
Пулнă пирĕн çакăнта,
Анчах «онсси» пулмалла
Арпаштарчĕ вăхăта:
Тăвăлне-мĕнне пула
Юрамасть тухма халех,
Икĕ кун тăхтамалла, —
Вунпĕр пулчĕ-çке каллех!

«Онсси, хатĕр-и эсир?
Вĕçтеретпĕр ыран ир!»
Вунпĕр халăх ачипчи,
Хĕрĕ, арăмĕ, каччи,
Мăшăрли те хăраххи,
Яшраххи, ватăраххи —
Çĕкленетпĕр çӳлелле,
Ярăнатпăр килелле,

Саланатпăр ыр-сывах
Хамăр аслă çĕршыва...

«Онсси, Онсси!» Ман сасса
Илтеетĕр-ши паян?
Мозурюнас Владаса
Ас тăватăр-и аван?
Вилчĕ-çке вăл, шеремет,
Хăйĕн Вильнюс хулинче.
Кĕнеке çыратчĕ тет
Хамăр çулăмăр çинчен.

Йыш чакминччĕ тек капла,
Çулăхминччĕ тĕрлĕ чир...
«Онсси, Онсси!» Ăçталла
Çул каятăр-ши эсир?..

## КАЙРАНХИ ÇАВРА

Сиэллет карапăмçăм. Ан тив, силлетĕр:
Мускав та Прага, Лондон, Бухарест...
Телей-шим ку? Çапла пуль çав, телей-тĕр,
Ма тункатан пĕр вырăнта çĕрес?

«Выртан каска мăкланнă, — тет чăвашăм, —
Çӳрен каска якалнă...» Эпĕ кам?
«Кашни куна эп вилĕмсĕр тăвасшăн!» —
Тесе поэтпала пĕрле калам.

Силлет карап: Ньюфаундленд, Гавана...
Манпа пин тĕрлĕ канăçсăр этем.
Пĕри хусах пуçпа, тепри авланнă,
Хĕрсем те инкесем, кинемейсем.

Çĕр чăмăрĕ тавра çавăрăнатпăр,
Пăхатпăр çăлтăрлă сĕм инçете.
Пĕрин çинче, тен, тĕлкĕшен кăвар-тăр,
Тепри, тен, сӳннĕ, çути çеç çитет.

Ман чун çути, сăмах хевти, янравĕ
Çапла çитейĕ-ши малашлăха?
Е сӳнĕ çак кĕске саманарах вăл,
Хĕлхем те сапаймасăр малалла?

Кама ӳпкелĕн? Хăвату хавшак-тăр.
Питех шухăшламасăр ун çинчен
Эпир хаяр кĕрешӳре çунатпăр:
Умра çаплах-ха ик тĕрлĕ тĕнче...

Силлет карапăмçăм... Этем тăванăм!
Мĕскер шыратăн çутă тĕнчере?
Хăв евĕрлĕ чунсем тупсан, сăпканăн
Силлемĕн-ши пĕрре эс çак Çĕре?

Тен, урăхла орбитăпа кустарăн
Çĕр чăмăрне пӳске пек ывăтса.
Çын чунлă йыш! Ăна тытма пуçтарăн,
Шанас килет эпир тĕл пуласса.

Унччен тĕнче пĕрре пулма пултарĕ:
Этемлĕх ăрăвĕ — пĕр аслă йыш.
Пĕри çитмин — тепри çитсе ал парĕ.
Çунатлă ĕмĕт! Вĕç те ярăн, иш!..

Силлет карапăмçăм, кун-çул карапĕ.
Хушка хумсем çапаççĕ, çил лăскать...
Силлех, карапăм: шанчăклă ларап эп,
Шухăшăма хускат, хускат, хускат...

## ЮЛАШКИ

Америка уçма шухăшламарăм,
Çул çырăвĕ çырмарăм йĕркипе.
Эп самана ал тымарне сăнарăм,
Хам пултăм унăн харсăр чĕри пек.

Поэзи учĕ ĕмĕрех çунатлă.
Эп тытрăм çавăн чĕлпĕрне алла.
Мана атте-анне çапла çуратнă —
Урхамаха илеймĕн укçалла.

Умне урпа тăкса ăна тытаймăн,
Вăл шăмарать, чĕвен тăрать, тапать.
Çăварлăхпа туртса лăплантараймăн —
Ăна вăл шатăрах çыртса татать.

Поэзи çулĕ ĕмĕрех тумхахлă,
Пăхсам Çилçунатун çилхи айне:
Малашлăхшăн кашни сикки ун хаклă,
Хăй — чăм шыва ӳкет вăл хăш чухне.

Кинжал пек çивĕч хысаксем, ту-чакăл,
Пăр-юрлă, пите хирĕç сăлпăран —
Тавралăхри чăрмав çеç мар ку çакă,
Çын чунĕнче те пур вăл авалтан.

Эп çăхана «чĕкеç» тесе чĕнмерĕм,
Йӳççе «шерпет» темен суйса хама:
Пыл маншăн — пыл вăл, эрĕм маншăн — эрĕм.
Чăннишĕн хатĕр эп пăталанма!

Эп ырă ятшăн пуçăма таймарăм,
Шав хирĕç çиллĕ пулчĕ ман шăпа.
Пасар туса эп çĕлĕк çавăрмарăм
Йӳн тавара хакла сутас шутпа.

Поэзи сучĕ ĕмĕрех вăл — халăх,
Истори пăхăнать пĕр çав влаçа.
Поэтпала çĕршер çулхи малашлăх
Килти пек куçа-куçăн калаçать.

Ура пусси çине тăрса пăхатăп
Йĕнерĕм çийĕнчен эп малалла:
Малашлăхăм мухтавлă та, паха та,
Пĕр чун, пĕр кăмăл унăн манпала.

Тавах сана, çул тытнă Çилçунатăм!
Тапса сикесшĕн эс ан тапăртат:
Инçе çулта сана эп ывăнтартăм,
Шап-шурă кăпăк типтĕр-ха пăртак.

Тавах сана нихçан ӳпкелеменшĕн,
Куçу каллех çула чĕнсе çунать.
Тавах сана мĕн пур тӳсĕмӳсемшĕн,
Ман шанчăклă, юратнă Çилçунат!

Октябрь 1963 — ноябрь 1964.
Мускав — Прага — Лондон —
Атлантика океанĕ — Гандер (Канада) —
Гавана — Шупашкар

# ЙЫХРАВÇĂ

## ЛЕНИН

Ленин! — Туртса карăнтарнă хирлӳ
Ухă ярса вĕçтерет инçете.
Ту хушшинче шартлатса çĕмĕрлӳ —
Тӳрĕ перет сăрт салтакĕ çӳлте.

Ленин! — Сăртран-тӳперен чул анать
Çур туне харăс ишсе антарма,
Е шыв сикки шаркаса ыткăнать
Тырă-пулла шăрăхран хăтарма.

Ленин! — Хура пĕлĕтсем хушшинчен
Ялтăр! тăвать те хĕвелĕн ури —
Янк çуталать таврари пур тĕнче,
Йалт курăнать — çывăхри, аякри...

Ленин! — Чечен сĕрме купăс, вăлах —
Маршлăн утма хистекен параппан.
Пĕр йăпатать, пĕр çĕклет кăмăла,
Тусшăн вăл — тус, тăшманпа вăл — тăшман.

Ленин! — Ача йăл кулли, тĕлĕпе —
Кулă каçса кайнă пек янăрать.
Ăсĕ — пророкăн, таса ĕмĕтпе
Пур этеме те хăй май çавăрать.

Ленин! — Ун шухăшĕн вăйĕпеле
Вăйлă эпир пурăнан самана.
Аслă пĕр ĕмĕт унпа çитмелле:
Çын тытмалла тĕнчене, Çын кăна!

1960

## КĂÇАЛХИ КĔРЕКЕРЕН

Çĕнĕ Çулăн пĕр йăла:
Калаçса ларсан-ларсан,
Тав курки тултармалла,
Ĕçменнишĕн пур нарзан.

Йӳн те, пуç та йӳтесе
Ыратмасть ирпе кас-кас.
«Паттăрсен ĕçки» тесе
Ахаль мар калать Кавказ.

Юрĕ, пултăр хамăрла:
Шĕвĕрех вăл е çăра —
Тытанçи пулар алла
Чăвашла йӳçен сăра.

Самана сакки çинчен
Пуç тавра шухăшласа
Эп вуниккĕ çапиччен
Хăварасшăн каласа.

— Тав пире тăрантакан
Тырă-пулă ăстине!
Малашне вăл хуларан
Çăкăр тултмĕ хăй килне.

Касса илнĕ пахчине
Армути пусатчĕ ун.
Çĕнĕ ĕмĕт калчине
Тек ан шăнттăр сивĕ кун.

Пин çулхи çĕр ĕçлекен
«Мĕн акас? Хăçан акас?» —
Тесе супрĕ çулсерен,
Шикленсе кĕтсе приказ.

Тулă-сĕлĕ чухлайман,
Пăрçа-ясмăк паллайман
Пĕр-пĕр портфеллĕ айван
Вĕрентетчĕ вăйпалан:

Куккурус та куккурус!
Тăм-и, хăйăр-и — пĕрех.
Пĕр хушу — Якутск е Курск...
Мăшкăлларăмăр çĕре!

Тек ан пултăр ун пекки,
Пысăк культ е пĕчĕкки,
Ăссăр-пăссăр сӳтĕкки —
Шантăрах вĕсен пăкки!

— Тав хăюллă çынсене!
Уçă кăмăллă, чипер,
Тĕрĕс куçлă ĕçчене
Çĕнĕ Çул курки сĕнер.

Ыррине ырах курсан,
Усала усал тесен,
Халăх шутлă пурăнсан,
Тин ĕç кайĕ пуçлăхсен.

Самани çапла ку чух,
Кĕрсе тух кашни киле:
Камăн мĕн çитмест, мĕн çук —
Сан пурне те пĕлмелле.

Çӳлтен ан кĕт циркуляр,
Панамар пек, хут çине
Сăмсуна тĕртсе ан лар, —
Ху пĕл эс мĕн кирлине.

Тĕнчи пирĕн тĕрлĕрен:
Пур колхоз та пур хула.
Кăçалхи кĕрекерен
Тинкеретĕп эп яла.

Ял ĕçченĕ — çĕр çынни —
Апат-çимĕç памасан
Хулапа пит мухтанни
Вырăнлах та пулмĕ сан.

Пытармастпăр хамăртан:
Çăмăл марччĕ иртнĕ çул.
Çын шанать чунтан-вартан:
— Пĕлтĕрхи, кăçал ан пул!

— Тав, — теер эппин тăрсах, —
Çĕнĕ Çул çĕнĕлĕхне!
Вăл çитертĕр хăвăртрах
Пĕтĕм халăх ĕмĕтне.

1965

## ПИРĔН АСЛĂ САМАНА

### I

Революцин Питĕр каçĕ
Çутнă ялтăр çутăсем
Халиччен пирте çунаççĕ,
Çутăрах çул иртнĕçем,
Аслă Ленин ячĕпе
Сарăлаççĕ тĕнчипе.

### II

Революцишĕн ĕçленĕ
Çын Калугăра ун чух.
Вăл этем ăсне ĕненнĕ,
Унсăр революци çук.
Хăй илтмен, ĕмĕчĕпе —
Вĕçнĕ вăл ракета пек.

### III

Революцин хĕрĕх çулĕ
Ячĕ Спутник Çĕр тавра.
Вăл яланлăх кĕрсе юлĕ
Çĕнĕ кун-çулăмăра.
Икĕ эра чиккине
Вăл кăтартрĕ тĕнчене.

### IV

Революци вăй-хăвачĕ
Çунат хушрĕ, çын вара
Çăлтăр çулĕ уçса пачĕ
Çĕр те сакăр минутра.
Хăтăлчех этем иккен
Йывăр Çĕр туртăмĕнчен!

### V

Революципе вăраннă
Тăван халăх, эсĕ те
Чи вăйлисемпе пĕр танлăн
Çул-йĕр хыврăн пĕлĕте.
Халăхсен ятне илес —
Виççĕмĕш çĕклентĕн эс!

## VI

Революцие мухтатăп,
Çук ӳпкевĕм шăпана:
Юррăм, пурнăçăм, тупам та —
Пирĕн аслă самана.
Пурăнасчĕ — Çĕр çинчен
Çăлтăрпа калаçиччен!

## САЛТАК СĂМАХĔ

Самана салтакĕ эпĕ:
Пăшалпа е перопа —
Пĕтиччен кун-çул хисепĕ
Хуралта эп тăрапах.

Çăмăл мар салтак кун-çулĕ:
«Çуртăм — çурăм хыçĕнче,
Чунăм чĕрне вĕçĕнче», —
Тенине эс илтнĕ пулĕ.

Çĕнтерӳ пĕр аслă юрă,
Пĕр уяв пек пуличчен
Тар та юхрĕ, юн та юхрĕ,
Пуçĕпех пĕтни миçен!

Чи таса, илемлĕ, сывă
Ывăл-хĕрччĕ... Мĕн теес?
Çĕлĕк хыв, пуç тай, çĕршывăм:
Çавсемпе çĕнтертĕн эс.

Хаклă хак тӳлерĕн эсĕ
Сыхламашкăн ирĕке.
Е татах çапла тӳлес-и?
Ку ан пултăрччĕ текех.

Пулмĕ ку! Кăвар çунатлăн
Тухрăн эс вутран-кĕлрен,
Çĕнĕрен хăвна çуратнăн
Чунупа та çĕнелен.

Кун-çулне пурăнаймасăр
Сӳннисен ячĕпеле

Ывăлу-хĕрӳ халь харсăр
Çĕкленет тӳпенелле.

Мĕльюншарăн-мĕльюншарăн
Пуç çухатнă çамрăксен
Ячĕсем çунса кăваррăн
Сасă паччăр пур енчен:

«Эй, этемлĕх! Пăх та курччĕ
Ăнлансамччĕ хăвна ху.
Эпĕр — санăн шанчăкуччĕ,
Ĕмĕтӳ, пуласлăху.

Хăçанччен капла ку пырĕ?
Пур вăрçа та чармалли
Пĕр саккун хăçан-ха çырĕ
Хăйшĕн хăй этем алли?»

Эп çакна илтетĕп халĕ
Самана шăв-шавĕнче.
Сăмахне этемлĕх калĕ,
Çавăнта пырать тĕнче.

Ĕçлĕ кун-и е уяв-и —
Парăм пысăк ман умра;
Яланах ăна туяп эп,
Сас парап хама кура.

Самана салтакĕ эпĕ:
Пăшалпа е перопа —
Пĕтиччен кун-çул хисепĕ
Хуралта эп тăрапах!

## ЙЫХРАВÇĂ

Пĕр аслă йыхравçă çӳрет тĕнчере,
Телей валеçет пĕтĕм аслă Çĕре...

Чăпар кĕркунне: саррăн, хĕрлĕн, кĕреннĕн
Çиçен шупăрне çутçанталăк пĕркеннĕ.

Анчах хĕрлĕ тĕс ытларах ку чухне,
Ку пирĕн ялав хĕретет Çĕр сăнне.

Сивлек кĕркунне: çулçăсем тăкăнаççĕ,
Çынсем ăшăрах тумтирне тăхăнаççĕ.

Анчах ăшăтать пире ĕмĕр тăршши
«Аврора» çутин сивĕнми чун ăшши.

Хура кĕркунне: пĕлĕтсем хăмăрланнă,
Çаралнă вăрман, кайăк-кĕшĕк лăпланнă.

Анчах пирĕн кăмăл çурхи пек хавас,
Каллех çĕнĕрен çĕнĕ юрă хывас!

...Этемлĕх хальччен çĕклемен революци
О к т я б р ь ятпа тĕнчене кĕрсе юлчĕ.

Çавна мухтама, тав тума, чыслама
Шыратпăр чи витĕмлĕ кĕвĕ, сăмах.

Хура кĕркунне çуралса ўснĕскерĕ —
Чечен çуркуннен вăл Çĕре ешĕллерĕ.

Вăл — чĕрĕлĕх, ўсĕм, ĕрчев, пултару,
Вăл — ĕмĕт çитў, кăмăла тултару.

Эп куртăм ăна хулара та, ялта та,
Ун çамрăклăхне пит аван ас тăватăп.

Паян-ыранах пĕтĕм çут тĕнчене
Тĕпрен çĕнетес пекчĕ вăл ун чухне.

Эпир васкататтăмăр: «Пултăр пĕр харăс!
Тума пулнине йăлт халех туса пар эс!»

Вăл пур — çырлахмарĕ çырма шывĕ пек
Кĕрлен пухусен, митингсен шавĕпе.

Тыттарчĕ пăшал, кĕреçе вăл тыттарчĕ,
Мантарчĕ ыйха, кĕнеке вулаттарчĕ...

Пит йывăр пин çуллăх кивве çĕмĕрме,
Тата хĕнтерех çĕннине çĕклеме.

Çĕклерĕмĕр! Çур ĕмĕр акă тăратпăр,
Тăшман сехĕрлентĕр, тус-йыш хаваслантăр.

Çĕр чăмăрĕн пулĕ пĕр чун, пĕр чĕре,
Октябрь-йыхравçă çӳрет тĕнчере.

Эп куртăм ăна темиçе чикĕ урлă,
Пĕр çĕрĕ ун тикĕс, тепри сăртлă-туллă.

Эп илтрĕм ун ян сассине Балканра,
Таçти шăрăх Африкăра вăл янрать.

Эп куртăм ăна Берлинра: Трептов-паркăн
Шăпне вăл сыхлать çĕнтерӳçĕ-салтакăн.

Эп куртăм ăна инçети Кубăра,
Унта халь кăвар пек хĕвел хăпарать.

Çанталăкĕ ăшă, ем-ешĕл тавралăх,
«Мухтав — глориа!» — янратать ирĕк халăх.

...Пĕр аслă йыхравçă çӳрет тĕнчере,
Телей валеçет пĕтĕм аслă Çĕре.

1965

## ÇĔНĔ ÇУЛ — ÇĔНĔ ЮРĂ

Çĕнĕ Çул — çĕнĕ юрă вăл маншăн,
Çĕнĕ сăвă çĕклетĕр чуна.
Мĕнле шухăш сăвва вырнаçасшăн?
Ытларах чун мĕскершĕн çунать?

«Самана саккине савалаймăн!» —
Тенĕ ĕлĕк пĕр ăслă ватти.
Ăçта выртнă — унтах йăваланăн,
Ĕмĕр лекĕ турачĕн хытти.

Ку сăмах ахаль мар тухнă пулĕ:
Темиçе самана тăршшĕнче
Хура халăхăн хурлă кун-çулĕ
Инкекрен хăпайман çĕр çинче.

Патшисем, ханĕсем ютшăнтарнă
Чĕлхипе те тĕнпе çынсене,
Пупĕсем, муллисем пăхăнтарнă
Тамăкпа хăратса чунсене.

Шаларах тинкерсе сăнасассăн —
Чухăнпа пуяна эс куран:
Самана саккине саваласшăн
Чухăнсем ĕмĕтленнĕ ялан.

Халăхсем пĕрчĕн-пĕрчĕн ăс пухнă,
Кĕнекеçĕ ширанă чăн çул.
Çак йăлтах Маркс умне уççăн тухнă,
Вăл каланă: — Пур çуклăх та мул.

Хальчченхи кун-çулти кукăр-макăр,
Халăхсем е тĕнсем пăлханни —
Класс кĕрешĕвĕ çеç вăл, ан манăр,
Çавнашкал пур истори ани.

Тĕнчери пусмăра пĕтермелĕх
Вăй ÿссе çитмеллех! — тенĕ Маркс.
«Манифест» чĕлхипе пур этемлĕх
Илтмелле çав йыхрав панă сас...

Унтанпа ак çĕр чул ытла иртрĕ —
Шухăш чĕрĕ, тăвать хăй ĕçне:
Тĕнчери ĕç çынни ярса тытрĕ
Хĕç-пăшал пек ăна аллине.

Самана саккине саваласçĕ
Халь унта та, кунта та çынсем;
Ултава, тĕшмĕше хăваласçĕ,
Чăнлăхпа тĕп тăваççĕ çĕнсе.

Чăнлăх çакă: хăватлă çын Ленин
Авăрланă «Аврора» туппи —
Хальчченех вилĕм пек пĕрисемшĕн,
Теприсемшĕн вăл — пурнăç таппи.

Чăнлăх çакă — тĕнче икĕ енлĕ:
Пĕр енчен вăрçă, выçлăх та чир
Çынсене ĕмĕрех сехĕрлетнĕ,
Тепĕр енĕ вăл — ирĕклĕх, мир.

Маркспа Ленин ăсне ăша илнĕ
Ĕç çынни, пĕрлеше-пĕрлеше,
Пур йышши пусмăрпа та халь тимлĕн,
Алла-аллăн тăрса кĕрешет.

Пĕчĕкрен ӳснĕскер — пирĕн парти,
Çĕр çинче йышланса пĕрмаях,
Тĕнчене çĕнетме вăй пуçтарчĕ,
Чăмăртанчĕ пĕр аслă вăя.

Çулсерен çирĕпленчĕ тăванлăх,
Пакăлтаттăр элекçĕ тăшман:
«Коммунизм тĕнчи тĕрлĕ майлă
Пăрăнать халь, — тесе, — тĕп çултан».

Килтине эпир пĕлĕпĕр хамăр!
Çичĕ ют тапăнма шутласан —
Асăнтарăпăр, ним мухтанмасăр,
Пур тăван та пĕр çын пек пулса!

Пилĕкçуллăхсемпе утăмлатпăр
Улăпла утăмпа малалла,
Самана саккине савалатпăр —
Шикленмесĕр, чипер лармалла.

Çĕнĕ Çул — маншăн вăл çĕнĕ юрă...
Тупаймарăм-и, тен, çĕннине.
«Хаçатла чăнлăх ку!» — тесе хурĕ
Пĕр-пĕр çăвăç пăрса тутине.

Тен, курка сассине вăл кĕтетчĕ
Чи малтан, вулама тытăнса.
Ачашрах ман çырассăм килетчĕ
Тусăма-йышăма асăнса.

Анчах темшĕн ак, хам та пĕлместĕп,
Сăввăм тухрĕ паян çакнашкал.
Тен, вулавçă юлташ, эп те, эс те
Çакăн пек шухăшлатпăр кăçал?

Çĕнĕ Çулĕ çапах та вĕр çĕнĕ!
Пур кив кирĕк, кая выртса юл!
Пирĕн чăнлăх — пурне те вăл чĕнĕ,
Вăл çĕнтерĕ çаплах — çултан çул.

1966

# ÇĔРШЫВĂМÇĂМ, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ!

## ÇĔРШЫВĂМÇĂМ, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ!

Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!
Кирек ăçта пулсассăн та
Ман асăмра эс чĕрĕ, сывă,
Пуласчĕ хам та асунта.

Пĕлетĕп: Крымăн е Кавказăн
Илемлĕрех çĕршывĕсем.
Çур çуллăх хĕл йăлăхтарсассăн
Аса килмеççĕ мар вĕсем.

Инçе çĕршывсенче те куртăм
Санран чылай хитрисене.
Анчах эс ман сăпкам та çуртăм,
Эс ман савни те ман анне.

Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!
Сан чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхӳпе,
Тен, эп те çĕр çине йĕр хывăп
Сан пĕчĕкçĕ пĕр мĕлкӳ пек.

Çав илĕртет шухăшăма та,
Çĕклет чуна та чĕреме.
Сан вилĕмсĕрлĕхне шанатăп,
Эс — тăсăн ман ĕмĕрĕме.

Çырни пулать ман вырăсла та,
Пирте халь унсăр май та çук.

Анчах мĕнле эп тунсăхлатăп
Тăван сăмахăма ун чух!

Европăра-и хам çӳретĕп
Е океанăн леш енче —
Сан евĕрнех аса кӳретĕп,
Ăна туятăп тĕрлинчен.

Хăш чух лаç тĕтĕмĕн шăрши вăл,
Хăш чух тухьяллă сăн-сăпат...
Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ!
Кирек хăçан та эп санпа.

Сан ырă ятупа эп элчĕ
Таçти çĕре те халăха.
Санпа ман ятăм пиеленчĕ
Никам салтми, яланлăхах!

1965

## ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Эп, радиопа атом ĕмĕрне те
Çитсе кĕмешкĕн ĕлкĕрнĕ этем,
Чĕлхе тăванлăхне курасчĕ тетĕп —
Пĕрне-пĕри ăнланччăр халăхсем.

Философăн, поэтăн е çулпуçăн
Сăмахĕ çиттĕр пур илемĕпе,
Пур вăйĕпе çиçсе вылятăр уççăн —
Хĕвел пек, çил пек, çумăр пек, — теп эп.

Çапах та — хальлĕхе мĕн паллаштарчĕ
Мана çак ешĕл курăкпа, çĕрпе?
Çак пĕлĕт çӳллĕшне мĕн ăнлантарчĕ? —
Тăван чĕлхе! Çав пулчĕ тĕкĕр пек.

Килте, ютра-и эп — кирек ăçта та,
Кирек хăçан та тав тăвап ăна:
Чĕлхем! Санпа тĕнче уççи тытатăп,
Шухăшлама вĕрентрĕн эс мана.

1951

## А.В.КУГУШЕВА ДЕПУТАТПА КАЛАÇНИ

Анна Владимировна!
Пин Пăрмас Аннисенчен
Пĕр Анни! Каçар мана:
Кирлĕ марччĕ пулĕ, тен...

Сăвăпа сăмахлани те
Ытлашши пуль, тен... Çапах
Чăвашпа чăваш пек — питĕ
Калаçасшăн эп санпа.

Хушăн мар куçсем ку тапхăр
Ӳкнĕ-çке хаçат çине.
Ак каллех сана шанатпăр —
Хамăр халăх тарçине.

Т а р ç ă. Ха, мĕнле çĕнелчĕ
Авалхи сăмах ку чух!
Тен, яшсем ăна пĕлменччĕ:
Пирĕн çыннăн тарçă çук.

Тарçă-тĕрçĕ... сумсăр-ятсăр,
Мĕскĕн пек, аса илсен...
Халь сума суса калатпăр:
Ирĕк халăх тарçисем!

Эс те, эп те, пурте — тарçă,
Хăй ĕçне-хĕлне кура.
Çавăнпа, тен, ман пăртакçă
Калаçма сăлтав пурах.

Ирĕк çĕр аталантарчĕ,
Çав — ялан пире хуçа.
Çавăншăн, ыттишĕн марччĕ,
Чĕрене яри уçап.

Тутине пĕлсе пурнатпăр
Пархатарлă пурнăçа.
Шав çаплаччĕ-ши вăл? Мар-тăр,
Урăхла та пулнă çав.

...Клубсене те хитрелетнĕ
Пирĕн шанчăклă çынсем,

Хаçатра та пичетленнĕ
Уçă питлĕ сăнĕсем.

Илемлишĕн мар саватпăр
(Хамăр евĕрлĕ сăнах),
Ĕçĕсемшĕн тав тăватпăр
Ку чухне эпир çынна.

Пăхрăм та — ытараймарăм:
Халăх шаннă çынсенчен
Тĕлĕнтерчĕ хĕр-хĕрарăм,
Ман сăмах çавсем çинчен.

Ав вĕсем миçен: ку — тухтăр,
Ку — шкулта вĕрентекен,
Ку — колхоз пайтишĕн шутсăр
Тăрăшса ĕçлет иккен,

Агроном-мĕн вăл, тĕпчевçĕ.
Çип ăсти ав юнашар:
Çĕрĕн-çĕрĕн ун сĕрлеççĕ
Авалхи йĕкесем мар!

Вĕсемпе пĕрлех ав эсĕ,
Кугушева инженер!
Мухтанас-и, хĕпĕртес-и?
Мĕн тесе халь тин чĕнер?

Сан анкетуна йăлт çырнă,
Ун пирки сăмахăм çук:
Х а л ă х  х ĕ р ĕ — ак чи ырӑ,
Чи хисеплĕ ят ку чух.

Ĕмĕр-ĕмĕр йывăр хурлăх
Тӳснĕ халăх ăс-тăнне
Кăтартатпăр чикĕ урлă,
Суйласа сан пеккине.

Чăвашсем çинчен тем те пĕр
Пакăлтатрĕç яланах:
«Пушкина тĕшмĕртейместĕр,
Ăнланмастăр Ленина...»

Франците çапла сас сарчĕç
Буржуйсем çине-çинех,
Тара тытрĕç те çыртарчĕç
Тĕрлĕрен лакейсене.

«Чăвашсен чĕлхи те чурăс,
Тĕрри çеç вĕсен чипер...»
Тĕрĕ ăстисем халь — кур эс! —
Агроном та инженер.

Çук! Ӳсмен тăван чĕлхесĕр
Нихăçан нимле ăста.
Вашаватлăн хирĕçлетпĕр:
«Элеклетĕр, господа!..»

Ăста çеç пулни тем мар-ха,
Пур л е р е те ăстасем:
Фирма чапĕ, хаклă марка
Тепĕр чух унта вĕсем.

Килĕ-çурчĕ — крепоç унăн —
Ан та пыр рабочи çын,
Вăл — машина евĕр уншăн,
Ĕçлейми пулать? — Пулин!

Темĕн чухлĕ ĕççĕр халăх
Черетре выçса тăрать.
Пурте — чĕр тавар, усламлăх
Çăткăн миллиардера.

Çыншăн çын унта — выç кашкăр:
Е çăтан, е çăтăнан.
Хурлăх пулчĕ — тарăх, кăшкăр —
Çук сана йăпатакан.

Пирĕн çыннăн, Кремльте вăл
Е таçта çитех инçе,
Пĕтĕм пурнăçĕн тĕллевĕ —
Х а л ă х  ы р л ă х ĕ. Çав çеç.

Халăх хĕрĕ! Эс шутлатăн:
«Çынсене мĕнле çĕклем?»
Хыçунта тăраççĕ санăн
Аппусем, йăмăкусем.

Çулсерен хăпса тухаççĕ
Ху пекех ял хĕрĕсем,
Корпуссен ăшне тулаççĕ
Çĕнĕ ĕçшĕн хĕрĕнсе.

Пĕрне кирлĕ ăшă кăмăл,
Вĕрентетĕн теприне.
Чăвашла пуплен те — çăмăл
Ăнланать йывăрринех.

Ав Тутайкасси Хĕлипĕн
Хĕрĕ те санпа пĕрлех.
Çав Натюш çинчен мĕн илтĕн,
Мĕн пĕлейĕн ĕлĕкрех?

Халь унпа ак мухтанатпăр,
Саккунсем кăларакан
Совета ăна суйлатпăр
Хамăрăн Шупашкартан.

Çирĕм тăххăрта кăна-ха
Çав Филиппова кăçал.
Кугушева ыр сăмахĕ
Уншăн та пит кирлĕ çав.

Хăнăхтарăн, ăс та парăн
Йăмăкна çĕнĕ ĕçре.
Пурăнăç тĕвви — хĕрарăм,
Ун чĕлхи те çепĕçрех.

Шухăшлатăн та — мĕн чухлĕ
Урăхлантăмăр иккен!
«Юхмĕ, юхмĕ тек куççулĕ», —
Тет юрри те ун çинчен.

Ку куна ĕнтĕ куратпăр,
Малашне мĕн пулĕ-ши?
— Пĕрчĕре капан курса тăр! —
Тет пире Тăван çĕршыв.

Тĕшмĕш-юмăçлă, пăтранчăк
Ялсенче авал чухне
Камăн пулнă пулĕ шанчăк
Çĕкленме çак тӳпене?

Сирĕнпе танлаштарсассăн
Ватăрах этем те эп,
Хальхипе хавасланмашкăн
Иртнине аса илеп.

Хамăр ял çынни пурнатчĕ —
Арăмĕ çул сиктерсе
Хĕрача туса паратчĕ,
Леш вăрçатчĕ, х ĕ р тесе.

«Час ыйткалама яратăн! —
Тетчĕ вăл, пит тарăхсан, —
Камăн айăпĕ ку? — Санăн!»
Арăмĕ калатчĕ: «Сан!»

Мĕншĕн-ха вĕсем ятлатчĕç
Ачисемшĕн пĕр-пĕрне?
Хĕрĕн ячĕ çукчĕ, я ч ĕ:
Çĕр памастчĕç хĕрсене.

Ах, ăçта вăл суйланмашкăн!
Ятсăрскер, тутăрĕпе
Тутине витсе, айшатăн
Калаçатчĕ ерипе.

Сассине пăртак кăларчĕ —
Çавăнтах пĕр-пĕр йытти,
Ял куштанĕ, кăшкăратчĕ:
«Эй, хĕрарăм старăсти!»

Ун чухне чура вăл пулнă —
Упăшкин, тĕпел кукрин,
Хăй ачи-пăчин те... Юлнă,
Юлнă кăмăлĕ кашнин.

Саламат, сурпан та евчĕ,
Х ĕ р й ĕ р р и сăмах илтсен,
Ачаран сехĕрленетчĕç
Чăваш ялĕн пикисем.

Чиркӳре венчет тусассăн:
«Ху упăшкунтан хăра!»
Тетчĕ пуп вара мăнаçлăн,
Пехиллетчĕ сăнчăра.

Улăштарнă, тăхăнтарнă
Çĕрĕ — сăнчăр — ĕмĕрне
Арăма вăл пăхăнтарнă
Кăкарса мăшри çумне.

Пурнăçра сахал-и пулнă
Сарăмсăр хупланнисем?
Тӳсеймесĕр тип шар тунă,
Пуçне çинĕ арăмсем?..

П а р т и — çав çăлса хăварчĕ,
Çав каларĕ: «Ирĕк пул!»
Çавăн тĕрĕслĕхне шанчĕ
Пĕтĕм халăх çултан çул.

Сăнăрпа хавхаланатăп —
Сăввăн выраăн аслă мар,
Сарлакан кăтартмалла та, —
Хамăр прозăна шанар.

Этем чунĕн инженерĕ
Тенĕ те писателе —
Юлчĕ-ха вăл, çĕклеймерĕ
Хăй ăсталăхне çӳле.

Пушкин, Гете, Руставели,
Лев Толстой, Бальзак, Шекспир...
Тен, çунман вĕсен хĕвелĕ?
Тен, пулман хальччен «Нарспи»?

Инженер... Сайра ун май ĕç
Авкалать-ха сăмаха.
Хамăра илсен, нумайĕш —
Техниксем те мар-çке-ха!

Темĕн чухлĕ çыркаланчăк,
Туп-ха шухăш-сисĕмне:
Мунча чулĕ пек саланчăк,
Чаш тăвать те сивĕнет.

«Çын каçса кайса вулатăр!
Вуласа тухсан тепре
Çĕнĕрен тытса пуçлатăр
Сирĕн çав кĕнекĕре».

Çавăн пек ыйтать-çке халăх.
Калăпăр, инженера
Юрăхсăр ĕçшĕн патшалăх
Каçарать-им-ха вара?

Пирĕн пур-ха... каçараççĕ...
Çавăнпа пире те халь,
Депутат юлташ, пăртакçă
Астуса тăркалăр-ха.

Пит вĕçмесĕр, каппаймасăр,
Тишкерӳ йĕркипелен,
Кăтартса сире паратпăр
Хамăра тӳнтер енчен.

Пур, паллах, çук мар вăл пирĕн —
Тĕш сăмахшăн çунакан;
Васкамасăр, шăппăн, мирлĕн
Купалать пуль-ха роман.

Хальлĕхе çапах та — парăм,
Пысăк парăм, йĕркерен:
Çĕнĕ çын — арçын, хĕрарăм —
Сайрарах кĕнекере.

Халăх çĕнĕ пурнăç турĕ,
Пирĕнпе халь çур тĕнче.
Эпĕ, эсĕ, йăлт, мĕнпурĕ
Парăмлă ун умĕнче.

Тытăнар-ха алла-аллăн,
Тачăраххăн — ял, хула...
Шавламасăр та сăпайлăн
Тăрăшар, вара — пулать!

1954

## УЙĂХПИ

Каласа парать чăвашăн
Авалтан пыран юмахĕ:
Пĕр амаçурийĕн, имĕш,
Пулнă хӳхĕм хĕрçури.

Шухăшланă арсăр арăм
Уява сăра лартмашкăн,
Кунĕпе вăл шыв тулттарнă
Хĕрхенмен хĕрçурине.

Шав çитмен иккен ун шывĕ,
Шав хушать хĕре вăл хыттăн.
Хĕрçури ак каç пулсан та
Кĕвенте çакса утать.

Каллĕ-маллĕ хутласа вăл
Ывăнсах çитет, мăнтарăн,
Çур çĕрте аран уттарчĕ
Икĕ пушă витрипе.

Аранах шывне вăл ăсрĕ,
Кĕвентипелен çаклатрĕ,
Уйăха пăхса пит хурлăн
Хăй каларĕ сăмахне:

— Уйăхăмçăм, тулли Уйăх!
Тăлăха, мана, хĕрхен-ха, —
Çĕклеме эс çăмăллат-ха,
Пулăш-ха йăтса пыма...

Акă уйăх шăппăн анчĕ,
Тăлăха пăхса сăнарĕ:
Пит чипер иккен, сăпайлă,
Кĕвенти кăна пусать.

Çĕр хĕрне чунтан хĕрхенчĕ
Шурă питлĕ чĕмсĕр Уйăх,
Юратса ăна çĕклерĕ,
Илсе кайрĕ хăйпеле.

Чăвашсем, уйăх тулсассăн,
Ун çинче ялан кураççĕ
Çавăнтан вара пĕр хӳхĕм
Уйăхпи текен хĕре.

Çавăн чух мĕн евĕр пулнă —
Кĕвентеллĕ, ик витреллĕ —
Çаплипех вăл курăнать-мĕн
Хăйĕн хурлă сăнĕпе.

Çак Çĕре тунсăхласа вăл
Уншăн пит çунать тееççĕ.
Пит кĕтет унта вăл, имĕш,
Чун савнийĕ пырасса...

Эпĕ илтрĕм: çĕнелет-мĕн
Çак юмахăмăр хальхаççăн.
Ялсенчи çынсем шӳтлеççĕ
Ырă, уçă кăмăлпа:

— Уйăхпи! Ан хуйхăр эсĕ,
Кĕтмелли нумай юлмарĕ —
Вĕçсе пырĕ сан патна вăл —
Çĕр каччи, сан чун савни!

Теприсем çапла хушаççĕ:
— Астусамăрччĕ, атьсемĕр,
Хавасрах пек мар-и халĕ
Пирĕн тăлăх хĕрçури?..

Уйăхпи!.. Çав илĕртӳллĕ,
Çав илемлĕ пĕр легенда
Чăн пулса пыра пуçларĕ,
Ку чуна савăнтарать.

Эй, çунатлă харсăр шухăш!
Нихăçан памасть вăл канăç.
Çын пур çăлтăра курасшăн
Хăйĕн ешĕл Çĕрĕ пек.

Çав-çавах вĕçсе çитетпĕр,
Шыраса сана тупатпăр:
Эс — пиншер çулхи çут ĕмĕт,
Кĕвентеллĕ сарă хĕр!

Сывă пул, таса юмахăм
Ватăла пĕлми чиперĕ!
Кĕт пире тата пăртакçă —
Час пыратпăр, Уйăхпи!

1959

## ЙĂМĂКСЕНЕ

*Республикăри çамрăк хĕрарăмсемпе*
*хĕрсен пĕрремĕш сӳездне*

Юлташсем! Йăмăкăмсем!
Мĕн сунам-ши! Мĕн сĕнем?

Тырă-пулă турăмăр,
Тĕртрĕмĕр пир-авăрне,
Ĕнине те сурăмăр
Начар мар ку тапхăрне.
Услам çу уçларăмăр,
Çăмарта суйларăмăр,
Çурт-йĕр купаларăмăр,
Çĕнĕ Çул пуçларăмăр
Пуринчен те çĕннине —
Тытрăмăр та уçрăмăр
Çутçанталăк тĕннине,
Çăлтăр витĕр тухрăмăр
Аслă уçлăх леш енне.
Те леш енĕ, те ку ен, —
Хамăр тунă япала
Çаврăна тăрать куллен
Уйăхпа ăмăртмалла!
Кунашкал сăвăпала
Çырас марччĕ ун çинчен:
Гимн ярасчĕ янратса,
Ылтăн евĕр шăратса, —
Пĕтĕм ирĕк çут тĕнче
Юратса юрлатăрччĕ,
Çын ăсне мухтатăрччĕ.
Коммунизм çуркуннин
Туйăнмасть-и ку сире?
Ак калаçăр халĕ тин:
«Пурнăç пултăр вăл хитре!»
Ĕмĕтре çак шут кашнин.

Чи хитри — этемĕн чунĕ,
Тӳрĕ кăмăлĕ, чĕри.
Ăслă çын çавсемшĕн çунĕ,
Çи-пуç мар малтан хитри.
Чăн, калаççĕ: тумлансассăн
Тункатах туя ларать.

Тен, çаплах, пĕрре пăхсассăн,
Туй иртсен мĕнле вара?
Чи хитри вăл — ырă туслăх,
Юлташа хисеплени;
Пул, паллах, эс сывă куçлă, —
Чир пулмасть вăл сиплейми.
Чи хитри тата — ĕçченлĕх,
Ку — чăвашшăн пит хакли,
Пурнăç тытăмĕ, йăли.
Хушăран — пăт-пат, пĕчченĕн —
Курăнать-ха урăхли.

Ашшĕ-амăш ыра пилĕ
Нм те мар иккен хăшне:
«Аттестатлă тӳрĕ пилĕк»
Пит авасшăн мар хăйне.
Çак сăмахпала тĕртет
Вĕсене Канаш Альберт
Çивĕч куçĕ ун йăлтах
Асăрхать пулас ялта.

Хулара та тепĕр чух
Диплом илнĕ сарă кайăк
Шăхăрса çӳрет пит лайăх —
Пĕр ĕç шухăшĕ те çук!

Коммунизм çавскерсемшĕн
Пĕр-пĕр йывăç çийĕнчен
Татăлса улман ӳкессĕн
Туйăна пуçлать-и, тен.

Апла мар-ха, апла мар.
Йывăçне сыпар, сиплер,
Кăпкалар та шăварар,
Пĕр сăмахпала — ĕ ç л е р.

Ĕç çитерĕ ĕмĕте:
Пулĕ пурçăн та çире,
Тем нейлон-перлонĕ те...
Пулĕ пурăнăç хитре.

Теприсем пурне курах
Хăтланаççĕ тем мура,

Калăпăр — хура ура,
Илтнĕ эп хам хăлхапах:
«Çăпатапа çăмăл пак», —
Тет те вĕçтере парать
Автопа Шупашкара.

Килĕшсех каймасть ытла
Такçипе хура тăла,
Сăн кӳмест пит пасара...
Сирĕн ку ĕнтĕ сайра.

Пур тата пĕр тĕрлисем:
Ытарма çук тĕрлесе
Илемлетнĕ шур кĕпе,
Хăй — туслашнă черккепе.

Пур-ха, пур хĕрсем çинчех
Çавăн евĕр пуш чечек,
Пур хăй майлă ун «варли»...
Ах, çав ăншăрт аншарли!

Эпĕ халăх юррине
Астăвап ун пек чухне:
«Çутă курка сăн юсать,
Сăн юсать те ăс пăсать...»

Йăмăксем! Çакна ăнланăр:
Хамăр халăх сывлăхĕ,
Унăн пурнăç сиплĕхĕ
Сирĕнтен килет, ан манăр.

Ӳстĕр вăйлă, ӳстĕр паттăр
Пусмăртан çăлăннă халăх.
Кăкăр вĕркĕç пек хăпартăр
Ирĕк юрă юрламалăх.

Пирĕн халăх ăс-хавалĕ
Прометейĕнни пек пултăр,
Çĕршывпа пĕрле вăл халĕ
Пĕлĕте вут-çулăм султăр.

Вут тĕрсе çунтарассишĕн
Хыпмĕ пирĕн çĕнĕ маçтăр, —

Ĕмĕр лăпкă тăрассишĕн
Тӳпене чăваш кармаштăр.

Çавăн пек вăйшăн çунатпăр,
Эп çавна чĕнсе юрларăм.
Çавăн пек этем çураттăр
Пирĕн тӳсĕмлĕ хĕрарăм.

1959

## ЙЫХРАВ

Çак çĕре эсир пĕлетĕр-и:
Ватă та вăл, ĕмĕр çамрăк та.
Ăсан туйĕ хӳхĕм çав тери —
Курсан чун киленĕ вăрманта.
Уявра уяв ку çĕршыва,
Ĕçĕпе — хускатĕ вăл тăва!

Кам-ха, кам çак халăха пĕлет:
Вăл çĕр пин сăмахпала пуплет,
Çĕр пин юрă-çемĕ кĕвĕлет,
Çĕр пин тĕслĕ тĕрĕ вăл тĕрлет...
Пырса курăр — йăлт сирĕнпеле
Хатĕр эп тĕрĕслеме пĕрле.

1961

## ШЕЛЕПИ

Хуп-хура, кăтра сухаллă,
Куçлă-пуçлă çын чухнех
Вăл мана парсаччĕ алă,
Яр уçса япшар чунне...

Ват Ялак — аслашшĕ пулнă,
Ват асламăш — Шелепи.
Çавăнтан яланлăх юлнă
Хушамат — йăран юпи.

Вилĕмпе кун-çул йăранĕ,
Манăçпа мухтав чикки...

Шелепи! Кампа пăтранĕ?
Çук тек урăх ун пекки.

...Ĕмĕрсем иртсе çухалнă.
Хĕç янранă. Юхнă юн.
Ялаксем çаплах усраннă,
Йăх ĕрчетнĕ, хушнă чун.

Вĕсене хăмсарнă хыттăн:
«Киремет! Тĕне кĕмен!»
Вĕсене хăш тапхăр ылтăн
Сĕнсе илĕртнĕ иккен.

«Кĕр тĕне!» — Ирĕксĕрленĕ,
Хăваланă çырмана.
Ялаксем ут йĕнерленĕ,
Тухса тарнă вăрмана.

Кĕртнисем те вăркăнтарнă
Хĕресне хыва-хыва.
Пин çулхи пекех пуççапнă
Хĕвеле, Çĕре, Шыва...

«Çавсенчен килет-çке пурнăç:
Хĕвелтен, Çĕртен, Шывран.
Тăшмансем ураççĕ, урĕç,
Пирĕн — хамăрăн, ан ман!

Чăваш чунĕ, чăваш танĕ
Пĕтмĕ, каймĕ вăл вăйран,
Шаларах кăна пытанĕ
Çиçĕмле тухма кайран!..» —

Çаплалла вĕрентнĕ ватă
Ялаксем çамрăксене.
Эпĕ халĕ астăватăп
Шелепи каланине...

Шелепи... Хĕрарăм ячĕ...
Асанне те кукамай
Ачаран пире пахаччĕ
Чи ачаш сăмахпа шай.

Шелепи юрлана юрă,
Вăл упрана вут чĕлхе

Тăхăмне мухтавлă турĕ
Чăвашра ĕмĕрлĕхе.

Çавăнпа пур сăвăç-терĕш
Варринчи çак ĕмпичче
«Шелепи сăввисем» терĕ
Çырнине пĕррехинче.

Кĕнеке пĕлмен асламăш —
Çарăмсан тавраш пики —
Пулчĕ, паçăр хам каларĕш,
Манăçпа мухтав чикки...

Тусăм, мал ĕмĕтлĕ тантăш!
Манăçран эс ан хăра:
Халăх шутлă çын нихçан та
Манăç пулмĕ халăхра.

Калаçаççĕ тĕрлĕ-мĕрлĕ
Халь чăваш чĕлхи çинчен...
Тухĕ тав та, шав та кĕрлĕ,
Илтмен мар ăна хальччен.

Йăвине сурас килет-тĕр
Аслă ятшăн хăшĕсен.
Хăррăн çеç пăхса иртетпĕр
Ун пеккисене çӳлтен.

Çеçпĕл куçĕпе пăхатпăр,
Иванов куçĕпеле.
Эпир пулнă, пур пулатпăр!
Шанманни — чĕрĕ виле.

## АМИÇ

Чăвашран тараймарĕ
Авалхи пĕр йăла;
Тен, вăл пирĕн те мар-и,
Çав-çавах тытмалла.

Салтак çын, тĕрлĕрен çĕр
Тĕл пулсан, каялла

Çав çĕрсен тенкисемсĕр
Таврăнмасть-ха яла.

Çав тенке усрамашкăн
Вăл хумасть çӳпçине:
Асăнмалăх çакмашкăн
Парнелет савнине.

Кĕмĕл тенкĕ тесессĕн —
Хĕрсем халь те хавас.
Эп пĕрне асилесшĕн...
Пĕлтĕр куртăм пулас...

Купăсçи янрататчĕ,
Ташлама йыхăрса.
Пĕр хура хĕр тăратчĕ,
Кăшт юри каçрăлса.

Крона, злотăй та лева...
Мĕнле тенкĕ çакман!
Тухрĕ акă хуллен вăл,
Шăппăн шурĕ малтан.

Каярах (çын сăхлантăр!)
Хĕрсе çитрĕ яш чун.
Мăйĕнче сахалтан та
Çур Европăччĕ ун.

Хĕр ташлать! Каччă-тантăш,
Курса юл, — час каять...
Купăсça вăл унтан кăшт
Йăл кулса пуç таять.

«Кам тата! Кам пултарĕ?
Тухса ялкăш-ха, çиç!..»
Асăмран вăл каймарĕ —
Ферма хĕрĕ Амиç.

1961

## ÇИЛÇУНАТ

Аттесен, асаттесенĕн
Ĕмĕт-чунĕ — Çилçунат!
Космоса çын тухнăçемĕн
Çывăхрах пек эс чуна.
Ан тив, эпĕ кая юлнă
Дон Кихот пек курăнам:
«Юмахра чăнни те пулнă», —
Тет мана халь саманам.
Авалтан эпир вĕреннĕ
Утсене парăнтарма.
Çилçунат! Эс çил вĕртернĕ,
Кăтăрнă пиртен тарма.
Юмахсем ĕнентеретчĕç:
Çул-йĕр йывăр пулмалла,
Санпа çеç май килĕ тетчĕç,
Ăнтăлмашкăн малалла.
Ӳсрĕм эп. Ăс урăх манăн.
Анчах ĕмĕт халиччен
Ачаллах вĕçет ынатлăн,
Çилçунатăм, сан çинче.
Çăлтăрсем патне çĕкленчĕ,
Тĕлĕнтерчĕ çын пире.
Ман çапах усра пĕлесчĕ
Юмаха та чĕрере.

1962

## КОСМОНАВТ АМĂШĔ

*А.А.Николаевăна*

Алли чĕтрет-ха, ăшĕ ун вăркать...
Шур тутăрне салтмасăр, кăларать
Именереххĕн сылтăм хăлхине,
Тытать вăл телефонăн кĕпçине.
Хура пластмасса çийĕн кăшт кăна
Тăнлав шур çӳçĕ çаврăнса анать.
Самант — сехет пек, талăк пĕр минут.
Çынсем кăмăллăрах паян çĕр хут!
Телефонри хĕрсем, пупле-пупле,
Шыраççĕ темле сасă... Ак, итле:
«Анне!» — тет ывăлĕ ун чăвашла,

Чун-чĕрене сăмахĕ ачашлать.
Хăй чĕлхипе кашни çуралакан
Çав сăмаха калать нимрен малтан.
Ун ывăлĕ çут çăлтăрсем таран
Хăпарчĕ çав таса сăмахпалан.
Çав сăмахпах вăл анчĕ пĕлĕтрен,
Тумашкăн хатĕр тем те çĕнĕрен...
Çемçен калать те амăш хăйĕнне —
Сăпка юрри пек ку ун ывăлне.
Курмасăр куççульне, таçта инçе
Итлет вăл тав туса хăй ăшĕнче...

## ЙĔКЕЛ

Йĕкел шĕкĕлченмесĕр пит ӳкмест:
Çил-тăвăлпа кăна вăл хăш чухне
Персе анать те — ним тума пĕлмест,
Сип-симĕслех çĕртет хăй вăрлăхне.

Чипер чухне вăл саралсассăн тин
Хывать çап-çаврака тӳпеттейне.
Пат! — патлатса ӳкет вара туллин,
Унпа мухтаннăн тутă кĕркунне.

Сăввусене пит васкаса тирсен —
Кайран хăвах вара намăсланан.
Юман çинчи йĕкел пек туличчен
Кашни сăмахăм çитĕнтĕрччĕ ман.

Эп пурнăçра тӳсĕмлех мар, пĕлетĕп,
Поэзире — тӳсмешкĕн вĕренетĕп.

* * *

Эп Форнарина теттĕмччĕ ăна:
Художник тус çыратчĕ ун сăнне.
Халь — упăшкаллăскер вăл тахçанах,
Çитĕнтерет ывăлĕпе хĕрне.

Анчах малтан эп панă çав ята,
Шӳтле чĕннĕ пулин те, манаймасть:
Эп сывлăх суннă чух пĕр саманта
Вăл хĕрелсе каять, лăпланаймасть.

Иртни çинчен аса илместпĕр, çук:
Шкул, çĕнĕ кĕнеке, ача-пăча...
Çапах тултан çав лăпкă калаçу
Шалти вута сӳнтереймест пачах:
Ун куçĕ шăрçинче ĕлĕкхиллех
Ачаш «мулкач» сиккелесе илет...

* * *

...Çук! Килĕшеймĕп ĕмĕрне!
Мĕнле ан пултăр-ха манпа
Çак хыр, улатакка е чĕмсĕр
Çак чĕрĕп, е çĕрĕшĕнен
Кив çулçă айĕнчи кăмпа?
Пур чĕрĕ чун — ман тус вăл ĕмĕр!

Çак чарлана та курмăп-и,
Хупланĕ-и çак ким вĕçни
Хумхантарса çак Атăла?
Пĕлетĕп: Гамлетăн шăпи
«Пулатăп-и е çук?» тени
Халь «çук» тесе вăл татăлать,
Çапах... çапах та ман **пуласчĕ**,
Май пур пулсан — кунтах юласчĕ!

## РИКША

Рикша. Ку Китайра мар-ха, —
Пĕр шыв ячĕ ку пирте.
Чăваша килен хăна халь
Шухăшлать: «Ăçта-ши?» — тет.

«Йĕрĕх шу» тесе калачă
Çав шыва-мĕн авалах:
Йĕрĕх — Турă пек шутланнă,
Шу — вăл шыв ĕнтĕ, паллах.

Каярах килсе çĕр татнă
Чăваш мар этем вара
Çав сăмахсене ăнкартнă
Хăйне май, кăшт куларах.

Вырӑсла халь илтӗнеҫҫӗ
Путишле ҫав сӑмахсем.
Гид! Итле: кунта пуплеҫҫӗ
Иртнӗ йышлӑ ӗмӗрсем...

1962

## ТӐПРА

Мускавра вилет чӑваш —
Якку ывӑлӗ Йӑван.
Ӑна пурте хурӑнташ,
Пӗтӗм халӑхӗ — тӑван.

Хӑй вӑл ӗнтӗ хӑш-пӗрне —
Сӳннӗ ҫӑлтӑр, иртнӗ кун.
Те ку пуҫ, те пуш пӗрне?
Вӑйӗ-халӗ пӗтнӗ ун.

Пӗр ҫӗр мар, пӗр пин те мар
Хӑй вӗрентнӗ хӗр те ар
Урӑхла ӑна чӗнет:
Иван Яковлевич тет.

Вырӑсла тӗшмӗртеймен,
Хут пӗлмен тантӑшӗсем
Чӗннӗ хӑй ячӗпелен:
Вӑл вӗсемшӗн — кушкӑсем.

Якку ывӑлӗ Йӑван,
Вӑл ҫуралнӑ Кушкӑра.
Пур ун енчӗкӗ: пӑхсан —
Ылтӑн мар унта — тӑпра.

Кушкӑ ҫӗрӗн тӑприне
Вӑл ҫӳретнӗ хӑйпелен,
Ҫакнӑ халь те пуҫ вӗҫне,
Енчӗк — тӗрӗллӗ, чечен.

Хӑш ҫӗре кӗрсессӗн те
Йӑлине тумалӑх пур:
Эс ӳстертӗн ман ӳте,
Эс — вилсен те витсе хур...

Мускаврa чăваш вилет,
Çитнĕ вăл иккен патне.
Пĕр сăмах асне килет,
Юлашки сăмах: а н н е.

Вырăсла йăлт маннă пек
Вăл ăна çине-çинех
Асăнать те майĕпе —
Чĕнеймест вара тинех.

Амăшне нихçан курман,
Калайман çав сăмаха.
Ăçтарах чунпа пĕр тан
Вăл ăна усранă-ха?

Ĕмĕрте пĕр унăн та
Каласси килнех пуль çав.
Хурлăх тăлăх-турата,
Хурлăх татăлнă çулçа.

Каласа ярать те ак,
Чĕлхине вăл çухатать;
Лăпланса выртсан пăртак,
Аллине кăшт хускатать.

Вăрăм шĕвĕр пӳрнипе
Кăтартать вăл çӳлелле,
Тилмĕрсе кĕлтунă пек,
Пурçăн енчĕк çинелле.

Салтса илчĕç енчĕкне
Унăн пуçĕ вĕçĕнчен.
Хучĕç кăкăрĕ çине
Кăтартса мĕн пур енчен.

Хаш сывларĕ те пĕрре,
Кăшт хăяккăн, йывăррăн
Пуçĕ пусрĕ минтере,
Çын лăпланчĕ çывăрнăн.

Ерипе çамки çинче
Тикĕсленчĕ пек хутлам.
Йăлтăртатрĕ куçĕнче
Çутă-çутă пĕр тумлам.

1963

## ТЕЛЕЙЛĔ ÇУЛ

Ха, епле çӳле çĕклерĕ
Самани хĕрарăма:
Валентинăпа Валери
Тан пуçларĕç ярăнма!

Пурăнас килет, атьсемĕр!
Кам пĕлет: тен, малашне
Космосра туй ирттеретпĕр
Пĕр-пĕр мăшăр телейне.

Теле-радио сас парĕ:
«Тухать-и те тухмасть-и...»
Тĕлĕнейĕ Шупашкарĕ:
«Андриян авланмасть-и?»

Укçине памастпăр пулĕ,
Япала ыйтмастпăр тек:
Çăлтăр ушкăнĕ çеç кулĕ,
Йăлтăртатĕ тенкĕ пек...

Чун хаваслăх кĕвĕлерĕ,
Эй, хĕвелĕм, ялкăш, кул!..
Валентинăпа Валери,
Такăр çул! Телейлĕ çул!

1963

## ВĂРМАНТА

Çурла уйăхĕн каçĕ — чат сывлăм,
Кĕренленчĕç çырла çеçкисем.
Вĕрене çулçисем çутă пыллăн
Çуталаççĕ хĕвел пăхнăçем.

Вăрманта сасă-чĕвĕ лăпланчĕ,
Авăтмашкăн пăрахрĕ куккук.
Чĕппи кам йăвинче аталанчĕ?
Хăй пĕлет. Ман унта ĕçĕм çук.

Çын алли татайман вăрттăн лантăш
Пăхкалать хĕрелен çырлипе.
Тунката илĕртет: «Ларса кан кăшт,
Эс пăртакçă паян ырнă пек...»

Юрĕ, ларăп. Кирлех пулсан — канăп.
Ывăннишĕн кама ӳпкелем?
Çын элекĕ, ултавĕ... йăлт манăп —
Пурнăçра ку пит йывăр çĕклем!

1964

## КУККУК

Куккук, хорейпе авăтсан-авăтсассăн:
«Кук!» — тет те пăртак чарăнать.
«Мĕнле янăрать-ши паян манăн сассăм?» —
Тесе вăл хăйне хăй тăнлать.

Унтан, ямб кĕвви янратса тепĕр тапхăр
Каллех кăшт кăна вăл тăхтать.
Сасартăк вара, хăй çинчен шутламасăр
Анапестпа ахăлтатать.

Каçса кайнă пек, алхасса та ачашшăн,
Янрать «кук-кук-ку!» виç картран...
Этем, ман шутпа, калаçма-юрламашкăн
Вĕреннĕ вĕçен кайăкран.

***

Чире-чĕре çĕнтертĕм-ха тепре.
Хавасланатăп чунăм чĕррипе.
Патнех çитмерĕ пулĕ-ха чĕре.
Куç киленет тĕнчемĕр тĕррипех.
Тин тухнă çутă уйăх тӳпере —
Касса пăрахнă Улăп чĕрни пек.
Сывалнă паттăр манăн ĕмĕтре
Каллех çӳрет чăваш уй-хирĕпе...
Каланă ваттисем: çын чирлĕ чух
Ун чĕрнине касма йăламăр çук.

1964

## ХУРА КУРАКСЕМ

Хура курак тăриччен
Хуран çуса çакнă тет...
Тĕрĕ тума ларнă тет...

Кураксем кăраклатаççĕ
Ир-ирех ман çывăхра.
Юриех, тен, вăратаççĕ:
«Кун иртет, ан çывăрах!»

Эп вăрçа-вăрçа тăратăп,
Тен, эп каç та çывăрман.
Куракá мĕнпе хăратăп?
«Крак! крак! крак!» — тет, çĕр çăтман!

Кăшт тăрсан хамах ятлатăп:
«Дисциплина çук-тăр ман!
Çакайман-ха хурана та,
Тĕррине те тытайман...»

Каллĕ-маллĕ сакăр утăм
Уткалатăп çуртăмра.
Шурă пир пек шурă хутăм
Сарăлса выртать умра.

Чей чĕртсе, вĕре-вĕре эп
Ĕçкелеп те пĕр курка,
Çак сăвва ак тĕрĕлетĕп,
Мухтаса пур курака!

## САВСА КĔТЕТПĔР

*Молдаван сăвăçисене*

Савса кĕтетпĕр, ыталатпăр
Тăван пекех чунтан-вартан,
Телей те ырăлăх сунатпăр
Ниструл хăнисене паян!

Çапла эсир Днестра калană
Тахçан авал-мĕн хăвăрла.
Эпир — çак мăн шыва ят панă:
— Пул «Атăл!» — тенĕ хамăрла.

Юханшывсем таçта пĕрлешнĕ,
Йăхсем пĕр кăмăл тупайман —
Кашни хăй пĕлнĕ пек кĕрмешнĕ,
Халь халăх халăха — тăван.

Вутпа, юнпа вăл çирĕпленнĕ
Тăванлăх çав арканмасса.
Ăна пилленĕ аслă Ленин
Çĕр çийĕн аллине тăсса.

Чăваш çĕршывĕ — Руç тăванĕ,
Вăл хаклă пирĕншĕн, паха:
Тарпа, юнпа эпир шăварнă
Уя-хире, çаранлăха.

Выç кашкăр пек кунта уланă
Хан уртисем çине-çине,
Пĕрре çеç мар вĕсем туланă
Хуласене те ялсене.

Вĕсен Европалла кармашнă
Аллисене чара-чара,
Руçпа пĕрле эпир тăрмашнă,
Вăй илнĕ вĕççĕр вăрçăра.

Сăра-пылпа ӳсĕрĕлсессĕн,
Тăкан юнпа та чыхăнсан,
Урта кăшт чакнă та çиллессĕн
Татах вăл çапнă çаврăнса:

Лаççа та кĕлетне çаратнă,
Пушатнă пирĕн нӳхрепе,
Хуралтăмăрсене аркатнă,
Çунтарнă никĕс-мĕнĕпе.

Анчах, хай Феникс кайăк майлă,
Шав чĕрĕлнĕ эпир кĕлрен.
Пире сар вырăс панă алă,
Çавна тав тунă чĕререн.

Вăл — хамăр евĕрлех хĕн курнă
Хăватлă тусăмăр, юлташ.
Çултан çула пĕрленнĕ пурнăç,
Çĕр çыртнă вырăсшăн чăваш.

Тупа йăли çапла чăвашăн,
Вăл пулнă сивĕнми тăван.
Ĕмĕрсенчи çыру тавраш
Пире нихçан ӳпкев туман.

Эпир каланă: «Чул ишеймĕ,
Хăмла путаймĕ Атăлта,
Çаплах пĕр-пĕринчен писеймĕ
Пĕрлешнĕ ырă кăмăл та...»

Чăваш çĕршывĕ тан яланлăх:
Авал вăл пурăннă мĕнле,
Ку чух мĕнле çак харсăр халăх —
Пĕлсемĕрччĕ, хăна-вĕрле!

Йăх-несĕл кăкĕ тарăн пирĕн,
Шалтан хыпалăр тымара:
Çавна пула çак Атăл çырĕн
Юманĕ çӳллĕ те лаштра.

Юррăмăртан пĕри çаплаччĕ:
«Тăван аттемĕр ват юман!
Пире тĕрĕс-тĕкел сыхлахчĕ,
Пур йĕкелӳ те шăттăр сан!..»

Çав йĕкелсем шăтса ĕрчерĕç,
Нимле тăшман, пăши-пălан
Татса-хăртса пĕтереймерĕç, —
Шавлать кăна хура вăрман!

Йĕри-тавра ун шавĕ кайрĕ,
Ун витĕр çиçĕм-тăвăлла
Вĕçсе хăпарчĕ кăйкăр кайăк
Тĕнчешĕн «Сокол» ятпала.

Чи ват юман пĕр пуç силлерĕ,
Пĕр тайăлчĕ çĕре çитех,
Хăй ывăлне вăй-хал пиллерĕ
Çитмешкĕн çичĕ пĕлĕте.

Паян йыхрав каччи вăл ячĕ,
Хăй чатăрне чĕнет сире.
Çĕрти çинчен те калаçарччĕ
Пĕрле ларса кĕрекере.

Сирте Молдовăна куратпăр,
Кĕрсемĕр, иртĕр малалла.
Сĕнетпĕр куç пек тулли алтăр,
«Тавсси!» — теетпĕр хамăрла,
«Норок!» — теетĕр хăвăрла.

1964

## ИНÇЕТРИ ЧĂВАША

Чăваш ачи, салам сана
Инçе Тăван çĕршывунтан!
Шупашкара асăнсанах
Куççуль, тен, тумлĕ куçунтан.

Чăваш чĕлхи тивлечĕпе
Ĕçсе-çиетпĕр пĕрлешсе.
Хăшĕ-пĕри, сисетĕп эп,
Кĕтеççĕ час вăл пĕтессе.

Эпир ăна пăхмасăрах
Ĕçлетпĕр çанă тавăрса,
Пин çул пĕтмен тăван сăмах
Халь тин пĕтмессине шанса.

Эсир, саманине пула,
Тĕнче касса çӳрекенсем,
Ан манăр: пур тăван хула,
Пур сирĕншĕн çунакансем.

Кирек ăçта пулсассăн та
Тăрса ан юлăр тăлăха:
Пĕри унтан, тепри кунтан
Сас парăр хамăр халăха.

Республикăмăр пысăк мар,
Çурри чăваш — тулашĕнче.
Чĕлхемĕрпе чăмăртанар,
Чĕлхемĕр — хăй вăл пĕр тĕнче!

Эсир, кайса пит инçене,
Пăртак мансассăн чăвашла,
Атте-анне йăлисене
Çапах усратăр пулмалла?

Эппин илтсемĕр ман сасса:
Кунти тăван кĕрекере,
Алла тулли курка тытса,
«Тавсси!» — теетĕп эп сире.

1965

* * *

*И.А.Патмара*

Чăваш сăмахĕ — пирĕн чăн çăл куçĕ,
Шăнкăртатать вăл ĕмĕр-ĕмĕре.
Унпа кăна поэт хăйне çул уçĕ,
Унпа кăна вăл чĕрĕ тĕнчере.

Асаттесен-асаннесен халалĕ —
Ытарайми паха тăван чĕлхе!
Хĕрӳллĕ сăвăçисемпе вăл калĕ
Хăватлă шухăшсем этемлĕхе.

Ăс-хал пуçтарнă пĕрчĕн-пĕрчĕн халăх,
Пĕр пĕрчине те çухатмалла мар!
Эс ырă ĕç тăватăн асăнмалăх,
Вăй патăрах сана, Иван Патмар!

1965

## ЫРАН ПУЛАССИ

Эй, Шупашкар! «Шап-шур сухаллă ватă», —
Тесе хăш чух чĕнеттĕмĕр сана.
Анчах ак аслă ĕç планне вулатăп,
Унта куратăп эпĕ сан ятна.
Сасартăк çамрăклантăн эс, хуламăр:
Час ялтăртатăн çĕнĕ илемпе.
Çын савăнĕ пăхса ытараймасăр,
Эп те сана курма ĕлкĕрĕпех.
Эй, Шупашкарăм! Паянах ак Атăл
Пĕрлешрĕ пилĕк тинĕс шывĕпе.
Çанталăку сан ăшăтĕ, кунтах вăл
Каштан ӳстерĕ кăнтăр енчи пек.
Тен, хамăрăн черешня, груша пулĕ
Çулла кунта, çак Атăл хĕрринче.

Кĕрпе, тен, виноград сĕткенĕ тулĕ
Кăкшăмсене хăна кĕрекинче.
Эй, Шупашкар! Сана ун чух сас парĕç
Мăнаçлă тинĕс пăрахучĕсем.
Кермен-çуртсем пĕлĕтелле хăпарĕç,
Çап-çутă тăсăлĕç проспектусем.
Венеци пек хула шыв-шурĕ урлă
Каркалĕ халăх чĕнтĕрлĕ кĕпер.
Çăлтăрсене иментерсе, туп-тулăх
Хунар вăл çакĕ — чипертен чипер!

1966

* * *

«Атăла алтăрпа айтараймăн!»
Чи малтан кам каланă çапла?
Урăхла ниепле çавăраймăн, —
Калăпланă чăн-чăн сăвăçла.

Халăх ăсĕ, чĕлхемĕр хăвачĕ
Шăратса хывнă пек курăнать.
Çавнашкал сăмахсем ман хывасчĕ,
Чун пĕр çав ĕмĕтпе пурăнать.

1966

## ТАВАЙĂР-ХА ПĔРЛЕ ЛАРСА ШУТЛАР

Çӳретĕп эпĕ чĕннĕ çĕрсене,
Саламалик паратăп кĕрсенех.

Тухса каюçăн сывлăх эп сунап,
Çынсем мĕнле пурăннине сăнап.

Манран аван пурăнакан нумай,
Манран япăхраххи те пур самай.

Кашнин хăй савăнăçĕ, хăй хуйхи.
Ку пулнă ĕмĕрех, ку — ĕмĕрхи.

Анчах пĕчченлĕх ĕмĕрĕ иртет,
Пур халăхшăн шухăшлама тивет.

Тавайăр-ха пĕрле ларса шутлар,
Тавайăр-ха пĕрне-пĕри шанар.

Чысăмăра çĕртен инкек те пур,
Мĕнле ятпа вăл çӳремест-ши, мур!

«Ханша», «çутти», «шĕвви» те «лапсăркки»
Е «лешхайхи» вăл, е вăл «паштанки».

Е «аншарли» ятпа улах çĕрте
Этем пуçне вăл сĕрĕм тивтерет.

Тавайăр-ха пĕрле тăрса шарлар,
Тавайăр-ха пĕр шухăшлă пулар.

Мĕскер илемĕ ӳсĕр-пӳсĕртен?
Мĕн усă çыншăн, хăйшĕн ӳсĕртен?

Мĕнпе вăл халăха çĕклемелле?
Мĕнле ача пăхса ӳстермелле?

Ун пеккисен ачи-пăчи ăшрах
Пулать тет анкă-минкĕ те ухмах.

Ача-пăча — атте-анне сасси,
Ача-пăча вăл — халăх пуласси.

Вăл — халăхăн илемĕ яланах,
Мухтавĕ, чысĕ, шанчăкĕ — йăлтах!

Тавайăр-ха çакна пуçа хывар:
Черкке тĕпĕнче мар вăл пархатар.

# ЮХМА ТĂРĂХĔНЧЕ

## ПАТĂРЬЕЛ ПАТТĂРĔСЕМ

...Патăрьел хура тăпри
Çыпăçать пушмакăма.
— Тырă лайăх пултăр-и!
Тесе тытăнтăм ашма.

Мункун каç. Ĕлĕкхи пек
Чан çапса чĕнмест кĕлле.
Уттаратăп туссемпе
Эп Культура çуртнелле.

Унта пухăннă иккен
Патăрьел паттăрĕсем.
Вылянаççĕ паттăрсен
Тараса пуканĕсем.

Икшер пăтлă ик пукан
Икĕ аллине тытса
Темиçе хутчен, куран,
Çын хутлать, çӳле йăтса.

—Çитĕ! — терĕ те асли,
Те хăйсен сутйи-тӳри.
Лешĕн пур мухтанмалли —
Ытлашши çĕклет юри.

Аплалла иккен кунта —
Физкультурниксен уяв.
Çакăн хыççăн сăвă та
Уçăрах янрать пуль çав.

Тухса тăтăм, чĕннĕскер:
«Мĕн вулам-ши?» — теп саспах.
«Таньăран!» — тет пĕр чипер,
«Аптраман!» — тет пĕр хусах.

Вăл та, ку та кивĕ пек,
Чĕрĕ пурнăç — малалла.
Çĕнĕрех пĕр кĕвĕпе
Çырлахтартăм пулмалла.

Юрататăп çырнине
Вуласа тĕрĕслеме,
Мĕн ырри-начаррине
Куçсенчен пăхса пĕлме.

Вăхăт шурĕ çур çĕре,
Килнĕ халăх шав чăтать.
Эпир пурте-ха ĕçре —
Сăвăç та, калавçă та.

Ялкăшать тăван сăмах.
Пур çути те пур ăшши,
Пур кулли, сăнни, анчах
Ним те çук ун ытлашши.

Çавăнпа ял-йышĕ те
Саланмасть пире пула...

Таçта, тем кĕте-кĕте,
Çурхилле шавлать Пăла.

## МИТТА ПАТĔНЧЕ

Çĕртме уйăхĕччĕ. Астăватăп
Тӳсме çук хыт суха шăрăхне.
Пуçăма ал тутри эп çыхатăп
Хĕвеле хирĕç утнă чухне.

Эп сана пытармашкăн килсеттĕм
Мускавран — Канаш урлă — тӳрех.
Чĕррисем кĕтĕç-ха кăшт тесеттĕм —
Куç хупсан çынваскать ĕмĕрех.

Мӑшӑру татӑлса макӑратчӗ,
Виҫ хӗрӳ виҫ ҫунат пек ӑна
Тайӑла-тайӑла ыталатчӗ,
Куҫ илмесӗр пӑхса тупӑкна.

Мӗн тӑвас! Юнашар выртаймастӑн —
Чӗрӗлле пытарма йӑла ҫук.
Пӗчӗк ҫеҫ кӗнекӳ (манаймастӑп!)
Шӑппӑн выртрӗ хӑвпа ҫавӑн чух.

Ак кӑҫал тепӗр хут килтӗм эпӗ.
Сулхӑн-ха. Акана та тухман.
Сӑвӑҫа — сӑвӑҫ чысӗ, хисепӗ,
Ҫӑвар уҫнӑ сӑмах — эсӗ ман.

Сакӑр ҫул хыҫала тӑрса юлнӑ.
Курӑнми сакӑр карт ман питре.
Арапуҫ ачисем те ар пулнӑ,
Хӗрӗсем те кӗрнеклӗ, хитре.

Ҫӗршыву пурӑнать, ырӑ тусӑм,
Кӗнекӳ вуланать. Таврара
Ҫӗн хунав ҫитӗнет, ҫӗнӗ ӳсӗм,
Тав туса ватӑлми тымара.

## ЫТАРАЙМИ ТӐВАН ЧӖЛХЕ

Ытарайми тӑван чӗлхе
Кунта янрать тата илемлӗн!
Ӗмӗртенхи витӗмлӗхе
Тӳсӗмлӗхе туйса илетӗн.

Епле пуплеҫҫӗ юмахсем!
Туллин, пӗрне-пӗри хӗсмесӗр,
Тухаҫҫӗ хупӑ сасӑсем,
Уҫҫисене те кӗскетмесӗр.

Каланӑ чух кӑшт ҫӳхелсе
Тута-ҫӑвар пулать тӑп-тӑпӑл.
Сӑмахӑн тутине пӗлсе
Ҫынсем унпа уҫаҫҫӗ кӑмӑл.

Чĕлхеçĕсем «асту», «чупту»
Мĕнле çырас? — тесе аптраççĕ.
Кунта пĕр тăтăш юрату,
Ним уйăрмасăр астăваççĕ:

Хăйсен пăлхар аваллăхне
(Хули те пур — Тикеш «карманĕ»);
Крепков салтак паттăрлăхне,
Ун харсăр чĕрине кам манĕ?

Художник Кокеле иккен
(Турхансене) сума сăваççĕ,
Çыракана та — Талвиртен
Юхма Мишши таран саваççĕ.

Анатрие асра тытса,
Айхи çинчен ыйтса пĕлеççĕ.
«Ят йышлă-çке», — тесен, татса —
«Митта çĕршывĕ ку!» — тееççĕ.

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Çул çӳретĕп çаплах, хĕлĕн-çăвăн:
Юратап çынсемпе сĕртĕнме,
Юратап калаçма — прозăн, сăввăн,
Йăпатса ывăнан чĕреме.

Вăрăм çул е кĕске — тек хушаймăн.
Кур, сăна, мĕн пӳрни — пултăр сан.
Географи сана пулăшаймĕ
Хăвăнта пархатар çук пулсан.

Эп васкап пурăнма кутăруçăн,
Ĕç тиеп ытларах кун-çула.
Анчах халăх каланă пек уççăн:
«Ĕç вилсен те виç кунлăх юлать».

Эх, мăнтарăн чăвашĕ! Тăрмашнă
Вăкăр пек вăл — кайса ӳкиччен...
Мана пӳрнĕ пулас йăванмашкăн
Çул çинче е сĕтел хушшинче.

## «АВАНГАРД»

Района пырса çитсессěн
Райхаçат редакцине
Эс кěмесěр тӳсейместěн:
Ун шăрши таçтан чěнет.

Саспаллин хура тăхланě,
Хут рулонě, гранка, сăр...
Кам çакна пěрре тутанě —
Тек пурнаймě çакăнсăр.

Ак кунта та, кěнěçемěн
Тус-редакторсем патне,
Аса илтěм эпě темшěн
Хам дивизи хаçатне.

Грузовик çине вырнаçнă
Пěтěм «типографипе»
Эп пайтах силленнě, каçнă
Понтонпа та — йěп-йěпе!

Блокнотсем те шыва путнă,
Хам та хăтăлнă аран.
Мěн пулни ěнтě вăл пулнă,
Пуç юлсассăн — пурăнан.

Ак ěçлеççě пичет çарěн
Ывăнми салтакěсем.
Кам-ха систěр вěсен тарěн
Шăршине, эп сисмесен?!

Тутарла та, чăвашла та
Пěр ятпа тухать хаçат.
Эп вулап та шухăшлатăп:
Питě ку аван-ха çак!

Чăвашпа Тутар çěршывě
Чиккинчи ик халăха
Пěрлештерně шухăш — сывă,
Ку çавна пěлтерě-ха...

«Петěр ага, эс-и?» — терě
Чăвашла мана тутар.

Куçлăх витĕр вăл тĕллерĕ:
«Шĕкĕрех-и? Ирт-ха, лар...»

Ку Кави Юлдашев пулчĕ.
Халиччен ман чĕрере
Урăх сăнлă Кави пурччĕ,
Çав аса килет тепре.

Ватăлмасăр тӳнчĕ паттăр,
Çук ĕнтĕ Кави Наджми...
Çаплалла кайса пыратпăр
Нихăçан та таврăнми.

Эс каçар, Кави Юлдашев,
Кăшт хурлантăм пулмалла.
Хам та ĕнтĕ çав çулта-ши
Е сăлтавĕ урăхла?

Тем пулсан та çакă сирĕн
«Авангард» хаçатăр пек,
Хальлĕхе утатăп вирлĕн
Эпĕ чи малтисемпе!

## ТАНТĂШ

«Ватăлмастăн эс, ами! —
Терĕ тантăшăм мана, —
Пулчĕ тĕрлĕ самана,
Эс пачах-мĕн улшăнми».

Çакнашкал сăмахсемпе
Чăмăртарĕ вăл алла.
Эп хăйне калап çапла:
«Эс те йăлт ĕлĕкхи пек».

Хĕрĕх çул курман çынсем
Хамăр суйнине пĕлсех
Пĕр-пĕрне ырлатпăр çех!
Çаплалла-çке вăл этем.

Чунсене кăшт йăпатсан
Пурăнма çăмăлтарах

Тетпĕр пулĕ, ахăрах.
Тантăшу калать-ха сан:

«Амипе» «аре» çĕрне
Килсе куртăн-ха эппин?
Килкеленĕ пуль те... тин
Пулма тиврĕ сан тĕлне.

Астăвап пĕр сăввуна...
Хам та çыркаланă та...
Чим, мĕнлеччĕ-ха? Тăхта.
Ху та маннă пуль ăна...»

Акă тантăш сассипе
Янрăрарĕ сăввăм ман,
Именсе ăна малтан
Илтрĕм эп, тин çырнă пек.

Пĕтерсессĕн каласа,
«Ман шутпа, кунтан аван
Нихăçан та эс çырман!» —
Терĕ тантăш йăл кулса.

Мĕн калас-ха тантăша?
«Пулĕ» — терĕм çеç кĕскен.
Хам çапах çавна илтсен
Кайрăм пысăк шухăша.

...Питĕ çамрăкчĕ эпир!
Çутçанталăк, çут тĕнче,
Юрату, савни çинчен
Харăс пĕлтĕмĕр пĕр ир.

Пурте хӳхĕмччĕ пире,
Туйăнатчĕ тĕлĕкĕн,
Сĕрме купăс хĕлĕхĕн
Чĕтренетчĕ яш чĕре.

Çав тасалăх кăмăла
Сăввăн туртнă хăй енне...
Манăн тантăш хăйĕнне
Халаплать-ха малалла:

«Арăм вилчĕ. Ачасем
Пурте ĕнтĕ «тĕнчере».
Хам ик çул эп пенсире.
Педагогчĕ (пĕлмесен).

Пур кил-çурт, хама кура.
Пур пахчам та, садăм та.
Унсăр май та çук ялта, —
Чăваша туртать тăпра.

Сан та çитĕ-ха черет
Таврăнмашкăн çĕр çине:
Çын юлсассăн пĕччене,
Çĕр кăна хута кĕрет...»

«Пулĕ», — терĕм тантăша
Эп каллех паçăрхилле.
Хам ăна итле-итле
Кайрăм çĕнĕ шухăша...

1965

## «АСЛИСЕМ»

Ялтисем — район чинĕсене,
Районти чинсем — облаçрине,
Облаçри чинсем — тĕприсене
«Аслисем» тееççĕ ку чухне.

Хăшĕсем тата çав халăха
«Çӳлтисем» е «çӳл[л]ĕ çуртрисем», —
Тенине те эп тĕл пулнă-ха
Колхозра-мĕнте çӳренĕçем.

Çав сăмахсенче, ман шухăшпа,
Темле вăрттăн кулăш сисĕнет.
Мана «аслă» тăвас çук шăпа,
Ăмсанмастăп эп «аслисене».

Президент портфелĕ те курман,
Министра та лараймарăм эп.
Пысăк мар пĕр чинăм çеç пур ман:
Х у с а н к а й  пулса çĕре кĕреп.

«Ят вăл ят та, чин çапах та чин!» —
Тенине илтетĕп хăш чухне.
Мĕн тăвас-ха? Çавăн пек эп çын, —
Хапсăнмастăп «аслисен» чапне.

Тӳррипе калас пулсан тата
(Пултăр-ха ку хамăр хушăра)
Çав «аслисене» чунтан-вартан
Хĕрхенетĕп эпĕ ăшăмра.

Мĕнлерех пулать-ха тепĕр чух?
Аслăран та аслă вырăна
Вырнаçать те пĕр-пĕр ăçтиçук —
Тустарма пуçлать вăл — чăт кăна!

Те историе кĕрес тесе,
Те пăртакçă катăкраххипе
Пĕр сӳтет вăл винтсене веçех,
Пĕр каллех пăрать ĕлĕкхи пек.

Пĕр вăл салатать, пĕр чăмăртать,
Пĕр çакна мухтать, пĕр теприне,
Пĕр Америкпа вăл ăмăртать,
Килтине пĕлмесĕр тĕпренех.

Вырăнти «аслисене» вара
Ун чухне чи йывăрри лекет:
Хăшĕ хăйне хăй шаплаттарать,
Хăшĕ «пенсиччен тӳскелĕп» тет.

Пĕр сăмахчĕ çавăн йышшисен,
Йĕкĕрлĕ сăмах: «Давай-давай!»
Урăх ĕнтĕ капла пулмĕ, тен?
Çаврăнмашкăн вăхăт халăх май.

...Эп çуран е «вездеходпала»
Пылчăк çăрнă чух чĕркуç таран
«Волга» иртрĕ пĕр колхозалла,
Унта ик «асличчĕ» хуларан.

Вĕсене нумайранпа пĕлеп,
Шухăшлатăп та вĕсем çинчен:
«Тин кăна çап-çамрăкчĕ-çке, — теп, —
Шуралаççĕ халăх ĕçĕнче».

Шăп çаксен ĕнтĕ хăш-пĕр чухне
Сывлама та вăхăчĕ пулман:
Çуркунне, çулла е кĕркунне —
Тăтăш тивнĕ тырăшăн çунма.

«План тултарнă» хыççăн тин вара,
Хура тинĕс шывĕ сивĕнсен,
Канăва каймашкăн кăнтăра
Пĕрер уйăх тупăннă вĕсен.

Мĕн вăл эп! Вуланă та сăвва
Хӳрене тӳленĕ манăнне:
Кирлĕ пулчĕ — сăтăр Мускава,
Кирлĕ пулчĕ — вĕç Кавказ енне.

А кусен пĕлсе тăрас пулать —
Мĕн шутлать кашни Иван, Васли...
Мĕн парать вăл, мĕн çиме юлать...
Ак сана хайхи «çӳлти», «асли»!

Этеме кирек мĕн калăр та,
Çăмăл мар икке уйрăласси:
Вăл  — Мускав сасси Шупашкарта,
Мускавра-мĕн — Шупашкар сасси.

«Демократи, — тет вăл, — централизм.
Демос — халăх, центрĕ —
Кремль теер.
Мускавра та пултăр коммунизм,
Чăвашра та çавăншăн ĕçлер».

Çавнашкал ик роллĕ «аслисем»
Кашни облаçрах халь пур вĕсем.
Çавсене юри аса илсе
Çырăнаççĕ çакă йĕркесем.

Мĕн сунам юлашкинчен сире,
Хам пекех коммунистсем, паян?
Халăха ĕнентерер ĕçре,
Чăннине калар ăна куçран.

Халăх ăслă, халăх хăпарать,
Вăл — атте, эс — ывăл пулмалла.
Тырпула хывмасăр хампара
Мухтанма хушмасть вăл мулпала.

1965

# ПОЭЗИ СИПЛĔ ÇИЛĔ

## ПОЭЗИ СИПЛĔ ÇИЛĔ

Пин-пин Ивановран пĕри
Иван-и, Ян-и, Джон-и, Жан-и —
Пĕр пек вĕсен тĕп тымарри,
Чăваш — хăйле ятнех вăл шаннă.

Нарспи, Сетнер те Тăхтаман —
Мĕнле тĕлĕнмелле янранă!
Поэт çавна ытарайман,
Вăл наци сăпатне шыранă.

Итапайсем Иванланни
Час акă ик çĕр çул та иртĕ.
Кунта, тен, пулĕ аванни,
Кунта, тен, пулĕ начарри те.

Кам мĕн шырать — çавна тупать,
Историçĕн ун хăйĕн ĕçĕ:
Чикĕлесе лартас юпа,
Ак ку — пуçламăшĕ, ку — вĕçĕ...

Çырман чăваш историне
Уçса хупмашкăн кам пултарĕ?
Вăл çырăнĕ-ха малашне:
Паисийсĕр* пулман Болгари.

Вăл çырăнĕ-ха чăвашла,
Чĕлхемĕр çĕклĕ-ха ăна та.

* Паисий Хилендарски (1722—1798) — пăлхарсен малтанхи историçи.

Каçса кайса вуламалла
Вăл çырăнĕ тесе шанатăп.

Паян эп, халăх сăвăçи,
Нимле чикке те уямасăр,
Поэзи тăтăш çаврăçил
Çĕкленине туятăп, ахăр.

Çав çил чун-чĕрене вĕрет
Пур нишлĕхрен те сыватасшăн,
Вĕрет те витĕр витерет
Хаяррăн, çепĕççĕн, ачашшăн.

Çӳçентерет те тепĕр чух,
Пăртак ичентерсе те илĕ.
Вăл вĕрнине сисмесĕр çук,
Тавах, поэзи сиплĕ çилĕ!

Ылмашăнать тӳре-шара,
Саманасем ылмашăнаççĕ, —
Çынсем çаплах е Пушкинра,
Е Шекспирта ăс-хал шыраççĕ.

Чăн-чăн илем — ĕмĕрлĕхех,
Ăна туртаймăн урлă-пирлĕ.
Хĕвел пек, шыв пек, сывлăш пек
Этем чунне ялан вăл кирлĕ.

...Йăлтах пурăнмаллискерсем:
Тукай е марисен Чавайнĕ,
Е хамăр Кĕçтенттин тесен...
Комета пек çунайса кайнă.

Пит вată халăхсем эпир,
Çав вăхăтрах мĕнле-ха çамрăк!
Культура кил-çуртне пĕр ир
Яр уçрăмăр, тĕртсе, мăн алăк.

Çав ир — Нева кăвак çути,
Çав ир — «Аврора» шурăмпуçĕ.
Ак Смольнăйри пĕр çын утти
Мана халь илтĕннĕ пек пулчĕ...

Вăл курнă витĕр куçĕпе
Кун-çулăн тинĕсне пĕр харăс.
Унта таса поэзи пек
Таçта пĕччен çул тытнă парăс.

Çав парăс Лермонтовăн та,
Ыттин те хумсемпе кĕрмешнĕ.
Çав парăссем çил-тăвăлта
Пĕр революцие пĕрлешнĕ.

Пĕчченлĕх, харпăрлăх тĕнчи
Пĕтсе пырать, пурнаймăн уйрăм,
Поэзи — халăх чунĕнчи
Чи хаклă мул, чи ырă туйăм.

Анчах та халăх вăл — ç ы н с е м,
Вăл кворум мар — хисепшĕн, шутшăн.
Эс кашнине ятран чĕнсем,
Чи йывăр ун ĕçне эс хутшăн.

Çапах, поэт, пин çулхиллех
Сĕтелӳнтен эс хăпаймастăн,
Ларатăн шуçăм çутиллех,
Бригадăн сăвă çыраймастăн.

Мухтав çав харсăр пĕччене!
Çук референчĕ, секретарĕ,
Çук ассистенчĕ... Тĕнчене
Пĕччен хăй сассине вăл парĕ.

Тупман сăмахĕн асапне
Никам çине те вăл хураймĕ.
Сĕтелĕ хушшинчен ӳпне
Йăваниччен вăл лăш кураймĕ.

Мухтав та чыс! Ахалĕн мар
Ун ырă ячĕ — п у л т а р у ç ă.
Ăна, ялан хавхаланма,
Йĕри-тавра çул пултăр уçă.

Хамран килсен, ун пеккине
Эп парăттăм транзит яланлăх —
Çӳре, итле çĕр кĕввине,
Санпа пуять çак çутçанталăк.

Çӳре, сан ĕмĕрӳ кĕске,
Нумайĕш хĕрĕхе çитмеççĕ.
Çӳре, васка! Пĕлетĕн-çке:
Нумайĕш вăтăртан иртмеççĕ.

Хĕвел патне вĕçен Икар
Хĕвел хурри пулсан, мăнтарăн,
Поэт шăпи ун евĕр мар —
Шалтан çунать вăл шĕл кăваррăн.

Çапла ĕçленĕ аслисем.
Сан пур пулсан талант тивлечĕ,
Çакна ялан асна илсем,
Ыран килес чăваш поэчĕ!

1965

## ЯН СУДРАБКАЛНА

Каллех пуçланчĕ Çĕнĕ çул.
Каллех çыру: çырать пусмасăр
Яланхиллех пĕр пĕлнĕ алă.
Саспаллисем çинçе, эрешлĕ;
Вĕсем, пăхсан-пăхсан, мана
Паян Шупашкарта ирех
Ман кантăк умĕнче вĕçен
Юр пĕрчисем пек туйăнаççĕ...
        Инçе юлташăмçăм, пиччем,
Пĕр ĕмĕтлĕ, пĕр ĕçлĕ тусăм!
Мĕнле сана ман тав тăвас?
Туятăп ăшă кăмăлна,
Мана ыр суннине туятăп.
Çине тăрса, пур хевтепе
Ман пурăнас килсе халь кайрĕ
Хур-акăш Çулĕ иртекен
Çак çӳллĕ пĕлĕт айĕнче...
Хур-акăш Çулĕ теççĕ пирĕн,
Пĕлместĕп — сирĕн мĕнлерех-тĕр:
Çуркуннепе çурçĕрелле,
Кĕркуннепе кăнтăралла
Тăрна, хур-кайăк картисем
Çав çулпала вĕçсе иртӳçĕн
Ман халăх вĕсене вара

«Кайри мала, кайри мала!» —
Тесе хавассăн ăсатать.
Çапла мана, çунат хушса,
Кая юлмасăр çул тытмашкăн
Вăй-хал та сывлăх суннине
Туятăп эпĕ тусăмсен
Чунтан тухан сăмахĕнче.
Илемлĕ эс, Тăван Çĕршывăм —
Пĕр аслă йышăн аслă килĕ!
Илемлĕн вĕçрĕн çӳлелле,
Тĕреклĕ туслăхпа вăй илнĕ,
Хăватлă тăвăлпа çĕкленнĕ
Пĕр йыш пек сăвăçсен карти!
Сип-сивĕ çил те вĕтелетчĕ,
Тăварлă хум та хӳтеретчĕ,
Тусан та куç курми хуплатчĕ,
Çапах та çул пĕр чарăнмасăр
Чĕнетчĕ хыттăн — малаллах...
Ламран лама, çĕртен çĕре
Вĕçеççĕ пирĕн юрăсем,
Пĕрне-пĕри сасран пĕлетпĕр,
Чухлатпăр çур сăмахранах.
«Кайри мала, кайри мала!» —
Чĕнетĕп ывăннисене,
Хăюллă шухăшпа çунса,
Кăвар чĕрепеле çиçсе
Хальччен никам та йĕр хывман
Сĕм-тĕттĕм, тĕпсĕр уçлăхра
Вĕçсе вăйран кайнисене.
«Кая ан юл! — теп эп хама —
Ытла çӳлех вĕçеймĕпин те,
Йăласемпе те канлĕхпе
Илĕртекен çĕр туртăмне
Хăш чух эп çĕнтереймĕпин те, —
Кăшт çӳлерех ман çĕкленесчĕ,
Хамран кăшт вăйлăрах пуласчĕ.
Кайри мала, кайри мала!»
Хĕлле. Ашкăнкалать çанталăк.
Тулта шав юр вĕçет, шав юр...
Катасене, уя-хире,
Çаранлăх-улăхăмăра
Хурлăхлăрах тăрна сасси
Янратасси часах та мар-ха,

Анчах ҫурхи ӗмӗтпеле
Ҫунатланса эп ӑнтӑлатӑп.
Пирченнӗ тахҫанхи суранӑм
Кӑҫал чӗрре кӗрсе тепре
Сура пуҫларӗ те сасартӑк —
Йӑвантӑм вырӑнӑм ҫине,
Шӑнса пӑрланнӑ кантӑкӑн
Кӑшт ирӗлнӗ пӗр куҫӗнчен
Пӗлӗтелле пӑхса выртатӑп.
Эп хам курмашкӑн ӗлкӗрнӗ
Тумхахлӑ, йывӑр ҫул-йӗре,
Ют ҫӗрсене, хулӑхсене,
Туса-йыша аса илетӗп:
Хӑшне-пӗрне эп ҫывӑх куртӑм,
Пӗрле ҫӑкӑр-тӑвар ҫисе
Пайтах ҫул тытрӑм юнашар,
Хӑшне-пӗрне эп тӗл пулман-ха,
Тен, нихӑҫан те тӗл пулаймӑп.
Анчах атте-анне пилленӗ
Илемлӗх туртӑмӗпеле
Ҫав илеме тума пултарнӑ
Ӑстасене эп час-часах
Ҫыру ҫыраттӑм — тепӗр чух,
Чуна уҫма тӑрса пӑртакҫӑ
Айвантарах та ҫырнӑ пулӗ,
Ӑна-кӑна пит палӑртмасӑр
Вӗсем ман сӳрӗк кӑмӑла
Ҫӗклетчӗҫ ӑшӑ сӑмахпа.
        Пӗр пек чунсен тӑванлӑхӗ!
Илем ӑстин чӗри мӗн евӗр
Тапса талпӑннине таҫтан
Инҫе ҫӗртен туйса тӑрсан та —
Телей вӑл саншӑн: ҫав художник
Эс курнӑ тӗссенех курать,
Анчах сасартӑк вӗсене
Йӑлт урӑх тӗрлӗн кӑтартать;
Пӑхатӑн та вара — хӑвна
Эс тасараххӑн туйӑнатӑн,
Чуну та ырӑрах пек сан,
Мӗн-ма тесен илем вӑл — ырӑ,
Ырри вӑл — яланах илемлӗ...
        Европа йывӑҫ пахчинче
Ӳссе ҫитӗннисем пӗлсенччӗ —

Мĕнле эпир ним мар ҫĕртен
Шăтса кармашрăмăр ҫӳле,
Эпир — пиншер пин азиат,
Эпир — «хĕвелтухăҫрисем»,
Этемлĕхĕн хăватлă хумĕ
Атăлпала Урал ҫумне
Хĕстернĕ киреметҫĕсем!
Пире, йăлтах пĕрле ҫăрса,
«Историсĕр те рассăсăр»
Тесе калатчĕҫ ĕмĕрех
Ҫӳлтен те хăррăн пăхакан,
«Таса юнпа» «ютран» писсе
Пурăнакан каппайчăксем.
Ак ҫутҫанталăк умĕнче
Чĕвен тăрса ҫĕклентĕмĕр —
Курса тăратпăр иртнине те,
Пулассине те ĕмĕр урлă.
        Мĕн евĕр хурлăх хыҫалта!
Мĕнле телей умра куратпăр!
        Пайтах кӳлмесĕр, утланмасăр
Тăратнă витери лаша
Ҫеҫенхире тухсан, хавассăн
Пуҫне ухса выля-выля
Юртса-сиксе ҫул илнĕ пек,
Эпир, ҫак ирĕк саманамăр
Ҫилне сиссе хускалтăмăр,
Тапса сикейрĕмĕр сатуррăн,
Хастаррăн, тем пултарасла.
Пурне та ăнланса илесчĕ,
Пĕлсе ҫитесчĕ пĕтĕмпех —
Гомерпала Цюй Юаньран
Ян Райнис, Элюар таран!..
        Хĕлле, хĕлле... Часрах, часрах
Янтарлă Латви еннелле
Вĕҫсе иртен тăрнасене:
«Кайри мала, кайри мала!» —
Тесе ман ăсатса ярасчĕ:
«Кашни ҫунатăр хушшине
Пĕрер ăшă салам хĕстерĕр,
Ман тусăмăн хапхи патне
Ҫитерĕр те антарăр!» — тесчĕ.
        Тĕнче мехелĕ улталамĕ —
Таҫта ҫап-ҫутă ҫуркунне

Мерчен те кĕмĕл тухьяпа
Кунта килмешкĕн тухнă ĕнтĕ,
Кĕтетĕп: ҫитĕ вăл, ҫитех!
Эп кайăксем пĕрне-пĕри
Тĕрĕслесе те сас парса
Вĕҫсе иртессине туятăп,
Эп илтнĕ пек ҫав сас-чĕвве.
Ирĕксĕрех вара ăшра
Темле асамăҫ-юмăҫла
Имленĕ те юмланă евĕр
Каллех ҫине-ҫинех калатăп:
«Кайри мала, кайри мала!..»

1961

## ВĂТĂР ПИЛĔК ҪУЛТАН

*В. Маяковские*

Ҫитмĕл ҫитрĕ. Ҫуррине кăна
Пурăнма пултартăн чĕрĕ хальлĕн.
Тен, ҫавна сиссех, пайтах хăвна
Ҫĕр тавра кумтартăн каллĕ-маллĕ.
Прага та Берлин, Нью-Йорк, Париж...
Пĕр-пĕр Монте-Карла та Гавана...
Кур этемлĕхе, яра пар — иш,
Вĕҫ е автопа сана аван-и...
Сăвăҫăн курас-илтес пулать,
Саманамăр кĕнеки пит аслă.
Эс, ăна уҫса вула-вула,
Пĕр ҫиллес ҫӳрерĕн, пĕр хаваслă.
Эс васкатрăн пирĕн вăхăта:
Ҫĕр ҫинчи пур кивĕ сăн-сăпатăн
Кичемне ҫулта хăрта-хăрта,
Ҫĕннине сăрт урлă сасă патăн.
Сăвă хыҫҫăн сăвă ĕлкĕртсе,
Эс хăвна «телей завочĕ» терĕн.
Телейне кашни килех кĕртсе,
Ху телейсĕр юласса пĕлмерĕн...
Урăхла пулма пултарайман:
Чăн поэт пулсан эп — ман талантăм
Ҫаратса каять хамах кайран,
Пурăна-киле ҫавна ăнлантăм.
Хыпса ҫун-ха эс ҫине-ҫине

Амаланнă ялкăшан кăваррăн!
Ху каларĕш — пĕтĕм тĕнчене,
Пĕтĕм çутçанталăка сан пăрăм.
Шăнăçтар-ха эсĕ пĕтĕмпех
Пĕр пуçа, пĕр чĕрене, чуна!
Этемпе тата пул этем пек:
Ачашла, юрат, сав ачуна...
...Вăтăр пилĕк çул вĕçсе ăсанчĕ,
Кайăк-хур карти пек, кай енне.
Мĕнешкел çулсем! Эс курайсанччĕ!..
Хусанта хĕллеччĕ ун чухне.
Çил-тăманлă, куç курми каç кӳлĕм
Эп хăйса шаккарăм сан патна.
Эс тăрсассăн тăвăрланчĕ пӳлĕм.
Те унччен канайрăн кăшт кăна?
Çук, сана канма памарĕç, ахăр,
Манашкал пуçтах та сĕмсĕрсем:
Сассуна илтесшĕн çур хуламăр
Хатĕрччĕ кĕмешкĕн çĕмĕрсе!
Мĕн калаçрăмăр? Эс Улăп пекчĕ,
Эпĕ — санăн кĕсйӳнти сухаç.
Хам вăя çапах та ĕнентерчĕ
Эс сăмах хушни мана çав каç.
Халь кун-çулăм тӳпинчен пăхатăп:
Пĕрех çех курнисенчен пĕри,
Асăмра нихçан та пулмăн ватă, —
Сывă, харсăр, вут пек эс вĕри!
Вăй питтин, илемлĕн, алтăр куçлăн
Эп сана курсаттăм ун чухне.
Ĕмĕрех çапла эс кĕрсе юлăн
Саманан, çĕршывăн кун-çулне.
Саннинчен ытла ман кун хисепĕ,
Шурă юс юртать тăнлав çинче.
Тепĕр чух сăввăмсерен, сисетĕп,
Чун сыппи çип пек пулать çинçе.
Çав-çавах, хамран килет пулсассăн,
Усрăттăм тата пăртак хама.
Каппаймасăр каласан — ман сассăм
Кирлĕ пек тăван халăхăма.
Пысăк хурлăх мар пек халь туя та,
Шур сухал та, куçлăх та мана.
Саманамăр туртăмне туятăп,
Мĕн тата кăтартĕ самана?

Çăлтăр витĕр çӳлелле вĕçетпĕр,
Эс ĕмĕтленни çитсех пырать.
Космонавтшăн сăвă — савнипе пĕр,
Ахăр[т]нех, ку пĕлтерет ырра.
Çамрăк сăвăç-терĕш пухăнаççĕ
Мускавра сан палăку тавра.
Сăввине чĕвен тăрса калаççĕ,
Сан сăнна кураççĕ бронзăра.
Эп унта пыма пултараймастăп:
Темле сивĕ çапнă пек чуна...
Чĕрĕ хальлĕн курнинех манмастăп,
Астăватăп ăшă аллуна.
Пурăнах ăшра, çутал асра та
Иртнине кăтартнă тĕкĕр пек.
Эп сана ялан курса тăратăп
Юнашар хам çамрăк ĕмĕрпе.
Ăшăтать чуна çав çутă курнăç.
Йӳтесе йăлтах сӳтĕличчен
Пытăрах эппин çак чĕрĕ пурнăç
Çак пĕртен-пĕр ешĕл Çĕр çинче!

1963

## НАЗĂМ ХИКМЕТЕ

Çĕршывăм ирĕклеличчен вилсессĕн
Эп Анатолире çĕре кĕресшĕн.
Ялти масар çине мана пытарăр:
Хăрах енче — хуçи вĕлернĕ тарçăн
Османăн вил тăпри, ман тепĕр кӳршĕ —
Ыраш ани çинче ача çуратнă
Хĕрĕхченех çĕре кĕнĕ Айша...
Ман пуçăм тĕлĕнче чинар кашлатăр.
Ан хурăр чул та, палăк та ан лартăр...
*Н.Хикмет*

1954 çулта Н. Хикмет мана çакăн пек автограф çырса пачĕ: «...Тăвана тăван пулăшасси Турцире те социализм тума пуçланă саманара тата нумай хут пĭталлăрах пулĕ». — П.Х.

Выртаймарăн Анатолире.
Çĕршыву çаплах сан пусмăрта-ха...
Тĕл пултарчĕ пурăнăç пире,
Уйăрса каяйрĕ вилĕм акă.

Ик пĕр тан вăй çутçанталăкра:
Ăшă — сивĕ, тĕттĕмпеле çутă,

Чӗрӗлӗхпе вилӗм... Ҫын — тӑпра,
Шыв та, вут та, ҫил те... Ҫын вӑл — «чудӑ»!

Кӗскететпӗр хамӑр ӗмӗре
Ҫӗнӗ ӑрӑва нумай усрасшӑн.
Окопра та хӗсӗк тӗрмере
Хӗвеле вӗрентӗмӗр савмашкӑн.

Ҫӗрӗпе суран ыратнӑ чух,
Чун илли-палач сиксе таптуҫӑн
Хаклама вӗренчӗ пирӗн чун
Кашни сывӑ саманта кун-ҫулшӑн.

Пурӑнма пулатчӗ лӑпкӑн та:
Эсӗ — тӗрӗк халӑхӗн улпучӗ.
Анчах писрӗн хӑвӑн класунтан,
Сан идеалу вӑл — Ленин пулчӗ.

Сан чи ҫутӑ ӗмӗтӳ, тӗнӳ —
Пур этемлӗх пӗрлӗхӗ, тӑванлӑх.
Коммунизм — аслӑ ӗненӳ —
Ҫавӑрать ҫапла пире хӑй майлӑ...

Кӑвак куҫлӑ яштака этем!
Маншӑн кашни тӗлпулу — телейччӗ.
Хура тинӗс тӑрӑ хумӗсем
Куҫунта кулса ҫиҫсе илетчӗҫ.

Хӗрлӗрех кӑтра ҫӳҫ пайӑрки
Кӑнтӑрти хӗвел шевли сапатчӗ.
Хӗрхенмерӗ пурӑнӑҫ йӗрки —
Тӑнлаву кӗретӗн кӑвакарчӗ.

Юратса аннӳ панӑ яту
Тӗрӗкле пулать иккен П о э з и.
Тӗнчипе янран хушамату —
Ӑслӑха вӑл пӗлтерет тееҫҫӗ.

Чӗрӗ чух ҫакна пӗлменччӗ те —
Тӗрӗк словарьне юри халь уҫрӑм.
Кӑмӑл туртнӑ Назӑм Хикмете
Хам ҫума чӗрӗ ҫунат пек хушрӑм.

Ташкентри хĕвеллĕ кĕркунне
Янăрарĕ «Африка» та «Ази»*.
Астăвап сана тĕл пулнине,
Сан сăмахусем те манăçмаççĕ.

Тусусем, узбек çăвăçисем,
Лифт чипер ĕçленине пăхмарĕç:
Сăпкари ача пек çĕклесе
Чи çӳлти хута сана хăпартрĕç.

Эс малтан иментĕн кăшт кăна,
Каярах кула-кула хăпартăн.
Çавăн пек сан эстафетуна
Çĕклесе пырасчĕ ман патваррăн...

Выртаймарăн Анатолире.
Вăхăт çитĕ — Стамбулра çĕкленĕн!
Тĕл пултарчĕ пурăнăç пире,
Тăванлатрĕ саманамăр, Ленин.

1963

## ПОЭТ СУРАНĔСЕМ

Çуллахи кун çул тытрăм
Çут Днепр хĕрринчен.
Асра — иртейнĕ вăрçă,
Манаймăп ун çинчен.
«Тĕп пул, хаяр тискерлĕх!
Тымарĕ те ан юл!» —
Тесе сăрта утатăп,
Каневаллаччĕ çул.
Хумсем хускалкаларĕç,
Чарларĕç чарлансем...
Ман асăмра — пăшал та
Етре шартламĕсам.
Ем-ешĕл курăк çийĕн
Хĕрелнĕ мăкăне
Эп юн тумламĕ евĕр
Курсаттăм çав кунне.

* Азипе Африка çĕршывĕсенчи çыравçăсен 1958 çулта иртнĕ конференцийĕ çинчен сăмах пырать.

Ку хурлăх кирлĕ марччĕ,
Лăплантăр-и чĕре:
Эп пуç таймашкăн килтĕм
Мухтавлă Кобзаре.
Анчах вăл хăй аманнă:
Вун çичĕ суранпа
Тăрать пуçтах пăлхавçă,
Салхуллă сăн-сăпат...
Эппин асап-тĕсепĕн
Курки тулли пулман,
Шăпи каллех тумлатнă
Им-çам тумлам-тумлам.
Эппин, хăрушă пулнă
Такамшăн кĕлеткӳ...
Тăванăм! Украина!
Миçемĕш хут-ши ку?
Хулпуççине шăтарнă,
Шăтарнă тăнлавне...
Кашни, кашни пульли-çке
Шыранă чĕрине!
Шыранă та çав тупнă...
Пăхатăп палăка:
Кама вăл хӳтĕленĕ,
Мĕн чухлĕ салтака?
Ăçта вĕсем? Эп мар-ши
Пĕри çавсем пекки?
Кашни сăвах пултарнă
Пулмашкăн юлашки...
Сӳлетрĕ чунăм. Юнăм
Тапассăн чĕререн:
Ăна аманнă бронза
Пăлхатрĕ çĕнĕрен.
Ыратнине туятăп,
Пăхсан суран çине.
Вунçич суран поэтăн,
Кам сиплĕ вĕсене?
Вунçич суран, йăлт уçă,
Вĕсемшĕн тухтăр çук:
Ку — халăхăн суранĕ
Ун чĕринче ку чух...
«Ылхан! Ылхан!» — янратăр
Вăрçа пур тĕнчере.
Ан хăйтăр амантмашкăн

Тепре вăл çак Çĕре.
Енчен çав юн çĕленĕ
Пире сăхма каллех
Хатĕрленет пулсассăн,
Вăл пăхтăр çӳлелле.
Унта халь урăх кайăк
Сас пачĕ пĕр-пĕрне:
Хăй Чайкине ав Сокол
Чĕре сĕнет парне.
...Вĕçеççĕ Беркут, Ястреб
Вĕçе те вĕçĕнех,
Ĕмĕтĕнче кураççĕ
Инçе тĕнчесене.
Никам та ан хăтлантăр
Татма çав ĕмĕте, —
Аçа çапса кисретĕ
Çич хутлă пĕлĕте!
Çĕрте тесен — йыхравлăн,
Çĕршыв хăвачĕ пек,
Янрать поэт «Пехилĕ»,
Янрать çĕр чĕлхепе.

1964

## МАКСИМ РЫЛЬСКИЕ

Эп пурăнаттăм Чăвашра:
Вăрманччĕ, Атăла чăматтăм;
Тус-йышăмччĕ ман асăмра, —
Çултан-йĕртен тин таврăнсаттăм.

Хĕрсе кашланă хыр пуххи
Шанк хытрĕ хуйхăпа сасартăк.
Украинсен хуйхи-суйхи
Шăп сисĕнчĕ пулас çав авăк.

Тем татăлчĕ пек чĕрере,
Тем хăвăлланчĕ те — пушанчĕ...
Хăтараймарăмăр Сире,
Шăнса пăрланчĕ пирĕн шанчăк.

Ĕмĕрлĕхех ним чĕнмессе,
Пулмаслăха кунтан каян-мĕн.

«Пур шыв та кĕрĕ тинĕсе»
Тени пире лăплантараймĕ.

Тин çеç мана парнелĕхе
Вĕр-çĕнĕ сăвăсем ярсаттăр.
Куккук сассиллĕ кĕнеке —
Вăл реквием пек халь янратăр.

Хорал пек Днепрăн хумĕсем
Кĕвĕленеççĕ пуль салхуллă...
Çут тĕнчене юратнăçем
Унран уйăрăлмашкăн хурлăх.

Асра тĕлпулусем, тав-шав.
Кĕнекесем парне паратпăр.
Остер та Киев, Минск, Мускав...
Шет, калăн, шăпаран таратпăр.

Чараймăн кун-çула: «Тăхта!»
Калас сăмахăм сахал марччĕ...
Портретăра пăхатăп та, —
Вăл çĕнĕлле пăшăрхантарчĕ.

Эп Сирĕн Ураинăра
Нихçан та Сирĕнсĕр кураймăп.
Халь Атăл çĕрĕ ман тавра.
Мехел çитсессĕн хам та кайăп.

Пĕр кăмăл пур: таçта ютра
Чăваш çинчен сăмах хушуçăн
Мана та çав калаçура
Астутăрччĕ пĕрер ман тусçăм.

Пĕлетĕп: ят вăл — ят кăна,
Анчах хăш чух çапах такамшăн
Самантлăх та пулин хăвна
Эс питĕ кирлĕ пек тăвасшăн...

...Каштанăра, тирекĕре,
Крещатик усрамне куратăп...
Максим Тадеевич, Сире
Тăпра пусмасть, пĕлсе тăратăп.

* * *

Поэзи вăл — уйрăм патшалăх,
Ăна чинпала эс виçеймĕн:
Ĕнер тиркени — халь пахалăх,
Паян мухтани — тен, пиçеймĕ...

Сăмахăн тĕп ылтăнĕ — чăнлăх,
Ăна хурласа хуратаймĕç.
Поэзи вăл çамрăк яланлăх,
Ни пенси çук уншăн, ни канăç.

1964

## САВĂШ КУРКИ

*Расул Гамзатова*

Хуçи юрламасан хăни шарламĕ —
Чăваш йăли-халапĕ çаплалла.
Сана савса пĕрер çавра юрлам-и
Куç пек тулли курка тытса алла?

Инçе çулна-йĕрне эс çывăх турăн,
Цада Гамзачĕн ывăлĕ Расул!
Килех! Шап-шурă катан пир пек шуррăн
Умна сарăлса пытăр пирĕн çул!

Ĕмĕрлĕхе пăхать хăватлă Атăл
Пăлхар-чăваш куçĕпеле кунта.
Килех! Сана хăмла çĕршывĕ хапăл,
Сăра лаççи яр-уçă умăнта.

Эсир мăйракапа ăсса сыпатăр
Сипетлĕ иçĕм тăрă сĕткенне.
Чăваш кĕрекинче çӳрет сар алтăр,
Тав Дагестанăн ăмăрткайăкне!

Çĕршывăм янăрать кĕслен-сăрнайăн,
Сан çĕрӳнте — чаганапа пандур.
Пĕрне-пĕри савса итленĕ майăн
Каламалли татах та пирĕн пур.

Ман Атăл вĕçĕ — санăн Каспи тинĕс,
Юрру пĕр ту çинче, пĕр хум çинче...

Манпа тахçан пĕр шывлă çын эппин эс,
Умра тем пысăкăш тăван тĕнче.

Сăвва-юрра савать Чăваш çĕршывĕ,
Юрру кашни килех вырнаçĕ сан.
Кĕрех, Расул! Тăванлăх ĕмĕр сывă,
Поэтпала поэт ыталашсан.

1965

## ПАВЛО ТЫЧИНĂНА

Украинăпа Тычина
Рифмăланнă ĕмĕре.
Тус яланлăх Украина,
Тус Тычина та пире.

Сирĕн уçă сăн-сăпатăр
Пурăнать чĕресенче.
Пĕрре мар çав сасă патăр
Чăваш халăхĕ çинчен.

Юрă пек янрарĕ уççăн
Харьковран Карпат таран
Пирĕн Çеçпĕл кутăруçăн
Вăй Эсир те хунăран.

«Савăнсам, чăваш!» — тесеттĕр,
Андриянăмăр вĕçсен.
Ун ятне сăвва кĕртсеттĕр,
Çыртăр «Çĕр титанĕсем».

Умлă-хыçлă ик титанĕ —
Укринпала чăваш —
Ун чухне вĕçсе пĕр танлăн
Пулчĕç ĕмĕр хурăнташ.

— Çĕр çинче те туслă пулнă,
Пĕлĕтре те туслă халь! —
Тесе асăнтăр ыр чунлăн
Эсир икĕ халăха.

Пысăк сумлă аслă сăвăç,
Эсир çитмĕл пиллĕкре.

Чыс та тӑвӗҫ, тав та тӑвӗҫ
Халӑхсем паян Сире.

Чӑваш халӑхӗн сасси те
Ӑшӑ-ӑшӑ салампа
Киева паян, тен, ҫитӗ
Ҫакӑ манӑн сӑввӑмпа.

...Вӑтӑр ҫул ытла пӗлетпӗр
Пӗр-пӗрне ҫак тӗнчере.
Пурӑнатпӑр-ха, ӗҫлетпӗр
Юратса тӑван ҫӗре.

Эп хама телейлӗ тетӗп:
Сирӗнпе ҫыру-хыпар
Ҫӳретме те, пуплеме те
Тӳрӗ килчӗ сахал мар.

Пухусем те тӗл пултарчӗҫ,
Тӗл пултарчӗ кӗреке.
Ытларах та туслантарчӗ
Хамӑр ҫырнӑ кӗнеке.

Пӗр-пӗрне парне паратпӑр,
Чи пахи тесе ӑна.
Тӗл пулсан чӑнне шыратпӑр
Куҫран-куҫ сӑна-сӑна.

«Тус-йышу хӑвӑнтан лайӑх
Пултӑр», — тет чӑваш ялан.
Тен, чылай пулаттӑм япӑх
Эп Сире курман пулсан.

Эсир хӑвӑр та сисмесӗр —
Ман чунпа ӑс-хакӑла
Вӗрентмесӗрех вӗрентрӗр
Уйӑрма ыр-усала.

Пултару вӑл — пӗтӗм пурнӑҫ,
Ҫӑмӑл чап вӑл — кӑпӑк ҫех:
Ҫил вӗрет те — пӗтрӗ курнӑҫ,
Вӗҫрӗ кайрӗ пуш чечек.

Çаксене Эсир туйтартăр
Чи малтан тĕл пулсанах.
Халăхри парка тымарăр
Сирĕн тарăн яланах.

Чăнкă ту пек кунăм-çулăм
Тӳпинчен паян пăхсан,
Шав ĕçлес килет ман, тусăм,
Эсир пуршăн савăнса.

Тав Сире! Чăваш каланă:
«Çĕр çулччен таптар çĕре!»
Ырлăхпа телей, тăванăм!
Тайма пуç! Мухтав Сире!

1966

## МУСА ДЖАЛИЛЕ

Пăхма имшер ун ӳтĕнчен
Ăçтан тухать кун чухлĕ вăй?
*М.Джалиль*

### I

Сан вăю — вăл ăçтан тапса тухнă?
Астăватăп хăвна пит аван.
Çав вăя сан валли халăх пухнă,
Çĕршыву, Раççейӳ, Тутарстан...

Вилес кун пĕр салам эсĕ çырнă,
Вăл — Тычина патне-мĕн. Апла
Суранне тӳрлетен Украина
Хăй те пулнă ун чух санпала.

Шухăшпа шуралан ун поэчĕ
Курчĕ пирĕн кашни утăма,
Ĕпхӳрен вăл пире вăй кĕртетчĕ
Тăшмана хăвăртрах тĕп тума.

Темиçе халăха тăшман çарĕ
Таптаса мăшкăлланă чухне
Украин пушкăртпа тăванлашрĕ,
Хисепе хучĕ ун чĕлхине.

Эс, Муса, пĕлеймерĕн: Тычина,
Сăввинче хăйĕнле чи малтан
Çырса лартнă пулсан Батьківщина,
Юнашар ун чух çырнă Ватан.

Тутарла та пĕрех вăл — çав аслă,
Çав хăватлă сăмах авалтан:
Вăл — Тăван çĕр! Çук унсăр пуласлăх,
Сăвăç тунă тупа унпалан.

Эс салтак юнĕпе хытса ларнă
Шур чечек çинчен çырнă чухне,
Тен, хăй юнĕ юхса варалана
Çĕн Болгари поэчĕн тумне.

Чăн: Никола Вапцарова пенĕ
Хĕрĕх иккĕмĕш çул, июльре.
Сан пекех хăй класне вăл ĕненнĕ,
Коммунист пулса кĕнĕ çĕре.

Периччен ик сехет маларах та,
Куç курсан та пăшал кĕпçине,
Вăл пĕлет: хальлĕхе пур-ха вахта,
Вăл çырать юлашки сăввине.

Пĕр-пĕрне нихăçан та пĕлмесĕр,
Пĕр юнах тапнă пек чĕрĕрте,
Чул тăва çурмалли хăват евĕр
Ӳснĕ сăвă хăвачĕ сирте.

Авалхи трубадур, бард-и, скальд-и —
Сирĕнпе пурте пулнă вĕсем.
Чĕрĕре хĕртнĕ пур Бухенвальдăн
Сивĕнсе çитеймен кĕлĕсем...

Çавнашкал пирĕн ĕмĕр поэчĕ,
Ĕненсе халăхсен пĕрлĕхне
Пăр шыва та, вута та кĕретчĕ,
Йăлмака та чикетчĕ майне.

Юнашар çĕнĕ муза утатчĕ
Салтакла тумтирпе, атăпа.
Чи таса сăмахсем вăл тупатчĕ
Сăвăлла тутармашкăн тупа.

Сăвăран кĕç пулатчĕ граната,
Шартлатса çурăлатчĕ тĕрме...
Эс тĕнче асĕнче пурăнатăн
Сăвăçсен хăватне пĕлтерме.

1965

## МУСА ДЖАЛИЛЕ

### II

Кукăр-макăр йышлă урама
Мускавра хутларăмăр, Муса!
Ун чухне пуçлайнă пурăнма,
Кам шутланă вăрçă тухасса?

Урхамах пек йĕкĕтсемччĕ те,
Çул тап-такăр пекчĕ малалла.
Халăх ĕмĕтленнĕ ĕмĕте
Çитересшĕн пулнă пулмалла.

Тин пуçланнă пилĕкçуллăха
Тултарас килетчĕ хăвăртрах.
Çăкăр, сахăр, тум, пушмак-чăлха —
Хĕсĕкрехчĕ йăлт çав вăхăтра.

Ыранхи ырлăхсене шанса
Пиçиххи хытартăмăр пăртак.
Нихăçан çĕнни пулман ансат:
Кансĕр те ӳсет вăл, йывăр та.

Сăвăсем янранă çав-çавах,
Чăннине каланă халăха.
Хаçатсемĕр тав тăва-тăва
Йышлататчĕç пирĕн сăмаха.

«Коммунист» тухатчĕ тутарла,
Чăвашла тухатчĕ «Коммунар».
Çавсенчен çул тытна Урала,
Донбаса та сăвăç сахал мар.

Центриздатăн пӳлĕмĕсенче
Çын сĕрлетчĕ тĕрлĕ чĕлхепе.

Эс, Муса, пĕриччĕ çавсенчен,
Эп — теприччĕ... Тин тĕл пулнă пек!

Çĕлĕк илнĕ пулĕ пĕр-пĕрне,
Алă тытнă пуль, сăмах хушса.
Тен, пит калайман та кирлине...
Эй, ку иккенне пĕлнĕ пулсан!

Çамрăкла пире, пит çамрăкла
Вăхат кӳлчĕ хăй урапине:
«Эс те, сăвăç, сĕтĕр, — терĕ, — лав».
Сĕтĕрнех вăл, хĕрхенмен вăйне.

Ăшă, çутă, хăтлă пӳлĕмре
Романссем вăл итлесе ларман —
Малтанхи чугун вĕре-вĕре
Юхнине ун чух ытарайман.

Антрацит мĕнле ялтранине
Ӳкересшĕн пулнă вăл сăвва,
Тракторсем мĕнле кăларнине
Сăнамашкăн кайнă Харькова.

Самана шайне тăрас тесе,
Ĕлкĕрес тесе унпа пыма,
Тен, хăш чух васкавлă йĕркесем
Тивнĕ пулĕ сăвăçăн çырма.

Тен, пиçсех те çитеймен вĕсем,
Халь выртаççĕ пулĕ манăçса...
Ятсăр салтака хисеплесе
Çутнă çулăм — ĕмĕрлĕх таса!

...Ак салтакăн утрăмăр, Муса,
Çырăнса пĕтмен сăвăпала.
Вăхăт хушрĕ: «Пит кирлех пулсан —
Пăшалпа эс çырăн малалла».

Каялла та чакнă шăл çыртса,
Сутăнчăк та тупăннă хăш чух,
Хырăмпа та шунă пуль выртса,
Салтака тивмен суран та çук...

Тӳсрӗмӗр пурне те. Йывӑр ҫул
Илсе пычӗ ҫӗнтерӳ патне.
Сан ҫинчен пулсассӑн калаҫу —
Эсӗ тӳсрӗн тамӑк асапне!

Ҫав-ҫавах манмарӑн ху камне:
Коммунист, Совет ҫынни, тутар,
Эс ямарӑн халӑхун ятне,
Нимӗнпе те эс парӑмлӑ мар.

Халӑху пилленӗшӗн талант,
Вӑл чӗлхе пилленӗшӗн сана,
Вилӗме ҫӗнен юррупалан
Эсӗ чыслӑн татрӑн парӑмна.

1966

## ТУКАЙ ХУРӐНӖ

Кӑрлай ялне Тукай ятне халь панӑ:
Мухтавлӑ сӑвӑҫ пурӑннӑ кунта.
Ҫӗр ҫыннисем илем мӗнне ӑнланнӑ,
Алли-ури ӗҫре хытсассӑн та.
Ӗҫ халӑхӗн ялан ҫунатлӑ чунӗ,
Анчах нумайӗшин ҫунаттине
Хура элчел хуҫа-хуҫа шар кӳнӗ,
Этем вара хӑварайман йӗрне.
Илем ялта ҫанталӑкпа пӗрлешнӗ,
Вӑл пулӑшнӑ ӗҫре... Пӗр хурӑна
Ял ҫыннисем «Тукай хурӑнӗ» тенӗ,
Халиччченех ҫапла вӑл пурӑнать.
Вӑл ватӑ ентӗ. Ял-йышсем калаҫҫӗ:
Хӑй лартнӑ, имӗш, хурӑнне поэт.
Хӑшӗ-пӗри тата ҫакна хушаҫҫӗ —
Унта темле тупа вӑл тунӑ тет.
Нумайӗшин ҫапла кӑна сӑмахӗ —
Вӑл сӑвӑ ҫырнӑ хурӑн айӗнче.
Тем тӗрлӗ те юхать ял-йыш юмахӗ,
Шур хурӑн шутламасть те ун ҫинчен.
Ун пӗрӗннӗ вулли ҫинче куратӑн
Тукайӑн кантӑкланӑ сӑнарне.
Ял-йышсемпе вӑл пурӑнать пӗр танлӑн,
Ҫӗртен тупса поэзи ҫӑкӑрне...

Ку сăвăça эп курнă тĕрлĕ майлăн:
Гранит та мрамор, бронза кӳлепе...
Анчах çак ешĕл хурăн палăк маншăн
Кăмăллăрах пек чĕрĕ чĕлхипе.

1966

* * *

Вуншар çулпа шутлатпăр ĕмĕре.
Ак тепĕр вунă çул вĕçсе ăсанчĕ.
Туссем сайраланаççĕ кунсерен,
Малта — çаплах йăлтăртатать-ха шанчăк.
Ĕçлес пек, пурăнас пек туйăнать:
Çул хыттипе кăрлач пăрлакĕ çийĕн
Чак-чак лартса пыратпăр туяна.
Хăш чух, тен, такăнăн, шуса та илĕн:
Этем вăл этемех çав, робот мар.
Анчах мĕскер вăл ман инкек-синкекĕм!
Çĕршывăм, халăх куртăр пархатар,
Эп çавăн ĕç-пуçне пăхса тинкертĕм.
Ĕçсем-пуçсем пыраççĕ пек аван,
Хăюллăрах пула пуçларĕ халăх.
Хăять хăй хăватне вăл шаннăран,
Хăвачĕ унăн — темĕн пултармалăх!
Эпир камсем? — Çав халăхăн сасси.
Каланă: сăвăç — тарçă та çулпуçĕ.
Эпир — тăван чăвашăн пуласси,
Пирĕнпеле вăл малалла çул уçĕ.
Эпир — сăмах тимĕрçисем, туптатпăр
Кунне-çĕрне пĕлмесĕр чĕлхене.
Сунтал çинчи кашни сăмах туянтăр
Хĕç çивĕчĕшне, çĕмрен шĕвĕрлĕхне.
Мухтав хăй тунă чĕлхине юратнă
Шывра путми, вутра çунми йăха!
Мухтав поэт çумне поэт тăратнă
Талантлă, ăслă, аслă халăха!

1967

# ВĂХĂТ ТУЙĂМĔ

## ШУПАШКАР

Исламăн симĕс ялавне
Çитереймен кунта араб.
Кунта çаплах Пихампара
Пуç тунă Атăл йăлăмне:
«Ху кашкăрна-кашаманна,
Ху упуна-утаманна
Чарсамччĕ», — тенĕ этемсем.
Кунта çаплах Киремете
Пăрахнă, тăкнă темĕн те:
«Ан тив, ан çулăх, хĕрхенсем...»
Хул хушшине калпак тытса,
Хĕвелтухăçнелле пăхса
Тинкернĕ хĕрлĕ хĕвеле:
«Эй, эсĕ, Пӳлĕх ывăлĕ!
Ялан тухатăн Атăлтан,
Анатăн Атăла ялан.
Пирĕнпеле сĕм авалтан
Çак шыв, хум-авăр пĕртăван —
Хута кĕрсем, çырлах, çырлах!..»
Кунта çаплах —
Качча каян хĕрипраçа,
Парни-сарнипеле пĕрле
Хăй йĕрĕх кунтине парса,
Ăсатнă аякри киле:
«Тĕп çуртăн ыр йĕрĕхĕсем,
Йăхăмăра ĕрчетĕрсем».
Асамçăсем, чӳк пуçĕсем
Пĕр-пĕринпе курăнăçсан
Сăмахсăр кулнă куç хĕссе:
«Мĕнле, ыр çыннăм, тухăç сан?»

Çук, Магомет коранĕнчен
Кĕтмен кунта пархатара,
Вĕренĕ урăхла тĕнче
Юман тĕкмел[л]ĕ хулара.

1945

## ПУЛĂÇĂСЕМ

Партассем, çăрттансаем, çупахсем...
Хăвăртрах! Тавăрсам! Силлесем!

Лекнĕ чух ывăтар-ха тепрер,
Сăр урлах каркалар та сĕрер.

Сăр пулли кĕленче ăшĕнче
Ишнĕ имĕш патша умĕнче.

Халĕ хамăр хуçа пурнăçа,
Пархатар ирĕкри пулăçа!

Çак, ачам, çӳлерех хуранне,
Хур, ачам, вуттине, хур айне...

Çупахсем, чапаксем, шывçисем...
Хăвăртрах! Тавăрсам! Силлесем!

1945

## ЮРАТУ ÇЫРАНĔ

*Арк. Эсхеле*

Хула час вăранĕ.
Сирĕлет тĕтре.
Юрату Çыранĕ
Саламлать пире.

Сакăлта та чăнкă.
Атăл аялта.
Чикĕм пуçлă чăм-ха
Шантарма йăлтах.

Чăмма пур сăлтавĕ:
Кăвак куç савман.
Ма вылять тата вăл
Чĕрепе ялан?

Кам ăна ăнланĕ!
Виç, виçӳ çитсен —
Юрату Çыранĕ
Сарлака иккен!

Чĕрене тытарайĕ,
Печĕ пӳске пек.
Печĕ те каларĕ:
«Эп тытмастăп тек».

Кĕç чĕре пулатчĕ
Нӳрлĕ тăм айне —
Хăлаçланчĕ каччă,
Тытрĕ чĕрине.

«Эс — художник. Пурăн:
Санăн тӳсмелле...» —
Атăл антăхуллăн
Пăхрĕ çӳлелле...

Хула час вăранĕ,
Ĕç нумай хулан.
Юрату Çыранĕ
Мăч та куç хупман.

1945

## РОМАНС

Ан каласамăр ун çинчен,
Ан асăнтарăр кăлăхах.
Мана хăварчĕ вăл пĕччен,
Хăварчĕ ĕмĕр тăлăха.

Пĕлетĕп эп, вăл айăплах,
Анчах ӳпкевĕм çук.
Унпа çапах та эп, çапах
Телейлĕ пултăм çавăн чух.
Ан асăнтарăр кăлăхах.

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул...
Сӳнмест пĕрремĕш ăраскал.
Ах, сывă пул эс, сывă пул,
Юлайнă кăмăл, ан хускал.

Ан каласамăр ун çинчен:
Çĕклемĕ вăл ман хурлăха.
Тӳсме эп хăнăхнă пĕччен,
Ан асăнтарăр кăлăхах!..

1945

## КУНТА ПУРНАÇÇĔ ПОЭТСЕМ

Сĕм пĕлĕтре хĕлхем те çук та,
Çапах вĕсемшĕн пĕлĕт çутă.

Пăхсан — пахча пахчах, анчах
Вĕсемшĕн вăл — çĕрти çăтмах.

Тăм сăрт вăл — Юрату Çыранĕ.
Кĕпер... — Епле ахаль каланĕ? —

Вăл Уйрăлу Кĕперĕ-çке,
Киоскĕ — Çул Курки, кĕскен.

Эрех лавкки, пĕлетĕп эпĕ,
Вĕсем — Омар Хаям нӳхрепĕ.

Ыр çыннăм, пит ан тĕлĕнсем:
Кунта пурнаççĕ поэтсем!

1945

## МАРГАРИТА ЮРРИ

Пиншер çулсем этемлĕх пурăнать
Чăнлăхпала юмахлăх хушшинче.
Кирек мĕнле пуççап ху турруна —
Искусствăпа илемлĕ çут тĕнче.

Гомер, Пракситель, Рафаэль, Шекспир...
Вĕсемсĕр кам пулаттăмăр эпир?
Мĕн пулĕччĕ-ши пирĕн пурнăçран
Бетховен, Моцарт çуралман пулсан?

Ялан чи харсăр, пăхăнусăр, ирĕк,
Çап-çамрăк, кивелми ĕмĕрлĕхе —
Искусство — сывлăш, çăкăр, Турă пирĕн,
Унта этемлĕх вилĕмсĕрлĕхĕ.

9.X.1945. Ш[упашка]р

* * *

Pourqoui? — тесе ыйтать пĕри,
А тепри калать: мĕскершĕн?
Иккĕш те хурланчăк çав тери,
Мĕншĕн тесессĕн... (виçĕ пăнчă)

Мускав бульварĕ вĕçленсех килет,
Куратăп эп трамвай чарăннине.
Ах, ма вăл тăсăлмасть-ши вĕççĕрех,
Пĕлмест-шим уйрăлас килменнине?

Пыраççĕ ик чăваш бульварпала,
Мĕнле туйăмпала, мĕнле кăмăлпала?
Асамлă кăранташ хăех сăвă çырать,
Пире вăл хурăнташ, ăна усрас пулать...

Пĕртен-пĕр хăмăр пăнчă
Ун сылтăм куçĕнче,
Ман пурнăçăм ăнчĕ,
Çуталчĕ çут тĕнче.

10.VII.1946. Мускав

## ПĔРЕР ТĔЛ ПУЛНИСЕМ

(Асилӳ)

Ма эс кайрăн аякка,
Савнă сăн-сăпат?
Хыр çинче улатакка
Телеграм çапать.

Пăнчă-пăнчă е тире
Саспалли пулса
Хăш çĕрти каçа-ире
Кансĕрлет ку сас?

Алăкна вăл шаккасан
Хăш çĕрти çĕрле
Эс тăратăн пăлханса
Хĕрелсе хĕрле?

Канлĕхе чун туртнăçем,
Ир тăрсассăнах
Мĕнле тинĕс хумĕсем
Ачашлать сана?

Мĕнле йывăç айĕнче
Тунсăхланăран:
«Ма пит аслă-ши тĕнче?» —
Терĕн эс паян.

Çирĕм çул... Ытла нумай
Тӳсĕм чĕрере!
Çук-ха, çук-ха, çук-ха май
Тĕл пулма пире.

Хыр çинче улатакка
Телеграм çапать.
Ма эс кайрăн аякка,
Савнă сăн-сăпат?

1947

## КИПАРИС

Е ирпеле кӳтен хуралçăн,
Е каç тухнăн йĕннинчен
Ăна шух çил çинче куратăн
Тĕтреллĕ кантăк умĕнче.

Е йывăрлатнă пек ăс-хакăл,
Ларать тем шухăшпа сĕнксе.
Пур шав-кĕртен те аякра вăл,
Илтмест алхаслă тинĕсе.

Е хор ертсе пыран çын шутлă
Кăшт пуç пĕксе илет çемçен.
Хăй хурлăхлă та лăпкă куçлă
Тата, Чайковски пек, пĕччен.

## САРАЧАЙ ЮРРИ

...Юрĕ, юрлăп эпĕ те.
Çын килет çак çĕр çине,
Кирек кам та юрлатех
Хăйĕн савăш юррине.
Çапла хушнă аслă Турă,
Иртме çук вăл хушнинчен.
Вăл çаплах мана та хушрĕ
Юрламашкăн хам çинчен.
Уяр кун уя эп тухрăм,
Сухаларăм анана,
Хĕвеле пăхса тав турăм
Сывлăх панăшăн мана.
Уçă, сывлăмлă ирпеччĕ,
Çуркунне йĕри-тавра.
Ут кĕтӳ хире вĕçтерчĕ,
Пăс çĕкленчĕ анаран.
Амăшне пăру чĕнетчĕ,
Кайăк-кĕшĕк пĕр-пĕрне
Юратса чĕвĕлтететчĕ.
Çав кунне, çав ирхине
Апатпа Сарпи пыратчĕ
Хăйĕн ашшĕ патнелле.
Ман чĕрем сиксе тухатчĕ:
«Ак кампа пĕрлешмелле,
Ак кама ытарма çук!» —
Терĕ ман чĕре ун чух.

1947

## ÇАК КУН

Тĕтре-и, хура пĕлĕтсем-и? —
Çак кун пире çутă ялан.
Совет йăлипе — ĕç этемĕ
Чыслать ăна пур кăмăлтан.

Сив çил-и, пăрланнă тумхах-и? —
Çак кун пире ăшă ялан.
Çунать хуран айĕн вучахĕ,
Кĕрет хуплăва сар автан.

Юр сĕлтĕш-и, пылчăк килет-и? —
Çак кун тасаран та таса
Кĕрхи перекетĕн тивлечĕ —
Сăра чашкăрать талхăрса.

Çăра кăпăкне сиреймесĕр
Курка тӳпеми тултарса
Шаккатпăр та пурте ĕçетпĕр
Çулпуçшăн пĕр харăс тăрса.

Тавсси сана, Сталин аттемĕр!
Хастарлă ĕçчен çынсенчен
Хăватлă кун-çул, вăрăм ĕмĕр
Сунатпăр сана чĕререн.

Унтан, çак кĕрхи кĕрекемĕр
Хаваслăн кĕрленĕ чухне,
Асилĕпĕр хамрăн пĕртен-пĕр
Чи шанчăклă парти ятне.

Унпа кун çути курнă,
Унпа çырмаран-çатраран
Эпир аслă çул çине тухнă,
Унпа çын çинче çынпа тан.

Вара, пĕр çавра юрласассăн,
Тултарăпăр виççĕмĕшне.
Ăна эпир çĕклĕпĕр танлăн —
Çуралнă çĕршыв телейне.

1948

## АСЛĂ ÇУЛПА
## (ЧĂВАШ АССР 30 ÇУЛНЕ)

Паян эс историн мăн çулĕ çинче
Умна та, хыçна та пăхса тĕлĕнен.
*Ç. Элкер*

Вăтăр çул... Вăйпитти этем пек
Эс тăратăн, çуралнă çĕршывăм.
Нихăçан та кун пек илемпе
Çĕклеменччĕ эс паттăррăн, сыввăн.

Вăтăрта вăтăр ĕмĕр таран
Ярса пусăрăн эс, ирĕклĕ халăх.
Ăс-хакăлу та, мулу та паян
Сахал мар çынсене кăтартмалăх.

Кŷршĕпе, тус-йышпа пĕр канашлăн
Эс ларан кĕреке хушшине.
Чунунти сăмахна эс калатăн,
Анан чи паха ятсене...

Вырăспа юнашар кар тăрса
Виçĕ хут революцие тухрăн.
Сĕм хура пŷртсенчен хăтăлса
Коммунизм çуртне алăк уçрăн.

Аслă Ленин тыттарнă декрет
Пулчĕ сывлăх та чĕрĕлĕх хучĕ.
Вăл чăваш кун-çулне ĕмĕрех
Ылтăнпа çырăнса кĕрсе юлчĕ.

Кŷршĕпе, тус-йышпа пĕртăванлăн
Кĕреке умĕнче ларнă чух
Чун панчи сăмахна эс калатăн,
Каламасăр тŷсме те хал çук.

Авалхи сăмахпа каласассăн:
Юхтăр чул, путса лартăр хăмла —
Çав-çавах вырăсран татаймасăн
Пирĕн чун-чĕрене, кăмăла.

Ак тăвата çĕр çул аслă халăх
Хŷтĕлет пире хăй шăллĕ пек.
Кĕрешŷ, çĕнтерŷ, терт, хаваслăх —
Пурте унăн пĕрле пирĕнпе.

Сывă пултăр çĕнелнĕ Россия!
Аслă туслăхăн çурчĕ — Мускав.
Варкăшайтăр Чăваш çĕрĕ çийĕн
Пур йăха пĕрлештернĕ ялав!

1950

## ХАЛĂХ САККУНĔН КУННЕ

Сурхури те Микул кунĕ
Ĕлĕк пулнă хисепре.
Халь пур халăхăн саккунĕ
Уяв пулчĕ ĕмĕре.

Ĕрлешместпĕр, кăшкăрмастпăр
Вилĕ ӳсĕр пуçпала.
Вулав çурчĕн çулĕ такăр
Е утатпăр клубалла.

Ыранхи ĕçе манмастпăр,
Юррине те сăввине
Итлесе канса ларатпăр
Е юрлатпăр хамрăнне.

Уява уяв тумашкăн —
Кĕреке куркипелен
Курăшсассăн та пăртаккăн —
Пире айăп тумĕç, тен...

## САЛАМ, МУСКАВ!

Каçсерен вуник сехет çапать,
Çĕнĕрен вăл çĕнĕ кун çывхарать.
Пур çĕршыв та аслă Мускавпа
Тĕрĕслет васкавлă вăхăта.

Мускав! Мускав! Тĕнчере пĕр хула!
Таçтан-таçтан эс çĕклен кăмăла.
Пур халăх та савăнать санпала,
Васкать санпа вăл малтан малалла.

Сан сассу хăватлăн янăрать,
Ĕç тĕнчи итлет ăна савса.
Каçсерен пире вăл туйтарать
Кунсерен эпир вăйланасса.

Мускав! Мускав! Тĕнчере пĕр хула!
Таçтан-таçтан эс çĕклен кăмăла.
Пур халăх та савăнать санпала,
Васкать санпа вăл малтан малалла.

Кăнтăрла та, каç та çап-çутах
Мускавра çунаççĕ çăлтăрсем.
Мускава хаваслăн пур чунтан
Саламлаççĕ ирĕк чăвашсем.

Мускав! Мускав! Тĕнчере пĕр хула!
Таçтан-таçтан эс çĕклен кăмăла.
Пур халăх та савăнать санпала,
Васкать санпа вăл малтан малалла.

Тăванлантăмăр санпа, Мускав,
Пĕрлехи ĕçре, кĕрешӳре.
Вырăс халăх чапĕ, тав-мухтав!
Туслăх пытăр ĕмĕр-ĕмĕре!

Мускав! Мускав! Тĕнчере пĕр хула!
Таçтан-таçтан эс çĕклен кăмăла.
Пур халăх та савăнать санпала,
Васкать санпа вăл малтан малалла.

1950

## ЛАВРА УМĔНЧИ ШУХĂШСЕМ

«...Сăрт хыçĕнченШупашкар курăна пуçларĕ, пĕчĕк кăна, анчах илемлĕ хула. Чиркĕвĕсем ытларах пулмасан та, çынсем пурăнакан çуртсем чухлех пулас; пурте авалхи Мускав архитектурипе тунăскерсем. Кам валли, мĕн сăлтавпа лартнă-ха вĕсене? Чăвашсем валли-ши? Çук, православи тĕнĕ валли. Мускавăн шалти кивĕ политикин тĕп кĕвви — православи. Манма йывăр чăрмав (1-мĕш Николай. — *П.Х.*) хăйĕн айван ăсĕпе çав пушаннă тĕвве хытăрах пурантарасшăн пулнă та — ытлашширех туртнă-мĕн, тĕвви халь пĕр çӳç пĕрчи çинче кăна тенĕ пек тытăнса тăрать».

*Т.Г. Шевченко, 1857 çулхи дневник*

Ытахальтен çул çӳрекен çын мар эп,
Каланăччĕ хама, калап каллех:
Курман çĕршыв пулсан — ăçта тымарĕ?
Алт, кĕр истори тĕпнелле!

...Хутаç çакса — çăпатапа, çуран-и —
Кив Рççейри пин-пин этем пекех
Чăваш çынни те кунталла такканă
Пăртак манасшăн инкеке.

Ĕнер кăна вăл киреметçĕ пулнă.
Афон та Иерусалим, Кейӳ
Мĕнле вăйпа чунне çĕн тĕшмĕш сулнă,
Йӳç юшкăн лартнă пек ейӳ?

Явса хытарнă шăнăрлă, хевтеллĕ
Пĕтсе пĕтми çак халăх — мĕн енне
Ютра шыранă тĕрĕслĕх хĕвелĕ?
Шевченко курнă мĕншĕнне...

Чиркӳ хĕресĕ, мечĕт çинчи уйăх
Чуралатасшăн пулнă чăваша.
Пĕри йăшсан — тепри тӳстернĕ хуйăх,
Чăвашшăн вăрçă пынă шав.

Миçе ĕмĕр тăршши чуна лăскарĕ
Пĕр ханĕ, пĕр патши тĕттĕмлĕхре!
Пур мăшкăл тĕввине те пролетари —
Çав çеç — кач! касрĕ ĕмĕре...

Эп кĕлтума та пуççапма килмерĕм —
Çурт ăстисем тĕпчеччĕр лаврăна.
Салтак пулса эп çак çĕртен иртсеттĕм,
Курсаттăм ишĕлчĕк кăна.

Сĕм каç тĕпреннĕ кирпĕч купи урлă
Автомата çумма чăмăртаса
Анăçалла çул хыврăм, йывăр хурлăх
Пытарăнчĕ ахлатмасса.

Халь — ассăн сывлама та пултаратăп...
Тĕп çуртăмăр Кейӳ! Çак çуркунне
Пайтах çар-йышăма эп астăватăп —
Сана çăлса пуç хунине.

Вĕсен типсе çитмен чĕр юнĕ мар-и
Чечек йăранĕсем çинче çунать!
Вĕсен çап-çутă куçĕ пек çутатрĕ
Çĕн çуртăн кантăкĕ чуна.

Кунти çарсен тӳсĕмлĕхне кăтартнăн,
Паян та туйтарса чакми вăй-хал,
Гранит çинче парадалла уттарнăн
Утать Ватутин генерал...

1952

## ЮРРĂМĂР СТАЛИНА

Ялтан та яла, хуларан хулана
Янра, юрă, пур таврана.
Мухтатпăр чи çывăх, юратнă çынна,
Çĕршыв çуттине — Сталина.

Санпа эпир тухнă вутран, çулăмран —
Çĕнтернĕ мĕнпур асапа.
Ялан эс асра, чĕрере эс ялан,
Телейлĕ пур халăх санпа.

Тайма пуçпалан, пур таса кăмăлтан
Сунатпăр чи савăк кун-çул.
Çулпуçăмăр, тусăмăр, аслă тăван,
Чакми вăрăм ĕмĕрлĕ пул.

Мĕнпур ĕç тĕнчи çӳлерен çӳлерех
Çĕклет сан таса ялавна.
Çултан та çула, ĕмĕртен ĕмĕре
Янратăр: «Мухтав Сталина!»

1952

## ÇАМРĂКСЕМПЕ «ÇАМРĂК БОЛЬШЕВИКА»

Май уявĕшĕн, çĕнĕ хаçатшăн
Эп хавас сирĕнпех, çамрăксем!
Тен, салам каласа çырнă майăн
Сĕнмелли те пур пулĕ? Сĕнем...

Хаçат пултăр хăюллă, йăлт куртăр,
Савăнтартăр, вĕренттĕр ăса.
Кирлĕ чух — çивĕч шăллă та пултăр
Хамăр вилĕмсĕр ĕçшĕн тăрса.

Çамрăксем хаçатпа утчăр харсăр —
Çĕнĕ шухăшшăн йĕр йĕрлесе,
Тумхахран-лакăмарн хăрамасăр
Иртсе кайччăр йăлтах çĕнтерсе.

Ĕçлесе, вĕренсе, юратса та
Каччă-хĕр шав шырать телейне.
Хаçатра хытăрах çав йыш савтăр
Çĕршыва, пурнăçа, пĕр-пĕрне.

Çĕклеме кăмăла та, чуна та
Хаçатра — кашни номерĕнче! —
Сăвă-юрă курасшăн çунатăп,
Калаçса татăлар кун çинчен.

Çамрăксем çав юрра пуçласассăн
Янратар пĕтĕм халăхпала.
Пирĕн паттăрлăх, вăй кунăн-каçăн
Пĕр çул çеç пĕлтĕр, вăл — малалла.

Нихăçан на хаçат ан лăплантăр,
Вулкан туйтăр Май хавасне.
Кĕскенрех ак çапла халь калатпăр:
Тивĕç пултăр хаçат хăй ятне.

1952

## ТУПА

Парти! Итлетĕп тăван сассуна.
Хурлăх хуплать пит-куçа, кăмăла.
Чунăм кӳтет те, хыпса та çунать:
Сталин тек çук... Кам çакна шанмалла?!

Аслă чĕре тапма чарăнчĕ-шим?
Хупăнчĕ-шим çиçĕм пек витĕр куç?
Шухăш вучахĕ чăнах сӳнчĕ-шим?
Çук! Сталин халь те — тĕнчешĕн çулпуç.

Халь те, ыран та, ялан, ĕмĕрех
Ленинпа Сталин нихçан уйрăлми
Икĕ хĕвел пек çутатĕç çĕре
Янкăр уяррăн, сӳнми, хупланми...

Парти! Итлетĕп хĕрӳ йыхравна.
Чыслă та ырă ятна упрама
Тӳррĕн тупа эп тăватăп сана,
Халăхшăн парăп мĕнпур вăйăма.

Аслă çĕршыв тума пулнă ĕçре
Пулăп мĕнпур шухăшпа, кăмăлпа;
Ленинпа Сталин ятне чĕрере
Усрăп тесе эп тăватăп тупа!

1953

## ПЫСĂК ВЫРĂН ÇИНЧЕН ПĔЧĔК САВĂ

Эп шырамастăп пысăк вырăн.
Эп хапсăнмастăп мăн чина.
Сăпайлăн, кăмăллăн та ыррăн
Курасчĕ ман кашни çынна.
Ан тив, вăл пултăр аслă чинлă,
Эп чи малтан шыратăп ç ы н л ă х.

1953

## КĔНЕКЕ ÇИНЕ ÇЫРНИ

Ку кĕнекесем юлашки мар та,
Çапах кăшт хурлăхăм та пур:
Каçкӳлĕм патнелле çывхартăм,
Тăр кăнтăрлам час иртрĕ, мур!

Кĕтмен çĕртен шупка хĕвелĕм
Анса ларсассăн мĕн юлать?
Тен, хушăран аса илкелĕн
Ман йывăр тертлĕ кун-çула.

Мĕнле йӳççе эп астивмерĕм!
Мĕнле инкекĕн йĕрĕ çук!
Халăхăмран кăна писмерĕм,
Нихçан та писмĕп чĕрĕ чух.

1953

## ТУСĂМА

Тĕрлĕренех ăс-хакăл куртăм
Ку таранччен эп чăвашра.
Анчах пĕрин патне те туртăм
Кун пек пулманччĕ-ха ăшра.

«Тусу хăвăнтан лайăх пултăр!» —
Тесе пилленĕччĕ анне.
Унтан паха телей те çук-тăр.
Çапла пулинччĕ малашне.

Кăмăлăмпа та, ĕçĕмпе те
Ялан юрасчĕ ман ăна...
Чăваш ятне çĕклесчĕ тетĕп,
Кун-çул тĕллевĕ — çав кăна.

1953

* * *

Анчах пур-ха пирĕн кукăр алăсем те,
Йăпăлти чĕлхе те, хут чăмлакансем те.
Çавсем пурте йĕксĕк йăх-яхĕсем мар-и,
Вĕсене шеллевсĕр капкăнпа татар-и?!

## ТĂРНАККАЙ Е ТĂРБАЛДАЙ...

Пĕр ялта ача пурнатчĕ,
Чип-чипер шкул ачиех.
Вĕренетчĕ, тăрăшатчĕ,
Кулянмастчĕ вăл питех.

Ваттисем каланă çавă:
Пурнăç — пăрнăç. Хай ача
Çыркала пуçларĕ сăвă —
Урăхланчĕ ĕç наччас.

Пăшăл-пăшăл ушкăн-ушкăн
Илтĕнетчĕ шкул тавра:
«Тен, ак хамрăн пулĕ Пушкин,
Лайăх мар-им ку ара?»

Çаплалла калаçкалатчĕç
Тепĕр чух ача пирки.
Чĕрине сăхлантаратчĕ,
Ахăртнех, мухтав мĕлки.

Шкул хаçачĕ те кăларчĕ
Ун пĕр-икĕ сăввине.

«Ялава» та ярса пачĕ
Вăтансах вăл хăш-пĕрне.

Хуларан поэт пулмашкăн
Чăн меслет кĕте-кĕте
Вĕренӳ палли кăшт-каштăн
Чакрĕ те ун çак хĕлте,

Вăл шутларĕ: «Сумлă-ятлă
Тăрнаккай е Тăрбалдай
Çул кăтартрĕ те — эп чаплă
Сăвăç пулăп хама май...»

Тăрнаккайĕсен хăйсен те
Çирĕп мар иккен алли,
Çулĕ мар — сукмакĕсем те
Ниçталлисĕр таçталли.

Ямб-хорей мĕнне чухлать те
Ун пекки — вара пырать.
Икĕ кĕнеке вулать те
Виççĕмĕшне хăй çырать...

Пĕринпе пуплет япшаррăн,
Теприне кăшт хăтăрать.
Подвалшаррăн, подвалшаррăн
Пуçлакансене хăртать.

Хитререх сăмах тупсассăн,
Ăслă пуçлă япала
Блокнотне çырать хавассăн —
Ун та усă курмалла.

Консультаци те рецензи,
Пулăшу, хавхалату...
Темĕн те çырма пĕлеççĕ:
Укçа чул касать, асту!

Çирĕм пилĕк пин йĕркеллĕ
«Çĕр чĕтрет» поэмине
Хăвăртрах вăл пĕтермелĕх
Шăйăрать литфондсене.

«Аслати çапать» трагеди,
«Ял кулли» текен комеди,
Драма «Ахăрсамана»...
Пилĕк-ултă ят кӳретчĕç
Çулленех аванс ăна.

Хисепленĕ Управлени,
Тунă договор унпа.
ГИЗ планне те çирĕпленнĕ
Ун трилогийĕ «Тупа».

Йăлăхтарнă ĕнтĕ лешĕ,
Йăлăнтарнă та пăртак:
«Мĕн вара эс, мур илешшĕ?
Эпĕ — гени, как-никак!»

Сăввисем — вуншар çул ĕлĕк
Çырнисем те — сарайра
Халь кураççĕ тутлă тĕлĕк:
«Сутăнасчĕ-çке ара!..»

Те укçа пăртакçă хытнă,
Те кăшт ӳснĕ вулакан? —
Кĕнеки çаплах ун выртнă,
Çыххипех, купан-купан.

Куçăн та унтан кулаççĕ,
Алса витĕр те ăна
Каклишсем кăтарткалаççĕ,
Вăл çаплах халтурланать...

Инçетри тӳлек, сăпайлă
Ял ачи çакна пачах
Шутламан, пĕлмен, вăл, паллă,
Пĕлменни паха, ачам!

Ху çулна эс тупăн халĕ,
Пит пуçна усса ан лар.
Мĕн ĕçлерĕн — пурнăç калĕ,
Пурнăç вăл Тăрнаккай мар.

Чи малтан — вĕрен тирпейлĕн,
Çавăнта çăлăнăçу.
Вĕренмесĕр, ху пĕлетĕн,
Çăпата хуçма та çук.

1954

## ЮРЛАР!

Июнь. Чечекленет пур çутçанталăк.
Ейӳ шывсем кĕреççĕ çырана.
Çак уйăхра, юратнă тăван халăх,
Эс илтĕн автономи аллуна.
Хăватлă кĕрешӳ, чаплă хаваслăх,
Пулас телей çĕкленчĕ сан умна.

Çак уйăхра — ăна çӳлтен туятăн —
Эс лартăн сарлака кĕрекене.
Ик аллуна сулса юрласа ятăн
Хĕпĕртесе пăхса енчен енне.
Астунăçемĕн шухăша каятăн,
Куратăн тӳсĕмлĕ çулне-йĕрне.

Çак уйăхра сан поэту çуралнă —
Сана «Нарспи» хăварнă поэту.
Вăл сан ирĕклĕхне кĕтсе юрланă,
Вăл — сан чапу, сан вилĕмсĕр яту.
Çак уйăхра эс ху вăйна сăнанă:
Уяв ирттернĕ, тунă акатуй...

Шухăшупа ăçта çитсен те халĕ
Аса илен чи аслă пĕр тусна:
Сана хăтарчĕ вырăс чун хавалĕ,
Çĕре çитех ăна таян пуçна.
Мăн Атăл типĕ, сар хĕвел хуралĕ
Манас пулсан эпир Российăна.

Россия, вырăс халăхĕ упрарĕ
Ытарайми чечен чĕлхемĕре.
Кĕнекене те вырăс кĕртрĕ мар-и
Пĕрремĕш хут юрра-кĕввĕмĕре?
Çав туслăхăн, тăванлăхăн тымарĕ
Шала кĕрет — тăвата ĕмĕре!

Юрлар! Кĕслен, сăрнайăн та шăхличĕн
Янратăр Атăл тăрăхĕ ялан.
Ташлатăр хум пуса каччи пек вичкĕн,
Тан шывĕ пек тапа тăтăр талант.
Янра эс, ирĕк юрă, мир тĕнчишĕн,
Ĕнентĕр хăй вăйне вăл санпалан.

# ТĂВАН САСĂСЕН КĂМĂЛНЕ

Россия хĕвелĕ вăратнă этемлĕх
Туять хăйĕн аслă пулас пĕрлĕхне.
Савна кашни çын чĕрине витермелĕх
Поэзи шевли сарăлать пур енне.

Поэзи — сăмах çарĕсен авангарчĕ,
Вăл миршĕн тăрать, кĕрешет, çĕнтерет.
Вăл çĕр талккăшне, вăхăта парăнтарчĕ,
Вăл — пурнăç прожекторĕ çак тĕнчере.

Поэзи — ялан — самана урхамахĕ,
Тапать те сикте ĕмĕрсен тăршшĕне.
Çăварлăх хыптарăн ăна кăлăхах эс —
Çыртать те татать вăл тăшман тимĕрне.

Юртать уй-хирпе вăл, каçать ту-сăрт урлă,
Ишет тинĕсре, сывлăшра ярăнать.
Ачашлăх та çилĕ, хаваслăх та хурлăх,
Телей те асап — йăлт ăна парăнать.

Таса куçĕсем шĕл кăваррăн çунаççĕ,
Кашни хĕлхемех хыптарать-çке чуна.
ăна хĕсĕрлеççĕ, йĕрлеççĕ, юнаççĕ,
Вăл — пĕтĕм тĕнчен пулассишĕн çунать.

Поэзи — çӳлти ăмăрткайăк çуначĕ:
Нихçан пĕрĕнмест, лăпчăнмасть, усăнмасть.
Çавна тепĕр хут ĕнентерчĕ, туйтарчĕ
Умри кĕнеке чĕрепе чунăма.

Т ă в а н  с а с ă с е м... Ирĕкре аталаннă
Çĕршыв юррине те унта эс тăнлан,
Тин ирĕк илни те хĕрсе сăвăланă,
Халь сăнчăр татма кар тăни те — пĕр тан.

Т ă в а н  с а с ă с е м... Йышлă сасă пулин те
Эпир илтменни, тен, çавах та нумай.
Этемлĕх çурри-çке Китай тата Инди!
Кашни чĕлхеннех юррисем хăйне май.

Пĕрре тĕл пулсах курмасса уйрăлмастпăр,
Ӳссех пырĕ туслăх телей тулнăçем.
Чăваш çĕрĕнчен ырлăх-сывлăх сунатпăр,
Хисеплĕ, юратнă т ă в а н  с а с ă с е м!

26.XI. 1954. Шупашкар

## КАÇАРМАСТПĂР

Театр сезонĕ пуçланчĕ. Пит лайăх.
Анчах та — ырра пулĕ-и, усала-и —
Пĕр сасă янрать пур енчен те ку чух:
«Каçарăр, тархасшăн... чăваш пьеси çук».

Талант пулмасан çăпата та хуçаймăн.
Çапах та эсир, Осипов, Айзман,
Максимов, Харлампьев, Алагер, Кăлкан,
Пайраш, Павлов, Ржанов... Пайтах, шутласан!

Çук, çук, ятлă-сумлă театр,
Çук драмăçăсем — каçармастпăр!

1954

## АСЛĂ ПАРТИ, ТАВ САНА!

Тăван çĕршыва чĕререн юратса
Малтан малалла партипе çул тытар.
Тăван аслă парти çула çутатса
Пире кăтартать кунран-кун пархатар.

Парти — пирĕн мухтав!
Парти — пирĕн ялав!
Санпа эпир ялан çĕкленнĕ,
Санпа эпир ялан çĕнтернĕ.
Аслă парти, тав сана!
Халăхран мухтав сана, мухтав!

Эс пирĕн ăс-пуç, пирĕн çутă маяк.
Çĕклен кăмăла, ӳстерен вăй-хала.
Таса чĕресем санпала пĕрмаях —
Ӳссе паттăрланчĕ çĕршыв санпала.

Этем ирĕкне, халăхсен пĕрлĕхне
Ялан, аслă парти, тăран упраса.
Ялан ӳстерен ĕççынни телейне,
Мухтатпăр сана пур чунтан тав туса.

1955

* * *

Кĕркунне утать. Уттартăр...
Чунăмра çурхи сăвах.
Вăтăр саккăр, вăтăр саккăр —
Çитĕнӳ, малаш, хăват.

1955

## ÇУТАТТĂР ХАЛĂХА ÇУТТУ!

«Канаш», «Чăваш коммунĕ»,
«Коммунизм ялавĕ» —
Çапла кун-çулĕ унăн,
Çапла пирте ялан вăл:
Канаш ирĕкĕпе
Çĕклантĕмĕр, ӳсетпĕр.
Коммуна йĕркипе
Чăн пурнăç тĕвĕлетпĕр.
Утатпăр малалла —
Коммунизмалла.
Эс вунă пинмĕш номерне
Паян валеçрĕн çынсене.
Вулакансем миçе пиншерĕн
Сума сăваççĕ ĕлĕкрен!
Тăрса тухсассăн халь пĕрерĕн —
Çĕре çавăрса илĕç, тен.
Йыхравçă эс, тăван хаçат,
Эс сăвăр шухăша, тасат!
Кирек хăçан, кирек ăçта
Саватпăр хамăр хаçата.
Çĕр пин те тух, пин пин те тух,
Çутаттăр халăха çутту!

1957

* * *

Хам çуралнă Тутарстан!
Ачаран тăван тĕнче!
Саламлан чунтан-вартан
Мускав вунă кунĕнче!

Эп курма ĕлкĕреймен
Тукая куран паян.
Эп калаçнă чĕререн
Такташпа. Кутуйпалан.

Эп Мускав урамĕпе
Утăмланă Мусапа.
Ун вилĕмсĕрлĕхĕпе
Тухрăн, халăх, эс чапа.

Эп куратăп тăвана
Файзие, Ериккее,
Нумай тӳснĕ Туфана
Халь сунатăп телее.

Манпала пĕрле Нури
Тăрăшса ăс çĕнетет.
Тутарсен сăвви, юрри —
Ман чуна вăл чĕнетех.

Хам çуралнă Тутарстан!
Сар чапна пур çĕрĕпе.
Мускавра эпир ялан
Хурăнташ пĕр-пĕринпе.

1957

# КИЛЧĔ ЫРĂ ÇУРКУННЕ

## 1. Пăр тапранчĕ

Çуркунне кăçал вăй илчĕ
Пит вăрах.
Кайăксем те вĕçсе килчĕç
Каярах.
Юр та хăвăрт ирĕлмерĕ
Уйсенче.
Çуна çулĕ те пĕтмерĕ
Тахçанччен.
Атăл та аран вăранчĕ
Ыйхăран
Пит лӳпер[р]ĕн вăл тапранчĕ,
Пит мăран.
«Пăрахут та каяканччĕ
Халиччен!» —
Текенни кăçал нумайччĕ
Сăрт çинче.
Ирĕн-каçăн асăрхатпăр
Атăла,
Тупăшатпăр: ну, хăçан пăр
Катăлать?
«Хĕрри ваннă, час хускалĕ», —
Тет пĕри.
«Пĕр эрне выртать пуль-халĕ», —
Тет тепри.
Ак пĕрре çапла каланă
Хушăрах
Кашăр! турĕ Атăл анĕ,
Кашăрах!
Кăшт хускалчĕ те тăхтарĕ:
«Те каяс,
Те халь тин каяс та мар-и?» —
Тет пулас.
Анчах çук ĕнтĕ, пулмасть-тĕр
Выртасси:
Шăтăр-шатăр, çăтăр-çатăр
Пăр сасси.
Пăр çӳçенчĕ, турткаланчĕ
Чĕрĕ пек,
Вăхăт çитрĕ те — тапранчĕ
Ерипе.

Атăл урлă хура çулччĕ,
    Ак часах
Ун çурри тăрайрĕ юлчĕ
    Татăлса.
Кăшт тăрсан юлни те акă
    Куçкĕрет
Хуçкаланчĕ, вак[к]ăн-вак[к]ăн
    Вĕçтерет.
Кăчкăри хăва пуç тайрĕ:
    «Чипер кай!»
Пăрĕ кайрĕ, кайрĕ, кайрĕ
    Юхăм май!

### 2. Микулай пичче

Микулай пичче сăнарĕ
    Атăла,
Пăхрĕ-пăхрĕ те каларĕ:
    «Хăтăлать!»
Микулай пичче Куракин
    Ак вăл кам:
Хĕрĕх çул вăл çутнă бакен,
    Шутласам.
Хĕрĕх çул! Хушка хумсем те,
    Тăвăл та
Сахал мар вăл курнă ĕнтĕ
    Атăлта.
Ватă бакенçă тӳрлетнĕ
    Киммине,
Ав ăна вăл ӳпĕнтернĕ
    Çĕр çине.
Сĕрсе хунă йăлтăр-ялтăр
    Сăмала.
Эх, кимми! Çавăрмалла та
    Каймалла!
Час ăна вăл шăршăнтарĕ,
    Хĕррипе
Çӳресе кăшт хăнăхтарĕ
    Ерипе.
Аллине вăйлантарĕ
    Кĕсменпе:
Ишменскер вăл хытнă мар-и
    Хĕлĕпе...

Час каçкӳлĕм те, ирпе те
Кимĕ çак
Атăл тăрăх ак çӳретĕ
Бакенçа.
Ăшă чух та, сулхăн чух та
Каçхине
Ватă çын тирпейлĕ çутĕ
Бакенне.
Çумăрта та, уярта та
Ирхине
Сӳнтерех тăрĕ çак ватă
Çутине.
Тĕтрере кăна сӳнтермĕ
Вăл ăна:
Йăлтăр çутă та кирлех-мĕн
Штурмана.
Çав çутта курсан пулин те
Хутран хут
Малаллах вăл ишсе иртĕ —
Пăрахут.

### 3. Мĕн вăл бакен?

Мĕн вăл бакен? — Пирамида,
Тухья пек.
Чӳхенет хăш чух вăл хытă
Хумсемпе.
Чӳхенсе юхсах ан кайтăр
Тенĕрен
Шыв тĕпне яраççĕ якăр
Тимĕртен.
Тăрринче çунать хунарĕ,
Кăраççын
Хальлĕхе çутса хăварĕ
Ырă çын.
Хĕрлĕ çутă, шурă çутă
Атăлта
Ăшăх çĕр те, тарăн çул та
Кăтартать.
Кам пĕлет, тен, Атăл — тинĕс
Пулнăçем
Кирлĕ пулмĕç çакă кимĕç
Çутисем.

Халь ăна-кăна пăхмасăр
Пĕрехмай
Тăрăшать-ха питĕ харсăр
Микулай.
Чӳпек чикнĕ сăмалаллă
Кимĕпех
Тăрмашать вăл — çав малаллăх
Çитнĕ пек.
Çыннăн пултăр ырă кăмăл,
Тӳрĕ чун,
Тытнă ĕçĕ вара çăмăл
Пулĕ ун.
Пĕчĕк ĕç те пысăк шанчăк
Кӳнĕ пек,
Микулай пичче ав анчĕ
Кĕсменпе.
Киммипе ларса вăл ашрĕ
Атăла.
Унăн шухăшĕ майлашрĕ
Çаплалла:
«Пĕчĕк киммĕм, çул кăтартăн
Карапа.
Ан хăра, карап, шыв тарăн,
Яра пар!»

### 4. Сунара!

Таса Атăл леш енче,
Вăрманта,
Урăх евĕрлĕ тĕнче
Пур унта.
Туйлашаççĕ карăксем
Хырлăхра,
Çăвăрлаççĕ сăсарсем
Хăвăлра.
Упасем йăраланса
Шăтăкран
Тухнă ĕнтĕ савăнса
Йăшăран.
Вĕлтĕрентăрри юрлать
Тăрăшсах.
Вĕтлĕхре найкăшкалать
Кăрăпчак.

Кăвакал аçи, ăсан
Апрельте
Сунарçа таçтан-таçтан
Илĕртет.
Канăç çук ĕнтĕ пачах
Шевлене*:
Каç выртсан та карăкпах
Тĕлленет.
Карăк ашĕ тутлă çав,
Мĕн тесси!
Ăнăç пултăр сунарçа,
Тав-тавсси!

**5. Пулла!**

Пулăçа та кун çитет
Тин-тинех:
Çăрттансем сапаççĕ тет
Вăлчине,
Сĕреке, тетел, вăлта,
Шак, атма
Тапратаççĕ Атăлта
Ăмăртма.
Ав Хĕлип мучи ларать
Вăлтипе.
Умĕнчи пулли вылять
Çăлтăр пек!
Пулăç Хĕлипĕ тесе
Ахальтен
Каламан ĕнтĕ çынсем
Ун çинчен.
Ав тепри те... Чим, пĕлер —
Кам ларать?
Йăван Павăлччă Пинер,
Çав ара.
Аллинче ун пĕр ăман
Явăнать,
Вăлтине тирет Йăван
Ăмана.
«Капкăнти» хăй сенĕкпе
Хăлына.

* И.А. Шевле — паллă сунарçă.

Авал чух хăй тирнĕ пек
Хăтланать.
Çăрттан пулă Атăлтан
Пинере
Шухăша кайса кăн-кан
Тинкерет.
«Те лекес кун вăлтине,
Те тăхтас,
Те хыпас Хĕлипĕнне?» —
Тет пулас.
Калаçаççĕ пулăçсем
Хушăран:
«Ну, Хĕлип, мĕнле ĕçсем?» —
«Пит аван!» —
«Хыпкалать-и?» — «Хыпкалать». —
«Хыпмасан
Хаçата çырас пулать!» —
Тет Йăван.
«Пулă мĕншĕн тытăнмасть?» —
Лайăх ят!
Çырнă пынă ак наччас
Çĕр квадрат!..»

## 6. Çыракантан

Шӳчĕ шӳт те-ха — пулла,
Кайăка
Çӳрени, ман шутпала,
Лайăхах.
Эп те пултăм сахал мар
Сунарта.
Илтрĕм хурлăхлă хыпар
Вăрманта.
Сĕм вăрман шырать матур
Хуçине —
Ахваниç мучин сатур
Куçмине.
Тунсăхлаççĕ кайăксем
Сунарçа.
Кĕтсе илĕç-ши вĕсем
Чулкаçа?

1958

## ÇӐ̈ЛТЕН ÇӐ̈ЛЕ, МАЛТАН МАЛА!

Тăван сăмахăм, эс лекетĕн,
Çитерчĕ сăвăç ĕмĕтне.
Асаматла вăл ялтăртатрĕ,
Çутатрĕ пурнăç пĕлĕтне.
Çӳлтен çӳле, малтан мала
Тапса сикетпĕр унпала.

Тăван сăмахăм шанчăк пачĕ:
Чĕлхемĕр — ак йӳнелми мул!
Вăл — халăх чунĕн сăн-сăпачĕ,
Ăс-хакăл кĕнеки, кун-çул.
Унпа, ун тӳсĕмĕпеле —
Малтан мала, çӳлтен çӳле!

Тăван сăмахăм, шартлататăн
Пăшаллăн-туппăн кирлĕ кун;
Кĕслен-сăрнайăн янăратăн
Сасартăк çĕкленсессĕн чун.
Сан хăвату, сан илемӳ —
Тен, ман пĕртен-пĕр ĕненӳ.

Тăван сăмахăм, эс лекетĕн
Ылхан çĕмренĕ пек питрен
Е хантăс тĕрĕ пек тĕрлетĕн
Эс кăмăл çиттине хитрен.
Чĕре ăшши, чĕлхе тĕшши,
Санран ырри тата мĕн-ши?

Тăван сăмахăм, хум пек çап эс
Тулли чĕремĕр çыранне.
Эс — пирĕн вилĕмсĕрлĕх, чап эс,
Санпа истори ыранне
Кĕретпĕр шавласа эпир —
Аван-и, вут хĕвеллĕ ир!

Тăван сăмахăм, чун кĕперĕн
Куратăп эп сана паян:
Ăçта пулсан та пĕрлештерĕн
Пире пĕр-пĕринпе ялан.
Эппин, çаплах шав санпала —
Çӳлтен çӳле, малтан мала!

## ТУСЛĂХ ПĔЛĔЧĔ АЙĔНЧЕ

Т а ш к е н т ! Бандунгри «Панча шилăпа» тан
Пурне те пире çав сăмах çĕклентерчĕ.
Ак Ту-104 эп каннă-канман
Вĕçен кавир пек мана йăтрĕ çитерчĕ.

Мăн Атăлăм юлчĕ. Паллах, пурнăçа
Тӳлеккĕн килтех пурăнма та пулать-тĕр.
Анчах вăхăт çук уяма канăçа.
Ку канăçсăрлăхшăн — эп тем пама хатĕр!

Мускав тĕлĕнчех — шурăмпуçĕпеле
Çĕклентĕм кăна — стюардесса каларĕ:
«Тата виç сехет вĕçсенех çитмелле...»
Эп яшт ӳсрĕм пек, ӳсрĕ шухăш хастарĕ.

Эп ирĕклĕ çын ăсĕпе мухтанса
Пыратăп çӳлте. Тен, таçта ман тĕлех-тĕр,
Хăй çул-йĕрĕнчен пăрăнма тăхтаса,
Вĕçет пирĕн спутник ялавăмăр евĕр...

Ташкент. «Саламран» ăшăрах сăмах çук,
Уяр пĕлĕт айĕн янрать вăл хавассăн.
Килен хăнасемшĕн вăл халь — пыл та çу.
Ăнланчĕç йăлтах. Калаçаççĕ пĕр сассăн.

Сасартăк раснах çăмăл пулчĕ мана —
Шет таврăнчĕ-и çаврака куçлă яшлăх.
Романтика сывлăшĕллĕ самана
Çӳретрĕ ăна çак çĕрте асăнмалăх.

Пайтах... Вăтăр çул ытла кайрĕ иртсе...
Ун чух пирĕн Ази вăраннă кăначчĕ...
Анчах хуп-хура çиттине вашт сирсе
Телей шуçăмне тинкерсе вăл сăнатчĕ.

Кăçал пултарулăх хавас уявне
Хăна йыхăрса сарса хунă хуламăр
Мĕнпур тĕнчене илĕртен илемне.
Ăна Хĕвелтухăç тĕрекĕн куратпăр.

Чечек, лампа ярăмĕ, тĕрлĕ ялав...
Чалми те калпакĕ, шальварĕ те сари...
Мухтавлă узбек Навои ăшшăн ав
Çак туслă йыша узбекла саламларĕ.

## МУШАЙРА

Индире пĕр йăла пур, ун ячĕ —
Мушайра — сăвăçсем ăмăртни.
Делире е Калькуттăра мар-ха,
Ташкентра пулчĕ ку эп курни.

Зал — тулли. Куçĕсем йăлтăр-ялтăр
Халăх сцена енне тинкерет.
Унта шур кăвакарчăн, ун айĕн —
Сăвăçсем пилĕк ултă ĕрет.

Зульфия — уяв пуçлăхĕ пулчĕ,
Йăл кулса ларчĕ хăй выранне.
Вăранса çитнĕ Ази сăнарĕн
Куртăм эп çав узбек арăмне.

Мирпе туслăх çинчен сасă кайрĕ
Темиçе чĕлхепе янрасĕ.
Юрату, кĕрешӳ, терт, хаваслăх —
Йăлт тухать чĕререн, тап-таса!

Акă пирĕн Турсун кăшт ĕшеннĕн
Таджиксем çинчен сăвă калать.
Рудаки чĕлхине эп итлетĕп,
Пин çултан чĕрĕ пек вăл каллах.

Китайран килнĕ тус Эми сяо
Сăввине панă ят: «Пул шăпрах!»
Час куçарĕç ăна, анчах паллă
Мĕн çинчен каласси унсăрах.

Анатолий Софронов астурĕ
Виçĕмçул Делире çырнине,
Акăлчан чĕлхипе, вĕренӳçĕн
«Эп сире юратап» тенине.

Акă тухрĕ Хикмет. Алă çупрĕç.
Вăл «Ангина пекторис» вулать.
Тĕрмерен грек тусне ярса панă
Çав сăвва. Хăй çапла астăвать.

Тусĕ те Грецире ларнă пулнă,
Анчах йывăр тертне парăнман

Юлташне хал кӳртсе хуравланă
Вăл хĕрӳ сăвăпа тыткăнран.

Халĕ çав икĕ сăвăç тĕл пулчĕç
Ирĕк, çутă, таса хулара.
Ытталашрĕç. Куççуль витĕр туйрăм —
Тулса çитрĕ чĕрем кăкăра...

Ак çав грек — Менелаос Лудемис.
Хикмета ярса панă сăвва
Çĕкленсе вăл вулать. Пĕтĕм халăх
Нумайччен ал çупса тав тăвать.

Кĕç вăраххăн тăрса юрра ячĕ
Индирен килнĕ сăвăç Сафир.
Тухрĕ Бирма хăни. Кĕç илтетпĕр
Филиппин сассине те эпир.

Тухса тăчĕ грузин Леонидзе —
Хĕрĕх çул ĕлĕкрех каялла
Хăй куçарнă Тагор сăввине вăл
Инди янă йыша халаллать.

Арабла тăсарах сăвăларĕ
Сомали сăвăçи Азгари.
«Арабри туссене» ятлă сăвă
Шăрантарчĕ Рустам, Бакури.

Сенегал, Кипр, Алжир та Корея...
Ĕç поэзи пылне куркипе!
Сильва Капутикян çиçсе тухрĕ,
Тухрĕ пушкăрт Карим йĕркипе.

Ак каллех сăвва юррăн янратрĕ
Джаландхари Хафиз (Пакистан):
«Чĕрере юрату кăна усрăр,
Туслашса пурăнар паянтан...»

Афро-Ази çеç мар сасă пачĕ,
Мушайра кĕр кĕрлет, сарăлать:
Ав Гонсалес Туньон (Аргентина)
Мир çинчен испанла сăвăлать.

Ав тухать яш румын Майореску,
Ангел Тодоров тусăм, пăлхар,
Кĕç албан сăвăçи сасă пачĕ —
Варкăшать Балкан çилĕ вăр-вар.

Тепĕр хут тĕлĕнтерчĕ ак Инди,
Тепĕр хут арабсем те Китай:
Тухрĕ хуп-хура тумлă хĕрарăм —
Се Бин-синь. Çамрăк мар. Пит сăпай.

— Тусăмсем, эп паян сăвă çыртăм
Çак самант çинченех темелле.
Ун ятне çапларах хурас терĕм:
«Юррăма Ташкента пехиллеп»...

Темле шур кĕленче шăнкăрав пек
Шăнкăртатрĕ вара ун сасси.
Пĕтĕм чун-чĕререн тайма пуçăн
Ман ăна калас килчĕ: «Тавсси!»

Ташкент чунĕ — кунта! Шав тухать-ха
Çĕнĕ ят, умĕ-сумĕ çук пек...
Пурçăн тумлă кулан хĕрупраçĕ
Шав чечек тыттарать, шав чечек...

1958, октябрь, Ташкент

## М.Я. СИРОТКИН 50 ÇУЛНЕ

Хамăр халăх мухтанмалăх
Унăн ывăлĕ-хĕрне
Ӳстерет тăван патшалăх —
Саманамăршăн парне.

Яланах хастар, таланлă
Пулнă несĕлĕн хевти —
Ĕмĕрсем хушши капланнă
Асаматлă аслати

Ялтăртатрĕ те кĕрлерĕ,
Сасă пачĕ катана.
Хантăс çулăх пек кĕперĕ
Курăнать халь таçтанах...

Тав сана тивлетлĕ тантăш!
Шăллăм тес килет паян:
Ватăрах-çке-ха санран кăшт...
Э! Мĕскер ăна уян!

Аллă пултăр, утмăл пултăр —
Мĕн ăна пит сăвасси?
Тепĕр аллă! Куç пек тултăр
Пурнăç алтăрĕ! Тавсси!

11.XI.1958

## ХУРА ÇĂКĂР

Хура çăкăра эп мухтатăп чунтан:
Унтан тутлине нихăçан тутанман.
Ăна суханпа, тăварпа astивсе,
Тип çу та пуçса эпир ӳснĕ çисе.

Çемçе чĕлĕпе кăмăрчак та пулсан —
Унран техĕмли тĕнчере те çук сан!
Ача чухнерех хура çăкăр паха,
Калемпĕр шăрши — ассенче вăраха.

Пиçсе тухасса эпир кĕтнĕ темччен,
Тухаттăнччĕ эс кĕреçе çийĕнче.
Хисепчĕ сана, чысчĕ-çке ун чухне!
Çăватчĕç шывпа кăчăр хытнă питне.

Сывлаттăнччĕ эс чĕрĕ пек чылайччен
Кил пирĕ çинче, сар сĕтел варринче.
Ыраш пуссинче пынă пекчĕ ун чух...
Хура çăкăрăм, эс асран каяс çук.

Тахçан эп, туссем, киле çитесси...
Тытайăттăм халь хура çăкăр сăмси!

1959

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИНЕ

Тăван çĕршыв вăрманĕнчен
　　Юр кайсан тирпейлĕн
Эс тухрăн, малтанхи чечек,
　　Тухрăн та ... типейрĕн!

Таса ире, вут хĕвеле
　　Тайăлса тухсаттăн,
Пин-пин чĕре кĕввипеле
　　Ирĕке мухтаттăн.

Чăваш чĕлхин ĕмĕчĕсем
　　Саншăн пурнăç пулчĕç,
Çынпа пĕрле пайтах вĕсем
　　Таврăнми, тен, юлчĕç...

Нихçан, нихçан кĕлленес çук
　　Таса чун кăварĕ.
Вутчул пек ăна кун-çул
　　Ĕмĕре хăварĕ.

Чĕлхен килес тимĕрçисен
　　Туптавçи çав чулăн
Хĕррисене тивмессерен
　　Ялкăштарĕ çулăм.

1959

## В.И. КРАСНОВ-АСЛИНЕ

Ваçлей Иванăч! Манăн тухтăр
Мана ямарĕ сан патна.
Ан тив, çак кĕнекеçĕм пултăр
Хисеп парни пек сан ятна.

Аслисене сума сăватпăр
Кĕçĕннисем пур чĕререн:
Эсир пулман пулсассăн паттăр
Эпир пулас та çукчĕ, тен.

Пулаттăмăр пуль пуласси те,
Кам пĕлĕччĕ ун чух пире?

«Пĕрле пурăннине мĕн çитĕ!» —
Тени усрантăр чĕрере.

Ваçлей Иванăч! Утмăл тултăр
Е çитмĕл... Мĕн шутламалла!
Вăю-халу çĕр çуллăх пултăр,
Хай, ху каларĕш, малалла!

15.I.1960

## П.Н. ОСИПОВА

Чăваш культури çĕнĕ çулĕн
«Сайра маяксенчен» пĕрне:
Кутемерти Уçăп Микулĕн —
Элкей таврашĕн — Петĕрне.

Хисеплĕ, кăмăллă аташăм!
Салам килет çине-çине...
Илсемччĕ Аптраман таврашĕн
Чи юлашки ĕçĕсене.

Кунта кăшт хăй çыркалани те
Шекспирăн чăвашла сасси...
Халал! Тен, айăп тумăн питĕ.
Çĕр çул тапта çĕре! Тавсси!

30.I.1960, Шупашкар

## ГЕННАДИ ВОЛКОВА

Хуначи! Илтетĕп сассуна,
Куçăнах куратăп куллуна.
Сан йышши пулсассăн ытларах —
Пурăнатпăр ĕмĕр, чăн-чăнах!
Ак хайхи çăка, кĕрхи çăка.
Шаларах тепре те пурччĕ пуль...
Кĕркуннем! Илемлĕ эс, паха.
Шурă хĕлĕм инçе мар та-ха,
Тăкас мар вăхăтсăрах куççуль.
Çут тĕнче кӳрнеклĕ, сарлака,
Ĕлкĕресчĕ активсе йăлтах,

Астуса тăрасчĕ яланах:
Çутă çур илемлĕ чечекпе,
Тутă кĕр сипетлĕ çимĕçпе.

6.X.1960

## САЛАМ

*Ю.А. Гагарина*

Эс чĕрĕ спутник евĕр харсăр
Çак Çĕр тавра çаврăннă чух
Тĕнчемĕр кĕтрĕ сывламасăр.
Пĕр вĕççĕр вăхăт — пулчĕ çук...

Кăвак пĕлĕтелле куç хыврăм
Сиксе тухас пек чĕремпе.
Тăван аннӳ пек саншăн хыпрăм:
Пĕртен-пĕр ывăл эсĕ пек.

Сан хыççăн эп вĕççе йĕрлерĕм
Чунпа тĕнче уçлăхĕнче.
«Метеор лекминччĕ, — терĕм, —
Сан карапу таврăниччен».

Сиенсĕр антăн эс! Шăтуçĕн
Сĕм тĕттĕм космос тӳпине.
Пĕр вĕççĕр çул уçса хăвартăн
Этемлĕхĕн малашлăхне.

Телей, тăванăмăр, сана!
Çын çăлтăр витĕр вĕçсе тухрĕ,
Пуçланчĕ çĕнĕ самана!

1961

## ВĂХĂТ ТУЙĂМĔ

Çуралаççĕ сăмахсем:
Тĕнче уçлăхĕ, вĕçевçĕ;
Спутник, космос тенĕçем
Уйăхăн тӳнтерĕ теççĕ.
Çĕнелсех пырать чĕлхе,
Вăл хытман ĕмĕрлĕхе.

Хутăшать сăмах-юмах
Халăхсем хутшăннăçемĕн.
Пăрăнса май çук юлма,
Çавнашкал йăли этемĕн:
Пĕрлешсе пĕр-пĕринпе
Кĕрешет ĕмĕртенпе.

Лутраланчĕ пĕлĕт те,
Çутçанталăкĕ те ансăр.
Вĕçтеретпĕр ĕмĕте
Çăлтăрсем леш енĕн харсăр!
Çын пуçларĕ тĕнчене
Çавăрма ӳпне-питне.

Хамăр çын вăл, коммунист!
Партире-и, мар-и халĕ,
Сисеймен пулсан эс сис:
Урăх калăп ăс вăй-халĕн,
Вăхăт туйăмĕ хушать
Çĕнетмешкĕн шухăша.

Эп хама калап çакна:
Вăхăтран тăрса ан юл теп,
Вак-тĕвекпеле кăна
Çырлахса халех ан пул тĕп,
Малалла та çӳлелле
Ыткăнма сан пĕлмелле!

Коммунизм куçăн ак
Курăнса килет яп-ялтăр.
Манăн ĕçĕм те пăртак
Ун çулне-йĕрне çывхарттăр.
Вăхăт туйăмĕ — çунат,
Çав çĕклетĕр ман чуна.

1961

## ПУХУРА ÇАПЛА ТĂВАСЧĔ

Пухура çапла тăвасчĕ:
Талантсем умĕнче çеç
Çĕлĕкĕмĕре хывасчĕ —
Ан пăрахчăрччĕ ĕçе.

Мĕн талант? Кăварлă шухăш,
«Шăши вучĕ» тени мар!
Пĕр ачаш, пĕр çиллĕ, шухă
Чĕрене хĕртен кăвар.
Варкăшса тăран çунат вăл,
Ĕмĕте çĕклен çунат.
Пĕтĕм халăхшăн çунать вăл,
Пур тĕнчешĕн те çунать.
Чул касан чĕлхе хуçи пек,
Сăмахран кирек ăçта
Вăл тĕрен те, хĕç те сыпĕ,
Пĕр сăмахпалан — ă с т а.

Пухура çапла тăвасчĕ:
Ятлине-ятсăррине
Уямасăр тавлашасчĕ
Ăнланмашкăн чăннине.
Хăш чухне пĕр тонна хывăх,
Пĕр грамм тĕш çав ятлисен.
Ăслă, хӳхĕм, çутă, сывă
Пулччăр эпĕр çырнисем.

«Ылттăн пĕчĕкçĕ те, — теççĕ, —
Ун хисепĕ пит çӳлте».
Çавнашкал чăн-чăн поэзи,
Проза та çавах пуль теп.
Турханпа турткалашасчĕ,
Илкелесчĕ Илпеке.
Хам пуçа тивсен — хавасчĕ
Хам та эпĕ тем пекех.

Пухура çапла тăвасчĕ:
Вуламасăр тиркес мар,
Мухтамашкăн та тăхтасчĕ,
Çавна май çакна калар.
Тепĕр чух персе ярать те
Докладра пĕр-пĕр асли:
«Кам мана çырса парать?!» — тет.
Референт пуль айăпли...
Аслисем ĕç йышлă теççĕ:
Тишкĕр, хăтăр, сӳт те яв.
Ытларах вĕсем с ӳ т е ç ç ĕ,
Я в а с с и ... вăл йывăр çав.

Вĕрен мар — литература!
Унта пысăк чинпала
Пулма çук «патша» та «Турă»,
Ан та пултăрччĕ апла.

Пухура çапла тăвасчĕ:
Тăрас марччĕ хăраса,
Кирлине куçран каласчĕ,
Сывлăш пултăрччĕ таса.
Культ усалĕн киремечĕ
Пирĕн йышлă çыравçа
Хутлатса, хăртса пĕтерчĕ
Е кăларчĕ хăравçа.
Хăшĕсем тирне сыхларĕç
Çын çине тăкса элек.
Хăçанччен чĕнмесĕр ларĕç
Çăвара шыв сыпнă пек?
Каласа кăтартчăр уççăн
Пĕтĕм халăх умĕнче —
Хăптăр тĕрлĕ пылчăк-юшкăн
Урапамăр çумĕнчен!

Урапи — тăван çырулăх,
Тăваллах вăл хăпарать.
Ту çинчен тем анлăш, тулăх
Çĕнĕ çĕр ав палăрать.
Ун ятне пĕлмен халь çук-тăр,
Йывăр лавăмăр унта
Тĕрĕссĕн-тĕкеллĕн тухтăр,
Пулăшар ăна чунтан.
Урапи-ши, ракетах-ши —
Юптарни кунта паллах:
Хыпăсан пера тытасшăн —
Аллуна сан çумалла.
Çакă канăçлăх памастчĕ,
Каласси тата нумай...

Пухура çапла тăвасчĕ,
Тăвайсан — эп пуху май!

1962

## ÇĂЛТĂРЛĂ ÇУЛПА

### 1

...Илемлĕ! Самана сăнарĕ
Каллех кĕрет ман сăввăма.
Çарти хушу пек вăл васкатрĕ
Сăмах хăвачĕ шырама.

Каллех ак Мускава итлетпĕр,
Каллех пуçтарчĕ çынсене
Асамлă радион пĕртен-пĕр
Сип-симĕс куçĕ хăй умне.

Пĕлесчĕ: кам-ха тухса кайĕ
Тепри çак çĕр туртăмĕнчен?
Кĕç паллă пулчĕ: Николаев —
Чăваш ачи! — вĕçет иккен.

Кун чухлĕ эп хĕпĕртеменччĕ:
Совет Колумбĕн йĕрĕпе
Манпа пĕр йăхлă çын çĕкленчĕ,
Çулне тытать чăн паттăр пек.

Салам сана! Яту сан юрă,
Поэма пулĕ час кунта.
Чăваш поэчĕсем мĕнпурĕ
Халь парăмлă сан умăнта.

### 2

Сана çĕклерĕ аслă туслăх,
Куратăп эпĕ: тусусем
Паян çӳреççĕ ялтăр куçлă
Сана инкексĕр çул сĕнсе.

Гагарин куллине куратăп,
Титовăн шухăшлă куçне.
«Вĕç çӳлерех те, ытларах та!» —
Тесе каланă пек тусне.

Малтан вĕççе хăпарĕçин те,
Вĕсемшĕн хаклă, çывăх эс.
«Мухтав» тени пурне те çитĕ,
Вăйли нихçан та кĕвĕçмест.

Чĕлхемĕре пайтах каларĕш,
Ватсен сăмахĕ, вĕрентни.
Паян пĕри асран каймарĕ —
«Чăваш ятне ан çĕрт!» тени.

Ăна ялта хăвах итленĕ:
Çапла ят тухнă йĕкĕте,
Качча каян хĕре пилленĕ...
Çĕртмен, çĕртмерĕн, çĕртмĕн те!

**3**

Чĕлхемпеле чăваш пулатăп,
Грждамлăхпа — совет çынни.
Иккĕшинпе те мухтанатăп.
Кам кăлăх тейĕ мухтанни?

Пур халăх савăнать. Сасартăк
Вăл курăнчĕ таçтан-таçтан!
Этемлĕхшĕн чи аслă стартăн
Ани çинче тăрать пĕр тан.

Епле хаваслă тулăх Атăл!
Ик çыранне енчен енне
Часрах хыпар тумаваскать вăл
Илтсе çынсен сассисене.

Вăл пирĕн телее туять-тĕр:
Шавлать çыр тăрăх ял, хула...
Кашни чăваш каччи халь хатĕр
Тухмашкăн çăлтăрла çула.

Илсе каях эс, Атăл хумĕ,
Анаталла ман сассăма:
Ман халăхăн çĕкленнĕ сумĕ
Пурне те пултăр савăнма.

**4**

Эппин, пуçланчĕ çĕнĕ эра.
Шав космонавт та космонавт...
Кам халиччен те ĕненмерĕ —
Ак уншăн тепĕр çĕнĕ факт.

Ĕненменсем пурах-ха, пулĕç
Çĕр чăмăрĕн леш çурринче:

«Чăваш вĕçет-и? Тен, кăшт суйрĕç?
Вăл халăх тĕттĕм пуринчен!»

Кăна эпир илтменех марччĕ:
«Вĕт-шакăр халăхсем ăçтан
Совет çĕршывĕнче упранччăр?
Пĕтеççĕ йăлт пăртак тăрсан!

Малашлăх çутă мар вĕсемшĕн,
Пулаяс çук çӳлти ретре...»
Хăйсен индейĕсем пекрех-тĕр
Кураççĕ хăшĕсем пире.

Анчах индей те çын. Пар ирĕк,
Вĕрент ăна — çуралĕ, тен,
Çав халăхăн хăйле Шекспирĕ,
Çуралĕ Эдисонĕ те...

**5**

Чĕлхемпеле чăваш пулатăп.
Октябрь чĕртнĕ халăх ман
Чăн ирĕклĕ тесе шутлатăп
Çул космоса хывать пулсан!

Сехетсерен çĕнелекен çĕр
Пире чĕнет малтан мала.
Пур йывăрлăхсене те эпĕр
Çĕнтерĕпĕр Андриянла.

«Вĕт-шакăр халăх...» Кам калайĕ?!
Çав халăхсене элчи пулса
Пырса кĕрет ак Николаев
Малашлăх алăкне уçса.

Унпа — çак эрăна çуратнă
Мухтавлă çĕрĕн ик çынни.
Вĕсем халь ĕмĕрлĕх çунатлă,
Çуначĕ — самана чĕнни.

Вĕсем пуласлăхран çĕкленнĕ,
Унта çын çыншăн — тус, тăван.
Çĕр чăмăрне ыр суннă Ленин
Йăл кулчĕ вĕсене курсан.

1962, август

## ВАРККИ КАСАК

Мĕн? Чăваш хĕрипăраçĕ
Пит хăюсăр тетĕр-и?
Темĕн, темĕн... Манаймаççĕ
Халь те пирĕн пĕр хĕре.

Ку чухнехипе виçместпĕр:
Ĕлĕк пулнă ку, халь мар.
Çитĕнсе çитет чипер хĕр,
Куçĕ-пуçĕ — шĕл кăвар.

Ашшĕ хытă тыткаланă,
Усала яман патне.
Ӳкĕтленĕ те каланă:
«Ан çĕрт, хĕрĕм, йăх ятне!»

Ытлашши те пăрнă пулĕ
Пăркăçне вăл тепĕр чух:
Кăларман вăййа та! Шкулĕ,
Клубĕ-мĕнĕ — пач та çук.

Хĕллесем улах лараççĕ:
Сӳс те пурçăн явăнать,
Тĕр тĕрлеççĕ е арлаççĕ —
Хĕре кирлĕ çав кăна.

Ку пикен арки çинче те
Выртнă пурçăн çип тĕрки.
Сар хĕр хӯхĕм те, çинçе те,
Ячĕ пулнă ун Варкки.

Çуркунне кулса çитсессĕн,
Шыв-шурсем ейӳ кайсан,
Урамри юрра илтсессĕн —
Чун тӳссе тăраймĕ сан.

Кăлармасть иккен-ха ашшĕ.
Ак Варкки тăр кăнтăрла
Таçта кайрĕ те йăвашшăн
Килчĕ кĕчĕ салтакла.

Çийĕнче салтак шинелĕ,
Атăпа, утать талт-талт.

Касакла калпак тирпейлĕ,
Аллинче ун саламат.

Каллĕ-маллĕ кăшт утсассăн
Сулчĕ саламатпала:
«Ма хĕрне вăййа ямастăн?
Ма усратăн манахла?!»

Сассине те улăштарнă,
Питĕнчен те пĕлме çук.
Ашшĕ сивĕ тар кăларнă,
Хытнă кайнă çавăн чух.

Малалла вара тем пулнă —
Каламасть халап татсах.
Çавăнтан ял çине юлнă
Çĕнĕ ят — Варкки Касак.

1963

## САЛАМ «ВОСХОДА»

Çуллен çуралать çĕнĕ паттăр,
Сăмахăн та çĕнĕ шăпа:
«Восход» тетпĕр те хăпаратпăр
Тĕнче уçлăхне шухăшпа.

Çаплаччĕ. Каллех çапла пулĕ.
Каллех вырăсла çак сăмах
Мĕнпур чĕлхене кĕрсе юлĕ:
«Салам «Восхода» чунтанах!»

1964

## «КАПКĂНĂМĂРА»

«Сывă-и, хисеплĕ Капкăн!
Эппин, эс те хĕрĕхре?
Хĕрĕх çул çапла шалтлатрăн
Пытанса улах çĕре.

Сунара чăваш вĕреннĕ
Ахаль мар вăл санпала.

Сыхлама хăйне пикеннĕ,
Тĕрĕс тунă пулмалла.

Ик ураллă тискер кайăк —
Пур çав-ха вăл, çĕр çăтман!
Уншăн ик сăмах пит лайăх:
Пĕри — «хам», тепри вăл — «ман».

«Хам!» — тет те пĕр-пĕр карланкă
Ай пуканĕ çирĕп чух
Кармашать таçтах, тăсланкă,
Пăсĕ пур та, ăсĕ çук.

«Хам!» — тет те пĕр-пĕр кĕске мăй
Пин çулхи çĕр çыннине
Телефонпала хистет хăй
Мĕн, хăçан акмаллине.

«Ман!» — тет те çӳлти пĕр турă
Референт çырнисене,
Хăй алă пусса, брошюра
Кăларать çут тĕнчене.

Ăнланатăп, ырă Капкăн:
Сунару пит йывăр сан.
«Çырт-ха, хамăра ан тапăн!» —
Тенине илтех тăран.

Ăналантăп, Капкăн тусăм:
Кулăш — йывăр япала,
Икĕ вĕçлĕ вăл... Ан усăн
Вăйпитти пуçупала!

Шăллăрах пуласчĕ, Капкăн,
Вĕтĕр-шакăра çеç мар —
Шултрине шалтлаттармашкăн
Май та, сулăм та тупар.

Вăйĕ пысăк çырнă хутăн,
Тĕллĕ лекнĕ чăн сăмах —
Прокурор та, аслă суд та,
Трибунал та хăй. Танах!

1965

## ИЛПЕК МИКУЛАЙНЕ

Тăван сăмах хăватлă,
Тăван сăмах таса.
Унпа эс ырă ятлă
Нихçан та манмасса.

Чăн-чăн илемçĕ эсĕ,
Чăн-чăннисен вĕсен
Çак çĕр çинчи хĕресĕ
Пит йывăр ĕлĕкрен.

Кассан — турпас, çырсассăн —
Калав текеннисем
Пурнаççĕ пит хавассăн,
Пĕр шут: «Ан тиркесем...»

Вĕсемшĕн алăк уçă.
Паян çерем çĕтсе
Ыран вăл кукуруза
Çинчен çырать эссе.

Илтет: пуплеççĕ хими
Е ГЭС çинчен таçта, —
Час тавçăрать ун мимĕ,
Сисет вăл «вăхăтра».

Эртелсене тем мăнăш
Тăвас хыпар тухать.
Вăл çывăрмасть: пĕр тăтăш
Пырать çыру-суха.

Сасартăк — таткалаççĕ
Каллех эртелсене.
Вăл — хатĕр: манчĕ каç çеç
Мĕскер тĕрленине.

Чăнне калас тесессĕн —
Шел çав коллегăма.
Çын питĕ ĕлкĕресшĕн
Саманапа пыма!

А самани... Э, юрĕ...
Эс, шăллăм, урăх пек.
Пит тарăн суха турĕ
Сан Шерккейӳ, Илпек!

Çарта маюр хисепĕ
Эс илнĕ. Халь тата?!
Ахаль салтак пек эпĕ
Тăратăп умăнта.

1965

* * *

Çамрăксен хаçачĕ
Хĕрĕх çул тултарчĕ.
Хĕрĕх çул е аллă —
Маншăн çакă паллă:
Пирĕн ĕмĕр çамрăк.
Çамрăксем — ун çарĕ.
Пирĕн ĕмĕр ирĕк,
Пур этемлĕх ирĕ,
Çĕнĕ шурăмпуçĕ,
Телее çул уçĕ.
Çамрăксем! Хастарлăн
Утăр пĕр канашлăн!
Куçран çиçĕм çиçтĕр,
Кивве пуç ан тайăр,
Сывлăх сунать пиччĕр —
Сирĕн Хусанкайăр.

1965

## «ЫР-РЛĂХ!»

Лачакара шапа ларать —
Мăнаçлă, хулăн пырлă.
Каçса кайса вăл кăшкăрать:
«Ыр-рлăх! Ыр-рлăх!»

Ларах эппин, мухтанчăк мур!
Тытах шăна, ӳпре...
Малкай каларĕш — илем пур
Санран та тĕнчере.

Концерт итленĕ пек итлет
Çӳлти юманлăх, хырлăх.
Шапи çав кĕвĕпех виртлет:
«Ыр-рлăх! Ыр-рлăх!»

Хăш-пĕр этем те çавăн пек:
Хăй килĕнчисĕр пуçсăр
Пĕр нимĕн те курмасть вăл тек,
Тĕнчешĕн, калăн, суккăр.

Кил-çурт. Хӳме. Нӳхреп. Юр-вар.
Хапхи çинче вулатăн:
«Сыхланăр! Йытă пит хаяр!»
Мĕн тăвăн? — Сыхланатăн...

Приемникне пăра-пăра
Пит вăрттăн, вăрă пек,
Хуçи таçти Европăра
Çӳрет кăмăлĕпе.

Садне уçать вăл чӳрече,
Çук нимĕнле ун çылăх.
Тĕнче? Мĕскер ăна тĕнче!
«Ыр-рлăх! Ыр-рлăх!»

1965

## ПЫСĂККИПЕ ПĔЧĔККИ

Пысăк çыннăн пысăк куçлăх,
Пĕчĕккин — пĕчĕккĕрех.
Пысăк çын вăл — аслă пуçлăх,
Пĕчĕкки — кĕçĕнтерех.

Пысăкки ялан калану
Тишкерӳ кирли çинчен.
Пĕчĕкки ăна тăнлану:
«Ăхă... Критика иккен...»

Ак пĕрре пуху пуçланчĕ.
Пĕчĕкки пысăккине
Тĕкĕнме кăна хăтланчĕ —
Пусрĕç те ури çине.

Шăнкăравĕ шăнкăртатрĕ
Пăтăрмах тапраннă пек —
Председатель шав васкатрĕ:
«Вăхăт, вăхăт!» — тет вăл тек.

Пĕчĕкки калать: «Мĕн эсĕр?
Манăн вăхăт пур çке-ха...»
«Каярах юлать сехетĕр», —
Терĕç пĕчĕк пуçлăха.

«Ма вăл юлтăр? Тĕрĕслерĕм
Мускавпа эп ирхине...» —
Сăмахпа каллех тĕллерĕ
Пĕчĕкки пысăккине.

Пысăк куçлăх ялтăртатрĕ
Председатель çинелле.
Шăнкăравĕ шăнкăртатрĕ —
Çут тĕнче ишĕлмелле.

Хыçалтан пĕр сас каларĕ:
«Ма чараççĕ этеме?»
Председатель тăнламарĕ,
Çук, памарĕ пĕтерме.

Ларуран тухсан эп куртăм:
Председательпе хайхи
Пысăк куçлăх — иккĕш уйрăм
Калаçатчĕç тем пирки.

Те кулатчĕ, те макратчĕ
Председатель — çук палли.
«Парăп эпĕ демократи!» —
Терĕ лешĕ, куçлăхли.

Ак каллех пуху. Шăп лар эс!
Пысăк куçлăх хăй умне
Пăхса илчĕ те пуçларĕ
Каламашкăн сăмахне.

«Пуçару» та текелерĕ,
«Самокритика» та тет,
Хăй çинчен кăна чĕнмерĕ —
Пĕтĕм халăх тĕлĕнет.

Хăш-пĕрне пăртак пылларĕ,
Хăш-пĕрне вăл хушăран
Пуса-кантăр пек тылларĕ —
Хуха çеç вĕçет пуçран!

Пĕчĕк пуçлăх шăппăн ларчĕ,
Кĕтрĕ ячĕ тухасса.
Ну тустарчĕ, ну тултарчĕ
Пысăкки вара хăсса!

Ятне çеç те мар каларĕ,
Ашшĕне те амăшне,
Мучăшне те хăвармарĕ
Витерес тесе ăшне.

Хальлĕхе, паллах, витерĕ:
Юлашки сăмах — ăна.
Кам саспах хăйса тиркерĕ —
Çав тăшман. Çапла кăна!

Хальлĕхе сăмахĕ витĕ:
Пысăк шанчăк пысăка.
Анчах пур пысăкраххи те...
Халăх тӳсмĕ пăсăка.

Сулхăн çил çитсе вĕркелĕ
Кăшт уçмашкăн ун чухне...
Айĕнчи сăран тенкелĕ
Силленет тет ку чухне...

1966

## ЭП — ЧĂВАШ АЧИ

Эп — чăваш ачи — саватăп
Хамăрăн Чăваш çĕрне.
Вăл кипке те ман, сăпка та,
Ăна манмăп ĕмĕрне.
Хумханать-и аслă Атăл,
Каш кашлать-и сĕм вăрман —
Савнă çĕрĕм-шывăм ман вăл
Сас парать мĕн авалтан.

Эп — чăваш ачи — саватăп
Ĕмĕрхи Шупашкара.
Халь вăл çӳл[л]ĕ те, паха та,
Тек лармасть лупашкара.
Шупашкар вăл —манăн шанчăк,
Çутă ĕмĕт, аслă шкул.
Вĕренсе тухсан аванччĕ,
Аслă пулĕччĕ ман çул.

Эп — чăваш ачи — саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене.
Юратап юрра-сăвва та,
Купăса та кĕслене.
Юрататăп вуламашкăн
Чăвашла та вырăсла:
Ик чĕлхе вăл — ик ăс маншăн,
Эп пуласшăн ик ăслах!

1966

* * *

Эп — Петĕр Хусанкай. Чăваш.
Çитсе çывхартăм утмăла.
Хам ахлăх пек ĕçчен, йăваш,
Пăртак пуçтах та пулмалла.

Чее те пуль хама кура,
Пăртакçă ăслă та пуль, тен.
Хăш чух ман пуç тӳпи лутра,
Хăш чух вăл самаях çӳлте.

Тусăмпала эп тус ялан,
Тăшманăмпа эп чăн тăшман.
Элек-челек, манран сыхлан!
Пĕр сăмахпа — эп Аптраман.

Эп — Петĕр Хусанкай. Арçын,
Кăна та тĕрĕсех калар.
Ята пĕлсен те пĕр-пĕр чин
Ыйтма пултарĕ: ар е мар?

Ах тур, анкета тултарни!
«Мĕн ятлă эсĕ, миçере,

Пулман-и тĕрмере ларни,
Аçу-аннӳ сан мĕн ĕçре?

Авланнă-и, урçа-и эс,
Хусах-и, çук-и алимент?
Ютра кам пур? Тен вăл эсэс?
Тен, эс хăвах ют элемент?

Энциклопедие пăхсан
Хузистанпа эс юнашар.
Тен, хурăнташ вăл пулĕ сан?
А Хокусаи кам? Çы-рар!..»

Анкета! Пирĕн саманан
Чи хулăн, йывăр кĕнеки.
Йăлтах пĕрле купаласан —
Эльбрус пек пулĕ кĕлетки!

Калатпăр «хут çитмест» тесе,
Ăçтан вăл çиттĕр-ха ара?
Анкетăсăр ниçта кĕрсе
Эс тухаймастăн таврара.

Шупашкартан Мускав таран,
Гавана, Лондона çити
Ман çеç выртать купан-купан
Çырса тултарнă хут листи.

Пĕр хĕрхенмесĕр вăхăта
Çаплах тĕпчеççĕ темĕн те.
Хăш чух эп шухăшлатăп та:
«Пит хаклă çын пуль эпĕ», — теп.

Çухатасран хăраççĕ, тен...
Эй, пин анкета вырăнне
Хăть вунă сăвă ĕлкĕртсен! —
Тен, эп Шекспирччĕ ку чухне!

Эп — Петĕр Хусанкай. Поэт.
Çапла професси пур ку чух.
Мана халь çăкăр çитерет
Чăваш чĕлхи. Эп унсăр çук.

Мана çеç мар вăл тăрантать:
Кандидатсем те докторсем,
Институтсем те пур тата —
Тĕпчеççĕ чĕлхене хĕрсе.

Ытлашширех «хĕрсен», çапла
Пулать чĕлхеçĕн хăш чухне,
Таçти ютри калăппала
Виçетпĕр хамăр чĕлхене.

Темле истори тĕпĕнче
Упраннă вилĕ чĕлхе пек
Пăхатпăр хамăрăн чечен
Чĕлхемĕре куç хӳрипе.

Чăваш тĕнчи калаçакан
Сăмахсемпе эпир хальччен
Пĕр ăслăлăх та тăвайман,
Тăвас текен те çук иккен.

Чĕлхемĕр мĕн тери хитре!
Вăл çуккă-ха историре,
Вăл çуккă философире...
Ма çăкăр çитерес пире?

Эп тухаймарăм доктора,
Кандидата та кармашман,
Чĕлхе пирки те пултарап
Сăвăра çеç эп тавлашма.

Мĕн тăвăн? Ăс çитмест, ача!
Пăспа илеймĕн çав ăса.
Юрать, эп — пăс çынни, анчах
Пăс чуптарать пăравуса.

Поэзи пăравусĕн те
Иртмен-ха ĕмĕрĕ халех.
чĕлхе тени вăл ĕмĕрте
Поэзисĕр пулман каллех.

Чăваш чĕлхипеле татах
Çăкăр çиекенсем пайтах:
Чăваш обкомĕ те унтах,
Министрĕсем те мăн купах.

Мĕн шухăшлаççĕ-ши вĕсем
**Чăваш патшалăхĕ** çинчен?
**Чăваш республики** тесен
Çавнах ку пĕлтерет-и, тен...

1967

## ПУРĂНАТЬ-ХА, ПУРĂНАТЬ...

Пĕтĕм пурнăçăм — умра.
Йăлт. Кĕнекипех.
Вулама, хама кура,
Çăмăл мар питех.

Ĕненни, иккĕленни,
Туртăнни мала,
Çитнĕ ĕмĕт, çитменни —
Пурте хампала.

Савнă халăхăм! Ялан
Санăн сассупа
Юрламашкăн эп чунтан
Тунăччĕ тупа.

Пурăнать-ха юрăçу
Лайăх е начар —
Ун пекки сан урăх çук,
Пулмалла та мар.

Кайăкне кура кĕвви:
«Крак!» тесен — курак,
Тăмана — «тĕввик-тĕввик!»
Уйрăмĕ пурах.

«Чĕвĕл-чĕвĕл!» тет чĕкеç,
Шăпчăк шăхăрать.
Эп — «Хусан кайăкĕ» çеç
Çак чăвашлăхра.

Çаплалла мана анне,
Иккĕн тĕл пулсан,
Тăрăхлатчĕ хăш чухне
Кăмăллăн кулса.

Пурăнать-ха, пурăнать
Юрăç ерипе,
«Пăхсан витĕр курăнать»
Тенĕ чĕрипе.

Утмăл çул вăл — утмăлах,
Вăтăр ултта мар.
Такмаклаймăн çăмăлах,
Сивĕнет кăвар.

«Ватăлар, чăваш, пĕрле», —
Тесчĕ те сана —
Эсĕ çамрăк, кĕр кĕрлен
Тинĕспе танах.

Çичĕ пĕлĕт çиттине
Сиртĕн эс ку чух.
Тĕнчене халь сан çине
Пăхман халăх çук.

Усрасам эппин мана —
Сап пăртак тăвар.
Сăвăри ман шăрттана
Пăсăлма ан пар.

Çул иртӳçĕн ытларах
Пĕрĕнĕ шăрттан,
Анчах пулĕ тутлăрах
Тутанса пăхсан.

Перекетлĕ тыкалать
Сăмахне ватти,
Каласан вара — калать,
Вил те вырт ытти!

Пурăнать-ха, пурăнать
Юрăç ерипе,
«Пăхсан витĕр курăнать»
Тенĕ чĕрипе.

1967

## ВЛАС ПАЙМЕНА

Шăллăм! Эсĕ пиччӳнтен
Шăп пĕр уйăх кĕçĕнрех.
Умлăн-хыçлăнах иккен
Килнĕ иккĕн çак çĕре.
Тав атте-аннемĕре
Кун кăтартнăшăн пире!

Мĕн калам сана паян?
Урăм-сурăм уракан
Вилĕм-çĕтĕм хушшинче
Пурăнатпăр çĕр çинче.
«Сывă юлнă, çав аван», —
Темелли кăна халь ман.

Сайралаççĕ тантăшсем:
Хăшĕ вăрçă-харçăра,
Хăшĕ тĕттĕм тĕрмере
Татрĕç çамрăк ĕмĕре...
Çавсене аса илсен
Çук ӳпкев шăпамăра.

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне
Çитерен этем — сайра.
Лĕпĕш те вут çутине
Туртăнать çак пурнăçра,
Туртăнать те — хăй çунать...
Ĕмĕт те вăлтать чуна.

Вутчулне çапан çулу
Сирпĕтет вĕри хĕлхем.
Катăлать хăш чух чулу,
Вистенеççĕ чĕрнесем.
Сан асаплă кун-çулу
Çавăн евĕрлĕ теем.

Çапрĕ, катрĕ хĕн сана,
Хăйăр турĕ тĕпретсе.
Эс тĕпренчĕкĕн хăвна
Пухрăн çĕнĕ вăй кĕртсе.
Сыпăнтартăн, çап кăна —
Вут кăлартăн сирпĕтсе!

Халăх харсăрлăхĕ пур,
Çавă пулчĕ хăвату.
Иртрĕ мăшкăл, иртрĕ хур —
Чыслă, сумлă сан яту.
Çап сăвай та хыв кĕпер,
Кун хитре, çĕршыв чипер!

Хамăр халăх ячĕпе,
«Чăмăртанăр, чăвашсем!»
Тенĕ аслă ĕмĕтпе
Асăнар сана чĕнсе:
Пур вăя, тăван, парар
Хамăр халăхăмăра!

Хура тинĕс хĕрринче
Савăнатăп эс пуррипе,
Тав тăватăп пĕр-пĕччен
Тутлă савăш куркипе:
Вăрăм ĕмĕр, ыр кун-çул,
Пултарсан — телейлĕ пул!

14.II.1967. Ялта

## КИПАРИС

Кипарис хӳми хуплать
Симĕс тинĕсе.
Тинĕс маншăн çук пулать,
Çыншăн — симĕсех.

Çын кашни пăхать ăна
Хăй чӳречинчен.
Манăн кантăкăм кăна
Тĕттĕмрех-и, тен...

Эпĕ илтнĕ: пĕр çĕрте
(Астумарăм-ха)
Кипарис пĕлтернĕ тет
Йывăр хурлăха.

Лартнă тет ăна унта
Масарсем патне.

Пулнă вăл сӳнми çурта
Вилнĕ çын ятне.

Сад ăсти шухăшламан
Кун çинчен, паллах,
Хурлăхпа хупăрлама
Шучĕ пулманах.

Ăнсăртран эп лекрĕм çак
Тĕксĕм пӳлĕме.
Тен, унпах пуçларăм ак
Сăвă тĕрлеме.

Çутатас килет пăртак
Хамăн таврана.
Пĕтĕм çутă — хамăрта,
Вилĕм таранах!

Ав хĕвелĕ те куçать
Куç хĕсе-хĕсе...
Кипарис хӳми уçать
Симĕс тинĕсе.

21.II.1967. Ялта

## ÇЕРÇИ

Эс кунта та пур иккен,
Ял йăпанчăкĕ çерçи!
Ман балкон çинче сикен...
Акă ме-ха çăкăр, çи.

Эс «чим-чим» тен чăвашла,
Чухлаймастăн, янавар:
Манăн çав сăмахпала
Ăшăм хыпрĕ сахал мар.

Ыталарăм сар хĕре,
Вăл «Чим, чим-ха» терĕ те,
Шăнчĕ-хытрĕ ман чĕре,
Хĕр пытанчĕ кĕлете.

Вăхăт иртрĕ. Урăххи
Мăшăрланчĕ манпала,

Лешĕн, малтанхин, хайхи
Шухăш кĕнĕ пулмалла.

Упăшкаллă хăй, айван,
Сак тулли ачи-пăчи...
Ну кунта вара малтан
Хам каларăм: «Чим-ха, чим!»

Юрату шкулне кĕрсен
Вĕренетĕн ĕмĕрне.
Кам пĕлет чипер хĕрсен
Çав чим-чимĕ мĕскерне?

Халь чухлатăп кăшт çапах,
Пулмăп теп вĕсен тарçи.
Улталаймăн хывăхпа:
Эпĕ ĕнтĕ — ват çерçи!

1967

## ЫРĂ ХЫПАР

...Пулĕç аслă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.

*Çеçпĕл Мишши*

Университетлă халăх
Пултăмăр апла!
Пур сăлтавĕ савăнмалăх
Ку хыпарпала.

Савăнмалăх, мухтанмалăх
Тивĕçлипеле.
Революци уçнă алăк
Сарлака епле!

Тек палкатăр чикĕ урлă
Тĕрлĕ шĕврĕлчен
Пирĕн «катăк», пирĕн «юрлă»
Ăс-пуçсем çинчен.

Аллă çул хушши тем те пĕр
Илтĕнчĕ унтан.
Хамăра эпир пĕлетпĕр
Никамран аван!

Ĕмĕт мар ку — чĕрĕ чăнлăх,
Çеçпĕл кĕтнисем:
Тухрĕç аслă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.

Эх, кун-çулăм кăшт килсенччĕ
Каялла халь ман
Чăваш университечĕн
Студентне ларма!

Çамрăк ывăл-хĕр телейлĕ,
Саламлап сире:
Сирĕншĕн пĕлӳ хĕвелĕ
Çутрĕç ĕмĕре.

Аллă çул капла вĕçленчĕ,
Тепĕр аллăран
Мĕнле килĕ-ши тивлечĕ
Аслă саманан?

Пурăнас килет. Хаваслăх,
Чĕрене тупта!
Университетлă халăх
Пултăмăр. Мухтав!

## ĔМĔР ЧАПЛĂ

Этот день воспевать никого не наймем.
*В. Маяковский*

Çак куна мухтама никама та тытмастпăр:
Пирĕн вăл — Ĕç Тĕнчин — ĕмĕр чаплă уявĕ.
Хама хам çав тĕнчен тан çынни пек туяп эп,
Çурлапа мăлатук — манăн герб, манăн паспорт.

Вĕсемпе эп кăвак хуппине уçса хупрăм,
Çутçанталăкăн вĕççĕрлĕхне туйса илтĕм,
Çыннăн аслă ăсне аслăрах туса килтĕм,
Тĕттĕм тĕпсĕрлĕхе Çĕр çути эпĕ çутрăм.

Мана хирĕç унта сивĕ çил те вĕрмерĕ,
Уйăхпа çăлтăрсем хапăл турĕç тăванлăн.
Малалли ĕмĕте ырă çул халал[л]анăн
Ялтăртатрĕ, йăл-йăл кулнă евĕр, Венера...

Çак куна хурлама никама та памастпăр:
Ун «Аврора» шевли ялкăшать саманашăн,
Ман таса пĕлĕтре тип аçа çаптарасшăн
Вут-хĕмпе юнакан мул тĕнчи тек ан астăр!

Хамăн пур — сыхланмалăх та хирĕç çапмалăх!
Çавăнпа, çав вăя шаннипе, мĕскер кирлĕ —
Йалт тума пултаратăп эп лăпкăн та мирлĕн,
Çурлапа мăлатукăн — чи çутă млашлăх.
Çурлапа мăлатук... Вĕсенче халăх терчĕ,
Халăх тарĕ те юнĕ, кĕрешĕвĕ, чапĕ.
Вĕсен аслă вăйне ирĕклетрĕ Октябрь,
Вĕсемпе çĕкленсе вĕсемпе вăл çĕнтерчĕ.

...Çак куна чыс тума сăвă-юрă кĕрленĕ,
Чи пуян чĕлхесем унпа тан ят шыранă,
Пур йышши чĕлхепе те пĕр ят янăранă,
Пурте пĕр кăмăлпа ăна йышăннă: Л е н и н .

* * *

Кашни ман сăввăм — юлашки пекех:
Тĕнчен пулма пултарасла драми.
Мана вăл шухăшлаттарать текех,
Иртеймĕп эп ăна кури-курми.

Çынпа хутшăннинчен килет хевте,
Çӳретĕп эп инçе те, çывăх та.
Сасртăк çӳçенсе илетĕп те
Чĕнес сăмахăмах чĕнме тăхтап.

Хам шухăша вуланăн, тĕлĕнсе
Пăхатăп эп çынсен куçĕсенчен:
«Мĕн курăпăр-ши малашне?» — тесе
Этемлĕх шухăшлать пек хăй çинчен.

Эпир этемлĕх çутă ĕмĕтне
Чи тутă мăйăр пек шĕкĕлчесе
Çитермелле кашни этем патне,
Эпир — тĕнчен хальхи поэчĕсем.

Этемлĕх пурăнасшăн тĕнчере,
Ун ырă генийĕ хăватлăрах.

Усаллине хăрттармĕ вăл Çĕре,
Ăна вăл парăнтарĕ ырăпах.

«Курман-илтмен, пĕлместĕп», — тенĕ пек
Пăрăнаймасть поэт: ун тивĕç çук.
Чунпа-юнпа — кашни тумламĕпе! —
Тĕнче халне вăл туймалла ку чух.

Сейсмограф пулмалла поэт чĕри:
Ăçта мĕнле хускав, мĕнле чĕтрев,
Патнерех вăл е кăшт инçетри —
Йăлтах палăртмалла сикен чĕре.

Ку йывăр-и? Пит йывăр япала!
Вĕçтер, сăмахăм, хывăх-кипеке:
Тăхлан пек тĕшлĕ пул! Çавăнпала
Кашни ман сăввăм — юлашки пекех...

## ПĂЧĂРЛĂ ПАШЬЕЛ

(Танго)

Пăчăрлă Пашьел,
Пăчăрлă Пашьел...
Сăвă сăвăларăм,
Вăйă эп вылярăм,
Çутăччĕ хĕвел.

Пăчăрлă Пашьел,
Пăчăрлă Пашьел...
Çыннисем те ырă,
Антараççĕ тырă,
Туп-тулли сĕтел!

Пăчăрлă Пашьел,
Пăчăрлă Пашьел...
Пăчăр тытаймарăм,
Тĕкне татаймарăм,
Çав кăна пит шел!

## СĂВĂ! СĂВĂ!! СĂВĂ!!!

Телефон мана вăратрĕ.
Чим, ыйха пăртак сирем...
Тĕлĕк шепчĕ! Кам-ши татрĕ?
Пĕр юлташ редакцирен.

«Календарь пур пуль те санăн?» —
«Пур-çке», — тетĕп. — «Пăхса ил:
Çĕнĕ çул çитет, тăванăм,
Сăвă, сăвă илсе кил!»

Кăшт тăрсан ыйтса тĕпчерĕç
Радио кил-çуртĕнчен:
«Сас мĕнле ку чух сан? — терĕç. —
Çĕнĕ çул-çке, ху пĕлен!»

Чей ĕçем пекки тăвайрăм —
Телевидени чĕнет:
«Парăм, сăвăç, пысăк парăм!
Курăнасчĕ çынсене...

Вăхăт çук сухал хырмашкăн
Тетĕн-и? Ан иккĕлен:
Пултаратпăр кăлармашкăн
Сухалпах — Шелепилен!»

Уткалатăп каллĕ-маллĕ
Сакăр аршăн тăршшĕне.
Кам ăçтан тата мĕн калĕ?
Пăхкалап сĕтел çине.

Лартăм çеç — каллех чĕнеççĕ:
«...Çĕнĕ çул чипер çитет,
Студентсем сире кĕтеççĕ,
Çĕнĕ университет!»

Сехетне çырса кăначчĕ —
Кĕç тепре шăнкăртатать:
«Ку — пир-авăр комбиначĕ,
Килмĕр-ши пирĕн пата?

Пирĕн халь кермен те капăр,
Кружоксем те, хорĕ те...

Сăвă питĕ юрататпăр,
Килĕр-ха пĕр сехете».

Сăвă, сăвă... Кам хавассăн
Ан калаçтăр ун çинчен?
Акă тепĕр уçă сасă —
Пионер керменĕнчен:

«Саламлатпăр ăшшăн-ăшшăн!
Час каникул... пĕр-пĕр ир
Питĕ-питĕ курнăçасшăн
Сирĕнпе кăçал эпир!»

«Ăшшăн-ăшшăн... питĕ-питĕ...»
Мĕн калайăн? Ачисен
Чĕлхисем пит чĕвĕлти те —
«Пырăп, — терĕм, — май килсен».

Сăввине çапах çырасчĕ,
Паян мар пулсан — ыран...
Ак — тепри асилнĕ: «Здрасте!
Ку — библиотекăран.

Чиперех усратпăр эпĕр
Сирĕн пур кĕнекĕре.
Хăвăра итлесчĕ тетпĕр,
Кĕрсе тухăр-ха пĕрре...»

Ма ура иккех-ши манăн?
Çитерес ăçтан черет?
Телефон кĕпçи кун-каçăн
Мунча чулĕ пек хĕрет.

Сăвă, сăвă! Çакăн чухлĕ
Çын сана ыйтать пулсан —
Эс чăнах та кирлĕ пулĕ
Ку чухне çăкăрпа тан.

Сăвăç, сăвăç! Кунĕн-çĕрĕн
Çакнашкал сана чĕнни —
Ку хăех пĕр хӳхĕм тĕрĕ,
Халиччен тĕрленменни.

Йыхăраççĕ, ӳкĕтлеççĕ
Е хистеççĕ-и хăш чух —
Халăхра сана кĕтеççĕ,
Кунтан пысăк чыс та çук!

Телефонĕ шăнкăртаттăр —
Вăл калать эс кирлине.
«Ватăлма пăртак тăхтатпăр!» —
Тетĕп эпĕ чĕрене.

Виççĕр утмăл пилĕк кун та,
Утмăл ултă та пулать —
Çулсерен ман тултăр сунтăх
Вĕр çĕнĕ сăвăпала!

Кам мана шăнкăртаттарчĕ —
Çавсене çапла калас:
«Эпĕ — сирĕн ирĕк тарçă,
Яланах сире хавас.

Çĕнĕ çулăр — çĕнĕ пултăр,
Ан кивелтĕр пĕтиччен!
Сар савни пек йăл-йăл култăр
Çĕнĕ уйăх ир çинче!»

1967

## ĔМĔРӲ САН ВĂРĂМ ПУЛТĂР

(«Коммунизм ялавĕ» хаçат
50 çул тултарнă май)

### I

Астăватăп: сарă хутчĕ?
«Сахăр хучĕ» тенĕ хут.
Çавăн пек мана тĕл пулчĕ
Сан сăну пĕрремĕш хут.

Сан яту ун чух «Канашчĕ»,
Эпĕ, вунпĕрти ача,
Вырăсла пĕлмен чăвашчĕ,
Çийĕм-пуçăм — улача.

Ах, мĕнле халь пархатарлă
Туйăнаççĕ асилсен

Çав сар хут çине çаптарнă
Чăвашла саспаллисем!

Сăмахран сăмах... Кĕç шухăш
Сыпăнать сăмахсенчен...
Саспалли! Вăл — аслă тупăш
Халăхсен кун-çулĕнче.

...Тинкерет ача: «Чăнах-и?
Хамăрлах-и пĕтĕмпех?»
Чăваша чăваш сăмахĕ
Пулнă ялтăр çиçĕм пек.

Хаçатна умна эс сар та —
Халăх куçĕ умĕнче
Уçăлса каять сасартăк
Темĕн пысăкăш тĕнче.

**II**

«Канашран» «Чăваш коммуни»
Пултăн эс пĕр вăхăта.
Иккĕшне те эп йĕр тунă:
Юрататăп хаçата.

Халăхпа пĕр тан пымашкăн
Васкатать хаçат, хистет:
«Эс кунта ытлах ан ашкăн,
Дисциплина çирĕп!» — тет.

Васкасан, тен, пиçменни те
Тухнă пулĕ хушăран.
Ĕлкĕрес килет-çке питĕ!
Тăрмашатăн, тăрăшан...

Кĕçĕр çыртăн эс — иркӳлĕм
Саланатăн пинĕпе.
Кашни пӳрт сана е пӳлĕм
Тишкерет хăй пĕлнĕ пек.

«Ак кунта пăтранчăк шухăш,
Ак кунта рифми йăваш,
Ак кунта чĕлхи те хутăш [—]
Те ку вырăс, те чăваш?..»

Вулакан вăл çивчĕ куçлă,
Чи вĕтти таран курать!
Унпала эс пурăн туслă,
Вăл — тӳре хăйне кура.

Туслăху сан — чăн ăсталăх,
Чĕрене пыран чĕлхе.
Çавăнпа савать те халăх
Хăш-пĕрне ĕмĕрлĕхе.

## III

«Коммунизм ялавĕ» — санăн
Виççĕмĕш яту. Аван!
Ман шутпа, çӳлте тытатăн
Эсĕ çавă ялава.

Тĕп йĕрӳ сан тĕрĕс, çирĕп,
Парти хушнă пек ĕçлен
(«Проза!» — тейĕç ак. Эп сирĕп
Çав айăплăва та, тен).

Парти вăл — хăех поэзи!
Вăл каланă сăмахсем
Сăвă та пулса вĕçеççĕ,
Юрланаççĕ те вĕсем!

Парти вăл — çырман поэма,
Чĕрĕ эпопея пек,
Кивелми хăватлă тема
Пĕтĕм Çĕр чăмăрĕпе.

Парти! Çав пире вăратрĕ,
Чĕнчĕ аслă çул çине.
Паттăр çар туса тăратрĕ
Пичетри ĕçченсене.

— Революци ирĕк пачĕ,
Харпăр хăвăр халăха
Ăнлантарăр, — терĕ парти, —
«Коммунизм» сăмаха.

## IV

Кăмăллă хаçатăм! Эсĕ
Хамăр сăвăçсемшĕн те

Чип-чипер сăпка тесессĕн
Пĕртте йăнăш пулмĕ теп.

Сан ану çинче тапратрĕ
Çеçпĕл вĕр çĕнĕ ака.
Ырă тутă вăрлăх акрĕ,
Халь тырри епле парка!

Сан ану çинче кĕрлерĕ
«Нимене те нимене!»
Тенĕ пек хастар Элкерĕ
Йыхăрса шăллĕсене.

Пурнăç çилĕ тĕрлĕ вĕрчĕ,
Эс — чĕнен çак аканах:
Шур ана та хура пĕрчĕ —
Акăнать те акăнать!

Сассуна илтсе тăратпăр
Аякри-çывăхрисем.
Сан тавра чăмăртанатпăр
Чăвашла çыракансем.

Кăмăлу, хаçат, ан юлтăр —
Тусусем çаплах сатур.
Ĕмĕрӳ сан вăрăм пултăр:
Эс пулсан — эпир те пур.

Тепĕр майлă каласассăн —
Пирĕнсĕр эс ху та çук.
«Çавнашкал, — теп эп хавассăн, —
Халăх пĕрлĕхĕ ку чух».

Сан яту ĕнентерӳллĕ:
Чăвашла пупле-пуплех
Кĕрĕпĕр-ха пĕр иркӳлĕм
Коммунизм тĕпелнех!

Ерт те çавăт! Алла-аллăн
Çирĕп çитрĕмĕр алла.
Пурăнар-ха тепĕр аллă!
Пирĕн ĕмĕт — малалла...

1968

## ÇУРКУННЕ

Çут çуркунне этем ялан юрланă
Чечек çине, савни çине пăхса.
Çут çуркунне çулпуçăмăр çуралнă,
Хĕвел ялтрать çавна астутарса.

Октябрь, Ленин — уйрăлми ик çăлтăр
Ялан çутатĕ пĕтĕм Çĕр çулне.
Ĕмĕрлĕхех пуриншĕн те сыв пултăр
Ыран килсе пĕр аслă çуркунне!

Юратнă партипе эпир хăюллăн
Утатпăр ывăнмасăр малалла.
Ан тив, тăшман юнатăр каскăн чунлăн, —
Пире никам çавраймĕ каялла.

Октябрь, Ленин — уйрăлми ик çăлтăр
Ялан çутатĕ пĕтĕм Çĕр çулне.
Ĕмĕрлĕхех пуриншĕн те сыв пултăр
Ыран килес пĕр аслă çуркунне!

Пур халăхсен куç умĕнче тăрлатпăр
Пĕр пилĕкçуллăх хыççăн теприне.
Ӳсех, Тăван çĕршыв, тĕреклĕ, паттăр,
Çĕкле ху çăлтăрна эс тӳпене!

Октябрь, Ленин — уйрăлми ик çăлтăр
Ялан çутатĕ пĕтĕм Çĕр çулне.
Ĕмĕрлĕхех пуриншĕн те сыв пултăр
Ыран килес пĕр аслă çуркунне!

Венерăна çити çĕкленчĕ харсăр
Эпир майланă ăслă япала.
Çӳлтен çӳле вĕçет пĕр чарăнмасăр
Хăватлă шухăш пирĕн ятпала.

Октябрь, Ленин — уйрăлми ик çăлтăр
Ялан çутатĕ пĕтĕм Çĕр çулне.
Ĕмĕрлĕхех пуриншĕн те сыв пултăр
Ыран килес пĕр аслă çуркунне!

1968

## ЖИЗЕЛЬ

*Галина Васильевăна*

Камран çуралнине пĕлместĕп,
Чăвашшине кăна пĕлеп.
Сана эп сăвă пехиллес теп
Аçу-аннӳ чĕлхипеле.

Вăл ӳсрĕ хут çине çырмасăр
Сасартăк сăвăç чĕринче,
Тĕшленчĕ вăл хамран ыйтмасăр
«Жизель» курса пĕтериччен.

Жизель вăл — пур[ă]нăç пуçламăш,
Жизель — пĕрремĕш юрату.
Пăшăрханать Жизельшĕн амăш:
Анне чĕри вăл — ырату.

Çаплах Шупашкарта пĕр карчăк
Пăшăрханать тет саншăн та:
«Ах, çын хурри ан пултăрахчĕ,
Инкекĕ тартăрччĕ таçта...»

Мана та эс шухăшлаттаратăн:
Пĕрремĕш утăм сан ташшу,
Эс хăвăн ĕмĕтне ташлатăн,
Жизель вăл — санăн тантăшу.

...Куратăп: халăхăн таланчĕ,
Пин çул хушши хĕстернĕскер,
Куçа шартса асаматланчĕ
Шалти тасалăхпа чипер.

Çав асаматăн çутă, хӳхĕм
Шевлисенчен пĕри вăл — эс.
Тăван ĕçченлĕх патăр тӳсĕм,
Чуна çӳлтен çӳле çĕклес!

Тавах ăсталăхна! Хавассăн
Туятăп хамшăн чунăмра:
Сан ташшуна курман пулсассăн —
Пулаттăм эпĕ чухăнрах.

Çакна та калама хăятăп:
Талант вăл — ылтăн, ан йӳнел!..
Шуралнă пуçăма таятăп
Сана, вунсаккăрти Жизель!

1968

## ХУРАМА

Кунсерен, тухсассăн урама,
Эп курап: чул çуртăн умĕнче —
Тротуар çинчех — пĕр хурама
Сарăлса ӳссе ларать пĕччен.

Аслă çулччĕ çакă вырăнта,
Йывăçсемччĕ икĕ енĕпе.
Çавсенчен вăл тăрса юлнă та,
Тăлăх йывăç, чĕрĕ асăм пек.

Асфальтне сарса иртен ĕçчен
Пулнă ырă кăмăллă, куран:
Хурама тавра тăват енчен
Хӳтлĕхсем вăл лартнă хăмаран.

Пахчари панча пекех пура
Хальлĕхе сыхлать-ха йывăça.
Кирлĕ-çке чул мар ăна — тăпра,
Çумăр шывĕ кирлĕ. Çавă çав!

Кам хăтарнă-ши хурамана?
Эп пĕлместĕп ырă çын ятне.
Тав тăвассăм килчĕ ман ăна
Сассăм çитмесен те ун патне.

Тен, çынни халь çук та тĕнчере,
Тен, таçта инçе вăл пурăнать.
Мĕн пулин те çав таса чĕре
Çак хурамара та курăнать.

...Çын вилет вăл, йывăç вăл хăрать.
Вăхăт çитĕ — тӳнĕ хурама.
Ун чухне, тен, çакă сăвăра
Çĕнĕрен вăл пуçлĕ пурăнма...

1968, Переделкино

* * *

Вăхăтра хĕвел кулать,
Вăхăтра вăл ютшăнать,
Вăхăтра курка тулать,
Вăхăтра вăл пушанать.

Вăхăтра этем килет,
Вăхăтра каяс пулать.
Пурăнни — хăех тивлет,
Пурнăç хыççăн мĕн юлать?

Çур вăрман пек çуртăм çук,
Хураллана хуртăм çук,
Урхамах пек утăм çук,
Сăнчăрлана йыттăм çук.

Шурă-шурă хутăм пур,
Хуратас пек туртăм пур,
Сăвăç тенĕ ятăм пур,
Тен, пăртак талантăм пур.

Эп пĕлместĕп вăл мĕнне,
Чухлаймастăп ун сăнне,
Урлăшне те тăршшĕне,
Тутине те шăршине...

Паллă çак кăна ку чух:
Унсăр эп — пурри те çук.

1968. Ака уйăхĕ

## ÇЫРУ

*Владимир Мешкова*

Унтан-кунтан çитет хыпар
Чăваш таланчĕсем çинчен...
Çырар, юрлар, ташлар, сăрлар
Каçса кайса, чун каниччен!

Сана курман-ха куçăн эп,
Хутаç Васлей Иллин ачи.
Сăрна пăхап та ĕненеп:
Ытарайми чунун пахчи!

Аçу-аннӳ пилленĕ мул —
Хитрелĕхшĕн çунан чĕре.
Унпа эс уçрăн аслă çул
Çак аслă, çутă тĕнчере.

...Ем-ешĕл, сарă та кăвак,
Хура та, хĕрлĕ те сенкер
Тĕнче тĕрри тăва-тăва
Чăваш пики ӳсет чипер.

Çав илеме эс ачаран
Пăхса сăнанă пулмалла.
Инçе çĕрте ăна манман,
Чунна çĕкленĕ унпала.

Тăван çĕршыв пит сарлака,
Тем те пĕр илĕртет унта.
Чапу сан кайрĕ аякка,
Вăл каçрĕ чикĕ урлă та.

Çапах çуралнă çĕршывна —
Чăваш çĕрне — мансах ан кай.
Сунатăп сывлăх. Тав сана!
Кĕтетпĕр. Петĕр Хусанкай.

16.VI.1968. Атăл йăлăмĕ

## ЧĔРЕ

Хаçатсем çырах тăраççĕ:
Пĕр унта та пĕр кунта
Халь чĕре улăштараççĕ —
Çамрăкки çăлать ватта.

Ăнсăртран вилсе куç хупнă
Сывă çыннăн чĕрине
Куçарса лартма мел тупнă
Чирлĕ çыннăн кăкăрне.

Çын тени ялан, мăнтарăн,
Хапсăнать ытлараха.
Тавтапуç чиртен хăтарнă,
Ĕмĕр тăснă ăслăха!

Анчах эпĕ ним те янтă
Йышăнмастăп тĕнченне.
Никампа та нихăçан та
Улăштармăп чĕрене.

Чирлĕрех-и вăл е сывă,
Аслă, тăвăр-и ани —
Вăл — ман пĕчĕк çĕрĕм-шывăм,
Вăл — атте-анне пани.

Унпала мана çуратнă,
Унпала эп — унсăр мар! —
Ĕмĕтленнĕ те юратнă,
Курнă ырлăх, курнă шар.

Унпала эп хирĕç тăнă
Курайман тăшманăма,
Унпала хăйранă сăнă
Сăввăмри сăмахăм ман.

Пĕр вăл çилĕллĕ, пĕр çепĕç
Пĕр хавалсăр, пĕр салху:
Ырăпа усал кĕрешрĕç,
Витĕр тухрĕç хутран-хут...

Хампалах кивел те ватăл,
Ман чĕрем, чăваш чĕри!
Вăхăту çитсессĕн — татăл,
Таçта курĕ кун тепри.

Пурнăç тĕшĕ çĕнĕрен çĕн
Калчаланчĕ мансăрах...
Тавтапуç сана, чĕремçĕм!
Эп пăрахмăп. Ан пăрах.

1968

## МУХТАВ САНА, ЧĂВАШ ТЕАТРĔ!

Эс Хĕрлĕ Çар пуçтарнă çул
Çуралтăн çутă тĕнчене.
Ĕççынниппе ылханлă мул
Вăрçатчĕç вăрçă ун чухне.

Пăшал сассипеле пĕрле
Эс сасă патăн салтака.
Çĕнтерӳпе кĕрле-кĕрле
Çул килчĕ такăр, сарлака.

Мухтав сана, Чăваш тетарĕ!
Сан кун-çулу кĕрет юрра.
Чăваш çынни сана юратрĕ,
Санра вăл хăй чунне курать.

Çĕршыв çĕкленчĕ хăтăлса
Вĕçĕ-хĕррисĕр асапран.
Сассу янрарĕ сан таса,
Эс пултăн халăхпа пĕр тан.
Ӳстеретĕн ят çине-çине
Вăрман пекех кашла-кашла.
Тĕнчен сăмах ăстисене
Эс калаçтартăн чăвашла.

Мухтав сана, Чăваш театрĕ!
Сан кун-çулу кĕрет юрра.
Чăваш çынни сана юратрĕ,
Санра вăл хăй чунне курать.

Сума сăвать çĕршыв сана,
Кĕтсе тăрать кашни ялан.
Сан втăлми чипер сăнна
Пăхса тăранаймасть ялан.
Сана савса, хурса ырра
Ламран лама çӳрет сăмах.
Яту хисеплĕ халăхра
Хисеплĕ пултăр яланах.

Мухтав сана, Чăваш тетарĕ!
Сан кун-çулу кĕрет юрра.
Чăваш çынни сана юратрĕ,
Санра вăл хăй чунне курать.

1968

## ЭЛКЕРЕ

Çуллен сайраланса пыратпăр
Асаплă ватă салтаксем.
Сурансенчен те хăтăлатпăр —
Салтах, сестра, пит ан тĕксем...

...Чăваш çăлтăрĕсем яп-ялтăр,
Шултраланаççĕ кĕрхилле:
Ав Кĕвенте, Ала, ав Алтăр...
Çӳлте те пурнăç çĕртилле!

Эс ху та çăлтăр хушаматлă,
Пĕр ярăм çăлтăрччĕ: Элкер!
Каятăн... Çут тĕнче — самантлăх,
Çĕртен шăтса çĕрех кĕрер.

Элчел çитсе куçна хуптарчĕ.
Тусу та, тăшману та çук.
Хăшне, тен, алă та çуптарчĕ,
Ун пеккисем те пур ку чух...

Эс канăçсăрччĕ, кансĕрлеттĕн.
Мĕн кирлĕ пулнă? — Хушăн мар:
Эс халăх кăмăлне пĕлеттĕн,
Чăвашшăн сапрăн шĕл кăвар.

Çав шĕл кăвар — чăваш сăмахĕ,
Чечен чĕлхе — чăваш чĕлхи.
Вăл упрансассăн — хам хамах эп,
Упранмасан — эп çын мĕлки...

Чăваш çĕршывĕнче пурнатпăр
Чăваш чĕлхишĕн çапăçса.
Кам чĕлхене таптать — çав паттăр...
Епле чăтас çак намăса?

Ыйткалакан пек кĕленетпĕр:
«Тархасшăн, **Çăкăр** сăмаха
Лавкка çине çырсамăр, — тетпĕр. —
Тăван шкула ан хупăр-ха...»

Эс çакăншăн та сас параттăн
Ниçта кайса кĕме çукран.

Кĕç «националист» пулаттăн,
«Çӳлте» ыйту тăратчĕ сан.

Камсем вара, ман пит пĕлесчĕ,
«Интернационалистсем»,
Кам хушнипе ирĕксĕрлеççĕ
Чăваш ачисене вĕсем?

«Атте, анне» тесе ачашшăн
Пуплен хальхи Сенттисенне
Ма çăварне хупса лартасшăн
Шкулра пырса кĕрсессĕнех?!

Çапла-ши Ленин хушнă, калăр!
Çапла-ши сĕннĕ Мускавран?
Чăваш ĕçне тăвар-ха хамăр
Пур танлă халăхпа пĕр тан.

Патшалăх — хамăрăн. Патшалăх!
Пур Конституци — Тĕп саккун.
Апла пулсассăн пур тĕп халăх,
Çĕршыв тытма чĕлхи пур ун.

Республика! Чăваш çĕршывĕ!
Уес-кĕпĕрне мар текех.
Вăл аслă тĕнчене çул хывĕ
Ракетăллă карап пекех.

Чăваш чĕлхин сăвап-хисепĕ
Пин хут та ӳсĕ хальхинчен.
Чăваш ятпах кĕресшĕн эпĕ
Коммунăн аслă хапхинчен!

...Элкер, Элкер... Чăваш мухтавĕ!
Эс юлашки могикан мар.
Тăпру çинче пур халăх тăвĕ
Палăкупа халь юнашар.

Йĕри-тавра (эпир кĕтетпĕр!)
Çĕкленĕç çĕнĕ ăстасем.
Çĕр пин сăмахлă вут чĕлхемĕр
Çиçтерĕ вĕçĕмсĕр хĕлхем.

Çакна шанми пулсан, кăвак пăр
Пулса пăрлантăр ман чĕре!
Яшсем! Сире шанса каятпăр,
Çитерĕр ĕмĕтĕмĕре!

1968

## АК ÇАПЛА!

Хамăр эрăн, çĕнĕ эрăн
Аллă иккĕмĕш çулне
Ман кĕресчĕ пионерăн
Каçăртса пуça çӳле!

Пăнтăр-пăнтăр параппанĕ
Пăнтăртаттăрччĕ умра.
Эпĕ — юрă пуçлаканĕ,
Харăс-харăс пус, ура!

Сывлама та ирĕк, çăмăл,
Тапса çеç пыран çĕре.
Ма капла хаваслă кăмăл?
Ма çап-çамрăк пек чĕре?

Ма тесен каллех çĕклнчĕ
Пирĕн çын çӳле патвар.
Тунсăхланăччĕ, кĕтсеччĕ,
Хурланни те пулман мар.

Чĕрене ялан тем хĕсрĕ:
Çул ан пултăрччĕ усал...
Çĕр çинчен полковник вĕçрĕ,
Анчĕ — пулчĕ генерал!

Тав курки ан пултăр йӳçĕ —
Пыллантарăпăр ăна.
Тав, Георги Çĕнтерӳçĕ,
Тав, Береговой, сана!

Ак çапла! Сунатпăр сывлăх
Сарлака кĕрекере.
Инçетри те халĕ çывăх,
Пĕртăван пекех пире...

Пĕлĕтришĕн те çĕртишĕн
Пĕр танах çунать чĕре.
Спортăн ылтăн-кĕмĕл йышĕ
Асăма паян кĕрет.

Çул çӳренĕ чух (ăçта-ши?)
Куртăм эп пĕр боксера.
Çапăçать иккен янташăм
Инçетри Мехикăра.

Имшеркке çын çеç, пăхсассăн,
Телевизор анинче.
Перчетки тĕлне пулсассăн,
Тен, тараймăн йăтиччен.

Çапăçать чăваш — тухмашкăн
Юнлă вăрçă хирне мар.
Сых ятне (тăшман, ан ашкăн!)
Хулсене хуçăлтарар...

Çул мана киле çитерчĕ.
Кам-ха ку хаçат çинчи?
Йăл кулса тăрать чипер çеç
Соколов, Пинер ачи.

Куç тепре ăна тĕллерĕ:
Çавă! Ылтăн парнепе.
Тав сана, студент Валерий!
Эсĕ ху та ылтăн пек!

Епле-ха аса илеймĕн
Халь те ӳлĕм, малашне?
Çирĕм иккĕре, илемлĕ,
Маяковский калашле.

Ак çапла! Çĕрте çĕнтпĕр
Е чĕнет пире тӳпе —
Ăмăртатпăр шав пĕртен-пĕр
Революци ячĕпе.

Кам хăватлă, ăслă, çивĕч —
Çавă тухĕ çиеле.
Çавсене курма эп тивĕç,
Тав тума çынпа пĕрле.

1968

## ТАВ СĂВВИ

*М.Я. Сироткин 60 çулне*

Юратап саламлама
Ырă пĕлĕш-тантăша,
Çĕкленен кăмăлăма
Вылятса пĕр тăтăшах.

Аллăра пырать-и ар,
Утмăлать-и утмăла —
Мĕншĕн халĕ чыслас мар
Ыррине ырăпала?

Хамăр халăх хавалне
Ĕненсе ĕçлекенне
Кăшт çĕклесчĕ кăмăлне
Тетĕп эпĕ ĕмĕрне.

Çавăнпа е пухура,
Е каçхи кĕрекере
Йăпанас йăлам пурах
Сăвăпа хĕре-хĕре.

Çавăн майлă сăввăмсем
Вĕçрĕç çывăх та инçе.
Пичетре пулмин вĕсем —
Тусăмсен чĕрисенче!

Архивсен арчи таçта
Усрансассăн чиперех,
Тен, пулас кандидата
Вăл тĕл пулĕ-ха пĕрре.

Çумăр кайĕ çурăкран,
Кышлĕ, тен, хутне шăши.
Хăш йĕрки аран-аран
Палăрать... Кам çырнă-ши?

«Çавă мар-и ку? Ça-вах!
Хусанкай алли», — тесе
Çавăркалĕç те сăвва
«Мумĕр» лартĕç кĕтесе.

Ах, пĕрре те уншăн мар
Ыратса тапать чĕре —
Чĕрĕ чух сума сăвар
Пĕр-пĕрне çак тĕнчере.

Тĕрмĕшетпĕр тĕрлĕрен:
Çил те, тăвăл та улать...
Пĕтĕм мул-перекетрен
Ырă кăмăл çеç юлать.

Халăх кăмăлĕ пире
Пилленех пуль ыррине.
Çав упрантăр ĕмĕре
Çырăнса шур хут çине.

...Ак мĕскер эп пуç тавра
Çавăрса калла-малла
Шухăшлап çак уявра,
Якку ывăль Михала!

Тав сана! Ку — сан куну.
Саламсем те парнесем,
Темĕн чухлĕ ыр суну —
Саншăн çеç те мар вĕсем.

Халăх ăсĕ кăларать
Санни пек ăса-пуçа,
Санпала — хăй хăпарать.
Тав сана! Тайма пуçах!

17.XI.68 — пуйăс, Мускав — Шупашкар.
18.XI.68 — килте

## Г.Н. ВОЛКОВА: ХАМĂРĂН ГЕНИЛЛĔ КЕНИЕ...

Аллă çулă аякрах-ха,
Хĕрĕхре хĕрсе пыран.
Юбилей тени вăраххăн
Çывăхарĕ вăл кайран.

Анчах кам мана упратăр
Çав кунччен тĕрĕс-тĕкел?

Каламаллине калам-тăр,
Илттĕр алăк та тĕпел.

Эп сана саватăп, шăллăм,
Мухтавна курап инçе.
Ĕмĕрӳ сан пултăр вăрăм
Çак пĕртен-пĕр Çĕр çинче.

Пил-пехил сана, тăванăм,
Çитермешкĕн ĕмĕтне.
Тăшмансем сахал айванăн,
Ăслăн — пĕтмĕ ĕмĕрне.

Ӳстĕрех вĕсен хисепĕ —
Хăррăн пăх та иртсе кай.
Çавăн пек сĕнетĕп эпĕ —
Тем те курнă Хусанкай.

Аслă чăнлăхшăн тăратпăр —
Халăх чĕрĕлĕхĕшĕн.
Çунакан чуна вăй патăр
Ĕçĕн ĕмĕрлĕхĕшĕн!

Тухтăрсен кардиограмĕ
Кăтартать апла-капла.
Пултару çынни чараймĕ
Хăйне туртнă вăй-хала.

Урăхла ун юн çӳревĕ,
Урăхла тапать чĕри.
Халăха, çĕре тӳлевĕ
Пысăк унăн çав тери.

Çавнашкал сана куратăп.
Куçăма хупма элчел
Çитиччен сана юратăп —
Илттĕр уйăх та хĕвел!

7.12.68

# ЭПИР — ЧĂВАШ ÇЫРАВÇИСЕМ

*А.Ф. Талвире*

Çĕршывăн, нацин, сăвăçсен
Чи пысăк пĕрлĕхĕ — чĕлхе.
Эпир чăваш чĕлхипелен
Кăкарăннă ĕмĕрлĕхе.

Кăкарăннă-и? Чăн та-и?
Çапла. Салтма ан шухăшла:
Тăван чĕлхемĕр — чун туйи,
Вăл систерет ыр усала.

Асаттесен-асаннесен,
Кукайçейсен-кукамайсен
Пиншер çулхи сăмахĕсем
Пире çын турĕç пиллесе.

«Атте-анне», «Тăван çĕршыв»
Тесе калатпăр чăвашла.
Чĕлхемĕрте чечек шăрши,
Шыв-шур шавлать, вăрман кашлать.

Чечен чĕкеç чĕвĕлтетет,
Савни юрри савăнтарать...
Чĕлхе — тĕлĕнмелле тивлет,
Тĕнче уççи вăл тыттарать!

Килет тем тĕрлĕ самана —
Шăкăлтататпăр хамăрлах:
Çав «Тав сана!» та «Сав мана!»
Янрать кĕрекере çаплах.

Чăваш чĕлхи эрешĕпе
Витсе чи аслă шухăша
Эпир тĕнче мехелĕпе
Паллаштаратпăр чăваша.

Эпир — чăваш çыравçисем,
Ватти, вăталăхĕ, яшши,
Эпир — сăмах шыравçисем,
Сăмахĕ — вилĕмсĕр йышши!

4.IV.69

# МĂШĂР ЙĂМРА

*Турат Ваççине*

Мускав çывăхĕнчи ялта
Кармал чăвашĕ пурăнать.
Кӳл хĕррине вырнаçнă та,
Тăван ялти пек туйăнать.

Чăваш йăлипеле унта
Хăна-вĕрле вăл пуçтарать.
Хăй тухтăр, йăпанма тата
Пăртакçă сăвă çыркалать.

Паçми умне, кӳл хĕррине
Вăл лартнă пĕр мăшăр йăмра.
Пăхатăп та çавсем çине
Шутлатăп хамăн ăшăмра:

Те ашшĕ-амăш сăвапне
Чыс тунă вăл йывăçсемпе?
Те икĕ сарă ывăлне
Пилленĕ хăй чухланă пек?

Чăваш çĕршывĕнчен кунта
Хунавăн килнĕ йăмрасем
Тымар ярса мăнланнă та —
Лараççĕ ним те мар вĕсем!

Çапла-çке халăхăмăр та,
Ăна тем те пĕр кирлĕ мар:
Ăçта çитсен те — хăвăртрах
Çĕре тăрнать, ярать тымар.

Ĕçле, ху çăкăрна эс çи!
Çакна чăваш мана пĕлмест.
Эс те çаплах, Турат Ваççи,
Чăваш йăмрин турачĕ эс!

1969

## АРМСТРОНГ, ИЛТ МАНА

Армстронг! Тепĕр палăк
Чĕррĕн хушăнать.
Армстронг — Вăйлă Алă
Тет ку хушамат.

...Эп выртаттăм чирлĕ —
Çĕçĕ каснă çын —
Халăхăмăн вирлĕ,
Харсăр сăвăçи.

Анчах эп санпаччĕ,
Армстронг, сирĕнпе!
Шухăшăм хăпарчĕ
Чăрсăр çиçĕм пек.

Радио итлерĕм
Кăнтăрла, çĕрле.
Виçсĕре пиллерĕм
Пур çынпа пĕрле.

Пăшăрхантăм, çунтăм,
Савăнтăм чунтан.
Ырлăх-сывлăх сунтăм
Таврăнма унтан.

Армстронг! Эпĕ куртăм
Уйăха тата
Эс пĕрремĕш утăм
Тунă саманта.

Хама хам «телейлĕ!»
Терĕм çав самант.
Аслă ăс хĕвелĕ —
Çавă Туррăм ман.

Тем пӳрсен те халĕ
Халсăр ӳтĕме
Вăйлă чун хавалĕ
Шанĕ этеме.

Армстронг! Манăн халăх
Космос шучĕпе —
Виççĕмĕш, ку паллă
Пĕтĕм тĕнчипе.

Пĕр çунатлă эсĕр,
Нейл, Андриян!
Çынсене пистерĕр
Вăрçă-харçăран!

Пĕртăван пек пулăр
Çĕр çинче, çӳлте.
Юрлăр, выльăр-кулăр
Мирлĕ тĕпелте.

...Эп выртап — суранлă,
Хуçăлнă салтак.
Уншăн-им çуралнă
Çамрăксем татах?

Çитĕ! Сасă парăр
Вăрçă пулмасса.
Армстронг, çĕнĕ паттăр,
Илт эс ман сасса!

30.VII—2.VIII.69. Мускав. Пульница

## ПУÇЛАМĂШ ÇАВРА

Ирĕклĕ Пăлхар çĕршывĕ
Çирĕм пиллĕкре кăçал.
Вăл нихçанхинчен те сывă!
Ĕçĕ ун пырать кал-кал.

Халăхсем те сума сăвĕç,
Хăй те чыслĕ вăл хăйне.
Çирĕм пилĕк ятлă сăвăç
Кăтартать ак чун вăйне.

Сасси уçă, ăсĕ харсăр
Çирĕм пиллĕкĕшĕн те.
Вĕсене ытараймасăр
Эп Чăваш çĕрне кĕртеп.

Юратса куçартăм эпĕ
Упраса сăмах тĕшне.
Çакă пултăр ман хисепĕм
Тăванла пăлхар йышне.

1969

* * *

Ай-хай ир те пулать, каç та пулать —
Савни çук,
Вăркать ăшăм, вăркать, чунăм çунать
Пĕччен чух.
Кампа эп пусарам хурлăха?
Кама шанса калам тунсăха?
Тухрăм урама
Вăйă выляма,
Кама шанса калам тунсăха?

[1969]

* * *

Хуткупăсăн сасси ян ярать
Çур яла,
Шартах хуçса каять, ыраттарать
Кăмăла:
Асран каймасть савни юрлани,
Асран каймасть пĕрле савăнни.
Ах, манаймастăп çав
Çуллахи каçа!
Асран каймасть иккĕн савăнни.

[1969]

* * *

Вĕçен кайăкпулса вĕçесчĕ ман
аякка,
Савни тытса шăлайтăр çунатран
кайăка.
Чуна юта хурсан — чул пулам,
Яланхиллех савсан — йăл кулам.
Ах, пĕлесчĕ ман
Тĕрĕсне ялан,
Яланхиллех савсан — йăл кулам.

[1969]

* * *

Кунсем кĕскелеççĕ. Çурла уйăхне
Пуçларăм-ха çак пульнитса картинчех

Унччен икĕ уйăх мĕнле шунине
Сисмерĕм те шурă путмарăм çинче.

Ахлатрăм, аташрăм... Вĕри ӳт-тире
Пăрахăттăм эп пĕрех хут нӳхрепе...
Шаккать хĕрĕх градус çĕкленĕ чĕре,
Çунать тамăкри пек ырхан кӳлепе...

Шутларăм та — вунпĕрмĕш çĕçĕ иккен
Хам пурнăçăмра касса çурчĕ мана.
Тен, касĕ татах... тен, кунпа-ха пĕтмен:
Пăртак ытлашши мар-ши ку пĕр çынна?

1969

* * *

Кун пек эпĕ вăрманта
Чылай пулать пулманни,
Тăлăх тăрса васанта
Çут тĕнчерен хăрани.

Шултра çумăр тăкăнать
Витре тĕпĕ хăпнă пек,
Çĕре чӳхет, çăратать
Çурхи çырма юхнă пек.

Сĕм вăрманта тытамак
Тытса тулать уласа,
Хуçать-ватать тем амак
Тăвăлпалан туласа.

Çиçĕм çиçет, çĕр çурать
Шуйттансене тустарса;
Аçа çапать, çунтарать
Çӳçе-пуçа тăратса.

Асра такам картини —
Бетховенпа, çиçĕмпе...
Ун телейĕ — илтменни,
Эп — илтетĕп пĕтĕмпех!

[1969]

* * *

Тăм ӳке пуçлрĕ, тăм...
Кун-çĕр ăшă мар.
Çитрĕ пулĕ. Пурăнтăм.
Сывă пул. Хисар!

Эс кĕменччĕ шутăма,
Халĕ ĕнтĕ — пур.
Ак санран та уйрăлма
Калама çук хур!..

* * *

Çулçă тăкăнать...
Сулчă туйăнать
Шăнăрсем паян.
Ĕлĕкчĕ! «Хивре!» —
Тетчĕçĕ пире,
Пулнă пит пуян.

Пулнă вăй, çунат,
Çамрăклăх чуна
Çутнă асамат,
Тавтапуç ăна!
Ырăпа кăна
Юлчĕ асăма.

1969

* * *

Такам тăпри çинчи чул палăка
Çыру картса хăварнă Рим çынни:
«Çул çӳрекен, васкан пулсан та чарăн...»
Пиншер çулсем упраннă çак çыру,
Мана паян вăл ячĕ шухăша.
Саманапа пĕрле васканăскер
Сасартăк туйса илтĕм: тен, çапах
Тăхтамалла пуль сывлăш çавăрмашкăн,
Ăна-кăна хисеплесе пăхма,
Этемлĕх чĕртнĕ аслă çулăмра
Пĕр хăвăн хĕлхемне туйса илме...
«Çул çӳрекен, васкан пулсан та чарăн...»

19.X.69. Хисар

* * *

Тăман, тăман... Тăван Пăлхарăм,
Эс юлтăн инçетре.
Татăлайман санпа ман парăм,
Çавна туять чĕре.

Куçа хупатăп та — куратăп
Сан янкăр тӳпӳне.
Çӳретĕп пек сăртра-тура та...
Лĕп тинĕс чӳхенет...

Сан сиплĕ хĕвелӳ ачашшăн
Лăпканă пек пуçран:
«Халех ан ватăл-ха эс, ан шăн,
Усран пăртак, усран...»

Тăман, тăман... Çук умĕ-сумĕ!
Мĕн тăвăн-ха? Пире
Этемлĕхĕн чарусăр хумĕ
Хӳтернĕ çурçĕре.

Анчах та кăнтăр панă юнăм
Хĕртсе килсен чуна
Пин çуллăх тунсăхпа халь туйăм
Çунать, çунать, çунать...

4.XI.69. Шупашкар

* * *

Тĕрлĕренех ăс-хакăл куртăм
Хама кура çак пурнăçра.
Анчах пĕрин патне те туртăм
Кун пек пулманччĕ-ха ăшра.

«Тусу хăвăнтан лайăх пултăр», —
Тесе пилленĕччĕ анне.
Унтан паха телей те çук-тăр,
Çапла пулинччĕ малашне.

Кăмăлăмпа та, ĕçĕмпе те
Ялан юрасчĕ ман ăна...

Халăхăма çĕклесчĕ тетĕп,
Кун-çул тĕллевĕ — çав кăна.

[1969]

* * *

Хăвартăм хĕрĕхе, алла,
Утмăлăма та каялла.
Çапах усмастăп-ха алла:
Сăмахсене алла-алла
Суйлатăп чи тĕшлисене,
Чи туттине çине-çине
Силлетĕп, авăсатăп эп.
Аксан мĕн шăтасса пĕлеп.

[1969]

## В.Г. ЕГОРОВ ПРОФЕССОРА

Вĕрентекенĕм! Халăхăмăр — аслă:
Вĕçĕ-хĕррисĕр ăсĕ, ун хевти.
Сана вăл çĕнĕ пин çул пуçламалăх
Пиллетĕр пил хурса çĕре çити!

25, нарăс. 1970. Шупашкар,
пульнитса, ăш-чир уйрăмĕ, 9-мĕш пӳлĕм

## СЕМЕН ИСЛЮКОВА

Утмăл виççĕ, аллă пиллĕк...
Çавнашкал чухне
Çырăнать сана ман пилĕм:
Тав, тавсси, парне!

Юнашар выртатпăр иккĕн
Пурнăçшăн çунса.
Ху çине нумай эс илтĕн
Маншăн хыпăнса.

Çĕнтересчĕ! Эх, тăрасчĕ!
Ĕмĕтĕм — çӳлте,

Çĕнĕ çăлтăрсем çутасчĕ
Хамăр пĕлĕте!

Эсĕ ман вăя шаннишĕн —
Тав сана чунтан-вартан!
Пĕчĕк парнене эс йышăн
Мăннипе пĕр тан.

1.3.1970

## [ЮЛАШКИ ЙĔРКЕСЕМ]

Верук — эс те чăваш сасси.
Тавсси! Тавсси! Тавсси!

Пуш уйăхĕн
2-мĕшĕ, 1970

# КĔСКЕ СĂВĂСЕМ

## АПТРАМАН ТАВРАШ ПАРАКАН КАНАШ

**1**

Пĕччен çын вăл — пĕр пӳрне,
Пилĕк çын вăл — чăмăр.
Пулăшсассăн пĕр-пĕрне
Эпир вăйлă пурсăмăр.

**2**

Пĕр ватти калать хавассăн:
«Ӳркеве пĕтер ăна!
Ĕçлени çынна пулсассăн
Вĕренни юлать хăвна».

**3**

Сăпайлă пул. Ан чăрсăрлан.
Ытла çăвар карсах ан ашкăн:
Пур пархатарсăр сасăран
Чи пархатарсăрри — ашакăн.

**4**

Сăмахсен хакне пĕлни —
Питĕ пысăк пархатар,
Çĕрĕн никĕсĕ тени
Урапа тĕнĕлĕ мар.

1958

## АПТРАМАН ТАВРАШ ПАРАКАН КАНАШ

Кăнчала е кĕнчеле —
Тем те пулĕ чĕлхере.

Тĕрлĕ çакă çут тĕнче,
Çынсене пĕр пек ан кур.

Пур шĕлепке умĕнче
Хул айне калпак ан хур.

Ху камне пĕлес тесен —
Тĕкĕре пит ан ĕнен.

Ту ярăнма çăмăл чух
Çуна туртма кăмăл çук.

1958

## ПĔР ДРАМАТУРГА

Парсамăр сасă, кăмăл тăвăр,
Тем... пауза пырать вăрах,
Çыравçăшăн, пĕлетĕр хăвăр,
Членра тăни — сахалтарах.

1958

## ĂНСĂРТРАН ИЛТНĔ ВИÇĔ КАЛАÇУ

**1**

— Мĕнле сăвăç çав тăсланкă?
— Кам мĕнле? Ун пур карланкă.

**2**

«Спектакль çĕнĕ», — тен? Ан суй:
Каллех чĕре, черкке те туй...

**3**

— Эс хушăн тăрăшан... — Мĕнех-ха?
Телей — кашнин хăйне кура:
«Эпир çуралнă, — тет Сенека, —
Кӳмешкĕн усă хамăра».
Йăла тирпейĕ... Кам вĕрентĕ
Ватти пире вĕрентмесен?
Анчах çырма — «вĕрен пиртен те!» —
Теме пултарĕç çамрăксем.

1958

## ÇИЛ ХӲРИ

Йытă пек те вăл вĕрет,
Пăтă пек те вăл вĕрет,
Пуринчен те меллĕрех
Çил манерлĕ вăл вĕрет:
Çил хăш май — вăл та çав май...
Кăмăл çук ăна савма.

1958

## «ГЕНИ» ПӲРНИ

Пĕр «генийĕн» пӳрни хăпарнă,
Хирург патне уттарнă «гени».
Леш пăхнă-пăхнă та каланă:
— Пуçпа çырас пулатчĕ! — тенĕ.

1958

## НАРСПИÇĔСЕНЧЕН ПĔРНЕ

Нарспипеле тупа ан ту,
Çакна кăна ан ман:
Ху çамрăк та, сан таланту —
Ватсупнă Тăхтаман.

1958

## АСРА ТЫТАР

Асаттесем мĕн авалтан
Чăваш ятне çĕртме хушман.
Ăçта пулсан та яланах
Асра тытар çак йăлана!

## ÇĂМХАПА СĔВЕМ

Пĕрре ман каймаллах инçе çула,
Инçе пулсан та вĕçĕ ун — çăва.
Сĕвемĕ татăлсан çăмхи юлать,
Ун вĕçĕмсĕр кун-çулĕ. Вăл — чăваш.

## КĔНЕКЕН ĔÇ-ПУÇĔ

Кĕнекен ĕç-пуçĕ йывăр,
Пĕччене вăл вăй килет.
Çун, тарла, хăш чух ан çывăр,
Халăха вара — тивлет.

## ТУТЛИ, ЙӲÇÇИ...

Тутли, йӳççи — йăлтах хама кура
Кун-çулăм астивтерчĕ. Çав паха.
Часран часах юрлатăп пĕр юрра:
«Тата мĕн курасси ай пур-ши-ха?..»

## КИЛЕС ПОЭТ

Пĕр-пĕринпе «эпир» те «эпĕр»
Çырса тавлашнă хушăрах
Ăна мĕнпурĕ хатĕрлетпĕр:
Вăл ĕмĕтре, вăл шухăшра.

## КУН-ÇУЛ

Кун-çул вăл — черновик, атьсемĕр:
Çырса илмешкĕн вăхăт çук.

Таса хутпа пера илетпĕр —
Иртсе те кайнă пурнăçу.

## ÇАВĂНПА

Тĕлĕнӳ! Ак мĕн юлман
Пирĕнте ку чух.
Çавăнпа — поэт нумай,
А поэзи — çук.

## ĔÇПЕ ВĂЙĂ

Ĕçре пиçнĕ çын ялан
Вăйăра та ирттерет.
Вăйăра савăнакан
Ĕçе лайăх хĕрттерет.
Тăрăшман çын, тупата,
Вăйăра та тунката!

## ПЫСĂК ВЫРĂН Е?..

Эп шырамастăп пысăк вырăн.
Эп хапсăнмастăп мăн чина.
Сăпайлăн, кăмăллăн та ыррăн
Курасчĕ ман кашни çынна.
Ан тив, вăл пултăр аслă чинлă, —
Эп чи малтан шыратăп çынлăх.

## ÇИТМЕНЛĔХ ÇИНЧЕН

Çитменлĕхĕм пулма пултарĕ:
Ыр ут та такăнать çулта.
Пачах ăс пулмасан кам парĕ?
Çавна илес пулать шута!

## ТĔНĔЛ

Сăмахсен хакне пĕлни —
Питĕ пысăк пархатар:
Çĕрĕн тĕнĕлĕ тени —
Урапа тĕнĕлĕ мар.

## ТИРПЕЙ

*(Хӗвелтухӑҫри ӑслӑхран)*

**1**

Шӑнса килекене эс ӑшӑт
Выҫса килекене тӑрант,
Ӗҫме ыйтакана ӗҫтер:
Вӗри вучах, ҫавра сар чӑкӑт,
Шерпет, ҫӑл шывӗ, виноград —
Йӑлтах ҫак Ҫӗр пилленӗскер.

**2**

Сӑпайлӑ пул. Ан чӑрсӑрлан.
Ытла ҫӑвар карсах ан ашкӑн:
Пур пархатарсӑр сасӑран
Чи пархатарсӑрри — ашакӑн.

**3**

Ҫурта саламалик парса кӗр,
Тухуҫӑн ырӑ сунса тух.
Ҫулта-йӗрте ҫын пынӑ чух
Сӑмах хушмашкӑн пул эс хатӗр.
Ялан ҫакна асра тытса тӑр:
Утпа пыран — ҫуран ҫынна,
Ҫуран утан — ларакана,
Яшши — ватта малтан пуҫ тайтӑр.

**4**

Мухтанса эс ан ҫӳре.
Юратма вӗрен тӳрре.
Вак-тӗвекшӗн ан кӳрен, —
Ху вакне ҫеҫ пӗлтерен.

**5**

Кам ҫак илемлӗ тӗнчене
Тӗнче хӑйне пӑрахиччен
Пӑрахса кайӗ — ҫав телейлӗ.
Кам хӑйӗн ӗмӗрлӗх ҫӗрне
Ӳтпе кӗрсе вырнаҫиччен
Куҫпа курса тӑрать — телейлӗ.

## СĂЛТАВĔ

(Пиçнĕ тута сăмахĕ)

Авалхилле каласан —
Хăш-пĕр хĕрарăмсене
Тамăк пушă тăрасран
Туса янă çĕр çине.

## ШĂПИСЕМ ÇАПЛАЛЛА

Кĕнеке тăвасси —
Тип юман касасси:
Ах, кĕрпи ӳсĕнмест,
Пăчăки мăкалать...
Мĕн тăвас тетĕн эс?
Шăписем çаплалла...

## ЁÇĔН КУРШАНАКĔ

Ĕçĕн куршанакĕ пур.
Пĕр йĕппи тăрăнсанах
Вăл сана тăвасшăн хур,
Хытăрах эс пус ăна!

## ТĔРĔСЛЕНĔ ЧĂНЛĂХСЕМ

**1**

Çынпала ан ятлаçах:
Аншăрчĕ лекет хăвнах.

**2**

Пĕр ăсли каланă тет:
«Пуш пучах ялан çӳлте».

**3**

Çуламан пăрупалан
Пиçмен пашалу пĕр тан.

**4**

Тăмпăшалпа тăмписмен
Пĕр пекне тăм çеç сисмен.

## РЕПЕТИЛОВ ШУПАШКАРТА

Илт — Репетилов кăшкăрать:
«Шавлатпăр, тантăшсем, шавлатпăр!»
Пуш параппан ăсти çав паттăр
Халь куçнă-мĕн Шупашкара.

## ШИКЛЕНМĔП

Шăршлин шĕвекĕнчен шикленмĕп:
Ереймĕ те, çĕртеймĕ те.
Алмаз юпа пулса çĕкленĕп,
Тасан — çитерĕп ĕмĕте.

## ЯЛАВИНА

Ялавин —
Маншăн ялав-им?!

## АЛАКĔР ВАÇЛИНЕ

*(Поэт чухнехине)*

Çиелтен шăйăратăн, Алакĕр,
Шала кĕр!

## ÇАВАÇА

«Те Çаваç эп, те Ваççа?» —
Тетĕн эс иккĕленсе.
Хăвна ху та пĕлмесен
Кам-ха пĕлтĕр сăвăça?
Çавă çав!

## АГИТАТОР ПУЛАС ТЕКЕНЕ

«Парăр ирĕк, пулам агитатор!» —
Тет пĕри. Кам чарать поэта?
Анчах пуп кăшкăрать: «Паки патăр!»
Ман шутпа — агитатор вăл та.

Чи малтан кăтартсамăр:
Мĕнле сирĕн программăр?

## ÇУРМАККАЙСЕНЕ

Иккĕшне пĕрле çăрса
Унаса пĕр пуç лартсан,
Тен, пулатчĕ иçмасса
Хăрах çын аран-аран.
Уйрăм тунă та Турри —
Иккĕш те халь çын çурри.

## ЧУКМАР ПАРАСЧĔ АЛЛИНЕ

Чукмар парасчĕ аллине,
Мĕскер перопалан!
Калас килет те вăл камне...
Хăратăп эп унран.

## ИВАНОВ ХӲРЕШКИНЕ

«Нарспи» патне тапаçланать,
Юласшăн мар Ивановран.
Кушак çури арăслана
Çитни пулман-ха ку таран.

## МĂШКĂЛ

Сăвви тухманнине кура
Ларать поэт йăмра айне.
Çӳлтен пĕр мур хура курак
Леп! тутарать шур хут çине.

## ЯКА ÇАМКА

Уншăн тикĕс тĕнче, вăл нихçан та
Пĕркелемĕ яка çамкине.
Ун апачĕ — цитата, вăл янтă
Панулми пек ӳкет ун умне.

## МĔНЛЕ КАЙĂК?

Хăй тĕкленнĕ йăвана
Мĕнле кайăк пылчăклатăр?
Чăвашра çав айвана
Тепĕр чух тĕл пулкалатпăр...

## ШЫВЛИСЕНЧЕН ПĔРНЕ

Шывли çырманшăн пит хурланмăп,
Типсех вилместĕп пулĕ теп:
Эп Атăл хĕрринче пурнатăп,
Водопровод та пур килте.

## МАЛКАЯ

Çирĕм çул рифмăлать вăл «телей» те «хĕвел»,
Савнă тусĕ çинчен тем палкать.
Пĕтрĕ пĕр хушамат тĕнчере. Питĕ шел,
Хушамачĕ хитреччĕ — Малкай!

## ПĔЛĔШСЕМ

**1**

Кассан — турпас, çырсассăн — сăвă.
Ярать мĕн чухлĕ хут сая!
Пĕр грамм тĕшши, пĕр тонна хывăх.
Ах, кам пĕлмест-ши [...]!

**2**

Ухмахшăн — ăслă вăл. Чее.
Хăравçă. Вăрттăн ĕçкелет.
Çине-çинех элек тиет.
Ах, кам пĕлмест-ши [...]!

**3**

Ăс вырăнне ӳсет ун хырăм.
Пуянах мар вăл туйăмпа.
Иртет кун-çулĕ харам пыррăн.
Ах, кам пĕлмест-ши [...]!

## 4

Чӗри, кулли, чӗлхи-ҫӑварӗ —
Мӗн пурӗ ун суя кӑна.
Суя ӑна — апат тӑварӗ.
Ах, кам пӗлмест-ши [...]!

## ШӖВӖРӖЛЧЕН

Пӗр пуплет манпа йӑвашшӑн,
Пӗр хӑртать... ҫын хӳттипе,
Пӗр мана вӑл чуптӑвасшӑн
Сӗлекеллӗ тутипе.
Хӑп! Тасал ман ҫул ҫинчен,
Лӑймака шӗвӗрӗлчен!

## СУР!

Юлташ калать юлташ ҫинчен:
«Элек сарать ҫав упӑте...»
Эп тавӑратӑп пит ҫемҫен:
«Сур, тусӑм, эс кӗҫҫе пите!»

## ПӖРЛЕ

(Экспромт, икӗ вариант)

Саватӑп эп чӑваш ҫӗрне,
Ун чӗвӗл чӗлхине саватӑп.
Ялан эп Пушкинпа пӗрле,
Аса илеп Иванова та.

* * *

Вырӑсла пӗлни кирлех, —
Пушкина эп пит саватӑп.
Унпала танах, пӗрлех
Юратап Иванова та.

1950—1960

# АЧА-ПĂЧА СĂВВИСЕМ

## ВĂРМАН ЮРЛАТЬ

[Ум сăмах вырăнне]

Ачасем! Эсир ыйтатăр
Çĕнĕ сăвă калама.
Мĕн тăвас? — Ялан эп хатĕр! —
Темелле пулать хама.

Эпĕ пурăнтăм пĕр тапхăр
Сĕм вăрманăн варринче.
Çывăх мар, инçех те мар-тăр:
Хамăр Атăл хĕрринче.

Атăлта хисепсĕр пулă —
Тетел тыт та каркала.
Атăл тăрăх вăрăм сулă
Шăвăнать анаталла.

Сийĕн-сийĕн çыхнă, тачă
Хурса тухнă пĕрене
Куславкка патне каятчĕ
Тата Сĕнтĕрвăррине.

Вĕсенчен ĕç халăх-маçтăр
Кил çуртсем тăва-тăва
Ăсатать пĕр чарăнмасăр
Пĕтĕм аслă çĕршыва.

Вĕсенчен авал асаплăн
Кимĕ туртнă чăвашсем
Халь хăйсем тăваççĕ чаплă
Кимĕсем те парăшсем.

Тăвалла кĕрсе кайсассăн
Атăлтан Сăр шывĕпе —
Çĕмĕрле патне çывхарăн
Савăнса ун шавĕпе.

Пĕр шухăшпала эс тытăн
Темиçе тĕрлĕ çулçа:
Кашни йывăç — симĕс ылтăн,
Хамăр халь ăна хуçа.

Мĕн тума пĕлсе çитмерĕ
Ирĕк халăх йывăçран?!
Ун çинчен хăех пĕлтерĕ
Пирĕн аслă сĕм вăрман.

Ирĕн-каçăн эп итлерĕм
Йывăçсем юрланине.
Ыттисем те илтчĕр терĕм,
Çырса хутăм хут çине.

Пуринчен малтан пуçларĕ
Çĕр çулхи патвар юман.
Вара кайрĕ, кайрĕ, кайрĕ...
Итлĕр ак, йĕркеллĕ ман.

## ЮМАН

Уй варринче лаштра юман,
Атте тесе эп кайрăм та...

*Юрă*

Эп — Юман, Юман, Юман,
Эп — пуриншĕн утаман!
Йывăçсен йышне йăлтах
Пуçлăх эпĕ вăрманта.
Ӳсессе пит час ӳсместĕп,
Анчах çичçĕр çул таран
Эпĕ «ĕххĕм» те теместĕп,
Пин те пурнăп касмасан.
Касчăрах, ӳпкевĕм çук,
Ырă курччăр хам пур чух.
Аслă çын пĕр тĕп касать, —
Пин икел лартса тухать.

«Тип ҫиле те шӑрӑха
Чар!» — тет вӑл юманлӑха.

Эп — Юман, Юман, Юман,
Эп — пуриншӗн утаман.
Кам мана сума суман-тӑр?
Юмахра эп — Юман паттӑр,
Юрӑра — Юман атте;
Сывӑ-сывӑ ывӑлсен
Ячӗсем те пулнӑ тет
Юманкка мӗн ӗлӗкрен.
Пуринчен эп ҫирӗппи,
Хускалми хапха юпи,
Пӳрт лартуҫӑн — никӗсе —
Аялах выртап кӗрсе.
Вӑтӑр-хӗрӗх пӗрене
Купалаҫҫӗ ман ҫине —
Нимӗскер те мар, чӑтатӑп,
Пӳрт ҫӗрсессӗн те юлатӑп.
Эп пулатӑп урата:
Чуп, ташла, сиксе тапта, —
Авӑнмасть те хыр урайӗ,
Ма тесен юман ун айӗ.
Эп пулап сӗтел-пукан,
Пичӗке те эп пулатӑп —
Талхӑрса кӑпӑкланан
Сӑрана тытса чаратӑп.
Эп тӗреклӗ шкап, диван,
Алӑксем пулса ларатӑп;
Йӑкӑш-йӑкӑш шутаран
Яп-яка паркет саратӑп;
Мускаври метро таран,
Кремль таран эп ҫул тытатӑп.
Ман хуппа сӳсе ҫынсем
Саратаҫҫӗ тир-сӑран.
Сарӑ кӗрӗк ҫӗлетсен
Ман шӑрша сисен ялан.
Эп пулап ҫуна тупанӗ,
Эп пулатӑп кустӑрма.
Ачасем юман ҫӑпанӗ
Юратаҫҫӗ пуҫтарма.
Хӑйсемех чернил туса
Хатӗрлеҫҫӗ хӑш чухне.

Манпала хутсем ҫырса
Вӗренеҫҫӗ урокне.
Эп пиллетӗп вӗсене:
Тухӑр аслӑ ҫул ҫине,
Пур шара, пур инкеке
Хирӗҫ тӑрӑр ман пекех.
Эп пуҫа кӑна силлеп —
Тӑп чарап ҫавраҫиле.
Пӗр туратӑм хускалать —
Пур вӑрман та кар карлать...

Эп — Юман, Юман, Юман,
Эп — пуриншӗн утаман,
Йывӑҫсен йышне йӑлтах
Пуҫлӑх эпӗ вӑрманта!

## ҪӐКА

Уй варринче лаштра ҫӑка,
Анне тесе эп кайрӑм та...
*Юрӑ*

Ҫӑкана та тиркемеҫҫӗ,
Юратаҫҫӗ ӗлӗкрен;
Юрӑра «анне» тееҫҫӗ,
Ахӑр[т]нех, тивӗҫлӗрен.

Пурнӑҫа ӳпкелеместӗп:
Эп Юман тантӑшпалан
Вӑрӑм ӗмӗр ӗмӗрлетӗп —
Пилӗк-ултҫӗр ҫул таран.

Ман чечекӗм пархатарлӑ,
Манӑн пылӑм пит паха:
Шӑннӑ чух ӗҫсессӗн — тарлӑн,
Сиплӗ пулӗ сывлӑха.

Ҫулҫӑм ырӑ сулхӑн кӳрӗ,
Чатӑр пек вӑл ешӗлле.
Типӗтсессӗн — путек-сурӑх
Юратать ӑна хӗлле.

Вуллӑма пӑхсассӑн — хӑмӑр,
Тӗлӗнтермӗп тӗсӗмпе.

Шуратса мана пӑхсамӑр:
Ӳтӗм-тирӗм чӑкӑт пек!

Çирӗп мар эп, хытӑ мар эп,
Манӑн кӑмӑлӑм çемçе.
Касӑр, чавӑр — тем те парӑп:
Пыл катки, чӗрес, çӳпçе.

Такана та эп, кункра та,
Кӗреке сӗтелӗ те,
Хӗр арчи те эп пулатӑп —
Çӑмӑл та, тирпейлӗ те.

Эп хуралтӑ та витетӗп,
Эп пулатӑп мунчала.
Эп чӑпта, кантра, вӗрен эп,
Эп кӗретӗп мунчана.

Манпала çынсем çӑваççӗ
Ӳт-пӳне кӑпӑкласа.
Ман пекех вара пулаççӗ
Шурӑ, сывӑ та таса.

Ӗлӗк чух тӑхӑнтараттӑм
Пур Российӑна тата
Эпӗ çӑмӑл пушӑт атӑ,
Урӑхла вӑл — çӑпата.

Халь çынсем кирек ӑçта та
Тӑхӑнаççӗ ӗнтӗ ак
Сӑран атӑ та кӑçатӑ,
Çут калуш та сар пушмак.

Çавӑнпа мана та, ахӑр,
Çӑмӑл килӗ малашне:
Касмӗç, хӑртмӗç мӑнланмасӑр
Ман ӳсен хунавсене.

## ВĔРЕНЕ

Вăрман витĕр тухрăмăр
Вĕрене çулçи çутипе.
*Юрă*

Эп пулмастăп пĕрене,
Манпа çурт-йĕр çавăрмаççĕ.
Манăн ятăм — Вĕрене,
Таçтанах мана паллаççĕ.

Çулçăсем çулла пулсан
Пылланса кăна тăраççĕ.
Кĕркунне вĕсем ялан
Кĕп-кĕрен тĕспе ялтраççĕ.

Çын мана таçтан курать:
«Ха, епле ку йывăç капăр!»
Пӳ çитсессĕн пĕр турат
Хуçатех ытараймасăр.

Манăн вăррăм лĕпĕш пек —
Ик çунатлă, сарă çутă.
Аякках вĕçетĕп эп,
Çитмен çĕрĕм те ман çук-тăр.

Самолет, комбайн тесен —
Эпĕ юрăхлă унта та,
Якатсассăн пит чечен —
Пурçăн евĕр курăнатăп.

Эп чипер кăна пукан
Е тенкел пулса ларатăп.
Ăста çын тăвать манран
Шкап та, хаклă урапа та.

Эп пулап тура, пăта —
Ат тĕпне мана çапаççĕ.
Чашăк та эп, кашăк та —
Манпала яшка сыпаççĕ.

Эп пулатăп шанкăрма,
Ут майне мана çакаççĕ.
Выртмара ман сассăма
Ачасем аван чухлаççĕ.

Эп пулатăп шакăрча,
Çĕрĕпе хурал çӳретĕп.
Вут-кăвар тухсассăн — час
Çынсене эп систеретĕп.

Уçă саслă ку тесе
Час-часах манран тăваççĕ
Тĕрлĕ купăс-кĕслесем,
Ак çапла вара юрлаççĕ:

«...Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕрене,
Çулçи ӳкрĕ çул çине,
Çавăн ырă çутипе
Вăрман витĕр тухрăмăр,
Пур ял-йыш пĕрлешнипе
Çĕнĕ пурнăç турăмăр».

## ХУРĂН

Çăка çинче ларатăп,
Вĕрене витĕр пăхатăп.
Хурăнпала вылятăп.
*Тупмалли юмах*
*(кĕнчеле арлани)*

Эп — çĕршыв илемĕ — Хурăн,
Таçтанах мана эс курăн.

Кăтра пуç та, шур ура та
Пăхтарать çынна ялан.
Ватăлсан кăвакаратăп,
Пĕрĕнет ӳт-тирĕм ман.

Манран пӳрт туса лартмаççĕ:
Шĕкĕпе аптратăп тек.
Урапа шăлĕ тăваççĕ
Е пăшал валли кӳпчек.

Салтаксем мана саваççĕ:
Тăшмана çĕнтериччен
Нихăçан та кăлармаççĕ
Кӳпчеке хул хушшинчен.

Манăн вуттăм — чи хакли,
Хăрăма та çын упрать:

Кĕнеке çаптармалли
Хура сăрлăх вăл юрать.

Милĕксем манран çыхса
Çапăнаççĕ савăнса.
Йĕкесем çавăркалаççĕ,
Чĕлĕмсем те алткалаççĕ.

Ман хуппа сӳсе çĕлеççĕ
Пештĕр, тăрăс е пурак.
Çырлана кайса килеççĕ,
Кăмпине те кӳркелеççĕ, —
Хумалли унта пурах.

Кирлĕ чух эрех те эп,
Тикĕт те пула пĕлеп.
Ачасем кăна пăртак
Хăш чухне ашкăнкалаççĕ:
Пуртăпа карта-карта
Ман ӳте суранлатаççĕ.

Вара эпĕ хурланатăп,
Хурланап та макăратăп,
Пăт-пăт-пăт тумлать куççуль,
Хăвăрах куратăр пуль.

Ан тивсемĕр, ачасем,
Эп те ирĕккĕн ӳсем.
Итлĕр, ав мĕскер калать
Пионер çавна пула:
«Эп амантмăп Хурăна,
Пурăн, Хурăн, пурăнах!»

## ЧĂРĂШ

Çӳл ту çинче ват чăрăш,
Тĕпĕнченех лăс турат...
*Юрă*

Эпĕ — Чăрăш, эпĕ — Чăрăш,
Пĕлмесен пĕлмешкĕн тăрăш.

Хĕллехи вăрман çара, —
Манăн лăс[с]ăм çăп-çăра.

Эп яштак, парка, илемлĕ,
Кам мана пăхса киленмĕ?
Манăн шĕвĕр тăррăма
Çын таçтан хавас курма.
Юрлама эп юрататăп:
Сĕрме купăс та пулатăп,
Мандолина та тумра
Темĕн чухлĕ ман çумра.
Хуçăлмастăп, мăкрăлмастăп,
Янракан сасса пăсмастăп —
Хăма çур та çыпăçтар,
Кирлĕ чухлĕ хĕлĕх кар.
Сĕрме купăс калаканшăн
Кучченеç татах пур манăн;
Сĕркĕчне вăл сĕрмелле
Канифоль тенипеле;
Эп ăна паратăп сухăр,
Çавăнпа вăл усă куртăр.
Канифоль та скипидар,
Тикĕт те унта çук мар.
Эпĕ чыслă, эпĕ шурă,
Пур платник мана юп курĕ,
Эпĕ çурт пулма хавас,
Ырă хут пулап час-час,
Эпĕ çăмăл, эпĕ тӳрĕ,
Мана летчик та тав турĕ:
«Самолетлăх селĕм!» — тет.
Эп хăпартăм пĕлĕте.
Эп ачасене саватăп,
Елка кам вăл? — Эп пулатăп,
Юрлăр, ташлăр ман тавра,
Савăнтарăр чунăра!

## ХЫР

Вырăсла хапха хăмисем —
Пурте ват хырваррисем...
*Юрă*

Манăн ятăм пулĕ Хыр,
Чăрăшпа эп пĕртăван.
Ман патма та эсĕ пыр,
Эп те начар мар, аван.

Кӗрсе кур-ха хырлӑха:
Лекрӗм тейӗн ырлӑха!
Сывлӑш уҫӑ, тутлӑ, ҫӑмӑл,
Уҫӑлсах каять пур кӑмӑл.
Эпӗ те, хама кура,
Хӗл илемӗ вӑрманта:
Хӗл каҫах ларап лаштра,
Вӑл кӑна-и-ха тата?
Манӑн симӗс йӗппӗмсем —
Витамин савӑчӗсем,
Ҫав «Це» ятлӑ витамин
Питӗ сиплӗ терӗ тухтӑр.
Вӑйпиттин, ваттин, вӗттин —
Пур этемӗн те вӑл пултӑр.
Ҫын курать кашни ҫуртра
Ырӑ шӑршлӑ сухӑра:
Пур турат куҫҫисенчен
Сӑрхӑнать вӑл типиччен.
Пӳрт ҫине те хам витетӗп
Ҫумӑр шавӗ итлесе;
Ещӗксем пулса леҫетӗп
Тӗрлӗ ҫимӗҫ тиесе
Е карап пулса ишетӗп
Тинӗсерн те тинӗсе.
Хӑлаҫшарӑн касӑлса
Чугун ҫул айне выртатӑп,
Телефон юпи пулса
Часовой пек эп тӑратӑп.
Пӗтӗм аслӑ ҫӗрӗмпе
Тӗрлӗрен хыпар саратӑп,
Ҫынсене пӗр-пӗринпе
Аякран калаҫтаратӑп.
Кам кама мӗн тенӗ — эп
Пуринчен малтан пӗлеп.
Эпӗ хӑйӑрлӑ ҫӗре
Сӗм вӑрман туса лартатӑп.
Шӑрӑхпа аптран хире
Ырӑ сулхӑн эп паратӑп...

Е ахаль асту, е ҫыр:
Манӑн ятӑм пулӗ Хыр.

## ХУРАМА

Хура вӑрманта хурама,
Турта тума вӑл юрать...
*М.Ф. Федоров. «Арҫури»*

Хурама тесе чӗнеҫҫӗ,
Хурарах ҫав эп, чӑн та,
Карагач пиччем пур теҫҫӗ —
Хура йывӑҫ — кӑнтӑрта.

Эп савап хура тӑпраллӑ,
Кӑпӑш, ҫӗнӗ ҫӗрсене
Е шыв илнӗ, юшкӑн ларнӑ
Ҫыранти ҫарансене.

Манӑн ҫулҫӑн уйрӑм паллӑ:
Шӗвӗр вӗҫлӗ, хӗррипе
Вӗтӗ-вӗтӗ чалӑш шӑллӑ —
Шӑллаттарнӑ ҫурла пек.

Ҫиелтен пӑхсан сип-симӗс,
Аялтан — кӑшт шупкарах.
Ҫиелтен ҫара та тикӗс,
Аялтан — кӑштӑрккарах.

Мӗнлерех-ши манӑн кӑмӑл?
Эпӗ кутӑн, эп вушар.
Ҫын мана ҫураймӗ ҫӑмӑл,
Тар юхтарӗ сахал мар.

Эпӗ тӳсӗмлӗ, тӗреклӗ,
Авӑнатӑп пит аван.
Эпӗ — вутӑ, эпӗ — ҫеклӗ,
Эп — турта мӗн авалтан.

Эпӗ — чаплӑ каҫӑр пӗкӗ,
Шӑнкӑравлӑ туй пӗкки, —
Урапа-ҫуна тӗрекӗ,
Ачасен паппа сӑпки.

Эп пайтах итлерӗм юрӑ
«Нянине те ачине».
Халь сӑпка сайралчӗ, юрӗ, —
Куҫчӑрах кравать ҫине.

Ку чухне сăпка юрри те
Илтĕнет-мĕн çĕнĕлле.
Маншăн кăмăллă ку питĕ,
Ачасем, сире мĕнле?

## КАВРĂÇ

Каврăçран кисĕп, тукун тăваççĕ.
*Н.И. Ашмарин.*
*«Чăваш сăмахĕсен кĕнеки»*

«Каврăç мĕн вăл? Каврăç кам вăл? —
Тейĕ халĕ пĕр-пĕр Павăл. —
Çĕмĕртпе шĕшке пĕлеп,
Каврăçа илтмен-çке эп...»
Каврăç эпĕ вăл, хам евĕр
Çирĕп йывăç эп, атьсемĕр.
Варрăм хăмăр симĕсрех,
Хĕррĕм шурă кĕренрех.
Çулçăмсем илемлĕ манăн.
Пĕр туна çинче нумаййăн —
Вуннăн-вунпĕрĕн пĕрле,
Пилешпе пĕр евĕрлĕ.
Эп çутта пит юрататăп,
Вăтăр метр хăпаратăп.
Яш чухне кăна пăртак
Тăм тивсе мана хăртать.
Çавăнпа пĕр хам кăна эп
Пит шултра вăрман тăваймăп:
Е юман, е хурама
Кĕркелет ман хутăма.
Çавсемпе пĕрле ӳссессĕн,
Хамăн вăхăтăм çитсессĕн
Пĕренех пулса тăрап,
Çынсене куç хывтарап.
Пӳртлĕх мар, çапах та пĕлĕр:
Час-часах пулап пропеллер,
Пĕçерсен — тукун, тупан,
Йĕлтĕр, авăнчăк пукан
Эп пулмашкăн килĕшетĕп
Е кĕсмен пулса ишетĕп.
Çавăнпа çĕрте, шывра,
Пĕлĕтре — йĕри-тавра
Ман ята çынсем пĕлеççĕ:
«Каврăç? Вăл пултарĕ!» — теççĕ.

# ĂВĂС

Тăр-тăр чĕтрет кăвак ăвăс,
Мана касать теет пуль...

*Юрă*

Ăвăс теççĕ, Ăвăс теççĕ,
Ăвăс япăх йывăç теççĕ:
Уярта кăна пырать,
Çумăрта кăвакарать;
Çĕршĕнет вăл пурара та,
Тикĕс мар вăл урайра та,
Çуннă чух та шартлатать,
Хĕрӳне сахал парать.
Ăвăс пулĕ Ăвăсах,
Тирĕке е ывăса,
Кĕреçе-валашкана
Пырĕ ĕнтĕ пĕр кана...
Эп итлеп те тĕлĕнетĕп,
Именетĕп, çӳçенетĕп:
Чăнласах çапла-ши тетĕп.
Çилĕ мар — ачи кăна
Ашкăнсан та хур мана:
Çулçăмсем siксе чĕтреççĕ,
Çук, мана вĕсем пĕлмеççĕ.
Ман кăварăм хĕрӳ мар,
Анчах кам пулать-ха тар?
Манăн кăмрăк вăл, ан манăр,
Мансăрах ăна тăваймăр.
Юрататăп эп çутта:
Кашни çын шăрпăк çутать.
Пĕçерме тăрать-и пĕлĕм,
Тивертсе ярать-и чĕлĕм —
Çирĕм хут та хăш кунне
Кăларать çын шăрпăкне.
Тĕнчере хисепсĕр шăрпăк,
Тен, ун чухлĕ çук-тăр хăрпăк,
Кашни шăрпăк авалтан
Чĕлĕнет вăл Ăвăсран.
Ăвăс теççĕ, Ăвăс теççĕ,
Калаçаççĕ те — пĕлемеççĕ.
Ăвăса ăна ку чух
Пуççапса пуç çитес çук.

## ÇИРӖК

Çирӗк çулçи çиле май,
Атьӑр, хӗрсем, киле май.
*Уяв юрри*

Юман пек пулаймӑп çирӗп,
Чӑрӑш пек яштак та мар.
Эп — сӑпайлӑ йывӑç Çирӗк,
Шыв хӗрри — ман пархатар.

Тиркешместӗп нихӑçан та —
Çыран тӑрӑх пӗрмаях
Выльӑх-чӗрлӗх таптасан та
Эп ӗрчетӗп самаях.

Çипуççсем тем мар та манӑн,
Ӳтӗм-пӗвӗм пымалла:
Витӗрех мана сӑрланӑ
Шупка хӗрлӗ сӑрпала.

Çавӑнпа хӑш чух çынсемшӗн
Эп илемлӗх те кӳреп.
Тӗрлӗ шкап тавраш эрешӗ,
Рам-хашак пулатӑп эп.

Ман хуппа сӳсе пӗвеççӗ
Çӳç çиппи е çӑм çиппи.
Кӑмака хутма тесессӗн
Ыттинчен эп юлӑп-и?

Ӑшӑ парӑп хирӗçмесӗр,
Ӑвӑс пек шартлатмӑп-ха.
Эпӗ Çирӗк, ан ӳпкелӗр,
Эп — хама кура паха.

## УРТТӐШ

Вӗçсе пыракан ӑмӑрткайӑк та
Урттӑш йывӑç çине ларса канать.
*Мӑн кӗрӳ такмакӗ*

Урттӑш йывӑç тӑрринче
Ӑмӑрткайӑк каннӑ тет.
Кам пӗлет халь ман çинчен?
Анчах эп чылай çӗрте.

Хĕлĕн çăвĕн ешĕл эп,
Тӳсĕмлĕ хисепленеп.

Хăш çĕрте эп тĕм-тĕм пек,
Хăш çĕрте яштак кăна.
Кипарис йывăççипе
Хурăнташ теççĕ мана.

Ман çырлам та питĕ лайăх,
Тӳрлетет вăл чир-чĕре.
Туясем пулса чылай эп
Çул çӳретĕп тĕнчере.

Час-часах манран тăваççĕ
Кăранташ йывăççине.
Ачасем тытса çыраççĕ,
Пĕлеймеççĕ эп камне.

Урттăш эпĕ, урăх çук
Ман пекки кунта ку чух.

## ÇӲÇЕ

Ĕнтĕ çил çаврăнать, çил çаврăнать —
Çӳçепеле йăмра явăнать...

*Юрă*

Эп ĕрчевлĕ, эп Çӳçе,
Пит чухлап тутла-йӳççе.

Çулçăмсем те çурăлман —
Пылăм пур сисекене.
Вĕлле хурчĕ чи малтан
Тутанать ман сĕткене,
Манăн кăчăкăм ăна
Кăчăк-кăчăк туртнăнах.

Чăмăртаннă кăчăка
Хам савап кăларнă чух:
Хур чĕппи пек кăпăшка,
Ачашласчĕ — аллăм çук.
Ыталатăр ылтăн хурт,
Ун усси мана та пур:

Ĕçчен хурт пулăшнипе
Вăрлăх хатĕрлетĕп эп.

Эп ĕрчевлĕ, эп Çӳçе,
Тем тусассăн та тӳсеп.
Хунава та çын хуçать,
Лăпă, кунтă вăл çыхать;
Вуллăма та çуркалать,
Пичĕке вăл кăшăллать;
Тепĕр чух пукан, диван
Авкалать вăл пит аван;
Чĕренче те чĕлкелет,
Çатанне те чиккелет.

Сар хĕрсем вара садра
Çимĕç пиçнĕ вăхăтра
Манăн лăпă-кунтăма
Тултараççĕ сар улма;
Активеççĕ асăнса
Сад ăсти Мичурина,
Тав тăваççĕ колхоза:
Пархатар унта кăна.

## ЙĂМРА

Йăмра хулли йăмăк пур...
*Юрă*

Эп ӳсетĕп айлăмра,
Мансăр килмĕ ял илемĕ.
Янăравлă ят — Йăмра,
Çӳçепе эп пĕр килтен-мĕн.

Анчах вĕçкĕн Çӳçе пек
Эп ытла авкаланмастăп.
Авăнас тее-теех
Шăтăр-шатăр хуçăлатăп.

Пӳрт умне, лупас хыçне
Юратса мана лартаççĕ,
Пушартан сыхлассине
Ĕненсе, шанса тăраççĕ.

Эпĕ хăйăрлă çыра
Хăтарап ишĕлесрен,
Шыв çĕре çурсан вара
Асăнаççĕ ман çинчен.

Вар пуçне, тип çырмана
Турата чиксе тухаççĕ,
Тăм шăлаççĕ те ăна
Тутăрпа туртса çыхаççĕ.

Ачаш мар эп, кунсерен
Шăвармашкăн кирлĕ мар.
Тăрăнтар паян çĕре —
Ыранах ярап тымар.

Тиркеместĕп тăпрана, —
Нӳрĕ пултăр айăмра.
Çавнашкал эп пурăнап —
Ярăнса ӳсен Йăмра.

## ШĔШКĔ

Лутраях та шĕшкĕ, сарă мăйăр,
Авса татаймасăр эп каç турăм...
*Юрă*

Эпĕ — Шĕшкĕ — çаплалла,
Пĕл, ачам, мана, палла.

Юр кайса пĕтнĕ-пĕтмен
Эп ларатăп кăчăка.
Курăнмастăп пит хитрен:
Тĕсĕм-питĕм хăмăркка,
Çулçăмсем те кăштăркка.
Анчах халăх ман çинчен
Темĕн чухлĕ юр юрлать.
Ма апла-ши ку вара?
Ма тесен вăл юратать
Манăн сарă мăйăра;
Манранах çатан авать,
Тĕрлĕ кăшăл вăл тăвать.

Ман татах та уссăм пур:
Кам саттур та кам маттур —

Ҫав ман чӗрӗ вуларан
Пӗкече авма пӗлет,
Ух ярса вӑл манпалан
Тӗл пемешкӗн вӗренет.
Тимӗр вӗҫлӗ ухҫӗмрен
Уйрӑлать те хирлӳрен —
Аякках кайса ӳкет,
Шӑп «тӑшман» питне лекет.
«Паттӑр пулӗ салтакра!» —
Тет пӗр-пӗр ватти вара.

Эп ватта та уссӑр мар,
Маннӑн кукӑр-ҫке тымар.
Асатте-асаннесем,
Мучисем, кинеймейсем
Юратаҫҫӗ кӑларма
Ман кӗрен тымарӑма.
«Селӗм пулчӗ-ха туя!» —
Теҫҫӗ те кӑштӑртатса
Армана, кӳрше, уя,
Ҫывӑхри пӗр-пӗр станца,
Туй курма е пасара,
Е ялти клуба вара —
Хамӑр Нарспие курма,
Сӑвӑ-юрӑ тӑнлама —
Ҫул тытаҫҫӗ манпала...
Эпӗ, Шӗшкӗ, ҫаплалла.

## ҪӖМӖРТ

Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан
Килет вӑрман илемӗ...
*Юрӑ*

Эпӗ — Ҫӗмӗрт йывӑҫҫи.
Ан вӗр эсӗ, сивӗ ҫил,
Ан тӑк ман чечекӗме,
Ан пӗтер-ха илеме.
Тутлӑ, ырӑ шӑршӑмпа
Туслӑ эп хурт-хӑмӑрпа:
Пыл паратӑп вӗсене
Чысламашкӑн ҫынсене.
Ҫамрӑксем ман ҫеҫкене
Парнелеҫҫӗ пӗр-пӗрне.

Ачасем ман çĕмĕрте
Юратаççĕ ĕмĕртен,
Типĕтсен те ĕлĕкрен
Усăллă вăл чир-чĕртен.
Хӳхĕмне те хӳхĕм çав:
Ахаль мар хура куçа
Пур чăваш та хальччен
«Çĕмĕрт куç» тесе чĕнет.
Вăрмана кĕрекенсем,
Эп сире çапла пиллем:
Татăр çĕмĕрт, татăр та —
Ан амантăр турата.

## ПИЛЕШ

Шыв хĕрринче пилеш пиçет-çке,
Çупкăн-çупкăн шыва ӳкет-çке,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн юхса каять-çке...
*Юрă*

Кам пĕлмест-ши Пилеше?
Эп пурне те килĕшеп.

Ман сапак кĕркуннепе
Пĕрчĕк-пĕрчĕк мерчен пек.
Ачасем мана çиеççĕ
Тутине пăра-пăра,
Стариксем хăш чух ĕçеççĕ
Чей çине яра-яра,
Анчах теменшĕн чейне
Тултараççĕ черккене.
«Тутлă!» — теççĕ вĕттисем,
«Сиплĕ!» — теççĕ ваттисем.
Инкесем мана илемшĕн
Пӳрт çамкисене çакаççĕ,
Пиччесем — илештересшĕн —
Пахчана кӳртсе лартаççĕ.
Хĕрача «шăрçа» тесе
Йăпанать, манна тирсе...

Кам пĕлмест-ши Пилеше?
Эп пурне те килĕшеп.

## ПАЛАН

Палан çисе ӳсрĕмĕр,
Çампа паллă пултăмăр...
*Юрă*

Эс мана та паллан:
Эп пулатăп Палан.
Шур чечек манăн чун пек,
Хĕрлĕ çупкăнăм юн пек.
Йӳçĕрех эп малтан,
Тăм ӳксен тин татсан,
Салатпа пĕçерсессĕн
Е кăшт пыл тивертсессĕн
Кĕселте, кукăльре
Астивсессĕн пĕрре —
Уйăраймăн, паллаймăн —
Чĕлхӳне çăтса ярăн!

## КАТĂРКАС

Катăр-катăр катăркас
Катăркипе мухтанать...
*Юрă*

Манăн ятăм Катăркас,
Кам пĕлет мĕскершĕнне!
Уçланка эп пит хавас,
Манпала хитре ĕшне.

Çырлам хĕрлĕ, тутансассăн —
Палан пек вăл йӳçĕ мар,
Астумасăр пит ан хапсăн,
Йĕм çĕтсех пит ан хăпар:

Эпĕ йĕплĕ, тăрăнатăп...
Улмуççи сыпса лартсан —
Панулми те эп паратăп,
Груша та пулать сыпсан.

Пахчасем, садсем тавра
Çын лартать мана текех.
Тăррăма кассан вара —
Эпĕ чĕр хӳме пекех.

Ят нумай ҫак ҫӗр ҫинче,
Хам ак эпӗ — Катӑркас.
Йышлӑ йывӑҫ хушшинче
Катӑркас та патӑр сас.

## КӐПЧАНКӐ

Йывӑҫран усал — кӑпчанкӑ,
Сайхаха та юраймасть...
*Юрӑ*

Ман ятӑм пур — Кӑпчанкӑ.
Юманпа танлаштарсан
Эпӗ пӗчӗкҫӗ кӑпшанкӑ,
Хуратутлӑ вуллӑм ман!

Ҫырлампа та мухтанаймӑп —
Ҫынсене те вӑл хӑстарать,
Ҫисен ҫийӗ хӑмлакайӑк,
Вӑл аптрамӗ — сӑхтӑрах.

Стариксем манран аваҫҫӗ
Темӗн тӗрлӗ чӑпӑксем,
Карчӑксем хӑш чух тӑваҫҫӗ
Ҫыхмалли шӗвӗр йӗпсе,
Хӗҫ шӑлне мана лартаҫҫӗ
Е ӑса варне чиксе;
Кӑлараҫҫӗ ҫырламран
Сарӑ сӑрӑ авалтан.
Тата манӑн кӑмрӑкран
Пулать тушь пек кӑранташ,
Ҫавӑнпа эп катаран
Художникпе хурӑнташ.
Ку тем мар-ха, ку тем мар,
Чи хакли вӑл — ман тымар.
Унашкал тымар ку чух
Вӑрманта та урӑх ҫук,
Вӑл, атьсемӗр, каучук.

Каучук пулать резина:
Ак хайхи велосипед,
Мотоцикл, автомашина —
Йӑлт мана халь хисеплет.

Кам пĕлет-ха: ачасен
Пăсмалли шур резинки те
Манранах вăл пулнă, тен,
Ак сана Кăпчанкă! Çитĕ.

## ХĂМЛА

Улăхсенче хăмлисем
Автан пуç пек пулатчĕç.
*Н.И. Шелепи*

Кам пĕлмест ман кăмăла?
Эп — пуçа усман Хăмла!
Ши каятăп, пи каятăп,
Йывăç тăрăх явăнатăп.
Юарататăп чăтлăха,
Куç курми çăтăрмаха;
Çĕмĕрте те çыхланатăп,
Паланпа та паллашатăп;
Çăвĕпех эп чăмăртап
Çăмăл симĕс çăмарта;
Елка тунă пек вара эп
Вĕсене çакса яратăп;
Саралсассăн, кĕркунне
Эп ларап кĕрекене:
Çынсене савăнтаратăп,
Юрăсем юрлаттаратăп.
Хистесех ватта-яша
Тăрататăп эп ташша,
Тăпăр-тăпăр сиктеретĕп,
Урараи та ӳкеретĕп.
Хам ӳкместĕп, ма тесен —
Ĕç нумай-ха, ĕç пĕтмен.
Тукасра пĕр çын çуралнă,
Анатра пĕри авланнă,
Мансăр мĕн тăвĕç унта?
Манăн вырăн — чи малта.
Эп — хаваслăх, туй илемĕ,
Мансăр каччă хĕр илеймĕ,
Ашшĕ-амăш те пиллемĕ,
Çĕн çурта телей иленмĕ.
Эп — пуçа усман Хăмла,
Кам пĕлмест ман кăмăла?

Ҫавӑнпа йывӑҫпа тан
Сас паратӑп эп паян.

## ХӐМЛА ҪЫРЛИ

Хӗрри хӗрлӗ, варри шурӑ.
*Сутмалли юмах (хӑмла ҫырли)*

Тахҫанах ҫынсем пуплеҫҫӗ:
Тӗнчере пулать тӗрли.
Эп хӑмла марне пӗлеҫҫӗ, —
Ятӑм ман — Хӑмла ҫырли.

Хӑмла типӗ, эп сӗткенлӗ,
Хӑмла йӳҫӗ, эп пылак,
Хӑмла сарӑ, эпӗ хӗрлӗ,
Хӑмлӑ ҫӑмӑл, эп сулмак.

Хӑмла ӳсӗр, эпӗ урӑ,
Хӑмла ҫӳ[л]лӗ, эп лутра.
Сахал мар тата та урӑх
Уйрӑм пирӗн хушӑра.

Ахаль мар ҫынсем пуплеҫҫӗ:
Тӗнчере пулать тӗрли.
Эп хӑмла марне пӗлеҫҫӗ,
Ятӑм ман — Хӑмла ҫырли.

## ВӐРМАН УЛМИ

Олту йывӑҫ улмуҫҫи,
Чалӑш-чӗлӗш кӗлетки...
*Юрӑ*

Чалӑш-чӗлӗш ӳскелетӗп,
Ҫулҫӑмсем те вӗтӗрех.
Садри мар ӗнтӗ, пӗлетӗп,
Вӑрманта пырать пире.

Улмамсем те симӗс, йӳҫӗ —
Хурт та пит ҫиесшӗн мар.
Шӑвармн, сыпман... мӗн ӳсӗ
Ҫын пӑхмасӑр пит капмар?

Хурланать тесе ан шутлăр,
Эп пĕлетĕп пит аван:
Пур шултра, илемлĕ, тутлă
Улмасем те — ман йăхран!

## [ХЫÇ СĂМАХ ВЫРĂННЕ]

Йывăçсем çапла пĕрерĕн
Юрласа парсан вара
Темĕн чухлĕ сас тĕреклĕн
Чăмăртанчĕ пĕр хора.

Хор çапла юрларĕ хыттăн:
«Çынсăр çĕр — пире тăшман,
Çутçанталăк — пирĕн тыткăн,
Хăпаймастпăр вырăнтан.

Вăрман халăхĕ çул-çулăн
Кăк кăклать те уй тăвать.
Уй-хирти тăванĕ унăн
Ешĕл йывăççăр аптрать.

Типĕ çил, ăрша та шăрăх —
Ун тăшманĕ ĕмĕрне:
Вăл çĕрет çара хир тăрăх,
Ăшалать ун тыррине.

Сая çеç каять хирти ĕç,
Тар тăкни те кăлăхах.
Халь этем çĕкленчĕ хирĕç
Çав синкерлĕ шăрăха.

Атьăр эпĕр те утатпăр
Вăрмантан çеçенхире.
Ертсе кай пире, Çын паттăр,
Кирлĕрен кирлĕ çĕре.

Ĕçченсем икел пуçтарччăр
Аркпе те хĕвĕпе.
Юмансем кашласа ларччăр
Пĕтĕм хир çĕршывĕпе.

Ĕçченсем пуçтарччăр вăрлăх:
Хурама та вĕрене,
Хурăн, каврăç — йăлт çĕр тăрăх
Ярăнтарччăр хир енне.

Хăр уяр çулне пӳлмешкĕн,
Çĕнтермешкĕн тип çиле
Ешĕл çар пек ретĕн-ретĕн
Кар тăрар çынпа пĕрле.

Пирĕнпе çĕн пурнăç кайĕ,
Сывлăш пулĕ — чун уççи.
Тав туса пире пуç тайĕ
Çĕнĕ çын — тĕнче хуçи».

Ачасем! Çапла эп илтрĕм
Сĕм вăрманăн юррине,
Ӳркенмесĕр çырса илтĕм,
Кӳртрĕм çак кĕнекене.

Темĕн чухлĕ урăх йывăç
Пирĕн ешĕл тĕнчере,
Курăксем те питĕ йывă —
Итлесенччĕ çын пĕрре...

Шыв хĕрри тăрăх çӳрерĕм,
Асăрхарăм хăмăша.
«Мĕн пăшăлтатать-ши?» — терĕм,
Кайрăм эпĕ шухăша.

Кайăксем юрланă майăн
Шухăшларăм эп татах:
Ха, епле вĕсем нумайййăн,
Юррисем — расна йăлтах.

Мĕншĕн шăнкăрчă хавaслă?
Мĕншĕн хурлăхлă куккук?
Ăмăрткайăк мĕншĕн аслă?
Çерçие мĕншĕн сум çук?

Ма чĕкеç чĕлхи пит çепĕç?
Ма курак карма çăвар?
Ма пăрчкан хӳри чĕтренкĕç?
Кăсия ма пит вăр-вар?

Мĕншĕн уйăп юрлаймасть-ха,
Хăй илемлĕ-çке сăнран?
Мĕншĕн шăпчăк — курăнмасть хăй,
Юррипе янрать вăрман?

Çаксене пурне те эпĕ
Çырса парăттăм сире.
Хальлĕхе сăмах хисепĕ
Чарăнма хушать пире.

Калаçса ларсан-ларсассăн
Шăп лăпланнă самантра:
«Пин сăмах!» — тесе йăвашшăн
Шӳт тăвать пĕри вара.

Тен, пинрен те иртрĕ пулĕ
Паянхи сăмахăм ман.
Сĕм вăрман татах та юрлĕ
Эп унтан тухса кайсан.

Ачасем! Сире пиллетĕп
Итлеме ун юррине.
Эп илтмесĕр юлнине те
Илтĕр эсĕр ун чухне.

Аслă пирĕн çутçанталăк,
Вăл та, ку та илĕртет.
Виççĕр утмăл пилĕк талăк
Виçĕ кун пекех иртет.

Ан ӳркенĕр, ăслă пулăр,
Пĕлмелли питрех нумай.
Шырăр, тупăр, çырăр, вулăр,
Çивĕчленĕр тĕрлĕ май.

Çул пĕлмен çынна çил хирĕç,
Лекетех вăл инкеке.
Кăмакалăх кирлĕ кирпĕç,
Ăслăх — кирлĕ кĕнеке.

Кĕнеке вăл — анлă парăс
Пурнăç ятлă тинĕсре.
Кĕнеке — маяк, пĕр харăс
Çутатать пур çул-йĕре.

Кĕнекесĕр çын вăл — тăлăх,
Туссăр, пĕлĕшсĕр пекех.
Тĕттĕм çыншăн пурнăç — чăтлăх,
Çут уçланкă — кĕнеке.

Тăрăшсамăр, çамрăк халăх,
Тухăр çутă уçланка!..
Çакна çырнă асăнмалăх
Сирĕн пиччĕр — Хусанкай.

Çак юрра эп çаврăм-çаврăм
Юрласа пĕтернĕ чух
Пĕр ăста çынпа паллашрăм —
Нихăçан та манас çук.

Вăл мана кăшт ÿпкелерĕ:
«Хамăр çĕрĕн вăрманне
Ытларах хисеп ту», — терĕ,
Хушрĕ хăй мĕн пĕлнине.

Кuславкка ярать-мĕн çурт-йĕр
Донбаса та Кузбаса...
«Пирĕн çуртсăр халь çĕр çук-тăр!» —
Тет çав пĕлĕш савăнса.

«Пирĕн шпалсăр чугун çулĕ
Çук-тăр, — тет вăл малалла.
Пуринчен чапли, — ку пулĕ
Пирĕн Çĕмĕрле, паллах.

Мухтанать тесе ан калăр,
Хам та эп унти те-ха...
Шкап, сĕтел-пукан тăватпăр
Пахаран куллен паха!

Каласан — сăмах вăрахлăх,
Калас мар — чăтмалла мар:
Пирĕн йыш, рабочи халăх,
Çÿретет халь пĕр хыпар.

Ахальтен ăçтан çын калĕ? —
Çĕмĕрле сĕтелĕпе
Ĕçлесе ларать тет Сталин,
Тĕрĕсех пуль тетĕп эп.

Мĕнлерех пулсан та эпĕр
Яланхи пек ку чухне
Ĕçпеле юрасчĕ тетпĕр
Хамăр савнă çулпуçне.

Çавăнпа та тӳрĕ чунлăн,
Тимлĕн, чыслăн ĕçлекен
Хăй ĕçне курасшăн унăн —
Сталинăн — куçĕпелен».

Ак епле мана kаларĕ
Ватă маçтăр пĕркунне.
Унăн кăмăллă хыпарĕ
Тивĕç хăй кĕнекене.

[1950]

## КУ МĔСКЕР?
## КУРАР, ВУЛАСА ТУХАР

Ку — лаша, хура лаша,
Кӳлĕп кайăп Канаша.

Ку — ĕне, ула ĕне,
Вăл парать пире сĕтне.

Сухалтан пайти сахал, —
Качакан та пур сухал.

Ак така, тăк-тăк така,
Çавракa ик мăйрака.

Кăлтăр-кăлтăр каçăркка,
Ку пулать чăпар кăркка.

Ку кайăкăн мĕн пайти?
Тутлă унăн çăмарти!

Шурă хур та ула хур, —
Пирĕн иккĕшĕ те пур.

Кам пĕлмест кăвакала? —
Кутăн та вăл чăмкалать.

Ку вара сысна çури,
«Нăрик-нăрик!» — ун юрри.

Хĕрлĕ çĕлĕк сар автан
Авăтса калать: «Вăран!»

Кашни йыттăн ячĕ пур,
Çакă йытă вăл — Кампур.

Акă пирĕн кушак тус —
Кукăр хӳре, симĕс куç.

# ĂНЛАНТАРУСЕМ

**МАНĂН ÇĂЛТĂР ТӲПЕРЕ!**

П.Хусанкай кĕнекисенче кун пек сыпăк пулман. Çак тома хатĕрлекенсем ăна сăвăçăн Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăнах çырнă сăввисене хронологи йĕркипе вырнаçтармашкăн йĕркеленĕ. Çапла туни поэт пултарулăхне тĕрĕсрех ăнланса илме пулăшĕ. Культ тапхăрĕнчи идеологи витĕмĕпе палăрса тăракан сăвăсем («Тавтапуç», «Суйлавра») поэтăн çăмăл мар ӳсĕмĕпе çыхăннă. Вĕсенче уйрăм çынна ытлашши пысăка хурса мухтанипе пĕрлех çав вăхăтăн историлле паллисем те сăнарланса юлнă. Пухса хатĕрлекенĕсем çавнашкал сăвăсене (вĕсем ытти ярăмсенче те тĕл пулкалаççĕ) поэт пултарулăхне мĕнпур енчен тĕплĕн кăтартса парас тĕллевпе кĕртнĕ.

Асилӳ. Малтанхи хут «Чĕре юрри» кĕнекере пичетленнĕ. Сăвва чахотка чирĕпе чирлесе ирех çĕре кĕнĕ Иван Ивник поэта (1914—1942) асăнса çырнă. *Руставели Ш.* — грузинсен XII ĕмĕрти поэчĕ. *Ун чухне ят тухнă çынччĕ эпĕ...* — вăрçа кайма ят тухни çинчен сăмах пырать.

Манăн çăлтăр тӳпере! «Чĕре юрри» кĕнекере ку сăвва 1945—1950 çулсенче çырнă тесе палăртнă. «Савни» ятлă сăвă пуххинче пĕр дати кăна тăрать — «1945». Ахăртнех, 1950 çулта пичете хатĕрленĕ чухне ăна кăштах редакциленĕ пулас.

Тавтапуç. Ку сăвва 1950 çулта кун çути курнă «Чăваш совет поэзийĕ» антологирен илнĕ.

Тавсси кĕрхи кĕрекене! Сăвва «Тăван Атăл» журналăн 1946 çулхи 1-мĕш номерĕнче пичетленĕ. Хăçан çырнине палăртман. Хайлавăн шухăшне кура ăна 1945 çулта çырнă теме пулать.

Суйлавра. Малтанхи хут «Чăваш коммуни» (халĕ «Хыпар») хаçатăн 1947 çулхи нарăсăн 9-мĕшĕнче «Чĕре варрине çырнă ят» ятпа кун çути курнă. «Чĕре юрри» кĕнекере ăна «Суйлавра» сăмахпа ылмаштарнă. *Янрать котелок шăнкăр-шанкăр...* — хаçатра «шăнкăр-шанкăр» евĕрлев сăмахĕ вырăнне «шăнкăр-шăнкăр» тесе пичетленĕ.

1946 çулхи Мускавра.Сăввăн малтанхи варианчĕ «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекере (1948) «Çăвар уççи сăмах» ятпа тухнă. Вунпĕр çавраллă хайлава 1948 çулта çырнине палăртнă. Ку томра П. Хусанкайăн «Аслă чĕре» кĕнекере кун çути курнă варианчĕ пичетленет. Иккĕмĕш хут пичете хатĕрленĕ

чухне авторĕ ăна чылай ҫĕнетсе улăштарнă, унăн калăпăшне хĕрĕх виҫĕ ҫаврана ҫити ӳстернĕ, хăш-пĕрисене кĕртмен. Сăмахран, малтанхи тĕслĕхĕ ҫак сăмахсемпе вĕҫленет:

Унпа эпир хăюллă, паттăр:
Унпа, вăл ҫутнă ҫăлтăрпа,
Тĕнче сĕмне ҫурса пыратпăр,
Кивве вататпăр чăл та пар.

Ҫӳлте те, ҫывăх та ҫав ҫăлтăр,
Ват Мускавран Балкан урлах
Халăхсене чĕнет вăл: — Тăрăр!
Тĕп пултăр пусмăрҫă-хурах!

Ҫав ҫăлтăр Серби салтакне те
Ҫул кăтартать ҫутипелен,
Тăван Димитров ҫĕршывне те
Ҫутатрĕ пирĕн тӳперен.

Ҫав ҫăлтăр кунсерен хăватлăн
Ҫунать таса ҫутăпала.
Ҫав ҫăлтăр айĕпе халь Сталин
Пире чĕнет малтан мала.

Ку йĕркесем иккĕмĕш вариантра ҫирĕм ҫиччĕмĕш ҫавра хыҫҫăн пулмаллаччĕ, анчах автор вĕсене кĕртмен. Халĕ пичетленекен тĕслĕхĕн ҫирĕм пиллĕкмĕш ҫаври хыҫҫăн пулмалли ҫак йĕркесене те кĕртнĕ:

Тек нимĕскер те пулмасан та,
Гранит мавзолее пула
Мускав сана кирек ăҫтан та
Чи ҫывăх, чи тăван хула.

Малтанхи вариант «Эс, ушкăнпа утса черетĕн, Таҫтан вулатăн ун ятне» сăмахсемпе пуҫланать. Кайранхи тĕслĕхсенче ăна «Эс, ушкăнпа утса черетĕн, Пырса ҫитетĕн ун умне» йĕркесемпе ылмаштарнă. *Шуҫ чуман* — ҫитĕннисем пĕчĕк ачасене килĕнчен аякка (пĕр-пĕр уява) илсе каятпăр тесе шахвăртса суеҫтерекен сăмах. Вырăсла «после дождичка в четверг» тесе куҫарма пулать. *Хаяр Иван* — 1547—1584 ҫулсенче трон ҫинче ларнă Иван Грозный патша (1530—1584).

Ҫ ĕ н т е р ӳ. Сăвă малтанхи хут «Чăваш коммуни» хаҫатра 1951 ҫулхи утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче, каярахпа «Чĕр юрри» кĕнекере кун ҫути курнă. Виҫҫĕмĕш хут автор ăна СИ (Суйласа илнисем) 1-мĕш томĕнче (1968) пичетленĕ. Юлашки хут пичете хатĕрленĕ чухне сăвăҫ унта хăш-пĕр улшăнусем кĕртнĕ. Юлашки вариантра иккĕмĕш ҫавра хыҫҫăнхи ҫак йĕркесене кăларса пăрахнă:

Ҫĕнтерӳ! Ирĕк ҫĕр ҫурма выҫҫăн,
Ҫармас тенĕ пек вăрҫнă чух
Ун вăйне ĕнентерчĕ Царицын,
Пĕр ҫын кĕртрĕ пире ҫĕнĕ чун.

Пăшала чăмăртарăмăр хыттăн, —
Пулчĕ ҫимĕҫ те, тум та унпа.

— Сталин! — терĕмĕр те çăкăр тытнăн
Эпир турăмăр аслă тупа.

Малтанхи вариантра сăвă çак йĕркесемпе вĕçленнĕ пулнă:

Çав тӳпе варринче пур пĕр паллă,
Пур çĕнтерĕвĕн тĕрĕс палли:
Вăл — тӳрех малалла тăснă алă,
Аслă Сталинăн хурçă алли.

Юлашки хут пичете хатĕрленĕ чухне сăвăç вĕсене кăларса пăрахнă. *Горький* — Чулхула.

Ш и н е л ь. Малтанхи хут «Чĕре юрри» кĕнекере кун çути курнă. СИ I томĕ валли хатĕрленĕ чухне авторĕ сăвва кăштах улăштарнă. Сăмахран, малтанхи тĕслĕхĕ çак сăмахсемпе пуçланнă:

Кăвайт хĕлхемĕ вĕтеленĕ,
Тăхлан шăтарнă ветеран.

Кайран çакăн пек улшăну кĕртнĕ:

Кăвайт хĕлхемĕ вĕтеленĕ,
Тăхлан та тивнĕ аркăран.

Сăввăн пуçламăш çаври хыçне çак йĕркесене хушса хунă:

Анчах çав шăплăхра мĕн евĕр
Тав-шав, инçе çулсем, тупа!
Тăван çĕршывăмăр-аннемĕр
Пĕркеннĕччĕ пуставупа.

## КĔВĔЛЕНМЕН ЮРĂСЕМ

Ку сыпăкăн малтанхи вунă сăвви «Чĕре юрри» кĕнекере кун çути курнă. Кайранхи виççĕшне хайлавсен шухăшне тата хăçан çырнине кура кĕртнĕ.

«Ш у п а ш к а р а  ç и т с е  п ы р у ç ă н...» «Чĕре юрри» кĕнекере сăввăн юлашки çаври çапла пичетленнĕ:

Вĕçет ман шухăш Атăл урлă,
Çумма хушайăттăм çунат!..
Паян санпа ларса эп юрлăп,
Чĕрем пĕр саншăн çеç çунать.

«М ĕ с к е р,  м ĕ с к е р  э с  м а н  к у ç р а н ...» «Чĕре юрри» кĕнекере сăвă: «Çавах эп, шан! Çавах эп, шан! Ĕлĕкхиллех эп — санăн» йĕркесемпе вĕçленнĕ. «Савни» кĕнекере ăна кăштах улăштарнă — «эп» тата «санăн» сăмахсем хушшинчи тирене катертнĕ.

«К у р с а м,  м ĕ н л е  и л е м л ĕ  А т ă л !..» «Чĕре юрри» кĕнекере сăввăн малтанхи çаврин тăваттăмĕш йĕрки хыççăн хӳреллĕ пăнчă лартнă пулнă, «Савнире» ун вырăнне нумай пăнчă (...) тăрать. Пĕрремĕш тĕслĕхĕн юлашки çаври çапла вĕçленнĕ пулнă:

Пире пиллет пур çутçанталăк.
Хуп кантăкна, хуп кантăкна.

Ҫак юррӑм юлтӑр асӑнмалӑх —
Сана кӑна, сана кӑна.
Хуп кантӑкна.

«Ш у п а ш к а р ҫ ӑ к и с е м ҫ е ҫ к е р е...» «Чӗре юрри» кӗнекере сӑвӑ «Шупашкар ҫӑкисем чечекре...» сӑмахсемпе пуҫланнӑ. «Савни» кӗнекере юлашки сӑмахне «ҫеҫкере» сӑмахпа улӑштарнӑ.

«Ш у р ӑ - ш у р ӑ Ш у п а ш к а р...» Ку томра сӑввӑн «Чӗре юрри» кӗнекере тухнӑ тӗслӗхӗ пичетленет. Унӑн иккӗмӗш варианчӗ «Ялав» журналӑн 1960 ҫулхи 5-мӗш номерӗнче нотӑсемпе пичетленнӗ. Юрин авторӗ — А.В. Асламас композитор. Сӑввӑн ҫак тома кӗреймен варианчӗ:

Шурӑ-шурӑ Шупашкар,
Шутламанччӗ килессе.
А-ах, апла мар:
Кӗтрӗ Атӑл тинӗсе,
Кӗтрӗ Атӑл тинӗсе,
  Тинӗсе.
Ҫӳлӗ-ҫӳлӗ Шупашкар,
Ҫӗлӗк ӳкрӗ пуҫ ҫинчен.
А-ах, апла мар:
Пуҫа тайрӑм чӗререн,
Пуҫа тайрӑм чӗререн,
  Чӗререн.
Аслӑ-аслӑ Шупашкар,
Асӑнмашкӑн та хӑйман.
А-ах, апла мар:
Асӑмран та вӑл кайман,
Асӑмран та вӑл кайман,
  Ай, кайман.

**ЛАТВИРЕ ҪЫРНИСЕМ**

Ку сыпӑка поэт 1947 ҫулхи ҫурлапа авӑн уйӑхӗсенче Латвире канса пурӑннӑ вӑхӑтра ҫырнӑ. Сӑвӑсем «Чӗре юрри» кӗнекере пичетленнӗ.

3. Т у н с ӑ х. *Кушлавӑш* — сӑмах кунта, ахӑртнех, чӑваш поэчӗ С.В. Элкер ҫырса кӑтартнӑ Кушлавӑш уйӗ ҫинчен пырать.

10. Ш ӑ н к ӑ р ч ӑ с е м. *Хурт марти пек курӑнчӗ...* — хурт ҫӑвӑрне аса илтерекен шӑнкӑрч ушкӑнӗ ҫинчен ҫапла сӑнарлӑн каланӑ.

**СИКТӖРМЕ**

Ку сыпӑкри сӑвӑсене чылайӑшне 1948 ҫулта ҫырнӑ. Малтанхи хут капла ярӑмласа автор вӗсене «Лирика» кӗнекере пичетленӗ. «Мунча ҫемми», «Хӗр», «Хӗр юрри», «Вӑтӑр пӗрремӗш ҫуркунне» сӑвӑсемсӗр пуҫне вӗсем СИ I томӗнче те кун ҫути курнӑ.

«Виҫшер йӗркен», «Кӗрхи кӗреке», «Автанран автанччен», «Хӗрарӑм тантӑша», «Аннене» хайлавсемсӗр пуҫне «Ҫырнисен пуххине» ҫак икӗ кӗнекери сӑвӑсене пурне те кӗртнӗ.

Я л ă м а. Сăвă «Лирика» кĕнекере «Сиктĕрме! Нумай сиктертĕн...» йĕркепе пуçланать. СИ I томĕнче поэт ăна «Сиктĕрме! Савса сиктертĕн...» тесе улăштарнă, «ылттăн» сăмах вырăнне «ылтăн» тесе çырнă.

Н е с ĕ л. «Лирика» кĕнекере сăввăн çиччĕмĕш çаврин виççĕмĕшпе тăваттăмĕш йĕркисем çапла пулнă:

Халичченех усраççĕ ун хутне:
Патша ал пуснă, тенипе, куран.

СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

Я т с е м. СИ I томĕнче поэт хăй ӳснĕ тăрăхри ялсен ячĕсене пĕлтерекен сăмахсенчи саспаллисене пурне те пысăкран çырнă, «йывă» сăмаха «йăвă» сăмахпа ылмаштарнă.

С и к т ĕ р м е. «Мулаххай» сăмаха «Лирика» кĕнекере — «малахай», СИ I томĕнче «малаххай» тесе пичетленĕ.

П и т т ă п а й  ç е р е м ĕ. «Лирика» кĕнекере сăввăн вунпĕрмĕш çавринчи:

Çавăнпа тĕп чăвашра та
Хурăнташ пире нумай, —

тенĕ йĕркесенчи «Чăвашра» сăмаха пысăкран çырнă пулсан, СИ I томĕнче вăл пĕчĕкрен пуçланать. Ку сăмаха кайранхи кăларăмри пек хăварнă.

Ĕ н ч ĕ. Сиктĕрме çумĕн юхса выртакан шыва унти чăвашсем Ĕнче теççĕ. Ку сăвăри çав сăмаха поэт литература чĕлхи нормисене пăхăнса çырнă.

«Лирика» кĕнекере сăввăн 21—24 йĕркисем:

Ĕнчĕпе тĕнче касаççĕ,
Тинĕс урлă та каçаççĕ.
Парнене, кучченеçе
Çӳретеççĕ çав ĕнче, —

тесе вуланаççĕ пулсан, СИ I томĕнче тăваттăмĕш йĕркери «ĕнче» сăмаха «енче» сăмахпа ылмаштарнă. Ахăртнех, ку корректура йăнăшĕ.

К у н  й ĕ р к и. «Лирика» кĕнекери сăввăн виççĕмĕш çаври:

Ак мартăн саккăрмĕшĕ ман:
Юр хырмалла, вут çурмалла;
Унтан, алла кăшт кантарма,
Кăнтăрлаччен ман çырмалла, —

тесе вуланать пулсан, «Суйласа илнисенче» çав йĕркесене çапларах улăштарнă:

Ак мартăн саккăрмĕшĕ. Ман:
Юр хырмалла, вут çурмалла;
Унтан алла кăшт кантарма
Кăнтăрлаччен ман çырмалла.

«Çырнисен пуххине» хатĕрлекенсем кайранхи тĕслĕхне суйласа илнĕ. Сăввăн çиччĕмĕш çаврин тăваттăмĕш йĕрки («Çаплах хĕл те каçатăп эп») СИ I томĕнче «Çаплах, хĕл те каçатăп эп» тесе пичетленнĕ. «Хайлавăн шухăшне кура вăл йĕркене малтанхи пекех хăварнă.

Ç у л л а х и  к а ç. Сăвă ячĕ айне çырнă «В.К.» саспаллисем поэт хайлава хăйĕн савнă мăшăрне СССР халăх артисткине Вера Кузьминана

халалланине пĕлтереççĕ. *Сентел (вырăнти калаçу сăмахĕ)* — сантал, хĕрлĕ тĕс. *Тăвараллă çу* — çу сĕрнĕ чăкăт. *Аттилла* — Аттила (?—453) — пирĕн эрăн 434—453 çулĕсенче гунн йăхĕсен пĕрлешĕвне ертсе пынă. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, пăлхарсемпе сăварсем çав пĕрлешӳре тăнă. *Тимур* (1336—1405) — XIV ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен çурринче Атăлçи Пăлхар патшалăхне Ылтăн Ордана аркатнă çар пуçĕ.

С ă п к а  ю р р и. Поэт ку сăвва юратнă ывăлне Атнере халалланă.

Т ă в а т ă  х у р ă н. Сăвăн малтанхи варианчĕ «Чĕре юрри» кăнекере «Тăватă пĕртăвана» ятпа тухнă. Иккĕмĕш хут пичетленĕ чухне («Лирика») автор унта чылай улшăну кĕртнĕ. Хайлавăн малтанхи тĕслĕхĕ çакăн пек вуланать:

Тăватă хурăн пахчăрта —
Пĕр тымартан ӳстернĕ пек,
Тăваттăн ӳснĕ хăвăр та,
Пĕри те юлайман тĕпе.

Атте-анне пире пиллет
Кил-çурт тытма та «мул пухма».
Çĕршыв пире парать тивлет —
Урхамахла пуçа ухма.

Çĕрмешкĕн лартнă шалчасем
Тапса сикеççĕ тĕкмерен.
Ял-йыш сайра куран сăнсем
Тем чухлĕ пирĕн килсерен.

Ытти тăванĕсемпелен
Çав сăнсене тĕкĕр айне
Çакаççĕ те — хăна килсен
Мухтанкалаççĕ хăш чухне:

«Ак ку тăрать ман Мускаври,
Ку — Хусантах, леш пит инçе,
Сайра çырать те ку хутра —
Чей янă-ха кучченеçе...»

Çапла атте-анне вара
Йăпантарать чунĕсене.
Тăватă хурăн пахчара —
Тăватă хĕр пек вĕсене...

В ĕ р е н т е к е н. 1948 çулта тухнă «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекере ку сăвă — «Учительница», «Ялав» журналта (1948, 5 №, 23 с.) «Наталия Яковлевна» ятпа пичетленнĕ. Каярахри кăларăмсенче поэт хайлава ытти улшăнусем кĕртнĕ. Сăввăн 6—7 çаврисем малтан çапларах вуланнă:

Пăхать. Камран иккенĕ — паллă:
Пĕр çирĕм çул палланă алă,
Пăртакçĕ улăшăннă халь,
Эппин, ку та асилнĕ-ха!..
Çунат ӳссен çапла çав эпĕр:
Йăва тĕлне те пит пĕлместпĕр,
Атте-анне те ют-и, тен,
Ăçта унта — вĕрентекен!

Çаврасен 3—4 йĕркисене поэт «Лирика» кĕнекинче кайран çакăн пек улăштарнă:

Пăртакçă улăшăннă халь,
Эппин, манман, асилнĕ-ха!..
[..........................................]
Атте-анне те ют пек, тен,
Мĕнех вара вĕрентекен!

Хайлавăн 12—14 çаврисем малтанхи кĕнекере çакăн пек пулнă:

[..........................................]
Сăрланă урайне — йĕпе,
Таканлă çăпатасемпех

Кăптăртатса кĕрсе ларатпăр.
Тургенев. «Бежин луг» вулатпăр.
Ăна хăех куçарнă-мĕн,
Хăех — пире вĕрентекен.

Унтан пире вăл Короленкăн
«Вут çутине» вулатчĕ лăпкăн,
«Малта çапах та — вут çути!» —
Тени ман пулчĕ çул уççи.

Каярахри кăларăмсенче поэт вăл йĕркесене çапларах улăштарнă:

Сăрланă урайне йĕпе,
Таканлă çăпатасемпе
Каптăртатса кĕрсе ларатпăр.
Тургенев. «Бежин луг» вулатпăр.
Ăна пире вĕрентекен
Хăех куçарнă-ха иккен...

Унтан пире вăл Короленкăн
«Вут çутине» вулатчĕ лăпкăн,
«Малта çапах та — вут çунать!» —
Тени хальччен çĕклет чуна.

Сăввăн малтанхи варианчĕн çирĕм виççĕмĕш йĕркинче «писатель» сăмах пур. Поэт ăна «çыравçă» сăмахпа ылмаштарнă.

Ă м ă р т ă в а. «Сăвăсемпе поэмăсем» (1948) тата «Лирика» кĕнекесенче ку сăвă «Ăмăртăва!» ятпа кун çути курнă. СИ I томĕнче кăшкăру паллине кĕртнĕ. Каярах тухнă кĕнекесенче ытти çĕнĕлĕх те пур. Сăмахран, поэт «Хĕрсе çитен калаçура...», «Эпир сиктĕрмесем вĕт!» теççĕ...», «Çавăнпалан халь ял-йышсем...» сăвă йĕркисене тата «тишкĕрӳпе» сăмаха «Хĕрсе çитсен калаçура...», «Эпир — сиктĕрмесем-çке!» — теççĕ...», «Çавăнпалах халь ял-йышсем...» тата «тишкерӳпе» тесе тӳрлетнĕ. Кайранхи тĕслĕхре çынсен ячĕсем те улшăннă. Сăвăри сăнарсем малтан Неççе Люди, Çĕнни Анни, Тоня ятлă пулнă пулсан, кайран вĕсем Вĕçри Альтюк, Ехрем Анни тата Чĕкеç пулса тăнă. Çавран кивĕ варианчĕ çапла вуланать:

...Неççе Люди, Çĕнни Анни...
Кусем хастар выраççĕ. Пырĕ.
Ак Тоня пур — парне илни...
Кусемпелен çĕнтерĕп. Çырăр.

СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

Х ĕ л л е х и и р. «Лирика» кĕнекере сăввăн çиччĕмĕш çавринчи юлашки икĕ йĕрки «Курнайăттăм эп çавăн пек Хам çакăнтан куçса кайсан...» тесе вуланнă пулсан, СИ I томĕнче «çакăнтан» сăмахĕ «çавăнтан» сăмахпа ылмашăннă. Кайранхи варианчĕ пичетленет.

Т ĕ т ĕ м. Малтанхи хут «Чĕре юрри» кĕнекере пичетленнĕ. Кайранхи кăларăмсенче («Лирика», СИ I т.) автор сăвва чылай улăштарнă, кĕскетнĕ, унăн малтанхи тĕслĕхĕ çакăн пек вуланать:

Тӳлек. Мăрье тĕтĕмĕсем
Тӳп-тӳрĕ хăпараççĕ;
Мана темскер асилтерсе
Çӳле-çӳле каяççĕ.
Куймак шăрши кĕрет: çынсем
Çăр уявне чыслаççĕ.

Вĕри шывпа пăшăхласа
Пичĕкесем чӳхеççĕ;
Çăка пылне ăса-ăса
Симлеççĕ, йӳçĕтеççĕ;
«Тавтапуçах ку колхоза!» —
Тесе ĕçсе-çиеççĕ.

Пĕр-пĕр ватти мана курсан:
«Тавсси, ял-йыш, тавсси! — тет, —
Алхасрăмăр алтăрпалан,
Халь — пысăк пӳрнески те.
Пĕрле пурнатпăр-ха, тăван,
Пире çав хаклă питĕ».

Йĕс чĕлĕмне чаваласа
Хыпать вара хăяккăн,
Вутчуль çине «уне» хурса
Чакма çапать хăватлăн:
«Пурнасчĕ-ха, электритса
Çутса курасчĕ манăн!..»

Вара, уне сулла-сулла
Кăшт амалантарсассăн,
Хăй чĕлĕмне, кула-кула,
Чĕртсе ярать вăл танлăн.
Прометейрен тăван пулас
Ку çын! — тесе пăхатăн.

Тӳлек. Лĕп чĕлĕм тĕтĕмĕ
Пĕр саррăн, пĕр сенкеррĕн
Каçхи тин аннă тĕттĕме
Кĕрет сĕвем-сĕвемĕн.
Çаплах итлетĕп этеме, —
Сăмах куç пăврĕ тейĕн.

«...Ĕлĕк-авал темле патша
(Пĕлместĕп — темĕскершĕн?)
Пит юратман тет чăваша,
Шутланă вĕлермешкĕн.
Чăваш кăтартнă тамаша
Патшан чуннех витет-мĕн.

Патши вут ыйтнă та ара,
Леш — манашкал чĕртет-мĕн.
— Вăл чĕрнинчен вут кăларать,
Ăçтан ăна çĕнтерĕн! —
Тесе каларĕ тет вара
Патша килне çитсессĕн...»

Лăх-лăх кулать ват чĕлĕмçĕ:
«Юмах ĕнтĕ, мĕн калăн!
Кашни ватсупнă кĕлĕмçĕ
Хăйне маттур курасшăн,
Тен, çавăнпах та, тейĕн çав,
Хевти пĕтмен чăвашăн...»

*Чакма* (яп. ячĕ) — вут тивертмелли хатĕр. *Вутчуль çине «уне» хурса...* — кунта вутчуль çине типĕтнĕ ăвă кăмпи хуни çинчен сăмах пырать. СИ I томĕнчи текст тăрăх пичетленет.

М у н ч а  ç е м м и. Сăвва СИ I томĕнчи «Сиктĕрме» ярăма кĕртмен. «Лирика» кĕнеке тăрăх пичетленет.

В а к  х ĕ р р и н ч е. *Кŷрнеклĕ, çыпăçуллă, кĕр...* — кунта кĕрнеклĕ те çыпăçуллă, кĕре ӳтлĕ хĕр çинчен сăмах пырать.

Х ĕ р. Сăвă 1948 çулта «Ялав» журналăн 5-мĕш номерĕнче (5 с.) «Мăшăр кĕмĕл сулă» ятпа тухнă. Хайлав ячĕ айне çавра хăлăпкара «Юрă» тесе çырнă. «Лирика» кĕнекере поэт ăна «Сиктĕрме» ярăма кĕртнĕ. Сăввăн иккĕмĕшпе тăваттăмĕш çаврисем «Ялавра» çапла вуланнă пулнă:

Кулсан — купăс креслă,
Пăхсан — çиçĕм çиçнĕн.
Юрă пуçласассăн —
Кунĕн-çĕрĕн итлĕн.
[..............................]
Юр тытма тухать-и,
Сăвăрать-и тырă —
Унăн пурте хатĕр:
Ăшă, çирĕп, ырă.

Кайранхи вариантĕнче поэт «Кулсан — купăс саслă», «Ăшă, çирĕп, ырă» йĕркесене «Кулсан — купăс саслăн», «Йăлт тирпейлĕ, ырă» тесе улăштарнă.

Л а ш а с е м. Сăввăн вуниккĕмĕш çаврин пĕрремĕш йĕркинчи «карусель» сăмаха («Лирика») СИ I томĕнче «каруççел» сăмахпа ылмаштарнă.

### «ЧĔРЕ ЮРРИ» КĔНЕКЕРЕН (1952)

И. В. С т а л и н а. Сăвва «Чĕре юрри» кĕнекен титулĕ хыçнех вырнаçтарнă. Хăçан çырнине палăртман. Кĕнекине пичете 1953 çулхи кăрлач

уйăхĕн 8-мĕшĕнче алă пусса янине кура ăна 1951—1952 çулсенче е 1953 çул пуçламăшĕнче хайланă теме те май пур.

Х а л ă х с е н  А ш ш ĕ н е. *Шур сухаллă аккăн...* — кунта казах юрăçи Д.Джабаев (1846—1945) çинчен сăмах пырать.

Ç а м р ă к с е н  м а р ш ĕ. ВЛКСМ Чăваш обкомĕпе республикăри халăх пултарулăх çурчĕ 1950 çулта юрă-ташă ăстисен йышĕсем валли репертуар хучĕ кăларнă. Çав кăларăмра ку сăввăн тепĕр варианчĕ кун çути курнă. Ăна тăватшар йĕркен, хушса юрламаллипе пичетленĕ. Текстра ытти улшăнусем те пур. Сăмахран «Чĕре юрри» кĕнекере иккĕмĕш çавран малтанхи тăватă йĕрки çапларах вуланать:

Эпир çĕнĕрен хуласем ӳстеретпĕр,
Лартатпăр садсем пушхирте,
Эпир ту вататпăр, шыва пĕвелетпĕр,
Штурмлатпăр кăвак пĕлĕте.

Иккĕмĕш кăларăмра ăна çакăн пек улăштарнă:

Эпир çĕнĕрен хуласем хăпартатпăр,
Сĕм-сĕм вăрманта, пушхирте.
Эпир ту вататпăр, шыва çăвархлатпăр,
Штурмлатпăр кăвак пĕлĕте.

Виççĕмĕш çавран виççĕмĕш йĕркине («Эпир — çамрăк гварди, малашлăх геройĕ...») «Эпир — çамрăксем — самана чăн геройĕ...» тесе улăштарнă.

Кайранхи кăларăмра тата çак йĕркесене хушса хунă:

Тӳлек пурнăçра çĕн йыхрав янрасассăн —
Çĕкленĕпĕр, тăрăпăр кар!
Коммунăшăн тухăпăр пурте вăрçмашкăн
Тăван партипе юнашар.

С т у д е н т с е н  ă с а т у  ю р р и. Сăвă Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçатра «Студентсен юрри» ятпа пичетленнĕ (1951 çул, ака уйăхĕн 18-мĕшĕ). Хайлав умĕн ум сăмах тата П. Хусанкай Хусан студенчĕсемпе ӳкерттернĕ сăнӳкерчĕк пур. Хайлавăн пĕрремĕш йĕркине («Шăнкрав пек шăнкăртатса...») «Шăнкрав пире шăнкăртатса...» сăмахсемпе ылмаштарнă.

Э п — С о в е т л ă  С о ю з  г р а ж д а н и н ĕ. Сăввăн тăваттăмĕш çаврин çиччĕмĕш йĕркинчи «Сталин» сăмаха СИ I томĕнче «Парти» сăмахпа ылмаштарнă.

У р а м а  т у х а р  х а в а с л ă н. Малтанхи хут «Чăваш коммуни» хаçатра 1952 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче кун çути курнă. Вăл тĕслĕхре пиллĕкмĕш çавран юлашки йĕркисем «Ваттисем пăхса сăнаççĕ Айккинче тăрса» тесе вуланнă пулсан, «Чĕре юрри» кĕнекере вĕсене «Ваттисем пăхса сăнаççĕ Айккине тăрса» тесе кăшт улăштарнă.

Ч а р а р! Сăвва поэт Мускава тĕнчери мир конференцине кайса вилнĕ хыççăн çырнă. Малтанхи хут ăна «Чăваш коммуни» хаçатра 1952 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă. *Линкольн А.* (1809—1865) — Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ (1861—1865). Вăл чуралăха хирĕç кĕрешнĕ. Тăшманĕсем ăна 1865 çулта пăшалпа персе вĕлернĕ. *Эдисон Т.А.* (1847—

1931) — Америка ученăйĕ тата изобретателĕ. *Уитмен У.* (1819—1892) — Америка поэчĕ.

Ç а к  к у н с е н ч е. *Куратăп: Ленин каласа хăварнă Çунатлă сăмахсем çĕршыв çинче...* — ахăртнех, калаçу кунта В.И. Ленин хăй вăхăтĕнче каланă «Коммунизм это — Советская власть плюс электрификация всей страны» сăмахсем çинчен пырать.

А. А. Ж д а н о в а  а с ă н с а. Сăвă «Ялав» журналăн 1948 çулхи 8-мĕш номерĕнче «Коммунистсем, мала» ятпа пичетленнĕ. *Жданов А.А.* (1896—1948) — совет, патшалăх тата коммунистсен партийĕн деятелĕ.

Н и к о с  Б е л о я н н и с п а  у н ă н  т у с ĕ с е м  ç и н ч е н. *Белояннис Н.* (1915—1952) — Грецири рабочи юхăмĕн деятелĕ.

С у л е й м а н  С т а л ь с к и й. *Стальский С.* (чăн хушамачĕ Гасинбеков, 1896—1937) — лезгин савăçи.

П о л ь  Р о б с о н. *Робсон П.* (1898—1976) — Америкăри негр юрăçи, общество деятелĕ.

Д ж а м б у л. *Джабаев Д.* (1846—1945) — казах сăвăçи.

К о н с т а н т и н  И в а н о в а. *Мухтавлă Атăл хулинче...* — кунта вăрçă вăхăтĕнчи Сталинград çинчен сăмах пырать. *Низами Г.* (1141—1204) — азербайджан сăвăçи тата шухăшлавçи. *Навои А.* (1441—1501) — узбек сăвăçи, шухăшлавçи тата патшалăх деятелĕ. *Шевченко Т.Г.* (1814—1861) — украин сăвăçи тата ӳнерçи. Ирĕклĕхшĕн кĕрешме чĕнекен сăвăсем çырнăшăн 1847 çулта ăна салтака тытса янă. 1850—1857 çулсенче Каспи хĕрринчи Мангышлак çурутравĕнче ссылкăра пулнă. Ссылкăран Атăл тăрăх таврăннă май вăл чăваш халăхĕ тата Шупашкар çинчен ăшă сăмахсем çырнă.

П и р ĕ н  Ç е ç п ĕ л  М и ш ш и. Сăвă малтанхи хут «Коммунизм ялавĕ» хаçатра 1952 çулхи утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче «Пирĕн Çеçпĕл» ятпа пичетленнĕ. Каярахри кăларăмсенче ăна «Пирĕн Çеçпĕл Мишши» тесе улăштарнă. Киевра пурăнакан чăваш çыравçи тата художникĕ П.Н. Чичканов ку хайлав пирки çапларах çырать («Петĕр Хусанкайăн çырусенчи еткерлĕхĕ» // Ялав, 2000, 6 №, 91 с.): «...Ман патăмра «Пирĕн Çеçпĕл Мишши» ятлă сăввăн икĕ тĕслĕхĕ пур: пĕри — чăвашли, машинпа пичетленĕ 6 строфаллă (кашнинче 8 йĕрке), 5 тĕлте хăш-пĕр сăмахсене улăштарса тӳрлетнĕ, тепри — урăх чĕлхепе куçаракансем валли сăмахран сăмах куçнăскер, унта та 6 строфаллă (пичетре тухнинче — 5 çеç), иккĕмĕш строфи çук. Пĕрремĕш страницăра куçаракана (тăлмача. — *А.Т.*) асăрхаттарса Хусанкай çапла çырса хурать: пирвайхи строфа умĕнче —

| | | |
|---|---|---|
| ж | а | строки: 1, 3, 5, 7 — четырехстопный анапест |
| м | б | |
| ж | а | 2, 4, 6 ,8 — трехстопный анапест |
| м | б | |
| ж | в | |
| м | г | |
| ж | в | |
| м | г | |

Ку сăвăç хăй ĕçне питĕ тĕплĕн тунине кăтартса парать мар-и? Çак сăввăн иккĕмĕш строфи çакнашкал пулнă:

Курнă, илтнĕ эп: сăртлăхра, ĕмĕр çил хăврăлтарнă
Çап-çара, катрашка чул çинчех —
Чи çӳлте — çитĕнсе çурăлать пархатарлă
Куç тулли, ытарма çук чечек.
Вăл ларать — шăнасран та шик çук, шанасран та;

Сулхăн çил шăхăрать ши те ши;
Ун çапах çав тĕсех, пăрпала пăрлансан та.
Çавнашкал пирĕн Çеçпĕл Мишши.

СИ I томĕ кĕнеке тăрăх пичетленет.

О. И. Ы р с е м е. Сăвва чăваш халăх артисткине О.И. Шестипалова-Ырсеме (1890—1979) халалланă. Вăл Чăваш театрне йĕркеленĕренпех (1918) сцена çине тухса утмăл çул ытла тĕрлĕ рольсем вылянă.

Х у д о ж н и к а. Сăвва чăваш халăх художникне М.С. Спиридонова (1890—1981) халалланă.

С к у л ь п т о р а. Хайлава СССР художникĕсен Союзĕн членне И.Ф. Кудрявцева (1908—1968) халалланă. Чăваш поэзийĕн классикĕн К.В. Ивановăн Шупашкарти Атăл хĕрринчи палăкне 1952 çулта вăл ăсталанă.

Б а к е н. Сăвва филологи наукисен докторне, СССР Педагогика академийĕн член-корреспондентне М.Я. Сироткина (1908—1970) халалланă. Чăваш литературине тĕпчес тĕлĕшпе вăл нумай çул хушши вăй хунă, пысăк ĕçсем çырнă.

Х ĕ в е л у р и. «Чĕре юрри» кĕнекере сонетăн иккĕмĕш йĕрки «Вăл ӳпкелерĕ кăшт поэтсене...» тесе вуланнă пулсан, «Лирика» кĕнекере юлашки сăмахне «сăвăçсене» сăмахпа ылмаштарнă.

## «КУН-ÇУЛ ТӲПИНЧЕН» КĔНЕКЕРЕН (1958)

Ç у р р и. *Митта Васлейĕ* (1908—1957) — чăвашсен паллă поэчĕ. Сталин саманинче ăна националист тесе айăпланă, вăл вунсакăр çул хушши (1937—1954) НКВД тĕрмисемпе лагерĕсенче ларнă.

*Сĕнĕкртетме* — сĕнкĕлтетме.

Т а в к у р к и. «Ялав» журналăн 1958 çулхи 1-мĕш номĕрĕнче кун çути курнă тĕслĕхре сăвă çаврисене уйăрман.

Ç ĕ р ю л т а ш ĕ ç а в р ă н а т ь. Ку сăвва поэт 1957 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕнче Совет Союзĕ Çĕр чăмăрĕ тавра пĕрремĕш хут спутник вĕçтерсе янă ятпа çырнă.

Л е н и н ç у л ĕ п е. Сăввăн «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекере тухнă улттăмĕш çаврин 1—2 йĕркисем «Куç умĕнче Тольятти, Ибаррури, Торез та Ульбрихт, Поллит, Цеденбал...» тесе вуланнă пулсан, СИ I томĕнче «Поллит» сăмаха «Живков» сăмахпа ылмаштарнă. *Тольятти П.* (1893—1964) — Италири коммунистсен партийĕн деятелĕ. *Ибаррури Д.* (1895—1989) — Испанири рабочи юхăмĕн деятелĕ. Нумай вăхăт хушши Совет Союзĕнче пурăннă. *Торез М.* (1900—1964) — Францири коммунистсен партийĕн деятелĕ. *Ульбрихт В.* (1893—1973) — Хĕвелтухăç Германири коммунистсен партийĕн тата патшалăх деятелĕ. *Поллит Г.* (1890—1960) — Англири рабочи юхăмĕн деятелĕ. 1920 çулта Аслă Британири коммунистсен

партине йĕркелес ĕçе хастар хутшăннă. *Живков Т.* (1911) — Дунай çинчи Пăлхар çĕршывĕн политика тата патшалăх деятелĕ, нумай çул хушши коммунистсен партине ертсе пынă. *Цеденбал Ю.* (1916—1991) — Монголири халăх революци партийĕн деятелĕ.

СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

П у л т а р у. Егоров В.Г. (1880—1974) — чăвашсен паллă ученăйĕ, чĕлхе тĕпчевçи.

Т у т а р с т а н а  с а л а м! Сăвă малтанхи хут «Тăван Тутарстана салам!» ятпа пичетленнĕ пулнă («Тăван Атăл», 1955, 3 №, 77 с.). Поэт кĕнеке валли хатĕрленĕ чухне унăн ятне улăштарнă. Адель Кутуй (чăн ячĕ Адельша Нурмухмедович Кутуев (1903—1945)) — тутар поэчĕ. Хади Такташ (чăн ячĕ Хади Хайруллович Такташев (1900—1931)) — тутар поэчĕ.

К у н-ç у л  т ӳ п и н ч е н. Долгов В.А. (1906—1990) — чăваш литература критикĕ, прозаикĕ.

Н. Я. Б и ч у р и н а (И а к и н ф а). Бичурин Н.Я. (1777—1853) — тĕнчери паллă ученăй, чăваш.

Ю р р ă м  У к р а и н ă н а. *Рыльский М.Ф.* (1895—1964) — украин поэчĕ, тĕпчевçи тата общество деятелĕ. *Ăслă куçлă Богдан...* — Украинăн патшалăх тата çар деятелĕ Б.М. Хмельницкий (1595—1657) çинчен сăмах пырать. Вăл ертсе пынипе 1654 çулта украин халăхĕ Раççейпе пĕрлешнĕ.

Ç а м р ă к с е н  ю р р и. «Ялав» журналăн 1955 çулхи 11-мĕш номерĕнче «Хастарлă çамрăксем» ятпа нотăпа çапăннă. Кĕввине Ф. Лукин композитор çырнă. Сăввăн пĕрремĕш çавринчи юлашки икĕ йĕрки «Ялавра»:

Чĕре савăнать ялан,
Чĕрере сăвă-юрă янрать, —

тесе вуланать. Иккĕмĕш варианчĕ валли автор ăна çапларах улăштарнă:

Чун савăнать ялан,
Чĕрере сăвă-юрă янрать, шăранать.

П у ш  у й ă х ĕ н  в ĕ ç ĕ н ч е. Поэтăн А.П. Хусанкай хатĕрленĕ «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» кĕнекинче (1982) сăвва çаврасене уйăрман. Ун пиллĕкмĕшпе улттăмĕш çаврисене кĕртмесĕр хăварнă.

Т е з а в р у с  л и н г в е  ч у в а ш о р у м. *Ашмарин Н.И.* (1870—1933) — пысăк ученăй, чĕлхе тĕпчевçи, вунçичĕ томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» авторĕ.

П о э з и  п у л с а н... «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекере сăввăн пĕрремĕш çаврин 3—4 йĕркисем «Кашни сăвăпа, савнипе чунма-чун Калаçнă пекех, кăмăл тултăр» тесе вуланнă пулсан, СИ I томĕнче «чунма-чун» сăмах çаврăнăшне «чунпа-чун» тесе улăштарнă.

СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

Х а л ă х  с ă в ă ç и н  у я в н е. «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекере сăввăн пиллĕкмĕш çаври 3—4 йĕркисем «Казахпа туркменăн, латышпа литвинăн — Пур йăхсен çилли те çунчĕ ăшăмра» тесе вуланнă пулсан, СИ I томĕнче «литвинăн» сăмахне «литванăн» тесе улăштарнă. Тĕрĕс рифмăсем тума

юратнă поэт, ахăртнех, ăна хăй те тӳрлетмен. Ку типографи айăпĕпе пулма пултарнă.

Сăвă малтан «Ялав» журналăн 1957 çулхи 1-мĕш номерĕнче «С.В. Эльгере» ятпа пичетленнĕ пулнă. Маларах асăннă йĕрке унта «Казахпа туркменăн, молдованăн, финăн» тесе вуланнă.

С у й л а в ç ă с е м у м ĕ н ч е. Хайлав малтанхи хут «Коммунизм ялавĕ» хаçатра 1955 çулхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче кун çути курнă. Хайлавăн вунулттăмĕш çаврин 3—4 йĕркисем малтан «Пурсăра тав тăватпăр, Пуçăма çĕрех пĕксе» тесе вуланнă пулсан, «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекере «тав тăватпăр» глагола «тав тăватăп» глаголпа ылмаштарнă. Вунçиччĕмĕш çаврин пĕрремĕш йĕркинче те вăл глагола пĕрремĕш хисепре тăраканнипе улăштарнă. *Пăльчăра* (вырăнти калаçу сăмахĕ) — вăчăра. *Çулкăм* (вырăнти калаçу сăмахĕ) — паккус.

## «ЛИРИКА» КĔНЕКЕРЕН (1962)

Х а л ă х ă м а. Сăввăн виççĕмĕш çаври «Лирика» кĕнекере çапларах вуланнă:

Нарспин, Сетнерĕн шĕл кăварĕ
Сан илемне, юратуна,
Сан ирĕклĕ чунна кăтартрĕ
Пурне те, пĕтĕм таврана.

СИ I томĕнче (1968) «юратуна» сăмахне «юратăвна» сăмахпа ылмаштарнă. СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

С а в н ă ç ĕ р, Ч ă в а ш ç ĕ р ш ы в ĕ. «Лирика» кĕнекере сăвă вуникĕ йĕркеллĕ çаврасемпе кун çути курнă пулсан, 1987 çулхи «Янра юрă» кĕнекере (А. Андреевпа А. Павлов хатĕрленĕ) вăл тăватă йĕркеллĕ çаврасемпе юрă сăмахĕсем пек пичетленнĕ. Ăна Г. Лебедевпа А. Асламас композиторсем юрра хывнă.

Ы в ă ç ă т ă п р и. Сăвă «Тăван Атăлăн» 1956 çулхи 4-мĕш номерĕнче «Эп тăтăм унăн тупăкĕ умне» ятпа пичетленнĕ.

Ç ĕ р л е. Сăвă «Тăван Атăлăн» 1956 çулхи 6-мĕш номерĕнче «Нумайранпа пĕлеп çак хулана...» ятпа пичетленнĕ.

А л ь п ă р т К а н а ш а. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ хатĕрленĕ «Петĕр Хусанкай» статья пуххин (1988) хушма страницисенче сăвва Шупашкарта 1956 çулхи çурла уйăхĕнче çырнине палăртнă, «Альберт Канаша» ятпа пичетленнĕ.

Статья пуххин хушма страницинчи сăввăн пĕрремĕш çаври хыççăн нумай пăнчă, виççĕмĕш çаврин 3-мĕш йĕрки хыççăн хӳреллĕ пăнчă вырăнне тире лартнă. Тăваттăмĕш çаврине çапларах улăштарнă:

Кам чунĕ муртăхман, суйман —
Çав çын сана ăнланнă...
Халь ансăр курăклă сукмак
Мăн çул пек такăрланнă.

В а т ă ю р ă ç, т а в с а н а. Сăвă малтанхи хут «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 1958 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче, чăвашсен паллă çынни —

халăхра 700 ытла юрă пухнă Г.Ф. Федоров 80 çул тултарнă кун, çав уяв ячĕпе пичетленнĕ.

Хаçатри сăввăн 29—31 йĕркисем çакăн пек вуланаççĕ:

Çивчĕ халь тăван чĕлхем
Тетĕп эп чунтан-вартан.
Ватă юрăçă, тав сан!

А т ă л х ĕ р р и н ч и ю м а н. Сонетăн 14-мĕш йĕрки «Лирика» кĕнекере «Юман-аттем! Эп — санăн икелӳ» тесе вуланать. СИ I томĕнче «икелӳ» сăмаха «йĕкелӳ» сăмахпа ылмаштарнă.

СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

С а л а м с о н е ч ĕ. Сăвва «Хыпар» хаçата пуçарса янă Н.В. Никольский профессора (1878—1961) халалланă.

Я н А м о с К о м е н с к и й. *Коменский Я.А.* (1592—1670) — чехсен паллă вĕрентӳçи тата общество деятелĕ. *Пур халăхшăн чĕлхе алăкĕ уçнă...* автор кунта Коменский Европăпа Азири нумай чĕлхене куçарнă «Чĕлхесем патне уçнă алăк» кĕнеки çинчен калать.

Х у р а Х у р а к ă ш. Ярăмри сăвăсене «Савни» кĕнекерен (1963) илсе пичетленĕ. Хăçан çырнине палăртман.

## «АСЛĂ ЧĔРЕ» КĔНЕКЕРЕН (1963)

М у х т а в с ă в в и. Сăвă «Тăван Атăл» журналăн 1961 çулхи 5-мĕш номерĕнче «Сана, юратнă партийĕм, мухтатăп!» ятпа тухнă. Хайлавăн виççĕмĕш çаврин 1-мĕш йĕркинчи («Çĕр çул хушши сукмак юнпа йĕрленнĕ...») юлашки сăмахне кĕнекере «хĕрелнĕ» тесе тӳрлетнĕ. *Европа тăрăх ĕмĕлке çӳренĕ...* — Карл Маркспа Фридрих Энгельс çырнă «Коммунистсен партийĕн манифестĕнче» (18480 «Призрак ходит по Европе — призрак коммунизма» тени пур. Поэт ку шухăша сăвă майĕсемпе уçса панă.

А ч а-п ă ч а х ӳ т т и ш ĕ н. Сăвă малтанхи «Çамрăк коммунист» хаçатăн 1958 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче, Ачасене хӳтĕлемелли кун, пичетленнĕ. Унти тĕслĕхре хайлавăн виççĕмĕш çавринчи 1—2 йĕркисем «Ача-пăча — çĕршыв мухтавĕ, Çут тĕнчене вăл кăшăллĕ» тесе вуланнă пулсан, «Аслă чĕре» кĕнекере 2-мĕш йĕркине «Çăлтăрсене вăл кăшăллĕ!» тесе улăштарнă.

П ĕ р т а н т а п а ç ç ĕ ч ĕ р е с е м. Манолис Глезос (1922) — Греци наци геройĕ. 1941 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче Афинăри авалхи Акрополь тăрринче çакăнса тăракан фашизм ялавне илсе персе ун вырăнне Грецинне çакса хунă. Нимĕçсем ăна персе вĕлерме приговор йышăннă.

Т ĕ н ч е м ĕ р, с а в ă н! Сăвă малтанхи хут «Коммунизм ялавĕ» хаçатра 1961 çулхи ака уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Мухтав сана, Гагарин!» ятпа кун çути курнă.

К ĕ р е к е ю р р и. Поэтăн 1949 çулта çырнă «Кĕреке юрри» те пур. Вăл унта Сталиншăн, тăван партишĕн тата çуралнă çĕршывшăн курка

йăтма чĕнет. Халĕ пичетленекен хайлавра та çав кĕввех янăрать. Унăн виçи те çаплипех юлнă. Анчах сăвăçă хайлава çĕнĕ сăнсем кĕртнине кура ăна урăх сăвă теме те пулать. Авторĕ те ку сăвва 1961 çулта çырнă тесе палăртнă.

Э п  п у л т ă м  а с л ă  п у х у р а. Сăвăра Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XXII съезчĕ çинчен сăмах пырать. Çав съездра уйрăм çынна пысăка хунă тапхăра хытă сивленĕ, çĕршывра коммунизм туса хурасси çинчен программа йышăннă.

## «ЧĔРЕМ, МĔН ПУЛЧĔ-ШИ САНА?»

А. А т р е е. *А. Атрей* — А.С. Артемьев (1924—1998), чăваш халăх писателĕ. Петĕр Хусанкай А.С. Артемьева Атрей тесе чĕннĕ. Çыравçă çак ятпа хăш-пĕр чухне псевдоним вырăнне те усă курнă.

А р к а д и й  Г а й д а р  п а т ĕ н ч е. *Арзамас* — Чулхула облаçĕнчи хула. Вырăс ача-пăча çыравçи А.П. Гайдар унта çуралса ӳснĕ.

«Ы л т ă н  х ă й ă р» п л я ж ĕ...» Варна хулинчи паллă пляж çинчен калакан ку сăвă «Савни» кĕнекере пичетленнĕ. «Кĕлчечек çĕршывĕн йăл кулли» ярăмпа пĕр вăхăтрах (1959—1960) çырнă пулин те, ăна «Аслă чĕре» кĕнекери Болгари çинчен калакан ярăма кĕртмен. Ку çав ярăмра «Ылтăн хăйăр» ятлă тепĕр сăвă пичетленнĕрен килнĕ пулас.

«Э п и р  п у л н ă, п у р, п у л а т п ă р!» «Савни» кĕнекере сăввăн малтанхи çаврин 7—8 йĕркисем «Ман айван ăсăмпала — Эпир пулнă, пур, пулатпăр» тесе вуланнă пулсан, каярахпа автор 7-мĕш йĕркине «Манăн шухăшăмпала...» тесе тӳрлетнĕ. Хайлавăн малтанхи тĕслĕхĕн тăваттăмĕш çаврин 3—4 йĕркисем «Упранса вăл çитсе кĕрĕ Хамăрпа коммунизмах» тесе вуланнă. Каярахпа сăвăçă 4-мĕш йĕркине «Коммунизм таранах» тесе улăштарнă. Сăввăн юлашки çаврин 1—4 йĕркисем малтан çакăн пек вуланнă:

Тĕрмере те, вăрçăра та —<br>
Хут çине те чул çине<br>
Çыртăм, халĕ те çыратăп<br>
Халăха ĕненнине.

Каярахпа автор 1-мĕш йĕркине «Лăпкă чух та, вăрçăра та...» тесе улăштарнă. «Эпир пулнă, пур, пулатпăр» кĕнекери (1982) текст тăрăх пичетленет.

Л а й ă х! *Аслă Виççĕмĕш Программа* — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн 1961 çулта пулса иртнĕ XXII съездĕнче йышăннă парти программи çинчен сăмах пырать. Унта пирĕн çĕршыв кĕçех коммунизма çитсе кĕрессине палăртнă.

## КĔЛЧЕЧЕК ÇĔРШЫВĔН ЙĂЛ КУЛЛИ

А в а л х и  х у р ă н т а ш с е м. Бургас, Муркаш, Янтра, Варна — Дунайçи Пăлхар патшалăхĕнчи вырăн, хула ячĕсем.

Г е о р г и  Д и м и т р о в а  п у ç к ă ш ă л ь. *Димитров Г.М.* (1882—1949) — пăлхар тата тĕнче рабочи юхăмĕн деятелĕ. *Хăй çав судăн Судйи вăл пулчĕ Лейпцигре* — Г. Димитрова 1933 çулта Берлинри рейхстага чĕртсе

яма тăнă тесе суйса тĕрмене хупнă. Çав çулах Лейпцигра ăна айăплас тĕллевпе суд пулса иртнĕ. Унта вăл хăюллă сăмах тухса каласа хăйне хӳтĕлесе хăварнă. Ăна ирĕке кăларма тивнĕ. Поэт çав суд çинчен аса илет.

Никола Вапцаров. Вапцаров Н.Й. (1910—1942) — пăлхар сăвăçи тата общество деятелĕ.

Вазов чĕри. Вазов И.М. (1850—1921) — пăлхар çыравçи тата общество деятелĕ.

Поэзи кунĕ. *Хайдук* (гайдук) — кăнтăр славянсен çар çынни. 1877—1878 çулсенчи вырăс-турккă вăрçине вĕсем вырăс çарĕсемпе пĕрле Пăлхар çĕршывне ирĕке кăларассишĕн çапăçнă. *Калофер* — Пăлхар çĕршывĕнчи хула.

Бай Николай. *Дорошенко О.М.* (?—1628) — украин реестр казакĕсен гетманĕ. 1621 çулта турккăсемпе çапăçнă чухне полка ертсе пынă. *Дорошенко П.Д.* (1627—1698) — украин гетманĕ, Б. Хмельницкий çарĕнче полковникре тăнă. *Сагайдачный П.К.* (?—1622) — Украинăн политика тата çар деятелĕ, гетман.

## КАВКАЗ СĂВВИСЕМ

Ку тата «Румынири май», «Пăлхар ярăмĕнчен», «Хушка хумсем», «Инçе вĕçев», «Йыхравçă», «Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ», «Юхма тăрăхĕнче», «Поэзи сиплĕ çилĕ» ярăмсенчи хайлавсене П. Хусанкай хăй 60 çул тултарнă ятпа хатĕрленĕ «Хушка хумсем» кĕнекерен илнĕ.

Кабардин колхозĕнчи уяв. Кешоков А.П. (1914) — кабарда сăвăçи. Шогенцуков А.О. (1916) — кабарда сăвăçи.

Темрюк Марийи. Сăвва «Ялав» журналăн 1967 çулхи 1-мĕш номерĕнче «Мария Темрюковна» ятпа пичетленĕ.

Ту качаки путекĕ. *Соболев Л.С.* (1898—1971) — вырăс çыравçи. *Кязим Д.* (1896—1956) — азербайджан артисчĕ.

Кайсын Кулиев патĕнче. *Кулиев К.Ш.* (1917—1985) — балкар сăвăçи.

Çурçĕр Осетире. *Орджоникидзе Г.К.* (Серго, 1886—1937) — совет, патшалăх тата коммунистсен партийĕн деятелĕ. *Хетагуров К.Л.* (1859—1906) — осетин сăвăçи. *Дорошко П.О.* (1910) — украин сăвăçи. *Абашидзе И.В.* (1909—1992) — Грузи поэчĕ тата академикĕ. *Гамзат Расулĕ* (Гамзатов Р.Г., 1923) — авар сăвăçи.

Альп туйиллĕ çын. *Тихонов Н.С.* (1896—1979) — вырăс çыравçи.

Тамара кеременĕ умĕнче. Тамара (Тамар) — Грузи патши (1184—1207). Ш. Руставели ăна «Витязь в тигровой шкуре» поэмине халалланă.

Çăкăр, чăкăт та эрех. Сăввăн малтанхи çаврин 3, 4 йĕркисем «Хушка хумсем» кĕнекере çакăн пек вуланаççĕ:

Илтĕнет кунта каларĕш:
«Çăкăр, чăкăт та эрех».

Кунта «каларĕш» сăмах вырăнне «каларăш» пулма кирлĕ.

С а в н ă ш ы в-ш у р Х у р а т и н ĕ с... *Палиашвили З.П.* (1871—1933) — Грузи композиторĕ.

М т а ц м и н д а ç и н ч е. *Мтацминда* — Грузири ту ячĕ. *Цинандали* — эрех ячĕ. *Зурна* — Кавказ тата Вăтам Ази халăхĕсен музыка хатĕрĕ.

М и н г р е л ç у л ĕ с е м. *Мингрел* — халăх ячĕ. *Зугдиди* — Грузири хула. *Дадиани княç* — грузи княçĕ.

«М у з е й, т а к а м ă н с ă н-с ă п а ч ĕ...» *МТС* — машинăпа трактор станцийĕ (каярахпа — РТС, ял хуçалăх техники пĕрлешĕвĕ). *Шамхор* — Азербайджанри хула. *Духан* — Кавказри тата Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи пысăках мар хупах (ресторан).

К а ç х и Т б и л и с и р е. *Платон* (пирĕн эрăчченхи 427—348 çç.) — авалхи Греци философĕ. *Чончури* — грузинсемпе аджарсен музыка хатĕрĕ. *Бриджит Бардо* (1934) — Франци киноактриси, «И бог создал женщину...», «Парижанка», «Истина», «Бабетта идет на войну» тата ытти илемлĕ фильмсенче вылянă.

М ă й р а к а. *Табидзе Т.Ю.* (1895—1937) — Грузи сăвăçи.

К а р а в а н ă н ç у л ĕ в ă р ă м. *Ахундов М.Ф.* (1812—1878) — азербайджан çыравçи тата философĕ. *Тавруз* — Иранри хула.

## РУМЫНИРИ МАЙ

«Ялав» журналăн 1967 çулхи 1-мĕш номерĕнче ку ярăма 1956—1963 çулсенче çырнине палăртнă. «Хушка хумсем» кĕнекери ярăм айĕнче «1959—1963» тенĕ.

Ă ш ă с а л а м п а. Сăвă «Ялав» журналăн 1967 çулхи 1-мĕш номерĕнче «Румынири май» ярăмра ум сăмах пек пичетленнĕ. Паллă мар сăлтава пула вăл «Хушка хумсем» кĕнекери ярăма кĕреймен.

У н г е н. *Унген* (Унгены, Унгень) — Молдавири хула.

Л я н а К у к у п а т ĕ н ч е. *«Норок!» — «Тавсси!» тени пулать ку...* — «Норок!» сăмаха «Тав сана!» тесе куçарсан вырăнлăрах.

Т ĕ л п у л у. *Тельман Э.* (1886—1944) — Германири коммунистсен партийĕн ертӳçи, 1924—1933 çулсенчи рейхстаг депутачĕ. Ăна фашистсем Бухенвальд тĕрминче вĕлернĕ.

Н а р ц и с с у ç л а н к и н ч е. *Брашов, Фегераш* — Румынири хуласем.

О в и д и й Н а з о н а. *Констанца* — Румынири хула. *Назон П.О.* (пирĕн эрăчченхи 43 ç. — пирĕн эрăри 18 ç.) — Рим сăвăçи. *Скипетр* — монарх влаçĕн паллине пĕлтерекен хаклă чулсемпе эрешлесе илемлетнĕ туя.

## ПĂЛХАР ЯРĂМĔНЧЕН

Л а м а р а. *Ламар* (псевд.; чăн ячĕ Лальо Маринов) — пăлхар сăвăçи. *Тибр* — Италири юханшыв.

К о п р и в щ и ц а. *Копривщица* (Копривштица) — Пăлхар çĕршывĕнчи хула.

С о з о п о л ь к а ч ч и с е м. *Созополь* (Созопол) — Пăлхар çĕршывĕнчи курорт.

Б л а г а  Д и м и т р о в ă н а. *Блага Димитрова* (псевд.; Димитрова Л.Н. (1918—1944) — пăлхар çамрăкĕсен революци юхăмĕн деятелĕ.

## ХУШКА ХУМСЕМ

«Х у р а к ă ш с е м  к а к а л а с а  и р т е ç ç ĕ...» Райнис (чăн хушамачĕ — Плиекшанс, 1865—1929) — Латви сăвăçи тата драматургĕ.

«Э п  х а м ă р  А т ă л  х ĕ р р и н ч е  в и л е с ш ĕ н» сăвăра:

Кăкăрăмран ман чĕрене кăларăр,
Çуратнă халăха тавăрса парăр.

Ăна вăл Шупашкар сăртне пытарĕ
Е урăхла тирпейлеме пултарĕ, —

тенĕ йĕркесем пур. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, поэт чĕри халĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультечĕн музейĕнче упранать.

«Ш а к к а т ь  ю л т а ш ă н  ч ă в а ш л а  м а ш и н ĕ...» «Ялав» журналăн 1963 çулхи 10-мĕш номĕрĕнче пичетленнĕ «Хушка хумсем» ярăмра ку сăвă «Шаккать Кибекĕн чăвашла машшинĕ...» сăмахсемпе пуçланнă.

«Х у ш к а  х у м... Э п  к у р а п  ă н а  к у ç ă н...» «Ялав» журналта пичетленнĕ тĕслĕхре (1963, 10 №) ку сăвă умĕн çакăн пек эпиграф пулнă: «Пăрунтан-шурунтан, хушка хумунтан хăтарăсăнччĕ...». «Хушка хумсем» кĕнекене ăна кĕртмен.

«К у р а т ă п  к а н т ă к р а н:  К и п е к  п ы р а т ь...» *Мĕтри Кипек* (1913—1991) — СССР Писателĕсен союзĕн членĕ, чăваш çыравçи.

«Я н т а р л ă  Л а т в и! Т е п ĕ р  х у т...» *Судрабкалн Я.* (1894—1975) — Латви сăвăçи.

## ИНÇЕ ВĔÇЕВ

Ку ярăмри сăвăсенчен чылайăшĕ малтан «Тăван Атăл» журналта (1965, 1,2,3 №) кун çути курнă. «Хушка хумсем» кĕнеке валли хатĕрленĕ чухне автор унта сахал мар улшăну кĕртнĕ.

М а л т а н х и  ç а в р ă м. Сăввăн малтанхи варианчĕ «Коммунизм ялавĕнче» 1963 çулхи çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче «Эсĕ — ман çамрăклăх, Куба!» ятпа кун çути курнă. «Хушка хумсем» кĕнекерипе танлаштарсан ку текст чылай уйрăлса тăрать:

Куба! Мĕнле сăмах тупăп
Санăн ятна чыслама?
Эсĕ кĕрен чунăма
Ăшă салам евĕр, Куба!

Куба! Хапху санăн хупă
Пусмăрлăхшăн яланах,
Ирĕклĕхшĕн халь ăна
Яр уçса ятăн эс, Куба!

Куба! Ан кĕтĕрччĕ тупăк.
Вăхăтсăр пĕр кил-çурта!
Пурнăç ан ÿктĕр вута,
Эсĕ — хуралĕ ун, Куба!

Куба! Эп ватăлăп, супăп, —
Сан сухалу асăмра
Юлĕ хура та кăтра.
Эсĕ — ман çамрăклăх, Куба!

«Хушка хумсем» кĕнеке тăрăх пичетленет.

Т а п р а н а т п ă р. Малтанхи хут «Тăван Атăл» журналăн 1965 çулхи 1-мĕш номерĕнче кун çути курнă. Унта хайлавăн юлашки виçĕ çаврине кĕртмен. *Швейк салтак* — чехсен паллă çыравçи Я. Гашек (1883—1923) хайланă «Похождения бравого солдата Швейка» кĕнекери сăнар.

«У н ă н и к м ă ш ă р ç у н а т!» Сăввăн тăваттăмĕш çавринчи 1-мĕш йĕрки «Тăван Атăлра» (1965, 1 №) «Валентина! Эс-и, кинĕм...» тесе вуланнă пулсан, поэт кĕнеке валли ăна «Валентина! Эс-им, кинĕм...» тесе тÿрлетнĕ. Хайлавăн пиллĕкмĕш çавринчи 3—4 йĕркесене («Телеграмма çаптаратăп Мускава çĕн туй килне...») «Телеграмма çаптаратăп мускава, çĕр туй килне...» тесе улăштарнă.

П р а г а — Л о н д о н. Хайлавăн иккĕмĕш çавринчи 3-мĕш йĕрки «Тăван Атăлра» «Просим! — тет чехла стюардесса чеченĕн...» тесе вуланать пулсан, кĕнеке валли ăна «Чĕнет стюардесса чехла пит чеченĕн...» тесе тÿрлетнĕ, саккăрмĕш çавринчи «Родригеспе Мартта» сăмахсене «Родригеспа Мартта» тесе улăштарнă. *Икар* — авалхи грексен мифĕнчи сăнар. Вăл ашшĕпе (Дедалпа) пĕрле тÿпене вĕçсе хăпарнă. *Колумб Х.* (1451—1506) — тинĕс ишевçи. Официаллă пĕлтернĕ тăрăх, 1492 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче унăн экспедицийĕ Америкăри Самана утравне ишсе çитнĕ.

А р и э л ь. Хайлавăн пиллĕкмĕш çавринчи 3, 4 йĕркисем малтан («Тăван Атăл», 1965, 1 №, 43 с.) çакăн пек вуланнă: «Лондон юлчĕ, курăнмасть, Çитменни çине çĕрле». «Хушка хумсем» кĕнеке валли хатĕрленĕ чухне автор вĕсене çапларах улăштарнă: «Лондон юлчĕ, курăнмасть, Çитменне тата — çĕрле». Сăввăн вуннăмĕш çавринчи 4-мĕш йĕрки журналта «Паспортра эп çап-çарах!» тесе вуланнă пулсан, çав кĕнеке валлиех ăна «Паспортра ман пит çарах!» тесе улăшатрнă. *«Дейли Уоркер»* — рабочисен хаçачĕ, Аслă Британире тухса тăрать.

Э т е м ă с н е ш а н а т ă п. *Эй, Джон, кăпăклансамччĕ, Йÿçсем, Урпа Пĕрчи!..* — Шотланд сăвăçин Р. Бернсăн (1759—1796) «Джон Ячменное Зерно» сăвă пур. Ку сăмахсене çав сăвări сăнарсене асра тытса каланă.

О к е а н, о к е а н... Сăввăн вунпĕрмĕш çавринчи 1—2 йĕркесем «Тăван Атăл» журналта «Хĕрĕх çул ытла ман стартăм Хăвалать таçти инçе» тесе пичетленнĕ. Авторĕ кĕнеке валли хатĕрленĕ чухне «таçти» сăмаха «таçта» сăмахпа ылмаштарнă.

*Фидель* (Фидель Кастро Рус, 1926) — Куба Республикин ертÿçи.

В и ç ĕ к а ч ч ă. Сăввăн вуннăмĕш çаври «Тăван Атăл» журналта çакăн пек вуланнă:

Юрлаҫҫӗ туслӑх юррине,
Илтен «Совет» та «Куба».
Юратрӑм халӑх йӑлине.
Каяр: автобус хупӑ.

Кӗнеке валли автор ӑна ҫапларах улӑштарнӑ:

Юрлаҫҫӗ туслӑх юррине:
«Совет» та «Куба» теҫҫӗ.
Юратрӑм халӑх йӑлине.
Автобуса чӗнеҫҫӗ.

И к ӗ  а л л ӑ  и к  п ӳ р н и. Сӑввӑн виҫҫӗмӗш ҫавринчи 3—4 йӗркесем «Тӑван Атӑлта» (1965, 2 №) «Ҫаврӑнма пӑртак кирлех-тӗр, Унсӑр пулмӗ ларакан» тесе пичетленнӗ. «Хушка хумсем» кӗнеке валли юлашки йӗркине «Ҫын ҫинче ҫынах пулсан» тесе тӳрлетнӗ. Кӗнеке валли хатӗрленӗ чухне авторӗ пиллӗкмӗш ҫавран малтанхи йӗркинчи («Этемсем хаҫат вулаҫҫӗ...») «этемсем» сӑмаха — «хӑш-пӗри» сӑмахпа, улттӑмӗш ҫавран 3-мӗш йӗркинчи («Ӑс-тӑнне пӗри, тен, хывӗ...») «пӗри» сӑмаха «тепри» сӑмахпа ылмаштарнӑ, ҫиччӗмӗш ҫарван пӗрремӗш йӗркине («О!» — тет ак такам, ӑнланнӑ...») «О!» — тет кӳршӗм ман, ӑнланнӑ...» тесе тӳрлетнӗ.

И с п а н  ч ӗ л х и  у р о к ӗ. *Анчах вӗсем иртрӗҫ ватса та хӗссе...* — 1931 ҫулхи ака уйӑхӗнче Испанире плебисцит пулса иртнӗ. Вӑл XIII Альфонс короле вырӑнтан кӑларнӑ, ҫӗршывра республика туса хунӑ. Анчах Франко генерал ертсе пынипе 1939 ҫулхи пуш уйӑхӗнче влаҫа фашистсем ярса илнӗ, 1931—1939 ҫулсенчи Испани революцийӗ парӑннӑ.

Н и к о л а й  Г и л ь е н  п а т ӗ н ч е. *Гильен Н.* (1909—1989) — Куба сӑвӑҫи. *Элюар П.* (чӑн ячӗ Эжен Грендель, 1895—1952) — Франци сӑвӑҫи. *Вургун С.* (чӑн ячӗ Самед Юсиф оглы Векилов, 1906—1956) — азербайджан сӑвӑҫи тата общество деятелӗ, академик.

«И н т е р н а ц и о н а л». Сӑввӑн малтанхи ҫаврин виҫҫӗмӗш йӗрки «Тӑван Атӑл» журналта (1965, 2 №) «Гаванӑсен хушшисенче ларатпӑр» тесе пичетленнӗ. Кӗнеке валли ӑна «Гаванӑсемпеле пӗрле ларатпӑр» тесе улӑштарнӑ. Пиллӗкмӗш ҫаврари «Совет посолӗ» сӑмахсене «Совет элчийӗ» тесе тӳрлетнӗ. Улттӑмӗш ҫаврари 2-мӗш йӗркене («Тӑратӑп — негр тытнӑ ман хулран») «Тӑрап — хура хӗр тытрӗ ман хулран» сӑмахсемпе ылмаштарнӑ.

Э р н е с т  Х е м и н г у э й. «Тӑван Атӑлта» пичетленнӗ текстӑн ҫиччӗмӗш ҫаврин 3-мӗш йӗркине («Парижре те, Мадридра та...») кӗнекере «Парижра та, Мадридра та...» тесе тӳрлетнӗ. *Хемингуэй Э.М.* (1899—1961) — Америка ҫыравҫи. *Гвадалахара* — Испанири хула. Ҫав ятлӑ хула Мексикӑра та пур.

С о р о а. *Сороа* — Кубӑри курорт.

Т р о п и к а н а. «Тӑван Атӑлта» пичетленнӗ текстӑн юлашки ҫаврин 3—4 йӗркисем «Шӑп ҫанталӑк. Чӗрӗ куҫӑн ҫӑлтӑрсем пӑхаҫҫӗ» тесе вуланаҫҫӗ. Кӗнеке валли хатӗрленӗ чухне авторӗ «куҫӑн» сӑмаха «чунӑн» тесе тӳрлетнӗ.

К у р а й м а р ӑ м  с а н а, Ф и д е л ь! «Тӑван Атӑл» журналта (1965, 3 №, 70 с.) пичетленнӗ текстра иккӗмӗш ҫавра хыҫҫӑн ҫак йӗркесем тӑраҫҫӗ («Хушка хумсем» кӗнекери варианта вӗсене кӗртмен):

Ăру ашшĕ аннен — Сител,
Астăватчĕ çапла анне.
Эп пĕлместĕп çав ят мĕнне,
Вăл мантармĕ мана санне,
Асра усрăп ятна, Фидель!

Журналти тĕслĕхĕн юлашки çаврин малтанхи йĕркине («Ман чĕрем паян кун — тĕпел...») кĕнеке валли «Ыр хăнашăн чĕрем — тĕпел...» тесе тӳрлетнĕ.

Кайранхи çавра. *Ньюфаундленд* — Çурçĕр Америкăн хĕвелтухăç çыранĕ çумĕнчи утрав.

## ЙЫХРАВÇĂ

Ярăмри сăвăсене «Хушка хумсем» кĕнекери пек вырнаçтарса тухнă.

Ленин. «Хушка хумсем» кĕнекере хайлавăн виççĕмĕш çаврин 2-мĕш йĕркинче «Ялтăр тăвать те хĕвелĕн ури...» «ялтăр» сăмах хыççăн нимĕн те лартман пулсан, СИ I томĕнче кăшкăру палли лартса хунă.

СИ I томĕ тăрăх пичетленет.

Кăçалхи кĕрекерен. *Куккурус та куккурус!..* — кунта И.В. Сталин хыççăн çĕршыв пуçлăхĕнче ларнă Н.С. Хрущев (1884—1971) пур çĕрте те кукуруза актарни çинчен сăмах пырать.

Пирĕн аслă самана. *Революцишĕн ĕçленĕ Çын Калугăра ун чух* — Калугăра çуралса ӳснĕ паллă ăсчах К.Э. Циолковский (1857—1935) çинчен сăмах пырать. ...*Çăлтăр çулĕ уçса пачĕ Çĕр те сакăр минутра* — малтанхи космонавт Ю.А. Гагарин (1934—1968) Çĕр чăмăрĕ тавра 108 минутра вĕçсе çаврăннă.

## ÇĔРШЫВĂМÇĂМ, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Амиç. Сăввăн виççĕмĕш çаври «Хушка хумсем» кĕнекере çакнашкал вуланать:

Çав тенке усрамашкăн...
Вăл хумасть çӳпçине: чикмест
Асăнмалăх çакмашкăн
Парнелет савнине.

«Чикмест» сăмах сăвва ăнсăртран, корректорсен айăпĕпе, кĕрсе кайнă. Хайлавăн «Ялавра» пичетленнĕ тĕслĕхсенче (1966, 4 №, 9 с.) вăл сăмах тĕл пулманни çак шухăша çирĕплетет. Кĕнекене юлашки умĕнхи çак çаврана кĕртмесĕр хăварнă:

Хĕр ташлать! Каччă-тантăш,
Курса юл, — час каять...
Купăсçа вăл унтан кăшт
Йăл кулса пуç таять.

«Ялав» журналти текст тăрăх пичетленет.

Т е л е й л ĕ ç у л. В.Ф. Быковский тата В.В. Терешкова космонавтсем 1963 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕш тата 16-мĕш кунĕсенче «Восток-5» тата «Восток-6» карапсемпе тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарнă. Сăвă çав вĕçев çинчен сăнарлăн каласа парать.

Х у р а  к у р а к с е м. Сăвă «Капкăн» журналăн 1967 çулхи 2-мĕш номерĕнче (4 с.) «Кураксем» ятпа пичетленнĕ. «Хушка хумсем» кĕнекери тĕслĕхе пилĕк çавра анчах пулсассăн — журналтине ултă çавра кĕртнĕ. Юлашки икĕ çаврисĕр пуçне унта ытти улшăну та нумай.

Журналти вариантăн малтанхи тăватă çаври çакнашкал вуланать:

Кураксем кăраклатаççĕ
Ир-ирех ман çывăхра.
Юриех, тен, вăратаççĕ:
Хăйсем тăнă-çке, ара!

Ăшăмра пăртак ятлатăп, —
Тен, эп каç та çывăрман.
Минтерпе куçа хуплатăп...
Çук, «кăракĕ» чарăнман.

Кăшт тăрсан мана вăл акă
Илтĕнет: «Тăрах, тăрах!»
Те ку рифмăçăн амакĕ,
Те куракĕ чăвашрах?

Эп вара йăлт парăнатăп,
Асăмра пĕр юрă ман.
Хам çакман-ха хурана та,
Тĕррине те тытăнман.

«Хушка хумсем» кĕнекери текст тăрăх пичетленет.

## ЮХМА ТĂРĂХĔНЧЕ

Ку сыпăкри сăвăсене поэт Чăваш Республикин Патăрьел тăрăхне кайса килнĕ хыççăн 1965 çулта çырнă. Вĕсем Патăрьелĕнче тухса тăракан «Авангард» хаçатра, «Ялав» журналта, каярахпа «Хушка хумсем» кĕнекере кун çути курнă. «Аслисем» ятлă сăвви вара чылай кайран пичетленнĕ («Тăван Атăл», 2000, 1 №, 5 с.). Ăна поэт ывăлĕ А.П. Хусанкай хатĕрленĕ, хайлав «Юхма тăрăхĕнче» ярăмран пулнине палăртнă. Ум сăмахĕнче çакăн пек çырнă: «Аслисем» сăвă вара хăш-пĕр сăмахсене улăштарсан («облаç» вырăнне «республика», «централизм» — «федерализм», «коммунист» — «демократ») паянхи тӳре-шара сăн-сăпатне те тĕрĕс кăтартать пек».

## ПОЭЗИ СИПЛĔ ÇИЛĔ

Я н  С у д р а б к а л н а. *Гомер* — авалхи грек сăвăçи. *Цюй Юань* (пирĕн эрăчченхи 340—278 çç. патнелле) — Китай сăвăçи.

В ă т ă р  п и л ĕ к  ç у л т а н. Сăвă малтан «Тăван Атăл» журналăн 1961 çулхи 4-мĕш номерĕнче тăватшар йĕркеллĕ çаврасемпе пичетленнĕ, «Хушка хумсем» кĕнекере ăна çаврасене уйăрман. *Монте-Карла* (Монте-

Карло) — Вăтаçĕр тинĕсĕ хĕрринчи хула (Монако патшалăхĕнче вырнаçнă).

Н а з ă м   Х и к м е т е. Назым Х.Р. (1902—1963) — туркка çыравçи тата общество деятелĕ. 1951 çултанпа Совет Союзĕнче пурăннă.

П о э т   с у р а н ĕ с е м. *Эп пуç таймашкăн килтĕм Мухтавлă Кобзаре...* — украин халăх поэчĕ Т.Г. Шевченко (1814—1861) çинчен сăмах пырать. *Хăй Чайкине ав Сокол чĕре сĕнет парне...* — В.В. Терешковăпа А.Г. Николаев космонавтсем тĕнче уçлăхне Чайка тата Сокол ятсемпе вĕçнĕ. *Беркут, Ястреб* — П.Р. Поповичпа В.Ф. Быковский космонавтсен тĕнче уçлăхĕнчи ытарлă ячĕсем.

М а к с и м   Р ы л ь с к и е. *Рыльский М.Ф.* (1895— 1964) — украин поэчĕ, академик.

С а в ă ш   к у р к и. Сăвă Р. Гамзатовăн чăвашла тухнă «Лирика» кĕнекинче (1965) ум сăмах вырăнне пичетленнĕ.

П а в л о   Т ы ч и н ă н а. *Тычина П.Г.* (1891—1967) — украин сăвăçи, академик.

М у с а   Д ж а л и л е. *Джалиль М.М.* (1906—1944) — тутар поэчĕ. Фашистсем ăна тыткăна илсе тĕрмене тытса хупнă. Вăл унта «Моабит тетрачĕ» ятлă кĕнеке çырать. 1956 çулта поэта Совет Союзăн Геройĕ ятне панă.

Т у к а й   х у р ă н ĕ. *Тукай Г.М.* (1886—1913) — тутар сăвăçи.

## ВĂХĂТ ТУЙĂМĔ

«Çырнисен пуххи» 2-мĕш томне хатĕрлекенсем ку ярăма поэтăн тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленнĕ сăввисене кĕртнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ тĕрлĕ сăлтава пула халиччен сăвăç кĕнекисене кĕмесĕрех юлнă. Малтанхи ултă сăввин алçырăвĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука архивĕнче упранать. Пиллĕкĕшне поэт 1945 çулта хатĕрленĕ вуникĕ сăвăллă «Юрату çыранĕ» ярăма (ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 11517 упр. шучĕ, 8489 инв. №) кĕртнĕ пулнă. Вĕсенчен çиччĕшĕ каярахпа «Кĕвĕленмен юрăсем» ярăмпа пичетленсе тухнă.

К у н т а   п у р ă н а ç ç ĕ   п о э т с е м. *Хаям О.* (Хайям, 1048 ç. патнелле—1122 ç. хыççăн) — перс тата таджик сăвăçи, математик, философ.

М а р г а р и т а   ю р р и. *Пракситель* (пирĕн эрăчченхи 390 ç. патнелле—330 ç. патнелле) — авалхи грексен скульпторĕ.

«P o u r q o u i? — т е с е   ы й т а т ь   п ĕ р и...» Ку сăвва поэт мăшăрĕн В.К. Кузьминан «Ялав» журналăн 2000 çулхи 5-мĕш номерĕнче (65 с.) пичетленнĕ «Мускав бульварĕ. Асаилӳ кĕнекинчи пĕр сыпăк» статйине кĕртнĕ. Хайлав мĕнлерех çурални çинчен асаилӳ авторĕ çакăн пек çырать: «Çапла пĕррехинче эпир бульвар тăрăх утса çӳренĕ чух иккĕн сăвă çырма шутларăмăр. Шӳтлесе ĕнтĕ, паллах. Икĕ йĕркине вăл çырать, тепĕр икĕ йĕркине эпĕ. Акă мĕн пулса тухнă икĕ туйăм вылявĕнчен...»

А с л ă   ç у л п а. Сăвă «Чĕре юрри» кĕнекере тата СИ I томĕнче пичетленнĕ. Иккĕмĕш хут кун çути кăтартнă чухне автор виççĕмĕш çавра хыççăнхи çак йĕркесене кĕртмесĕр хăварнă.

Ачаран чăваша курса ӳснĕ  
Аслă Ленин асра чи малтан.

Ачаран йывăр тансăрлăх тӳснĕ
Аслă Сталин паян санпалан.

Çулпуçсем, пуринпе тан туса,
Кĕреке варринех сана лартрĕç.
Пуянсем сана, юттăн курса,
Ĕмĕрсен тăршшĕне мăшкăллатчĕç.

Çĕлĕкне хул айне хĕстерсе,
Тĕпеле иртеймесĕр тăраттăн.
Тӳсейми çиллӳпе кĕвĕлсе,
Час-часах пăтăрмах тапрататтăн.

Сăвва СИ I томĕ валли хатĕрленĕ чухне чи вĕçĕнче тăракан çак йĕркесене те кăларса пăрахнă:

Сывă пултăр та уттăр хастарлăн
Ирĕк халăхăм аслă çулпа!
Сывă пултăр çулпуçăмăр Сталин —
Пирĕн шанчăк, телей те тупа!

Пĕрремĕш тĕслĕхри çак çаврана:

Ик çулпуçĕ тыттарнă декрет
Пулчĕ сыхлăх та чĕрĕлĕх хучĕ.
Ылттăнпа çырăнса, ĕмĕрех
Вăл чăваш кун-çулне кĕрсе юлчĕ, —

автор каярахпа çакăн пек улăштарнă:

Аслă Ленин тыттарнă декрет
Пулчĕ сыхлăх та чĕрĕлĕх хучĕ.
Вăл чăваш кун-çулне ĕмĕрех,
Ылтăнпа çырăнса кĕрсе юлчĕ.

СИ I томĕнчи текст тăрăх пичетленет.

С а л а м, М у с к а в! Сăвă малтан «Чĕре юрри» кĕнекере кун çути курнă. Каярахпа авторĕ ăна чылай юсанă. Тӳрлетнĕ текст тăрăх Ф. Лукин композитор юрă хывнă. Сăввăн малтанхи варианчĕ çакăн пек вуланать:

Каçсерен вуник сехет çапать,
Çĕнĕрен вăл çĕнĕ кун çывхарать.
Пур çĕршыв та аслă Мускавпа
Тĕрĕслет васкавлă вăхăта.

Мускав! Мускав — тĕнчере пĕр хула!
Таçтан-таçтан эс çĕклен кăмăла.
Мускав! Мускав! Яланах санпала
Васкать çĕршыв малалла, малалла...

Сан сассу хăватлăн янăрать,
Ĕç тĕнчи итлет ăна савса.
Каçсерен пире вăл туйтарать
Кунсерен эпир вăйланасса.

Кăнтăрла та, каç та çап-çутах
Мускавра çунаççĕ çăлтăрсем.
Мускава хавассăн, пур чунтан
Саламлаççĕ ирĕк чăвашсем.

Мускавра çĕршыв ĕçне тăвать
Чи юратнă çыннăмăр — çулпуç.
Тавтапуç пĕртен-пĕр Мускава,
Аслă Сталин, ĕмĕр тавтапуç!

Мускав! Мускав — тĕнчере пĕр хула!
Таçтан, таçтан эс çĕклен кăмăла.
Мускав, Мускав! Яланах санпала
Васкать çĕршыв малалла, малалла.

А. Андреевпа А. Павлов пухса хатĕрленĕ «Янра, юрă» кĕнекери (Шупашкар, 1987) текст тăрăх пичетленет.

Л а в р а у м ĕ н ч и ш у х ă ш с е м. *Ватутин Н.Ф.* (1901—1944) — арми генералĕ, Совет Союзĕн Геройĕ. Шупашкарта ун ячĕпе хисепленекен урам пур.

Ю р р ă м ă р С т а л и н а. «Ялав» журналăн 1952 çулхи 4-мĕш номерĕнче юрă сăмахĕ пек пичетленнĕ, ноти те пур. Кĕввине хываканĕ — Г. Лебедев композитор.

Ç а м р ă к с е м п е «Ç а м р ă к б о л ь ш е в и к а». *«Çамрăк большевик»* — Чăваш Республикинчи çамрăксен пĕрлĕхĕ кăларнă хаçат (1925—1994). Тĕрлĕ çулсенче «Çамрăк хресчен», «Çамрăк колхозник», «Çамрăк коммунист», «Молодой коммунист», «Молодежка» ятсемпе тухса тăнă.

Ю р л а р! *Çак уйăхра сан поэту çуралнă — Сана «Нарспи» хăварнă поэту...* — Чăвашсем автономи илнĕ çĕртме уйăхне халалланă çак сăвăра капла калани тĕрĕсех мар, мĕншĕн тесен «Нарспи» авторĕ К.В. Иванов çĕртме уйăхĕнче мар, çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче (1890) çуралнă. Ку йăнăш çул шутлавĕн кивĕ тата çĕнĕ стилĕсене пăтраштарнинчен килнĕ.

Т ă в а н с а с ă с е м к ă м ă л н е. П. Хусанкай 1954 çулта Шупашкарта тĕнчери паллă поэтсен сăввисене чăвашла куçарса «Тăван сасăсем» ятлă кĕнеке кăларнă. Ку сăвва çав кăларăм ум сăмахĕ вырăнне çырнă.

К а ç а р м а с т п ă р. Театр сезонĕ уçăлнă ятпа «Коммунизм ялавĕ» хаçатра (24.10.1954) кун çути курнă. Çав текст тăрăх пичетленет.

«К ĕ р к у н н е у т а т ь. У т т а р т ă р...» Сăвă «Çамрăк коммунист» хаçатăн 1955 çулхи чӳк уйăхĕн 6-мĕш номерĕнче Октябрь уявне халалланă ӳкерчĕк айĕнче пичетленнĕ.

Ç у т а т т ă р х а л ă х а ç у т т у. 1957 çулхи нарăсăн 17-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатăн вунă пинмĕш номерĕ тухнă. Çав ятпа унта П. Хусанкайăн «Çутаттăр çутту!» сăвви пичетленнĕ.

Сăввăн алçырăвĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука архивĕнче упранать. Çав текст тăрăх пичетленет.

Х а м ç у р а л н ă Т у т а р с т а н! *Файзи (Файзуллин) А.С.* (1903—1958) — тутар çыравçи. *Туфан Х.Ф.* (1900—1981) — тутар сăвăçи. *Заки Нури* (чăн ячĕ — Заки Шарафутдинович Нуретдинов, 1921) — тутар сăвăçи.

К и л ч ĕ ы р ă ç у р к у н н е. Сăвă ярăмне «Ялав» журналăн 1958 çулхи 5-мĕш номерĕнчен илнĕ.

Ç ӳ л т е н ç ӳ л е, м а л т а н м а л а! Ку тата «Туслăх пĕлĕчĕ айĕнче», «Мушайра» сăвăсем «Ялавăн» 1958 çулхи 17-мĕш номерĕнче «Кăçалхи сăвăсенчен» ярăмпа кун çути курнă. «Мушайра» сăвви кайран «Аслă чĕре» кĕнекере пичетленнĕ, иккĕшне унта кĕртмен.

М у ш а й р а. *Зульфия Исраилова* (псевд. Зульфия, 1915) — узбек сăвăçи. *Турсун-Заде М.* (1911—1977) — таджик сăвăçи, академик. *Софронов А.В.* (1911—1990) — вырăс çыравçи, чылай çул «Огонек» журналăн тĕп редакторĕ пулнă. *Тагор Р.* (1861—1941) — Инди çыравçи тата общество деятелĕ. *Капутикян С.Б.* (1919) — эрмен çăвăçи.

Ç е ç п ĕ л  М и ш ш и н е. «Коммунизм ялавĕ» 1959 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче пичетленнĕ. Ăна Çеçпĕл Мишшин 60 çулне халалланă.

В. И. К р а с н о в-А с л и н е. Поэт ку сăвва «Семья Аптрамана» кĕнекин (1959) титул хучĕ çине çырса В.И. Краснов-Аслине (1900—1978) парнеленĕ.

П. Н. О с и п о в а. Поэт ку сăвва В. Шекспирăн хăй чăвашла куçарнă «Ромеопа Джульетта» кĕнеке (1959) хуплашки çине çырса П.Н. Осипов писателе (1900—1987) парнеленĕ.

П у х у р а  ç а п л а  т ă в а с ч ĕ. Чăваш писателĕсен черетлĕ съезчĕ умĕн «Ялавăн» 1962 çулхи 5-мĕш номерĕнче паллă çыравçăсем хăйсен ĕмĕчĕсемпе паллаштарнă. Ку сăвă — çав ярăмри хайлавсенчен пĕри.

Ç ă л т ă р л ă  ç у л п а. «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 1968 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчи номерĕнче кун çути курнă текст тăрăх пичетленет.

С а л а м  «В о с х о д а». *«Восход»* — космос карапĕ. Унта В.М. Комаров, К.П. Феоктистов тата Б.Б. Егоров космонавтсем 1964 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарнă.

«К а п к ă н ă м ă р а». Сăвва «Капкăн» журнал тухма пуçланăранпа хĕрĕх çул çитнĕ ятпа çырнă.

«Ç а м р ă к с е н  х а ç а ч ĕ...» Ку сăвă мĕнлерех çурални çинчен В.И. Чекушкин философ «С верой в будущее» статийинче («Молодой коммунист», 1975 ç., раштавăн 25-мĕшĕ) çапла çырать: «Вот уже десять лет я бережно храню листок из блокнота замечательного поэта нашего народа Педера Хузангая. В дни празднования 40-летия газеты «Молодой коммунист» народный поэт Чувашии П. Хузангай по приглашению райкома ВЛКСМ находился в Батыреве. Он встречался с молодежью, читал свои стихи, рассказывал о достижениях чувашской поэзии, говорил он и о том, что тесно сотрудничал с газетой «Молодой коммунист». Вечером поэт написал стихотворение, посвященное 40-летию газеты, и просил, чтобы я прочитал его на юбилейном вечере. К сожалению, тогда я не сумел выполнить поручения народного поэта. Это стихотворение проникнуто верой в будущее, там даже есть строки о 50-летии газеты «Молодой коммунист». Хаçатри текст тăрăх пичетленет.

Э п — ч ă в а ш  а ч и. Сăвă «Пионер сасси» çĕнĕрен тухма пуçланă ятпа хаçатăн 1966 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленнĕ.

«Э п — П е т ĕ р  Х у с а н к а й. Ч ă в а ш...» Малтанхи хут «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 1989 çулхи нарăс уйăхĕн 2-мĕшĕнче кун çути курнă. Пичете ăна поэт ывăлĕ А.П. Хусанкай хатĕрленĕ.

К и п а р и с. Сăвă ЧПГĂИĕн ăслăлăх архивĕнче упранакан алçырăвĕ тăрăх пичетленет (V уйр., 382 упр. ш., 11 л.).

Ы р ă  х ы п а р. «Коммунизм ялавĕн» 1967 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчи номерĕнче «Пĕлӳ хĕвелĕ» ятпа пичетленнĕ.

Ç у р к у н н е. Т. Фандеев ку сăвăпа юрă та хывнă. Композиторăн «Çуркунне» кĕнекинчи текст тăрăх пичетленет.

Э л к е р е. Сăвва 1968 çулта çырнă. Малтанхи хут «Ялавăн» 1974 çулхи 5-мĕш номерĕнче кун çути курнă. Пичете ăна Геннадий Волков профессор хатĕрленĕ. Вăхăтне кура хайлавăн 7—12 çаврисене кĕртмесĕр хăварнă, пиллĕкмĕш çаврин 1-мĕш йĕркине («Эс канăçсăрччĕ. Кансĕрлеттĕн») «Эс канăçсăрччĕ. Шав ĕçлеттĕн» тесе тӳрлетнĕ. «Мехел» кĕнекере те (1987), «Коммунизм ялавĕн» 1988 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнчи номерĕнче те сăвă кĕскелӳпе тухнă. Асăннă хаçатăн 1988 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче кăна туллин пичетленме пултарнă. Ум сăмахне А.П. Хусанкай профессор çырнă. «Коммунизм ялавĕнчи» текст тăрăх пичетленет.

А к ç а п л а! *Çĕр çинчен полковник вĕçрĕ...* — Г.Т. Береговой «Союз-2» караппа тĕнче уçлăхне вĕçни çинчен сăмах пырать. *Куртăм эп пĕр боксера...* — Олимпиада чемпионĕ В. Соколов чăваш çинчен сăмах пырать.

Г. Н. В о л к о в а: х а м ă р ă н г е н и л л ĕ К е н и е... Чăваш наука тĕпчев институчĕ 1988 çулта пухса кăларнă «Петĕр Хусанкай» кĕнекере «Г.Н. Волкова» ятпа тухнă (92—93 с.). Ун хыççăнхи кăларăмра («Хыпар», 1997 çулхи юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ) хайлавăн çиччĕмĕш çаврин 2-мĕш йĕркине («Халăх ирĕклĕхĕшĕн») «Халăх чĕрĕлĕхĕшĕн» тесе тӳрлетнĕ. Хаçатри текст тăрăх пичетленет.

Э п и р — ч ă в а ш ç ы р а в ç и с е м. 1969 çулхи чӳк уйăхĕнче Шупашкарта çамрăк çыравçăсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Çав ĕçлĕ тĕлпулура П. Хусанкай çамрăк чăваш поэчĕсене чĕнсе хĕрӳ сăмах каланă. Сăмах вĕçĕнче çак сăвва вуланă. «Хыпар» хаçатăн П. Хусанкайăн 90 çулне халалланă номĕрĕнче (1997 çул, кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕ) хайлавăн улттăмĕш çаврине кăларса пăрахнă. Сăвă айне хăçан тата ăçта çырнине палăртса «21.III. 69 Шупашкар—Патăрьел» тесе çырса хунă. Аяларах:

> Малтан аçу-аннӳ çулне çит,
> Унтан хăвăнне ху пĕл,
> Элкер калашле...—

тесе ăс вĕрентни пур. Сăвăçăн «Пин-пин чĕре» статья пуххинче (1977) сăвва 1969 çулхи ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче çырнине палăртнă. Сăвă çав кĕнекери текст тăрăх пичетленет.

М ă ш ă р й ă м р а. *Турат Ваççи* (В.А. Сучков) — чăваш сăвăçĕ, Чăваш Республикин Тăвай тăрăхĕнчи Кармал ялĕнче çуралса ӳснĕ.

А р м с т р о н г, и л т м а н а. Армстронг Н. (1930) — Америка астронавчĕ, Уйăх çине ура ярса пуснă пĕрремĕш çын (21.07.1969).

П у ç л а м ă ш ç а в р а. 1969 çулхи авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче Болгарие фашистсенчен ирĕке кăларнăранпа 25 çул тултарнă. Çав ятпа «Коммунизм ялавĕн» августăн 17, 19-мĕшĕсенчи номерĕсенче пăлхарсен çирĕм пилĕк сăвăçин хайлавĕсем кун çути курнă. Вĕсене чăвашла П. Хусанкай куçарнă. Ку сăвă çав ярăм умĕн пичетленнĕ.

«А й-х а й и р т е п у л а т ь, к а ç т а п у л а т ь...» Ку тата «Хуткупăсăн сасси ян ярать...», «Вĕçен кайăк пулса вĕçесчĕ ман...», «Кунсем кĕскелеççĕ», «Çурла уйăхне...», «Кун пек эпĕ вăрманта...»

хайлавсем малтанхи хут «Коммунизм ялавĕ» хаҫатра кун ҫути курнă (22.01.1972). Пичете А.П. Хусанкайпа А.А. Алексеев тĕпчевҫĕсем хатĕрленĕ.

«Т ă м ӳ к е п у ҫ л а р ĕ, т ă м...» Ку тата «Ҫулҫă тăкăнать...», «Такам тăпри ҫинчи чул палăка», «Тăман, тăман... Тăван Пăлхарăм...» сăвăсем «Коммунизм ялавĕ» хаҫатра кун ҫути курнă (1971 ҫул, кăрлач уйăхĕн 22-мĕшĕ). Ум сăмахĕнче ҫакăн пек ҫырнă: «Чăваш халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай ҫуралнăранпа 64 ҫул ҫитрĕ. Паян вулакансене П. Хусанкайăн халиччен пичетленмен сăввисене сĕнетпĕр. Вĕсене поэтăн юлашки блокнотĕнчен илнĕ, пичете унăн арăмĕ Вера Кузьмина тата филологи наукисен кандидачĕ Владимир Абашев хатĕрлесе панă».

«Т ĕ р л ĕ р е н е х ă с-х а к ă л к у р т ă м...» Ку тата «Хăвартăм хĕрĕхе, алла...» сăвă Чăваш писателĕсен съезчĕ умĕн «Коммунизм ялавĕ» хаҫатăн литература страницинче (1971 ҫул, ҫу уйăхĕн 13-мĕшĕ) «Юлашки сăвăсенчен» пĕтĕмĕшле ятпа ум сăмахсăр пичетленнĕ.

С е м е н И с л ю к о в а. Хăйĕн СИ I томĕн хуплашки ҫине ҫырса ку сăвва поэт ун чухнехи КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарьне С.М. Ислюкова парнеленĕ.

[Ю л а ш к и й ĕ р к е с е м] *Верук* — Кузьмина В.К., поэт мăшăрĕ.

## КĔСКЕ СĂВĂСЕМ

Ку сыпăкри сăвăсене тĕрлĕ ҫăлкуҫран: поэтăн СИ I томĕнчен тата «Капкăнпа» (1958) «Тăван Атăл» (2000) журналсенчен — илсе пичетленĕ.

А п т р а м а н т а в р а ш п а р а к а н к а н а ш. Сăвă «Капкăн» журналăн 1958 ҫулхи 11-мĕш номерĕнче кун ҫути курнă. Кам ҫырнине палăртман. Журналăн 15-мĕш номерĕнче ҫав ятлă кĕске сăвăсемех пичетленнине, вĕсем айне П. Хусанкай алă пуснине тата Аптраман тавраш халăх поэчĕ калăпланă сăнар пулнине шута илсессĕн ку йĕркесене те П. Хусанкаях ҫырнă теме май пур.

«Капкăн» журналти текст тăрăх пичетленет.

П ĕ р д р а м а т у р г а. Ку тата «Ăнсăртран илнĕ виҫĕ калаҫу», «Ҫил хӳри», «Гени пӳрни», «Нарспиҫĕсенчен пĕрне» сăвăсем «Капкăн» журналăн 1958 ҫулхи 16-мĕш номерĕнче «Эпиграммăсем» пĕтĕмĕшле ятпа кун ҫути курнă. Ячĕ айне ҫакăн пек ҫырса хунă:

Ячĕсене халех лартмастпăр:
Ху тупăн, вулакан, шанатпăр.

# ТУПМАЛЛИ

## МАНĂН ÇĂЛТĂР ТӲПЕРЕ!


Асилӳ ... 3
Çуркунне туйăнмасть-и сире? ... 4
Манăн çăлтăр тӳпере! ... 5
Тавтапуç ... —
Тавсси кĕрхи кĕрекене! ... 6
Суйлавра ... 7
1946 çулхи Мускавра ... 8
Çĕнтерӳ ... 12
Шинель ... 15


## КĔВĔЛЕНМЕН ЮРĂСЕМ


«Шупашкара çитсе пыруçăн...» ... 17
«Чечек çуратчĕ çуркунне...» ... —
«Мĕскер ,мĕскер эс ман куçран...» ... 18
«Ах, эп курсаттăм мăшăр куç...» ... —
«Атăлтан тухать çур уйăх...» ... 19
«Курсам, мĕнле илемлĕ Атăл!..» ... —
«Шупашкар çăкисем çеçкере...» ... 20
«Чĕкеçсем çӳлте вĕçеççĕ...» ... —
«Пăлтăра шăналăк карнă...» ... 21
«Шур-шурă Шупашкар...» ... 22
«Шупашкарта пур пĕр йăмра...» ... —
«Кăтралана пуçларĕ Атăл...» ... 23


## ЛАТВИРЕ ÇЫРНИСЕМ


1. Тахçанхи тăван ... 24
2. Пулăçăсем ... —
3. Тунсăх ... 25
4. Пакшасем ... —
5. Мĕнле-ши? ... 26
6. Ĕмĕт ... —
7. Сарă сăвă ... 27

8. Хуракăшсем ........................................................................ —
9. Лăплану ........................................................................ 28
10. Шăнкăрчăсем ........................................................................ —
11. Рак хуранĕ ........................................................................ 30
12. Турпас ........................................................................ —

**СИКТĔРМЕ**

Ялăма ........................................................................ 32
Несĕл ........................................................................ 33
Ятсем ........................................................................ 34
Сиктĕрме ........................................................................ 35
Питтăпай çеремĕ ........................................................................ 37
Ĕнчĕ ........................................................................ 40
Кун йĕрки ........................................................................ 41
Чĕпсем ........................................................................ 42
Пултăрахчĕ телее ........................................................................ —
«Тики-тики» ........................................................................ 43
Çуллахи каç ........................................................................ —
Сăпка юрри ........................................................................ 45
Тăвата хурăн ........................................................................ 46
Вĕрентекен ........................................................................ —
Ăмăртăва ........................................................................ 49
Хĕллехи ир ........................................................................ 51
Кушак ........................................................................ 52
Сăлпăран ........................................................................ —
Тĕтĕм ........................................................................ 54
Ар ташши ........................................................................ 55
Мунча çемми ........................................................................ —
Вак хĕрринче ........................................................................ 56
Ĕмĕрхи ........................................................................ —
Хĕр ........................................................................ 57
Хĕр юрри ........................................................................ —
Вăтăр пĕрремĕш çуркунне ........................................................................ 58
Сывă тăр, хĕвел! ........................................................................ 61
Лашасем ........................................................................ —
Сывпуллашу ........................................................................ 63

**«ЧĔРЕ ЮРРИ»** кĕнекерен (1952)

И.В. Сталина ........................................................................ 64
Халăхсен Ашшĕне ........................................................................ 65
Çамрăксен маршĕ ........................................................................ 66
Студентсен ăсату юрри ........................................................................ —
Пурлăх юрри ........................................................................ 67
Мухтав юрри ........................................................................ 68
Тăван çĕршыв (Лебедев-Кумач кĕввипе) ........................................................................ 69
Кĕреке юрри ........................................................................ 70

Эпир Российйăра пурнатпăр .................... 71
Эп — Советлă Союз гражданинĕ .................... —
Миршĕн! .................... 72
Пултăр мир! .................... 73
Мир юрри .................... 74
Тинĕсрен тинĕсе .................... 75
Репродуктор умĕнче .................... 77
Урама тухар хаваслăн .................... —
Чарар! .................... 79
Çак кунсенче .................... 82
А.А. Жданова асăнса .................... 84
Никос Белояннииспа ун тусĕсем çинчен .................... 85
Колонлă залра аса илни .................... 86
Николай Тихонов .................... 87
Сулейман Стальский .................... 88
Поль Робсон .................... —
Джамбул .................... 89
Константин Иванова .................... —
Пирĕн Çеçпĕл Мишши .................... 91
О.И. Ырсеме .................... 92
Художнике .................... 93
Скульптора .................... 95
Бакен .................... —
Хĕвел ури .................... 96
Тăван уй-хир .................... —
Халăх чунĕ .................... 97
Салам .................... —
Атăл куçĕ .................... 98

### **«КУН-ÇУЛ ТӲПИНЧЕН»** кĕнекерен (1958)

Çурри .................... 99
Тав курки .................... 101
Эпĕ — халăх .................... 102
Ленин .................... 103
Ноябрĕн 7-мĕшĕ .................... 104
Ырă кăмăллă тус, сасă пар, алă пус! .................... 105
Çĕр юлташĕ çаврăнать .................... 107
Ленин çулĕпе .................... 108
Пултару .................... 110
Тутарстана салам! .................... 111
Нарспи юрăçине .................... 113
Çĕртме .................... 114
Кун-çул тӳпинчен .................... 115
Тăван Шупашкар .................... 116
Испан çынни юрлать .................... 117
Н.Я. Бичурина (Иакинфа) .................... —
Çурхи .................... 118

Юррăм Украинăна ........ 119
Çамрăксем, малалла, çӳлелле! ........ 120
Çамрăксен юрри ........ 121
Пуш уйăхĕн вĕçĕнче ........ —
Тезаврус лингве чувашорум ........ 123
Поэзи пулсан... ........ —
Халăх сăвăçин уявне ........ 124
Суйлавçăсем умĕнче ........ 126
«Тусăмсем! Хисеплĕ ватă...» ........ 127
«Çĕрĕм-шывăмсăр мĕн пулăп?..» ........ 128

**«ЛИРИКА»** кĕнекерен (1962)

Халăхăма ........ 131
Аппа ........ 132
Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ ........ 133
Вырăс халăхне ........ 134
Ывăç тăпри ........ 135
Митта Ваçлейне асăнса ........ 136
Çĕрле ........ 138
Альпăрт Канаша ........ 139
Ватă юрăç, тав сана! ........ 140
Тав юрри ........ 141
Атăл хĕрринчи юман ........ 142
Хавхалану ........ 143
Çул юппинче ........ —
Салам сонечĕ ........ 144
Ян Амос Коменский ........ —
Хура Хуракăш ........ 145

**«АСЛĂ ЧĔРЕ»** кĕнекерен (1963)

Мухтав сăвви ........ 150
Аврора ........ 151
Ача-пăча хӳттишĕн ........ 152
Пĕр тан тапаççĕ чĕресем ........ —
Пĕр шиксĕр пурăнăç тăвар! ........ 153
Тĕнчемĕр, савăн! ........ 154
Кĕреке юрри ........ 155
Эп пултăм аслă пухура ........ —
Разлив аса килет ........ 158

**ЧĔРЕМ, МĔН ПУЛЧĔ-ШИ САНА?**

Кӳлешӳ ........ 159
А. Атрее ........ —
Аркадий Гайдар патĕнче ........ 160
«Ман çук юратнă вăхăтăм...» ........ —

Танго .......... 161
Элекçе .......... 162
«Çаплах усратăп ăшăмра...» .......... 163
«Çумăр хыççăн мăк çемçе...» .......... —
«Шакка, шакка, улатакка!..» .......... 164
«Тамаланă хырлăх шăп...» .......... —
«Сар çурта пек сарă кӳкерчен...» .......... 165
«Çаврака уçланкăра...» .......... —
«Ылтăн хăйăр» пляжĕ...» .......... 166
«Чĕрем, мĕн пулчĕ-ши сана?..» .......... —
Çĕршыв мухтавĕ .......... 167
«Шухăша кайса ларать...» .......... —
Эпир пулнă, пур, пулатпăр! .......... —
Лайăх! .......... 169

## КĔЛЧЕЧЕК ÇĔРШЫВĔН ЙĂЛ КУЛЛИ

Авалхи хурăнташсем .......... 171
Георги Димитрова пуçкăшăль .......... 172
Никола Вапцаров .......... 173
Вазов чĕри .......... 175
«Большевик» утрав .......... —
Поэзи кунĕ .......... 176
Калофер — Муркаш .......... 177
Вĕç, вĕç, куккук! .......... 178
Траки тӳремĕн пĕр сăнĕ .......... 179
Пăлхарла пуç суллавĕ .......... 180
«Лиляна» .......... —
Пловдив .......... 181
Нарспи пăлхар килне кĕрет .......... 182
Бай Николай .......... 183
Кĕнекере .......... 185
«Ылтăн хăйăр» .......... 186
Варна юрри .......... 187
Ман хăрахăм .......... —
Ĕнчĕ .......... 188
Сывă пул, Болгари! .......... —

## КАВКАЗ СĂВВИСЕМ

Ман килес... .......... 190
Кабардин колхозĕнчи уяв .......... 191
Темрюк Марйи .......... 193
Ту качаки путекĕ .......... —
Кайсын Кулиев патĕнче .......... 195
Çурçĕр Осетире .......... 196
Фатимă .......... 200
Казбек .......... 201

Альп туйиллĕ çын ........ 202
Тамара керменĕ умĕнче ........ 203
Пасанаурири упа çури ........ 204
Пулкалать çак пурнăçра... ........ 206
Çăкăр, чăкăт та эрех ........ 207
Савнă шыв-шур Хура тинĕс ........ 208
Мтацминда çинче ........ —
Мингрел çулĕсем ........ 209
«Музей, такамăн сăн-сăпачĕ...» ........ 210
«Чĕлхене эп тунсăхларăм...» ........ —
Пĕлтĕм эп: эсĕ çук тĕнчере... ........ 211
Каçхи Тбилисире ........ 212
Мăйрака ........ 213
Грузие ........ 215
Караванăн çулĕ вăрăм ........ 216

**РУМЫНИРИ МАЙ**

Ăшă салампа ........ 219
Унген ........ —
«Амбасадор» ........ 220
Пелĕш ........ 221
Пелешор ........ 222
Най ........ 223
Лянă Куку патĕнче ........ 224
Тĕлпулу ........ 225
Нарцисс уçланкинче ........ 226
Чăваш хĕрĕ Тамара ........ 228
Таминă ........ —
Овидий Назона ........ 230
Даниэла-Ванда ........ 232
Даниэла-Вандăна сăпка юрри ........ —
Тĕп-тĕрĕс сăмах ........ 233
Мария Бануш ........ 234
Ля реведерĕ! ........ —

**ПĂЛХАР ЯРĂМĔНЧЕН**

Талисман ........ 236
Ламара ........ 237
Копривщица ........ 239
Ясная Поляна ........ —
Ропотама ........ 240
Созополь каччисем ........ 241
Блага Димитровăна ........ 242
Çилçунатăма ........ 243

## ХУШКА ХУМСЕМ


«Хуракăшсем какаласа иртеççĕ...» .......... 244
«Нумай çĕре çитсе паратăп сасă...» .......... 245
«Эп хамăр Атăл хĕрринче вилесшĕн...» .......... —
«Шаккать юлташăн чăвашла машинĕ...» .......... 246
«Тинкеререх пăхатăп тинĕсе...» .......... —
«Асра пĕр юрă янăрать ку чух...» .......... 247
«Эп пурнăçран кĕтместĕп канăç...» .......... 248
«Хашăлтата пуçларĕ тинĕс...» .......... —
«Инçе çула пуçтарăнатăп...» .......... 249
«Алран кайми аки-сухи...» .......... 250
«Нумайранпа кунта пулманччĕ...» .......... 251
«Нимене! Нимене!..» .......... —
«Пăхатăп ĕмĕрсен тĕпне...» .......... 253
«Хушка хум... Эп курап ăна куçăн...» .......... —
«Эп — çирĕммĕш ĕмĕр çынни...» .......... 254
«Кашлаççĕ хĕп-хĕрлĕ хырсем...» .......... 255
«Куратăп кантăкран Кипек пырать...» .......... 256
«Хăш чух çыраççĕ е пуплеççĕ...» .......... 257
«Эп шухăшлатăп ун çинчен...» .......... —
«Пĕлтĕм эпĕ малтанах...» .......... —
«Чăтаймарĕ те пуль, тӳсеймерĕ те пулĕ...» .......... 258
«Тăванăмçăм, çумри çунатăм...» .......... 259
«Янтарлă Латви! Тепĕр хут...» .......... —


## ИНÇЕ ВĔÇЕВ


Малтанхи çаврăм .......... 261
Тапрантатпăр .......... —
Йыш .......... 262
«Унăн ик мăшăр çунат!» .......... 265
Прага — Лондон .......... 266
Ариэль .......... 268
Этем ăсне шанатăп .......... 270
Стюардесса Ярмила .......... 272
Океан, океан... .......... 273
Аялта Атлантика, çӳлте Блок, романтика .......... 276
Виçĕ каччă .......... 277
Автан .......... 278
Пуçламăш сăмахсем .......... 279
Уçă .......... 280
Тĕп шухăш .......... 281
Икĕ аллăн ик пӳрни .......... 282
Испан чĕлхи урокĕ .......... 283
Николас Гильен патĕнче .......... 284
«Интернационал» .......... 285
Ларсах ташлаççĕ .......... 286

Эрнест Хемингуэй .................................................... 287
Çулпуç .................................................... 288
Çул майăн .................................................... 289
Кунти уйăх .................................................... 291
Пляйа Хирон .................................................... —
Сороа .................................................... 292
Крокодилсем .................................................... 293
Тропикана .................................................... 295
Çилçунатăма .................................................... 297
Çыру .................................................... 299
Прада урамри тĕлпулу .................................................... —
Гайдар хурăнĕн тупсăмĕ .................................................... 300
Ольгита .................................................... 301
Кураймарăм сана, Фидель! .................................................... 303
«Онсси» мĕн тени пулать? .................................................... —
Кайранхи çавра .................................................... 305
Юлашки .................................................... 306

**ЙЫХРАВÇĂ**

Ленин .................................................... 308
Кăçалхи кĕрекерен .................................................... 309
Пирĕн аслă самана .................................................... 311
Салтак сăмахĕ .................................................... 312
Йыхравçă .................................................... 313
Çĕнĕ Çул — çĕнĕ юрă .................................................... 315

**ÇĔРШЫВĂМÇĂМ, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ!**

Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕршывĕ! .................................................... 318
Тăван чĕлхе .................................................... 319
А.В. Кугушева депутатпа калаçни .................................................... 320
Уйăхпи .................................................... 326
Йăмăксене .................................................... 329
Йыхрав .................................................... 332
Шелепи .................................................... —
Амиç .................................................... 334
Çилçунат .................................................... 336
Космонавт амăшĕ .................................................... —
Йĕкел .................................................... 337
«Эп Форнарина теттĕмччĕ ăна...» .................................................... —
«...Çук! Килĕшеймĕп ĕмĕрне!..» .................................................... 338
Рикша .................................................... —
Тăпра .................................................... 339
Телейлĕ çул .................................................... 341
Вăрманта .................................................... —
Куккук .................................................... 342
«Чире-чĕре çĕнтертĕм-ха тепре...» .................................................... —

Хура кураксем ........ 343
Савса кӗтетпӗр ........ —
Инҫетри чӑваша ........ 346
«Чӑваш сӑмахӗ — пирӗ чӑн ҫӑл куҫӗ...» ........ 347
Ыран пуласси ........ —
«Атӑла алтӑрпа айтараймӑн!..» ........ 348
Тавайӑр-ха пӗрле ларса шутлар ........ —

**ЮХМА ТӐРӐХӖНЧЕ**

Патӑрьел паттӑрӗсем ........ 350
Митта патӗнче ........ 351
Ытарайми тӑван чӗлхе ........ 352
Ҫул ҫинче ........ 353
«Авангард» ........ 354
Тантӑш ........ 355
«Аслисем» ........ 357

**ПОЭЗИ СИПЛӖ ҪИЛӖ**

Поэзи сиплӗ ҫилӗ ........ 360
Ян Судрабкална ........ 363
Вӑтӑр пилӗк ҫултан ........ 367
Назӑм Хикмете ........ 369
Поэт суранӗсем ........ 371
Максим Рыльские ........ 373
«Поэзи вӑл — уйрӑм патшалӑх...» ........ 375
Савӑш курки ........ —
Павло Тычинӑна ........ 376
Муса Джалиле I ........ 378
Муса Джалиле II ........ 380
Тукай хурӑнӗ ........ 382
«Вуншар ҫулпа шутлатпӑр ӗмӗре...» ........ 383

**ВӐХӐТ ТУЙӐМӖ**

Шупашкар ........ 384
Пулӑҫӑсем ........ 385
Юрату ҫыранӗ ........ —
Романс ........ 386
Кунта пурнаҫҫӗ поэтсем ........ 387
Маргарита юрри ........ —
«Pourqoui? — тесе ыйтать пӗри...» ........ 388
Пӗрер тӗл пулнисем ........ —
Кипарис ........ 389
Сарачай юрри ........ 390
Ҫак кун ........ —
Аслӑ ҫулпа ........ 391

Халăх саккунĕн кунне .......... 393
Салам, Мускав! .......... —
Лавра умĕнчи шухăшсем .......... 394
Юррăмăр Сталина .......... 396
Çамрăксемпе «Çамрăк большевика» .......... —
Тупа .......... 397
Пысăк вырăн çинчен пĕчĕк сăвă .......... 398
Кĕнеке çине çырни .......... —
Тусăма .......... —
Тăрнаккай е Тăрбалдай... .......... 399
Юрлар! .......... 402
Тăван сасăсен кăмăлне .......... 403
Каçармастпăр .......... 404
Аслă парти, тав сана! .......... —
«Кĕркунне утать. Уттарăр...» .......... 405
Çутаттăр халăха çутту! .......... —
«Хам çуралнă Тутарстан!..» .......... 406
Килчĕ ырă çуркунне .......... 407
Çӳлтен çӳле, малтан мала! .......... 413
Туслăх пĕлĕчĕ айĕнче .......... 414
Мушайра .......... 415
М.Я. Сироткин 50 çулне .......... 417
Хура çăкăр .......... 418
Çеçпĕл Мишшине .......... 419
В.И. Краснов-Аслине .......... —
П.Н. Осипова .......... 420
Геннади Волкова .......... —
Салам .......... 421
Вăхăт туйăмĕ .......... —
Пухура çапла тăвасчĕ .......... 422
Çăлтăрлă çулпа .......... 425
Варкки Касак .......... 428
Салам «Восхода» .......... 429
«Капкăнăмăра» .......... 430
Илпек Микулайне .......... 431
«Çамрăксен хаçачĕ...» .......... 432
«Ыр-рлăх!» .......... —
Пысăккипе пĕчĕкки .......... 433
Эп — чăваш ачи .......... 435
«Эп — Петĕр Хусанкай. Чăваш...» .......... 436
Пурăнать-ха, пурăнать... .......... 439
Влас Паймена .......... 441
Кипарис .......... 442
Çерçи .......... 443
Ырă хыпар .......... 444
Ĕмĕр чаплă .......... 445
«Кашни ман сăввăм — юлашки пекех...» .......... 446
Пăчăрлă Пашьел .......... 447

Сăвă! Сăвă!! Сăвă!!! ........ 448
Ĕмĕрӳ сан вăрăм пултăр ........ 450
Çуркунне ........ 454
Жизель ........ 455
Хурама ........ 456
«Вăхăтра хĕвел кулать...» ........ 457
Çыру ........ —
Чĕре ........ 458
Мухтав сана, Чăваш театрĕ! ........ 459
Элкере ........ 461
Ак çапла! ........ 463
Тав сăвви ........ 465
Г.Н. Волкова: хамăрăн гениллĕ Кение... ........ 466
Эпир — чăваш çыравçисем ........ 468
Мăшăр йăмра ........ 469
Армстронг, илт мана ........ 470
Пуçламăш çавра ........ 471
«Ай-хай ир те пулать, каç та пулать...» ........ 472
«Хуткупăс сасси ян ярать...» ........ —
«Вĕçен кайăк пулса вĕçесчĕ ман...» ........ —
«Кунсем кĕскелеççĕ. Çурла уйăхне...» ........ —
«Кун пек эпĕ вăрманта...» ........ 473
«Тăм ӳке пуçларĕ, тăм...» ........ 474
«Çулçă тăкăнать...» ........ —
«Такам тăпри çинчи чул палăка...» ........ —
«Тăман, тăман... Тăван Пăлхарăм...» ........ 475
«Тĕрлĕренех ăс-хакăл куртăм...» ........ —
«Хăвартăм хĕрĕхе, алла...» ........ 476
В.Г. Егоров профессора ........ —
Семен Ислюкова ........ 476
[Юлашки йĕркесем] ........ 477

## КĔСКЕ СĂВĂСЕМ

Аптраман тавраш паракан канаш ........ 478
Аптраман тавраш паракан канаш ........ 479
Пĕр драматурга ........ —
Ăнсăртран илтнĕ виçĕ калаçу ........ —
Çил хӳри ........ 480
«Гени» пӳрни ........ —
Нарспиçĕсенчен пĕрне ........ —
Асра тытар ........ 481
Çăмхапа сĕвем ........ —
Кĕнекен ĕç-пуçĕ ........ —
Тутли, йӳççи... ........ —
Килес поэт ........ —
Кун-çул ........ —
Çавăнпа ........ 482

Ĕçпе вăйă ........................................................................ —
Пысăк вырăн е ?.. ................................................................ —
Çитменлĕх çинчен ................................................................ —
Тĕнĕл ................................................................................. —
Тирпей ................................................................................ 483
Сăлтавĕ .............................................................................. 484
Шăписем çаплалла ................................................................ —
Ĕçĕн куршанакĕ .................................................................... —
Тĕрĕсленĕ чăнлăхсем ........................................................... —
Репетилов Шупашкарта ......................................................... 485
Шикленмĕп ......................................................................... —
Ялавина .............................................................................. —
Алакĕр Ваçлине .................................................................... —
Çаваçа ................................................................................ —
Агитатор пулас текене .......................................................... —
Çурмаккайсене ..................................................................... 486
Чукмар парасчĕ аллине ......................................................... —
Иванов хӳрешкине ................................................................. —
Мăшкăл ................................................................................ —
Яка çамка ............................................................................ —
Мĕнле кайăк? ....................................................................... 487
Шывлисенчен пĕрне .............................................................. —
Малкая ................................................................................ —
Пĕлĕшсем ............................................................................ —
Шĕвĕрĕлчен ......................................................................... 488
Сур! .................................................................................... —
Пĕрле .................................................................................. —
«Вырăсла пĕлни кирлех...» .................................................... —

**АЧА-ПĂЧА СĂВВИСЕМ**

Вăрман юрлать ..................................................................... 489
Ку мĕскер? Курар, вуласа тухар ............................................. 516

**ĂНЛАНТАРУСЕМ** ........................................................... 518

ОРДЕНА «ЗНАК ПОЧЕТА»
ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ НАУК
ПРИ КАБИНЕТЕ МИНИСТРОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

| | |
|---|---|
| ПЕТĔР ХУСАНКАЙ | ПЕДЕР ХУЗАНГАЙ |
| ÇЫРНИСЕН ПУХХИ | СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ |
| **Иккĕмĕш том** | **Том второй** |

Редколлегия: **В.П. Станьял**, **А.А. Трофимов**,
**А.П. Хузангай**, **Г.Ф. Юмарт**
Составитель и автор комментариев
**А.А. Тимофеев-Ыхра**

Редактор ЧГИГН *А.А. Тимофеев-Ыхра.* Редактор издательства *П.Е. Димитриев.* Художник *В.Н. Гончаров.* Художественный редактор *Г.А. Игнатьев.* Технический редактор *Л.Н. Кондрашкина.* Корректоры *Г.И. Алимасова*, *З.И. Гаврилова*, *Н.П. Печникова*, *Н.В. Григорьева.* Компьютерная верстка *М.В. Филипповой.*
ОКДП 2211201. Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 13.12.01. Формат 84х108$^{1}/_{32}$. Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 29,4. Учетно-изд. л. 28,07. Тираж 1000 экз. Заказ № К-3043. Изд. № 34.
РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
РГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Хусанкай П.П.**
Х 98 Çырнисен пуххи. Иккĕмĕш том. Сăвăсем, ярăмсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. — 558 с.

Çырнисен пуххин иккĕмĕш томне Петĕр Хусанкайăн 1945—1970 çулсенче çырна сăввисем кĕнĕ. Хайлавсене ярăмăн-ярăмăн, хронологи йĕркипе вырнаçтарса пынă.

**УДК 894.344**

**ББК 84 (2Рос-Чув)-5**

ISBN 5-7670-1075-7